Порфирий АФАНАСЬЕВ

ҪЫРНИСЕН ПУХХИ

Сăвăсемпе поэмăсем,
калавсемпе повĕҫсем, публицистикăллă статьясем,
туссен пултарулăхне хаклани

Шупашкар
«Ҫĕнĕ Вăхăт»
2017

УДК 821.512.111
ББК 84(2=635.1)6-4
А 94

А 94 **Афанасьев П.В.**
Çырнисен пуххи. Сăвăсемпе поэмăсем, калавсемпе повĕçсем, публицистикăллă статьясем, туссен пултарулăхне хаклани. Шупашкар. 2017. – 500 с.

ISBN 978-5-9909242-4-6

© Афанасьев П.В., 2017

ХАЛĂХЛĂХ ПАЛЛИ

«Çĕр пичĕ тăвăр-им пире?» — тенĕччĕ хăй вăхăтĕнче Лутра Пакăш ялĕнчен тухнă вăрăм та яштака йĕкĕт, пирĕн хӳхĕм поэтăмăр Аркадий Лукин. Чăнах та, çутçанталăкăмăр уçлăх талкăшĕпе вăхăт вĕçĕмсĕрлĕхĕ пекех аслă иккен. Ĕçле, вĕрен, çун, тупта чун пултарулăхне, сана та асăрхĕç, сана та алă парĕç. Çапла ăшĕнче Турă панă хĕлхемĕ пуррине туйса илсе, çав хĕлхем йыхравĕпе ĕçе пикенет пирĕн Порфирий Афанасьев, малтан мала уçăлса пырать унăн тăванла Тутарстанри Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнчен тухнă сукмакĕ, малтан мала ертсе пырать ăна умĕнче кăлтăртатса-чупса пыракан çăмхи. Пĕррехинче вăл ăна Хусан хулине çитерет, унти аслă шкулăн чĕлхепе литература уйрăмне вырнаçтарать. Тăван сăмахăн хиврелĕхĕпе çепĕçлĕхне Çарăмсан шывĕ хĕрринче ĕмĕрлĕхех ăша хывнă каччă çапла тĕнче поэзийĕн пахчине кĕрсе каять, унта Дантепе Петрарка, Шекспирпа Байрон, Гетепе Мицкевич, Пушкинпа Лермонтов, Тютчевпа Есенин сăвви-поэмисен асамлă тытăнне лекет, хăй те чунра капланнă туйăмĕсене савалама тытăнать. Çыракансем татах та пур иккен кунта: педагогика институтĕнчех Ренат Харис студент, Ульяновск облаçĕнчи Çирĕклĕ Кӳлĕ ялĕнче çуралса Пăвара ӳснĕскер, чăвашла та чиперех калаçаканскер, поэзире питĕ маттур ĕçлет, Порфирий сăвă çырнине те пĕлет, унпа час-часах курнăçать. Университетра ав Равиль Файзуллин ячĕ пысăк хисепре: тĕнче çине хăй куçĕпе пăхнипе, пурнăç пулăмĕсене поэзире хăйне майлă сăнарлăхпа кăтартса пама ăнтăлнипе палăрса тăрать вăл.

Çапла пурнăç çăмхи Афанасьева Хусанти «Хĕрлĕ ялав» ятлă чăваш хаçачĕн редакцине илсе çитерет. Пĕрре курать те çамрăк поэт кунта ĕçлекенсене ĕмĕрлĕхех туслашать вĕсемпе. Редактор заместителĕ Василий Юдин, яваплă секретарь Константин Петров, Валем Ахун сотрудник, тĕрлĕ çĕрте вĕренекен Юрий Айташ, Михаил Сениэль, Анатолий Ерусланов çамрăк авторсем, консерватори студенчĕ Геннадий Максимов хăйсен хавхалануллă шухăш-туйăмне пĕр çĕре пĕрлештернĕ иккен кунта. Порфирий те çапла хаçат сотрудникне кĕрĕшет.

Малтанлăха редакцин кивĕ диванĕ çинче пуç айне минтер вырăнне хаçат тĕрки хурса выртса тăрать вăл, апачĕ-çимĕççĕ те йĕркеллĕ тивĕçсе пыраймасть-и, тен, анчах çыравçăсем хушшинче пурăнни, вĕсемпе пĕр ĕç туни, пирвайхи сăвăсем, стан-

па пичетленсе чăн-чăн хаçат анĕ çине кĕрсе шăнăçни йĕкĕте çунатлантарса ярать. Телее, Хусана Шупашкартан чăваш çыравçисем те пырсах тăраççĕ: Элекçей Талвир, Александр Кăлкан, Валентин Урташ нихçан та «Хĕрлĕ ялава» кĕмесĕр иртмеççĕ, унта ĕçлекенсемпе кашнинчех туслăн та ăшпиллĕн калаçса лараççĕ.

Пĕррехинче çапла, 1961 çулта, Тутарстанăн тĕп хулине чăваш писателĕсен пысăк ушкăнĕ пырса çитет. Ушкăнра - Петĕр Хусанкай, Александр Алка, Стихван Шавлы, Илпек Микулайĕ тата ыттисем. Паллах, заводсенче халăхпа тĕл пулнисĕр пуçне вĕсем, яланхи пекех, Хусанти чăваш çыравçисемпе те курнăçаççĕ, вĕсен сăвви-калавне пахалаççĕ, чи лайăххисене Шупашкар хаçачĕ-журналĕ валли хăйсемпе пĕрле илсе каяççĕ, ырă сĕнӳсемпе канашсем параççĕ.

Каçхине вара хулари культура керменĕсенчен пĕринче чăваш поэзийĕн уявĕ пулса иртет. Халăх - лăк тулли. Пурте чăн-чăн поэтсене курасшăн, вĕсен сăввисене итлесшĕн. Акă Порфирий Афанасьева сăмах параççĕ. Студент халăх умне тухать, сăввине калама пуçлать. Анчах тӳрех палăрать: именет çамрăк, сасси питĕ вăтанчăклă тухать.

– Хăюллăрах пул, – хавхалантарать ăна чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай. – Сăвву лайăх, шăрантар та шăрантар!

Çапла пил илет вунтăххăрти йĕкĕт чăваш поэзийĕн ят-сумлă ăстисенчен. Пил илет те – ĕçе пикенет. Аслă шкул хыççăн пĕр кана ачасене вĕрентет вăл, хаçат редакцийĕсенче ĕçлет, Мускавра малалла вĕренсе ăс пухать, унтан «Хатĕр пул» журналăн, Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ пулать, пилĕк çул хушши Писательсен союзне ертсе пырать, мире хӳтĕлекенсен республикăри Комитечĕн председатель заместителĕнче, Чăваш радион тĕп редакторĕнче, республикăри пичет енĕпе ĕçлекен Комитет председателĕн заместителĕнче ĕçлет. Анчах поэтăмăр çакна аван ăнланать: чăн-чăн çыравçа мĕнле вырăнта ĕçленине кура мар, мĕн çырнине кура, мĕнле çырнине кура хаклаççĕ. Афанасьев пултарулăхне хаклас тесен – каламалли сахал мар пирĕн. Унăн пĕр хăйне кăна тивĕçлĕ пахалăх пур. Вăл – уçăмлăх. Хăшĕсем кăйттă ансатлăха уçăмлăх теме пăхаççĕ. Вăл – урăх япала, сăмах, сасă е сăрă купинче искусство чунĕ-чĕмĕ çуккине çирĕплетекен хевтесĕрлĕх вăл. Кунта вара, Порфирий Афанасьев произведенийĕсенче, эпир пысăк ăспа, хавхалануллă туйăмпа çиçсе те ешерсе тăракан хĕвеллĕ уçăмлăха куратпăр. Шăп çавнашкал уçăмлăхра улмуççи çеçки шуралса-кĕренленсе çурăлать, çавнашкал сывлăм сыпнă уçăмлăхра этем чунĕ асамлă туйăм ытамне лекет. Çав уçăмлăх вăл – талант, шухăшпа сăмахăн ынатлă пĕрлĕхĕ, ăспа туйăмăн инçе вĕçевĕ. Афанасьев пултару-

лăхĕнчи çак пархатар пирĕн ума поэзире те, прозăра та, драматургире те, публицистикăра та туллин тухса тăрать. «Çарăмсан кĕввисем» е «Чун çути», «Пурăнатăп Атăл хĕрринче» е «Хĕвел хапхи» кĕнекесенчи сăвă-поэмăра, «Вучах», «Пурăн, юрату» кĕнекесенчи калавсемпе повĕçĕсенче, 1986 çулта уйрăм кĕнекен тухнă, çав вăхăталлах академи драма театрĕн сцени çинче нумайлăха вырăн йышăннă «Сан ятупа» сăвăлла трагедийĕнче татăклăн палăрать писателĕн хĕрӳ гражданлăхĕ, чĕлхе ăсталăхĕ, калас сăмаха меллĕн, хиврен, сулăмлăн çавăрса калама пĕлни.

Пурнăç пулăмĕсене ӳкерсе кăтартнă чухне писатель пирĕн хушăра куллен тĕл пулакан япаласенчех çĕннине, шухăша яраканнине тупать, эпир вара, çав хайлава вуласа тухнă хыççăн, япала е пулăм çине çĕнĕ куçпа пăхма тытăнатпăр, ăна хамăр шайпа пахалатпăр, çĕнĕ хак пама пикенетпĕр. Çакă пулать те ĕнтĕ вăл чуна вырăнтан хускатакан хăват, тăван сăмах хăвачĕ. Курăрха, сăмахран, кăмăла мĕнле тарăннăн витермелли çавра хывать поэтăмăр «Ырри кăна юлать пиртен» сăвăра:

Ырри кана юлать пиртен,
Ырри кана юлать.
Ырри атте-аннемĕртен,
Ытти — ютран пулать.

Атте-анне тивлечĕпе
Ял-йыш çине тухсан
Атте-анне ятне чипер
Тытса çурер ялан.

Ку кам ачи тесе ыйтсан
Ку çавăн теччĕр-и,
Ан çунтар пирĕншĕн нихçан
Атте-анне чĕри...

Унтан сăвăç чăваш ырсемĕ умĕнчи яваплăх çинчен, ун урлă аслă Раççей çĕрĕ-шывĕ умĕнчи тивĕç-парăм çинчен сăмах хускатать, мĕн çуралса мĕн виличчен чыса тасан упраса пурăнмалли пехиллĕ шухăшпа вĕçлет кун-çул юррине. Халăхăмăр ятне тивĕçлĕ сăмах тупăнни, сăмахне кура çемми çаврăнни, çеммине май хĕлĕхĕ е чĕлĕхĕ ĕнерĕнни поэтăмăр ăсталăхĕ ĕмĕртен йĕркеленнĕ аслă туйăм шайĕнче пулнине çирĕплетет. Çакă пулать те ĕнтĕ вăл халăхлăх палли.

Ырă ят илчĕç Порфирий Афанасьев ăсталанă хайлавсем. «Чун çути» кĕнекери сăвăсемпе поэмăсемшĕн ăна 1982 çултах чăваш

çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине пачĕç. 1998 çулта вара вăл чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне тивĕçрĕ. 1999 çулта Пушкăртстанăн Фатих Карим ячĕллĕ премине илме пултарчĕ. Сумлăхне кура вăл çырнисем, чăвашла анлăн сарăлнипе пĕрлех, ытти халăхсенче те палăрчĕç. Мускавра вырăсла, Хусанта тутарла кĕнекесем тухрĕç, Киевра — украинла, Минскра — белорусла, Бакура — азербайджанла, Ĕпхӳре — пушкăртла, Якутскра — якутла, Йошкар-Олара — марилле, Софийăра — пăлхарла, Парижра — французла, Лондонра — акăлчанла çуллен тенĕ пек пичетленсе пынине шута илсен çыравçă ĕçĕ тата туллинрех курăнать.

Порфирий Афанасьев чăваш литературин чи хастар хыпарçисенчен пĕри пулса тăчĕ. Ăçта кăна çитмерĕ вăл, мĕнле кăна аудиторире тухса калаçмарĕ пулĕ. Мускаври Лихачев ячĕпе хисепленекен заводра, Ярославльти дизель заводĕнче, Чулхулари «Чайка» акционер пĕрлешĕвĕнче, Черниговри «Химволокно» комбинатра, Остерти строительство техникумĕнче, Белорецкри металлурги комбинатĕнче, Çырançи Çаллă хулинчи çурт-йĕр комбинатĕнче, Анат Камăри нефтехими комплексĕнче, Кавказри, Балтика тăрахĕнчи ял-хулара, Японири, Китайри, Югославири хуласенче тата ытти нумай çĕрте ĕçлекенсем итлерĕç унăн хĕрӳ сассине. Çăмăл мар вăл Егор Исаев, Борис Олейник, Василь Зуенок, Иван Драч, Аннаберды Агабаев, Имант Зиедонис, Валентин Сорокин, Юрий Кузнецов, Виктор Кочетков, Ренат Харис пек çыравçăсем хушшинче чăваш халăхĕ ячĕпе сумлăн та танлăн калаçасси, анчах та пирĕн Афанасьев çинчен çĕршыври поэзи аксакалĕсем Расул Гамзатов та, Мустай Карим та, Сергей Михалков та яланах ăшшăн асăннă тăрăх элчĕмĕр хăй тивĕçне аван пурнăçлани лайăх курăнать. Чыс та хисеп ăна çавăншăн.

Çăмăл мар литературăра ят илме терĕмĕр эпир сăмах пуçламăшĕнче. Паллах, Турă пилĕпе ĕçлекен çын ниҫçан та ят илессине тĕпе хумасть, уншăн чи малта — яланах ĕç. Порфирий Афанасьев та çавах. Вăл çырнă кĕнеке, вăл каланă сăмах тăван халăхăн ячĕпе сумне çĕклерĕç. Çавна кура тăван çырулăх кĕреки те поэта хăех чыслă вырăна чĕнчĕ.

Пĕррехинче манăн поэт ентешĕсемпе — Йĕлмелĕ çыннисемпе — курса калаçма тиврĕ. Чылаях пуплерĕмĕр. Сăвăç тантăшĕсенчен пĕри Порфирий ача чухне лашасене чунтан юратнипе колхозăн чи лайăх урхамахне аслисенчен ыйтмасăрах çавăтса кайса унпа анлă уй-хир тăрăх çил пек вĕçтерсе çӳрени, кайран çавăншăн аслă конюха пуçлăхсенчен ят та тивни çинчен кулакулах аса илчĕ. Эпĕ çав пулăма, шӳтле-мĕнле тенĕ пек, сăвва та хывсаттăм:

Йĕлмелĕ йĕлмисен сулхăнĕнче
Пĕр çын çапла каларĕ сан çинчен:
– Вуннăсенче-тĕр çав ача, Пурхи,
Ут утланса кайсаччĕ кĕтӳрен.
Ăна-мĕн илĕртнĕ колхоз çăрхи...
Лачкам тар килчĕ тепĕр сехетрен...
– Çук, – терĕм эпĕ, – Ĕненес килмест...
– Мĕн «ĕненес килмест?» Хĕвелшĕн-туршăн:
Ăйрин ятне те астăватăп – Эверест.
Хуçасенчен сăмах та тиврĕ уншăн.

Ман ĕненес килмест Пурхи таврăннине,
Мĕн-ма тесен чăваш поэзине
Шăпах çав чаплă урхамахпала
Вăл кĕчĕ чĕрĕк ĕмĕр каялла.
Вĕçсе кăна çӳрет халь çав Пегас,
Хуçи те унăн вĕçеве хавас:
Чăвашăн шухăшлав-уйлав тĕнчин
Чи çӳллĕ шĕврешкисенчен
Çил çунатпа пехил илсе тухса
Халь хăй çĕн тăрă ăсталать хавхаланса.
Ĕçлет çĕрне-кунне пĕлмесĕр,
Ак мĕншĕн тăтăм эпĕ ĕненмесĕр...

– Каçар, тăванăм, – тет поэт ентешĕ, –
Сăмах йĕрне тӳрех тĕшмĕртейменшĕн.
Эппин, Пурхин вĕçтертĕр çил çуначĕ,
Парка ешертĕр сăвăç сачĕ,
Чи варринче çĕклентĕр çĕнĕ Эверест,
Эп çавăншăн хурап хĕрес...

Ытарма çук илемлĕ тăванла Тутарстанăмăрăн кăнтăр еннерехри хутлăхĕнче юхса выртакан Çарăмсан шывĕн улăхĕсем çурхи кунсенче: кăвак куçлă ĕшпĕл сенкер тӳпене чуп тăвать, шăнкăрав курăкĕ вăйă картинчи сарпикесем пек ретĕн-ретĕн вырнаçнă, çеçкери палан тĕми тавра сырăннă сарпуç чечекĕ тин тухнă чĕпсен сап-сарă кăшăлĕ евĕрех туйăнать. Юнашарах – пыл курăкĕ, ут-мăлтурат, ама хупахĕ, пĕтнĕк, матрӳшке... Çак илемпе çак ырлăха мухтаса ырламан-и-ха пирĕн шеп чĕлхеллĕ Шелепимĕр, çак ынатлăхпа çунатланман-и тĕнче анлăш-тарăнăшне, этем ĕмрин тăршшĕпе сарлакăшне чун витĕр илсе шухăш çаври тăвакан аслă Хасан Туфан? Шăпах çак чечексенчен çыхнă хитре хушпу е пуç кăшăлĕ пек куратăп та эпĕ Порфирий Афанасьев пултарулăхне. Ăна асамлă пахчамăрти вăйпитти улмуççипе танлаштарсан çут-

çанталăкăмăр çав йывăçăн кашни пĕр тураттине уйрăм техĕмлĕ те уйрăм сипетлĕ сапан сыпса тĕлĕнтермĕш пуянлăх туса хунине асăрханă пулăттăмăр. Курăсăрччĕ паян: йывăçăмăрăн кашни турачĕ чăваш сăмахлăхĕн пахчине хăйне евĕр ырă сăн-сăпат та, тутă та кӳрет. Шухăш анлăшĕнчен тĕлĕнме философилле никĕс пур унта, поэзин тухатуллă вăйĕпе киленме – Ивановпа Çеçпĕлрен илнĕ танлăхпа çиçĕмлĕх, проза талккишлĕхĕпе паллашма – Илпекпе Уяр кӳнĕ пиçĕ хевте, драма картине кĕме – Павăл Хветĕрĕпе Уçăп Петĕрĕн чун çивĕчлĕхĕпе касса кăларнă сăнарсем, пурнăçпа сăмах ӳнерĕ пирки уй пек аслăн уйлама – ăс виçев ытамĕн сироткинла тĕплĕхпе пĕтĕмлетнĕ очерксемпе статьясем... Çакă вăл – пирĕн пĕрлехи пуянлăх. Ăна кӳрекенĕ, парнелекенĕ – Порфирий Афанасьев ĕçĕ, Порфирий Афанасьев таланчĕ. Тавах ăна.

Юрий СЕМЕНТЕР,
Чăваш халăх поэчĕ

СĂВĂСЕМПЕ ПОЭМĂСЕМ

ЭС ÇИРĔМ ИККĔРЕЧЧĔ

КИЛ ХАМĂН ХЎТТĔМЕ

Кил хамăн хўттĕме,
Кил хамăн хўттĕме.
Кичемлĕхрен, пĕчченлĕхрен
Чуну пĕрре кўтсе çитсен
Ман юрату вутне илме
Кил хамăн хўттĕме.

Кил хамăн ытама,
Кил хамăн ытама.
Пĕччен сукмак ывăнтарсан,
Тумхахлă çул такăнтарсан
Ман çирĕп аллăма туйма
Кил хамăн ытама.

Кил манăн тĕнчене,
Кил манăн тĕнчене.
Эп санăн хўтлĕхўй пулсан,
Эс манăн чун уççи пулсан
Куллен тав тăвăп ĕмĕрне
Çак аслă тĕнчене.

* * *

Ир тăрсан та, каç выртсан та
Эп сана кăна куратăп.
Тарăхатăп, хăвалатăп,
Тархаслатăп, йыхăратăп.

Ăшăтать-и, сивĕтет-и
Ăшă кăмăл, сивĕ кăмăл,
Эп сана аса илеп те –
Пĕрре йывăр, пĕрре çăмăл.

Тунсăх, тунсăх, мĕн тăватăн?
Ĕнтĕ çук ман вăй-хăватăм,
Анчах эс умрах тăратăн,
Чунăм, пӳлĕхçĕм, тăванăм.

Кантăкран пăхса тăруçăн
Вĕлтĕрти черченкĕ çулçă
Е ӳкет-и, е ӳкмест-и
Тесе пăхрăм. Ырчĕ куçăм.

Вăл ӳкмерĕ. Вăл чĕтрерĕ.
Кĕр сивви мĕнне пĕлмерĕ.
Тунсăх кайрĕ ĕмĕре.
Вĕçĕ пулĕ-ши пĕрре?

ÇĂЛТĂР ӲКРĔ

Çăлтăр шыв çине ӳксе саланчĕ,
Сывлăмĕ йĕпетрĕ çарана,
Акă çитрĕ уйрăлу саманчĕ,
Тусăм, аса илĕн-ши мана?
Çурхи çил пулать ытла вылянчăк –
Çурхи çил вылятмĕ-ши чунна?

Шуçăмпа çĕкленчĕ кăвак çутă,
Уйрăлас килмест, савни, санран.
Тепĕр хут куçна хупса чупту та
Сывламасăр пăхса юл кайран.
Çут сăну та, ырă кăмăлу та
Вăрахчен ан тухчăр асăмран.

Шĕпĕл-шĕпĕл çулçă çаптăр çĕмĕрт,
Шăпчăк шăрантартăр юррине.
Ирхи кăвак çут шевлин çут хĕмĕ
Ĕмĕрех çутаттăр чĕрене.
... Тавтапуç сана, тĕл пулнă ĕмĕт,
Ăраскалăм кӳнĕ çут парне.

* * *

Эс çирĕм иккĕреччĕ,
Эп çирĕм иккĕре.
Шап-шурă çеçкереччĕ
Садсем Йĕлмелĕре.

Хăватлă та таса-мĕн
Çурхи тĕнче юрри!
Асаплă каç асамĕ
Вĕри, вĕри, вĕри...

Тавралăх шăп пĕр хушă
Е — тăвăллă тепре.
Çак аслă тĕлпулушăн
Çуратнă-ши пире?!

Пĕри теприсĕр тăлăх
Ик çын пĕрлешнипе
Сиксе чĕтрет тăп-тăрă
Çут çăлтăрлă тӳпе.

Эх, пилĕ те тивлечĕ
Нумай-çке тĕнчере!
... Эс çирĕм иккĕреччĕ,
Эп çирĕм иккĕре.

* * *

Кĕтсе илекенсем телейлĕ.
Чунра çут ĕмĕт пулмаллах.
Кур, ĕмĕте упрать илемлĕн
Тулса вăй илнĕ сар пучах.

Парне пилле — вĕр çĕнĕ пĕрчĕ.
Сирпĕнтерсе хĕвел хĕмне
Çуталтăрах этемлĕх пӳрчĕ
Паян, ыран та ĕмĕрне.

* * *

Кам ку мана йыхӑрать?
Кам йыхӑрать?
Эсĕ манпах. Эс ҫывӑхрах.
Эс — аякра.

Сан уттупа
Шуса иртрĕ те пĕлĕт —
Тасалчĕ.

Сан сассупа
Пӑшӑлтатрĕ те ҫумӑр —
Шӑпланчĕ.

Сан кĕпӳне
Уртса ячĕ те ҫĕмĕрт —
Вӑтанчĕ.

Сан юрруна
Тӑсса ячĕ те шӑпчӑк —
Ҫухалчĕ.

Ӑҫта сан утту халь?
Ӑҫта сан сассу халь?
Ӑҫта сан юрру халь?
Ӑҫта?

Курӑк ҫилпе тайӑлать.
Нӑрӑлтатать пыл хурчĕ.
Кам ку мана йыхӑрать?
Чĕнекенни кам пулчĕ?

Кам ку мана йыхӑрать?
Кам йыхӑрать?
Эсĕ манпах. Эс ҫывӑхрах.
Эс — аякра.

ЭСĔ ЮЛАТТĂН

Иккĕленетĕп тăтăш,
Каçараймастăп хама –
Турăм пуль, турăм пуль йăнăш, –
Эс пултараттăн юлма.

Чунăм кӳтсе çунатчĕ.
Сан чунунта та пушар.
Акăшăн икĕ çуначĕ
Усăнчĕ анчĕ ним мар.

Пĕр сăмах çеç калас та
Пĕр утăм çеç çывхарас,
Чунăмçăм, эсĕ юлаттăн,
Эсĕ юлаттăн пулас.

Иккĕленетĕп тăтăш,
Каçараймастăп хама –
Турăм пуль, турăм пуль йăнăш
Йывăр пĕччен пурăнма
.

ШУРĂ ХУРЛĂХАН

Кӳршĕ хĕрĕ пуçтарать
Шурă хурлăхан.
Темшĕн-çке куçне тартать
Хăй çине пăхсан.

Шурă-шурă хурлăхан –
Паллă мар çырла.
Ан выля эс манпалан
Куç хупăрла.

Шурă-шурă, шурă-шурă,
Шурă хурлăхан,
Сан умра мĕн айăп турăм,
Ма куçна тартан?

Ан пытар питне-куçна,
Вăрттăн кăмăлна.
Пиçсе çитнĕ çырлуна
Тутантар мана.

Шурă-шурă хурлăхан
Илĕртет чуна.
Ун çырли йӳçек пулсан
Кӳр тутуна.

Шурă-шурă, шурă-шурă,
Шурă хурлăхан.
Пурпĕрех сана чуптурăм
Тутлă тутунтан.

НИМ ТУМА ТА ÇУК ĔНТĔ...

Ним тума та çук ĕнтĕ,
Ним тума та çук.
Тĕлĕн те, ан тĕлĕн те –
Пĕтрĕ калаçу.

Кайăк хур картин-картин
Кăнтăра вĕçет.
Йыхăрса илеймĕн тин,
Ăсатмах тивет.

Тĕлĕк пек сенкер каçсем
Асилме кăна.
Хурласа та тиркесе
Ан ятла мана.

Ним тума та çук ĕнтĕ,
Ним тума та çук.
Ăшă хыççăн сивĕтĕ –
Иртсе кайрĕ çу.

КĂМĂЛ СĂВВИ

Сар саппунлă, сарă тутăрлă,
Çут куççуллĕ кĕркунне
Ылтăн туй тăвать те хурлăхлăн
Майĕпен хывать тумне.

Сарă питлĕх янăрать-и ку? –
Пат! ӳкет те пан улми,
Кунсерен те талăк-талăкăн
Тем каять ним таврăнми.

Кайăк хур кас-кассăн иртрĕ те,
Сассинче мĕн? Илтрĕр-и? –
Те малашлăхăн кĕвви ĕнтĕ,
Те аса илӳ юрри?

Сар саппунлă, сарă тутăрлă,
Çут куççуллĕ кĕркунне,
Тунсăхпа килен те тунсăхлăн
Хăваратăн чĕрене.

ТĔНЧИ ÇАПЛА...

Кашнин хĕвелĕ те тӳпи хăй евĕр.
Пиншер тĕнче çак аслă тĕнчере.
Камах-ши эпĕ хамăн çут хĕвелсĕр,
Тӳпесĕр, çăлтăрсăр? Кĕрешӳре!

Анчах та пĕр тĕнче çеç çынна хĕсĕк,
Кĕретпĕр пĕр-пĕрин тĕнчисене.
Пĕрле пулсан телей те вĕçсĕр-хĕрсĕр,
Пĕрле пулсан инкек те – мур çине.

Тĕнчи çапла. Хавалĕ, хĕнĕ, терчĕ
Килет этемлĕх пысăк тĕнчинчен.
Вăл çутă, сарлака пулсан тем пекчĕ,
Телейĕ тăкăнсанччĕ хĕрринчен.

КĔР ЧЕЧЕКĔСЕМ

Кĕлленеймен кăвар ку — çил çинче
Йăлтăртатса выртать сад пахчинче.
Çителĕксĕр те пулĕ ун валли
Кĕрхи хĕвелĕн йăмăхнă шевли.

Çапах та хĕм сапса енчен енне,
Çатăртатса çунать те çак вучах —
Эп ăнланатăп вăхăт мехелне,
Пĕлетĕп эпĕ: кĕр ăшши пурах.

Çу кунĕсем лӳшкетнĕ çумăра,
Çиле тӳссе ирттернĕ чечексен
Шалти вăй-халĕ те хăватлăрах,
Шăрши те ырăрах пулать-и, тен?

Çунать, çунать, çунать йăлтăртатса
Кĕрхи вучах, кĕрен вут-хĕм сапса.
Чĕрем, кам айăплĕ сана паян
Кăштах кая юлса çунан пулсан?

* * *

Йĕпкĕн хĕрлĕ, хĕрлĕ чечексен
Çулăмлă ташшийĕ вĕçленсессĕн,
Ташшăн малалли пек, ерипен
Тухрăн эсĕ.

Çулçăсен кĕвви — мĕнпур енчен —
Кассăн-кассăн çил вĕрсе иртсессĕн,
Кĕввĕн малалли пек, майĕпен
Килтĕн эсĕ.

Тав сана! Чун хӳхлевне пĕлен,
Эп сунман сана кĕтсе илессĕн!
Лар манпа.
Анчах хуллен-хуллен
Çĕтрĕн эсĕ.

Кайрăн. Кил ыран апла пулсан,
Мĕн тери кун лайăх эс килсессĕн!
Тĕлпулу малалли пек паян
Пултăн эсĕ.

* * *

Кĕрхи чечек — кĕрхи кăвар.
Садра ик çын... Хаваслă кулă.
Таçта çухалчĕ ăнланулăх:
Те эсĕ ку, те эсĕ мар.

Пăлхавлă каç кĕрет юна,
Йăлтăртатать тĕтреллĕ уйăх,
Çук, эсĕ мар! Тĕтреллĕ туйăм
Тăлларĕ пулмалла мана.

Тумхахлă пурнăç тиевне
Чăтма-тӳсме хал çитнĕ пирĕн,
Шакăлтатса çеç каçăн-ирĕн
Чуптарĕ пурнăç малашне.

* * *

Те кая юлчĕ яшлăх манăн,
Те сывă мар чĕрем?
Курнаççĕ çывăххăн, тăваннăн
Кĕр чечекĕсем.

Те юратап теме пĕлмесĕр
Хальччен çӳренĕçем
Чуна вăратрĕç систермесĕр
Кĕр чечекĕсем.

Çапах та... Айăпĕ ку çеç-ши,
Е вăл санра-и, тем?
Сан чуну пек тасан çиçеççĕ
Кĕр чечекĕсем.

Эс ил манран, эс ил, чиперĕм,
Пысăках мар парнем,
Асамлă асамат кĕперĕ –
Кĕр чечекĕсем.

* * *

Кăвак хуппи хăех эс пултăн мар-и маншăн,
Лап хыпрăн та таçта çухалтăн шăплăхра.
Ун чух пĕр утăм сан патна пусма хăйманшăн
Куллен чĕрем çунать, куллен çунать вутра.

Кĕтмен серепене çаклаппă кайăк евĕр
Ак халь çӳреп, çӳреп кĕтсе те тĕмсĕлсе.
Чуна лăплантарма пултаракан пĕртен-пĕр
Çав саманта каллех тĕл пулмăп-и тесе.

* * *

Чĕре хӳхлевĕ санăн сассунта.
Мĕскер çаплах сан сассуна чĕтретрĕ?
Чĕнмерĕ телефон. Вăл çĕр хута
Амаппă кайăк чĕппи пек шиплетрĕ.

Ӳкетĕп ĕнерхи е унчченхи
Аса илӳ çине: хире утатăн,
Имшер туналлă пучах пек курнатăн
Ытла тумхахлăран кун-çул сухи.

Пучах та выçă. Шăрăх – майĕ çук.
Хăрушă шăплăх çеç вĕçĕ-хĕррисĕр
Савса хӳтĕлекен атте сассисĕр...
Ку – вăрçă хыççăнхи нушаллă çул.

Пурнас пулать! Çак икĕ сăмаха
Тĕпе хурса эпир санпа утман-и,
Чире те, ултава та йăх-яха
Малашлăха курса парăнтарман-и?

Çак кĕрешӳшĕн панă парне пек
Шăпа хăватлă юрату пиллерĕ,
Кун-çул çырмин ялтравлă варрипе
Выртать асамлă асамат кĕперĕ.

Анчах паян сассу сан хăвăн мар...
Мĕн пулчĕ, тусăм?
Телефон чĕнмерĕ.
Тулта кăна нихçанхинчен хаяр
Çил татăлса та хуçăлса ӳлерĕ.

«Васка, юлташăм, ан кĕттер, васка!» –
Тем систерсе, тем пĕлнĕ евĕр, хурлăн,
Сан пек илемлĕскер те яштака,
Кантăкăмран шаккать пĕчченçĕ хурăн.

* * *

Пĕлместĕп: пулнă-и, пулман-и
Сана чуптунă çын хальччен –
Паян эс манăн, манăн, манăн,
Паян кăна та мар-и, тен!

Кунпа хĕвел, çĕрпе çут пĕлĕт
Килĕштерсе пĕрлешнĕ пек,
Сана тĕл пулăп теттĕм. Ĕмĕт
Ах çитрĕ пысăк çĕклемпех.

Туяттăм: пур асамлă кӳлĕ –
Пырса кĕрсессĕн ун шывне,
Е çĕклес пекчĕ илĕртӳллĕн,
Е тăвас пекчĕ хум айне.

Çав кӳлĕ пек ман юрату та.
Эп сикрĕм чăнкă çырантан.
Пĕлместĕп: путăп-и е тухăп,
Пĕлместĕп: тухăп-и е путăп,
Темле пулсан та – эпĕ сан!

* * *

Пурнаттăмăр. Кулаттăмăр. Юрлаттăмăр.
Саваттăмăр. Ĕçлеттĕмĕр хĕрсе.
Е ним çукран каçса кайса вăрçаттăмăр,
Пĕрне-пĕри каçарасса пĕлсе.

Мухтаттăмăр. Хурлаттăмăр. Сивлеттĕмĕр.
Тупаттăмăр çапах та пĕр чĕлхе.
Чĕнмен чухне сывланине илтеттĕмĕр,
Пăсмастчĕ çакă пирĕн канлĕхе.

Эс çук паян. Вăрçни те, савăнни те çук.
Çук юрлани, çук ассăн сывлани.
Мĕн пурăнни? Мĕн сансăр пурăнни? -
Çунатсăр, вăйсăр эпĕ эс çук чух.

* * *

Ниçта пĕр хӳтлĕх тупаймасăр
Шăнса, кӳтсе çӳре-çӳре,
Çапах шанмашкăн пăрахмасăр
Сана тĕл пултăм тĕнчере.

Сана тĕл пултăм та, хĕвелĕм,
Тин сисрĕм пурнăç ăшшине,
Тин туйрăм ун пин-пин хĕлхемлĕ,
Пин-пин чĕтревлĕ вăййине.

Сапса илемлĕн те ачашшăн
Ахах-тивлет, мерчен-çеçке
Пуш чунăма тулли тăвасшăн
Ман çул çине эс тухрăн-çке.

Çӳретĕп улăппа пĕр таннăн,
Хавхаланса, çунса, хĕрсе,
Пĕлĕт айне хĕвелĕм манăн
Кĕрсе ан кайтăрччĕ тесе.

* * *

Каллех умра, савнийĕм, çул выртать.
Каллех санпа, савнийĕм, уйрăлатпăр.
Çак саманта тӳсмешкĕн йывăртан
Сăмах чĕнмесĕр перронта тăратпăр.

Пĕлетĕп, тем çинчен калаçмаллах.
Пĕлетĕп, сана йывăр, мана йывăр.
Пĕччен — сан юлмалла, ман каймалла.
Кайран вара — хăть йыхăр, хăть ан йыхăр.

Савнийĕм! Çаврака илемлĕ çĕр.
Ăсат яланхилле «сыв пул» темесĕр.
Çип пек тăсăлакан ик çутă йĕр
Ав курăнать таçта пĕрлешнĕ евĕр.

Умра, савнийĕм, вăрăм çул выртать.
Чĕресене хуçать тăварлăн тăвăл.
Санпа халь уйрăлмашкăн йывăр та,
Тĕл пуласси кайран пулать-ши çăмăл?

* * *

Тĕл пулăп-и сана тепре?
Пĕлместĕп. Пурнăç — малалла.
Çак каçшăн та чун-чĕререн
Кун-çулăма тав тумалла.

Тĕл пулăп-и сана тепре?
Пĕлместĕп. Паллă мар шăпа.
Телей пиллен кашни ире
Ят парăп эп сан ятупа.

Тĕл пулăп-и сана тепре?
Çак каç юлсассăн та хыçа
Эс асилтерĕн ĕмĕрех
Тулли, илемлĕ пурнăçа.

* * *

Сыпам-и санăн илемне,
ĕҫсе ярам-и?
Илем-и санăн чĕрӳне,
санпа тулам-и?
Эс юрă та, эс савă та,
эс ҫепĕҫ ҫемĕ.
Тытам-и сĕркĕч,
хĕлĕхне пĕр сĕртĕнем-и?
Ĕҫсе ярсан сан илемне
ыран мĕн ĕҫĕп?
Илсессĕн санăн чĕрӳне
пĕччен-и вĕҫĕп?
Пĕр сĕртĕнсен сан хĕлĕхне
юрру вĕҫленĕ...

Эс пул ҫаплах.
Эс юл ҫаплах.
Таса. Вĕҫевлĕ.

Вара пĕчченлĕхĕм те ман
санпа тăп тулĕ.
Умра выртан ҫул ҫăмăлрах,
тем анлăш пулĕ.
Кăвар ҫунатлă ик чĕре
ҫуталĕ, ҫунĕ,
Хĕвел тĕнчи иксĕмĕре
телей ыр сунĕ.

Эп сыпăп санăн илемне,
ĕҫсе яраймăп.
Эп илĕп санăн чĕрӳне,
санпа тулаймăп.
Эп итлĕп санăн кĕввӳне,
вĕҫне пĕлеймĕп.
Эп ҫунăп, ҫунăп та ҫавах
ҫунса пĕтеймĕп.

* * *

Сенкерлĕхрен, тĕтрелĕхрен
Çуралчĕ-и вĕр çĕнĕ çăлтăр?
Тупмашкăн йывăр килнĕрен
Пуплетĕп: тĕлĕкре ан пултăр.

Пăхап куççулĕ тухиччен,
Куç шариччен сана пăхатăп.
Тăватăп утăм – ирĕлен,
Мана ямастăн çывăха та.

Йĕри-тавра – хĕвел ташши,
Çурхи лĕп çил юрлать таттисĕр.
... Эх, юрату – чĕре ăшши –
Эс вилĕмсĕр, вĕçĕ-хĕррисĕр.

* * *

Куçран пăхсан мĕн куртăн-ши, кала?
Вăтантăн та эс çырла пек хĕрелтĕн,
Чеченнĕн лапчăнса мана пĕçертрĕн,
Ярас килмерĕ пуль инçе çула.

Тапранчĕ пуйăс яр! çурса чуна.
Тапраннă пуйăс хыççăн чупрăн, чупрăн,
Пĕлместĕп, те çухатрăн эс, те тупрăн,
Эс кĕтсе илнĕн туйăнтăн мана.

* * *

Савниçĕм, ман çурта пырса курсан
Ан вăрç мана çынпа танлаштарса.
Хам пурнăçра пухмарăм эп тупра,
Шугларăм: ман пуянлăхăм — санра.

Пуяймăп терĕм пусăн пуçтарса,
Ыр курмăп терĕм ир тăрса ыруçăн,
Сана курап та халĕ — чун яр уçă, —
Сана çитерейместĕп хакласа.

Эс — ман тĕнче.
Эс — пурăнăçăм ман.
Эп çавăнпа
Пуянлăхшăн çунман.

* * *

Кăмăл туртмасть, тархасшăн, ан кӳрен.
Чĕремĕмре хĕлхем те ялкăшмарĕ.
Ан асилсем ман çырусем çинчен —
Çырусенчи сăпай хĕр эсĕ мар-мĕн.

Ан ытала. Чĕре ăшши юлман.
Ай, сивĕ. Çурçĕртен салху çил вĕрчĕ.
Вĕçтерчĕ çулçине кĕрхи юман,
Пăтраннă пĕлĕт ӳкрĕ пĕрчĕн-пĕрчĕн.

ТУЙ ЛАШИ

Кăрлач сивви,
Ирхи кăваклăх.
Юртать ял витĕр тур лаша.
Мĕнле асамлăхпа сăпайлăх
Кĕрсе вырнаçнăччĕ ăша!

Сасартăк тарăннăн та шăппăн,
Сывлăш çăтса çине-çине,
Пуçларăн макăрма эс вăрттăн
Туйса хĕр çулĕ иртнине.

Пуçланчĕ юрă. Хӳхĕм юрă,
Ял тăрăх юрă – ян та ян!
Систерчĕ пек:
Ан кай-ха, пурăн,
Мĕн-ма васкан ачалăхран?

Систерчĕ пек:
Çӳре пĕр ассăр,
Юрат та шутсăр тунсăхла.
Чун туйăмне вакка ямасăр
Вĕри юратăва хакла.

Ах, юрă, юрă. Юмăç-юрă.
Ах, селăм юрă, ан çунтар.
Ачалăх юлĕ.
Юрĕ, юрĕ,
Йăли – пиртен пуçланни мар.

Юртах, лаша, такан шаклаттăр!
Вĕçтертĕр çилĕ ши те ши.
Эс туй лаши паян – апла тăк
Эс çĕнĕ пурăнăç лаши.

* * *

Парнеле мана, мăшăрăм, ывăл,
Ывăл амăшĕ пул часрах.
Тахçанах кĕçĕтет ман ывăç –
Сиктерес килет, ачашлас.

Парнеле ешĕл çӳçлĕ ывăл –
Юратап çуркунне сăнне.
Çуркунне пек янрав та сывă
Килтĕр ывăл хăй ĕмĕрне.

* * *

Сан туртăм вăйĕнчен эп тухаймастăп.
Куллен – йĕри-тавра, йĕри-тавра.
Çĕр çаврăнать, чупать, мана çаврать,
Анчах эп сан патна çывхараймастăп.

Енчен ман улшăнас пулсассăн çулăм –
Е сан çывăхнарах, е инçерех –
Туятăп: вĕçĕ пулĕччĕ пĕрех –
Эп çунса кайăттăм комета-чулăн.

Сан туртăм вăйĕнчен тухма çул çук-тăр,
Çĕрпе хĕвел хĕстерчĕç-и мана?..
Асапланни те кулăшла кăна.
Анчах умра – пĕртен-пĕр çутă çăлтăр.

Ан сӳнччĕ çеç.
Сана курса тăрсан
Эп çаврăнма пăрахмăттăм нихçан.

* * *

Çыхăнусем кунран-кун кăткăс, кăткăс.
Ыран санпа мĕн курăпăр — ай-яй,
Пуçра сĕм вăрманти хăп-хăмăр кăткă
Йăви пек шухăш çаврăнать пĕрмай.

Сенкерччĕ çутçанталăк.
Вăрттăн-вăрттăн
Шик! шăхăрас килетчĕ, тупата!
Пинтен пĕри пулса мана эс вăлтрăн,
Сана эп вăлтрăм. Чĕнтĕм хам пата.

Каçса кайса пире валли юрларĕç
Пур кайăксем те пур хуткупăссем.
Сан куçунтан куççулĕсем тумларĕç —
Чӳхерĕç пирĕн телее вĕсем.

Пăхсам каллех вĕри куççулĕ витĕр,
Ху ытамна илсе мана çунтар!
Хĕвеллĕ янкăр пурнăçа мĕн çиттĕр,
Кăткăслатма ăна тек кирлĕ мар.

СĂПКА ЮРРИ

Ан шавлăр, ватă чăрăшсем,
Ан çапăр çырана, хумсем.
Ан чĕриклетĕр, шăрчăксем,
Ан вĕçĕр, чĕвĕл кайăксем.

Хĕвелĕн ăшă аллисем,
Кунта ан çӳрĕр, кайăрсем.
Çилпе ан кашлăр, чечексем,
Çунат ан çапăр, лĕпĕшсем.

Шăп пулăр, ырă кӳршĕсем,
Çитерĕр тӳсĕм, тăвансем, —
Ман пĕчĕк хĕрĕм çывăрать,
Тĕлĕкĕнче сире курать.

АЛРАН КАЙМИ

ПИЛ ТЫМАРĔ

Çапах — шутлатăп та паян —
Эпир нуша кăна курман.
Пайтах тĕл пулнă ыррине те,
Атте-аннемĕр юррине те
Чи хаклă тупрапа танах
Упранă хуп сăпкаранах.

Аннемĕр пилĕ — чун ăшши,
Аттен — чи çивĕч хĕç йышши.
Ачашлăха этем упратăр,
Çапах хăюллă пултăр, паттăр
Тесе чи ырă кăмăлтан
Пире ӳстернĕ ачаран.

Хăй вĕрентӳ — юрри-кĕвви,
Хăй вĕрентӳ — тĕрри-çĕвви.
Юмахăн тупсăмне каламĕç,
Вĕрен тесе пуçран шаккамĕç —
Йăла-йĕрке вăл ерипе
Ăша кĕрет çăл шывĕ пек.

Ай-хай юрри, чăваш юрри!
Мĕн пур тата унран ырри!
Ĕçре вăл — ĕçлĕ, йыхăруллă,
Кĕрекере — сăпайлă, сумлă,
Çемçе — çурхи уяв çитсен
Янрать юна пăлхатиччен.

Кашни ĕçре те уявра
Хăйне пĕр юрă чăвашра.
Шаккаççĕ тимĕр — юр юрлаççĕ,
Çапаççĕ свай — такмак калаççĕ,
Яраççĕ çĕрĕ сар хĕрсем —
Епле илемлĕ юррисем!

Ларма кайсан та ушкăнпа
Çипне арлаççĕ юрăпа.
Пур кăшарни юрри чăвашăн,
Пур çăварни юрри чăвашăн,
Салтак юрри те туй юрри...
Юрри ун — пурнăçăн çурри.

Çав юрă та — вĕрентекен.
Куллен вăл çын тăвать пиртен.
Хăв еккӳпе кăна кайсассăн
Ыйтать пек юрă çивĕч саслăн:
Эс, çын, манса кайман-и-ха
Сăпайлăха та чыслăха?

Манса кайман-и йыш мĕнне,
Юлхав витмен-и чĕрӳне?
Пĕрин-пĕрин карма çăварĕ
Ял масине ярасшăн мар-и? —
Пурне те юрă асăрхать,
Сăнарлăн шахвăртса калать.

Çĕр! Акă мĕн ялан тĕпре!
Çĕр — пурнăçра та тĕлĕкре.
Ĕçченлĕх — чи хитре пахалăх,
Кахал çынна каçармĕ халăх —
Ял хисепне илтес тесен
Вăран эс тул çутăличчен.

Чее-и, ăслă-и — сана
Ят-сумлă тăвĕ ĕç кăна.
Вăл çеç телей улми тыттарĕ.
Çĕрте — çав улмуççи тымарĕ.
Ăна çемçет те кăпкалат,
Ĕçчен çынна вăл тарават.

Ялан сыв пултăр авалхи
Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атте-аннемĕр!
Ят-сумăра тытма вĕренĕр
Çак кивелми тĕп юрăран,
Вара хур пулмăр нихăçан.

КАҪАЛĂК ВĔҪЛЕРĔ СУХАҪĂ

Ҫакна ют ҫынна кăтартмаҫҫĕ.
Анчах эпĕ куртăм пĕрре:
Каҫалăк вĕҫлерĕ сухаҫă,
Выртса ыталарĕ ҫĕре.
Тарне шăлса илчĕ.
Чуптурĕ,
Чуптурĕ хура тăпрана...
Сасартăк, чан ҫапнă пек, юрă
Хупларĕ мĕнпур таврана.
Сасартăк ҫĕкленчĕ мăнаҫлă
Тахҫан анса ларнă хĕвел.
Ăҫтан ҫавăн чухлĕ асамлăх,
Ăҫтан ҫавăн чухлĕ мехел
Ҫак ырă сухаҫăн?!
Тăванăн,
Ман тантăшăн, тимĕрҫ ачин?
«Тархасшăн, — чĕнет вăл, — халь манăн
Патшалăха кĕрĕр эппин».
Эп кĕтĕм.
Фонтан тапнă евĕр
Ҫӳле вăркăшан тырăра
Ҫут ĕмĕтĕн сăрчĕ, атьсемĕр,
Ҫывхарчĕ, вылярĕ умра.
Эх! Чаплă-мĕн тырă тивлечĕ —
Таса, пархатарлă тивлет:
Таҫта паҫăр вăрҫă кĕрлетчĕ,
Халь, итлĕр, ав, юрă кĕрлет!
Ҫиҫет тырă ҫумăрĕ витĕр
Садсем айне пулнă хула,
Завод хапхинчен пĕр таттисĕр
Машинăсем тухрĕҫ ҫула.
Тем пысăкăш кантăклă ҫуртăн
Ҫынна тарават алăкне
Хăюллăн пырса уҫса кур та —
Эс лекĕн сухаҫă килне.
Эс курăн унта балерина,
Поэт эсĕ курăн унта.
Пĕр хĕрĕ калать пианино —
Шопен тунсăхлать ҫĕр хута.

Курсамăр: епле илĕртӳллĕ,
Епле килĕшӳллĕ тĕнче!
Ăс-хакăллă пурăнăр – çӳллĕ,
Хĕрӳллĕ хĕвел айĕнче.
... Юмах тĕнчи пек кĕрхи каçăн
Асамлăхне туйрăм тӳрех, –
Каçалăк вĕçлерĕ сухаçă,
Выртса ыталарĕ çĕре.

УЛА-ПАТТĂР

Мĕнлерех цирк лаши!
Чĕнсене пит ăста ылтăнланă.
Йăлтăр-ялтăр тăвать
Ун йĕвенĕ çинчи çут ахах.

Тĕлĕнме маннă çын
Халь, ăна курнă чух, çунатланнă:
Пур-çке, пур, юлташсем,
Тĕнчере тĕлĕнтермĕш пурах!

Анчах акă мана
Урăххи,
Тахçанхи аса килчĕ,
Сĕм вăрман çулĕсем,
Вырмари шутсăр йывăр кунсем...

Йышлă марччĕ çемье.
Эпĕ çав çемьере кĕçĕнниччĕ,
Пӳрнеске-ха тесе
Лăпкамарĕç мана аслисем.

Лашасем ырханкка,
Ăйăрсем вăрçăран таврăнмарĕç.
Пурччĕ манăн та ут.
Ула-паттăр ят пачĕç ăна.

Паттăр пулнăшăн мар,–
Ун, мăнтарăнăн, шав
Тулли лав –
Урапа та çуна.

Тăвăлра,
Йĕпере,
Çунтарса ярасла шăрăхра та
Канăç çук ун валли.
Ыр ута ăмринчен лăпкаса,
Турта çӳллĕш ача,
Эп ăна пулăшма тăрăшаттăм:
«Эй, тăванăм, чăтах.
Ту çинче кăштах илĕн канса».

Куççулленнĕ куçсем
Ачана ăнланатчĕç пулас-и? —
«Чăт, ача,
Чăт, ватти,
Чăт, хĕрарам.
Эп çитĕп тăва.
Килĕ вăхăт пĕрре.
Пурте пулĕ — телейĕ, хавасĕ», —
Тенĕ пек,
Хирĕнсе
Ула-паттăр туртатчĕ лава.

Ун ятне халь лартас,
Ăсталас ун ятне пысăк палăк.
Йăнăш пулмĕччĕ, çук.
Пурте çӳрĕччĕç палăк патне —
Пĕчĕкки, пысăкки.
Лайăхрах пĕлсе тăрĕччĕ халăх
Вăрçă питĕ асаплă,
Вăрçă питĕ хаяр пулнине.

УЯВ ЮРРИ

Юр пуҫласа юрларăм,
Пит шух тесе ан калăр.

Халăх юрринчен

Епле вăл хӳхĕм те чĕп-чĕрĕ
Чăваш юрри,
Уяв юрри!
Ак ҫакăн пек пулать пуль хĕрĕн
Хăй савнине парас тĕрри.

Епле вăл ҫутă,
Йăлтăр ҫутă!
Унра — чăваш чĕри ҫунни.
Чăнах, ун чухлĕ вăйă ҫук-тăр
Кăвак хуппи ялтăранин.

Епле сăпайлă вăл,
Атьсемĕр,
Ав курăр, йышăнмасть шуха,
Ҫăл ҫӳп-ҫапа «тиркенĕ» евĕр,
Кĕртмест вăл майсăр сăмаха.

Вăл кивелмест.
Вăл шăнкăр-шăнкăр
Юхать мĕн ĕмĕр тăршшĕпех,
Ҫӳл тӳпери чи ҫутă ҫăлтăр
Тахҫан тапратнă ташши пек.

Епле вăл ăслă та сăнарлă!
Вĕрен, ҫыравҫă, халăхран.
Сăвву чĕп-чĕрĕ те сăпайлă,
Янравлă, ҫутă пултăр сан.

* * *

Мухтав сана, пĕрчĕ,
Эс пурнăç хăвах.
Эс шăтăн, эс ĕрчĕн,
Кĕттермĕн вăрах.

Ем-ешĕллĕн тухăн,
Çурхи тĕнчерен
Е ăшă, е сулхăн
Эс ыйтăн куллен.

Çĕкленĕн патваррăн
Çӳлтен те çӳле.
Çапла пуç кăларăн
Çу çитнĕ тĕле.

Хаваслăн хумханăн
Хĕвел хӳттинче.
Пĕрре эс кун парăн
Вĕр çĕнĕ пĕрче.

Йĕс пек çирĕпленĕн,
Эс куçăн тырра,
Ахахăн, хĕвелĕн
Çуталăн вара.

Çав çутă пуль кĕчĕ
Поэт чĕрине.
Мухтав сана, пĕрчĕ,
Мухтав ĕмĕрне!

АННЕМĔР

Çуркуннепе анне сăнарĕ
Мана пĕр евĕр туйăнать.
Телей сунса аннемĕр мар-и
Çурхи кун пек пире лăпкать?

Çут хĕвелпе анне сăнарĕ
Мана пĕр евĕр туйăнать.
Ытарайми аннемĕр мар-и
Чун ăшшине пире парать?

Çĕршывпала анне сăнарĕ
Мана пĕр евĕр туйăнать.
Çĕршывăм пек аннемĕр мар-и
Пире вăй-хал парса тăрать?

ТУСЛĂХ ÇИНЧЕН

Кĕтменччĕ эп çакна.
Тăван килте
Кăшт калаçма та
Ĕлкĕрменччĕ эпĕр.
«Юлташусем камсем?» –
Ыйтать атте,
«Мĕнле-ха сывлăху сан?» –
Тенĕ евĕр.

Ыр кăмăллă аттем!
Çак пурнăçра
Чи тĕрĕсленнĕ чăнлăх
Пур-мĕн санăн:
Тĕнче екки килет
Тус-юлташран –
Пуян пулнишĕн мар,
Туспа эс савăн.

Хăв тантăшу,
Тусу – Митта пичче
(Эс ун çинчен мана
Миçе каланă!)
Санпа çӳренĕ
Граждан вăрçинче,
Чи юлашки чĕлле
Санпа пайланă.

Эс туйнă туслăха
Тăван ялта
Хăв пек хавас йышпа
Хире тухсассăн,
Ăна эс пĕлнĕ
Сĕмсĕр фашиста
Йĕрленĕ чух
Сасартăк амансассăн.

Тус-тантăшсем сана
Пĕтме паман,
Сана çеç мар –
Çуратнă çĕршыва та...
Ак мĕншĕн
Юлташсем çинчен паян
Эс канăç çухатса
Манран ыйтатăн.

ИР КАЙНĂ ТĂВАНСЕМ

Ир кайнă тăвансем,
ăсаннă тантăшсем,
сас парайми туссем,
ытарайми ҫынсем,

Умрах, асрах, чунрах
чĕп-чĕрĕ сăнăрсем,
янраҫҫĕ хăлхарах
сăваплă сассăрсем.

Ик куҫăм шывланать,
эсир – пĕртен-пĕрре.
Ҫумрах пек туйăнать –
шел, курма ҫук сире.

Тур пулăш – сирĕлтĕр
ик куҫăмри тĕтре.
Эп тăлăх сирĕнсĕр
ҫак шавлă тĕнчере.

Атте-анне пилне,
тус-тантăш ăшшине
эп пухрăм чĕрене
ыр ҫимĕҫ вырăнне.

Ман мĕн тăвас унпа,
ҫак хаклă пурлăхпа? –
Эп юлтăм куҫа-куҫ
ҫак йывăр ыйтупа.

Ҫак сар хĕвел ҫуттин
ан пултăрччĕ хуппи,
нихҫан ан татăлин
тăван йăхсен сыппи.

Сас парайми туссем,
тӳлеккĕн канăрах,
ир кайнă тăвансем,
асрах эсир, асрах.

ПИЛРЕ — ПĔТĔМ ТУПСĂМ

Ăнать çав Пурхилĕн...

Пĕри ман пирки каланинчен

Ăнать-и, ăнмасть-и — калаймăп,
Анчах уçас тетĕп чăнне —
Шăпам çапла килнĕшĕн айăп
Тăваймăп йăх-несĕлсене.

Ăнать-и, ăнмасть-и Пурхилĕн?
Ытах пĕлес тетĕр пулсан, —
Хĕвелĕм — атте-анне пилĕ,
Эп çав хĕвеле çухатман.

Пилре — пурнăçри пĕтĕм тупсăм,
Пилре — Турă панă тивлет,
Ытти — пирĕн ĕç, пирĕн усă —
Пиле тытнине пĕлтерет.

Йăхсен пилĕнчен эп тухмарăм,
Пилпе хĕвеле пĕр туса,
Суя сулнăка сулăнмарăм
Сума та, чыса та сутса.

Ăнать тĕк — пурах пархатарăм,
Тĕшне тавăрать кив капан —
Канмарăм, ĕçлерĕм, тарларăм
Хевтем çитнĕ чухлĕ ялан.

Мĕнпур ыррине мала хутăм.
Телейĕм çитейĕччĕ ман
Чăвашăм манпа тепĕр утăм
Сулмаклăн ярса пусайсан.

ЭХ, ПУРА ПУРАСЧӐ МАН...

Эх, пура пурасчӗ ман,
Эх, пурасчӗ,
Никӗсне кӗреш юман,
Эх, хурасчӗ.

Эх, пура пурасчӗ ман,
Эх, пурасчӗ,
Çӑкаран е хырӑран
Хӑпартасчӗ.

Эх, пурасчӗ пурине,
Эх, пурасчӗ,
Кантӑкне хӗвел енне,
Эх, касасчӗ.

Эх, пура пурасчӗ ман,
Эх, пурасчӗ,
Тӑррине чӑпар автан,
Эх, лартасчӗ.

Эх, пурасчӗ пурине,
Эх, пурасчӗ,
Туссене кӗрекене
Йыхӑрасчӗ.

Эх, пура пурасчӗ ман,
Эх, пурасчӗ,
Ял-йышпа килӗштерсе
Пурӑнасчӗ.

Эх, пурасчӗ пурине,
Эх, пурасчӗ,
Пӳрт тулли ачасене
Ыр тӑвасчӗ.

Эх, пура пурасчӗ ман,
Эх, пурасчӗ,
Çӗнӗ вӑрçӑ тухасран
Хӑрас марччӗ.

... Çак юрра эп кӳршӗрен
Пӗлтӗр илтрӗм.
Пӳрчӗ ун паян — кермен,
Ӗмӗт çитрӗ.

Тем те чӑтнӑ кӳршӗ ман,
Тем те курнӑ.
Мӗн тери иккен аван
Канлӗ пурнӑç.

АННЕ ТӖРРИ

Юрла-юрла анне тӗрлетчӗ тӗрӗ,
Сасси-тӗрри çут хӗвел пек çиçетчӗ.
Те иртнине чӗнетчӗ кунӗн-çӗрӗн,
Те каччӑ-аттене аса илетчӗ?

Çич тӗслӗ асамат кӗперрине
Анне хыватчӗ шурӑ пир çине.

Макра-макра анне тӗрлетчӗ тӗрӗ,
Сасси-тӗрри ун хурлӑхлӑн чӗтретчӗ.
Те тӑшмана ятлатчӗ кунӗн-çӗрӗн,
Те вилнӗ аттене кӗтсе йӗретчӗ.

Хура хӗрес — хура ылхан ятне
Анне лартатчӗ шурӑ пир çине.

Руна çырулӑхне хӗрсех тӗпчетпӗр:
Мӗн калӗ-ши пире çак вӑрттӑн тӗрӗ?
Кун-çул унта — çавна аван пӗлетпӗр —
Кун-çул унта тапса тӑрать чӗп-чӗррӗн.

Ан тив, пуçтартӑр тӗрӗ малашне
Хӗвелӗн çитмӗл çичӗ вӑййине.

КАЛАÇМАРĂМĂР ÇĂКĂР ÇИНЧЕН

Дмитрий Михлеева

Япăххи манăçать пуль иккен...
Калаçмарăмăр çăкăр çинчен.
Сукмакпа утнă чух ик енчен
Пучах çеç çапрĕ пирĕн питрен.

Пуш сăмахăн пĕтмерĕ тĕрки –
Шав тавлашрăмăр космос пирки.
Те тулличчĕ, те выçă пучах? –
Çак аса та килмерĕ пачах.

Тăван ял... Тăван хир... Укăлча...
Чим, мĕскершĕн талт! тапрĕ чĕре? –
Юнаса ăсатать пек пире
Вăрçă хыççăнхи вăйсăр ача.

ТĔЛĔКПЕ ЧĂНЛĂХ

Эп тĕлĕкре çĕркаç курсаттăм ăйăр,
Кăлкан пек шурă çилхинчен тытса
Çĕклентĕмĕр унпа çак питĕ тăвăр,
Çак питĕ шавлă тĕнчерен хăпса.

Вут кайăк пек вĕçтертĕмĕр хăюллăн,
Пĕр ĕмĕт-шухăш пирĕн – çӳлелле.
Алла тăсса пыратăп пултаруллăн
Халь-халь тытас пек çутă хĕвеле.

Шанатăр-и çавна – чăн пулчĕ тĕлĕк.
Кӳл хĕрринче эп куртăм ирхине
Çав шурă ăйăрпа пĕрле вунпилĕк
Çулхи яш пӳллĕ кӳршĕ ачине.

Вăл ăйăра шăварчĕ, хыркăчларĕ,
Вăл ăйăра лăпкарĕ ăмринчен,

Утланчĕ те – хайхи вут кайăк мар-и? –
Çухалчĕ ăйăр куçăм умĕнчен.

Ăçта эс кайса кĕтĕн, ман шур ăйăр?
Ăçта эс халь, вунпиллĕкри ача?
... Ачалăха, туссем, кирек мĕн тăвăр,
Эпир куратпăр тĕлĕкре анчах.

ТЫМАР СĔТКЕНĔ

Эпир – çĕртен, шывран та сывлăшран.
Эпир – хĕн-асапран, йăл кулăран,
Эпир – кĕвĕçӳрен, юратуран,
Эпир – тăнăçлăхран, çапăçуран.
Эпир – пит аякри аваллăхран.

Тымар сĕткенĕ пĕтĕмпех упрать:
Манра – ман несĕл хурлăхĕ-ыратăвĕ,
Манра – ун çутă шанчăкĕ-юратăвĕ,
Манра – ун чăнлăхшăн çуннин пăлханăвĕ.
Ман несĕл чунĕ-кăмăлĕ – манра.

Килет çак аслă пурнăç тымартан.
Ман ывăлра та – ман таса сăпайлăхăм,
Ман ывăлра та – манăн курайманлăхăм.
Эппин, пуласлăхра та сĕм аваллăхăн
Кăварĕ сӳнмĕ.
Пĕл çавна, тăшман!

ҪĂКĂР

Поэма

Ҫăкăртан асли çук.
Ваттисен сăмахĕ

I

Ват Украина çĕрĕпе
Утать асаплăн, тертлĕн Çеçпĕл.
Вăй-хал килте лармалăх çеç те –
Утать вăл чун хавалĕпе.

Мĕн сывлăх? –
Халăх сыв пулсан.
Асап мĕн? –
Халăх терт ан куртăр.
Тăван чĕлхемĕр сывă юлтăр,
Ан пĕттĕр халăх выçлăхран.

Лерен, мăн Атăл хĕрринчен,
Чуна касать пин саслă:
«Çăкăр!
Туссемĕр, пулăшсамăр, çăлăр,
Туссем, хăтарăр инкекрен!»

Чуна йĕп пек тирен йыхравăн,
Ах, йуçĕ те хаяр сасси.
Эс, Çеçпĕл, чирпеле ан авăн,
Сан тивĕçӳ халь – çăласси!

Ан тив, асапĕ те элекĕ
Йăлт килчĕç çăкăршăн анчах –
Малтан улпучĕпе тиекĕ
Сĕнмерĕç чĕлĕ те пачах.

Кайран, тарпа юн каснă çăкăр
Хакне пĕлме вăхăт çитсен,
Чăваш телейĕ йăлтăр-йăлтăр
Хĕвел шевлиллĕн йăл илсен

Хăравçă йĕксĕкĕн тăхланĕ
Пырса тивертнĕн çурăмран
Сана сасартăк чир тăлланă.
... Йăлт килчĕ пулĕ çăкăртан.

Вуншар тулли лав хыçĕнче
Утать вилес пек чирлĕ Çеçпĕл.
Хĕвел сапан тырри çитес тĕл –
Тăван Чăваш çĕршывĕнче.

Çук, çук! Хăвна эс пĕтермен.
Чи юлашки самант вăй-халлă
Эс пăхнă вилĕм куçĕнчен.
Вара каланă:
«Эп – е халăх».

II

Юн каснă çăкăр, тарлă çăкăр
Шăпи çинчен шутланă чух
Нихçан та хам аттен пĕр йывăр
Асилĕвне эп манас çук.

Вăл – Волхов фрончĕн рядовойĕ,
Вăл – снайпер – фрицшăн сехремет.
Çĕре йăваннă... Чакнă вăйĕ,
Вăл сиснĕ: кун пĕтсе килет.

Лăпланнă çапăçу. Уй тăрăх
Йуç тĕтĕм шунă явăнса.
Çĕр курăннă ытла та тăлăх –
Çĕршер çын юлнă тăкăнса.

Аттен ыратăвĕ, ылханĕ
Ăша капланнă самантра
Тискер вăрă-хурах çăханăн
Пĕр çын тем хĕвĕшнĕ уйра.

Тара ӳксе тăрмашнă сăвăр –
Е сутăнчăк, е дезертир:
«Вилни чĕнмест. Пухас-ха çăкăр»
Пĕр шухăш пулнă ун çак ир.

Тăван çĕршыв ятне ямасăр
Хăюллă çапăçнă аттен
Вилес килмен хăватсăр-халсăр.
Ун, çĕр çине йăваниччен

Пĕр тивĕç юлнă. Хăй валли
Хăварнă пульăпа вăл меллĕн
Тĕп тунă ирсĕре тирпейлĕн.
Унтан тин усăннă алли.

... Шăпа-и? Халĕ шутлăр хăвăр,
Пурнать атте. Тав кун-çулне –
Вĕр çĕнĕ кăпăшка шур çăкăр
Илем кӳрет ун сĕтелне.

Çук, шăпа мар! Юлташăм, эс пĕл
Чуралăхпа телей çинчен
Астутарса хăй ларнă Çеçпĕл
Аттен вĕри чун-чĕринче.

III

Çынна хăват пилленĕн ĕмĕт
Вăл килнĕ, çăкăр. Пĕрчĕрен
Пин-пин пулса, чĕр пурнăç хĕмĕ
Сапса тăмашкăн кунсерен.

Куçпа курми пĕр пĕчĕк атом
Вăйне чухлатпăр халь эпир.
Вăл, çăкăр, атомран та паттăр,
Вăл хăй – пĕртен-пĕр пăхаттир.

Апла пулсан пĕр вĕçсĕр улăп
Çак çĕр çинче çуралмаллла.
Ĕç-хĕл, телей те савăк кулă
Çак тĕнчене янратмалла.

Тăван анне пек çутçанталăк
Телей курма чĕнсе çынна
Уçса парать пулсассăн алăк,
Хăех вăл хуптăрччĕ ăна.

Анчах... пĕрре сиксе тухать те
Е Гитлер, е Наполеон –
Выртса юлать çап-çамрăк халлĕн
Шăп та лăп аллă миллион.

Эй, çăкăр! Ирĕклĕх кăварĕ!
Пĕр саншăн лăпкă мар тĕнче –
Вăйпиттĕнех ӳкет Гевара
Инçе Боливи çĕрĕнче.

Е Чилие аса илен те
Чунра – пăлхавлă тарăху.
Ытла ир пĕтрĕн эс, Альенде,
Кĕтетчĕ çăкăр халăху.

Ах, çăкăр, çăкăр! Сумлă çăкăр!
Санра эп вăрçă сăлтавне
Курасшăн марччĕ те, çĕр çăттăр
Санпа вылян мул хуçине.

Санра мĕнпур пуянлăх уншăн:
Эрехĕ, ылтăнĕ, майри...
Ытла та çак тĕнче хăрушă
Чĕнми ларсан. Туятăр-и?

Анчах та аллă миллион,
Анчах Альендепе Гевара,
Çунса кайса вĕри кăваррăн,
Ак, – терĕç, – пирĕн рубикон:

Кам çăкăра чура тăвасшăн,
Кам мул шутне хурать ăна,
Çав кайтăр малалла, тархасшăн,
Анчах... эпир вилсен кăна.

Куратăп, ку вăл – Çеçпĕл чунĕ
Мĕльюнсенче сиксе вĕрет.
Апла тăк Çĕн акан Çĕн кунĕ
Сӳнмесĕр тăрĕ ĕмĕрех!

IV

Тин пиçнĕ çăкăр — чун уççи вăл.
Ун ячĕ пит хитре янрать.
Анчах... эрни-эрни ан çывăр,
Çулталăка ерçӳ çухат.

Чи аслă юрату арманĕ
Сан чĕрӳне пăлхатмалла,
Юлташ, çак ырлăхра манман-и
Эс çитмĕл иккĕмĕш çула?

... Яла çитес тесе васкаттăм,
Çухалчĕ савăнăçăм ман:
Хуралнă, типнĕ, куштăрканă
Хĕвел пушарĕпе вăрман.

Эрне-эрне шыв-шур курмасăр
Пушхирпеле çын утнăнах
Тĕл-тĕл вуçех шăркаланмасăр
Салхуллăн усăннă пучах.

Вут чĕлхи пек — пырса ан çулăх
Ăçта ан пăх — вĕри ăрша.
Çĕр сĕткенне ĕмет çав «çулăм»,
Ĕмет непсесĕр, апăрша.

Калаçура пĕр тема — шăрăх,
Ăçта-ши çумăр, иçмасса!
Çĕре нимпе пулăшасса
Пĕлмесĕр утрăм эп ял тăрăх.

Кайран тин куртăм. Пулчĕ кăлăх
Пăшăрханни те кулянни.
Çак нушара пулмарĕ тăлăх
Ĕçчен те харсăр ял çынни.

Хăватлă та пуян патшалăх
Пиллерĕ хăйĕн «çумăрне»,
Парне сĕнет рабочи халăх
Цистернăсен эшелонне.

... Кайран, колхоз пуссийĕ чăшăл
Сасартăк çĕкленсе кайсан,
Кайран, йĕтем çинчи сар кăшăл
Тем анлăш выртнине курсан,

Ăнлантăм эп: утма тивмерĕ
Лав хыççăн Çеçпĕл пек куллен.
Чи çирĕп туслăхăн кĕперĕ
Пире хăтарчĕ инкекрен.

Ăнлантăм эп: çĕнтерчĕ халăх
Тăванлă-йышлă ушкăнпа,
Темле йывăрлăхран тухмалăх
Хăвачĕ пур ун çавăнпа.

V

Сĕтел çинче — чăлт шурă çăкăр.
Ăна пĕр чĕлĕ касиччен
Хирург пек тĕплĕн алă çăвăр:
Чăваш йăли ку ĕмĕртен.

Турри, шуйттанĕ... Вăл йăвашшăн
Хăват шыранă хăй валли.
Анчах та Çăкăр! Çук, чăвашшăн
Никам пулман унран асли.

Киремете аш-пăш е çăкăр
Пухса ялпа пуççапнă чух
Тĕпренчĕке чăваш, астăвăр,
Тăкса, персе хăварас çук.

Пит шăллипе витсе тирпейлĕн
Чăваш упранă çăкăра.
Вăл пур тăк пулнă ун хĕвелĕ,
Вăл çук тăк çуннă тамăкра.

Ура çине тăрса хăватлăн
Пулмарĕ халăх хĕн хурри.
Çав çăкăртан çĕр пин сăмах ун,
Çĕр пин эрешĕ те юрри.

Пĕрре ман тивĕçĕм – шыратăп
Çĕр пин пĕрремĕш сăмаха.
Вăл – ман сăмах – вутра, шывра та
Мала çеç чĕнтĕр халăха.

Çав сăмаха илтсе хавассăн
Шупашкарти пĕр сталевар
Рекорд тумашкăн шут тытсассăн
Мана тек ним те кирлĕ мар.

Çав сăмахпа уй-хир ĕçченĕ
Хавхаланать пулсан куллен,
Юратнă халăхăм, ĕненĕн:
Эп çăкăра ахаль çĕртмен.

Хĕç евĕр çивĕч ман сăмахăм
Тирсен тăшманăн чĕрине,
Çак çĕр çинчен хĕн-хур çăтмахĕ
Кайсассăн хăйĕн çăвине,

Тĕнче тасалăхĕ, тирпейĕ
Чуна лăпканă самантрах
Ак тупăнчĕ, туссем, вăл тейĕп –
Çĕр пин пĕрремĕш çав сăмах.

Хастаррăн утăп, ывăнмасăр
(Юрать-и Çеçпĕлтен юлма!)
Ĕçчен калать пулсан пăхмасăр
Чунпа шăратнă сăввăма!

VI

«Мир!» тенĕ пек янрать вăл, çăкăр,
Тăван Чăвашăн кун-çулне
Аса илетĕп те, çут çăлтăр
Карти тухать ак куç умне.

Çăлтăрсемпе вунсакăр талăк
Калаçнă паттăр Андриян
Тăван ялне килет те, халăх
Тухать ватти-вĕтти таран.

«Мĕнле-ха сывлăху сан, кăйкăр?» –
Ыйтса пĕлмешкĕн пуçличчен
Ял-йыш сĕнет тав тунăн çăкăр
Хăй ывăлне чун-чĕререн.

Вăл, космонавт, илет сăпайлăн
Хресчен пĕçернĕ çăкăра.
Вăл активет ăна. Асамлă
Хăват çунмасть-и халь унра!

Каллех вăл космоса çĕкленĕ,
Ун йĕрĕ сӳнмĕ пĕлĕтре,
Çав çутă йĕр, туссем, ĕненĕр,
Пăхсассăн туйăнĕ пире

Ахах-мерчен пучах шевлиллĕн.
Вăл хĕвеле савса куллен
Шав çĕкленет шăтса вăй илнĕ
Хăватлă Çеçпĕл Тырринчен.

ÇУНАТЬ ÇУРТА

Асаттесен «хули» ял хĕрринче.
Йĕс чан сассиллĕ çимĕк кунĕнче
Юманпала çăка сулхăнĕнче
Çавра та ешĕл тĕмеске çинче
Çунать çурта
Атте-анне хĕресĕ умĕнче.

Çӳлте, çут тӳпере, пуç тăрринче,
Тытса-ши сар хĕвелĕн çиппинчен
Ытла та, ман хăраххăм, пĕр-пĕччен
Пĕр пуçласа вĕçне те пĕлмиччен
Те хăй çинчен, те ман шăпа çинчен
Юрлать тăри.
Çунать çурта
Атте-анне хĕресĕ умĕнче.

Кайри Çырман сĕвек çыранĕнче
Çăлкуç тапса тухать çĕр тĕпĕнчен.
Кĕркке хитрен вылять ун шывĕнче.
Çырма ик енĕ — йывăç та чечек —
Хур-кăвакалшăн ырлăхлă тĕнче.
Шăнкăртатса ир пуçласа ирччен
Тапать çăлкуç.
Юрлать тăри.
Çунать çурта
Атте-анне хĕресĕ умĕнче.

Çук, çук, ял-йыш, эп тăлăха юлман.
Ман çухатас-и хамăн шанчăка? —
Аттеçĕм пулса тăчĕ яш юман,
Аннеçĕм пулса тăчĕ сар çăка.
Пĕрин сасси — тăри юрланинче,
Теприн сасси — çăлкуç янравĕнче.
Ан калăрах, çĕршывăм, çич юта.
... Çунать çурта.

* * *

Тахçан, пĕрремĕш кун, эп çуралсан,
Телей куççулĕпе питне çусан,
Ырра пуль, лайăха пуль тет анне,
Эп куртăм тет çĕн уйăх тухнине.

Тахçан, пĕрремĕш кун, эп çуралсан,
Фронтри аттем çапăçăва тухсан
Çĕкленчĕ тет, алхасрĕ тет пушар,
Атте шутларăм тет — ку ырра мар.

Паян атте эп хам. Ача çумра.
Пушар та тĕтĕм явăнмасть умра.
Çĕн уйăха хупларĕ çеç тĕтре —
Темме-çке çурăлса тухать чĕре.

РЕЙХСТАГ ҪИНЧИ ЯЛАВ

Рейхстаг ҫинчи ялав,
Рейхстаг ҫинчи хĕрлĕ ялав ҫут тĕнчене
Хĕвел ҫути сапсан,
Телей ҫути сапсан
Мĕн туйрăн эс, салтак, ҫавăн чухне?

Ҫĕнтертĕмĕр! Ҫĕнтертĕмĕр! Ҫĕнтертĕмĕр!
Ак ҫитрĕ тавăру та терĕн пуль.
Чăнах та иртрĕ-ши нушамăр-тертĕмĕр?
Ҫĕнтертĕмĕр! Ҫĕнтертĕмĕр! Ҫĕнтертĕмĕр!
Куҫна тӳрех хупларĕ пуль куҫҫуль...
Таса куҫҫуль...
Вĕри куҫҫуль...

Хыҫра - тăватă ҫул,
Умра вара мĕнпур кун-ҫул пулассине
Туйса эс тăтăн пуль,
Эс аса илтĕн пуль
Ҫапăҫура вырtса юлнисене.

Ҫĕнтертĕмĕр! Ҫĕнтертĕмĕр! Ҫĕнтертĕмĕр!
Каҫарăрах, пуҫ хунисем, пире...
Ылханлă тăшмана пĕрле тĕплерĕмĕр
Анчах сире ҫăлса ҫитереймерĕмĕр.
Эсир курмарăр ҫак ҫурхи ире.
Хисеп сире,
Мухтав сире!

Рейхстаг ҫинчи ялав,
Рейхстаг ҫинчи совет ялавĕ тĕнчене
Хĕвел ҫути сапсан,
Телей ҫути сапсан
Каларăн эс, салтак, тăшмансене:

«Ҫĕнтерĕпĕр! Ҫĕнтерĕпĕр! Ҫĕнтерĕпĕр!
Хĕҫпех пĕтет хĕҫпе хăмсаракан!
Тĕрĕслĕхре те туслахра — тĕрекĕмĕр,
Ҫĕнтерĕпĕр! Ҫĕнтерĕпĕр! Ҫĕнтерĕпĕр!
Мир яланах хăватлă вăрҫăран!
Ҫавна, тăшман,
Нихҫан ан ман!»

ÇТУППАН ТЕТЕ

Инке калать: «Кăшт вырт-ха, тĕршĕн,
Ав вырăн сартăм кĕлете».
Мĕн пулчĕ-ха, ман ырă кӳршĕм,
Мĕн пулчĕ-ха, Çтуппан тете?

Сăну — шуркам. Сассу хавшанă,
Кĕреш пек çирĕп ӳт-пӳне
Мĕн мурĕ-ши килсе тыллană,
Мĕскер кăшланă ӳпкӳне?

Пулни — тек турă ан кăтарттăр.
Аçу килмерĕ вăрçăран.
Пурнас пулать! Пĕр кивĕ трактор
Хуса эс килтĕн Çĕньялтан.

Имшер кăна, çапах та каччă,
Çапах мал ĕмĕтлĕ, тӳрккес,
Сухаламан ана нумайччĕ,
Çав сухана çĕклерĕн эс.

Паха апат мĕнне пĕлмесĕр
Çĕрле килеттĕн те килне
Мĕскер хыпас-ха тенĕ евĕр
Куçран пăхаттăн аннӳне.

Аннӳ! Ун хăйĕн те çав шухăш.
Вăл хăй тин таврăннă хиртен.
Пур чух сĕт-турăх, пашалу кăшт
Килсе илетчĕ вăл пиртен.

Мĕн-ма тесен аттеçĕм пурччĕ,
Фронтран суранлă килчĕ те,
Çапах пире пит лайăх пулчĕ,
Ик çурт валли халь пĕр атте.

Йывăрлăхра пуçа пĕкмесĕр,
Ӳпкелешмесĕр пурăнма
Пире вĕрентрĕ вăл, аттемĕр,
Сăмах та çитмĕ тав тума.

Сан, кăтра çӳçлĕ чĕрĕ каччăн,
Пĕр ним те çукчĕ пĕлменни.
Тен, эс профессор пулмаллаччĕ –
Кил çăмăлрах кăшт самани.

Колхоз комсоргĕ, ял мухтавĕ,
Сăпайĕ-чысĕ пулнăран
Малта пыракансен ялавĕ
Ӳкмен сан çирĕп аллунтан.

Çавна курса пĕр кĕвĕç чунлă,
Пĕр пуш чĕреллĕ хулиган
Сана хăварчĕ хăрах куçлă.
Паллах, сурать пуль çав суран.

... Ылханлă вăрçăн вĕçĕ пур-ши?
Тăхлан çитет – миçе çултан...
Эс вăрçăра пулман, ман кӳршĕм,
Çапах аманнă эс унта.

УЙРĂЛУ ВАЛЬСĔ

Паян
Каç ачаш,
Каç илемлĕ, чĕкеç чĕппи евĕр.
Паян
Каç хитре,
Илĕртӳллĕ юмах вĕçĕ пек.
Паян
Санпала ним çинчен калаçма пĕлеймесĕр,
Куçран куç илмесĕр
Санпа çаврăнатăп
Çак тунсăхлă вальс çеммипе.

Эй, шкул –
Пирĕн ырă та çутă ачалăх ĕшни!
Эй, шкул –
Савăнни, шырани, хĕмленни, юратни!
Тăхта,
Эс пире каламашкăн тăхта: «Сывă пул!»

Кăштах савăнар-ха,
Юрлар-ха, ташлар-ха,
Пулар-ха санпа, тăван шкул.

Сăнать
Савăнса та,
Шанса та юратнă учитель,
Курать
Вал пирте
Хăйĕн çамрăк таса ĕмĕтне.
Шанах,
Ырă тус, эпир халĕ тултарнă вунçиччĕ.
Çут ĕмĕт тулинччĕ.
Хăюллăн тухатпăр
Вĕри пурнăç çулĕ çине.

Килет
Тухăçран
Ылтăн-кĕмĕл сапса савăк шуçăм.
Янрать,
Таврана ыткăнать пирĕн çулăмлă вальс.
Паян
Санпала калаçма пĕлейместĕп эп, тусăм,
Ачалăхри тусăм,
Санпа çаврăнатăп,
Епле ман санпа уйрăлас?

АН ТУХНĂ ПУЛ ЭС КАЛĂПРАН...

Мана хам пек пулма чарса
Ачаранах пуçран шаккарĕç.
Чупасчĕ теттĕм ир тăрса,
Çут сывлăм çийĕн йĕр туса
Çара уран, çарран ямарĕç, –
Шăнса пăсăласран хăрарĕç.

Туртатчĕ тулăх Çарăмсан,
Час-час шыва чăмма тивмерĕ.
Епле сикес килетчĕ ман
Унти чи çӳллĕ çырантан

Чарлан пулса. Çук, май килмерĕ.
Шыва путсан мĕн пулĕ терĕç.

Пырса кĕрсессĕн Йăлăма
Чĕрем хĕпĕртесе сикетчĕ.
Юман тăрне ухса хама
Шик! шăхăрса лăплантарма
Ай тур, рехечĕ тем чухлехчĕ,
Анчах çумри атте пӳлетчĕ.

... Хăй пек ак ывăлăм паян.
Ăна хăй пек пулма чаратăп:
Пĕл вăтанмашкăн халăхран,
Ан тухнă пул эс калăпран –
Те эп ăсла персе калатăп,
Те ывăл вĕçевне тататăп.

ÇĔНТЕРӲ КУНĔ

Курни-илтни-ши ку, анне самахĕ-ши? –
Пуçран тухмасть, аса килет ялан,
Киле пырса хыпар пĕлтерчĕ тахăшĕ:
«Вĕçленнĕ вăрçă... Савăнăç паян».

Атте те ман – салтак.
Тин çеç вăл таврăннă
Фронтран вилес пек хытă аманса,
Çак хыпара илтсен вăл, хăйшĕн тавăрнăн,
Пĕр вăхăт тăчĕ шăп, шăлне çыртса.

Куçран пăхса хĕрӳллĕн ыталарĕ вăл
Мана, виç çул тултарнă ачана.
Çӳле çĕклерĕ – йывăрччĕ ыратăвĕ.
Юратăвĕ пăхман пуль сурана.

Курни-илтни-ши ку, анне сăмахĕ-ши?
Атте ытамĕнчен тухса кайса
Эп халĕ те вĕçетĕп пек шур акăшăн
Çунатсемпе сулмаклăн авăсса.

СĂМАХ

Баллада

Палатăра виççĕн выртатпăр.
Час-час тухтăра йыхăратпăр.
Авать, çĕмĕрет хăруш чир,
Пуçа çĕклеймеспĕр эпир.

Выртатпăр – пĕр ватă, пĕр каччă,
Эп хам ун чухне вуннăраччĕ,
Малта – илĕртӳллĕ инçет,
Ман питĕ пурнассăм килет.

Выртатпăр пĕр уйăх, ик уйăх,
Ăшра – чун асапĕ те тунсăх.
Сехечĕ кунпа танлашать,
Тулта çил-тăман алхасать.

Çапах çак хаяр пăтрану та
Лăпланчĕ пĕрре. Йăлтăр çутă
Сапса, сар хĕр пек, – мĕнешкел! –
Палатăна кĕчĕ хĕвел.

«Пурнатпăр!» – ват çын хавхаланчĕ,
Ăçтан тухрĕ пулĕ хăвачĕ?
Тытса-ши хĕвел çиппинчен
Çĕкленчĕ вăл вырăн çинчен.

Ик куçĕ – ик çутă шевлеччĕ,
Шевле – ĕмĕт-шанчăк тивлечĕ.
«Пурнатпăр! Хĕвел ав сӳнмен!»
Ват çын хĕпĕртет чĕререн.

Сасартăк – йăл кулчĕ те каччă,
Мĕскер-ши ăна тарăхтарчĕ?
Пат татрĕ тискер çĕленле:
«Эп пурнăп-ха, эсĕ... – темле...»

Унччен эпĕ вилĕм курманччĕ,
Ăçта кĕрсе кайрĕ хăвачĕ
Ват çыннăн? Вăл ӳкрĕ тӳрех,
Лăпланчĕ аманнă чĕре.

Лăпланчĕ. Хĕвел сӳнсе ларчĕ.
Тĕнче тĕксĕмленчĕ, хуралчĕ.
... Паян та вăл ман асăмрах –
Тăхлан пек хăрушă сăмах.

ВЕТЕРАНСЕМ

Утать хăватлă халăх – çĕлĕк хыв!
Çĕнтерĕве чыслать Тăван çĕршыв.
Кĕрлет янравлă марш
Çӳл тӳпене çити.
Сулмаклăн илтĕнет салтак утти.

Утаççĕ паттăрсем – ветерансем,
Куççуль те савăнăç тутаннă аттесем,
Çут тĕнчене вутран хăтарнисем,
Пире телейлĕ пурнăç панисем –
Ветерансем.

Савса хĕвеллĕ тăнăç пурнăçа
Эсир васканă çулăмлă вăрçа.
Шăраннă пуль вутра
Е путнă пуль шывра –
Эсир çĕнтернĕ çав çапăçура!

Утаççĕ паттăрсем – ветерансем,
Ылханлă тăшмана çапса аркатнисем,
Çут тĕнчене вутран хăтарнисем,
Пире телейлĕ пурнăç панисем –
Ветерансем.

Паян та хăмсарать тăшман пире,
Йӳç тĕтĕмпе хупласшăн çут ире.
Анчах та хуралта
Тăрать маттур салтак –
Çĕршывăма вăл кĕртмĕ çич юта.

Ĕненĕр, паттăрсем – ветерансем,
Пире телейлĕ, савăк пурнăç панисем.
Çĕршыв хуралĕнчи хальхи яшсем,
Сире ниççан та манас çук вĕсем,
Ветерансем.

* * *

Килĕшет мана çак çăвăн ырă кăмăлĕ –
Е хĕвел хĕртсе пăхать те пытанать,
Е чуна тăвăрламасăр, шăппăн, çăмăллăн
Ăшă çумăр ача пек ташла пуçлать.

Мĕн-ши ку?
Элле майлашрĕ-ши çанталăкĕ,
Çитĕ терĕ-ши çынна хĕн кăтартса?
Çумăрсем унччен лӳшкетчĕç талăк-талăкăн,
Е хĕвел йăлт хăваратчĕ çунтарса.
Мĕн-ши ку?

Ман чунăмра та канлĕ лăпкăлăх.
Çутă шанчăк, пиçĕ шанчăк чĕрере.
Çăвĕ темшĕн, темшĕн питĕ ырă кăмăллă.
Ĕнтĕ эпĕ те, туссемĕр, хĕрĕхре.

КУН-ÇУЛ ИРТСЕ ПЫРУÇĂН

Çӳç-пуç шуралнă майăн
Çуллен эп чухăнрах –
Паллакансем нумайăн,
Туссем сахалтарах.

Кун-çул васканăçемĕн
Пĕри ӳкет, тепри...
Пусать хура çĕклемĕн
Чуна тус-йыш тăпри.

Ĕмĕр иртсе пыруçăн,
Ватта уттарнă май
Этем юлать пыл-çусăр,
Тăварĕ çеç нумай.

* * *

Ан вăрçăр манăн ăрăва,
ан вăрçăр,
Хивре пулсан, тӳррен перет пулсан.
Пуçламăшне асилĕр –
хĕрӳ вăрçă
Ăна çапла ӳстернĕ ачаран.

Ан чарăр манăн ăрăва,
ан чарăр,
Вăл хăй çине нумай илет пулсан,
Çĕршывăм умĕнче ун пысăк парăм,
Çавна туйса ĕçлет вăл пур вăйран.

Ыр сунăр манăн ăрăва,
ыр сунăр,
Тĕллев патне хыт ыткăнать пулсан,
Чĕри çуталтăр, хĕвел евĕр çунтăр
Вĕри хĕмне çынсемшĕн салатса.

ÇАВ ÇУЛ

Иван Михайлова

Халь пĕлсе пĕтер ĕнтĕ çанталăк
Хăш сехет, хăш кун пăсăлнине.
Малтан çурĕ çумăр икĕ талăк,
Кайран çурĕ çумăр ик эрне.

Шăнкăрав çакса çӳрен çу кунĕн
Хăшĕ пулчĕ юлашки юрри? –
Пĕр текерлĕк макăрчĕ ял çумĕн,
Айăплăн тем шăхăрчĕ тăри.

Аслати шартлатрĕ. Пĕтрĕ юрă.
Юхрĕ çумăр, вĕçсĕр куççуль пек.
Ик эрне вăл çурĕ, уйăх çурĕ –
Çу вĕçленчĕ. Çу пулмарĕ тек.

Шав шанатпăр. Шав теме кĕтетпĕр.
Анчах... Çумăр чалăшшăн çапать.
«Сывă пул!» теме ĕлкĕрейместпĕр –
Тем каять яланлăх, тем юлать.

ТĂРНАСЕМ ВĔÇСЕ ИРТРĔÇ

Ывăлăма Сережăна

Систермен, кĕттермен
Çуркунне килсе çитрĕ.
Тăрна шурĕ çинчен
Тăрнасем вĕçсе иртрĕç.

Те çухатрĕç çулне,
Те килне тупаймарĕç? –
Тăрна шурĕ çине
Таврăнасшăн пулмарĕç.

Чимĕр! Юлăр каллех!
Чимĕр! Мĕн хăтланатăр?
Мĕншĕн куçкĕретех
Пĕчченçи хăваратăр?

Йăлтăркка юррăра
Ман текех илтес мар-и?
Хĕм сапан ташшăра
Ман текех курас мар-и?

Эп тĕнче юррине
Сирĕн юррăр пуль теттĕм.
Эп хĕвел ташшине
Сирĕн ташшăр пуль теттĕм.

Мăшăр-мăшăрăн – эх –
Ыткăнса хĕпĕртӳллĕ
Манăн пуç тĕлĕнчех
Эсĕр вĕçмĕр-и ӳлĕм?

Эсĕр вĕçнĕ чухне
Ман чĕре те вĕçетчĕ.
Сире ырă чухне
Ман чĕре те çиçетчĕ.

... Систермен, кĕттермен
Çуркунне килсе çитрĕ.
Тăрна шурĕ çинчен
Тăрнасем вĕçсе иртрĕç.

Мĕн пулса иртнине
Ăнланмасăр, вăраххăн,
Тăрнасем вĕçнине
Пăхса юлтăм хăраххăн.

ЧӲРЕЧЕ ÇИНЧИ КУÇÇУЛЬ

...Шунтал, Сальель, Çарăмсан урлă тухса Çĕнĕ Йĕлмелĕре те пултăм. Сана аса илтĕмĕр, сирĕн картишне кĕрсе тухрăмăр, Пурăнман çурт салхуллă, чӳречисем тĕксĕм. Мĕн калас, асăнмалли çеç...

Çăлтăр хулинчи Илья Тявин çырăвĕнчен

Мĕн калас çав, мĕн калас, Илле тете,
Эпĕр иккĕн мĕн курман пуль ĕмĕрте?

Çак çурта эс ас тăватăн пит аван,
Эс унта кĕрсе тухаттăнччĕ шкултан.

Нихăçан моряк карттусĕ курманскер,
Эп сана пит ăмсанаттăм, пĕчĕкскер.

Ырăпа та ăшăпа килекене
Тараватчĕ яланах атте-анне.

Санăн пурччĕ тантăшу – Улька аппам...
Ах, суран çине тăвар эс ан сапсам.

Мĕнлерех маттур юрлатчĕ! Хамăрла!
Çамрăк ĕмĕр вĕçсĕр-хĕрсĕр пуласла.

Çук, пулмарĕ. Ир куç хупрĕ кĕл чечек,
Асилӳ çеç тăрса юлчĕ тĕлĕк пек.

Иртрĕ пуль-çке çамрăк ĕмĕр, иртрĕ пуль.
...Тăлăх çуртăн чӳречи çинче – куççуль.

Иртнĕ кунăн çутине курас тесен
Пырса пăхăр тăлăх çурт чӳречинчен.

АЛЛĂРА ТЕСЕН

Шӳт

Ку ватăлнă теме, туссем, кăшт тăхтăр.
Ӳт-пӳ чĕтрет-çке аллăра тесен,
Мана парсан та парăр хĕрĕх тăххăр,
Анчах, ĕненĕр, эп алла çитмен.

Ман пуçăм умĕнче ларман-ха тухтăр,
Хул-çурăм вăйлă ĕç екки килсен,
Мана, тен, пама пулĕ вăтăр тăххăр,
Анчах, туссемĕр, эп алла çитмен.

Кĕрекене тесен мана çеç йыхăр,
Унта янравлă юррăма илтсен
Мана эсир, тен, парăр çирĕм тăххăр,
Çук, тăвансемĕр, эп алла çитмен.

Хевти пĕтмен-ши кун теме ан хăйăр,
Хĕрӳллĕ юрату вутне лексен
Мана памашкăн пулĕ, тен, вунтăххăр,
Çитмен-ха эпĕ, çук, алла çитмен.

Ку ватăлнă теме, туссем, кăшт тăхтăр,
Яш пек ман ĕмĕр тăрăх утмалла.
Шăп утмăлта та парăр аллă тăххăр.
... Çитеймесрен хăратăп утмăла.

* * *

Туссем, ан вăрçăр, çĕр хитре те аслă,
Пĕрре кăна пурнатпăр тĕнчере.
Пыл хурчĕсем пек, пулăр пин-пин саслă,
Çапах та килĕштерĕр çемьере.

Туссемĕр, ан вĕтелĕр, ан вакланăр,
Пĕр-пĕринчен ыйтсамăр çирĕпрех.
Хавхалану килет пулсассăн тарлăр,
Вут-çулăмра çунтарăр чĕрĕре.

Амаланать пулсан хĕлхем-и, вут-и? –
Çунма ан хăрăр, итлĕр кăмăла.

Ан тив, чунра йăл! хыпнă шалти çутă
Çул кăтартса шав чĕнтĕр малалла.

Туссем, ан вăрçăр, çĕр хитре те аслă,
Илем харкашупа килĕшес çук.
Хавас çук чух пулма пĕлер хаваслă,
Кулма вăй çитерĕр хурланнă чух.

ТАСАЛĂХ

Тасалăх, тасалăх, тасалăх
Ыйтатăп хамран та тусран.
Тасалăх –
Тăшман ăмсанмалăх,
Кил-йыш савăнмалăх ялан.

Анне сĕчĕ евĕр тасалăх!
Тухас темесен кĕлмĕçе,
Çынсем çине тӳррĕн пăхмалăх
Тасалăх –
Чи тĕрĕс виçе.

Чĕрем ан пăлхантăрччĕ шиклĕ
Туссем юнашар пулнă чух,
Чуна варалать икĕ питлĕх,
Варланчĕ тĕк – сумĕ ун çук.

Тасалăх, тасалăх, тасалăх
Е пысăк, е пĕчĕк ĕçре,
Чеелĕхпе витĕнĕн:
Халăх –
Чи сисĕмлĕ, аслă тӳре.

Хăйне йӳнетсе яраканăн
Чĕри пайланать çурмалла.
Ан чĕнĕр, ан ӳкĕтлĕр – манăн
Тĕллев патнелле утмаллла.

Çав çул çинчи тусăм – тасалăх.
Хĕвел юппи пек карăнса
Ахахăн çутаттăр вăл, савăк,
Çынна сиплĕ ăшă парса.

КĂЙКĂР

Поэма

1. ЧУЛ ТУ

Эй, пĕчĕк çын!
Сан пур-и хăвату?
Вăй-хал кăшт сисĕнет-и хулунта?
Ачалăхра кашни тупать чул ту,
Хăйне тĕрĕслеме каять унта.

Мăнаçлă, ирĕк Атăл хĕрринче
Пур ватă, чăнкă-чăнкă пĕр çыран.
Карттус ӳкет, атьсемĕр, пуç çинчен
Ун тăррине курас тесе пăхсан.

Чи хăюлли кăна çав ту çине
Тарла-тарла пултарĕ хăпарма.
Çут хĕвеле, хуркайăк картине
Чĕнет пек çӳллĕ ту ларса канма.

Аслатисем илешнĕ çав тăва
Парăнтарсан, ун тăррине çитсен
Йăлт урăхла эс курăн Çĕршыва,
Ун вĕçĕ те, хĕрри те çук иккен!

... Чул ту çинче – пĕр кĕререх ача.
Хашкать кăштах. Ӳт-тирĕ йĕп-йĕпе.
Ĕшеннине хăй палăртмасть пачах.
Вăл калаçать çĕрпе те пĕлĕтпе.

Ун çумĕпе вĕçеççĕ кайкăрсем.
Хĕвел юнашарах пек туйăнать.
Йĕри-тавра – ытарайми илем.
Пин тĕрлĕ тĕс куçа йăмăхтарать.

Пин тĕрлĕ тĕс пин шухăш çуратать.
– Эй, Пысăк Çĕр! Сан тупсăму ăçта?
Ăçтан çак аслă Атăл пуçланать?
Мĕн-ма çунать-ха çăлтăр çĕр хута?

Эй, вĕçсĕр çутçанталăк! Ăнлантар,
Тен, аслати те çакăнтах çӳрет? -

Ача-пăча чĕри хăравçă мар,
Аслатирен çапах та шикленет.

– Эй, кăйкăрсем! Парнелĕр-ха çунат,
Тăван çĕре çӳлерехрен курам! –
Ик куçĕ ун ик кăвар пек çунать,
Ача чухне вĕçме шутламĕ кам?

Çапать, çапать хăватлă çил питрен.
Çил тустарать ача çӳçне-пуçне.
Ача пулин те – вăйсăр мар иккен,
Хал çитнĕ улăхмашкăн ту çине.

Пайтах кăтартĕ пурнăç малашне
Хĕнне-тертне –
Ав аякра паян
Фашист урсах таптать Мадрид çĕрне.
Пул тӳсĕмлĕ,
Ан парăн, Андриян.

2. ВУТПА ЧЕЧЕК

Çавăрттарать тăман,
Çил шăхăрса вĕрет.
Вăй-хал хавшанăран
Канма ларас килет.

Анчах ăçта канас?
Сĕнтĕрвăрри хыçра,
Яла çитеймĕн час –
Вунпилĕк çухрăмра.

Чĕре сури тума
Çитмерĕ çĕр улми.
Умра – çиллес тăман
Пăхса та куранми.

Чăт, Андриян, чăтах,
Унта ав, Анăçра,
Чылай йывăртарах –
Тăшман виç çул урать.

Хаяр вăрçа пула
Аслисемпе пĕр тан
Сан авăн çапмалла.
Сан хывмалла капан.

Сан утă çулмалла –
Çитмест арçын алли.
Сан выльăх пăхмалла –
Аш кирлĕ фронт валли.

Вунвиççĕри ачан,
Сан вĕренес пулать,
Вĕреннĕ çын анчах
Хăй вăйлине туять.

Ах, çăмăл мар сана,
Чĕрӳ епле чăтать?
Килте ав аçуна
Пит йывăр чир кăшлать.

Ылханлă вăрçăран
Куллен – хура хыпар.
Çав фашиста хăçан
Тĕп тăвĕ Хĕрлĕ Çар?

... Урать, урать тăман,
Урать каçса кайса.
Утать-ха Андриян
Мĕнпур вăйне пухса.

Йăлт кайнăччĕ халтан.
Сасартăк – çын умра.
Иван-çке ку, Иван!
Пиччеçĕм, мĕн ара?

– Сана кĕте-кĕте
Шалт ывăнтăм, Энтри,
Аттен унта, килте...
Текех тапмасть чĕри...

Çапла вĕçленчĕç сан
Ачалăх кунĕсем.

Ан парăн, Андриян.
Чунна хытар. Тӳссем.

... Эс Çĕнтерӳ кунне
Манаймăн нихăçан.
Хитреччĕ çуркунне,
Ем-ешĕлччĕ вăрман.

Пуçтартăн тăрăшса
Эс çеçпĕл чечекне.
Каларăн савăнса:
– Çĕнтертĕмĕр, анне!

3. «ÇЫН ПУЛ!»

Кӳршĕре Карачăм пурăнать,
Ватăскер, пит киввĕн курăнать.
Темшĕн хутшăнмасть хăй çынсемпе,
Калаçсан калаçĕ – йыттипе.

Пĕринче тем пулчĕ чĕмсĕре,
Чарчĕ те калать чĕтре-чĕтре:
– Эс те ман пекех çав, Андриян,
Тĕнчере ыр çын тĕлне пулман.

Ахальтен йăваш-и эс ытла?
Е ятла мана, е ан ятла –
Çук никам та ырă сунакан...
Ăраскал килет пĕр хăвăнтан.

– Ав епле? Çук, тĕрĕс мар, мучи.
Тĕрĕс мар! Ак эп, чăваш ачи,
Техникум пĕтертĕм хулара,
Ырă çын пит йышлăччĕ вара.

Ырă çын кăвак Карелире
Пит нумайччĕ. Халĕ ак пире
Пĕрлештерчĕ, ырă çынсене,
Совет Çарĕ туслă çемьене.

Тăлăх мар тĕнче ыр çынсенчен,
Ырă тус-юлташ тупас тесен
Эп, мучи, шутлатăп ак çапла:
Çыннăн хăйĕн çынлăх пулмалла!

4. ТӲПЕ ЧĔНЕТ

Вĕçме çуратнă пулĕ-çке шăпа.
Кĕтмен-туманччĕ — авиаци чаçĕ.
Военкомат кăтартнă маршрутпа
Призывниксем Совет Çарне каяççĕ.

Кам тĕлĕкре çӳле вĕçсе курман,
Кам ача чух çунат тупас темен-ши?
Хитреччĕ Андрияншăн сĕм вăрман,
Анчах чуна тӳпе туртатчĕ темшĕн.

Мĕн пулнă-ши унта, çӳл тӳпере?
Каланă Иванов, чăваш поэчĕ:
Çук этемрен вăйли çак тĕнчере! —
Çав шухăша ун тĕрĕслес килетчĕ.

Стрелок пулса чылай вĕçсе курсан
Иккĕленмесĕр, татăклăн, хăюллăн:
«Пулатăп летчик!» — терĕ Андриян,
Пуçларĕ вĕренме хавхалануллăн.

Вĕçев!
Малти кабина. Пĕр-пĕччен.
Паян вут-кайăк мар-и вăл —
Çунатлă!
Ытарайми илемлĕ çут тĕнче
Хăй ывăлне курса
Çупать пек алă.

5. ПАРНЕ

Çĕмрен пек шăхăрса çӳлелле,
Самантрах хĕвеле çитесле,
Шур тĕк евĕр, пачах палăрми
Ыткăнать реактивлă МИГ.

Эх, паха! Мирлĕ çĕр – аялта.
Сумлă, çăкăрлă пурнăç унта,
Пин шăпа, пин телей, пин сас:
«Çĕрĕм-шывăм, эп саншăн хавас!»

Пĕр хут мар тӳпере Андриян
Хăраса-аптраса тăман.
Чăн-чăн сывлăш хуçи вăл.
Анчах...
Чим, мĕн пулчĕ МИГа тăруках?

Сӳнчĕ двигатель. Вăл – хускалмасть.
Газ парсан та çынна пăхăнмасть.
Самолет çухатать çӳллĕшне,
Хăрушла çывхарать Çĕр енне.

Çĕр çинчен ав хушаççĕ: «Сик!»
«Эпĕ сикĕп. Анчах та – МИГ?
Ман мĕнле уйрăлас унпа,
Тӳпери тахçанхи тусăмпа?»

«Сик!» – хушаççĕ каллех лерен.
«Çук, лартатăп МИГа хире!»
«Эс – пилот. Лăпкă пул чи малтан.
Вара тухăпăр йывăрлăхран...

Ак вăл – çăлăнăç çулĕ – кур,
Çĕр çинче тăрăхла лаптăк пур.
Çавăнта ман анса ларас.
Мĕн тăвас-ха – çĕре сухалас...»

Самолет анса ларчĕ «çемçен».
Умĕнчех – тип çырма иккен.
Тепĕр чух ик-виç утăм кăна
Хăтарса хăварать-мĕн çынна.

Çав самант паян кун та асра:
Строй умне кăларса паттăра
Командир пилота парнелет
Ятне çырнă хитре сехет.

6. МУСКАВА

Хăвăртрах вĕçмелле,
Çӳлерех вĕçмелле!
Тĕпсĕр вар çийĕн сик,
Ишсе каç тинĕс урлă –
Вĕçекен кашни çыннăн
Çунатлă тĕллев,
Тĕллеве кураканăн
Хисепĕ те сумлă.

Тĕк тăмасть самана.
Шавласа, кĕрлесе
Малаллах ыткăнать
Пирĕн çирĕммĕш ĕмĕр.
Çĕршывра сахал мар
Çивĕч ăслă çынсем:
Авă спутник вĕçет -
Ĕнтĕ курăр та пĕлĕр!

«Ĕмĕртен чĕнекен
Çăлтăр çулĕ çине
Тухса куртăр этем,
Космоса тухса куртăр!» –
Çак шутпа хĕмленсе
Паттăр лётчиксене
Мускава пуçтарать Королев –
Тĕп конструктор.

Çав историллĕ кун
Халĕ уйрăм шутра.
Акă тухтăр калать:
«Пур енчен те пит лайăх!»
Ĕненес-и е çук-и:
Пĕрремĕш отряд!
Чи пĕрремĕш –
Гагарин, Титов, Николаев...

7. АНСАТ-И КОСМОНАВТ ПУЛМА?

Ансат-и космонавт пулма?
Ак центрифуга — чăн-чăн тамăк.
Е çӳлелле тăвать те тайлăк,
Е аяла чул пек чăмать.

Кĕр барокамера ăшне —
Сана хĕссе лартать те сывлăш,
Ай тур-турах, аннеçĕм, пулăш! —
Анчах çумра лармасть анне.

Çав сурдокамера текен
Читлĕхĕнче эс пулса кур та
Ăс-пуçлă пул — калатăр тухтăр:
«Эс сывлăхлă çынах иккен».

Ансат-и космонавт пулма?
Тĕпче, вĕрен татти-сыпписĕр,
Спортпа туслаш,
Шăмшак хевтисĕр
Каяймăн çăлтăрсем курма.

Çак кăткăс тĕрĕслӳ кăна
Çӳле вĕçмешкĕн ирĕк парĕ,
Пуçри ăс-хакăл та чун тарĕ
Каларĕç уçлăха сана.

8. ХИТРЕ-ÇКЕ ÇĔР!

Шавлать, юрлать Çĕршыв. Кĕрлет тĕнче.
Савăнăçне кам пытарма пултарĕ? —
Кăвак тӳпен инçе уçлăхĕнче
Пĕрремĕш хут — совет çынни Гагарин!

Вĕçет Гагарин тĕпсĕр тӳпере,
Вĕçет мир йыхравçи планета çийĕн:
Хитре-çке Çĕр, ытарайми хитре!
Мĕнпур вăйран ăна упрасчĕ пирĕн!

... Вĕҫет Титов. Старт умĕн дублерне –
Андрияна – куҫран каларĕ Герман:
«Сан хăвăн та ҫак ҫăлтăр сехетне
Кĕтсе илес самант вăрах кĕттермĕ».

Вăл ҫитрĕ, ҫав самант.
Байконурта
Вăранчĕ август ирĕ ҫут хĕвеллĕ.
Ракета – йăлтăрти титан-ҫурта –
Тăратчĕ куҫ илме май ҫук илемлĕ.

Вăл ҫĕмрен пек тапранчĕ вырăнтан,
Ҫĕре кисрентерсе хитрен тапранчĕ.
«Тавах шаннишĕн», – терĕ Андриян,
Тинех ҫуталчĕ унăн ик ҫуначĕ.

...Шăп талăк иртрĕ. Иккĕн – уҫлăхра!
Чи ҫывăх тус – Попович, кӳршĕрех вăл!
Мĕн пултăр-ха хакли тăванлăхран? –
Салам! – тет Андриян.
Будьмо! – тет Павел.

Пĕрле ҫӳренĕ Остерта тахҫан
Ик тус, ик пĕлĕш – Пакрышень те Ҫеҫпĕл.
Паян пĕрне-пĕри курса, тĕлме-тĕл
Вĕҫет планета ҫийĕн ик тăван.

Хитре-ҫке Ҫĕр!
Илемлĕ Украина,
Чăваш ҫĕршывĕн тумĕ те хитре.
Мал ĕмĕтлĕ, хастарлă
Ирĕк ҫыннăн
Ĕҫчен алли илем кӳрет ҫĕре.

Ик космонавт, ҫунатлă икĕ кăйкăр,
Совет ҫĕршывĕн сулăмлă чапне
Нихҫан пулман шая ҫĕклеççĕ, курăр,
Сиксе вылян ҫут ҫăлтăр ҫӳллĕшне.

9. ЁНЕН ПИРЕ

Хуркайăк карти пек,
Ылмашăнса
Космонавтсем
Орбитăна тухаҫҫĕ.
Канма тесе каймаҫҫĕ
Космоса –
Унта тĕнче вăрттăнлăхне
Шыраҫҫĕ.

Ай, ҫăмăл мар,
Тап-такăр мар ҫав ҫул,
Ҫапах та ĕмĕт
Яланах ҫунатлă,
Хăюллă пул,
Пĕр шиксĕр, чăрсăр пул,
Чи хăюллин кăна
Чĕри хăватлă.

Пăхатăп эпĕ
Андриян ҫине.
Вăл ик хутчен
Сĕм уҫлăха хăпарнă.
Вăл курнă ҫывăхран
Ҫăлтăрсене,
Вăл аякран
Ҫĕр-аннене сăнанă.

Ҫĕршывăн паттăр,
Харсăр ывăлне
Калатăп эп
Сума суса, хисеплĕн:
«Пире эс чĕнтĕн
Ҫӳллĕ тӳпене,
Чун ҫунатне сарма
Пире вĕрентрĕн.

Эс, ӗмӗт-тӗллевне
Курса-пӗлсе,
Ăна парăнтарма
Пултарнă кăйкăр,
Ӗнен пире:
Вăй-халлă чăвашсем
Завод лартаҫҫӗ,
Ӳстереҫҫӗ ҫăкăр.

Пӳлеҫҫӗ Атăла
Хăюллисем,
Ун хăватне
Этемлӗхшӗн кӳлеҫҫӗ.
Эс кур пире –
Шансам та ӗненсем:
Кашни чăваш ҫынни паян –
Вӗҫевҫӗ!»

ЯРАПАЛЛĂ ЙĂМРА

Аякра, пит аякра –
Эп çуралнă çĕршывра
Шерепеллĕ, ярапаллă
Кашласа ларать йăмра.

Ытарма та çук хитре –
Пĕрре çеç вăл тĕнчере,
Час-часах ăна куратăп
Хамăн тутлă тĕлĕкре.

Çав йăмра хӳтлĕхĕнче,
Сĕнче шывĕ хĕрринче,
Те çĕр ĕмĕр, те пин ĕмĕр
Çăл тапать çĕр айĕнчен.

Ун шывне ĕçен кăна –
Пыл та кирлĕ мар сана.
Вăл чĕртсе ярать сасартăк
Санăн ывăннă чунна.

Çав асамлă çăл патне
Ирсерен анать анне.
Ĕнтĕ туйрăр-и, туссемĕр,
Манăн тунсăх тупсăмне?

ÇЫННА ЫРĂ ТУ

Çынна хурлăх пусать.
Çын – пĕчченçĕ. Аптрать.
Çыннăн –
Çын чăтайми çухату.
Саспа мар, чĕрипе
Çын сана йыхăрать –
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çыннăн – пысăк телей.
Çын – çын пек хĕпĕртет.

Чĕрине
Шăнăҫмасть юрату,
Ҫын пĕччен савăнмасть.
Юлташне вăл чĕнет –
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Ҫын пĕрре йăнăшать.
Йăнăшмасăр утма
Пултараймăн эс ху та,
Асту.
Ҫав ҫынна пулăшма,
Йăлт куҫран калама
Эс васка ун патне. Ыра ту.

Ҫын ҫынпа пурăнать.
Ҫын ҫынпа савăнать.
Ҫын! –
Хăватлăн янрать сан яту.
Ҫын юраттăр ҫынна,
Хисеплетĕр ҫынна;
Ҫын патне эс васка,
Ырă ту.

ҪĂЛ ЧАВАТПĂР

Ҫăл чаватпăр, шыв шыратпăр.
Кунĕ шăрăх. Тарăхатпăр.
Тепĕр си илсессĕнех
Ҫăл тапса тухас пекех.

Анчах шывĕ курăнмасть.
Пăрахар ĕҫе. Пулмасть.

Ҫук. Шырар-ха. Ҫăл чавар-ха,
Ял куллийĕ пулар мар-ха.
Антăхса та тарласа
Ҫăл чаватпăр ăмăртса.

Ак вăл ҫăл! Шарлантарса
Тухрĕ кĕмĕллĕн тапса.

Шыв шыратпăр. Шыв тупатпăр.
Ĕç ăннишĕн савăнатпăр.
Килĕр, ĕçĕр! Шăрăхра
Кăшт пусарăр чунăра.

...Шывĕ килĕшрĕ пулсан
Пирĕн ĕç сая кайман.

* * *

Çăлтăрсем пуçланă вăйă,
Сар хĕрсем катаççĕ мăйăр,
Каçхи хăмăр урампа
Ыткăнса чупать шур ăйăр.

Ăшă çумăр çунă-ши?
Тен, ку тăван ял ăшши?
Сăмсана кĕрет сĕтеклĕ
Тин çеç сунă сĕт шăрши.

Ăс вĕрентрĕ кӳршĕ хĕрĕ:
«Çамкăра ытла ан пĕрĕр,
Ак вăл сирĕн тăван çĕрĕр,
Тек тĕнче касса ан çӳрĕр...»

Ырăпах каларĕ-ши
Е кăшт тăрăхларĕ-ши?
Ай-хай çак иккĕленӳ
Лăпланма май парĕ-ши?

АВГУСТ

Хветĕр Уяра

Август уйăхĕн хăйĕн илемĕ.
Ирĕсем хăйне евĕр хитре.
Атăл çийĕн çĕклемĕн-çĕклемĕн
Хăпарать кăпăш шурă тĕтре.

Уяртать. Тӳпе тăрă та çӳллĕ.
Пăрахать вылямашкăн ăрша.
Инçетри курăнать илĕртӳллĕн,
Уçă çил тасатать сывлăша.

Сасă пар – сасă уçă та ирĕк,
Ян кайса аякра çухалать.
Ылтăн тĕслĕ сап-сарă уй-хирĕн
Ĕçлĕ шавĕ çĕклет кăмăла.

Садсенче пан улми кĕрпеклеммĕ,
Ăнса пулнă кăмпа вăрманта.
Çутçанталăкăн сиплĕ сĕткенĕ,
Пилĕ-техĕмĕ – сан умăнта.

Çăлтăр çумăрĕ çулăмлăн çăвĕ,
Шевле çиçĕ тул çутăличчен.
...Август, август, ыр кăмăллă çăвăн
Эс чи чаплă уявĕ иккен.

ЮРАТĂР ТĔНЧЕНЕ

Валерий Яковлева

Куҫ умĕнче те ҫын чун-чĕринче
Ниҫҫан никам ăнланайми тĕнче,
Самант пире телей илсе килет те,
Самант ҫав телеех туртса илет.

Кулатпăр-и куҫҫулĕ тухиччен,
Йĕретпĕр-и куҫҫулĕ юлмиччен,
Турри пире темле шăпа пӳрсен те
Вăл панă ĕмĕр пит кĕске иккен!

Тавах кун-ҫулăма, тавах, тавах,
Тем-тем курса ăнлантăм эп хамах –
Тĕнче хитре. Ҫак тĕнчене юратăр,
Ыр ҫынсене юратăр уйрăмах.

Тĕнче хитре хĕвел кулса тăрсан,
Тĕнче хитре чун канăҫлă пулсан.
Чăвашăмсем, пĕрне-пĕри каҫарăр,
Пĕрне-пĕри ыр сунăр кăмăлтан.

Ҫак ĕмĕр тăрăх утăр юрăпа,
Тус-тантăшпа та савнă мăшăрпа,
Пĕрне-пĕри вăй парăр, вут хыптарăр
Юратупа та ăшă сăмахпа.

Тавах, тăванăмсем, тавах сире,
Эсир – кашни пĕри – ман чĕрере.
Шăп сирĕнпе пулма Турри ҫырнишĕн
Телейлĕ тетĕп хамăн ĕмĕре.

ПĂШАЛ САССИ

Пĕверен вĕҫсе хăпарчĕ
Мăшăр кайăк кăвакал.
Чун сасартăк ҫунатланчĕ:
Пурăнать, пĕтмен-ха ял.

Шыв ҫине пăхса тăруҫăн
Шăмпăрт! сикрĕ те сасан,
Шăрăх кун та сывлăш уҫҫăн
Туйăнчĕ ҫавна курсан.

Автоҫул ҫумрах пулин те
Ютшăнмасть унран чĕрчун,
Вăл ҫынна шанать-ха питĕ,
Ҫын – чи ҫывăх тусĕ ун.

Савнăҫа пытараймасăр
Шăп тăраттăмччĕ...
Пăшал
Шап! шаплатрĕ.
Ӳкрĕ халсăр
Мăшăр кайăк кăвакал.

Тарчĕ пулă. Авăрах-тăр.
Тек ан кĕтĕр тухасса.
«Эй, ҫынсем! Мĕн хăтланатăр!
Чунăр пур-и, иҫмасса?!»

Пĕр сас-чӳ тавраш пулмарĕ.
Леш пăшал сасси кăна.
Ҫичĕ сыпăклăн янрарĕ,
Шарт! сиктерчĕ таврана.

ЧУН ПУР-ХА ТЕТӖП...

Пулмарӗ сӑвӑ, мӗн тӑвас-ха ман?
Чуна графоманла ҫӑварлӑхлас-и?
Пуш параппан ҫапмашкӑн хӑнӑхман,
Вӑл пултӑр параппанҫӑсен хавасӗ.

Пулмарӗ сӑвӑ, каймӑп кивҫене,
Кивҫен илни – поэтшӑн пысӑк айӑп.
Вӑл ҫырлахтарӗ чунсӑррисене,
Чун пур чухне юта нихҫан та каймӑп.

Чун пур-ха тетӗп – шӑранмасть йӗрке
Малтан хам чунӑма тыткӑнламасӑр.
...Сӑвва мӗнле эп ярӑп ирӗке
Хӑватсӑр,
Чунсӑр,
Сасӑсӑр,
Ҫунатсӑр?

КӖВӖ

Александр Васильева

Эс сарлака. Кам калӗ эс мӗнне?
Анчах – крещендо ӳкрӗ те саланчӗ,
Тин пулнӑ ӗмӗт чун илсе сывалчӗ,
Тӳрех лектерчӗ хӑйӗн ытамне.

Тӑсатӑн ман пата аллусене
Мана тытса хӗрӳллӗн ыталасшӑн.
Эс ӑнланасшӑн шухӑшӑмсене –
Эп пур – сана чӗртсе юлташ тӑвасшӑн.

КИЛЕХ, ҪĔНĔ ҪУЛ!

Шурă юр ӳкет ҫĕр ҫине.
Ҫĕнĕ Ҫул килет тĕнчене.
Урхамах сасси, шăнкăрав сасси,
Тăмрасен сасси илтĕнет.

Юрлас мар-и-ха, ташлас мар-и-ха,
Савнас мар-и-ха, юлташсем.
Кĕреке пуҫне эпĕр мар-и-ха
Паян лартăмăр, паттăрсем!

Ĕмĕрех мухтав ҫăкăра!
Кăмăла ҫĕклет пыл-сăра.
Телейпе килен Ҫĕнĕ ҫул ҫинчен
Хăвăртрах тапратăр юрра.

Ĕҫĕ хамăрăн, юрри хамăрăн –
Хамăрах хуҫа пулнăран,
Ҫут пуласлăх та пирĕн хамăрăн,
Таптас ҫук эс ăна, тăшман.

Шурă юр ӳкет ҫĕр ҫине.
Ҫĕнĕ ҫул килет тĕнчене.
Ыранхи кунсен, малалли ĕҫсен
Ҫирĕп утăмĕ илтĕнет.

Эпĕр ĕҫлĕпĕр, сăра ĕҫĕпĕр,
Эпĕр юрлăпăр савăнса,
Килех, савăк ҫул, килех, Ҫĕнĕ ҫул,
Ҫĕнĕ ĕмĕре ҫывхартса.

* * *

Иртнĕ-пĕтнĕ те мантăмăр тетпĕр.
Çук-мĕн. Вăхăт пĕрех асăрхать,
Кашни çын ячĕпе вăл, атьсемĕр
Хăйне евĕрлĕ палăк лартать.

Мĕн сана? Пархатарлă металл-и,
Мĕн сана — е ахах, е мерчен? —
Суйласа илмелли минералĕ
Йăлт килет этемрен хăйĕнчен.

ПĔЛСЕ ПĔТЕР-ХА ЧĂВАША...

Пĕлсе пĕтер-ха чăваша —
Кашни чăваш вăл — хăй патша.

Пĕрре пăхсан чăваш сăпай,
Тепре пăхсан — тӳрккес самай.

Пĕрре ытла йăваш чăваш,
Тепре — тĕлĕнмелле чăкраш.

Пĕрре вăрçать ухмахсене,
Тепре пӳлет ăслин çулне.

Пĕрре каçса кайса мухтать,
Тепре ирччен çăхав çырать.

Пĕлсе пĕтер-ха чăваша —
Кашни чăваш вăл — хăй патша.

Те лайăх ку? Те япăх шутсăр?
Татса калаймăп. Хăвăр шутлăр.

УМĔНХИ

Çулталăкра пĕрре килен çак тапхăр
Çĕклентерсе уçса ярать чуна.
Çырмасенче çиçсе ялтрать кăвак пăр.
Тумла пат-пат тумлать яра куна.

Хура сăн çапнă пусрăнчăк юра та
Çиет пĕр хĕрхенмесĕр çут хĕвел.
Курак ав кранклатать садра, куратăп, –
Ĕçе пикеннĕ пакăлти эртел.

Хумпа кăтраланса вылять кӳлленчĕк.
Кас-кас килен çил сулчă та кăра,
Турат çинчен пăр ӳкрĕ те тĕпренчĕ,
Пуçланчĕ ăсан туйĕ таврара.

Ку – умĕнхи. Кĕçех çурхи çанталăк
Тапранĕ кĕрлесе, шатăртатса.
Ку – умĕнхи. Çак тапхăр маншăн савăк,
Унра хăватлă вăй тăрать тапса.

* * *

Çынна кирлĕ пĕлĕт,
Çынна кирлĕ шанчăк,
Çынна кирлĕ ĕмĕт,
Çын ĕмĕтсĕр – ванчăк.

Пĕлеп – хаклă пурлăх:
Утмашкăн çĕр тăрăх
Çынна кирлĕ туслăх,
Тус-йышсăр çын - тăлăх.

Паяншăн, ыраншăн
Çакна картса хурăр:
Туллин пурăнмашкăн
Çынна кирлĕ юрă!

МАНĂН ХĔÇ-ПĂШАЛ

Пит йывăр ăнланма çак тĕнчене.
Пĕрлех утаççĕ ырă та усал та.
Çынна ырри патне чĕне-чĕне
Эп хам та сахал мар тукмак туянтăм.

Хаярланас-и, чăмăр чăмăртас-и?
Çук! Манăн хĕç-пăшал пĕрре анчах:
Атте-анне пилленĕ чун хавасĕ –
Ыр кăмăл, ырă ĕç те ыр сăмах.

* * *

Тавралăх кĕрлесе вăраннă майăн
Каллех хаваслă пурнăç пуçлама
Вĕçсе килет карти-карти хуркайăк
Çурхи ытарайми çĕршывăма.

Кайри – мала, малти – кая! Килсемĕр,
Итлетĕр хӳхĕм юррăра тĕнче!
... Паян ирпе, туссем, пуçланчĕ тепĕр
Вĕр çĕнĕ çаврăм пурнăç тăршшĕнче.

* * *

Пуррине упрама пĕлейместпĕр.
Çухатсан тарăхатпăр чунтан.
Çын чĕри питĕ кăткăс, атьсемĕр,
Ни рентген чухлаймасть, ни чикан.

Пуррине упрама вĕренсессĕн,
Çухатсан тарăхма пăрахсан
Ансат чунлă пулайăн-ши эсĕ,
Манăн ырă тăван?

ПАЯНХИ

Таçта та – вăхăт сĕрĕмĕ,
Таçта та – вăхăт пылчăкĕ.
Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕмĕ –
Кашни тăвать политика.

Сылтăммисем те йыхăрчĕç,
Сулахайсем те çухăрчĕç..
Ахаль те пурнăç йывăрччĕ,
Ак халь пушшех пуç усăнчĕ.

Е – ерипен çĕнелĕпĕр,
Е – йăлт ватас-и терĕмĕр,
Ватма, чăнах, вĕрентĕмĕр,
Ĕçне тума пĕлмерĕмĕр.

Кай еннелле тинкертĕмĕр,
Кĕлĕмçĕлле кĕлентĕмĕр,
Пуш сăмаха илентĕмĕр –
Пĕтмест нушамăр-тертĕмĕр.

Ят-сумлă, паттăр халăхăн
Пĕтсех пырать хастарлăхĕ,
Ĕçченлĕхĕ, тăванлăхĕ,
Илемлĕхĕ, сăпайлăхĕ.

Йĕркеллĕ, чыслă халăхăн
Ӳссех пырать усаллăхĕ.
Пĕрне-пĕри çиеслĕхĕ,
Пĕрне-пĕри тиркеслĕхĕ.

Ку мар-çке пирĕн çулăмăр!
Ыран эпир мĕн курăпăр?
Туссем, илер-ха çывăха
Этемлĕхе те çынлăха!

КИЛСЕ КУРĂР УЯВА

Ирĕклĕ çĕршыв ытамĕнче,
Çутă хумлă Атăл хĕрринче
Ĕçчен халăх,
Чăваш халăх пурăнать,
Çирĕппĕн, хăюллăн малалла утать.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава.

Улăхĕ-çаранĕ çеçкере,
Хирĕсем-вăрманĕсем хитре.
Улмуççи те,
Шурă хурăн та йăмра –
Ман юратнă ешĕл тумлă çĕршывра.
Килсе курăр уява,
Хапăл тавăр йыхрава.

Ялĕсем те хулисем ĕлккен,
Куçа илĕртеççĕ инçетрен.
Шурă акăш йĕрки пек çурт хыççăн çурт...
Хăнана эс, хаклă тусăм, килсе кур.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава.

Килсе кур, юлташăм, уява,
Йышăнсам, юлташăм, йыхрава.
Ташлăпăр та
Юрă юрлăпăр ирччен
Çутă та телейлĕ ăраскал çинчен.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава.

ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Çĕршывăмçăм! Ак эсĕ ман умра!
Çулталăк мар, пĕр уйăх та иртмерĕ –
Ярăнтарать каллех Çавал кĕперĕ,
Картин-картин чупса тухать йăмра.

Хушпу тенки пек йывăр хăмлупа
Мана курса хаваслăн ал çупатăн,
Пит-куçăма çăл шывĕпе çăватăн
Аваллăхран пыран ыр йăлупа.

Çуртсен çамки – çут ĕнчĕ те ахах.
Вилмест юмах! Пурнать юмах паян та,
Çынсем çине шăтарарах пăхан та –
Кашнийĕнче Кĕлпук мучи пурах.

Çĕршывăмçăм! Çатма пек такăр çул
Чупать – ку тейĕн аслă юн тымарĕ,
Ума тухать Тăвайĕ те Вăрмарĕ,
Ăшра юлать сăпайлă калаçу.

Ĕççи çинчен, туйсем çинчен. Кĕрхи
Тулли пӳлме çинчен калать-и халăх –
Туятăп эпĕ: пур ун савăнмалăх.
Мĕнле-ха урăхла? Çапла йĕрки!

Пилеш вучахĕ. Хурăнсен ташши.
Тӳпен пĕр тĕпсĕр авăрлă сенкерĕ...
Эп килтĕм те – эс мĕн кăна сĕнмерĕн.
Чăваш çĕршывĕ – чун-чĕре ăшши.

Эп манас çук сан ырă кăмăлна.
Сан пилӳпе ялан эп пулнă сывă,
Апла пулсассăн, ман Тăван çĕршывăм,
Иккĕленмесĕр эс те шан мана!

ҪУЛСЕМ, САНСЕМ, ТУССЕМ

ТĂВАН ЯЛĂМРА

Вăл паттăр ҫынсемпе илемлĕ,
Ҫĕрле – тӳлек, ĕҫре – вĕри.
Ларать ман ялăм – Ҫĕн Йĕлмелĕ –
Чи лайăх ялсенчен пĕри.

Кĕрнек ҫан-ҫурăмлă, вăй-халлă
Ĕҫе тухсассăн арҫынсем
Ҫĕр чĕтренет пек.
Ĕнтĕ паллă –
Пит пысăк ĕмĕт ку ялсен.

Йĕлмелĕшĕн уяв ҫитес тĕк –
Пĕлет урай кашти авма.
Кĕр сăрине, юлташăм, эс те
Ҫĕн Йĕлмеле пыр хĕр пăхма.

Урамĕсем – ҫип ҫапнăн – йăрăс,
Касси-касси вĕр ҫĕнĕ ҫурт.
Ман Ҫĕн Йĕлмелĕ – ҫĕнĕ юрă,
Ҫав юрăра ман сас та пур.

Вăл пысăках та мар, ман ялăм,
Пĕр виҫҫĕр килĕ ҫеҫ – ан тив,
Шăпах йĕлмелсемпе мухтавлă,
Пуян та ҫирĕп ман Ҫĕршыв.

ÇĔН ЙĔЛМЕЛĔ

Юрă

Тĕнче курса тăван яла çитсессĕн,
Утса кĕрсессĕн аслă урама
Чĕрем хавасланса тапать телейлĕн,
Вăй-хал тулать ĕшеннĕ чунăма.

Хĕвеллĕ те илемлĕ
Эс, манăн Çĕн Йĕлмелĕ,
Ман ырă-ырă тĕлĕкĕм –
Атте-анне сăпки,
Тăрна куç пек шывсемлĕ
Çăлкуçусем тирпейлĕ,
Ах, ялăм – çутă ĕмĕтĕм,
Çук урăх сан пекки.

Мана кĕтсе пуçне таять шур хурăн,
Шĕпĕлтетсе салам калать йăмра.
Тахçан атте-анне юрланă юрă
Юхать асамлăн савнă ялăмра.

Çыран хĕрри хăваллă та çӳçеллĕ,
Хумĕсене çапса вылять Сĕнче,
Ах, ялăм, ялăм, хӳхĕм Çĕн Йĕлмелĕм,
Санпа кăна тулли иккен тĕнче.

Тăван çынсем, туссем те пĕлĕш-тантăш
Мана каллех сунаççĕ ыр тивлет.
Ах, ялăм, ял – чуна хĕлхем хыптармăш,
Сан ăшă çутупа пурнас килет.

ПĔЛЕТĔП…

Ишет кăна пăлан, ишет пăлан
Мăйракине шывран илмесĕр.
Кĕтрĕм сире, тăван, кĕтрĕм, тăван,
Чӳречерен куçа илмесĕр.

Халăх юрринчен

Пăланĕ ишнĕ-и, ишмен-и
Çак чĕлтĕр-чĕлтĕр Сĕнчере,
Анчах пĕлетĕп: çук иккенĕ
Тăван çĕршывăн, савнă енĕн
Ăшши пек ăшă тĕнчере.

Тăванĕ кĕтнĕ-и, кĕтмен-и
Куçне илми чӳречерен,
Анчах пĕлетĕп: çук иккенĕ
Анне пек хытă кĕтекенĕ
Никам та çакă тĕнчере.

ПЫЛÇЫРМА

Çитмĕл çичĕ çăлкуç –
Пылçырма.
Сулхăну сан –
Чуна пусарма.

Сăмах пур халăхра:
Чăвашран
Тарса килнĕ кунта
Ситукан.

Вăрманта ӳснĕ
Ял çине ял –
Хырлăх, Вăтăр Юман,
Хурамал.

Манăн несĕл
Юратна йĕлме –
Çĕн Йĕлмелĕ
Пуçланă ӳсме.

Ситмĕл сичĕ çăлкуç –
Пылçырма.
Чăваша савăнма,
Ыр курма.

Мĕн тери юрăсем
Ку енче!
Калăн, юрă таппи
Çăлсенче.

Кашни çăлĕ
Пилленĕ-и, тен,
Халăха пĕрер юрă
Куллен.

Ситмĕл сичĕ çăлкуç –
Пылçырма,
Эс вĕрентрĕн мана
Юрлама.

Халăха, пурнăçа
Савнипе
Ситмĕл саккăрмĕш çăл
Пулăп эп.

ÇАРĂК ЁШНИ

Ёшне çаврака пулнăран
Ят панă пуль – Çарăк ёшни.
Кунта тĕл пулатпăр ялан –
Тус-йыш, хурăнташ, чун савни.

Тĕнче çаврака пулнăран
Кунтах таврăнатпăр çуллен.
Каятпăр пулас-и вăйран
Кунти çăл шывне ĕçмесен.

Ӳпке сывлаймасть пек кал-кал
Кăвайт тĕтĕмне çăтмасан,

Юнать пек пире тăван ял
Ак çак ĕшнене пымасан...

Ачалăх туртать-и кунта,
Аваллăх чĕнет-и пире?
Илетпĕр сĕткен тымартан,
Выртса чуптăватпăр çĕре.

Куççуль пек таса çăлкуçа,
Таçта кайнă евĕр, юта,
Эпир пăрахмастпăр укçа,
Эпир таврăнатпăр кунтах.

ÇАРĂМСАНТА

Çарăмсанăн пĕр сыпкăм шывĕ,
Мĕн пулайтăр санран ырри.
Эй, атте-аннесен çĕршывĕ –
Çут тĕнчемĕрĕн чи варри!

Чи тĕпри, чи хакли. Чи сиплĕ,
Чи хĕвеллĕ тăван саркил,
Ăрăмла ывăлна ăшпиллĕн,
Каллех пар мана ыр пехил.

Çарăмсанăн пĕр сыпкăм шывĕ
Анне сĕчĕ пек çут шерпет,
Ӳт-пĕве, чĕрене ан сивĕт,
Чунăма, чĕлхеме çемçет.

Пар вăй-хал.
Пар юна вĕрилĕх.
Хама хам ача пек туям,
Тĕнчене, çынсене хĕрӳллĕн
Юратам,
юратам,
юратам.

ХУСАНТА

Хусан. Булакăн сулахай çыранĕ.
Малтанлăха хăнашăн пурте ют.
Пулин. Эс аякран-и, çывăхран-и –
Паян сан тăван кил – пединститут.

Кунсем черет тăрса пĕрмай шăваççĕ –
Ăçтан пурне те астуса юлан!
Анчах пĕрре пĕлтерчĕç:
– Туслăх каçĕ
Институтра ирттерĕпĕр паян.

Шутлатăп халь:
Хыçра миçе çулталăк!
Эп пурпĕр манаймастăп çав каçа.
... Каç чатăрне çурса уçайрăм алăк –
Юмах тĕнчи алчратрĕ ман куçа.

Кунта юлташăмсем утса çӳреççĕ.
Сăпайлă сасă: «Иртĕр, килĕрсем...»
Кунта ман чĕрене юхса кĕреççĕ
Çут асамат шевлиллĕ кĕвĕсем.

Эп сабантуй юрри хальччен илтменччĕ,
Курманччĕ эпĕ пушкăрт курайне.
Ак – çармăс хĕрĕ. Чăтаймасăр евчĕ
Эс ярăн ашшĕ-амашĕ патне.

Мĕнле ташлать лезгин пĕр ывăнмасăр,
Мĕнле юрлать казах хăй юррине!
«Эй, чăвашсем! Сире черет. Тухсамăр», –
Пире чĕнеççĕ вăйă картине.

Эппин, вуншар çул чаршавне сирсемĕр,
Курсамăр: паян кун та чип-чипер,
Чи аслă юрату ĕлкийĕ евĕр
Эпир тухатпăр – Нарспипе Сетнер.

Хĕн-хур тĕнчи пире куçа хуптарчĕ,
Мул хуçисем нумай кăтартрĕç терт.
Паян çĕрме пуян та çук, çук тарçă –
Сӳнми телей çинчен юрлас килет.

Унтан Тахирпала Зухра тухаççĕ –
Узбекăн та юратăвĕ вĕри...
Институтра паян пин кĕвĕ каçĕ.
Пĕри шăпланчĕ – пуçланать тепри.

...Пĕтет концерт.
Чан çаппи пек мăнаçлă
Янрать пĕр юрă – шăнăçмасть зала:
«Сарлака Тăван çĕршывăм, аслă...» –
Пĕр чĕлхепе юрлатпăр – вырăсла.

Çапла пур халăхпа хăватлăн, çирĕп
Алран-алла тытса – уйраяс çук! –
Юрланă пулĕ аттесем те пирĕн
Çĕршывăма вутран сыхланă чух.

ЧЕРНИГОВРА

Аса илтĕм рушникĕн
Авалхи тĕррине –
Çут тиреклĕ Чернигов
Тухрĕ куçăм умне.

Ытамне сарса янă
Çурхи çутă Десна,
Тараватлăн, тăваннăн
Йыхăрать пек мана.

Кил, эпир ку – аваллăх
Теççĕ пек тупăсем,
Шав чĕнеççĕ пек шавлăн
Йĕс шăнкăравлă чансем.

Коцюбинскин кил-йышӗ
Е Довженкăн ратни
Савăнать пек килнишӗн
Хăйӗн туслă хăни.

Хӗпӗртет пек Тычинăн
Тăван ялӗ – Пески,
Ал çупать пек каштанăн
Шерепеллӗ çеçки.

Илтӗнеççӗ пек çывăх
Партизан юррисем.
Курăнаççӗ пек сыввăн
Халăх паттăрӗсем.

Эп унтах, куçа-куçăн
Уйрăлми юлташпа.
Аслă туслăх çăлкуçӗ –
Пирӗн çута шăпа.

Унăн вăйӗ те хӗмӗ
Халăхра пулнă чух
Çав çăл куç ӗмӗр-ӗмӗр
Типес çук, сӳнес çук.

...Украина рушникӗ
Çунат пачӗ чуна.
Çӳл тӳпеллӗ Чернигов,
Русь чӗнет пек мана.

САЛАСПИЛСРА

Эвалд Папиньш тусăма

Амăш кĕтнĕ. Хĕрĕ таврăнман.
Çулçă тăкнă сарăхнă вăрман.
Ĕнтĕ çавăрттарнă çил-тăман –
Хĕрĕ таврăнман та таврăнман.

Хĕрĕ пулнă паттăр партизан.
Хĕрĕ пулнă чăн-чăн арăслан.
Савăнса ӳссе мĕн ачаран
Çĕршыва юратнă вăл чунтан.

Амăш çуннă. Хĕрĕ таврăнман.
Çĕр тасалнă шавлă шыв-шуртан.
Ĕнтĕ куç та уçнă шур тюльпан –
Хĕрĕ таврăнман та таврăнман.

Хĕрĕ тухайман пĕр ункăран.
Тарăхнă вăл хăй аманнăран.
Юн юхтарнă, кайнă вăл ăнран...
Хĕпĕртенĕ, савăннă тăшман.

Амăш сиснĕ амăш пулнăран.
Амăшĕ васканă аякран:
«Хĕрĕм! Хĕрĕм!!»
Хĕрĕ чăтайман.
Паттăррăн куç хупнă – парăнман.

Амăшĕн чĕри чултан пулман.
Тухайман вăл çак уçланкăран.
Мрамор постамент çинчен паян
Систерет вăл кашнине: «Ан ман!»

Саласпилс! Ăшри хӳхлевĕм ман!
Саласпилс! Сана никам манман.
Чĕресем тухасшăн кăкăртан
Çĕр пин амăш* шăпине курсан.

---

* Иртнĕ вăрçăра Латвири Саласпилс концлагерьте фашистсем çĕр пин çынна асаплантарса вĕлернĕ.

ТĂВАЙРА

Тавах сана, Тăвай,
Тавах, Тăвай –
Ыр кăмаллă çынсен хитре кĕтесĕ.
Ман чĕрене пăлхатрăн эс нумай
Вĕри ытамунтан ярас темесĕр.

Тавах сана, Тăвай,
Телей тӳпин
Айне хитрен вырнаçнă çĕр кĕтесĕ,
Çăлтăрусем
Пиншер ахах пĕрчин
Çутисене инçе сапса
Çиçеççĕ.

Тавах сана, Тăвай,
Ĕçчен çынсен,
Ăста та тарават çынсен кĕтесĕ,
Пуян кун-çулăн алтăр-куркинчен
Телей пылне
Савса ĕçтертĕн эсĕ.

Тавах сана, Тăвай.
Хитре хĕрсен,
Чуна вут сапакан хĕрсен кĕтесĕ,
Çав вут айне ăнкайсăр лекнĕрен
Пĕрне кăна
Хампа пĕрле илес-и?

Тавах сана, Тăвай!
Вĕри çăлкуç
Тапса тăрать санра – хăватлă, çирĕп.
Çунат парса ăсатрăн. Таймапуç.
Сана эп тунсăхлăн куллен асилĕп.

ÇЫРАНÇИ ЧАЛЛĂРА

Володя Скворцова

Тутарта, КамАЗра, Çыранçи Чаллăра
Пурăнать çывăх тус. Тĕл пулатпăр сайра.
Тĕл пулатпăр сайра. Асилетпĕр куллен.
Иртнĕ кунăн çути сӳнес çук виличчен.

Иртнĕ кунăн çути — вĕлтĕрен те мăян.
Ун йӳççи, ун тути çăвартах-ха паян.
Пуç тĕлне пыл çумарĕ телейлĕ пĕр ир,
Пыл та çу калаçма пĕлейместпĕр эпир.

Çăтмахра та пулман. Кĕлмĕçе те тухман.
Хамăр ăс, хамăр вăй шанчăк панă ялан.
Пулăшмарĕ пире пурăнан ĕмĕрте
Пĕр-пĕр сумлă, хăватлă та ырă тете.

Пĕлейместпĕр суйма, пĕлейместпĕр сутма.
Пурнăç тăрăх аван таса чунлă утма.
Ĕç вылятăр алра, ĕмĕт çиçтĕр пуçра.
Килĕшӳ хуçалантăр ялан кил-йышра.

Çыранçи Чаллăра эп паян хăнара.
Улькупа юр юрла-ха пĕр-икĕ çавра.
Эп çак кун çутине те хывам чĕреме
Уйрăлсан та чылай асилсе çӳреме.

БАКУРА

Çак уява пуçтарчĕ Низами.
Тĕнче поэчĕсем çак хулара.
Куç виçипе виççе те илейми
Пин тумлă халăх хĕвĕшет умра.

«Кам пĕлес пур, пурнайăн-и ирччен.
Васка эс ырлăх вăрлăхне акма.
Çак çутă тĕнчерен уйрăличчен
Этем тусне васкатăр пулăшма».

Поэт халалĕ — çăлкуç пек таса.
Баку урамĕнче пĕр лăпкă ир
Кашни ăшпиллĕ сăвă каласа
Чинара сачĕ лартрăмăр эпир.

Хасан Карахусейнов — Пăлхартан.
Кунтах ак тĕрĕк пур — Тахсин Сараж,
Мали поэтĕнчен Гаусуран
Кĕреçине илетĕп эп — чăваш.

Ман хыççăн черетре тăрать Олжас.
Казах вăл. Сулейменов. Сумлă ят.
Джабир Новруз паян ытла хавас —
Ун çĕрĕнче çĕкленĕ хӳхĕм сад.

Перо та кĕреçе кăна пирте.
Поэтăн хĕç-пăшалĕ çав анчах.
Çын чĕрине илем кĕрте-кĕрте
Янратăр пирĕн çулăмлă сăмах!

ГАГРĂРА

«Ку — Гагра. Ир каркăçа карăр,
Çунса ан шăранăр тӳрех,
Хумсем вăйлансассăн кăкарăр
Кимме — тинĕс шух та хивре.

Унтан тата... лăпкăлăх, лăпкăлăх,
Пур-çукшăн ан чуклăр чуна», —
Çапла, кукамай евĕр, кăмăллăн
Ăс панăччĕ тухтăр мана.

Анчах Гагра каçĕ пăлхавлăн
Сăрт-ту юррипе чыхăнать.
Каçар мана, тухтăр.
Асаплăн
Каллех ман чĕре макăрать.

Сăрт-ту юрринче — тунсăх сасă,
Çунса кĕтекенĕн сасси.
Мĕскер мана кăнтăр хавасĕ,
Мĕскер мана унăн усси!

Хумсем çырана шăнăçмасăр
Куçран тăварпа сапнă чух,
Тархасшăн, мана пулăшсамăр,
Ыр тухтăр, — пĕр канăçăм çук.

Хум тăвăлĕн хăйĕн сăлтавĕ,
Пĕр маншăн хăй евĕр сăлтав.
Мĕн сисрĕ-ши тинĕс? Санра вăл
Курать-ши асап е ултав?

Асап пуль. Каçар мана, тухтăр,
Каçар мана, сиплĕ кĕтес.
Кавказ айĕнчен чупса тухрĕ
Ман çăлăнăç — симĕс экспресс.

ТОКИОРА

Токиора — тĕнче ҫăтмахĕнче
Портран Гиндза урамĕпе утатпăр.
Пин тĕрлĕ тĕс ялтрать урамсенче.
Тăварлă тинĕс сывлăшне ҫăтатпăр.

Пин-пин машин, пин-пин велосипед,
Тусан та ҫук кунта, ҫук тĕтĕм-сĕрĕм.
Япун ҫынни хăйне пит хисеплет —
Тӳрех куратăн — вăл типтер те чĕрĕ.

Ҫук хĕвĕшу, ҫук тĕркĕшӳ кунта,
Черет мĕнне пĕлмест иккен ку халăх,
Сая ямасть вăл ылтăн вăхăта,
Ĕҫ кунĕ — ĕҫ валли, кану — канмалăх.

Канда кĕперĕ урлă каҫсанах
Суту-илӳ хули — Акихабара,
Йĕппе ҫипрен «Тойота» таранах
Куҫа шартать пуян япун таварĕ.

Ача-пăча — кунти чи аслă клан.
«Уолт-Дисней» хулин юмах ҫĕршывĕ
Нихҫан та тухас ҫук ман асăмран.
Мĕн-ма ҫавна курмасть-ха манăн ывăл?

Япун ҫыннишĕн чи хакли — йĕрке.
Киосксенче кураймăн порнографи,
Хăй еккине ямасăр ирĕке
Кунти этем курнать пек пысăкраххăн.

Культура шайĕ пысăк пулнăран
Кунти этем курнать пек чунлăраххăн.
Ҫак ҫӳллĕше ҫитетпĕр-ши тахҫан
Тесе пуҫ ватрăм эп ҫав каҫ вăраххăн?

КИТАЙРА

Китай стени ҫинче те пулса куртăм,
Ҫӳре-ҫӳре ĕшентĕм каҫ енне.
Ăш хыпрĕ. Чĕрери асамлă туртăм
Шав йыхăрать тăван-пĕтен патне.

Те кăнтăрла Китай уй-хирĕ тăрăх
Автобуспа иртӳҫĕн курнисем
Асаилӳ ҫуратрĕҫ. Шăрăх-шăрăх.
Анчах пуҫа усмаҫҫĕ хресченсем.

Ватти-вĕтти, арҫынĕ, хĕрупраҫĕ,
Пасар ку тейĕн, ăмăртса, хĕрсе
Ашак е вăкăр, е лаша кӳлсе
Рис уйĕнче пĕр вĕҫсĕр тăрмашаҫҫĕ.

Ача кӳми те пур, вучах ҫути те,
Ҫурла-тăпач та пур ҫак уй-хирте,
Ай, ку сăнсем мана халь ҫывăх питĕ,
Тахҫан йăлтах ку пулнăччĕ пирте.

Хăватланать Китай. Мĕнре-ши тетпĕр
Ун тĕп сăлтавĕ? Килĕр, курăрах —
Ĕҫлет Китай. Эпир сăмах тĕветпĕр.
Килсемĕр, суйлăр — хăшĕ лайăхрах?

КĂНТĂР СĂВВИСЕМ

I.

Коктебель — кăвак тӳпе —
Тĕтрепе хĕвел çĕршывĕ,
Хура тинĕс хĕррипе
Çӳреме пĕр уйăх тивĕ.

Итлĕп эпĕ хум шавне,
Карадаг çине хăпарăп,
Хамăн чирлĕ чĕрене,
Тен, кăштах кăна кантарăп.

Тăвăлланнă шухăша
Пусармашкăн, тен, май килĕ,
Çулăмпа çунан ăша,
Тен, сӳнтерĕ тинĕс çилĕ.

Тен, хама та çынсене
Лайăхрах ăнланăп ӳлĕм,
Манса кайăп иртнине
Паян мар пулсан — иркӳлĕм.

Ирпе мар тăк — эрнерен,
Уйăхран чĕре лăпланĕ.
Иртекенччĕ-ха хуллен
Пуç кашлавĕ, чун суранĕ.

Коктебель — кăвак тӳпе —
Чăвашлах янратăн мар-и?
Утнă теççĕ ку çĕрпе
Ĕлĕк Атăлçи пăлхарĕ.

Тăван пулнă-ха эппин
Ман йăха та Хура тинĕс.
Халь те çывăх пулăпин —
Ăнланма мана эс тивĕç.

Тинĕс, тинĕс! Пулăшах!
Шухăшсен çăмхи чыхланчĕ,

Тӳррипе калан сăмах
Тĕссĕрленчĕ, вăйсăрланчĕ.

... Коктебель – кăвак тӳпе!
Пар мана вăй-хал та чăтăм.
Чунăм шутсăр кӳтнипе
Сан патна çитсе эп тăтăм.

Çап тăварлă шывупа! –
Тăвар çеç чунра кутемĕн.
Юнашар çӳрет шăпа –
Шăпаран тарса ӳкеймĕн.

II.

Мура ан сутăр хăвăра.
Чун-чĕрĕре мура ан сутăр!
Çил çаптăр,
Пăрлă çумăр çутăр –
Çын пулăрах.
Çын пулăрах!

Самант та ку чухне вăрах.
Паха самант кĕтсе ан ларăр.
Вăранăр та часрах сас парăр –
Çын пулăрах.
Çын пулăрах!

Çук, пылак мар вăл чăн сăмах,
Ăна та йышăнма вĕренĕр,
Чун-чĕрĕре тĕпрен çĕнетĕр –
Çын пулăрах.
Çын пулăрах!

Çĕткеленсе, урса кайсах
Çилле хăваласа ан çӳрĕр,
Куçран пăхса калаçăр тӳррĕн –
Çын пулăрах.
Çын пулăрах!

Хăшин вĕрентмелли çукрах,
Хăшин ни ăс, ни тивĕç çуккă,
Эппин, ан палкăр, çӳрĕр лăпкăн
Çине тăрса
Çын пулăрах!

Хисеплĕр, хаклăр хăвăра,
Чун-чĕрĕре мура ан сутăр,
Вилсен киревсĕр ят ан юлтăр —
Çак çĕр çинче
Çын пулăрах!

III.

Ĕç-пуç çинчен паян манса каясчĕ,
Выртасчĕ çутă хăйăр ăшшинче.
Ах, çук иккен, аса илӳ кăвайчĕ
Тăрăлтатсах çунать чун тĕпĕнче.

Лара-тăра пĕлместĕп, тем шыратăп,
Пуçра тапраннă шухăш çĕр те пин...
Йăпанăвĕ пурах-мĕн шухăшра та —
Сӳнмен-ха, пурăнатăп-ха эппин.

Çак Крым ытамĕ ытарма çук ырă,
Хĕвел те канăç, хум та уçă çил...
Крым пирĕн Çеçпĕле сип панă вырăн,
Анчах ăна та туртнă тăван кил.

Ăна та канлĕх парайман çак кăнтăр,
Ăçтиçуксем сутсассăн та хăйне
Тăван çĕршыв сăнарĕ йăлтăр-йăлтăр
Час-час килсе çутатнă ун чунне.

Каçарăр та — каллех тăрлавсăр тапхăр
Килмест-ши тетĕп ункă çулĕпе.
Таса çынна курсан питрен суратпăр,
Алла çăватпăр ун куççулĕпе.

Сăмахăм йуçĕ, шухăшăм та йуçĕ.
Çак чăнлăх çеç чуна вăй-хал парать:
Аманнă Çеçпĕл — ĕмĕр çĕнтерӳçĕ,
Вилмест аманнă Çеçпĕл — пурăнать!

IV.

Кучук-Енишарăн чи çӳллĕ тăрри.
Кунта-мĕн Волошин поэт вилтăпри.
Хушман вăл лартмашкăн ни палăк, ни йывăç,
Чапа хапсăнман тет сăпайлă çак сăвăç.

Тӳрех аса килчĕ мана Кĕслету.
Слакпуç. Шăрăх кун. Çухату. Ырату.
Ах, вăхăт вĕçет! Улшăнать çутçанталăк.
Пурнатпăр Поэтсăр. Шăп та лăп çулталăк.

Çулталăк Ухсайсăр. Салху та кичем.
Йăнлаççĕ ӳпре те шăна сассисем.
Ăçта-ши юманăн хăватлă кашлавĕ,
Пулайĕ-ши, çук-ши? Сайра-ха хунавĕ.

Сайра та имшер вăл. Никам шăварман.
Хунав ĕрчетмешкĕн ерçӳ тупайман.
Ятли хăй пирки пехлетсе ăшталаннă —
Хăй чĕрĕ чухнех чулланса палăканнă.

Суя сумпала ыткăнаймăн инçе,
Хак парĕç çынсем эпир тунă ĕçе.
Ухсайсăр çулталăк. Поэтсăр çулталăк...
Хăçан тепĕрне уçса парăпăр алăк?

... Кучук-Енишар... Слакпуçри Кĕслету...
Памасть мана канăç пĕр пысăк ыйту:
Ухсайăмăр кайрĕ. Хăçан килĕ сăвăç?
Кĕсле тăвĕнче халь — ни палăк, ни йывăç.

Ни палăк, ни йывăç. Пĕччен вилтăпри.
Унта канлĕх тупнă поэзи турри.

Эй, вĕчĕх чунсем! Тавлашса ĕшенсессĕн
Танлашăр унпа, танлашма вăй çитсессĕн!

V.

Ырри кăна юлать пиртен,
Ырри кăна юлать.
Ырри – атте-аннемĕртен,
Ытти – ютран пулать.

Атте-анне тивлечĕпе
Ял-йыш çине тухсан
Атте-анне ятне чипер
Тытса çӳрер ялан.

Ку кам ачи тесе ыйтсан
Ку çавăн теччĕр-и,
Ан çунтăр пирĕншĕн нихçан
Атте-анне чĕри.

Ырри кăна юлать çынран,
Ырри кăна юлать.
Ырри – юратнă çĕршывран,
Тăван çĕртен пулать.

Тăван çĕршыв тивлечĕпе
Тĕнче çине тухсан
Тăван çĕршыв ятне чипер
Тытса çӳрер ялан.

Хăш халăх ывăлĕ тесен
Чăвашăн теччĕр-и,
Сан ăшă кăмăлу туссен
Чунне тиверттĕр-и.

Ырри кăна юлать пиртен,
Ырри кăна юлать.
Чуна усал-тĕсел кĕртсен
Чун çурмалла каять.

Е вĕчĕхӳ, е кĕвĕçӳ,
Выç куçлăн хапсăнни –
Чуна кăшлать çав хирĕçӳ,
Хăрушă ун сăнни.

Ырри кăна юлать пиртен,
Ырри кăна юлать.
Мĕн çуралса мĕн виличчен
Чыса упрас пулать.

VI.

Тин паллă пулчĕ: эпĕ пĕччен мар!
Вулав çуртне кĕретĕп – ак шăпаçăм!
Хамза, Хикмет, Уитмен... Юнашар
Хусанкайпа Уяр тăра параççĕ.

Салам, тăванăмсем, ентешĕмсем!
Сире курсан хама телейлĕ туйрăм.
Ăслăлăха хакла пĕлекенсем
Чăвашсене те панă ав пĕр уйрăм.

Асилтĕм çулçӳревçĕ Уяра.
Ун чух Йĕлмелĕ питрава чыслатчĕ.
Мĕнпур ял-йыш тухатчĕ уява.
... Уяв. Театр килнĕ. Пĕр писатель.

Уяв. Писатель килнĕ Йĕлмеле!
Хытанкă хăй. Хăмла кашти пек вăрăм.
(Вунпилĕк çул тултарнă тĕлелле
Эп хам та пĕр вунпилĕк сăвă хыврăм.)

Çăвар карса пăхатăп ун çине.
Ахаль çынах. Кĕпи кăшт шупкаланнă.
Юрлать Йĕлмелĕ. Унăн юррине
Итлет Уяр. Хăй шутсăр хавхаланнă.

Ăçта чиксе çӳрет-ши талантне? –
Шутларăм эп. Ун чух, айван, пĕлменччĕ

Талант вăл – шухăш, чунлăх иккенне.
Çавна пĕрремĕш хут Уяр систерчĕ.

Пул халăхпа. Ялтан яла çӳре.
Тăван сăмахăмăр – ахах та ĕнчĕ.
... Уяр чăваш чунне кĕре-кĕре
Ун çутине пухать-мĕн пĕрчĕн-пĕрчĕн.

Ман çитмĕл çичĕ çăллă ялăмра
Янрать иккен чи çутă юрă-сăвă!
Çавна тупма пултарнă Уяра
Иĕлмелĕм ячĕпе ялан тав тăвăп.

... Асилтĕм эп паян Хусанкая.
Чăваш та Хусанкай – синоним евĕр.
Таçти-таçти туссен çĕрне каям –
Пĕр кун иртмест ăна аса илмесĕр.

Те куç пăвма пĕлетчĕ Хусанкай,
Те чунĕнче асамлă вăй кĕрлетчĕ –
Виçсе, касса сăмах вакланă май
Çынна хăй тĕнчине тӳрех кĕртетчĕ.

Чăваш тĕнчиччĕ Хусанкай тĕнчи:
Сăпайлăх та ĕçченлĕх, тараватлăх,
Таçта çитсессĕн те – чăваш элчи,
Таçта пулсассăн та – виçеллĕ, ятлă.

Эп Хусанта тĕл пулнăччĕ ăна.
Поэт ун чух ман сăввăма вуларĕ.
Мĕн калĕ тетĕп Хусанкай мана? –
Ни ятламарĕ вăл, ни мухтамарĕ.

Тăратчĕ Мударрис юнашарах –
Тутар пулин те – «хĕреснай аттеччĕ»,
Каларĕ Хусанкай: «Упра, Шараф,
Çак ачана... Эп хам та ун пекрехчĕ...»

Мĕн пулнă-ши пирте пĕрешкелли?
Сăн-пит-ши? Е лара-тăра пĕлменлĕх?
Татса калаймăп. Маншăн чи кирли –
Таса чунра та пултăрччĕ пĕрпеклĕх.

Манпа паян Хусанкайпа Уяр.
Тĕтре çухалчĕ. Кун каллех хаваслă.
Хĕвел те тинĕс. Эпĕ пĕччен мар.
Чĕрем тулли – пулни, пурри, пуласлăх.

VII.

Пулать иккен хаваслă тинĕс.
Пулать иккен пăлхавлă тинĕс.
Пулать иккен асаплă тинĕс –
Анчах хитре вăл яланах.

Чун савăнман чухне ан çыр эс.
Чун тарăхман чухне ан çыр эс.
Чун макăрман чухне ан çыр эс –
Хумсем калаççĕ пек мана.

Коктебель, 1987 çул, июль

ПУРĂНАН, ПОЭТ!

Пултăм Çеçпĕлте те Теччĕре,
Пултăм эп Крымра та Остерта.
Вăл хăех – пин-пин, Кăвар чĕре,
Вилес çук вăл терĕм, вăл – кунтах!

Таврăнтăм поэт çĕршывĕнчен.
Çаврака шур çăкăр хĕм сапса,
Çынсене сӳнми телей сунса
Ялтраса выртатчĕ килсерен.

Ирĕке саван чăваш ачин
Ирĕклĕ юрри ян-ян каять.
Сăвăçĕ те юрăçĕ пин-пин –
Ут çулать, ака тăвать, юрлать.

Çук, калаймăн: лăпкă та йăваш...
Курăр, çивĕч ухă йĕппилле
Хăйĕн ĕмĕтне тĕлле-тĕлле
Чашкăрса вĕçме пĕлет чăваш!

Таврăнтăм эп капăр Теччĕрен...
Тинĕс евĕр Атăла курса,
Шутсăр савăнса, хăпартланса
Сăвă шăрçаларăм мĕн ирччен.

Вĕçсĕр иртрĕç шур пăрахутсем,
Пин-пин сас хупларĕ таврана,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ халăх çыннисем
Ăшшăн саламларĕç çĕн куна.

Эп вара шутларăм ăшăмра:
Çеçпĕл ĕçĕ харама кайман –
Çак таса, телейлĕ Çĕршывра
Çыннисем телейлĕ те пĕр тан.

Тин çеç килтĕм тинĕс хĕрринчен.
Крым хĕвелĕ сывлăхшăн паха.
Çеçпĕл сассине те илтĕп-ха
Терĕм çыранпа утмассерен.

Хумлă-хумлă кăпăк авăсса
Кĕрешме чĕнен хăватлă шав
Асилтерчĕ аслă сăвăçа.
Тинĕсĕм, мухтав сана, мухтав!

Вăл кунтах-мĕн ĕмĕр-ĕмĕрне.
Вăл ав тинĕс хумĕпе кĕрлет.
Çĕнĕ кунăн çĕнĕ пурнăçне
Юратса тăма чĕнет поэт.

Тин кăна-ха çитрĕм Чăваша
Çут тиреклĕ ăшă Остертан.
Калаймарăм: «Сывă пул, Мишша».
Çавна çеç калайрăм: «Пурăнан!»

Украина хĕрĕ сан патна
Чĕр чечек çыххи йăтса пырать,
Палăку çине вăл сан ятна
Тĕрĕллĕ рушник çакса ярать.

Пурăнан, поэт! Кай, вилĕм, чак!
Пурăнан! Пĕтмен-ха çут тĕнче.
Эсĕ кĕрешӳ вăйне анчах
Килĕштернĕ пурнăç тăршшĕнче!

УХСАЙ ЯККĂВНЕ

Салам сана, Якку пиччемĕр!
Чăваш чапне çĕкле-çĕкле
Кун-çул васканине сисмесĕр
Ак эс те çитрĕн çитмĕле.

Ту урлă çул выртать. Çав тăвăн
Чи тăрринче тăратăн эс.
Ытарайми Тăван çĕршывăн
Ытарайми пин-пин кĕтес.

Пĕри вăл санăн — Пушкăрт енĕ.
Вуншар çăлкуçлă Слакпуçра

Аҫу-аннӳ сана сиктернĕ
Юмах-халаплă сăпкара.

Пĕр классик ҫеҫ сахал-мĕн пулнă,
Ик классик парăр Слакпуҫа!
... Эй, ыр чĕреллĕ, тулăх чунлă
Слакпуҫ, Слакпуҫ, тайма пуҫах.

Юрларăн эс, Ухсай пиччемĕр,
Хĕрӳ ĕҫпе малашлăха
Утмашкăн ывăнма пĕлмесĕр
Эс чĕнтĕн пирĕн халăха.

Тăван ҫĕршыв вута кĕрсессĕн
Эс хăвăн атă кунчинчен
Тетрадь илсе шав йĕркелерĕн
Йыхравлă сăвă кунсерен.

Ҫĕнтерчĕ халăх, паттăр халăх...
«Куҫ пек упрар, туссем, мире,
Тĕп пултăр вăрҫă, курайманлăх!»
Тесе вĕрентрĕн эс пире.

Вĕрентрĕн эс
Таса чĕреллĕ,
Тӳп-тӳрĕ чунлă пурăнма,
Чăваш ятне
Хитре, йĕркеллĕ,
Сăваплă, чыслă упрама.

Вĕрентрĕн эс: ҫуратнă ҫĕрĕн
Чăн илемне курас тесен
Юрат ăна, сипле – вăл пирĕн
Тăван сăпка мĕн ĕмĕртен.

Сан уяву – Чăваш уявĕ,
Чĕре юрлать кăкăрсенче.
Эс – халăх ывăлĕ, мухтавĕ,
Мухтав сана, Якку пичче!

1981 ҫул, ноябрь

МУСТАЙ КĂВАЙЧĔСЕМ

Эп курнă сахал мар — Европа, Ази...
Çĕр çĕршывра çĕр тĕрлĕ-мĕн илем,
Анчах асра тĕп вырăнта тăраççĕ
Пушкăртстанри Мустай кăвайчĕсем.

Кашни пĕр пилĕк çул Мустай пиччеçĕм
Чĕнет мана çав çут кăвайт патне.
Килте мана каллех унта-и теççĕ,
Васкатăп теп поэзи çăтмахне.

Васкатăп теп ытарайми Уралăн
Чи ăшă-ăшă ытамне лекме,
Унти чи ăслă-пуçлă Шурсухалăн
Аттеннипе пĕр тан пилне илме.

Эй, ват Урал! Эй, иксĕлми Шур Атал!
Эй, Тимĕн, Слакăн паттăр çыннисем,
Хăватлă вăй парса пурсăмăра та
Çĕкленчĕç ав Мустай кăвайчĕсем.

Кăвайт вутти — кĕлте çĕмелĕ евĕр
Çӳл тӳпене тĕлленĕ тип кĕреш —
Çунать-çунать хĕмне пĕр хĕрхенмесĕр,
Тĕнче курмалăх çуталать Кĕлеш*.

Тĕнче курмалăх ялтăрать Хĕр Тăвĕ**,
Тĕнче илтмелĕх янăрать курай.
Кунта кăна пĕлтерĕшлĕ эс, сăвăç,
Сăвву тĕнче çине саланнă май.

... Çут тĕнчене илем кĕртме çуралнă
Кашни çынна вăй панă ыр Этем,
Тавах сана. Эс хăв ĕçне пултарнă.
Мухтав сире, Мустай кăвайчĕсем!

---

* Кĕлеш — Мустай Каримăн тăван ялĕ.
** Хĕр Тăвĕ — поэт ялĕ çывăхĕнчи ту.

РЕНАТ ХАРИСА

Çил-тăвăл витĕр çăлтăр курăнать,
Çитес çĕре çитесчĕ-ха, Ренат.

Хусан ав инçе мар. Лиля-ханумăн
Вĕри шӳрпи пире кĕтет пуль сумлăн.

Ĕпхӳ туссем парса ярсаччĕ кăмăс,
Килте эс тăсса ярăн хромка-купăс.

Вара йăлт мантарса самантлăха
Мана эс илсе кĕрĕн яшлăха.

Кукшам çине каллех катрам вырнаçĕ,
Вунсаккăрти Пурхил санпа калаçĕ.

Кăштах хĕрсен, тен, илĕ мухтанса,
Куккук çинчен вăл парĕ юрласа.

Унтан пуçланĕ сăвă — тутарла
Е чăвашла — тĕнче ăмсанмалла.

Лиля-ханум — ирхи хитре чечек —
Çуталĕ самантрах туй хĕрĕ пек.

Çил-тăвăл витĕр çăлтăр курăнать,
Çитес çĕре çитес пулать, Ренат.

... Вăл, мур илесшĕ, сисрĕ тунсăха,
Халех çитетпĕр терĕ яшлăха.

Çул урапи çинче — чак-чак та кăмăс,
Хăйпе пĕрлех иккен ун хромка-купăс.

Юрлар, Ренат! Мухтар тăванлăха,
Поэт тени ан пĕлтĕр ватлăха!

ШЕЛЕПИЕ

Сана таҳҫан «Чăваш Гомерĕ» тенĕ
Куҫсăрланса юлнишĕн кăна мар.
Эс халăха пин юрă парнеленĕ,
Чун-чĕрӳнтен кăларнă хĕм-кăвар.

Нушаллă пурнăҫ пусмăрĕ, асапĕ,
Хăв пек калас тăк, пулнă — тур ҫырлах!
Анчах чăн-чăн поэт пуҫа усать-и —
Вăл кĕрешме чĕнет малтан малах.

Ун чĕринче — ҫуратнă халăх юнĕ,
Юратнă халăх кăмăлĕ унра.
Чăн-чăн поэтăн аслă халăх чунĕ
Кĕрлет кашни поэма-сăвăра.

Мĕнех тĕнчешĕн сан «Çĕрпӳ пасарĕ»,
Мĕн уншăн Хăнтăрча та Çарăмсан? —
Эппин мĕн-ма хĕрӳллĕн саламларĕ
Сана хисеплесе Ромен Роллан?!

Эппин мĕн-ма Лахутипе Купала,
Толстой, Серафимович та Джамбул
Сана ытараймасăр пачĕҫ алă,
Каларĕҫ ыр сунса: «Телейлĕ пул!»

Ҫут ĕмĕтпе илемлĕ пурăнмалăх
Поэтсене этемлĕх ҫуратать.
Хăй пек чунлисене савать те халăх
Яланлăхах чун-чĕрере упрать.

* * *

Юрий Сементере

Çак ӗмӗр пӗтӗмпех хура та шурӑ,
Тӑратпӑр акӑ ӗмӗр вӗҫӗнче,
Тем-тем курса тем-тем чӑтсан та, Юра,
Пире çапса хуçмарӗ çут тӗнче.

Хури – хурах. Çак çӗр çине килсессӗн
Сӑпка юрри илтмерӗмӗр санпа –
Пире пӑвса тӑкас тесе çиллессӗн
Тӑшман çуйхашрӗ урмӑш сасӑпа.

Шурри – шурах. Хӗвеллӗ ӑраскалӑн
Пире валли те çитрӗ ыр хӗлхем –
Хӑйсем пӗтсен те, йӑх юнне тӑсмалӑх
Пире çӑлса хӑварчӗç аттесем.

Кайран санпа ӑнлантӑмӑр – тӗнчемӗр
Хура та шурӑ çеç те мар иккен.
Курма пӗлсен – пӗр вӗҫсӗр ун илемӗ:
Кӑвак та ешӗл, йӑмӑх та кӗрен...

Курма, илтме пӗлсессӗн çутçанталӑк –
Пин çутӑллӑ, пин кӗвӗллӗ илем,
Çавна куллен çынна астутармалӑх,
Çав илемпе чуна савӑнтармалӑх
Çут тӗнчене килеççӗ поэтсем.

РЕПЬЯХ ЮРЛАТЬ

Эй, Украина çĕрĕ,
Эй, кăвак куç — Десна!
Таçта та пулăп-çӳрĕп —
Манайăп-и сана?

Çурхи садсем шап-шурă,
Тӳпе — пĕр пĕлĕт çук.
Çак ырлăхра пĕр юрă
Юхать — «Вĕç, вĕç, куккук».

Черниговри ман тусăм —
Репьях поэт — юрлать,
Сасси хитре те уçă,
Сасси инçе каять.

Ку чăваш мар ан тейĕр,
Тĕп-тĕрĕс, чăвашла
Юрлать çут кĕмĕл тенор
Тĕнче ăмсанмалла.

Итлет ăна черешня,
Итлет ăна каштан:
«Епле килсе илешнĕ
Çак юрă аякран?

Кĕвви ытла та çывăх,
Кĕвви астунă пек,
Эппин каллех эс сывă,
Çурхи кăвак чечек?

Юрри сăпайлă çеç те,
Анчах епле хитре!
Ăна юрлатчĕ Çеçпĕл —
Тунсăхлакан чĕре».

Тавралăх лăпкă, курăр,
Вăл çак юрра тăнлать.
Янрать çунатлă юрă,
«Вĕç, вĕç, куккук» янрать.

Хăни нумай ку яхăн –
Итлеччĕр, илтчĕрин!
Юрри пĕтмест Репьяхăн,
Вăл – Çеçпĕл чунлă çын.

Юрлать Репьях тăванлăх
Кĕперĕ çийĕнче,
Нумай чĕлхеллĕ халăх
Вĕри ытамĕнче.

Йыш пулăшать те – шеппĕн
Хăватлă хор янрать.
... Çакна курсанччĕ Çеçпел,
Илтсенччĕ çак юрра.

* * *

Петр Андреева

Эп пултăм сан кĕрекӳнте.
Эрех-сăра ĕçме пыманччĕ,
Чăваш юрриччĕ – тĕпелте
Темрен те çывăх тăван сасчĕ.

Эп пултăм сан кĕрекӳнте,
Симпыл пек юрă юхрĕ мар-и?
Чуна, юна, ăса, ӳте
Çав юрă харăс тыткăнларĕ.

Ман несĕл мар-и куçăмран
Пăхса юрра кĕме хистерĕ.
Хам сассăм вăйсăр пулнăран
Юрра пăсма хăю çитмерĕ.

Эп пултăм сан кĕрекӳнте...
Йĕрет, йĕрет салхуллă шăпăр,
Кĕсле хӳхлет – чĕре кӳтет.
Шыв сыпнă пек, эп лартăм шăпăрт.

Тавах сана. Чун тĕпĕнчи
Хĕлĕхĕме савса ĕнертĕн.
Мана эс халăх умĕнчи
Тивĕçĕме пĕлме вĕрентрĕн.

ҪУЛ ҪУТАТСА

М.П. Михеев ученăй-физик
ҫутă сăнарне

Такам пулаттăм эп,
Таҫта пулаттăм
Хам пурнăҫра сана курман пулсан.
Вĕрентекенĕм!
Манăн вăй-хăватăм,
Кăшт каярах пулин те
Ил манран

Хĕвел пайăркинчен пуҫтарнă кăшăл –
Саваттăн эс тĕссен ҫут ваййине.
... Паян та эп куратăп
Санăн мăшăр
Чĕп-чĕрĕ куҫусем ҫуталнине.

Ах, ĕмĕрхи пĕр шелсĕр ҫутҫанталăк,
Эс тепĕр чух ытлашшипех кăра,
Ҫак пурнăҫа уҫатпăр кăна алăк –
Ăна эс васкаса хупма тăран.
Этем ҫине витен те шур шăналăк
Ят ҫеҫ унран,
Ят ҫеҫ эс хăваран.

Вĕрентекенĕм!
Сан яту та чĕрĕ,
Эс пин вĕренекенĕн чĕрине
Ху ҫутнă ҫăлтăрпа килен каҫ-ирĕн,
Эс вĕсенех халь пурăнма чĕнен!

Пурнас тăк –
Пĕр юлми ҫунса кайса!
Пурнас тăк –
Нăйкăшмасăр, парăнмасăр!
Пурнас пулсассăн ĕмĕр пурăнсамăр
Ҫул ҫутатса!
Ҫул ҫутатса!

ПУҪКĂШĂЛЬ ВЫРĂННЕ

Валерий Молодцыгина

Ах, кунĕ паян пăрлă-çумăрлă, çиллĕ,
Ах, кунĕ паян хураран та хура.
Мĕнле-ха капла:
Молодцыгин та... вилĕм
Мĕнле йышăнас çак тискер хыпара?

Вăл – чĕрĕлĕх хăйччĕ.
Хăюллăччĕ, шухчĕ,
Лара та, тăра та пĕлместчĕ нихçан.
Ăна Чăвашра юратман этем çукчĕ
Çут чунлă артист та этем пулнăран.

Чуна вырнаçмасть:
Молодцыгин та вилĕм.
Ах, сивĕ те хурлăхлă кунĕ паян.
Пиртен уйрăлать тепĕр
Çеçпĕл чĕриллĕ,
Çунатлă, хăватлă та çывăх тăван.

1993 çул, юпа

ХĂНАНА ПЫР ТЕРĔМ...

Н.Михлеева

Хăнана пыр терĕм. Эс чĕнмерĕн.
Кӳрентертĕм пулĕ-çке, ара.
Шутламарăм – чăн-чăн çĕр ĕçченĕн
Хăна шухăш мар çак шăрăхра.

КУҪ ПЕК УПРĂР

Пушкăрт поэтне Сафуан Алибаева

Çак самантра санпа пуласчĕ ман
Е Атăл, е Шур Атăл хĕрринче,
Санпа ларасчĕ, тусăм Сафуан,
Тĕнчен ытарайми ытамĕнче.

Пырасчĕ паттăр Салават патне
Чапай çĕршывĕнчен салам йăтса,
Санпа тухасчĕ Дема хĕррине
Сан чаплă Пушкăртушăн савăнса.

Çак самантра санпа пуласчĕ ман!
Илтесчĕ санăн хӳхĕм юрруна.
Ăна хĕрӳ ĕçрен кăшт пушансан
Нефтяниксем юрлаççĕ тахçанах.

Санпа çӳресчĕ ман Пишпӳлекре
Нарспи çĕршывĕпе хĕпĕртесе,
Чи аслă юрату мĕнне пире
Систерĕччĕç кунти шурсухалсем.

Çак самантра санпа пуласчĕ ман
Шап-шурă Шупашкар çыранĕнче,
Çын ĕмĕтне пула хумханакан
Вĕр-çĕнĕ аслă тинĕс хĕрринче.

Ман Чăвашра паян — хĕрӳ кунсем,
Вĕри ĕç шавĕ тыткăнлать чуна,
Çĕр кисретен мăнаçлă тракторсем
Пур кăмăлтан кăтартăттăм сана.

Çак самантра санпа пуласчĕ ман,
Санпа пулас текен кунта нумай.
Ăста поэтсене хакланăран
Сана саватчĕ вилĕмсĕр Ухсай.

Урал та Атăл. Ку – яланлăха.
Вĕсем нихçан тăшман хурри пулман.
Куç пек упрар эпир те туслăха.
Санпа пуласчĕ манăн, Пушкăртстан!

ХĂВАХ ЭС ПĔР ТĔНЧЕ

Элли Юрьева

Элли пиччеçĕм, Юрьев,
Е – юлташла – Элли,
Эс ху – пĕр чаплă юрă
Чăваш тĕнчи валли.

Элли тăванăм, Юрьев,
Е – аçу пек – Нямань,
Ялан ĕçленĕ тӳррĕн,
Чăваш ятне яман.

Тĕнчӳ сан çӳллĕ, капăр,
Тĕнчӳ – хĕвел таран,
Пире эс мĕн хăратпăр
Тесе çул кăтартан.

Ăспа хăюлăх çулĕ
Чăваш чунне çĕклет.
Эллин çунатлă шкулĕ
Çӳле вĕçме чĕнет.

Ăста ăсчах шыравĕ
Аваллăха уçать,
Пире Элли ялавĕ
Малашлăха туртать.

Яту яланлăх çӳрĕ
Чăвашăн чунĕнче.
Элли Михайлыч Юрьев,
Хăвах эс пĕр тĕнче!

ЁНТЁ ПЁЛЁТ ШĂВАТЬ

Владислав Никитина, Белоруссире
пурăнакан паттăр чăваш йĕкĕтне

Ёнтĕ пĕлĕт шăвать ушкăн-ушкăн,
Вăраха тунсăх кайрĕ кăçал.
...Çывăхрах туйăнать Хирти Кушкă,
Çывăхрах курăнать Тăхăрьял.

Çĕршыва асилсен чунăм уçă,
Йывăр шухăш иртет ерипен,
Ах, чĕреçĕм, ан авăн, ан хуçăл,
Манайман-ха сана тăван ен.

Аслă Атăл каллех канлĕх парĕ
Хăйĕн чăрсăр та шух ывăлне,
Тен, вăй кĕртĕ ун ырă хыпарĕ
Ирĕке савакан чĕрене.

Халиччен тăвăла парăнманччĕ,
Хум айне те пулманччĕ нихçан.
Пар, çĕршывăм, хул-çурăм хăвачĕ,
Çут ăс пар эс, çĕршывăм, паян.

Аманса усăнман-ха çунатăм,
Эп – пилот. Манăн çул – çӳлеллех.
Ăнланатăп, шанатăп, куратăп –
Туссемпе çĕнтерӳ пулатех!

1996 ç.

* * *

Илле Герасимова

Иртет кун-çул. Ак санăн та, тăванăм,
Çур ĕмĕрӳн йĕс чанĕ çапрĕ-çке.
... Ума тухать çут шывлă Çарăмсанăм,
Асрах вăрман сассиллĕ Саминкке!

Эс – ун ачи. Çав хӳхĕм çутçанталăк
Хăватлă ăс та, вăй та панăран
Шăпу сан пулчĕ халăх ăмсанмалăх
Тутарстанран шур Шупашкар таран.

Ут малалла хăюллă та сулмаклă,
Ентешĕм, шăллăм, тусăмçăм Илле.
Пул Çарăмсан çăлкуçĕ пек хăватлă –
Çĕр çул чанне те санăн илтмелле!

ПĔР ЮЛТАША

Ан кĕвĕç – ăшă вырăн
Эп шыраман ниҫан.
Çынна тăвасшăн ырă
Пурнатăп-çке ялан.

Ан хирĕл – пыл та çушăн
Эп юлташсем пухман,
«Тус пул» тесе-и хушăн
Хăв сивĕ çын пулсан?

Пулам ыр ятлă эпĕ
Тесе эп тăрăшман.
«Ĕçне кура – хисепĕ», –
Тет халăх авалтан.

Ан çĕтĕл – курайманлăх
Тек ан пытар хĕвне.
Парать юратнă халăх
Ырришĕн ыррине.

МӖН ПУР-ШИ ПИРӖН ТУСЛӐХРА?

Толя Ефремова

Сасартӑк кӑмӑл хуҫӑлсан
Эп чӑтаймарӑм, тӳсеймерӗм,
Сана эп чӗнтӗм Вӑрмартан –
Мана эс вӑхӑт ҫук темерӗн.

Чӑтма ҫук савӑнӑҫ килсен
Пӗччен хавасланас килмерӗ.
Сана эп хӑпӑтрӑм ӗҫрен –
Мана эс вӑхӑт ҫук темерӗн.

Мӗн пур-ши пирӗн туслӑхра?
Чи-чи хакли вӑл, тусӑм, эсӗ,
...Ҫитейӗп-ши эп вӑхӑтра
Мана эс хӑв патна чӗнсессӗн?

* * *

А.

Куҫран калас – вут-тӑвӑл тухӗ,
Каламасассӑн чун чӑтмасть.
Те ырӑ пулмалла, те шухӑ?
Шыратӑп – тупсӑм тупӑнмасть.

Талант тени, тӑванӑм, тусӑм,
Пӗр ҫын пуянлӑхӗ ҫеҫ мар.
Ҫавна манса хисепсӗр-сумсӑр,
Тархасшӑн, ыр ятна ан яр.

ТĂЛМАЧ ТĔНЧИ

Анатолий Смолина

Поэт тĕнчи вуншар тĕнче пулсассăн
Тăлмач тĕнчи – пиншер тĕнче иккен.
Чуна уçса, хушка хум пек, кас-кассăн
Вĕсем килеççĕ хăй еккипелен.

Вĕсем мана туртса кĕрсе каяççĕ
Çав чăрсăр хумăн шавлă вылявне,
Вĕсем мана асамлă вăй параççĕ,
Хивре тытаççĕ кăмăл хĕлĕхне.

Шекспир ăслайĕ, Лорка çавра çилĕ,
Е Соломонăн Юрăсен юрри,
Е Достоевскин пин-пин çын шăпиллĕ
Хĕвелĕ, пĕлĕчĕ, хура тĕтри,

Е Пушкинăн ăрша чĕтревĕ евĕр
«Мĕн тупрăн эс ман ятăмра?» тени,
Тукайăн е Каримăн куç илмесĕр
Çуралнă çĕршывне савма пĕлни,

Распутинăн юратăвĕ-хӳхлевĕ,
Леонов шанчăкĕ, Репьях çемми,
Харис сукмакĕ, Красин çул çӳревĕ...
Мĕн чуль тĕнче – нихçан вĕçленейми!

Чунрах эсир, ман чĕререх.
Хăватăм
Çитейнĕшĕн хама та кăшт мухтам.
Сире савса эп чăваша кăлартăм,
Сире паян
Тăван тесех калам.

КАШНИ ЁҪӲ АХАХ-МЕРЧЕН

Алексей Трофимова

Пире Тутар чăвашĕ теççĕ
Те шӳтлерех, те куларах.
Шереметсем, çавна пĕлмеççĕ, –
Унти чăваш та чăвашах.

Епле чăваш тата! Пит тарăн
Каяйнă пирĕн тĕп тымар.
Пирте вылять тăван пăлхарăн
Вут чулĕ чĕртнĕ шĕл-кăвар.

Пирте чăтулăх, парăнманлăх,
Ёçченлĕх, чăрсăрлăх, хевте.
Ăс-хакăл та, çынна тухмалăх
Вăй-хал та сахал мар пирте.

Пăлхар-чăваш ятне ямасăр,
Йывăрлăха çĕне-çĕне
Вут кайăк пек хăюллăн, паттăр
Эпир тухатпăр тĕнчене.

Мухтавлă Яковлев пехилĕ
Хăват памасть-и-ха пире?
Кашни пĕр çăлтăр хăй паллиллĕ,
Хăй сăнлă аслă тӳпере.

Пĕри вăл эс, Лекçей Лексантăрч, –
Трахвин пиччемĕр йăхĕнчен,
Шелепипе Ехрем Еллиев
Ытарайми çĕршывĕнчен.

Шăпах кунта эс асăрханă
Чул палăкри аваллăха,
Кунта эс вулама пултарнă
Тĕрĕсенчи çырулăха.

Сан çĕклемӳ – тĕнче курмалăх!
Кашни ёçӳ – ахах-мерчен.

Сана çав ĕçшĕн тав тумалăх
Сăмах та çитмĕ чăвашсен.

Ни кĕвĕçӳ, ни ăмсанулăх,
Ни ятлаçу сан çук пачах.
Пире сунан тăванлăх-туслăх,
Поэт, художник та ăсчах.

Чуну таса. Чĕрӳ хăватлă
Виçесĕр анлă кăмăлу.
Ав, хăв пекех ӳсет талантлă
Сан пултаруллă ывăлу.

Пире Тутар чăвашĕ тенĕ,
Эпир çав ятшăн кӳренмен.
Тĕпрен чăваш пулма вĕренĕр,
Туссем, Лекçей пиччемĕртен.

ХУДОЖНИК, ĂНЛАНТАР МАНА...

Владимир Агеева

Художник, каласам мана çакна:
Сан ăшунта ларать мĕнле асамçă,
Мĕнле вăйпа чĕртетĕн эс çынна? –
Сан çыннусем чĕп-чĕррĕн курăнаççĕ.

Сăмах пуçар – атте-анне пекех.
Шанса та ĕненсе, пĕр пытармасăр.
Чăвашăн кун-çулне хыпаланмасăр
Вĕсем уçса кăтартĕç пĕтĕмпех.

Художник, ăнлантар мана çакна,
Санран эп тахçанах ыйтса пĕлесшĕн:
Кисть вĕçĕнче усратăн-ши вутна
Е – хĕвел пысăкăш чун-чĕрӳнте-ши?

КĂННА КУШКИНЧЕ ШУХĂША КАЙНИ

Эй, Аслă çыннăмăр! Вĕрентекенĕмĕр!
Эпир, Сан пилӳпе çĕкленнисем.
Епле Сана хисеп туса çитерĕпĕр,
Епле тупайăпăр ыр сăмахсем?!

Чăваш шăпи тĕлне Турри хăй янă-тăр
Сана, ăс-пуçлă паттăр ывăла.
Ан тив вăл, тенĕ пуль, хĕвел пек ялкăштăр,
Хăй халăхне шав турттăр çутталла.

Тавах, Вĕрентекен, Сана çав çутăшăн.
Килсех тăран çĕн ăрусем валли
Алфавита кĕртсе лартма май тупнăшăн
Ытла тăван тăватă сас палли!

Асрах чăваш чĕлхи, тăван сăмахăмăр
Тĕнчипелех янранă ыр самант, –
Чăн чăвашла калаçĕ Андриянăмăр,
Амăшĕпе пуплерĕ космонавт.

Тавах, Вĕрентекен, пире ыр суннăшăн
Татуллă, килĕшӳллĕ пурăнма.
Вĕрентрĕн эс: хусамăр сӳрĕк пулнăшăн
Чĕлхемĕр ан пултартăр çухалма!

Тавах, Вĕрентекенĕмĕр, ыр çыннăмăр!
Эй, пурăн, ан хавша, Кăнна Кушки!
Эс хавшасан ыран эпир мĕн курăпăр,
Кам парĕ Ывăл – Яковлев пекки!

КАЛАВСЕМПЕ ПОВЕҪСЕМ

АЙĂПЛĂ-И ЭПЁ?

Повесть

Ку вăл студент пурнăҫĕнчи юлашки ҫăва тухсан пулса иртрĕ. Пирĕн, ыран-паян геолог ятне илес ҫынсен, темиҫе уйăха практикăна каймалла. Пĕр хĕвеллĕ ир васкасах чăматансем пуҫтартăмăр та чугун ҫул вокзалне васкарăмăр.

Марина та пурччĕ ăсатса яракансем хушшинче. Эпĕ унăн вĕри питҫăмартинчен сĕртĕнтĕм, вара, тапраннă вакун пускăчи ҫине хăпарса тăрса, сылтăм алла ҫĕклерĕм. Сывă пул, тус-тантăш! Манран ҫырусем кĕт, Марина!

Халăх нумай мар вакунра. Пĕр купери кантăк умĕнче ватă хĕрарăм ларать. Сĕтел ҫине тĕрлĕ ăпăр-тапăр кăларса хунă. Тин ҫеҫ тапрантăмăр — хĕрарам вара апата хатĕрленет. Çӳлте, плацкарт ҫинче, пуҫне аллипе тĕрелесе, ман ҫулсенчи ҫамрăк ҫын выртать.

— Сывлăх сунатăп. Йышăнмăр-и мана?

— Тархасшăн, — калаҫас килмен евĕр сăмах хушрĕ ҫамрăк ҫын.

— Иртех, иртех, ывăлăм, — терĕ кинеми те вара, хыткан пӳрнисемпе почта ещĕкне ҫыру янă пек, хăй ҫăварне чейпе йĕпетнĕ шур ҫăкăр татăкĕ чиксе хучĕ.

Рюкзака чи ҫӳлти ҫӳлĕк ҫине хăпартса хутăм та юнашар плацкарт ҫине тăсăлса выртрăм. Кичемлĕхрен ҫăлăнма «Наукăпа тĕн» журналăн кивĕ номерĕ пулăшрĕ.

Çур сехете яхăн иртрĕ ҫапла. Кинеми апатпах аппаланчĕ-ха, кӳршĕ те малтанхи пекех тем шухăша кайса выртрĕ. Тутине тăкăссăн хупса хунă вăл, икĕ хура куҫĕ салхулăхпа тулнă.

— Туртса ямастăр-и? — пирус сĕнтĕм ăна.

Вăл, пуҫне сĕлтсе, тав турĕ, пирус тĕтĕмне пĕр-икĕ хут ăшне ҫăтса, каллех шухăша путрĕ.

— Инҫе каятăр-и, ывăлăмсем? — пирĕн енне пуҫне ҫĕклерĕ кинемей.

— Çарăмсана, мăнакка, — хамшăн хуравларăм эпĕ.

Халиччен чĕнмесĕр пынă ҫамрăк ҫын ман енне вăрт ҫаврăнчĕ.

— Апла пĕр станцирех анмалла пирĕн? — савăннă пек пулчĕ вăл самантлăха.

— Чăнах-и? Атьăр паллашар, ун пек пулсан, Владимир.

— Вадим. Тепĕр чух — Михайлович.

Пуҫланнă калаҫу «ҫиппи» ҫакăнпах татăласран хăраса, васкасах ăна малалла тăсма тăрăшрăм:

— Эпĕ — студент-геолог. Практикăна каятăп. Хальхи вăхăтра пирĕн станци Çарăмсан тĕлĕнче тупнă нефть вырăнне тĕпчет. Пулманччĕ-ха эп унта, пирвайхи хут, акă...

— Эпĕ, — учитель, атте-анне Çарăмсанта. Тăван киле таврăнатăп, — терĕ те Вадим, çăварĕнчен çине-çине çăра тĕтĕм кăларса, каллех шăпланчĕ.

Телефон юписем, кĕпер карлăкĕсем мĕлтлете-мĕлтлете иртрĕç. Хирсенче лаптăк-лаптăк симĕс хунав ешерет, кукуруза уйĕнче тракторсем çӳреççĕ.

Виç сехет çурă хушшинче пирĕн поезд пысăкрах станцисенче те, пĕчĕк разъездсенче те темиçе хутчен чарăнса тăчĕ, пассажирсене улăштарчĕ.

— Ывăлăмсем, пулăшăр-ха, манăн час анмалла пулать, — васкасах пуçтарăнма тытăнчĕ ватă хĕрарăм.

Эпир иккĕн те кинемее ăсатма тухрăмăр, ăна станцире кĕтсе тăнă çынсемпе хăварса, купене таврăнтăмăр.

Акă каллех эпĕ хама ăсатнă юлташсене, Маринăна аса илтĕм. Вакунăн тепĕр вĕçĕнче пĕр ушкăн арçын картла çапать. Вадим çаплах чĕмсĕр. Чим, ара, юлташсен кучченеçĕ пур-çке рюкзакра!

— Вадим Михайлович, кăштах çырткаласа илме вăхăт çитмен-и пире? Ачасем мана пуш алăпа ăсатманччĕ-ха...

— Тĕрĕс шухăш, Володя. Савăнсах килĕшетĕп. Икĕ талăк ĕнтĕ йĕркеллĕ çимен — анмасть. Тен, халь кăштах?...

Апат-çимĕçе васкасах сĕтел çине кăларса хутăм. Ман рюкзакра кукăль те, хăяр та, пĕр кĕленче портвейн та тупăнчĕ.

Çапла васкамасăр апатланнăçемĕн вăхăт сисĕнмесĕрех иртсе пычĕ. Ун енчен те сăмаха уçăрах тăвас тесе, Вадима хамăн пурнăçăм çинчен каласа патăм. Марина сăнӳкерчĕкне курсан, Вадим ман çине тунсăхлăн пăхрĕ те аллине каллех курка тытрĕ.

— Тыт. Сирĕн телейĕршĕн ĕçер.

— Мĕншĕн пирĕн телейшĕн кăна, сирĕннишĕн те...

— Çук, Володя, манăннишĕн пулаймасть пулĕ. Итлессӳ килсен, пурнăçри телей тепĕр чух хуйхăпа мĕнле улшăннине каласа кăтартăттăм сана.

Эпĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ вăрттăнлăх пĕлессине туйса, ун çине чĕнмесĕр тинкертĕм. Вадим та шăпланчĕ. Кăшт тăрсан тин, хăйĕн шалти иккĕленĕвне çĕнтерсе, хуллен, васкамасăр калаçма пуçларĕ.

—Вĕренӳ çулĕ иртнĕпе пĕрехчĕ. Пушанса юлнă шкул коридорĕнче пĕчĕкшер ушкăнпа вунă класс пĕтерекенсем тăраççĕ. Пăлханса, экзаменсем тытакан юлташĕ мĕнлерех тертленнине тинкерсе, алăкри пĕчĕк шăтăкран пăхаççĕ вĕсем, лерен савăнăçлă тус-тантăшĕ тухса çăмăллăн сывласа ярсан вара шăплăх таçта кайса кĕрет:

— Ну мĕнле?

— Миçемĕш билет?

Кăшт вăхăт иртсен, каллех лăпланаççĕ: пĕри кантăк умне ларать те кĕнеке уçса хурать, тепри тетрадĕнче тем шырать, виççĕмĕшĕ вара, мана ним те мар тенĕ пек, аллине кĕсъене чиксе, коридор тăрăх унталла-кунталла утса çӳрет.

Акă вĕренекенсем юлашки экзамен та тытса пĕтерчĕç. Ыран вĕсен савăнăçлă уяв каçĕ пулать, эпĕ вара, отпуск илсе, аттеанне патне тухса каятăп.

Вадим Михайлович каллех пирус илчĕ, анчах ăна чĕртмерĕ, апла-капла тыткаласа ларнă хыççăн каялла хучĕ.

— Экзамен хыççăн тепĕр кунах мана директор патне чĕнтерчĕç. Иккĕнччĕ пӳлĕмре — директорпа вĕренӳ пайĕн заведующийĕ. Иккĕшĕ те ура çинче Фемида пек тăраççĕ: Ольга Семеновна хăй сĕтелĕ хушшинче, вĕренӳ пайĕн заведующийĕ чавсипе чӳрече ани çине таяннă.

Тăшман çине сиксе ӳкме хатĕрленнĕ гладиатор евĕр пăхать ман çине Людмила Григорьевна. Пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн айăпа кĕнĕ çын сассипе Ольга Семеновна сăмах хушать:

— Акă сире хут, паллашма пултаратăр, — тет вăл, мана машинкăпа çаптарнă хут листи тыттарса.

Нимĕн те ăнланаймастăп, саспаллисем пĕр-пĕрин çине кĕрсе каяççĕ, йăмăх йĕркесем, шупкалса, таçта çухалаççĕ. Çак пӳлĕмре Ольга Семеновнăпа тĕл пулнă самант аса килет.

Проводница тин çеç килсе лартнă чей чашкине Вадим хăй умнерех васкамасăр шутарчĕ те унта сахăр катăкĕ ячĕ.

—Институтран вĕренсе тухсан, шкула кайма иртерех тесе, пĕр-икĕ уйăхлăха хуларах юлма шутларăм, — малалла тăсрĕ вăл хăйĕн каласăвне. — Çав хушăра ют çĕршыв турисчĕсене хулари паллă вырăнсемпе паллаштарса çӳрерĕм. Август варринче тин, икĕ эрне каннă хыççăн, Çĕнĕ Йăмралла пырса çитрĕм.

—Сире, ют çĕршыв чĕлхи факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ специалиста, çак ялтах хăварас тетпĕр, — терĕç ронора. — Ав, шкулĕ кунтанах курăнать. директорĕ — Ташкевич — çамрăк та пултаруллă çын. Ыттине хăвăрах курăр.

Роноран тӳрех шкула кайрăм. Коридора кĕтĕм те, ватă хуралçăран директор ăçта ларнине ыйтса, алăкран шаккарăм.

—Кĕрĕр, — илтĕнчĕ пӳлĕмрен.

Пӳлĕме кĕтĕм те... шак хытса тăтăм: çыру сĕтелĕ хушшинче Оля ларать. Оля! Ольга Семеновна!

—Вадим? — кĕтмен тĕлпулуран тĕлĕннипе ура çине тăрса хыçалалла чакрĕ директор.

Çутă кăвак куçсем... Çырă çӳçне тирпейлĕн пĕр кăшăла пуçтарнă. Яка та çутă сăнĕ палăрма пуçланă пĕркеленчĕксене пыта-

рать. Карăнса тăракан йăрăс пӳ-сийĕ те нимĕн чухлĕ те улшăнман, унченхиллех илемлĕ, илĕртӳллĕ.

Чĕрери суран тепĕр хут уçăлчĕ.

Кăшт тăна кĕрсен тин çăвар уçрăм:

— Çапла. Эпĕ ку. Анчах ронора мана çак шкулта Ташкевич ĕçлет терĕç.

— Ан тĕлĕнĕр, Вадим Михайлович. Тĕрĕс каланă. Упăшка хушамачĕ вăл, — ман çине тем тĕрĕсленĕн пăхса илчĕ те Оля, чĕлхем каллех çĕтрĕ.

Калаçу малалла та ăнмарĕ. Эп кăтартнă хутсене пăхкаласа ларса, Ольга Семеновна мана шкулти ĕçсемпе кĕскен паллаштарчĕ. Текех чăтса тăраймасăр, пуçа сĕлтрĕм те алăк патнелле утрăм.

— Вадим Михайлович!

Эпĕ ун енне çаврăнтăм. Хăрах аллипе вăл хыçлă тенкел çине тĕреннĕ, тепринпе сĕтел çинчи кантăка унталла-кунталла сăтăркалать.

— Вадим... мана йывăр сана ятран чĕнме, анчах эпир пĕрпĕрне пĕлни çинчен малтанлăха та пулин пытарма тăрăш. Çапла лайăхрах пулĕ.

Çакнашкал тĕлĕнмелле лару-тăрура эпĕ акăлчан чĕлхин учителĕ пулса тăтăм.

Вадима калаçма малалла хавхалантарас тесе, эпĕ ăна пӳлсех çапла ыйтрăм:

— Ан тĕлĕнтер, Вадим Михайлович, эсир Ольга Семеновнăна унченех питĕ çывăххăн пĕлнĕ апла?

Вадим ассăн сывласа ячĕ, вырăнтан тăчĕ те, аллисене брюки кĕсйине чиксе, чӳречĕ патне утрĕ, унтан каллех хăй вырăнне пырса ларчĕ, тунсăхлă куçĕсемпе таçта аякка тинкерчĕ.

— Çапла, Володя. Пĕчĕкренех пĕлнĕ... Шкултан вĕренсе тухсан, вăл педагогика институтĕнчи литература уйрăмне кайса кĕчĕ. Эпĕ те унран юласшăн пулмарăм, анчах ют çĕршыв чĕлхисен факультечĕн алăкĕ ытла та çӳллĕ пулчĕ ун чух маншăн — института конкурспа кĕреймерĕм те шоферсен курсне кайрăм. Малтан автомашинăсен гаражĕнче слесарьте ĕçлерĕм, каярахпа машина пачĕç. Çул çинче те Оля çинчен шухăшлама пăрахаймастăмччĕ, унпа пĕрле таçта инçе-инçе çулçӳреве тухса каясса ĕмĕтленеттĕмччĕ, кĕтмен çĕртен тĕл пуласса шанаттăмччĕ.

Анчах кĕркунне çитрĕ те, салтака кайма ят тухрĕ. Вакунра ирттернĕ тăватă талăк пирĕн хушăмăрсене тата ытларах вăрăмлатрĕ. Çав-çавах манаймарăм эп ăна. Иккĕмĕш çул службăра тăнă чух Октябрь уявне икĕ эрнене киле курма таврăнтăм. Ăнсăртран Ольăпа тĕл пуласса кĕтеттĕм, — ĕненетĕн-и? — Чăнах та тĕл пултăмăр эпир: вăл та праçнике киле таврăннă иккен.

Акă иккĕн те ялти клубра тăратпăр: вăл — манăн хуса çитей-

ми ĕмĕтĕм, эпĕ — унăн пĕр класра вĕреннĕ тантăшĕ. Ташă-кĕвĕ пĕтсен, урама пĕрлех тухрăмăр. Çук, иртсе кайман иккен ачалăхри именӳ: унпа юнашар пынă чух каллех ăвăс çулçи пек чĕтретĕп. Тепĕр каç та манпа юнашарах пулчĕ вăл, анчах чĕрери шанчăкăм темшĕн-çке вăйланаймарĕ манăн. Оля хулана тухса кайрĕ. Манăн шутлă кунсем те хăвăрт вĕçсе иртрĕç, эпĕ вара чаçе таврăнтăм. Çакăн хыççăн пĕр-пĕринпе çырусем çӳретрĕмĕр эпир. Савăнтарчĕç те ун сăмахĕсем, хурлантарчĕç те. Уççăн палăртмастчĕ вăл хăйĕн шухăшĕсене — çакă хытă пăшăрхантаратчĕ мана.

Вадим, пĕчĕк кашăк тытса, стаканри сивĕннĕ чее пăлхатма пуçларĕ. Тепĕр самантран вара чей çинчен каллех манса кайрĕ.

— Юлашки çулччĕ ĕнтĕ службăра, «Стариксем» тесе шутлаттăмăр хамăра. Календарь çинче юлашки талăксене туртса пыраттăмăр. Ольăна чăтăмсăр курас килетчĕ, чи малтанах ниçта та мар, ун патне çул тытма шутлаттăм, анчах... чăннипе вара урăхларах килсе тухрĕ.

Август пуçламăшĕнче пире округри пĕр инçе района тырпул пухса кĕртме ячĕç. Ялти ĕçсем ачаранпах çывăх пулнăран-и, эпĕ савăнсах ĕçе кӳлĕнтĕм. Тырпул пухса кĕртсен те гарнизона васкасах илсе каймарĕç-ха пире. Хĕллехи сивĕсем пуçланиччен эпир ĕçлекен совхозра нумай вольтлă электролини ĕçе яма палăртнă иккен: эпĕ вара, прицеп кăкарса, инçетри станцирен юпа турттарма пуçларăм. Астăватăп, октябрь уйăхĕн варринче пĕр çумăрлă кун, хампа юнашар икĕ грузчик лартса, станцие тухса кайрăм. Йĕркеллех çитрĕмĕр. Туслăн ĕçлесе, йĕпе пĕренесене машина çине тиерĕмĕр те каялла килме тухрăмăр. Шухăшăмра каллех Ольăн ĕнерхи çырăвне вулатăп. «Пĕрремĕш курсра вĕренекенсем хушшинче хăшĕ-пĕри халĕ те-ха салтак тумĕпе çӳрет. Тĕлĕнетĕп, мĕншĕн эсĕ институтран чĕнсе ярсан та экзамен тытма килеймерĕн?» — тенĕччĕ вăл. Хирĕç çырса пĕлтерме ĕлкĕреймерĕм.

Çул çинчи ытти шухăшсем те канăç памарĕç. Каллех вĕтĕ çумăр пуçланчĕ. Сăртлă-туллă çул начарланнăçем начарланса пырать. Пĕр лупашкаран чиперех иртсе кайрăм. Тепĕр лапамĕ вара тата хаяртарах кĕтсе илчĕ пире. Анаталла аниччен пĕр грузчика антарса хăвартăм, тепĕрне, Федя пиччене, инкек-синкек сиксе ан тухтăр тесе, кабина алăкне уçă тытма хушрăм.

Акă хăва тĕмĕсем хушшинче пытаннă пĕчĕк кĕпер патне анса çитрĕмĕр. Халĕ çӳлелле улăхмалла. Мотор урса кайса кĕрлет. Çак тамăкран хăвăртрах хăтăлас тесе, газ пускăчне вĕçне çитиех тапса антартăм. Тӳремлĕхе çитесси темиçе утăм çеç юлнăччĕ ĕнтĕ, — машина чарăнчĕ, кустăрмисем пĕр вырăнта кусма пуçларĕç. Ытти вара самантрах пулса иртрĕ. Астăватăп: Федя пиччен шурса кайнă пит-куçĕ пĕр хускалми тăрать, хыçалта пысăк хăвăртлăхпа хăва тĕмĕсем çывхараççĕ. Сылтăм алăпа Федя пиччене тĕксе, халех

сиксе юлма хушрăм, тепĕр самантран пуçа темле хытă япала перĕннине туйрăм...

Мĕнле лекнĕ эпĕ больницăна — халĕ те ăнланаймастăп. Ытти çеç паллă: больницăран госпитале самолетпа ăсатрĕç, унти хирургсем ӳт-пĕвĕме çичĕ уйăха гипспа тăлласа хучĕç: виç аяк пĕрчипе йĕтес шăмми хуçăлса кайнă иккен.

Госпитальте нумайранпа сас-хура паманшăн каçару ыйтса, медицина сестрине Оля патне çыру çыртартăм, анчах Оля хуравламарĕ. Тепĕр виçĕ эрнерен Оля амăшĕсем патне иккĕмĕш çыру çыртартăм — кăлăхах. Ним тума та çук, тем пек тăрăш — усăсăр...

Кайран киле таврăнтăм. Вырăнти врачсем, сывлăхăм тĕрекленсех çитейменнине тӳррĕнех пĕлтерсе, виçĕ уйăх ĕç тытма хушмарĕç. Тахçан ĕмĕтленекен факультета вĕренме кĕме тинех вăхăт тупăнчĕ манăн. Çапла эпĕ студент пулса тăтăм, анчах студентсем хушшинче Оля çукчĕ ĕнтĕ. Вăл, институт пĕтерсе, инçетри района ĕçе тухса кайма ĕлкĕрнĕччĕ.

Студент чухнехи вăхăт çинчен каласа пама кирлех те мар пуль. Эс ху студент акă. Маншăн та çав пилĕк çул сисмесĕрех иртсе кайрĕ. Унтан Çĕнĕ Йăмралла ячĕç.

...Тăратпăр акă директор пӳлĕмĕнче.

Пăхать вăл ман çине, айăпа кĕнĕ пек, Оля, Ольга Семеновна. Людмила Григорьевнăна вара тин çеç вăйлă вăкăра çĕнтернĕ тореадор тейĕн — çиçеççĕ унăн куçĕсем, ялтăраççĕ, мана, айăплă пулса тăнăскере, хыпса çăтма хатĕр.

Тăратăп. Алăра — приказ. Шухăшăмра пĕрин хыççăн тепри шкулта ĕçленĕ кунсем шуса иртеççĕ.

Вадим каллех шăпланчĕ.

— Тухар-ха, Володя, тамбура. Унта уçăрах. Вара эп сана çак ĕненме йывăр юмаха вĕçне çитиех каласа парăп, — терĕ вăл.

Эпир тамбура тухрăмăр та каллех пирус чĕртсе ятăмăр.

— Эпĕ саккăрмĕшпе вуннăмĕш классене вĕрентеттĕм. Нумайăшĕ ман предмета юрататчĕ, хăшпĕрисем вара эп урока пырасса кĕтсех те тăмастчĕç. Учительсен ачисем те хамăр шкултах вĕренетчĕç. Çавăнпа та ашшĕ е амăшĕ урокра хăй ывăлĕ-хĕрĕнчен ыйтни никама та тĕлĕнтерместчĕ.

Завуч хĕрĕ Ирина та мана шанса панă 10-мĕш класраччĕ. Çак тĕксĕм çӳçлĕ, çинçешке кĕлеткеллĕ те йăпанчăк кăмăллă хĕрача хăйĕн юлташĕсем хушшинче чи маттурри пулнăран пулĕ ĕнтĕ малтанхи пухурах ăна ачасем класра комсорга суйласа лартрĕс.

Пăхатăп, пĕр вăхăтра Ирина акăлчан чĕлхи урокĕсене çителĕксĕр хатĕрленсе пыма пуçларĕ: пĕрре лайăх ответлет, тепре çăвар та уçмасть. Хăйне çĕткелентерсе ярас темесĕр, вăхăт тупса, çакăн çинчен Людмила Григорьевнăпа калаçса пăхрăм.

Тепĕр урокра каллех Иринăран ыйтрăм. Каллех вăл шыв сыпнă пек шăп.

—Юрать, — терĕм эпĕ. — Уроксем хыççăн юлатăр.

Шăнкăрав хыççăн, кĕнекесемпе тетрадьсене класа хăварса, учительсен пӳлĕмне йăпăртлăха кайрăм. Таврăнатăп — класра никам та çук. Кăмăл хуçăлса кайрĕ. Пăшăрханса киле таврăнтăм та ыранхи урока хатĕрленме пуçларăм. Мĕн ку? Кĕнеке хушшинче хут татки выртать. Çитĕнсе çитеймен ача аллипе унта çапла çырса хунă: «Аннесене евитличчен малтан çынна хăйне ăнланма тăрăшăр».

Куçăм хуралса кайрĕ. Хама педагог опычĕ çитменнишĕн çак чăрсăр хĕрача питрен çупса янине туйса илтĕм. Ниепле те кĕтменччĕ çапла пуласса.

Тата темиçе кун иртрĕ. Уроксене ним пулман пек пыратăп, хама яланхи пек тытма тăрăшатăп. Ирина куçĕсем çеç тем кĕтнине пĕлтереççĕ, анчах вăхăтлăха ăна урăх чăрмантарас мар терĕм.

Çапла ноябрь те килсе çитрĕ. Хĕл ларманччĕ-ха. Йăла тăрăх, аслă классенче вĕренекенсем пĕр-пĕр учительпе пĕрле шăматкунхи каçсенче кинона çӳретчĕç. Акă манăн черет те çитрĕ. Астăватăп, Диккенс повеçĕ тăрăх ӳкернĕ «Пысăк шанчăксем» кăтартрĕç. Фильм пĕтсен, киле кайма тухрăм. Манпа пĕрле тăватпилĕк ача утма кăмăл турĕ, çул тăршшĕпех хăйсем тин курнă фильм çинчен калаçаççĕ.

Людмила Григорьевнăсем пирĕн урам вĕçĕнче пурăнаççĕ. Ирина та пирĕнпех пырать акă, анчах нимĕн те шарламасть. Майĕпен ачасем пĕрин хыççăн тепри килĕсене саланса пĕтрĕç. Иринăпа çеç тăрса юлтăмăр.

—Картина сана килĕшмерĕ-и вара, Ирина? — ыйтрăм эпĕ, хĕрача хăй шухăшне каламаннине асра тытса.

—Питĕ килĕшрĕ, анчах темшĕн-çке пурнăçра çапла пулмасть.

—Сан шутупа, мĕншĕн апла?

—Çышсем расна пулнăран пуль.

Эпĕ вара Иринăна Диккенсăн çак кĕнеки мĕнле çурални çинчен каласа патăм:

— Чарлз Диккенсăн вуннăмĕш ачи çуралсан, вăл питĕ çамрăк ледие, Теннер хушаматлăскере, юратса пăрахнă та арăмĕнчен уйрăлнă, анчах Теннер леди ăна качча тухма килĕшмен. Çакнашкал ăнăçсăр юрату ĕнтĕ ăна кĕнеке çырма хистенĕ.

Çапла эпир ман хваттер тĕлне çитрĕмĕр. Эп чарăнтăм. Ирина та чарăнчĕ.

— Каçарăр, Вадим Михайлович, леш ухмахла хут таткишĕн, — терĕ те вăл, васкавлăн ырă каç сунса, килнелле ыткăнасшăн пулчĕ.

—Ирина!

—Мĕн, Вадим Михайлович? — пăлханса, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, хăюсăррăн ыйтрĕ вăл.

Эпĕ хамран хам хăраса кайрăм.

—Ирина, вăхăту пулсан, урок хыççăн кĕр пирĕн пата ыран. Шахмăтла выльăпăр (Ирина шкулта шахмăтла выляса чапа тухнăччĕ).

—Анчах эпĕ питĕ япăх вылятăп.

—Çавă аван та ĕнтĕ. Чи япăххисенчен те эпĕ сайра хутра çеç выляса илетĕп. Кĕрĕн-и?

—Юрать, — терĕ те вăл çăмăллăн килелле васкарĕ.

Пĕлместĕп, мĕн шутланă-ши вăл ăшĕнче, анчах тепĕр кун чăнах та уроксем пĕтсенех пирĕн пата пырса кĕчĕ.

Пĕр-пĕринчен ютшăнса, аран-аран виçĕ парти выляса пĕтертĕмĕр. Унтан вăл сывпуллашма пуçларĕ. Эпĕ ăна ăсатма тухрăм.

—Килĕшрĕ пулсан, татах кил.

Тĕрĕс турăм-ши эпĕ çавăн чух, педагогикăн çирĕп правилисене пăхăнтăм-ши? Çавна çеç пĕлетĕп: халăх унашкал япаласене нихçан та ырласа йышăнмасть, ăнланатăн-и, малтанах çак çамрăк хĕрачана юратса пăрахасси çинчен шутлама та намăс пек туяттăм хама. Анчах тепĕр кун иртсе кайрĕ çеç — Иринăна эпĕ ытларах та ытларах кĕтме пуçларăм: килĕ-ши, çук-ши? Калинкке чĕриклетмерĕ-ши? Калинкке сассине илтмерĕм. Ирина пӳлĕме кĕрсе тăрсан, темшĕн-çке пĕрре те тĕлĕнмерĕм — хытă кĕтеттĕм ăна. Акă вăл ман умра — хир качаки пек яштака, пиçĕ, вăтанчăк.

Каллех шахмат хăми умне лартăмăр. Çук, пăхаймастăп текех ун çине яланхи пек. Кăкăрта, ерипен вăйланса, çамрăк чухне хумхантарнă туйăмсем тепĕр хут капланаççĕ.

Вăйă вăраха тăсăлчĕ, нимĕн ăнланаймасăрах темиçе хут та выля-выля ятăм. Вара, хулпуççи çине пиншак уртса, каллех Иринăна ăсатма тухрăм. Тĕттĕмленнĕччĕ ĕнтĕ.

Хĕллехи сивĕ çил, юр пĕрчисене вылятса, питрен çапать, çăмăлкка хĕрачана пăрлаклă çул тăрăх хăвалать. Акă вăл самантлăха чарăнса тăчĕ, ман енне çаврăнчĕ. Калинкке хупса, ун патне васкарăм, унăн ăшă аллине ачашшăн чăмăртаса, кăкăр патне илсе пытăм. Çапла эпир çиле май урам тăрăх утса кайрăмăр. Хăйсен çурчĕ тĕлне çитсен, Ирина чарăнса тăчĕ. «Çитрĕмĕр, уйрăлма вăхăт», — тет вăл пăшăлтатса. Кантăкран ӳкекен лампа çутинче унăн куç хăрпăкĕ айне пытанă тунсăхлă куçĕсене, чĕтрекен тутине асăрхатăп. Пуç çаврăннă пек... Тепĕр самантран хамăн тута унăн вĕри тутине сĕртĕннине туятăп...

Мĕн пулса тухрĕ? Мĕн туса хутăм?..

—Каçар, Ирина...

— Эсир каçарăр мана...

—Мĕн калаçатăн эс!

—Айлав ю-у-у... Айлав ю-у-у... — ман алран хăтăлса, лĕпĕш пек хăйсен калинккинчен кĕрсе çухалать Ирина.

«Эп сире юрататăп, эп сире юрататăп...» — янăраççĕ пуçра Ирина тин çеç акăлчанла каланă сăмахсем.

Çапла çуралчĕ пирĕн юрату, çапла пулас пăтăрмах тĕвви тĕвĕленчĕ.

Манăн телее, шкулта та, ытти çĕрте те Ирина хăйне питĕ лайăх тыткаларĕ. Уроксене тĕплĕ хатĕрленсе пычĕ, ман ĕçе çăмăллатас тесе, класра юлса пыракан ачасене пулăшрĕ.

Декабрь çитрĕ. Пирĕн вăрттăн тĕлпулусем çаплах пĕтмерĕç-ха. Уроксем хыççăн Ирина кăштах шкулта тăрса юлма сăлтав тупатчĕ, киле эпир пĕрле утаттăмăр. Кам шутланă çак çамрăк хĕрача унашкалах вĕри чĕреллĕ, хӳхĕм ĕмĕтлĕ пулнине! Куç умĕнчех çурхи чечек пек илемленме, капăрланма пуçларĕ вăл. Савăнтаратчĕ те мана çакă, именteретчĕ те. Унсăр юлсан, тунсăха путаттăм, пĕрле чух вара хамра каласа ăнлантармалла мар пысăк айăп пуррине туяттăм.

Кая юлса килнĕ юратушăн, чĕрене тытса чарайми хаваслăх кĕрсе вырнаçнăшăн шутсăр хĕпĕртеттĕм эпĕ, анчах çак туйăма Иринăран пытарма тăрăшаттăм. Малтанлăха класс руководителĕпе комсорг тăтăш пĕрле пулни никама та тĕлĕнтерместчĕ пулсан, каярах Ирина амăшĕ, хăйĕн шалти туйăмĕпе тем сиснĕн, ман çине асăрханса пăхма пуçларĕ. Ăна кашни тĕл пулмассерен пуçа пĕкеттĕм, халь-халь айăпласа, хăтăрса тăкасса кĕтеттĕм. Вăхăтлăха кăна, Людмила Григорьевнăна курсан çеç, пулатчĕç çак шиклĕ самантсем. Унтан каллех шухăшсем Ирина çине куçатчĕç, çав шухăшсемпе савăнма никам та чăрмантармастчĕ.

— Мĕнле тумпа пырас-ши карнавала? — ыйтрĕ Ирина манран Çĕнĕ çул çывхарса килнĕ кунсенче. Чăваш чĕлхипе чуна уçса ярать вăл, хура куçĕсем çумăр хыççăнхи çăлтăрсем пек йăлтăртатаççĕ.

—Мĕн калас, лара-тăра пĕлмен упăте тумĕпе пуль е чапрас упа çури тумĕпе, — хама çак ыйту пĕрре те хумхантарман пек курăнас тесе хуравлатăп ăна.

Вăл çĕкленет, сăмсине ача пек пĕрсе, ман умра мăнкăмăллăн тӳрленсе тăрать.

—Чун-чĕререн парăннă Джульетта е мăн кăмăллă Аида пулас килет.

—Юрать, юрать, ху кăмăлланине суйла, анчах маншăн халичченхи пек чиперук Иринах пул.

Пытармастăп, каллех чун çамрăкланнине, тахçан-тахçан иртнĕ вăхăт, çеçке çурса, каялла таврăннине туйма пуçларăм. Çулăмпа çиçекен таса юрату кивĕ сурантан хăтарчĕ, чунне пама

хатĕр Иринăна эпĕ те хамăн шалти мĕнпур хĕрӳлĕхе патăм. Халĕ мана арçынсен сӳпĕлти, ăçтиçук сăмахĕсем те, хĕрарăмсен курнăçланса юратма тăрăшни те чăтма çук тарăхтарса яратчĕç. Иринăн таса юратăвне асăрханса, тирпейлĕ упрама тăрăшаттăм эпĕ. Пĕрремĕш юратупа ăс çухатман-ши тесе, ăна час-часах шухăшласа пăхма хистеттĕм. Çулсем пĕр мар-çке пирĕн, курăр-ха, мĕн чухлĕ аслăрах эпĕ Иринăран, çавăн çинчен манмасть-и вăл? Ирина хирĕçетчĕ, хура куçĕсем самантрах куççульпе тулатчĕç.

– Кала, килĕшместĕп-и?

– Ӳкĕнмĕн-и кайран?

– Нихăçан та!

Тахçантанпа кĕтнĕ Çĕнĕ çул каçĕ çитрĕ. Шкулта ытти чухне пулакан карнавалсенчи пекех, тĕрлĕ ташă çеммипе учительсем те, вĕренекенсем те пĕр пӳлĕмре çаврăнаççĕ. Юрăсем шăратаççĕ, атă кĕллисем хитрен шакăлтатни илтĕнет, хаваслăх çиçет.

Акă кĕвĕ татăлчĕ те, зал варринче шурă кĕпе тăхăннă, куçĕ çине хура маска лартса янă çамрăк Аида акăлчан чĕлхипе сăвă вулама пуçларĕ: «О, килсем, килсем, ман юрату, пирĕшти пек кил, сасă пек...»

Пĕр эпĕ анчах сиссе юлтăм çак сăмахсем камшăн пулнине. Тĕнчери чи хаклă та чи лайăх парне пек туйăнчĕç маншăн çав çулăмлă, чуна хускатакан сăмахсем.

Сасартăк вальс кĕвви янăраса кайрĕ. Ман пата Ольга Семеновна пырса тăчĕ.

–Вадим Михайлович, – терĕ вал, – эсир халех ташша чĕнмесен, çакна эпĕ пуçлăхсене хисеплеменни вырăнне хуратăп.

– Анчах, Ольга Семеновна, çынсем мана çакăншăн чее те йăпăлти темĕç-и?

Эпир ташă картине тухрăмăр. Акă вăл, унченхи Оля!

Каллех пуçра шухăш вылять, каллех асаилӳ сукмакĕсем мана таçта инçене илсе каяççĕ. Каллех ман куç умне тахçан пулнииртни юмах тĕнчи пек туха-туха тăрать.

Пиллĕкмĕш класран пуçласа пĕрле вĕреннĕ эпир, çиччĕмĕшĕнче чухне ман çамрăк чĕрене пирвайхи юрату пырса çапнă. Урокра ун хыçĕнче лараттăм, Çырă çӳç пайăркисем имшеркке хулпуççи çине юхса анатчĕç, эпĕ вара çав çӳç пайăркисене, асăрханса, ручка вĕçĕпе суйлама юрататтăм. Хăвăрт, питĕ хăвăрт чупса иртрĕ вăхăт. Сисмерĕмĕр те, уйрăлу кунĕ çитрĕ... Ак хальхинче купăççă хăй кĕввине калама чарăннă пекех...

Ольга Семеновнăна тав турăм та, ăна упăшкипе пĕрле хăварса, аялти хута антăм. Кирилл Афанасьевичпа, шкулти историкпе, пирус туртса тăратпăр. Сасартăк пирĕн пата «Эфиопирен килнĕ çамрăк хăна» çитсе тăчĕ. Пирĕн çине пĕр ывăç конфетти сапрĕ те ман куçран пăхрĕ:

– Тин çеç пĕлтернĕ хĕрарăмсен вальсне чĕнме прĕк памăрши, Вадим Михайлович?

Пусма тăрăх хăвăрт чупса хăпартăмăр та ташлакансем хушшинче çухалтăмăр.

– Айăп ан тăвăр, Аида синьорита, маска айĕнче тунсăхлă куçсем куратăп эпĕ. Мĕншĕн?

– Мĕн тавас-ха ĕнтĕ. Родамес манран темшĕн-çке тарса çӳрет пулсан...

Иксĕмĕр те хавассăн кулатпăр. Малалла ытти ташăсенче те кашнинчех măшăрлă пултăмăр. Вăхăтран вăхăта Ирина сулахай уринчи туфлине тем тӳрлетме пĕшкĕнчĕ.

–Египет фараонĕсен пушмакçисем пурте япăх ăстасем-им вара, синьорита?

–Чурари хĕрарăмсемшĕн тăрăшасшăн мар-çке вĕсем! – Каллех ун пичĕ-куçĕ савăнăçпа йăлтăртатать.

...Унтан хĕллехи каникул пуçланчĕ. Ачасем, вăхăтлăха кĕнекесене пăрахса, коньки çине, йĕлтĕр çине тăчĕç. Мана та хăш чухне вĕсемпе пĕрле çӳреме лекетчĕ. Ирина юнашар пулни питĕ хавхалантаратчĕ мана.

Каллех шкулта уроксем пуçланчĕç. Иринăпа туслă пулни никамшăн та вăрттăнлăх марччĕ ĕнтĕ текех. Утма вĕренекен ача çине пăхнă пек пăхатчĕç ман çине учительсем, вăрттăн юнатчĕç, асăрхаттаратчĕç.

Пĕрре çапла уроксем хыççăн пушанса юлнă класа эпĕ акăлчан чĕлхинчен шкулти театр валли пĕчĕк пьеса куçарса ларатăп. Ирина, мана тăрăхласа, доска çине карикатура тăвать. Сасартăк алăк уçăлчĕ те, класа Людмила Григорьевна пырса кĕчĕ. Эп шартах сикрĕм, Ирина шурса кайрĕ.

–Ирина, тух-ха класран, – терĕ вăл, ман çинчен куçне илмесĕр. Унтан сĕтел патне утса пычĕ. – Çак самантра эпĕ мĕн çинчен калаçма тивĕçлине эсир пĕлетĕр пулмалла ĕнтĕ? Юлашки вăхăтра эсир пачах ача-пăчалла хăтланнине хăвăр туятăр-ши тетĕп?

Эпĕ, чăнах та, пĕрремĕш класри айăпа кĕнĕ ача пек, пуçа усса ларатăп.

–Унччен пӳтсĕр çын пулман, малашне те пулма шутламастăп...

Анчах, мана итлесшĕн мар пулса, вăл хăйĕннех перет:

–Сирĕн «унченхи» кирлĕ мар мана, хальхи вăхăт пирки вара ыттисем пулăшмасăрах шухăшласа пăхма ыйтатăп. Юрĕ ун пирки, апла пулсан, педсоветра калаçăпăр!

Вăрт çаврăнса, Людмила Григорьевна класран тухса кайрĕ.

Завуч хăратни те, çынсем хĕрсех «пăшăл пăтти» пĕçерни те чăрмантараймарĕç пире. Пăшăрханса ӳкме сăлтавĕ те çукчĕ. Ири-

на çаплах питĕ лайăх вĕренет, унсăр пуçне нумайрах пĕлме, курма, тĕпчеме тăрăшать, манпа акăлчанла калаçать... Ытлашшийĕ нимĕн те пулман пирĕн хушăра.

Апла пулин те, педсовет пухрĕç-пухрĕçех, унта мана тем тĕрлĕ айăппа айăпласа пĕтерчĕç, шкултан кăларса ярассипе хăратрĕç. Мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнă иккен эпĕ, çитĕнсе çитмен ача пуçне çавăрнă, тен, тата ăна... пăснă та... Намăс, чăтма çук намăс пулчĕ мана вĕсемшĕн, анчах эпĕ тӳрре тухаймарăм... Халĕ ак тепĕр хут директорпа завуч умĕнче. Алăра — хут. Мана малтанхи ыйтупах ронона чĕнеççĕ иккен...

—Сыв пулăр, — терĕм те шăппăн алăк патне утрăм. — Чим, ыйтма маннă Людмила Григорьевнăран. — Эсир юлашкинчен Иринăпа тĕл пулма ирĕк памăр-и мана? Ыран эпĕ хамăр яла каятăп, тен, урăх таврăнмăп та...

— Ниçан та! — татса хучĕ завуч.

Алăка уçрăм та тула тухрăм. «Ниçан та!» — çаплах янăрарĕ хăлхара.

Мĕн сиксе тухнине тавçăрса илеймесĕр, вокзалта ыран валли билет илтĕм те киле таврăнтăм. Тарье аппа, хулари хĕрĕ патне хăнана кайнăскер, халĕ те килсе çитеймен иккен-ха, хуçа-старик вара, Петĕр пичче, — пулăра.

Хамăн пысăк мар «хуçалăха» пуçтаркаланă хыççăн, вăхăта ниепле ирттерме пĕлеймесĕр, пӳртре читлĕхе хупса хунă кайăк пек унталла-кунталла утатăп та, ывăннăскер, кравать çине выртатăп, унтан каллех пирус чĕртсе яратăп.

Ял çине ерипен каç чаршавĕ анма пуçларĕ. Иринăпа тĕл пуласси çинчен шутламалли те çук — çутă çутмасăрах ыранхи куна кĕтетĕп.

Анчах акă калинкке чĕриклетрĕ. Эпĕ кравать çинчен сиксе антăм та, урай варрине тăрса, куçа алăк çине тĕллерĕм.

Алăкран хуллен шаккарĕç.

—Кĕрĕр, кĕрĕр! — пăлханса кăшкăртăм эпĕ. Алăк уçăлчĕ. Пӳлĕме хура кĕпеллĕ каçхи пирĕшти кĕрсе тăчĕ.

Тĕлĕннипе нимĕн те чĕнейместĕп. Вăл ман пата çывхарчĕ, шывланса хĕрелнĕ куçĕсене ман çине çĕклерĕ.

—Вадим, эп килтĕм сан патна... хам сăмаха калама...

Оля... Каллех Оля — тахçанхи ĕмĕтĕм, манăн çамрăклăхăм.

Алă лăш усăнчĕ, чĕлхе çĕтрĕ.

—Каçар, каçар, ман хаклă çыннăм... Каçар, Вадим, сана çакăн чухлĕ асап кӳнĕшĕн... Çулсем иртнĕ майăн эпир те, хĕрарăмсем, улшăнатпăр иккен. Мĕнлерех ăмсанатăп халь çамрăк Иринăна. Ăнлан, Вадим, мана та çăмăл мар.

Эс килнĕренпе мĕнпур канăçа çухатрăм. Каяр кунтан — пăрахар та пĕрле каяр...

Куҫҫулĕ шапăртатса юхать, кĕтни, тархаслани чуна ҫурать! Мĕн тери шел сана, Оля. Сăнчăрласа хунă пек, ним калама пĕлейместĕп. Ҫавна пула пӳлĕме Ирина мĕнле кĕнине те кураймарăм.

Пĕр вăхăт вăл куҫне аллипе хупса тăчĕ, чалăшса кайса, стенана перĕнчĕ, тепĕр самантран унăн карăнса тăракан ӳт-пĕвĕ, пружина пек сиксе, алăкра ҫухалчĕ. Оля аллисенчен пушанса, эпĕ ун патне тапса сикрĕм, анчах урама тухсан, Иринăн ҫăмăл кĕпи вĕлтĕртетсе каҫ сĕмĕнче ҫухалнине ҫеҫ курса юлтăм.

– Тăхта, Ирина, чарăн!

Ирина чарăнмарĕ. Пӳрте кĕрсен пăхатăп – никам та ҫук. Пуҫ шавлать, сывлăш питĕрĕнсе килет.

Сĕм-ҫĕрле Петĕр пичче пулăран таврăнчĕ. Эпĕ кравать ҫинче ҫывăрмасăр йăшăлтатса выртнине курса, сăмах хушрĕ:

– Ҫанталăк пăсăлать пулмалла – пулă лекми пулчĕ.. Эс мĕн тĕттĕмрех выртатăн.

Старик ҫутă ҫутрĕ. Пӳлĕме пăхса ҫаврăнчĕ те, тĕлĕнсе, ман ҫине пăхрĕ.

– Ăҫта кайма пуҫтарăннă эс? Отпуск пачĕҫ те-и вара?

Ăна шкулта паян мĕн пулса иртни ҫинчен каласа патăм. Ҫывăраймарăм эпĕ. Ҫĕр каҫах кĕхлетсе ӳсĕрчĕ хуҫа-старик те.

Ирпе, Тарье аппана юлашки хут курайманнишĕн пăшăрханса, хуҫапа сывпуллашрăм. Халь акă эпĕ, ҫак самантра, хам каялла таврăнассине ҫирĕпех шанатăп ĕнтĕ, ĕнер вара урăх таврăнмастăпах тесе шухăшланăччĕ.

–Нимĕн те ăнланаймастăп, нимĕн те, – терĕ ырă кăмăллă Петĕр пичче. – Ну, сыв пул, сыв пул, ывăлăм. Юратса пăрахнăччĕ эпир сана, тăван ывăл вырăнне хураттăмăр.

Эпĕ те унпа аттепе сывпуллашнă пекех сывпуллашрăм. Чăматана йăтса, станци ҫулĕпе ҫуран утрăм...

Вадим, чӳречерен пăхса, пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ, унтан йӳҫеккĕн кулса илчĕ те хăй сăмахне ҫапла пĕтерчĕ:

– Акă, юмах вĕҫне ҫитрĕмĕр те. Халĕ ĕнтĕ хупа пĕрле ларса пыракан юлташу ҫинчен ытлашшипех пĕлтĕн эсĕ. Пĕр япала пирки ҫеҫ (куҫран пăхсах сисетĕп) тӳррĕн калаймăн: айăплă-и эпĕ, айăпсăр-и?

Урăх нимĕн те чĕнмерĕ вăл. Эпĕ те тӳрех хам шухăша калаймарăм. Вакун кустăрмисем кăна шăкăл-шăкăл, шăкăл-шăкăл шакăлтатрĕҫ.

ХУРКАЙĂК ÇУЛĔ

1

Сентябрь уйăхĕ. Йывăççен сарăхнă çулçисем, сулхăн çилпе татăлса ӳкес мар тенĕ пек, вĕлтĕртетсе чĕтреççĕ. Виçĕм кун çумăр çуса иртнĕччĕ — çĕр сивĕ те чĕрĕ, çул çинчи кӳлленчĕксем паян та типсе çитеймен.

Илем, нихăçан йăлăхтарми кĕрхи илем. Чăнкă тусем хĕррипе вырнаçнă Çĕньялтан тухсанах анлă улăхсем пуçланаççĕ. Çырмана пĕвелесе лартнăран, шыв çырантан тухнă та пĕчĕк варсем тăрăх юплене-юплене кайнă. Хĕвел çутинче ун пичĕ кĕленче пек йăлтартатса выртать. Çул çинçе пилĕклĕ хĕр-ташăçă аллинчи хăю пек авкаланать, тусем хĕррипе çаврăнать те кивĕ шыв арманĕ патĕнче Çарăмсана юхса кĕрекен пĕчĕк çырма урлă каçать, вăрăм туран хăпарса, хыр вăрманне кĕрсе çухалать.

Çулăн пĕр енче — çамрăк та тӳрĕ хыр йывăççисем, тепĕр енче, çывăхри юманлăха çитиччен — сип-симĕс калча. Хутăш вăрман пĕтрĕ те улма йывăççисен питомникĕ пуçланчĕ. Умра — чус витнĕ икĕ пӳрт. Тирпейлĕ çавăрса тытнă картари утă капанĕсем граждан вăрçи вăхăтĕнчи салтаксен тăрнашкаллă калпакĕсене аса илтереççĕ, пусă тараси, мăйне тăсса, сăмсипе пĕлĕте сăхать.

Питомник тĕлĕнче алă тăратса чарчĕ мана брезент сумка çакса янă вунултă-вунçичĕ çулсенчи йĕкĕт. Чарчĕ те:

— Çавăнта, иккĕмĕш посадкăна çитиччен, лартса кайăр-ха, пичче, — терĕ хăюллăн.

—Ăçтарах вăл, инçе-и кунтан? — ыйтрăм эпĕ.

—Шăп Йăмраллăпа тĕлме-тĕл. Пулса курман-и вара?

—Йăмраллă тетĕн? Шăп çав яла кайма тухнăччĕ-ха эпĕ. Лар апла. Çул кăтартса пырăн... Кăмпаран-и-мĕн?

— Çук, кăмпаран мар. Кăмпи туллиех те-ха вăрманта. Атте лесник манăн. Пĕлтĕртенпех кунта пурăнатпăр. Шкула вара Йăмраллăна çӳретĕп. Унччен ялтах пурăннă, — терĕ те йĕкĕт йăпар-япăр хыçалти ларкăч çине хăпарса ларчĕ, тыткăч тупаймасар, ман плащран çатăрласа тытрĕ.

Пĕр тикĕс кĕрлет мотоцикл. Кĕрхи вăрманăн йуçенкĕрех шăрши сăмсана кăтăклать. Мĕнпур тавралăх вуншар тĕслĕ кăтрамран тăрать тейĕн: ешĕл калча, йăмăх хура çул, тĕл-тĕл сап-сарă, тĕл-тĕл хĕп-хĕрлĕ çулçăсем, тăп-тăрă кăваклăхра тĕк пек шурă çăмăл пĕлĕтсем...

—Пичче, эсир пирĕн енче пулса курман-и? — хăлха патĕнчех янрать çамрăк çын. — Эпĕ кунтисем. Çуралнăранпах кунта. Ниçта тухса курман. Çитес çул каятăп ĕнтĕ.

Çул хĕрринче пĕчĕк кӳлĕсем пуçланчĕç. Вĕсен тăрă куçĕсен-

че шереписене тураса ларакан шурă хурăнсем кăтрашкаланса чĕтреççĕ. Ытарма çук илемлĕ тавралăх...

Çук, пулмасть, епле иртсе кайăн çак илемрен! Пĕр тăхтамасăр чаркăч çине пусатăп. Йĕкĕт мотоцикл çинчен сиксе анать те, ăнланаймасăр, куçран пăхать.

—Мĕнле чĕнеççĕ-ха çав сана? — лăпкăн ыйтатăп унран.

— Сергей. Тантăшсем Çеруш теççĕ. Анчах Сергей те, Çеруш та мар эпĕ. Атте мана Серго тесе çыртарнă.

—Мĕнле апла?

—Тахçан, хăй çамрăк чух, Орджоникидзене курнă та...

—Ну, ăнлантăм. Сергей апла. Мана Егор Егорович теççĕ. Итле-ха, Сергей, çитес çул кунтан каятăп терĕн-и-ха? Йăмраллă кăмăлна каймасть, эппин?

Сергей çак ыйтăва кĕтменччĕ пулас, çапах çухалса кайнине кăтартмарĕ.

—Начар теместĕп-ха. Вăтам шкул пĕтеретĕп килес çул...

—Апла-и-ха?

Сергей, хурăнсем енне тинкерсе, ураран урана пускалать, брезент сумкине сиктерсе илет.

—Вăтам шкул пĕтернипех пурне те пĕлетĕп теме çук-çке-ха, — тет вăл хуллен.

—Вăл çаплах ĕнтĕ. Мĕнле профессие кăмăллатăн-ха вара? — каласа хистетĕп ăна,

—Ăмм, ну... художник пулас килет, — унченхинчен те шăппăнрах мăкăртатать Сергей.

Хурăн çинчен салакайăк чĕвĕлтетсе вĕçсе анчĕ те, пĕчĕк хăрăк турат хуçăлса кӳлле чăмрĕ, хăй йĕри-тавра çӳхе хумсем салатрĕ.

—Анчах кунашкал шухăш патне епле пырса тухнă-ха эсĕ? Аçу лесник тетĕн. Аннӳ питомникра ĕçлет пулĕ-ха. Эс пур, кĕтмен çĕртен — художник.

—Мĕншĕн кĕтмен çĕртен? — тăруках çиçсе йăлтăртатрĕç Сергей куçĕсем.

—Тата...

Сергей, шухăша кайса, пĕр самант чĕнмесĕр тăчĕ те çапла каласа хучĕ:

—Пăхăр-ха, мĕн тери хитре пирĕн тавралăх?!

—Хитре, — килĕшрĕм эпĕ.

— Йамраллаă та илемлĕ. Анчах... тем çитмест ăна. Калас-и мĕн? Сăрăсем, ман шутпа...

—Сăрăсем?

—Пĕлетĕр-и, пулас хуласем пирки мĕн шухăшланă Кампанелла? Çуртсен стенисене çутçанталăк пулăмĕсен сăнлăхĕсемпе сăрласа капăрлатасси çинчен. Кашни çын мĕнпур япалара тата лайăхрах пурăнма хĕтĕртекен илемлĕх курма пултартăр тенĕ вăл.

— Çапла, — тетĕп эпĕ. — Утопист хăй евĕрлĕ община тăвасшăн пулнă: пурте пуян, ытлă-çитлĕ, çав вăхăтрах пурте чухăн, çĕтĕк-çатăк. Анчах вĕсем Хĕвел хулинче пурăнаççĕ...

— Ун пирки мар-ха эп. Кампанелла монументлă пропаганда çинчен ĕмĕтленнине Владимир Ильич Ленин хăй ырланă. Ку вăл айван шухăш мар, ăна кăштах улăштарсан, унпа пирĕн вăхăтра та усă курма пулать, тенĕ-çке вăл.

— Анчах çуртсене чаплă фрескăсемпе капăрлатма чăннипех ăста художник кирлĕ.

— Пур-ха пирĕн ун пекки, — мухтанарах каларĕ Сергей. — Анчах ватăлса пырать. Малалла пирĕн, çамрăксен, унран вĕренмелле ĕнтĕ.

— Эс мана паллаштарăн-и унпа?

— Хăвăр ăçтан эсир, Егор Егорович? — мана пӳлсе ыйтрĕ Сергей.

— Райхаçатран.

— Йăмраллăна пĕр-пĕр тема шырама килетĕр пулĕ-ха?

— Учитель кунĕ çывхарать. Чим-ха, Сергей, Агафон Ефимч вĕрентет-и сире? Вăт çавăн çинчен очерк çырмалла манăн.

Сергей ман ыйту çине хуравламасăр çӳлелле пăхса тăчĕ. Унтан:

— Курăр-ха, курăр, хуркайăк! — кăшкăрса ячĕ вăл сасартăк, пĕчĕк ача пек хĕпĕртесе.

Янкăр кăвак тӳпене çурса, çуначĕсене çăмăллăн, ирĕклĕн вылятса, виç кĕтеслĕ кайăк хур карти кăнтăралла вĕçет. Чим, юнашарах тепĕр карта, леререх виççĕмĕшĕ... «Сыв пул, сыв пул, сыв пул», — тенĕн илтĕнет хуркайăк сасси. Тунсăхлă сасă.

Хыр вăрманĕ хыçне пытаничченех пăхса ăсатрăмăр эпир инçе çул тытнă вĕçен кайăксене.

— Пĕлетĕн-и, — тетĕп Сергее, — хуркайăк хăй çуралнă çĕршывне кашни çулах таврăнать.

— Тĕрĕсех ĕнтĕ, — тӳрех килĕшет вăл манпа. — Çуралнă çĕршыва мĕнпе танлаштарăн?

Йăмраллă шкулне пырса кĕнĕ чух хамăр редакторăн Илья Степановичăн сăмахĕсене аса илтĕм. Вăл, çак районта чылай вăхăт ĕçлесе, хăш учитель çинчен мĕн çырнине пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пек пĕлсе тăраканскер, хальхинче вăрахчен шухăша кайса ларчĕ-ларчĕ те кулса ячĕ: «А итле-ха, кайса кил Йăмраллăна. Унта пĕр кукша учитель ĕçлет. Агафон Ефимч. Пĕр вăтăр çул ĕнтĕ», — терĕ. «Мĕншĕн кулатăр-ха вара çавăн чухлĕ ĕçлет пулсан?» — кăсăкланса ыйтрăм редактортан. «Çамрăклăха аса илтĕм, ара» — йăл кулчĕ Илья Степанович. Унтан, паçăрхи шухăш тыткăнĕнчен тухаймасăр, пуçне пăркаласа илчĕ те каллех кулса ячĕ: «Училищĕре вĕренеттĕмĕр, — терĕ вăл пăртакран. — Пĕр пӳлĕмре пурăнаттăмăр. Пĕрре Агафон патне килтен шăрттан ярса панă. Ял ачи темерĕн,

никама пĕлтермесĕр, вăрттăн çиет шăрттана. Çиет те тумбочка айне пытарса хурать. Тутар ачи Рустем пурччĕ. Пĕррехинче, Агафон çук чух, Рустем урай çума пуçланă та тумбочкăна вырăнтан куçарнă. Кăшкарать хайхискер: «Слон çăмарти! Слон çăмарти!» Чупса пытăмăр — шăрттан! Ну, кула-кулах çисе ятăмăр. Каçхине Агафон килчĕ те унта-кунта пăхкалать, çапах шарламасть хăй. Кайран та аса илмерĕ шăрттан çинчен. Лайăх мар пулчĕ пулмалла. Ара, çамрăк, хулана пуçласа тухнă. Вăт мĕнле... Кайса кил. Вăтăр çул ĕçлени вăл — хăех паттăрлăх...»

2

Учительсен пӳлĕмĕнче Агафон Ефимча тӳрех палласа илтĕм. Пуçĕ кукша, сăнĕ-пичĕ кӳпшек, çуталарах кайнă пиншакне йӳле янă. Хам мĕн ĕçпе килнине директора пĕлтерсенех Агафон Ефимч сăнĕ ăшăнса улшăннă пек туйăнчĕ мана.

— Тархасшăн, акă вăл хăй те кунта, — терĕ директор.

Пӳлĕмре виçĕ-тăватă учитель пурччĕ, вĕсем пире чăрмантарас темерĕç пулмалла, тухса кайрĕç. Эпир виççĕнех тăрса юлтăмăр.

—Мĕн кăсăклантарать-ха çамрăк çынна? Каçарăр, хисеплесе чĕнме пĕлеймерĕм-ха, — йăваш сасăпа калаçрĕ Агафон Ефимч.

— Егор Егорович эпĕ, — терĕм ăна. — Сирĕн пĕр-икĕ урокăрта пулса курас кăмăл пур.

— М-м, — тем аса илнĕ пек, пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ учитель, мана тĕсесе пăхрĕ, унтан çапла каларĕ: — Кăмăлăр пулсан, тархасшăн, эппин. Эсир хирĕç мар-и, Николай Данилч?

Эпир калаçнă вăхăтра васкасах тем çырма ларнă директор хирĕçлемерĕ.

Тепĕр пилĕк минутран эпир шăнкăрав хыççăн та лăпланса ĕлкĕреймен класа пырса кĕтĕмĕр. Учитель хăйпе пĕрле илсе килнĕ хура курак кĕлеткине курсан, ачасем каллех сĕрлесе кайрĕç. Агафон Ефимч пĕр вăхăт класс шăпланасса кĕтрĕ, паян кам çуккине журналта паллă турĕ, унтан лăпкă та пĕр евĕрлĕ сасăпа кайăк ӳт-пĕвĕн тытăмĕ çинчен кала пуçларĕ. Эпĕ ачасене сăнарăм. Çук, витмерĕ вĕсене учитель сăмахĕ. Пĕри, ав, ыйхăпа аптраса ларать, тепри юлташĕпе тем пăшăлтатать, виççĕмĕшĕ кĕнеке вулать. Учитель хăй те курать-ха ĕнтĕ çакна, ачасене асăрхаттарса, сĕтеле указкăпа шакка-шакка илет вăл. Акă Агафон Ефимч сасси шăпланчĕ, ачасем кĕнекерен пăхса, курак çунатне тетрадь çине ӳкерме тытăнчĕç. Çапла — шăнкăрав пуличченех.

Иккĕмĕш урок — хими урокĕ — вуннăмĕш класра пулчĕ. Класа кĕрсенех эпĕ тăваттăмĕш ретре ларакан Сергее куртăм та, ун хыçĕнчи парта хушшинче пушă вырăн пуррине асăрхаса, унта лартăм.

Анчах çак урок мĕнле аталанса пыни те килĕшсе каймарĕ мана. Агафон Ефимч вунă-вуникĕ ачана пĕр евĕрлĕ опыт тутарчĕ, вара паçăрхи пекех лăпкă та кичем сасăпа çĕнĕ тема ăнлантара пуçларĕ.

«Çапла, — шухăшларăм эпĕ, — педагогĕ ку чи чаплиех пулмарĕ-ха. Анчах вăтăр çул (редактор та çакнах палăртрĕ) пурнăç çинчен, чĕрĕ çутçанталăк çинчен, Менделеев саккунĕ çинчен ачасене чи малтан çак Агафон Ефимч каласа кăтартман-и-ха? Акă вĕт ăçта пĕтĕм тупсăмĕ. Пурте Сухомлинский пулаймĕç. Кунта, ялти шкулта, учительсем ахаль те çитмен чухне, Агафон Ефимч та хăй вырăнĕнчех ĕнтĕ. Акă уроксем хыççăн унпа çывăхрах палашăп, тĕплĕнрех ыйтса пĕлĕп, тен, вăл лайăх воспитатель, тен, кружок ертсе пырать, тен, фронтра паттăр çапăçнă. Журналиста улăм пĕрчи кирлĕ, çавăнтан çаклансан, ишсе тухма пĕлĕттĕм-ха...»

Çак вăхăтра умра ларакан Сергей ман енне çаврăнчĕ. Çаврăнчĕ те парта çине хут татки хучĕ. Иксĕмĕр вăрттăн ĕç тунине никам та сисмерĕ-ши тесе, унталла-кунталла пăхкаларăм, хут çине тинкертĕм. «Хăвăр вăхăтăра сая яни çеç. А. Е. очерк геройĕ мар. Ун çинчен кирек хăш учительтен е шкул ачинчен ыйтăр», — тенĕ унта.

Пит пĕçерсе кайрĕ. Мĕн ку? Мĕншĕн-ха мана ун çинчен никам та каламарĕ? Учительсем те, директор та?.. Пĕле-тăркачах... Мĕншĕн-ха?

3

Учительсем виççĕмĕш урока салансан, пӳлĕмре эпир аслă пионервожатăйпа Августина Павловнăпа иккĕнех тăрса юлтăмăр. Пĕр вăхăт иккĕленсе ларнă хыççăн эпĕ ăна Сергей çырса панă хут таткине кăтартрăм. Вăл мана ăнланчĕ пулас. Вара çулталăк каярах çак шкулта мĕн пулса иртнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ.

...Вăхăт шутăр, ирттĕр черетленсе, çулсем ĕмĕр авăрне ăсанччăр, анчах çав кĕрхи командировка пуçран нихçан та тухас çук. Таҳçантанпах асăрхатăп ĕнтĕ: чуна хускатса е пăлхатса, е ăшăтса хăваракан пĕр-пĕр самант кĕрсе юлать те чĕрене яланлăхах унта вырнаçать. Кайран пурнăçра тĕл пулакан çавăн йышши пулăмсене те унпах танлаштарса тĕрĕслетĕн вара.

Астăватăп-ха, вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн яла таçтан аякран витре тĕплекен Мингалим пичче пынăччĕ. Пирĕн кӳршĕре, Эрнеслу аппа патĕнче, чарăннăччĕ вăл. Эпĕ, пилĕк-ултă çулсенчи ача, тимĕр шаккакан ăстаçăн асамлă пултарулăхне курма кайрăм çапла, ун çывăхне пыма хăяймасăр, хапха тăррине улăхса, чылайччен пăхса лартăм. Ĕçĕ нумайччĕ пуль Мингалим пиччен, анчах мана, пир йĕмлĕ ачана, курчĕ те вăл мăлатукне те пăрахрĕ.

– Кам пулан-ха эс, малай, атте-анне пур-и сан? – ыйтрĕ вăл, ман çине ăшшăн пăхса.

– Пур та çав, ашшĕ вăрçăран таврăннăранпах вырăнпа выртать, – терĕ маншăн Эрнеслу аппа.

Мингалим пичче ним чĕнмесĕр пĕр хушă ман çине пăхса тăчĕ. Ырă мар пулса кайнипе, эпĕ пуçа пăртăм. Тепĕр самантран вара ăстаçă аллинчи мăлатук тимĕр çинче унченхинчен те хытăрах, хĕрӳллĕрех ташлани илтĕне пуçларĕ.

– Кил-ха кунта, малай, – чĕнчĕ тем вăхăтран Мингалим пичче.

Мĕн тери пысăк чунлă çын пулчĕ витре тĕплекен çак тутар абзи! Тин кăна туса пĕтернĕ вăрăм авăрлă тимĕр курка тыттарчĕ те вăл мана:

– Аннӳне кайса пар, парне пултăр, кил-çуртра кирлĕ пулĕ, – терĕ лăпкăн.

Ытла та ырăччĕ Мингалим кăмăлĕ. Çук, манаймастăп çакна. Тепĕр япала та асран тухмасть.

Вăхăт иртнĕçемĕн, пурнăç лайăхланса пынăçемĕн ура çине тăнă атте бригадăри ут таврашĕ валли сӳс-пăяв яватчĕ. Хĕрлĕ çӳçлĕ, тăсланкă пӳ-силлĕ Клементтей бригадир час-часах пырса çӳретчĕ пирĕн пата. Пакăлтиччĕ хăй. Каçсерен чĕлĕм тĕтĕмĕ явăнатчĕ пӳртре. Хăйĕн халапĕсене чăтăмлăн итлесе ларакан тупăннипеши, бригадир пурăна киле таçтан çуршар е пĕрер кĕленче эрех хĕстерсе киле пуçларĕ. Аттен суранĕсем сипленсе çитменччĕ-ха, çавăнпа эрех таврашне ăша илместчĕ вăл. Клементтей вара хăй кучченеçне хăех пушатса тухса каятчĕ.

– Çапах эрех вăл – лайăх эмел, – терĕ пĕррехинче бригадир. – Ыраш çăнăхĕнчен тусан, чăн-чăн спирт пулать. Тен, санăн, Мĕтри пичче, хăвăн юхтарма вĕренмелле? Сурану сипленĕччĕ.

– Э, çук, çук, – терĕ атте. – Тыррине ăçтан илес халь. Пулсан, хырăма тăрантармалăх çăкăр пĕçерĕттĕмĕрччĕ-ха.

Çак калаçу хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ, пĕрре çапла çĕрле хапха сасси пулчĕ те, картишне тулли лав нăтăртатса кĕчĕ.

– Тух-ха, Мĕтри пичче, – илтĕнчĕ чӳречерен Клементтей бригадир сасси. Çак сасăра кĕтмен çын васкани, теме пула хыпăнса ӳкни сисĕнчĕ.

Атте картишне тухрĕ. Эпĕ ун хыççăнах пăлтăра, чӳрече тума кастарнă шăтăк патне, йăпшăнтăм.

Хашка-хашка атте çывăхĕнче тем мăкăртатрĕ Клементтей.

– Кирлĕ мар, – илтĕнчĕ аттен йăваш сасси.

– Ухмаха ан ер, Мĕтри пичче, – терĕ бригадир.

– Илсе кай...

– Ăçта хурас? Ну, сăмакун мар-тăк, çăкăр пĕçер, эппин. Хаклă ыйтмăп.

– Илсе кай, – çирĕпрех каларĕ атте.

— Ан лăпăртат...

— Халех! — кăшкăрчĕ атте. Унтан хапха уçрĕ: — Халех!

Атте Клементтейĕн тулли лавĕ хыççăн хапхана хупса хучĕ те, хăйне хăй лăплантарса, чылайччен пусма çинче ларчĕ.

Тикĕт пек хура каçчĕ çавăн чухне...

Асаилусем?.. Мĕншĕн пуçа килчĕç вĕсем çирĕм-çирĕм пилĕк çул иртнĕ хыççăн?

Эпĕ урам хĕррипе, хăма сарса тунă ансăр çулпа, утатăп. Тин курнă çынсем, учительсен пӳлĕмĕ, пушă коридор, урока ларнă классенчи ĕçлĕ калаçу... Куç умĕнче каллех Августина Павловна. Вăл каласа панине аса илсе утатăп.

Пурнăç урокĕсем. Çынлăх урокĕсем. Этем чĕринче йĕр хăвармасăр иртсе кайма пултарайман уроксем.

Эпĕ ăнланатăп вĕсене, çулталăк каярах хăйсемпе пĕрле кĕреçесемпе витресем йăтса шкул пахчине пынă ачасене.

Рисованипе черчени учителĕн ырă тĕллевне питĕ лайăх ăнланатăп эпĕ паян. Вăл чи малтан панă çак шухăша: «Шкул пахчин пĕр кĕтесĕнче сад ĕрчетме пуçлас. Кашни çулах вĕренсе тухакансем пĕрер улмуççи лартса хăварччăр унта. Каярах йывăççем çимĕç пама пуçлĕç. Çакă учительсене, ялти мĕнпур халăха Йăмраллăра вĕренсе тухнă çамрăксем Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ĕçленине аса илтерсе тăрĕ. Мĕн чухлĕ улмуççи — çавăн чухлĕ хĕрпе каччă. Мĕн чухлĕ çимĕç, çĕршыва кӳрекен çавăн чухлĕ усă», — тенĕ. Пĕлетĕп: çак шухăша Иван Ипатьевич хăй ăсĕпе мухтанас, çынна тĕлĕнтерес тесе паман.

Çынлăх урокĕ...

Колхоз машини питомнике вĕçтернĕ чух Иван Ипатьевич çӳлте, кăвакарнă çӳçне вĕлкĕштерсе, кабинăн хыçалти чӳречине хӳтĕлеме çирĕплетнĕ решеткерен тытса, савăнăçлăн йăл-йăл кулса пынине те куратăп эпĕ паян. Шалта, шоферпа юнашар, Иван Ипатьевич тантăшĕ Агафон Ефимч ларнă ĕнтĕ. Паллах, унта ларса пынă вăл.

Кайран икĕ юлташ улмуççисем туяннă. Тепĕр кун вара шкул пахчине ачасем пухăннă.

— Ирпе питĕ хитре çанталăк тăратчĕ, — аса килет Августина Павловна каласа пани. — Ачасем шăтăк алтмалли вырăнсене палăртса хучĕç, лаша витине кайса тислĕк илсе килчĕç. Хĕрачасем кĕвенти-кĕвентипе шыв йăтрĕç. Пирвайхи улмуççине чи лайăх паллăсемпе вĕренекен Сергей Назаров лартрĕ. «Халĕ ĕнтĕ вĕренсе тухсан та шкултах юлан, аçу вăрманта, хăв кунта лесник пулан», — шӳтлерĕ Иван Ипатьевич. Тепĕр икĕ сехетрен ĕç пĕтĕмпех вĕçленчĕ. Ачасем канма ларнăччĕ, ушкăнпа юрă юрлатчĕç. Çав вăхăтра хашкаса чупса çитрĕ Агафон Ефимч шкул пахчине. «Манăн улмуççисем, манăн улмуççисем... — сывлăш çавăраймасть

хăй. — Каярах юлтăм, пулать ун пекки, темех мар, ачасем...» Унтан Мамуткин енне çаврăнать.

«Мамуткин, эсĕ... ил-ха кĕреçӳне, авă, кĕтесрине калла кăларас пулать, ара, манăн вăл... Хам суйласа илтĕм питомникре... Каярах юлтăм... Темех мар... Вăт, вăт, çавна, кĕтесрине, унтан... ав çав виççĕмĕшне, çук, йăнăшатăп... Тăваттăмĕшне. Вĕсене пурне те эпĕ хамăн килти пахча валли кăларса килнĕ...»

Ачасем шăпланчĕç. Пурте Иван Ипатьевич мĕн каласса кĕтеççĕ.

Мĕн пулса иртнине хăй те тăруках ăнкарса илеймерĕ Иван Ипатьевич. Пĕрре шуралчĕ, пĕрре хĕрелчĕ вăл. Анчах Агафон Ефимч чăнласах калаçнине курчĕ те кĕреçине Мамуткина тыттарчĕ. Унтан, куçлăхне илсе, ăна ал тутрипе сăтăркаларĕ... ачасем çине тепĕр хут пăхса илчĕ... Вара ĕшеннĕн хапха патнелле утрĕ...

—Унтан? — ыйтрăм эпĕ пĕр вăхăт шăп ларнă Августина Павловнăран.

—Çав кун пуçласа юр çурĕ. Йĕпе юр, çумăрпа хутăш... Кайран Назаров вăрмантан пилеш йывăççисем кăларса килчĕ. Агафон Ефимч килне тăпăлтарса кайнă улмуççисем вырăнне çавсене лартрĕç... Авă, кунтанах курăнать. Пилеш çулçисем халĕ те ешĕл-ха.

Августина Павловна шăпланчĕ. Унтан, тем вăхăтран:

—Шел, чи лайăх учитель ĕçлеме пăрахрĕ, — тесе хучĕ. — Пĕр çулталăк ĕнтĕ Иван Ипатьевич шкула килсе те курăнмасть. Пенсие тухрĕ. Клубра ĕçлет. Ачасем кашни каçах ун патне çӳреççĕ.

4

Очерк пулаймасть, Агафон Ефимчпа тепĕр хут тĕл пулас килмест манăн çакăн хыççăн. Халех каялла вĕçтерес-и? Çук. Тем чарса тăрать мана çак ялта.

Университет пĕтерсе райхаçатра ĕçлеме пуçланăранпа иккĕмĕш уйăх çине кайрĕ. Мана, Чăвашра ӳссе çитĕннĕскере, Тутар республикин кăнтăрти районне ячĕç. Кунта та чăвашсем нумай. Анчах (мĕнпе-тĕр) урăхларах вĕсем. Çут-çанталăкĕ те урăхларах пек туйăнать ку енче. Чăваш çĕршывĕнчен кăшт кăнтăрарах пулнăран-ши çакă?

Унта, Чăвашра, кашни виç-тăват çухрăмранах ял. Урамĕсенче ватă йăмрасем кашласа лараççĕ, пахчисенче — улмуççи, чие сачĕсем. Çурчĕсене хăшне хыртан, хăшне кирпĕчрен тунă. Çурт умĕнче — шыв колонкисем е тарасаллă пусăсем. Кунта вара, Тутарта, ялĕсем йăвă вырнаçман — вуншар, вунпилĕкшер çухрăм вĕсен хушшисем. Çуртсене ытларах ăвăсран тăваççĕ. Садсем сахалрах. Туллă-сăртлă уйсенче нефть вышкисем мăнаçлăн курăнса

ларaççĕ. Сăртсем айĕнчен çăлкуçсем палкаса тапаççĕ. Чăвашри пекех вăрмансем нумай, анчах хыр е юман вăрманĕ мар — хутăш вăрман: çăки те, ăвăсĕ те, юманĕ те — пурте пĕрле.

Йăмраллă вара районти ытти ялсенчен урăхларах. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар пек, Куйбышевпа Новокуйбышевск пек, икĕ пая уйăрма пулать çав яла: ĕлĕкхи тата паянхи. Ĕлĕкхинче — пилĕк стеналлă йывăç çуртсем, чӳрече хашакĕсене ăста платниксем чăваш тĕррисемпе эрешленĕ, пӳрт тăррисене шиферпа е шуçпа витнĕ, паянхинче — хулари пек капăр чул çуртсем. Икĕ хутлисем те пур. Тӳп-тӳрĕ урамсене асфальт сара пуçланă. Çитсе тăтăм та çак çуртсем патне тӳрех çул çинче Сергей каланă сăмахсене аса илтĕм. Акă мĕншĕн Кампанелла çинчен, фрескăсем çинчен сăмах тапратрĕ иккен вăл.

Икĕ хутлă çуртăн пĕр енче, алăксăр-чӳречесĕр стена çинче, чеканка меслечĕпе граждан вăрçинчи çапăçусене аса илтерекен пĕр пысăк панно туса хунă. Лашасем çил пек вĕçтереççĕ, пулемет умĕнче матрос кĕпи тăханнă çын тăшмана тĕллесе выртать. Ялав йăтса чупакан çын аманнă пулмалла, кăкăрне каçăртса, çĕр çине ӳкес умĕн хыçри тусĕсене кăшкăрса тем калать. Тусĕсем юнашарах, авă, пĕри, ялава илме хатĕрленсе, аллине тăснă.

Юнашар çурт çинче те картина. Унта, тĕрлĕ тĕслĕ чулпа кантăк татăкĕсенчен меслетлесе, пысăк хĕвелпе çап-çамрăк ача ӳкерсе хунă.

Утнăçемĕн çуртсем çинче хушпуллă-тухъяллă хĕрарăмсем, çăпата сырнă, аллине кĕсле тытнă арçынсен мĕлкисем курăнса кайрĕç. Урам варринче — ку вăл ялăн тĕп площачĕ пулĕ-ха — пăшал тытса тăракан салтакăн чул кĕлетки мăнаçлăн курăнса тăрать. Кăшт хыçаларах — Хисеп хăми. Ун çине çуллă сăрăпа ĕçре малта пыракансен сăнĕсене ӳкернĕ. Хăйсен геройĕ те, орденсемпе медальсем илнĕ нумай-нумай ĕçченсем те пур иккен ялта.

Унтан та ытла мана художник тунă япаласен пахалăхĕ тĕлĕнтерчĕ. Чăн-чăн профессионал ĕçĕсем пек вĕсем.

Каç пулса килет. Клуб умне çывхарнă чух эпĕ каллех хамăн çĕнĕ тусăма, Сергее, куртăм. Айăпа кĕнĕн пăхса илчĕ вăл ман çине, эпĕ вара ун умĕнче хам ырăмарлантăм. Телее, шкул пирки сăмах-юмах хускатмарĕ вăл.

— Атьăр хăвăртрах, эпĕ сире пĕр çынпа паллаштарасшăн, — терĕ Сергей. — Анчах эсир хăвăр ăçтанне ан калăр ăна, манăн юлташ е тăван вырăнне пулăр.

Килĕшрĕм.

Алăкран кĕрсенех, эпĕ хама пĕр-пĕр художество галерейине лекнĕ пек туйса илтĕм. Туллиех-мĕн кунта картина, пĕчĕк тумбăсем çинче — шап-шурă бюстсем. Чи варринче — арçын сăнĕ. Çав çыннăн куçĕсем сана тĕпчесе, тĕсесе пăхаççĕ.

— Кампанелла, — ăнлантарчĕ Сергей, эпĕ тӳрех çак портрет патне пырса тăрсан. — Вăл питĕ паттăр, питĕ хăюллă, питĕ пултаруллă çын пулнă. Хăйĕн çĕршывне Испани пусмăрĕнчен хăтарас тесе тăрăшнăшăн вăтăр çул тĕрмере ларнă. Аллă тĕрме курнă хăй пурнăçĕнче. Çичĕ хутчен тискеррĕн асаплантарнă ăна. Çиччĕмĕш хутĕнче хĕрĕх сехет вилĕм умĕнче тăнă. Пурпĕрех пĕр сăмах та чĕнмен. Юн юхтарса выртаканскере, ăна тарăн шăтăка пăрахнă, Хуçăлман Томазо. Каярах Галилее хӳтĕлеме те вăй тупнă. Ирĕклĕ те телейлĕ çынсен хули çинчен те ĕмĕтленме пăрахман.

— Сергей, — терĕм эпĕ, хам тĕлĕннине пытараймасăр, — çак ĕçсене мĕн, пĕтĕмпех пĕр çын тунă-и?

— Мĕншĕн пĕтĕмпех? Кашни çуллах пирĕн пата художество училищинче вĕренекенсем килеççĕ. Унччен Иван Ипатьевич вĕрентнĕ йĕкĕтсем. Унсăр пуçне... Эпир те... Çак портретсем — пурте хамăр ял çынннсен сăнĕсем. Пейзажсем те кунтиех. Ну, атьăр-ха ав çав пӳлĕме, хал-халь урок пуçланмалла пирĕн.

Эпир юнашар пӳлĕме кĕтĕмĕр. Вунă-вуникĕ ача мольберт çумне карнă рамка çине тинкерсе пăхаççĕ. Вĕсемпе юнашарах - лутрарах пӳллĕ, кăвак çӳçлĕ, сăмси çине куçлăх лартнă типшĕм çын тăрать, ыттисем пекех, пир çине тимлĕн сăнаса пăхать, Çаплах ĕнтĕ, ку вăл — Иван Ипатьевич. Акă вăл пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ, унтан куçлăхне илчĕ те ăна ал тутрипе сăтăркаларĕ, каллех тăхăнчĕ, пĕрре картина çине, тепре ачасемпе тăракан кăтрарах хура çӳçлĕ йĕкĕт çине пăхрĕ.

— Çакна ăнланас пулать, Мамуткин, — терĕ вăл лăпкăн. — Атăл хĕрринчен чăвашсем кунта ахальтен тарса килмен. Эпир халь пурăнакан вырăн вунсаккăрмĕш ĕмĕр варринче чи улах çĕрсенчен пĕри пулна. Хусан кĕпĕрнинче, Атăл хĕрринче çĕр сахал пулни, çитменнине, вĕсене улпутсем, мăнастирсем турта-турта илни, унтан, паллах ĕнтĕ, вырăс мар халăхсене ирĕксĕр тĕне кĕртни чăвашсене çемйи-çемйипех кунта килме хистенĕ. Акă, Мамуткин, эсĕ Ситукан çак тавралăха килсе лекнине сăнласа парасшăн. Маларах каланине шута илсен, мĕнлерех пулмалла унăн сăн-пичĕ? Вăл хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш хут çакăн пек ирĕклĕхе тухса, кунти хура тăпрана, йĕри-тавра аслă вăрмансем хупăрласа тăракан уй-хире курса, савăнмасăр тăма пултарайманах. Халлĕхе вара çав савăнăç палăрмасть-ха Ситукан питĕнче.

Каллех пĕр вăхăт шăп тăчĕ Иван Ипатьевич. Вара сывлăш çавăрчĕ те шкул ачин картинине малалла тишкере пуçларĕ:

— Çакна та манас марччĕ, ачасем. Эпир пĕр-пĕр курăка, йывăç пир çине ӳкеретпĕр. Акă ку картинăра та йывăççем пур. Анчах мĕнле йывăççем вĕсем? Тӳрех пĕлме çук. Искусствăра вара пурте уçăмлă пулмалла. Çуркунне. Ака уйăхĕ. Юр та пĕтĕмпех кайса пĕтмен-ха. Кунта ытти йывăççемпе çумăн ирех чечеке ларма

ĕлкĕрнĕ çирĕк йывăççине ӳкерсе хунă пулсан, питĕ вырăнлăччĕ. Çапла, çапла... Çуркунне çирĕк аякранах курăнса ларать. Унăн тăрри сарă хĕрлĕ кăчкăпа витĕнет. Çак вăхăтра çирĕке çерçи пысăкăш кайăксем илешеççĕ. Çирĕктăрри теççĕ вĕсене. Çирĕк вăрри — вĕсен юратнă апачĕ. Сăмах май каласан, çирĕк хуппинчен хĕрлĕ хăмăр сăра та тăваççĕ. Çирĕк йĕкелли вара аквариумри шыва таса упрама пулăшать. Вăт çавăн пек вăл, çирĕк. Картинăна чечеке ларнă йывăçа кĕртнĕ пулсан, вăл пир çинчи çын туйăмне лайăхрах уçса пама пулăшатчĕ пуль.

Кăмăллăн юхса пычĕ калаçу. Вăхăт шунăçемĕн çак типшĕм, лутрарах пӳллĕ старик калама çук пысăк чĕреллĕ, ăслă, вĕçĕмсĕр ырă çын пулнине туйса илтĕм. Самантлăха шухăшăмра Агафон Ефимч сăнĕ мĕлтлетрĕ. Вăл ирттернĕ биологи урокне эпĕ тин çеç Иван Ипатьевич çирĕк çинчен каласа панипе танлаштарса пăхрăм. Вара хам шухăшран хам та вăтанса кайрăм. «Айван, мĕнле танлаштару пулма пултартăр кунта», — тесе тарăхса та илтĕм.

Пĕрер сехет иртнĕ хыççăн ачасем пӳлĕмрен тухрĕç. Эпĕ вара шухăшсен танатинчен хăпаймасăр, такам тухатнă пек, пĕр вырăнта хускалмасăр тăтăм. Иван Ипатьевич киле кайма васкамарĕха. Сĕтел çинче выртакан папкăри хутсене тепĕр хут пăхкаларĕ вăл, кăранташпа тем паллă турĕ, унтан, аллине кăкăрĕ тĕлне хĕреслетсе тытса, хыçлă тенкел çине таянчĕ. Мана та тин çеç асăрхарĕ пулмалла вăл.

Эпĕ ун патне çывхартăм.

—Костин, райхаçатран, — терĕм ăстаçа. — Калăр-ха, ăçтан çакăн чухлĕ ĕçлеме вăй çитеретĕр эсир?

Вăл, тĕлĕннĕ пек, хулпуççисене сиктерсе илчĕ те пĕр шутласа тăмасăр:

— Ĕçсĕр пурнăç та çук, — терĕ.

— Хирĕçлеместĕр пулсан, тепĕр ыйту парам-ха, эппин, — хăюллантăм эпĕ. — Картинăсенчен ытларахăшне истори темипе ӳкернĕ. Ачасем те, авă, ун патнех туртăнаççĕ...

— Ăнланатăп, — пӳлчĕ мана Иван Ипатьевич. — Куратăр-и, эпир паян лайăх пурнăçпа пурăнатпăр, малашне тата лайăхрах пурăнма ĕмĕтленетпĕр, пурăнăпăр та. Нумай пулать-и-ха, акă, хамăр выçă хырăмпа, çĕтĕк-çатăк тумпа çӳрени? Манатпăр тепĕр чух çавна. Кам тунă-ха паянхи тулăх пурнăçа? Çавсем, выçăллă-тутăллă, çĕтĕк-çатăк çӳренĕ çынсем. Ĕнерхине лайăх пĕлсен, ыранхи тата уçăмлăрах курăнмалла вĕт-ха. Акă мĕншĕн эпĕ «ку вăл — иртни-пĕтни, ку вăл — аваллăх» тенине йышăнмастăп. Тăван çĕршыв кунçулĕ пире пурнăçа тĕрĕс хаклама пулăшать. Иртнĕ аслă вăрçă çулĕсенче вырăссен ĕлĕкхи паллă çар-пуçĕсен паттăрлăхне халăх ахальтен аса илчĕ тетĕр-и? Вĕсен паттăр тĕслĕхĕ те

совет çыннисемшĕн тискер тăшмана çапса аркатма пысăк тĕрев пулчĕ. Çапла мар-и?

– Иртни ăнланмалла-ха вăл, Иван Ипатьевич, – терĕм эпĕ. – Вăрçă пулнă, пĕр тĕллев пулнă - çĕнтересси. Халь мирлĕ вăхăт.

– Мирлĕ вăхăт пирĕншĕн çитмен-ха, çамрăк çыннăм, – пĕртте хумханмасăр калаçрĕ художник. – Пĕлместĕп, хăшĕ йывăртарах; те иртнĕ кунсем, те ку чухнехи вăхăт. Икĕ тĕнче хушшинче идеологире самантлăха та чарăнма пĕлмен хаяр кĕрешӳ пырать... Эпир çĕнĕ çыншăн, çынсен характерĕнчи сиенлĕ енсене пĕтерессишĕн вăй-халăмăра шеллемесĕр кĕрешетпĕр. Çав вăхăтра тепри, пирĕнпе юнашар пурăнаканниех, вăхăт нушине, халăх нушине виçене хумасăр, пĕр хăйшĕн çеç хыпăнса, вĕтеленсе çӳрет. Çапла, çын тăван халăхĕн нуши-тертне пĕлмесĕр, хăйне çеç юратма пуçлани хăрушă...

...Çĕнĕ уйăх çути çутатать аслă çула. Тӳпере пин-пин ĕнчĕ пĕрчипе йăлтăртатса, кайăк хур çулĕ тăсăлать.

Уçă, ырă.

Пĕлетĕп: çак кун ĕмĕрлĕхех манăн асăмра тăрса юлĕ. Çак çул мана пĕрре мар çавăрса килĕ-ха Йăмраллăна. Мана çеç мар, Сергей Назарова та, Мамуткина та, ытти нумай-нумай çамрăка та. Тăван çĕршыв вучахĕ, асаттесем чĕртнĕ вучах сӳнмест, вăл тĕлĕнмелле ăшă парса, çутă парса, хăйĕн паянхинчен те хитререх пуласлăхĕ патне туртать.

ВĔÇЕТ КĂВАКАРЧĂН

Корсаковсен çемйи, тĕрĕсрех каласан, упăшкипе арăмĕ – Петр Павловичпа Ксения Лукинична – çĕр варринче çапла тăруках вăранса кайни ялта вуникĕ çул каярах пушар тухнăранпа та пулманччĕ-ха. Петр Павлович çурма чăнлăхра, çурма тĕлĕкре тăрса шыв ĕçес килнине ăнланса выртатчĕ, анчах утиял айĕнчи ырлăхран ниепле те хăпаймарĕ вăл, ун çинчен манса, каллех тутлăн çывăрса каясшăн пулчĕ. Çапла айкашса выртсах Петр Павлович çитмен çĕрсене çитсе курчĕ: Çĕрпӳ пасарĕнче çӳрерĕ, арăмне савăнтарас тесе, лакпа çутатнă туфли туянчĕ, темшĕн-çке, çав туфлие тăхăнса Шупашкара çитрĕ те пĕр пысăк пуçлăх пӳлĕмĕн алăкне шаккарĕ. Пуçлăхĕ тата Хыçалкаспа пурăнакан Уксах Якур пулчĕ тăчĕ. Унченхи пек мар, куçлăхлă хăй. Унпа Петр Павлович иртнĕ вăрçа та пĕр кунах тухса кайнăччĕ-ха, Сталинград патĕнче те пĕрле çапăçнăччĕ. Ĕлĕкхи тусне курнăран Петр Павлович, савăнăçне ниçта чикеймесĕр, алăкран кĕрсенех утса мар, чупса пычĕ ун патне. Анчах çывхарса пынăçемĕн сĕтел хушшинче ларакан çын Уксах Якур мар, унăн хăй ĕçĕнчи пуçлăхĕ, рай-

онсем хушшинчи строительство пĕрлешĕвĕн председателĕ, тулли сăн-питлĕ, лапсăркка куç харшиллĕ Лизунов пулса тачĕ. «Ав ăçта килсе çитнĕ иккен эсĕ, эп пур... эп пур, евитлеме килнĕччĕ сан çинчен», — шухăшларĕ Петр Павлович. Унччен те пулмарĕ, пӳлĕме палламан çынсем пырса кĕчĕç те Корсакова хăйсем хыççăн утма хушрĕç. «Мана мар, мана мар, ав çавна илсе кайăр. Вăл путсĕр, путсĕр...» — тесшĕн пулчĕ Петр Павлович, анчах чĕлхи çаврăнаймарĕ.

Чăнкăррр! турĕ çак самантра хăрушшăн.

Чи малтан вырăн çинчен арăмĕ сиксе тачĕ.

— Аспати! Петра, Петра, мĕн куратпăр! Тăр-ха часрах! — çĕр çăтас чухнехи пек хыпăнса ӳкрĕ вăл.

Петр Павлович çутă çутмасăрах чӳрече патне чупса кайрĕ.

Икĕ хашак хушшинче йĕкĕр ывăçран кăшт пысăкрах хура чĕрчун çатăлтатать. «Кайăк, кайăк пырса перĕннĕ кантăка! Эй, эсремет, чун сиксе тухатчĕ», — тинех тавçăрса илчĕ Петр Павлович. «Кил-ха кунтарах, кил, мĕн çăмăлпаччĕ, кала», — хăлаçланса хăй патне туртса илме хăтланчĕ вăл кайăка.

Çак самантра Корсаков хапха тăрринчен тем татăлса ӳкнине туйрĕ.

«Мĕн амакĕ?» — тавçăраймарĕ кил хуçи, вара васкасах çенĕке тухрĕ. Алăк уçнă-уçманах кушак аçин урмăш сассине илтрĕ вăл. «Эккей, пулать те иккен чарусăр!» — терĕ те Корсаков ыйха татса çӳрекен кушак аçине урипе картишнелле тĕртсе ывăтрĕ, унтан, тăр-тăр çӳçенсе, каллех пӳрте кĕчĕ.

—Ырра мар ку, - мăкăртатрĕ Ксения Лукинична, çутă çутса. — Ай-юй, ара, кăвакарчăн вĕт ку. Çук, ырра мар ку, тем тесен те...

Суранланнă кăвакарчăн вăйсăррăн хăрах çуначĕ çине тĕршĕнчĕ.

* * *

...Çирĕм çул каярах килсе лекнĕччĕ Яков Сильвестрович Лизунов ку яла. Вăтăра çитсе пыракан тăп-тăп кĕлеткеллĕ, илемлĕ пит-куçлă, сарлака куç харшиллĕ çак хурарах арçын черченкĕ те ачаш хĕрарăмпа пĕрле килнĕччĕ. Лизуновĕ хăй вăтанса-именсе тăраканни мар, пурнăçри чăрмавсене хăюллăн сирсе пырса, тĕллеве пĕлсе, сарлакан та сулмаклăн утма хăнăхнă çын. Çавна пулах ĕнтĕ Серепенте хăй валли лайăх вырăн шыраса тупрĕ вăл, килнĕ-килменех тир-сăран кантурне ертсе пыра пуçларĕ. Ĕç парсан, Петр Павлович пурăнакан патшалăх çурчĕн пĕр пӳлĕмне вырнаçрĕ çĕнĕ çемье. Арăмĕ валли çеç тупăнмарĕ юрăхлă ĕç, унта кайса пăхрĕ упăшки, кунта, — çине тăмарĕ курăнать, алă сулчĕ пулмалла та ачаш арăмне килтех хăварчĕ.

Анчах пурăнаймарĕ Яков Сильвестрович арăмĕпе. Малтан-

лăха ĕç вăхăтĕнчех кунне иккĕ-виççĕ те хваттерне чупса кайса килетчĕ вăл. Пĕр-икĕ уйăх иртрĕ-и çапла, çук-и, пĕрне-пĕри йăлăхтара пуçларĕç вĕсем, сайрарах та сайрарах кайса килме тапратрĕ юратакан упăшки Капитолина Ивановна патне. Тепĕр чух тата арăмне çĕрле пĕччен хăварни те пулкаларĕ. Йăлтах илтĕнетчĕ стена витĕр: хыпăнса уксе, макăрса кĕтсе илетчĕ арăмĕ ытарайми Яшенькине. «Ăçта çӳретĕн, чунăм, ăçта пăрахса хăвартăн мана?» — тесе кĕвĕлетчĕ. «Ялсенче пултăм, кăвакарчăнăм, çумăр лӳшкесе çурĕ те, çитсе ӳкеймерĕм сан патна», — лăплантаратчĕ ăна упăшки. Унăн, кантур пуçлăхĕн, нимĕнле ĕç те пулман-ха ялсенче, мĕншĕн тесен кашни ялпорах тир-сăран пухакан пур. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и, кайран илтрĕ Петр Павлович, çук-мĕн, ялсенче çӳремен ун чух Яков Сильвестрович, кантурти бухгалтерпа, ачаллă пĕччен хĕрарăмпа, ирттернĕ вăл çав каçсене.

Каярах Лизунов чĕлхинчен «кăвакарчăнăм» сăмах та тухса ӳкрĕ. Ун вырăнне çуртра харкашни тăтăшах илтĕне пуçларĕ. Юрать-ха нумай пурăнаймарĕ çамрăк çемье. Кĕркуннеччĕ. Пĕрре çапла Капитолина пӳртрен икĕ чăматан илсе тухрĕ те Петр Павловича пулăшма чĕнчĕ. Нимĕн те чĕнмерĕ Корсаков çак ачаш хĕрарăма, нимĕн те ыйтмарĕ унран. Пуçĕнче çеç шухăш хыççăн шухăш çаврăнчĕ: этемле мар, кашкăрла пурăнать унăн çĕнĕ кӳрши. Эх, хăйĕнчен килет пулсан, кăтартĕччĕ вăл ăна хĕрарăмран мĕнле кулмаллине. Вĕсем, ав, Укçинепе улттăмĕш çул шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççĕ ĕнтĕ, ик ача ӳстереççĕ. Утăм тумаççĕ пĕр-пĕрне каламасăр.

Автобус çинех лартса ячĕ Петр Павлович телейсĕр Капитолина Ивановнăна. Çавна çеç астăвать ĕнтĕ халь: хитреччĕ вăл.

Яков Сильвестрович вара çакăн хыççăн тепĕр уйăх та пурăнаймарĕ кунта. Таçта çурçĕре кайнă тени çеç асра юлнăччĕ.

«...Ах, кайăк, кайăк... Ăçтан килсе перĕнтĕн-ха эсĕ кунта? Сана мĕн, ирĕкре вырăн çитмерĕ-и? — мăкăртатрĕ Петр Павлович. — Е санăн та, манăнни пек, чуну тăвăрланса çитрĕ-и паян? Кансĕр ун пек чух этеме, пĕлместĕп, сана мĕнле пуль те... Ара... çавах ĕнтĕ, эсĕ те чĕрĕ чун-çке. Э-э, апăрша, юнланнă та иккен. Чим-ха, чим...»

Петр Павлович сĕтел сунтăхĕнчен пĕр пĕчĕк кĕленче кăларчĕ те унти шĕвеке мамăкпа пуçса илчĕ, кайăк суранне сипле пуçларĕ. Кăвакарчăн турткаланма пăрахрĕ, çăварне каркаларĕ, унтан каллех, çуначĕсене пуçтарса, шăпах пулчĕ. Кил хуçи картишне тухса кĕчĕ, çутă сӳнтерсе, каллех вырăн çине кĕрсе выртрĕ.

Ыйхă килмерĕ. Айăн-çийĕн шухăш çаврăна пуçларĕ Петр Павлович пуçĕнче. «Ырра мар пуль», — терĕ-ха арăмĕ. Тĕрĕсех каларĕ ĕнтĕ. Ырра мар, çапли çаплах-ха вăл. Анчах кăвакарчăн айăплă мар кунта. Ăна хăй йăвинчен кушак аçи хăратса янă — кайăк

ниçта кайса кĕреймен, сайхах çинчен вĕçсе тухнă та кантăка пырса çапăннă. Çавă çеç. Кăвакарчăн айăплă мар. Кам айăплăха? Нивушлĕ хамах? Документсем пур, пуçлăх хушнă – эпĕ çырса панă. Анчах... «Корсаков гражданин, патшалăх пурлăхне уйрăм çынна сутма юраманнине пĕлнĕ-и эсир?» – тесе ыйтĕç. Унтан та ытларах: «Хаксене кăтартнă чух мĕншĕн ваккăн мар, курттăмăн сутма ирĕк панă бухгалтер?» – тейĕç. Калаççех. Тăртăр чĕтресе илĕ Петр Павлович, халăх ун çине йĕрĕнсе пăхĕ. Ăçта кайса кĕрес-ха çав самантра? Вăл, туртман-ĕçмен çын, çемьене йĕркеллĕ тытса пыракан кил хуçи, халиччен никамран нимле ят илтменскер, унтан та ытларах, вăл, иртнĕ вăрçăран икĕ орденпа икĕ медаль çакса тавраннăскер, мĕнлерех пăхĕ çынсем çине? Ак вĕт ăçта тĕнче хĕрри. Тĕнче хĕрри... Чим, камран илтнĕччĕ вăл çак сăмаха? «Тĕнче хĕрри... Ак сана, Петĕр, тĕнчере пурăнма тивĕçсĕр тесе, çак çырантан пăрахăç те, эсĕ вара çӳçенсе илĕн, анчах унăн тĕпне çитнине туяймăн, хĕвел çути, çулçă пăшăлтатни, чечек шăрши, вăхăта туйни манăça тухăç сан пуçунтан, эсĕ вара тăпрана куçан...» Чим, ара, сасси те унăннахçке... «Нимех те мар, чи ансат вилĕм... анчах çак пăшал кĕпçи те санран темиçе хут нумайрах «пурăнĕ» çĕр çинче... Ман пурнăçа ывăл малалла тăсĕ-ха. Санăнне вара, Петĕр... Ай-яй-яй... мамăкха сăмсу айĕнче. Шел...»

Сталинградра чух шӳтленĕ сăмахсем пулчĕç кусем пĕтĕмпех. Курпун сăмсалли - Жулидов. Унăн хулпуççийĕ çине аллине хурса тăраканни – Бахрамов.

–Пăрах эс ку философие, Муртаз. Корсаковăн пысăк пурнăçне пĕр-пĕр мĕскĕн фриц татĕ тетĕн-и? Пулмасть ку. Корсаков рядовой, кала-ха эс ăна, миçе награда санăн?

–Икĕ орден, ик медаль, командир юлташ. Пĕрне – Хĕрлĕ Çăлтăр орденне...

–Çитет, çитет. Маттур çын эсĕ, Корсаков рядовой. Илтрĕн-и, Жулидов? Ак сана тĕнче хĕрри.

– «Маттур çын эсĕ, Корсаков... Маттур çын... Маттур...» – янăрать хăлхара.

Мĕн тунă-ши çав путсĕр Лизунов вĕсем Сталинградра типшар курнă вăхăтра? Ăçта пулнă-ши? Пулнă пуль-ха. Тен, Корсаков пекех паттăр çапăçнă. Анчах хăçан пуçланă вăл сĕмсĕрленме? Мĕн хĕтĕртнĕ ăна хăй валли йăнăш çул суйласа илме? Йăнăш çул-и? Çук, Яков Сильвестрович хăй хăнăхнă ĕçне чи тĕрĕсси тесех шутлать ĕнтĕ. Ку – паллах. Мĕн паллă мар-ха тата?

«Тепĕр хут ыйтатпăр, Корсаков гражданин. Мĕншĕн курттăмăн сутма ирĕк панă эсир? Акă, тĕслĕхрен, чи пĕчĕк япала – пăта. Магазинра вăл 45 пус тăрать, Лизунов пур, ăна 17 пуса туяннă», –

тесе ыйтĕç унран. Çав вăхăтра ăна Яков Сильвестрович чеен куç хĕссе илĕ, атя кала, тулккă аптраса ан ӳк тесе систерĕ. Мĕн каланă пулĕччĕ-ши Корсаков судьяна?

Судра каламалли сăмахсем пĕрин хыççăн тепри йĕркеленчĕç Корсаков пуçĕнче. Лизунов çине çеç пăхас марччĕ. Тем тесен те ун çине пăхас марччĕ.

«Маттур çын эсĕ, Корсаков», — каллех илтĕнет вăрçă хирĕнчи сасă.

Çук, Лизуновран шикленмелле мар. Ун куçĕнчен тӳррĕн пăхмалла. Ак çапла: «Çак киревсĕр, çак намăса çухатнă çынна эпĕ çирĕм çул пĕлетĕп». Е урахларах: «Çак кĕççе пит çирĕм çул ĕнтĕ мана тарăхтарса пурăнать». Э, çук, çук, кун пек май килмест. «Эс ху кам?» — ыйтĕç ларакансем. Ара, кĕççе пит, эп хам та кĕççе питех вĕт. Мĕншĕн суд сĕтелĕ умне тăнă-ха унсăрăн?.. Кĕççе пит пулнăран тăнă, паллах.

«Маттур, Корсаков...» — хальхинче ĕнтĕ куç айĕн пăхса тăрăхлать пек ăна Бахрамов командир. Йĕплĕ унăн сăмахĕ. Кулать вăл Корсаков салтакран. Кулать... анчах айăплă мар вĕт-ха эпĕ ним чухлĕ те? Айăпли — вăл, Лизунов. Каласа кăтартас-и, командир юлташ? Итле, эппин.

...Çапла, ялтан тухса кайсан, вунултă çул таçта, те çурçĕртех ĕнтĕ, çапкаланса çӳренĕ хыççăн вăл каллех Серепене таврăнчĕ. Ман патах кĕчĕ, мур илесшĕ. «Пĕртен-пĕр ырă тусăм хуса ямасть пулĕ те...» — терĕ вăл çуллă сасăпа. Хăваласа ярас-и-ха вара пĕрре курнă çынна? «Пурăнах», — тетĕп. Тулккĕ ахалех йышăнтăм эп ăна, явăла. Тепĕр кунне ĕçрен килетĕп те, пӳрт тулли чăматан лартса тултарнă. Аш-пăш шăрши перет. Кĕрес тесе пăхрăм пӳлĕме: ак, япала, ман хуçайккă та мар унта, пĕр тулли кăна кĕлеткеллĕ хĕрарăмпа çулсене çитсе пыракан хĕрача, куç хупанкине кăвакпа сăрланăскер, хĕрсех сĕтел хатĕрлеççĕ.

«Хайхи ачаш та çинçешке хĕрарăм мĕнле пулса кайнă!» — тесе тĕлĕнетĕп. Сисрĕ Яков Сильвестрович çакна, «ш-ш-ш!» — терĕ, шăла çыртма хушса. Ăнлантăм — урăх хĕрарăм иккен.

Ĕçрен таврăнсан, арăм та пĕр сĕмах та чĕнмерĕ çав. Çакă та лăплантарчĕ пулмалла Лизуновсене, пĕр эрне пурăнчĕç вĕсем, иккĕ, каярах вара вырнаçсах çитрĕмĕр тесе шутларĕç пулас.

Ку юрĕ-ха. Урăххи канаç памасгь чун-чĕрене. Лизунов темĕн, пĕр-ик эрне унта-кунта чупрĕ те, ме сана, эпĕ бухгалтерта ĕçлекен кантурта пуçлăх пулчĕ ларчĕ. Чĕнтерет пĕр ир хайхи. «Ну, Корсаков, çаннуна тавăр, ĕçлетпĕр», — тет, татăк пӳрнеллĕ алли çине сура-сура. «Эс мĕн-ха, — тет, — чăт, часах çурт туса лартатпăр та, унта куçатăп». Э, шутлатăп хам, çурт тăвасси вăл, ваçка, пукане тăвасси мар, пĕр-ик çулсăр та каясшăн мар иккен ку ман патран.

«Ара, пĕрле тăвăпăр, эпĕ те пулăшăп», — тесе хутăм аптранă енне. «Вăт çав, эсĕ пулăшни кпрлĕ те», — терĕ Лизунов, темшĕн хытă хĕпĕртесе. Унтан çакăн пек хушса хучĕ: «Чăт, Петр Павлович, чăт, ăçтан пĕлен малашнехине, унта, ав, çамрăккисем те килĕштереççĕ пулмалла-ха...»

Ак тамаша! Ман Натульпе хăйĕн, эй, шуйттан, аса илсен, чĕлхе çыхланать, Эленур ятлă хĕрĕ çинчен калать вĕт ку. Нивушлĕ тĕрĕсех калать? Çав таранах ӳссе çитрĕ-ши вара ман ывăл? Вунулттăра кăна-çке-ха. Чим, мĕнле юрлатчĕç-ха çав çамрăк чух? «Вунçич-ч-чĕр-е-е чу-у-ух ю-рат-рăм хĕр-е-е...» Вунçиччĕре пулнă. Натуль вунулттăра. Вăхăт пуль çав. Эх, мур илесшĕ, нивушлĕ тĕрĕс?

Тĕрĕсех пулчĕ. Килетĕп пĕрре çапла отчет туса çĕрлене юлнă хыççăн кантуртан. Сĕм-тĕттĕм. Кил патнелле çывхарса пыратăп. Măкăр-мăкăр, мăкăр-мăкăр! Илтĕнет сад пахчинчен. «Чечек татма вăрă кĕнĕ», — мĕлтлетрĕ шухăш. Чĕрне вĕççĕн йăпшăнса пытăм та пахча кĕтессинчи юман юпа хыçĕнчен курах кайрăм... «Мĕн эсĕ тутаран чуптăватăн пĕрмай, çамкаран, куçран чупту», — тет хĕрĕ, пăшăлтатса. Ак япала, куçран мĕнле чуптăван-ха, шалт тĕлĕнсе кайрăм ку хĕртен. Май çук, тетĕп хам ăшра.

— Ах, ырă санпа, Леонора-а, — тет арçын сасси, антăхса кайса.

Унтан каллех чуптунă сасă илтĕнет.

Пĕтрĕ пуç! Вăт ватсупнă. Мĕн мурĕ туса тăратăп-ха кунта? Пăрăнса каяс — тӳрех сисеççĕ. Хăв ачу-пăчу куçне мĕнле курăнăн-ха капла? Тепĕр шухăш та канăç памасть хама: пăсса янă вĕт ку сăрланчăкĕ ман ывăла, йăлтах пăсса янă, Мĕн курăпăр!..

Халĕ ĕнтĕ Лизуновсен çемйи маншăн пушшех киревсĕр пулса тăчĕ. Хăйсем те вĕсем пире çемйипех курайми пулса çитнĕ, анчах, чеескерсем, палăртмаççĕ çакна...

* * *

...Стена сехечĕ иккĕ çапрĕ. Кантăк çинчи кăвакарчăн çуначĕсемпе лапсăртатса илчĕ, чĕрнисемпе кантăка катăртаттарчĕ. Тулта кăшт палăрмалла кăвак çутă курăнать. Ирĕкелле ăнтăлать ĕнтĕ кайăк, анчах ăçта кайтăр, кăкăрне ыраттарнă-çке, çунатне суранлатнă. Çак шухăшпа Петр Павлович тепĕр аякĕ çине çаврăнса выртрĕ. Çаплах ыйхи килмерĕ унăн. Талăкĕ-талăкĕпе çывăраймасăр çӳрекенсем те пур, теççĕ тĕнчере, еплерех йывăр пуль вĕсене...

...Анчах халь ĕнтĕ ĕçне туса пĕтернĕ. Ту хĕрринче картина çинчи пек хӳхĕм çурт ларать. Лизунов çемйи тахçанах унта ыр курса пурăнать. Таврара çук вĕт ун пек çурт. Стенисене тĕрлĕ тĕспе сăрланă, тăррине хĕçтимĕр витнĕ. Хапхине ылтăн пĕсехеллĕ, кăлкан хӳреллĕ автансем ӳкерсе эрешленĕ. Петр Павло-

вич хăй те ун умĕнчен именсе иртет. Çынсем пурте ун çине ӳпкелешсе пăхаççĕ пек. Ара, пăхаççĕ ĕнтĕ. Ĕнер, ав, çав Ухсах Якурах тĕл пулчĕ-ха ăна. «Ну княç вара санăн пуçлăху, мĕн-и, ыттисемшĕн те çаплах тăрăшать-и?» — йĕплесе ыйтрĕ Корсаковран. Чĕнмерĕ Петр Павлович, малалла утрĕ. «Ăнланмастăп сана, улшăнтăн эс, Петра... Юлташусенчен уйрăлтăн», — тесе юлчĕ хыçалтан Якур.

* * *

...Коридорта вĕр-çĕнĕ «Кăтарту хăми» çакăнса тăрать. Тĕрлĕрен ĕç ячĕсене шултра саспаллисемпе çырса хунă, вĕсене хирĕç цифрăсем кăтартнă: çĕр, çĕр пĕр те виççĕ вуннăмĕш, çĕр иккĕ те çиччĕ вуннăмĕш... Пултарать Яков Сильвестрович, мĕн каламалли, хăйĕн ĕçне кăтартма пĕлет вăл. Акă тепĕр ик-виç кунтан район хаçачĕнче статья пичетленсе тухĕ. «Эпир çавна тунă, эпир куна тунă, эпир çапла çĕнтернĕ...» — каппайланĕ Лизунов. Кварталти ĕçсем тăрăх рабочисене преми пама та манмĕ пуçлăх: кама виçĕ тенкĕ, кама пиллĕк. Виççĕмĕш çул ĕçлесе, унăн йăли-йĕркисене йăлтах пĕлсе çитрĕ Петр Павлович.

Чăнах та, кăнтăрла иртсен Яков Сильвестрович приказĕ Корсаков сĕтелĕ çине пырса выртрĕ.

Арманова — пилĕк тенкĕ. Арманова... Икĕ уйăх каярах ӳсĕрпе тракторне йăвантарса янăччĕ вăл. Хăй тепле сывă юлнă. Ун хыççăн мастерскойĕнчен тухаймарĕ. Юсаса çитернĕ, эппин. Юрĕ, Арманова — пилĕк тенкĕ, Бикмурзина... Ха, Бикмурзина! Виçĕм кун айĕн-çийĕн тустарса кайрĕ пуçлăха. «Этем-и эс, Лизунов, этем мар-и! Ултă ачапа хăçан çав баракран кăларатăн? Çĕнĕ çурт туса пĕтернĕ, тавай ордер. Тавай ордер! Тухса каймастăп, çемьене илсе килетĕп. Ишь епле ăслă, хăйĕн шоферне, тин авланнăскере, икĕ пӳлĕмлĕ хваттер парать имĕш. Тавай ордер!..»

Темле пĕтрĕ калаçу — Петр Павлович васкавлă ĕçпе райфона тухса кайрĕ.

...Бикмурзина — çичĕ тенкĕ. Горбатова, Жаркова, Карпухина... Чим, Давыдов ăçта? Çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлекен Иван Никифорович ăçта? Çук. Ара, тĕрĕс мар вĕт ку япала. Мĕнле-ха чи пултаруллă шофера премисĕр тăратса хăварнă?

Шуйттан хистерĕ-и Петр Павловича çакăн пек иккĕленме? Лизунов патне кĕрсе хăй сăмахне каларĕ кăна вăл, леш чăрр! пăхрĕ ун куçĕнчен.

— Тĕрĕс мар пек туйăнчĕ, эппин? — шăл витĕр сăрхăнтарчĕ Яков Сильвестрович, татăк пӳрнеллĕ аллипе пирус кĕлне ерипен сĕтел çинчен шăлса пăрахрĕ те, сĕтел сунтăхĕнчен пĕр хут татăкĕ кăларса, ăна Петр Петровича тăсса пачĕ.

«Районти халăх контроль комитетне, — вуларĕ Корсаков машинкăпа çаптарнă хут листин иккĕмĕш экземплярне. — Штатра тăман инспектортан А.И. Сыромятниковран.

Июнĕн 16-мĕшĕнче халăх контроль комитетне районти колхозсем хушшинчи строительство пĕрлешĕвĕнче ĕçлекен паллă мар çынран килнĕ çырăва тĕплĕн тишкерсе тухнă хыççăн çырура кăтартнă тĕслĕхсем тĕрĕс мар пулни палăрчĕ. Я.С. Лизунов юлташ иртнĕ икĕ çул хушшинче хăй валли çурт туса лартнă пулин те, строительство материалĕсене вăл хăй укçипе сутăн илнĕ. Çакна документсем çирĕплетсе параççĕ. Лизунов хăй ĕçлекен предприятие юхăнтарса янă, рабочисемпе çыхăну тытмасть тени те тĕрĕс мар. Иккĕмĕш кварталта предприяти мĕнпур кăтарту енĕпе задание ирттерсе тултарнă. «Слава» колхозра МСО тунă ферма çурчĕ ишĕлсе аннишĕн Лизунова ответ тыттарнă ĕнтĕ.

Элекçĕ-анонимщика, йĕрлесе тупса, суд умне тăратма сĕнетĕп.

К сему ***Сыромятников»***.

— Тĕрĕс мар пек туйăнчĕ, эппин? — тепĕр хут ыйтрĕ Лизунов, Петр Павлович çырăва вуласа тухнă хыççăн.

Нимĕн те ăнланайман Корсаков пĕр хушă чĕнмесĕр аптраса ларчĕ.

— Сан ĕçу вĕт?

— Мĕн эсир, Яков Сильвестрович? — шалт тĕлĕнсе кайрĕ Корсаков.

— Халь ĕнтĕ тунаймăн. Тĕрĕс мар пек туйăнчĕ, эппин? — виççĕмĕш хут каларĕ çак сăмахсене Лизунов. — Мĕнех, йăнăша тӳрлетĕпĕр. Çыр. Эпĕ, Корсаков Петр Павлович, хам ирĕкпе ĕçрен кăларма ыйтатăп тесе çыр. Эс мĕн, ху патăнта пурăнтарнăшăн ман ĕнсе çине хăпарса ларасшăн пултăн-и? Çыр. Акă хут, акă ручка.

— Ăнланаймастăп, Яков Силь...

— Çыр. Унтан ăнланăн. Слав пох, тăванланаймарăмăр. Элеонора хăех сиссе илчĕ кампа çыхланнине. Çыр. Куç ан куртăр.

Кӳтсе, кӳтсе килчĕ Петр Павлович чунĕ. Ах, путсăр çын. Ах, хура чунлă этем... Эппин, эпĕ сана чăрмантартăм. Эппин, эпĕ сана кирлĕ мар текех...

— Çыр. Мĕн ларатăн!

— Пĕлетни, мĕн, Лизунов юлташ! Мĕн пакăлтататăн кирлĕ мара! — виçĕ çул хушшинче пĕрремĕш хут сасă çĕклерĕ вăл пуçлăх умĕнче. — Эп ниçта та евитлемен те, çырман та. Ун пек çын мар эпĕ... — сасси вăйсăрланса, вăйсăрланса пычĕ Корсаковăн, вăл тăр-тăр чĕтреме пуçларĕ, тарласа кайрĕ. — Ан кăлар мана ĕçрен, эпĕ... эпĕ айăплă мар...

— Кур-ха эс ăна, хусах матка пек, айăпсăра персе ларать. Кам çырнă апла пулсан?

— Пĕлместĕп, Яков Сильвестрович.

— Заявленине пурпĕрех çыратăн. Паян мар-тăк, ыран.

Йывăррăн кайса ларчĕ хăй сĕтелĕ хушшине Корсаков.

Тĕлли-паллисĕр ăна тытрĕ, кăна тытрĕ вăл, ун куçĕ Хветĕр кассирăн куçĕпе тĕл пулчĕ. Хветĕр те вăрттăн кулать ав унран.

— Мĕн эсĕ, Петр Павлович, чĕрре кĕретĕн? Хуçа пур, ăна курăнарах парать. Рабочисем кĕтеççĕ. Алă пус та — ĕçĕ те пĕтнĕ. Ахалех эс...

Вăрçăрине шутламасан, нихçан та çакнашкал йывăр килменчĕ-ха Корсакова. «Вăрçăри — пачах урăх, — шухăшларĕ вăл, — унта иккĕрен пĕри: е пĕтетĕн, е юлатăн. Кунта вара апла та, капла та чун юлать, кĕлетке юлать. Кĕлетке юлать? Кама кирлĕ-ха путсĕр кĕлетке? Кама кирлĕ вăйсăр-хăватсăр, чĕресĕр кĕлетке? Кĕлетке... Уксах Якурăн ури те йывăçран ав. Çапах пуçĕ пур! Мăнаçлăн тытать вăл ăна. Тӳррĕн кастарать. Пуçлăх-и уншăн, юлташ-и — куçран калать. Ăçтан çавăн пек пулнă-ши вăл? Пĕр шутласан, вĕреннĕ çын та мар, лаша пăхсах ирттерчĕ ĕмĕрне...»

Ĕлĕкхи юлташĕ аса килнĕрен савăнса ӳкрĕ Корсаков. Магазина анса, пĕр кĕленче шур эрех илчĕ вăл: сăлтавĕ те пур, Якур нумай пулмасть çĕнĕ çурта куçнă, калаçса ларăпăр, сĕтел çинче çак япала ытлашши пулас çук.

— Ха, кам ку тетĕп, куçăм витĕрех мар та, эсĕ иккен, кĕр, кĕр, хăна пулăн. Нумайранпа ура ярса пусмарăн. Кĕр, эпĕ акă выльăхсене пĕрер сенĕк пăрахса парам та, — тарават кĕтсе илчĕ Корсакова Якур.

Петр Павлович кил хуçи ĕçне пĕтеричченех картишĕнче тăчĕ.

Пӳрте кĕчĕç. Ултă кĕтеслĕ çурт пысăк та хăтлă пулса тухнă. Хырпа сăрă шăрши сăмсана кăтăклать.

— Эс мĕн пуль-ха, ирхине каланăшăн çиллентĕн пуль, — терĕ Якур, аллине алшăллипе шăлса типĕтнĕ май. — Хывăнса пăрах, тĕпеле иртĕпĕр. Чей те вĕренĕ ав.

Корсаков çаплах чĕнмесĕр тăчĕ, унтан кĕсйинчен эрех кĕленчи кăларчĕ.

— А-ай, эс кĕленчепех иккен, — терĕ Якур. — Ну, атя, атя, унта ман хамăн та кăштах пурччĕ-ха.

Сĕтел хушшине ларчĕç. Якур арăмĕ Укçине çинчен, ачасем çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕ, çав вăхăтра сĕтел çине хатĕрлерĕ.

— Эппин, хĕрӳ те бухгалтер пулать. Натулĕн тата нумай юлчĕ-и-ха салтак срокĕ? — калаçать вăл ĕçленĕçемĕнех. — Тем, яланхи пек мар кăмăлсăр эсĕ паян. Эппин, сыпар пĕрер черкке, чун уççи пултăр, — сĕнчĕ Якур.

Сыпрĕç. Ерипен-ерипен калаçу карта лара пуçларĕ. Якур çак кунсенче Чарлан ятлă çамрăк ăйăра кӳлме вĕрентни çинчен каласа пачĕ. Никама та итлемест имĕш, çапса-çĕмĕрсе пĕтересрен çуна кӳлсе янă, чăхăмла-чăхăмла пĕрех сĕтĕрет тусанлă çул тăрăх. Пĕрре чĕвен тăрать, тепре тĕршĕнет. Эккей, аппаланаççĕ çамрăксем. Якур килнине курать те имĕш хайхи ăйăр кĕçенсе ярать.

— Чĕлхине пĕлес пулать, калаçма пĕлес пулать выльăхпа та, — те савăнса, те кăшт мухтанса каларĕ Якур. — Пытăм та ăмринчен лăпкарăм, йĕкĕр ывăç сĕлĕ патăм. Пулчĕ те. Атя, Чарлан, турта хушшипе утма хăнăхар-ха тетĕп. Ват лашаран хитререх пырать хайхи...

Тепĕр черкке ĕçнĕ хыççăн уçăлсах кайрĕ Петр Павлович. Ют çын мар, фронтри юлташ, ку ăнланатех тесе, хăйпе паян мĕн пулса иртнине йăлтах каласа пачĕ вăл Якура. Лешĕ сĕтел çине чавсаланчĕ те пĕр пӳлмесĕр итлерĕ. Вăрахчен калаçрĕ Корсаков, Яков Сильвестрович ăна виçĕ çул хушшинче мĕн тери мăшкăл кăтартнисене пурне те аса илчĕ. Унтан аллине чей курки тытса, сăмахне çапла пĕтерчĕ:

—Вăт мĕнле манăн пурнăç, Якур. Эсĕ пур, юлташусенчен уйрăлтăн, лайăх мар тетĕн. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ халь манăн? Çырăвне эп çырман, Якур. Çĕр çăттăр — эп çырман!

—Э-э-эх-х, юлташăм, юлташăм, — тарăхсах каларĕ кил хуçи. — Çав пĕтерет те... «Эп çырман». Епле хитре калать. Ĕненетĕп — эс çырман. Анчах çырмалла пулнă. Çырмасан, каламалла пулнă. «Эп çырман...» Тĕлĕнтеретĕн эс мана, Петра.

«Мĕн калать ку? Ним ăнланма çук. Те ӳсĕрĕлсе кайрĕ ĕнтĕ?»

— Çав пĕтерет те пире, — малаллах калаçрĕ Якур. — Эп курман-илтмен, эп айăплă мар, эп таса çын... А шутласан, каçар та мана хытă каланăшăн, эсĕ икĕ хут айăплă. Халь акă сана çамкунтан çапмалла та анкă-минкӳне пĕтĕмпех кăларса ямалла. Калаха, Петра, Сталинградра эпир санпа мĕншĕн çапăçрăмăр? Сан Лизуновна ырлăх кăтартасшăн-и е мĕнпур халăха лайăх пултăр тесе-и? Кала, Петра, кала, эс халь пĕчĕк ача мар, ачун ачисене кĕтекен çын.

Эх, пурнăç... Кунта та ăша лăплантарма пултараймарĕ акă Корсаков.

—Ну, юрĕ, ман каяс. Нумай лартăм сӳпĕлтетсе, — терĕ те вăл сĕтел хушшинчен тухрĕ. — Мĕн каласшăнччĕ-ха, э-э, мĕн... Якур, чĕлхен шăмми çук, теççĕ, калаçу хамăр хушăрах юлтăр вара...

— Эс те çав, — Петр Павлович куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ Якур. — «Икĕ орден, ик медаль...» Астăватăн-и? Вăт-вăт, эп манман-ха. Аса ил Бахрамова, Жулидова... Шел, пурăнаймарĕç. А эпĕ сан вырăнта пулсан... Пĕлетĕн-и, мĕнле ырă çын Косарев? Кай ун патне, каласа кăтарт, çапла-çапла пулчĕ те... Суд пулĕ. Ăнлан-

тар пурне те. Чĕрӳне ирĕке кăлар... А так, лармаллаччĕ-ха пăртак, нумайранпа калаçманччĕ.

— Каяс ĕнтĕ, килте те çухатрĕç пуль, — текелерĕ те Корсаков алăка уçрĕ.

«Район пуçлăхĕ патне кайма сĕнет Якур, Косарев патне», — шухăшларĕ Петр Павлович. Унтан каллех вырăн çине тăрса ларчĕ. «Шак-шак, шак-шак», — кĕвĕлет сехет. Ĕнтĕ кун çути те палăра пуçларĕ. Чӳрече ани çинчи кăвакарчăн сăмсипе çаплах кантăка таклаттарать. Эх, мĕскĕн, ăçта кайăн-ха ĕнтĕ. Сывалас пулать-çке...

«Суд пулĕ терĕ-ха Якур. Сучĕ пулатех ĕнтĕ. Анчах мĕнле йышăнĕ ăна çав Косарев? Вăл та элекçĕ темĕ-ши? Çук, калаймасть. Документсем пур. Сыромятников вара мĕнле документсем пирки çырнă-ха? Суя ку, йăлтах суя, пырса та курман вăл пирĕн кантура. Лизунов урлă тунă».

«Вăр-вăр-вăр, вăр-вăр-вăр!» — тутарать çĕрлехи хăна. Икĕ хашак хушшинче пĕрре çӳлелле хăпарать, тепре чӳрече анине перĕнет кăвакарчăн. Вăт вĕт, ирĕке хăнăхнăскер, ниепле те лăпланаймасть ăшă пӳртре.

«Енчен çак кайăка ирĕке кăларса ярсан? — шухăшларĕ Петр Павлович. — Анчах çĕре ӳкĕ те хайхи кушак çăварĕ тĕлне пулĕ. Юрĕ, сăнаса пăхам, çĕре ӳксен илсе кĕрĕп».

Корсаков уçăлакан чӳречесене кăштах урамалла тĕртрĕ кăна, кăвакарчăн çуначĕпе лап-лап çапрĕ те сывлăша тухса ыткăнчĕ.

— Вĕçет! Вĕçет! — ача пек савăнса кăшкăрчĕ Корсаков.

— Тата мĕн пулчĕ, Петра? — тăруках вăранса кайнипе куçне чарса пăрахрĕ Ксения Лукинична. — Мĕн пулчĕ тата?

— Тул çутăлчĕ, Укçине, — терĕ Петр Павлович. — Вĕçсе кайрĕ кăвакарчăн, хуçăлман пулнă иккен çуначĕ...

ÇУРАÇНĂ ХĔР

Тахçанхи ĕмĕт çитрĕ: сесси вĕçленсен тепĕр куннех Николай Дмитриевич Старков преподавательпе унăн арăмĕ Валентина, халь çеç филологи факультетĕнче пиллĕкмĕш курс пĕтернĕскер, яла кайма тухрĕç. Купене кĕрсе ларсан тин çăмăллан сывласа ячĕ Старков: ĕнтĕ лекцисем хатĕрлесе çĕрĕ-çĕрĕпе ларма тивмĕ. Икĕ уйăха яхăн пушă вăхăт пур: мĕн тăвас килет — çавна ту, ăçта кайма кăмăл пур — çавăнта кай. Çак туйăм, хĕрӳ ĕç хыççăнхи ирĕклĕх туйăмĕ, ăна инçетри Хăвакассине, арăмĕн тăван ялне, кайма хистерĕ: Валентина тек-текех пĕччен пурăнакан амăшне аса илет. Карчăкĕ те тунсăхларĕ-тĕр, хĕрне çеç мар, кĕрӳшне те курасси килет пуль.

Иккĕмĕш сăлтав та пулчĕ Старковăн яла паянах тухса кайма. Ĕнер вăл ĕçрен таврăннă кăначчĕ, хваттерте телефон шăнкăртатрĕ те, трубкăра ĕлĕкхи тусĕн — Никодимăн — сассине палласа илчĕ. Институтра пĕрле вĕреннĕ юлташĕ тахçантанпах ĕнтĕ хăй патне хăнана чĕнет Николай Дмитриевича. ĕнер те, акă, çавăнтанах пуçланчĕ калаçу: «Ну, мĕнле, вĕçлерĕн-и ĕçӳсене?.. Ара, мĕн туса тăратăр-ха, эппин?.. Эх, çанталăкĕ мĕне тăрать кунта!.. Пулă вылять Çарăмсанта! Ак çапла, Николай, ыран пуйăс çине ларатăр та тепĕр кунне сире станцире манăн шофер кĕтсе илет... Ан турткалан, эс, мĕн, тусусене мантăн-и? Мĕн тери чаплă арăм тупса патăм сана, эс те çав... Итле, машина станцире пулать, номерне астуса юл — 29-96 ТТД. Пулчĕ, кĕтетĕп».

Çак калаçу çинчен Валентинăна каласа кăтартрĕ вăл. Лешĕ шутсăр хĕпĕртесе ӳкнине курсан вара ăнланчĕ Старков: çула пуçтарăнмалла.

«Пулă вылять Çарăмсанта...» Никодимăн çак сăмахĕ пушшех илĕртрĕ ăна. Ара, çав пысăках мар юханшывăн илемне те, унăн пуянлăхне те лайăх пĕлет Старков. Вунă çул каярах, Шупашкарти пединститутра вĕреннĕ чух, пĕрре кăна мар кайса килнĕ вăл Ухуньккана. Пуллине те тытнă, Никодим ашшĕпе пыл та татнă, хĕлле куян та йĕрленĕ. Çапла, пуян çутçанталăк Çарăмсан хĕрринче. Çавăнпах-и, — çыннисем хăйне евĕр илемлĕ. Çакна пĕрремĕш хутĕнчех асăрханăччĕ Старков. Анчах пĕррехинче, Питрав кунĕ, Никодимпа вĕсем Ухуньккаран виçĕ çухрăмри Хăвакассине уяв курма кайса килчĕç те — улшăнчĕ шухăш: мĕн тери хитре хĕрсем пурăнаççĕ иккен ялĕ-ялĕпе! Ниçта та, нихăçан та курманччĕ вăл Хăвакассинчи пек пĕрре пăхсах килĕшекен хĕрупраçа. Тен, унти çамрăксене çавăн пек пысăка хурса хаклама уяв картин çăл шывĕ пек шăнкăртатакан илемлĕ юрри те хистерĕ пулĕ. Хистенĕ, паллах, хистемесĕр. Халĕ те манаймасть-ха Старков ун чухне илтнĕ пĕр юрра. Чечеклĕ сарă пурçăн тутăр çыхнă хĕр (эх, мĕн паман пулĕччĕ-ши уншăн çамрăк студент!) çепĕç сассипе юрă пуçларĕ:

Атьăр, хĕрсем, вăрмана,
Атьăр, хĕрсем, вăрмана,
Кунтăк çакса çырлана...

Унтан пурте, хаваслăн кулкаласа, ерипен çак сăмахсене тăсрĕç:

Атьăр, хĕрсем, леш каса,
Атьăр, хĕрсем, леш каса,
Каччисене илĕртме,
Хĕрĕсене вăрçтарма...

Шăпа темелле-и: ун чух Хăвакассинче пулнă хыççăн Старков пĕтĕм канăçне çухатрĕ. Сисрĕ: туртнăçем туртать ăна тем амакĕ

çак яла. Шухăшра çав пурçăн тутăрлă çамрăк хĕре кура пуçларĕ вăл çине-çинех. Вăхăт иртнĕçем иртсе пычĕ. Институт пĕтерчĕç вĕсем Никодимпа. Наукăна чун-чĕререн парăннă Старкова кафедрăрах хăварчĕç. Никодим вара хăйĕн тăван ялне вĕрентме таврăнчĕ.

Çулталăк иртрĕ. Июнĕн юлашки кунĕсенче каллех тĕл пулчĕç икĕ юлташ. Никодим чĕннипе çеç те мар килчĕ Ухунькkана Старков. Хăвакассине мĕнле те пулин çитсе тухса, леш хĕре тепĕр хут курма ĕмĕтленчĕ вăл. Анчах Хăвакассине каймалла пулмарĕ хальхинче. Вăтам шкул картишне кĕчĕ кăна Старков, ăна хирĕç — ак телей! — хайхи хĕр утса пыра парать. Шултра чечеклĕ шурă кĕпепе вăл. Кĕлетки тăп-тăпланнă, çырă çӳç çивĕчĕ кăкарĕ çинче илемлĕн усăнса тăрать. Акă унăн чакăр куçĕ Старковăн куçĕпе тĕл пулчĕ. Ним тăвайман енне çул çинче тусанланнă куçлăхне сăмси çинчен илсе алтутрипе тасатма пуçланăччĕ Николай Дмитриевич, анчах те асăрханаймарĕ, те алли чĕтрерĕ, куçлăхĕ çат! турĕ çĕрте выртакан шурă чул çине.

— Ой! — мĕнпе те пулин пулăшас тесе, чупса пычĕ хĕрача Старков патнĕ. — Асăрханаймарăр-им? Вансах кайрĕ...

—Темех мар, темех мар, — ним калама аптрарĕ Старков. Хĕрачана ытла илемсĕр курăнасран, куçне сăтăркала-сăтăркала илчĕ вăл.

— Эсир Никодим Сергеевич патне пуль-ха? — ыйтрĕ хĕрача.

— Хăвакассинче курнăччĕ иксĕре, — именчĕклĕн каларĕ хĕрача.

—Ай-юй, унтанпа икĕ çул иртрĕ. Çавна та астăватăр-и?

—Астăватăп, — терĕ хĕрача.

— Эппин, эсир кунта ĕçлетĕр? — хăвăртрах пĕлесшĕн пулчĕ Старков.

—Кунта. Библиотекарь эпĕ.

«Никодим вырнаçтарнă, — кĕвĕçсе илчĕ Старков хăй ăшĕнче. — Пĕлет çав тути-масине. Ахалех килтĕм пулĕ те-ха...»

—Паян уяв пирĕн. Вуннăмĕш классене аттестат параççĕ, — терĕ хĕрача. — Никодим Сергеевич сире те илсе каять пулĕ-ха унта. Ав, вăл хай килет. Эпĕ каям-ха ĕнтĕ.

— Эсир, — хĕрача куçĕнчен пăхрĕ Старков (çапах та куçлăхĕ унăн тĕлсĕр ванса кайрĕ, хĕрачан илемлĕ пит-куçне те витĕр кураймасть ĕнтĕ вăл), — эсир... мĕн ятлă?

—Валентина, — терĕ хĕрача.

Пурте пулчĕ каярах: шкул клубĕнче пĕр çамрăк купăсçă — шкул ачи ĕнтĕ — чăм-шыва ӳксе, «Амур вальсĕ» каларĕ, Старковпа библиотекарь-хĕрача ыттисемпе пĕрле ташă картинче çаврăнчĕç. Шкул ачисем аттестат илнĕ ятпа мар, вĕсемшĕн, Валентинăпа иккĕшĕн телейĕшĕн килнĕн туйăнчĕ Старкова çак чаплă каç.

Унтан вăл Валентинăна Хăвакассине ăсатса ячĕ. Тем пакăлтат-

рĕ çул тăрăх, тĕнчери аслă ученăйсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ кулăшла япаласем çинчен кала-кала кăтартрĕ.

Ача пек шутсăр телейлĕ туйрĕ хăйне Старков çав каç. Çамрăк хĕрача вăтăр çула çывхарса пыракан арçынран пĕртте ютшăнманни, ăна хăйĕн тантăшĕ пекех ăнланма тăрăшни питĕ килĕшрĕ ăна. Тепĕр тесен, вуникĕ çулхи уйрăмлăх ĕçе пăсаймасть. Хĕрĕ те ку сăпайлăскер, хулари хăшпĕрисем пек иртĕхсе кайман, çирĕп те лайăх çемье пулĕ вĕсен малашне.

«Çирĕп те лайăх çемье...» Мĕн çинчен кăна ĕмĕтленмест пулĕ этем! Хăйĕн пуласлăхне вăл чи çутă, чи хитре сăрăсемпе сăрлать, ăна хăй кăмăлĕпе, хăй еккипе çыхăнтарнă карта лартать, малашнехи пурнăçĕ пĕр пăркаланмасăр малтан шухăшласа хунă çулпа чупасса кĕтет. Анчах чăнлăх тепĕр чух чылай кăткăсрах. Миçе тĕрлĕ кĕтмен япала сиксе тухмасть пуль пурнăçра, мĕнле кăна пăтăрмах кĕтсе тăмасть пуль сана кашни кĕтесре. Чăн ĕнтĕ, Старков ĕмĕтленни çитрĕ темелле. Çав июнь каçĕ хыççăн тепĕр уйăхранах Валентина Шупашкар университетне вĕренме кĕчĕ. Çамрăк чухне ăна-кăна чухламан аспирантшăн тинех юрату тапхăрĕ пуçланчĕ. Наукăра та, юратура та ăнса пычĕ ун пурнăçĕ, Акрамов профессор пулăшнипе диссертацине вĕçлерĕ вăл, физиксемшĕн халиччен паллă мар тĕпчев меслечĕ шухăшласа кăларчĕ, паянырансах ученăйсем хăйне чи ăшă сăмахпа саламласса кĕтрĕ. Çав савăнăçлă вăхăтра ĕнтĕ авланма шут тытрĕ Старков. Валентина хирĕç пулмарĕ. Профессор тăрăшнипех пĕр пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç çĕнĕ çемьене: пурăн, шанчăк паракан çамрăк ученăй, çĕнĕ çитĕнӳсем ту, ача-пăчаллă пул. Хваттерĕ, чăнах ĕнтĕ, пĕчĕкрех пулчĕ Старковшăн, вырăнти комитет та, ректорат та хăйне тивĕçлипе хисеплесех çитереймен пек туйăнчĕ ăна. Анчах хăйне хăй йăпатма вăй çитерчĕ вăл: «Диссертаци хӳтĕлесе килем-ха акă, курĕç вара Старков камне».

Пытармалли çук, кăркkалăх пурччех çав ун хăтланăвĕсенче. Акрамов ăна ыттисенчен ытларах юратнăран та, суйласа илнĕ тема пĕлтерĕшĕ пысăк пулнăран та мăнкăмăлланма тивĕç пур пек туйăнатчĕ Старкова. Валентина умĕнче çеç унччен хи пек сăпайлă та йĕркеллĕччĕ Николай Дмитриевич. Юрататчĕ вăл ăна, шухăшламасăр, виçмесĕр пĕр-пĕр сăмах персе ярса çамрăк арăма хăйĕнчен сивĕтесрен хăратчĕ.

Анчах чăнлăх чылай кăткăсрах çав. Диссертаци хӳтĕлеме кăнтăрти пĕр хулана кайса килчĕ те Старков, унăн пурнăçĕ айĕнçийĕн пăтранса кайрĕ. Халĕ те уяр кун тип аçа çапнă пек янăраççĕ хăлхара оппонент сăмахĕсем: «Тема çĕнĕ мар. Одессăра ку меслетпе ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ». Пусăрăнса, çилĕллĕн таврăнчĕ Старков тăван Шупашкара. Хăйĕн нуши çинчен тӳрех Акрамова каласа кăтартрĕ вăл. Тĕлĕнсе, пуçне пăркала-пăркала итлерĕ про-

фессор ун сăмахĕсене, унтан çапла каларĕ: «Алă усма кирлĕ мар. Наука çулĕ — кăткăс çул. Çĕнĕ ĕç пуçлăпăр».

Анчах çĕнĕ ĕçе унченхи пек хăюллăн та шанчăклăн тытăнаймарĕ Старков. Пĕрин хыççăн тепри иккĕленӳллĕ шухăшсем çуралчĕç ун пуçĕнче, профессор çине шанмасăртарах пăха пуçларĕ вăл. Акрамов та çакна сисмесĕр тăма пултараймарĕ. Мăкăртатма, ним çукранах чăкăлташма пуçларĕ старик. Çакă вара Старковăн ахаль те хавшак чĕрине пушшех çĕткелентерчĕ. Пурăна киле ĕçри хутшăнусен сулхăнĕ майĕпен çемье çине куçса пычĕ. Чи çывăх туссен сĕнĕвĕ те текех хавхалантарайманнине туя пуçларĕ Старков. Хăй ăшне путрĕ вăл, таврара, килте мĕн пулса иртнине курма, илтме пăрахрĕ.

* * *

Вакун кустăрмисем чĕриклетсе илнипе ыйхăран вăраннă Валентина хăй ăçтине тӳрех тавçăрса та илеймерĕ. Унталла-кунталла пăхкаларĕ: хăйне хирĕç упăшки выртать, аялти çӳлĕксем çинче вара никам та çук.

— Сакăрвун пĕрмĕш пуйăс виçĕ минут тăрать, — илтĕнчĕ хĕрарăм сасси урамри репродуктортан.

Хăйсем ăçта çитнине пĕлес тесе, Валентина кантăкран кармашса пăхрĕ. «Чердаклы» тесе çырса хунă сарăпа сăрланă çурт çине. Çур çĕр иртнĕ ĕнтĕ. Çапах хĕвĕшет халăх перронта. Çуллахи вăхăт-çке: пĕрин — отпуск, теприн — каникул.

Каллех вырăн çине майлашса выртрĕ Валентина. Часах пуйăс тапранчĕ, вакун кустăрмисем каллех пĕр евĕрлĕ юрă пуçларĕç: шăкăл-шăкăл, шăкăл-шăкăл. Тепĕр çич-сакăр сехет каймалла-ха вĕсен, унтан — тăван тавралăх. Анне çурчĕ. Темле-ха, Никодим Сергеич станцине машина та ярать пулсан, ыранах çитейĕç-иха вĕсем амăш патне? Çывăх юлташне хăна тăвас тейĕ Никодим, е вăрмана, е Çарăмсан хĕррине илсе кайĕ. Ялан мĕн те пулин шухăшласа кăларать вăл. Тĕлĕнмелле пултарулла çын. Çынсемпе пурăнма пĕлет. Шкулта икĕ çул ĕçлерĕ кăна, Ял Совет председателĕ туса хучĕç ăна. Халĕ акă — колхоз председателĕ вăл. «Шăпа», — тенĕччĕ кун пирки пĕррехинче Николай Дмитриевич. Шăпа-и, шăпа мар-и, çакăн çинчен шухăшламан Валентина, анчах пĕлсе тăрать: Никодим Сергеич, чăн та, председателе юрăхлă çын ĕнтĕ. Унăн Старковĕпе танлаштарсан, çĕрпе пĕлĕт пекех вĕсем: Никодим Сергеич — вăр-вар та çаврăнăçуллă, кирек мĕнле ыйтăва та çийĕнчех татса пама хăнăхнă çын. Николай Дмитриевич вара ĕçе васкамасăр, тĕплĕн, пур енчен те виçсе, хакласа тăвать. Анчах килĕштереççĕ вĕсем пĕр-пĕринпе; чылай вăхăт курмасăр тăрсан — тунсăхлаççĕ, тĕл пулсан — ача

пек хĕпĕртеççĕ. Пытармасăр каласан, Валентина хăй Никодим Сергеич йышшисене ытларах кăмăллать. Анчах, акă, чавса çывăх та çыртма çук ĕнтĕ, кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр иртет, ун умĕнче пĕрре яланлăхах лартнă турăш пек, кукшаланса пыракан çак Старков явăнать. Лăпкăн, васкамасăр шăвать пурнăç. Тахçан, хĕр чухне, арлă-арăмлă пурнăç урăхларах, илĕртӳллĕрех курăнатчĕ Валентинăна. «Старков — тăнлă-пуçлă çын, ăсхакăл хакне те, сисĕм-туйăма та лайăх пĕлсе тăрать, — шухăшланăччĕ ялти хĕрача çав çуллахи каç хыççăн. — Мĕнле-ха капла, çак ырă арçынна халиччен те хăйне савакан хĕр тупăнман?» Старков ăна хăй мĕн ĕçлесе, мĕн шутласа-ĕмĕтленсе пурăнни çинчен каласа парсан, тĕлĕнчĕ Валентина: «Мĕнле вăйлă та харсăр çын вăл!» Университета вĕренме кĕрсен, çамрак студентка хăй куçĕпе хăй курса ĕненчĕ: çапла, юратать ăна Старков, Валентинăсăр пуçне унăн никам та çук, тен, пулман та. Çавăнпах Николай Дмитриевич авланас пирки сăмах тапратсан, турткалашса тăмарĕ хĕрача, хăшпĕр юлташĕсем апла-капла каланине пăхмасăрах, ăна качча тухма килĕшрĕ. Туй пекки пулчĕ, хăлхара Никодим шӳчĕсем янăрарĕç (савăнăçлăччĕ вăл, аякран пăхсан, çав кун Старков мар, хăй авланать теме пулатчĕ пуль), эрех-сăра юхрĕ, турилкке ванса çĕмĕрĕлчĕ вĕсен телейĕшĕн.

Унтан килте иккĕшĕ кăна тăрса юлчĕç. Хăратрĕ Валентинăна çак шăплăх, хумханнипе лара-тăра пĕлмерĕ вăл, упăшки хăй юратăвĕ çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парасса, ачашласса кĕтрĕ. Анчах кĕтнĕ пек пулмарĕ. Старков тарăн ыйха путсан, кӳтсе-кӳтсе çитрĕ те Валентина чĕри, вара çунса тăракан питçăмарти тăрăх вĕри куççуль юхса анчĕ. Çĕрĕпе çывăраймарĕ вăл çав каç, хăй ачалăхне, çамрăклăхри илĕм-тилĕм вăхăта аса илчĕ. Çукчĕ-и ун валли çак Старковсăр пуçне хăй килĕштерекен каччă? Э-эх, вунçиччĕре чух тĕл пулнă Харлампие тупаймĕ ĕнтĕ вăл текех. Ухмах, мĕн тери ухмах пулнă-çке Валентина! Халĕ, акă, пурнăç йывăрлансах пынă вăхăтра, çине-çинех тĕлĕкре куракан пулчĕ вăл ăна. Чĕнет пек Харлампи, улма чăпар урхамахпа килет пек ун патне. Анчах ыйхăран вăранса каять те Валентина — каллех çак пăчă пӳрт кăна ун йĕри-тавра. Пулнăха, Харлампи хыççăн та пулнă ăна куç хывакансем. Анчах ун чух ĕнтĕ Валентина Старкова шеллерĕ, çывăха та ямарĕ ыттисене. Эрнесем, уйăхсем шуса иртрĕç. Çакна туя пуçларĕ Валентина пурăна киле: Старковăн тĕп тĕллевĕ - наука, ăна вăл пурнăçра нимĕнпе те улăштараймĕ. Упăшки сĕм-çĕрлене юлса таврăна пуçласан, ырă мар шухăшĕсем киле-киле кĕчĕç Валентина пуçне, кĕвĕçу туйăмĕ çуралчĕ. Кăлăхах иккен — темиçе хут шăнкăравласан та, Старкова кашнинчех лабораторире тупрĕ вăл. Каярах

упăшкин пĕрер, икшер уйăхлăх командировкăсем пуçланчĕç. Пĕчченлĕхре асапланчĕ Валентина, анчах çакăншăн кама айăпламаллине пĕлеймерĕ. Ĕмĕчĕ-шухăшĕпе каллех ирĕклĕхе ăнтăлчĕ вăл. Анчах мĕнле тухмалла-ха ку танатаран? — çакă çеç паллă пулмарĕ. Уйрăлса кайсан, пĕччен амăшĕ те савăнса ӳкес çук, — пурнăçа тытма пĕлекен йĕркеллĕ çын вырăнне хурать вăл хăй кĕрӳшне, — ялйыш та, тус-юлташĕсем те урăхларах пăхĕç Валентина çине. Ят кайсан, пурнăç мар вара, тем те пакăлтатĕç, кулĕç, савăнĕç.

Анчах тепĕр майлă шухăшласан... Ытла япăх-и вара унăн Старковĕ? Пĕвĕ-сийĕ пур, ăсĕ пур. Хăйĕн физикине парăннă пултăр. Мĕнрен япăх? Камăн малалла туртмалла наукăна? Вăл кунĕн-çĕрĕн Эйнштейнсемпе, Ландаусемпе, Резерфордсемпе пĕр тĕнчере пурăнать. Вĕсен те пулнă пулĕ-ха арамĕсем. Хисепленĕтĕр, пулăшнă пуль упăшкисене пĕтĕм тĕнчипех паллă ученăйсем пулса тăма. Мăнкăмăллăх ку, тем тесен те, хăйне çеç юратмасть-и Валентина?

Шухăш, шухăш... Кун килет те çĕр иртет, хăтăлаймасть вĕсенчен Старков арăмĕ. «Хисепленĕ-тĕр, пулăшнă-тĕр...» «Çук, çук, хисеп те пулăшу вăл пачах урăхла япала. Юрату кирлĕ. Вĕресе, хĕмленсе тăракан юрату. Арăмĕ упăшкине хисеплет пулсан, упăшки арăмне мĕншĕн хисеплемелле мар? Мĕншĕн Старковăн Валентина çамрăклăхне шута илмелле мар?»

...Ыйхă вĕçрĕ. «Шăкăл-шăкăл, шăкăл-шăкăл», — кăлтăртатаççĕ вакун урасем. Çуллахи çĕр те вăрăм иккен.

* * *

Чылай вылярĕ çак çутă тĕнче Харлампи шăпипе. Вуниккĕре чухне ун урине тиха тапса сиктерчĕ, икĕ эрне пульницара выртрĕ вăл. Тепĕр тăвата çултан тăххăрмĕш класа çӳреме пуçланăччĕ кăна — ашшĕсĕр тăрса юлчĕ Харлампи. Тĕреклĕ старикехчĕ ашшĕ, çĕнĕ çурт çавăра пуçланăччĕ — пулаймарĕ, вăрманта ĕçлесе ăшша пиçнĕ те вăл Хурăн çăлĕнчи шывпа ăшчикне пусарнă. Пĕр эрне те пурăнаймарĕ вара çавăн хыççăн. Çапла Харлампи амăшĕпе кăна тăрса юлчĕ. Вăр-вар, çивĕч ăслă йĕкĕт сасартăках улшăнма пуçланинчен тĕлĕнчĕç ял çыннисем. Пусăрăнчĕ вăл, кĕтмен çĕртенех аслăланчĕ темелле. Хăвакассине кавча тухнă Верук аппăшĕ ăс панипе шкула çӳреме пăрахрĕ Харлампи, ашшĕ ĕçне кӳлĕнчĕ, колхоз лашисене пăхма пуçларĕ. Вунçиччĕре вара... Çынпа калаçнă чух çав вăхăтра мĕн пулса иртнине аса илме те юратмасть вăл... Çураçнă хĕре вĕçертрĕ Харлампи хăй аллинчен. Ят сарăлчĕ яла. Таçта, мур шăтăкне кĕрсе каясшăнччĕ вăл çын сăмахне чăтаймасăр. Мур шăтăкне тупаймарĕ. Пурăна киле вара ял çинче ырă ят илмелли

урăх майсем шырама тытăнчĕ вăл. Тĕрĕссипе, çав майсене шырама икĕ çын пулăшрĕ ăна. Пĕри Хусанти пĕр заводра инженерта ĕçлекен Курьян пиччĕшĕ пулчĕ, тепри — Никодим Сергеевич. Çак икĕ çын вĕрентнипе ĕнтĕ Харлампи пурнăç çине çĕнĕллерех пăхма, çынсем хушшинче хăйне урăхларах тытма тапратрĕ. Майĕпен-майĕпен çакна ăнланса пычĕ Харлампи: чăнах çав, çакă çутă тĕнчере этемрен вăйли çук, юхăма май пыни унăн халсăрлăхне çеç кăтартать, чăн-чăн этемĕн хăй шăпине çирĕппĕн алла илмелле.

Сахал мар тĕлĕннĕччĕ çамрăк конюх пĕрре çапла Курьян пиччĕшĕ çуллахи отпуска яла таврăнсан. Ĕççине тухнăччĕ ял халăхĕ. Уяр çанталăк тăрать, комбайнсем хĕрсех тырă выраççĕ. Харлампин те ĕç нумайланчĕ; колхозра машинăсем пур та, лашасем те ахаль тăмаççĕ çав-ха. Çавăнпа унăн яра кунах лаша картинче пулмала: пĕрне ăсатса яр, тепĕрне кĕтсе ил, лайăх тăрантар, вăхăтра шăварма ан ман лашасене. Курьян пиччĕшне хăна пек пăхма та вăхăт тупăнмарĕ Харлампин. Хула çынни хăй те нумай пурăнса ĕçлĕ çынсене чăрмантарас темерĕ-ши, килте Харлампи алли çитеймен вак-тĕвек ĕçсене тукаларĕ те çула тухас пирки сăмах тапратрĕ. Шăп çав вăхăтра сиксе тухрĕ инкек. Пăрттас Якурĕ уйра йĕркеллех кĕрлеттеретчĕ хăйĕн çĕнĕ комбайнне. Тем пулчĕ, мотор чăхăмларĕ. Пĕр кун, ик кун иртрĕ çапла, анчах комбайнерсем хăйсем те, колхоз механикĕ Петр Фомич та инкек сăлтавне тупаймарĕç. «Сельхозтехника» специалисчĕ те кăлăхах тăрмашрĕ. Хаклă вăхăт иртсех пычĕ. Çакăн çинчен Курьян пиччĕшне станции кайма çула тухсан каласа пачĕ Харлампи. Чăнах та, вăрман хĕрринче хайхи комбайн ларнине курчĕç вĕсем. Сăмах-юмах вакламарĕ Курьян пиччĕшĕ. «Атя-ха, эппин, çитсе курар», — терĕ те Харлампие, тем вăхăтрах вĕсен лавĕ çак капмар машина патне çитсе чарăнчĕ. Пăрттас Якурĕпе тем сăмахласа илчĕ Курьян пиччĕшĕ, мотор патне çӳле улăхса кайрĕ, ăна-кăна пускаларĕ, унтан костюмĕпе кĕпине хыврĕ те Харлампие ывăтса пачĕ. Шанмасăр, ĕненмесĕр пăхкаларĕ Харлампи пиччĕшĕ çине. Лешĕ мотор патне кукленчĕ, вара нумайччен пĕр самах чĕнмесĕр ун пайĕсене пăркаларĕ. «Ĕнтĕ пуйăса ĕлкĕресси пулмасть», — шухăшларĕ Харлампи, вара хăй те пиччĕшĕ патне хăпарса, унăн ĕçне сăнама пикенчĕ.

Пĕр-ик сехет хушшинче йĕркеллех тăракан мотортан нимĕн те юлмарĕ. Пăрттас пулăшнипе пайăн-пайăн сӳтсе тăкрĕ ăна инженер. Кăнтăрла иртсен моторăн хăшпĕр пайĕсене лав çине тиерĕç те яла, мастерскоя, илсе кайрĕç. Çĕрĕпе киле таврăнмарĕ Курьян пиччĕшĕ. Ирхине мотор пайĕсене каллех комбайн патне турттарса кайрĕ Харлампи. Тепĕр ик-виç сехетрен вара Курьян пиччĕшĕ ун çине чеен куç хĕссе илчĕ те çапла каларĕ: «Хăлхуна

хупла, Харлампи!» Чăнах та, Пăрттас Якурĕ ручкăна пĕр-иккĕ çавăрчĕ кăна, — мотор сасси, тикĕссĕн кĕрлесе, таврари шăплăха хупласа хучĕ.

Темле юмахри асамçа аса илтерчĕ Харлампие Курьян пиччĕшĕ. Савăнса, мăнкăмăлланса пăхрĕ вăл ун çине. Каярах комбайн патне председатель çитрĕ. Шутсăр хĕпĕртенĕскер, Курьян пиччĕшне ыталаса илчĕ вăл, тав тăва пуçларĕ, тархасласах ăна колхоз правленине чĕнчĕ:

— Атьăр, атьăр халех, эп... мĕн, нумаях мар та, ну, пĕр аллă утмăл тенкĕ, çул çине...

— Çук, çук, Илья Иванч, укçашăн мар вĕт, ак вăл, — сапсарă ыраш пусси енне пуçне сĕлтсе кăтартрĕ Курьян пиччĕшĕ, — ак вăл маншăн чи лайăх парне. Вăхăтра пухмалла ăна.

Кайран, пиччĕшĕ пуйăс çине ларнă чух, хăйне канăç паман ыйтăва татса пама шутларĕ Харлампи.

—Механиксем тăваймарĕç, специалист килсе кайрĕ, эс мĕн... асамçă мар пуль те? — ыйтрĕ вăл, ача пек хăюланса.

Курьян пиччĕшĕ Харлампи çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те, пирусне сӳнтерсе, лăпкăн çапла каларĕ:

—Вĕренес пулать, Харлампи, вĕренес пулать.

...Акă вĕт мĕнле, çавăн чух инженер пиччĕшĕ яла ырă туса хăварчĕ те, Харлампи çине те çынсем урăхларах пăхма тапратрĕç. Курьян пиччĕшĕ мар, хăй сирсе ячĕ тейĕн çавăн чух сасартăк сиксе тухнă инкеке. «Вĕренес пулать», — терĕ пиччĕшĕ. Ырă ят та пĕлӳсĕр килмест авă. «Ара, мĕншĕн вĕренес мар, — терĕ Харлампи, — каçхи шкул ялтах пур, унччен япăххисен шутĕнчех марччĕ-ха эпĕ те». Çапла Харлампи каллех тăххăрмĕш класа çӳре пуçларĕ. Вунтăххăра çитнĕ тĕле вара вăтам шкул пĕтерсе аттестат илчĕ. Каярах салтака кайрĕ вăл, унта та пĕлӳ патне туртăнчĕ йĕкĕт, шофера вĕренсе тухрĕ, руль умне ларчĕ. Тепĕр виçĕ çултан тăван яла таврăнчĕ те председатель машинипе çӳреме тытăнчĕ. Никодим Сергеевича шутсăр килĕштерсе пăрахрĕ. Харлампи вĕреннĕ, салтакра пулнă чухне Ухуньккара учительте ĕçленĕ çак çын та, Курьян пиччĕшĕ евĕр, темле асамçă пек туйăна пуçланине сисрĕ вăл пурăна киле. Акă ĕнтĕ Никодим Сергеевичпа юнашар тăватă çул ĕçлет Харлампи. Çапах ăна лайăх пĕлсе çитрĕ теме иртерехха. Таçта-таçта çитсе курать вăл унпа, анчах çул çинче председатель мĕн шутланине, ун пуçне мĕнле ăс пырса кĕнине чухлаймасть, кая юлса ăнкарать. Пĕлтĕр, ав, таçти пилĕкçĕр çухрăмри пĕр хулана кайса килчĕç вĕсем, тепĕр уйăхран колхоза мунча котельнăйĕ килсе çитрĕ. Таврара çук халь Ухуньккари пек чаплă мунча! Мĕн кăна çук-ши унта: хырăнмалли, çӳç кастармалли пӳлĕмĕ те, прачечнăйĕ те, пăсланса тăракан вĕри ырлăхĕ те, çăвăнса тасалмалли те, чӳхенмелли те — пурте пĕр çĕрте.

Кăçал акă шурă çăнăх авăртакан арман туса лартрĕç. Ялта хулари театртан пĕртте кая мар Культура керменĕ пур — тата мĕн çитмест-ши ялта? «Шывпа газ кĕртмелле кашни çурта», — тет Никодим Сергеевич. Тытăнчĕ-тĕк — кĕртетех.

Таҳçан Курьян пиччĕшĕнчен ыйтнă пек, председательтен: «Асамçă-и эсĕ?» — тесе ыйтмасть ĕнтĕ Харлампи. Никодим Сергеевич пĕр-пĕр пысăк ĕç тапратсан, Харлампи ун çине шалт тĕлĕнсе пăхать те, лешĕ:

—Вĕренес пулать, Харлампи, — тесе хуравлать.

Çапла ĕнтĕ, хальхинче те хăй хытă хисеплекен çын сăмахĕ пулăшрĕ ăна. Техникума вĕренме кĕчĕ Харлампи. Кăçал хĕлле унăн юлашки экзаменсем тытмалла. Механик пулса тăрать вăл кĕçех. Мĕнле ĕç парĕç ăна малашне — çакăн çинчен шухăшламанччĕ-ха Харлампи, мĕншĕн тесен хăйĕн хальхи ĕçне чи кирли тесе шутлама хăнăхнăччĕ вăл. Анчах Никодим Сергеевичăн пĕр калаçăвĕнчен çакна сисрĕ шофер: ялан кун пек пурăнса пулмасть. «Асли хушнипе çеç ĕçлекен çын пурăна киле хăй пуçĕпе шухăшлама пăрахать», — терĕ председатель. Сăмах хăй çинчен пымарĕ пулин те, Никодим Сергеевич мĕн калас тенине аванах тăна илчĕ йĕкĕт. Чылайччен пуçне çĕмĕрсе шухăшласа çӳрерĕ çакăн хыççăн Харлампи. «Тĕрĕс калать, — терĕ вăл хăй ăшĕнче, — хăнăхнă ĕçе пăрахма шикленетĕп, çыннăн ĕмĕтленмелле». Çутă тĕнче каллех хитре те илĕртӳллĕ туйăна пуçларĕ ăна.

* * *

Тепловоз чашлата-чашлата вокзал çурчĕ патне çывхарчĕ те палăртнă тĕлте тăпах чарăнчĕ. Хĕвĕшӳ пуçланчĕ: пĕри анать, тепри ларать. Харлампи шухăшĕ тӳрех Никодим Сергеевич хăнисем çине куçрĕ. «Ак çаксем пулĕ-ха, мĕнле йĕркеллĕ» — пулăшма чупрĕ вăл ватăрах сăнлă арçынпа хĕрарăма. Анчах, пулăшма ĕлкĕреймерĕ, кĕтсе илекенсем хушшинчен икĕ хĕрача сиксе тухса пӳлчĕç Харлампи çулне, арçынпа хĕрарăма ыталама, чуптума пуçларĕç. Йăнăшрĕ Харлампи. Ав, пуйăс вĕçĕнчен пĕр типшĕмрех кĕлеткеллĕ кукша пуçлă арçынпа кăвак шăлаварлă, сăмси çине хура куçлăх утлантарса янă хĕр утаççĕ. «Ай-яй, епле вĕçкĕн ку хĕр», — терĕ хăй ăшĕнче Харлампи, вара тепĕр еннелле утрĕ.

Пуйăс вăрăммăн кăшкăртса вырăнтан тапранчĕ. Малалла хытăран хытă кайма пуçларĕ. «Вăт япала, — тĕлĕнчĕ Харлампи, — килеймерĕç-и вара кусем? Иртсе кайрĕç-ши пĕлмесĕр? Мĕн калас-ха ĕнтĕ председателе?»

Çак шухăшсемпе вăл машина патне таврăнчĕ. Ак амак, арçынпа кăвак шăлаварлă хĕр тăра параççĕ машина патĕнче. Харлампи тĕлĕнерех пăхнăран арçынни тӳрех ун патне утса пычĕ те алă пачĕ.

– Старков Николай Дмитриевич, Никодим Сергеич хушнипе пуль?

–Ара, çавăнпа ĕнтĕ. Харлампи ятлă-ха эп.

–Питĕ лайăх, – терĕ Старков. – Вырнаçăпăр, эппин, Валентина.

Хăнасен пĕртен-пĕр чăматанĕпе пысăк хăмăр портфельне малти ларкăч çине вырнаçтарса хучĕ те Харлампи пассажирсене ларма пулăшрĕ. Хĕрĕ, Валентина текенни, хура куçлăхне машина çине ларсан та хывмарĕ-ха.

Çăмăл автомашина, аслă çул çине тухса, Ухунькка еннелле чуптарчĕ.

* * *

Валентина ăна тӳрех палласа илчĕ, акă вăл, унăн çамрăклăхĕнчи пĕр куна та пулин астăвакан этем. Ав, мĕнле пулса кайнă Харлампи – тĕрекленнĕ, сăн-питрен илемленнĕ. Çав-çавах йăвашшăн пăхать унăн кăвак куçĕ. Хăй паллаймарĕ, ах, паллаймарĕ-ха хăй, мĕн тунă пулĕччĕ-ши вăл ун чухне?

Пуйăспа килнĕ чухнехи йывăр шухăшсене манса кайрĕ Валентина. Кĕтмен тĕлпулу ырă кăмăл çуратрĕ.

Ем-ешĕл çăкалăх иртсе юлнă хыççăн çулăн икĕ айккипе çурта пек тӳрĕ хырсем чупса кайрĕç, тĕллĕн-тĕллĕн кăтрисене тураса ларакан шурă хурăнсем курăнчĕç. Вăрмантан тухсан, машина пучах кăлара пуçланă ыраш пуссипе ыткăнчĕ. Ăшă çу кунĕ тăрать тăван тавралăхра, мăнаçлăн хумханать куçпа виçейми анлă уй-хир. Вĕçсĕр-хĕрсĕр ирĕклĕх чуна уçса ярать, кăкăра çĕкленӳллĕ кăмăлтуйăм вĕрсе кĕртет. Мĕн тери саватчĕ çак вăхăта Валентина! Июль пуçламăшĕ. Паян-ыран утă çулма тухать ялйыш. Шӳт, хаваслăх, çава сасси кăссс! та кăссс! янраса тăрать вара. Кăштах ĕшенетĕн те хĕрӳ-кăварпа йăсăрланса выртакан вучах патне сиплĕ чей ĕçме васкатăн. Такам юрă пуçлама ĕлкĕрет, ун çумне ыттисен сассисем хутшăнаççĕ, эх, каять вара юрă чăтлăхсемпе уçланкăсем тăрăх юхса!

Çак енчен илсен, мĕн тери телейлĕ туять пуль хăйне Харлампи! Паллаймарĕ вăл. Тен, çапла лайăхрах та. Ан тив, Старков умĕнче ырă мар ан туйтăр, мĕскĕн пек ан тыттăр хăйне. Пĕр шутласан, уйрăмлăхĕ мĕнре? Кунĕн-çĕрĕн пурнăçа курмасăр, çынпа хутшăнмасăр тĕрлĕ приборсемпе аппаланса ларакан Старковăн хăйне çак Харлампирен çӳлерех тытма тивĕç пур-и-ха? Харлампи çамрăк, питрен-куçран илемлĕ, кăмăлĕпе савăнăçлă. Аплатăк, телейсĕр çын мар.

...Шоферта тăватă çул ĕçлесе, чылай çынсене курма ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ Харлампи. Пĕри яка çипуçпа килет колхоза, хăйне патша

пек тыткалать, асту, калаçĕ шоферпа пĕр-ик самах. Тепри çулланма юратать, хăйне интеллигент пек тыткаласшăн та — пулсах пĕтеймест, канашсем, сĕнӳсем пама хăтланать вара председателе, анчах Никодим Сергеевич ку е тепĕр ыйтăва хăй пек — ĕçе пĕлсе, тĕплĕн ăнлантарать те, хăна халсăрланса пынине уççăнах курать Харлампи. Виççĕмĕшĕ пирки вара, ун пеккисем те çук мар-ха çав, калама та аптарамалла. Яла ĕçпе мар, канма килеççĕ тейĕн. Хурать те пĕр-ик черкке ăçта та пулин кĕрсе, эх, хаваслă хăй кун каçипех. Тепĕр чух район центрне çын мар, «çурма çын» турттарса çитерет вара Харлампи.

Паян, акă, ун машини çинче — икĕ палламан çын. Никодим Сергеичăн çывăх тусĕсем-ха ĕнтĕ. Анчах камсем вĕсем? Арçынни ку, паллах, вырăнта ĕçлет-ха ĕнтĕ. Хĕрĕ (тен, хĕрарамĕ) — модăна хытă хисеплекенни пулмалла. Упăшкипе арăмĕ тес вĕсене, уйрăмлăхĕ пысăкрах пек, ашшĕпе хĕрĕ тес, каллех ни унталла ни кунталла. Арçынни пĕрмаях кантăкран пăхса пырать-ха, çутçанталăк илемĕпе киленет ĕнтĕ.

...Çук, ешĕл вăрманăн ытарайми илемне, çутă сăн илнĕ ыраш пуссинче ăрша вылянине асăрхамарĕ Старков. Шухăшпа каллех лаборатории куçрĕ вăл, хăй умĕнче Акрамов профессора курса пычĕ. «Мĕн чакаланать-ши старик, мĕн хиврелене-ши? — терĕ вăл. — Ретлĕ ученăях тес ăна — сăмах çаврăнмасть, пурнăçран кая юлнă тес — тапаланать. Çулăма голографи принципĕсемпе тĕпчесси... Пĕлместĕп, старик, çунса каймăпăр-и çав çулăмпах унченхи опытпа усă курса? Айванскер, мĕн хушнă — çавна тунă. Ак çак шофер пек. Пуççăр, шухăшламасăр. Халь акă, каллех çавăн пек ĕçлессе кĕтет вăл манран. Çук, старик...»

...Машина сасартăк чарăнчĕ те, Старков малалла ӳпĕнчĕ, çамкипе Харлампи тăнлавне пырса перĕнчĕ. Валентинăн хура куçлăхĕ тухса ӳкрĕ, сĕлĕ пĕрчи пек ванса кайрĕ. Харлампи руль çине тĕршĕнчĕ. Машинăри икĕ çын хыпăнса ӳксе кăштăртатма пуçласан тин ăнланчĕ шофер: çук, çывăрса кайман, тĕлĕк мар ку. Кабинăра хăй умне çирĕплетнĕ тĕкĕре пула пулчĕ пĕтĕмпех. Епле шăтарасла пăхрĕ ун çине хыçалта ларакан хĕр! Кама лартса килет Харлампи! Ав мĕншĕн хывмарĕ вăл паçăр хăйĕн хура куçлăхне.

—Хаюллă. Кун пекех пырсан, çитес çĕре часах çитетпĕр, — мăкăртатрĕ Старков.

— Каçарăр... «Чим, кунта чечеклĕ уçланкă пур», — аса илчĕ Харлампи. Вара, ним пулман пек, малалла калаçрĕ: — Эпĕ кăштах иртсе кайнă. Тăхтамалли пурччĕ. — Алăка уçрĕ те каялла чупса кайрĕ вăл.

Тунката çине ларса сывлăш çавăрчĕ Харлампи, çамки çинчи тарне шăлса илчĕ. Анчах вăрах кĕттерме юрамасть, уçланкăри

шурă, хĕрлĕ, кăвак чечексене васкаса татрĕ те вăл каллех машина патне вяскарĕ.

Халĕ ĕнтĕ Харлампи Валентинăна çывăхрах курма пултарчĕ. Чĕри сиксе тухасла тапать, алли чĕтрет.

— Тытăр, — васкаса хăтăласшăн пулчĕ вăл аллинчи чечексенчен.

— Тавтапуç, — йăвашшăн пуçне пĕкрĕ Валентина. Ним тума аптăраса, упăшки çине айăплăн пăхса илчĕ вăл. Анчах Старков нимех те сисмерĕ пулмалла.

— Тархасшăн, хуллентерех, — терĕ вăл шофера. Çак сăмахсем Харлампие те, Валентинăна та кăштах лăплантарчĕç. Иккĕшĕ те асаилӳ тĕнчине кĕрсе кайрĕç вĕсем.

...Вунă класс пĕтернĕччĕ Валентина. Амăшĕ пĕччен пурăннă пирки вĕренме кайма васкамарĕ хĕрача. Колхозри тĕрлĕ ĕçсене çӳрерĕ вăл: утă çулчĕ ялйышпа пĕрле, элеватора тыра турттарчĕ, улма кăларчĕ. Йышлăччĕ ялта çамрăксем. Кĕрлесе тăратчĕ ял варриичи клуб вĕсен юрри-ташшипе. Çав вăхăтра курчĕ вăл Харлампие. Кĕркуннехи пĕр тӳлек каç пулчĕ ку. Кӳршĕри Верук инкĕшĕ пычĕ те каçалапа хăйĕн шăллĕне, Ухуньккаран килнĕ хăна каччине, клуба илсе кайма ыйтрĕ. Валя хаваспах килĕшрĕ. Верук инкĕшĕн каварлă шухăш пуррине ниепле те сиссе юлаймарĕ ăна-кăна чухламан хĕрача. Клуба вĕсем, Харлампипе иккĕшĕ, ним пулман пекех тухса утрĕç.

... «Пурте аппаран пуçланчĕ», — çав каç çинченех шухăшлать Харлампи те. — «Авланма вăхăт, аннене йывăр килет, пыр Хăвакассине, хĕр пăхса хунă сан валли», — терĕ вăл. Ăс вылятчĕ пуçĕнче, турткаланса тăмарĕ Харлампи, чи лайăх ăйăра, улма чăпар Чарлана, кӳлчĕ те вĕçтере пачĕ Хăвакассиие. Каç пуласпа Верук аппăшĕ кӳрше кайса килчĕ. Кăшт тăрсан вара пӳрте унăн... пулас арăмĕ килс кĕчĕ. Мĕн тери хитреччĕ Валентина! Пĕрре пăхрĕ те ун çине, алли-ури çыхланма тытăнчĕ Харлампин, чĕлхи çĕтрĕ. Тем пакăлтатрĕ, тем перкелешрĕ Верук аппăшĕ. Ăсатса янă чух Валентинăна çапла каларĕ вăл:

— Çухатса ан хăвар вара хăна каччине, пĕрлех илсе кил.

— Ан пăшăрхан, Верук инке, аташтарса ямăп, çавăтсах килĕп, — терĕ Валя кула-кула.

...Хăй те килĕштерчĕ вăл Харлампие. Ун йăвашлăхĕнче сăпайлăхпа чун-чĕре ыррине курчĕ Валентина. Клубра Харлампирен пĕртте уйрăлмарĕ вăл, ăна кам та пулин кӳрентересрен хăрарĕ. Ташлама пĕлеймест иккен хăна каччи, ирĕксĕр тархасласа намăс кăтартас темерĕ ăна Валентина. Клубран тухрĕç. Хăйсен урамĕпе утнă чух вара йăмра айĕнче чарăнчĕç. Валентина Харлампи аллинчен тытрĕ те, вальс çемми юрласа, качча çаврăнма вĕрентесшĕн пулчĕ. Унталла-кунталла пускаларĕ Харлампи, ĕç тухмарĕ.

Вăтанчĕ те, тарăхрĕ те каччă. Çапах, арçын темерĕн, çатăрласа илчĕ те вăйлă аллисемпе хĕрача пилĕкĕнчен, ун питçăмартине сĕртĕнсе, чуптăвасшăн пулчĕ. Пĕр вăхăт аптăраса тăчĕ Валентина, унтан Харлампи ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те:

— Хăюллă эс кирлĕ мар чухне, — тесе татса каларĕ, — анчах ун пеккисене юратмастăп эпĕ. Туслашас тесен, йĕркеллĕ пул.

... «Иĕркеллĕ пул...» Ара, йĕркеллĕ пулмаллаччĕ çав, — малалла аса илчĕ Харлампи. Никам та мар, аппах айăплă. Хăй пуçларĕ те хăех пĕтерчĕ. Киле çитрĕç вĕсем Валентинăпа. Пӳрт тулли халăх. Сĕтел хушшине, тур кĕтессине, ларма сĕнчĕç вĕсене. Туртканланма пăхрĕ хĕрача, çапах ларчĕ. Ку та темех марччĕ-ха. Аппăшĕ васкарĕ.

—Ну, Валя, — терĕ вăл, черкке çĕклесе, — эпир те хĕр-упраç пулнă, вăхăт çитсен, хĕр ĕмĕрĕпе сывпуллашнă...

«Ак хайхи! — вĕçсе илчĕ хĕрача пуçĕнче. — Кавча параççĕ вĕт кусем!» Мĕн пулса иртнине сасартăк тавçăрса илчĕ те вăл уçă кантăкран вĕлт сикрĕ урамалла.

— Аташса ан çӳре, — кăшкăрчĕ Верук инкĕшĕ. — Аннӳпе килĕшнĕ. Çураçнă сана!

Ĕпле çураçнă! Çак сăмах та хăратса пăрахрĕ ăна. Вара ним тăхтамасăр хĕр-тантăшĕ патне, Елюк патне, чупрĕ Валентина. Анчах кунта та хӳтлĕх тупаймарĕ вăл. Харлампи тăванĕсем хăйсен шухăшне пăрахăçлама шутламаççĕ иккен.

Илтĕнет хайхискер арçын сасси: «Аташса кайнă пушмак пăру çук-и сирĕн?» «Çук», — тет Елюк амăшĕ иккĕленерех. «Кунтах пулмалла», — тет çине тăрса арçын сасси. Харлампи йыснăшĕн Микулайăн сасси ку.

Тарăхса, тарăхса кайрĕ Валентина. Харлампие мар-ха, ун аппăшĕпе йыснăшне шутсăр çилленчĕ вăл. Вара хăех алăка уçрĕ. Кăнн! пăхрĕ Микулай çине. Лешĕ кĕтменччĕ çакна, тӳрех йăвашланчĕ, анчах ăнăçлах пуласса ĕненме пăрахмарĕ-ха.

— Мĕн эсĕ... тарса çӳретĕн? — терĕ вăл. — Килте аннӳ кĕтет. Пиртен хăратăн-и? Эпир мĕн, кăмăл пулмасан, ирĕксĕрлейместпĕр ĕнтĕ. Атя, лар аннӳ патне çитиччен.

Валентина хăюлланчĕ. Ĕненчĕ Микулая, — ирĕксĕрлес çук. Анчах тăрантас çине улăхса ларчĕ кăна, Микулай Харлампие çапла ăс пачĕ:

—Вĕçтер, Харлампи! Хĕр нихçан та кавча пырап тесе каламасть!

Тепĕр самантран уй хапхине çеç курса юлчĕ хĕрача.

...Хăрарĕ Харлампи. Улма чăпар Чарлан çил пек вĕçтерсе, кустăрмасем çĕр çĕмĕрттерсе пынă вăхăтра чĕри' сиксе тухасла тапнине илтсе пычĕ вăл. Çак каç аппăшĕпе йыснăшĕ манерсĕр ытлашши хăтланнăшăн çĕткеленчĕ вăл хăй ăшĕнче. Ун шăпине ыттисем алла илчĕç, илчĕç те — ячĕç кустарса, ăçта çитме пулта-

расса пĕлес тенĕ пек. Анчах, акă, çурма çула та çитеймерĕç вĕсем. «Антар, Харлампи», — терĕ Валентина. Куçран пăхса ыйтрĕ. Хирĕçлеймерĕ Харлампи. Каçпа амалана пуçланă туслăх çакнашкал тăруках пĕтсе ларнишĕн кулянчĕ вăл. Тӳсме çук пысăк мăшкăл тӳсни асаплантарчĕ ăна. Кайран ят сарăлчĕ яла. Шăлне çыртса çапла каларĕ Харлампи: «Тек нихçан та хĕрсемпе çыхланасси ан пултăр!» Çирĕп тытса пырать вăл çав сăмаха. Çирĕм çичче пусрĕ кăçал çуркунне, çапах хĕрпе юнашар ларса курман-ха. Фермăра паян тесен паян пилĕк доярккăна çураç — чунне пама хатĕр Харлампишĕн вĕсем. Анчах Харлампин кăмăл туртмасть, Валентина пек чипер хĕр тĕл пулаймарĕ-ха вăл хăй пурнăçĕнче.

...Уринчи туфлийĕ ăçта ӳксе юлнине асăрхаймарĕ Валентина. Çарран, кĕпе вĕççĕн чупрĕ кĕрхи сивĕ çулпа. Хурланса, макăрса чупрĕ. Харлампи аппăшĕпе йыснăшĕ çынна çын вырăнне хуманни ыраттарчĕ ун чĕрине. Мĕн васкатрĕ вĕсене? Харлампийĕ уксах-чăлах мар, илĕртӳллĕ каччă, тен, вăхăт шунăçемĕн хăйсемех тупатчĕç пулĕ пĕр сăмах. Çук вĕт. Елĕкхи пек тумалла. Иккĕшĕ те мăшкăла юлчĕç мар-и? Мĕскĕн Харлампи... Чунсăр этем мар. Анчах мĕнле тĕл пулăн унпа тепре?

Çакăн хыççăн тепĕр икĕ çултан тĕл пулнăччĕ Валентина Харлампие. Район центрĕнче пулчĕ-ха ку. Çутĕç пайĕнче пĕр-пĕр ĕç тупса параймĕç-и тесе кайнăччĕ хĕрача. «Тархасшăн, — терĕç ăна, — Ухуньккари шкулта библиотекарь кирлĕ». Çавăн чух çутĕç пайĕнчен тухса урампа савăнса утнă вăхăтра чупса пычĕ ун патне Харлампи. Чупса пычĕ те тăп чарăнчĕ, ним калама аптăрарĕ. Çӳçне кастарнă хăй, пĕвĕ ӳснĕ кăштах. Тавçăрчĕ Валентина: салтака кайма пуçтарăнать Харлампи.

— Эс мана каçар, — пуçне пĕксе сăмах хушрĕ Харлампи. — Айван пулнă. Эпĕ, акă, часах тухса каятăп пулмалла. Кала, каçаратăн-и?

Тĕлĕнмелле ырă туйăнса кайрĕ Валентина чĕрине: «Каçаратăн-и?..» Эппин, шухăшлама пăрахман-ха каччă ун çинчен. Эппин, манса кайман!

Харлампи куçĕнчен пăхса тăчĕ-тăчĕ те Валентина пĕчĕк сумкинчен тĕрленĕ ал тутри кăларчĕ, пĕр сăмах каламасăрах ăна кавча тыттарчĕ.

Çак вăхăтра юлташĕсем Харлампие машина çине чĕнчĕç. Тепĕр хут пăхса илчĕ вăл Валентина çине.

—Тавтапуç. Кĕт мана икĕ çул! — терĕ те Харлампи, аллине сула-сула, майĕпен тапранакан машина хыççăн чупрĕ.

Харлампи çартан таврăнасса кĕтсе илеймерĕ çав Валентина. Ун вырăнне яла ак çак Старков пырса лекрĕ...

Кĕтмен тĕлпулу. Ун аллинче — чĕрĕ чечексем... «Мĕн ку, чĕре хистени-ши?» — савăнăçлă-савăнăçлă пулса кайрĕ ăна тăруках,

машина тĕкĕрĕ çине пăхса, каллех Харлампи куçне шыраса тупрĕ вăл, йăл кулчĕ. Темшĕн-çке, юрлас килчĕ унăн.

– Астăватăр-и, арçынсем? – юриех Старков çине пăхса илчĕ Валентина. – Манман-и çакна:

Атьăр, хĕрсем, леш касса,
Атьăр, хĕрсем, леш касса,
Каччисене илĕртме,
Хĕрĕсене вăрçтарма, –

юри кăшт тăсарах юрласа пачĕ вăл.

Арçынсем иккĕшĕ те çак юрă пĕр уншăн çеç тесе шутларĕç пулмалла, хаваслăхпа, телейпе çиçрĕç вĕсен сăн-пичĕсем.

* * *

Çапла, Валентина пуйăс çинче шухăшлани тĕрĕсех пулчĕ: Никодим паян вĕсене ниçта та ямасть. Çул хыççăн çăвăнса тасалчĕç хăнасем, шăкăл-шăкăл калаçса, пĕрне-пĕри култара-култара, пĕрер черкке коньяк сыпрĕç, чей ĕçрĕç. Харлампи те вĕсемпе пĕрлех пулчĕ.

Калаçу шăкăл-шăкăл юхса пынă май пĕрре Никодим çинчен, тепре Павлина çинчен шухăшларĕ Старков. Кăмăллать хăйĕн ĕçне Никодим, ун пирки сăмах-юмах нумай вакламарĕ пулин те, туйрĕ Старков: ăнса пырать юлташĕн пурнăçĕ. «Тумла чула шăтарать», – темшĕн-çке çак сăмахсем аса килчĕç ăна. Каллех Акрамов профессор тухса тăчĕ ун умне. «Алă усма кирлĕ мар. Наука çулĕ – кăткăс çул...» Кам пĕлет, тĕрĕсех каларĕ-и, тен...

Анчах Никодимран та ытларах Павлина тĕлĕнтерчĕ Старкова. Тутлă апат-çимĕç тăп-тулли сĕтел çинче, арăмĕ упăшкине куçран пăхсах ăнланать, кирек мĕнле ыйтупа та калаçма пĕлет. Акă кам пулăшать иккен Никодима ăнăçусем тума! Старкова вара? Юрĕ, Валентина çамрăк тейĕпĕр, çакнашкал сĕтел хатĕрлеме вăхăт çук унăн – вĕренет, апла пулсан, ăшă сăмахсемпе пулăшасчĕ хăйĕн упăшкине. Э, çук-çук, чылай пикенсе пăхрĕ вăл Старкова ăнланма, анчах ăнланаймарĕ, сиксе каçайми хŷме çеç курчĕ хăйсем хушшинче.

Хĕвел кăнтăрла урлă каçсан, пилĕк çын: Никодим Сергеичпа унăн арăмĕ Павлина, Старковпа Валентина тата Харлампи – ял хĕрринчи вăрман урлă каçса, Çарăмсан хĕрне пырса çитрĕç. Харлампи кунта кăçал пĕр-ик хутчен пулнăччĕ ĕнтĕ председательпе, ав, вучах вырăнĕ те сыхланса юлнă. Машинăран пулă хатĕрĕсене кăларса пăрахрĕ вăл, хĕрлĕ çыра анса, пĕр витре çăл шывĕ ăсса килчĕ. Хĕрарăмсем тĕмсем хушшине кĕрсе çухалчĕç те тепĕртакран шыва кĕмелли костюмсемпе тухрĕç. Валентинăн çурта пек йăрăс кĕлеткине курсан, Харлампи çŷçенсе илчĕ, хăйĕнчен

хăй хăраса кайрĕ: никам та асăрхамарĕ-ши? Старков çине пăхса илчĕ вăл, Никодим Сергеич çине, çук иккен, пурте ĕçлĕ: председатель сĕрекене тĕрĕслет, Старков хăйĕн кĕпи-йĕмне çакса хума меллĕ турат шырать. Валентина çумĕнче вăл ытла та ырханкка та шупка курăнать.

— Ну, мĕн, тытăнатпăр-и, Харлампи? — янраса кайрĕ Никодим Сергеевичăн уçă сасси.

— Яланах хатĕр, — терĕ Харлампи, вара çыран хĕрне утса кайрĕ. Васкасах хывăнчĕ те тӳрех шыва чăмрĕ.

— Вăт, вăтанчăкскер. Атя, Коля, тыт пĕр вĕçĕнчен. Эй, шыври Турă, ăнăçлăх пар пире паян, — сăхсăхнă пекки туса илчĕ те Никодим Сергеевич, урине йĕпетсе, шыва тĕрĕслерĕ, тăр-тăр чĕтресе илчĕ, вара Çарăмсана шăмпăртатса кĕрсе кайрĕ.

Шыв сулхăнĕ Старкова та çӳçентерчĕ. Çапла, нумай пулать шыва кĕменни те, пулă тытманни те. Çапах мĕн тери лайăх Çарăмсан хĕрринче! Çутçанталăка пĕрре тухасси çеç иккен, вăл сана пĕтĕмпех хăй ытамне ярса илет.

Тарăнрах çĕрте Харлампи сĕреке патаккине Старковран илчĕ те, хăрах аллипе питĕ меллĕн ишсе, сĕрекене çыран хĕррипе илсе пычĕ. Вунă-вунпилĕк утăм кайрĕç çапла. Йывăрлансах пычĕ сĕреке, умра, шыва çурса, йăр та яр пулă тарни курăнать. Анчах тарса хăтăлаймĕç ĕнтĕ, çеремлĕ çыран хĕрринчи ункă ăшăхлансах, тăвăрлансах пырать.

Хĕвел ăшшинче ниçта кайса кĕреймесĕр çатăлтатса выртакан пĕр купа пулă пурне те хытă савăнтарчĕ. Ăнăçлăха сиссе, вучах патĕнче çĕрулми шуратса ларакан Павлинăпа Валентина та чупса килчĕç. Пĕр витрене яхăн пулчĕ пулăçсен тупăшĕ. Харлампи Никодим Сергеич çине пăхса илчĕ те, пуçне сĕлтсе: «Тепре кĕрер-и?» — тенĕ пек систерчĕ.

— Кирлĕ мар, Харлампи, — терĕ предедатель. — Ăçта хурас ăна?

— Хам та çаплах шутлап çав, ара, ăçта хурас ытлашшине? — терĕ Харлампи.

Çав вăхăтра вăл хăй çине Валентина шăтарасла пăхнине туйрĕ те каллех аптăраса ӳкрĕ. Пăлханса кайнипе, çаврăнса кĕпе-тумтир патне утасшăнччĕ вăл, асăрханаймарĕ, йĕпе патак çине пусрĕ те лап! шуса ӳкрĕ.

Пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Ют хĕрарăмсем çине пăхсан, суккăр пулан, Харлампи, урăна хуçан, — шӳтлеме ĕлкĕрчĕ Никодим Сергеич.

— Ну, юрĕ, — терĕ Павлина, — çитет шăл йĕрсе, атьăр ушкăнпа тасатар пуллине. Шыв вĕреме кĕрет унта.

Тепĕр сехетрен пулă шӳрпи çиме ларчĕ туслă ушкăн. Каллех эрех туртса кăларчĕ Никодим Сергеевич, черккесене тултарса, хăнасен сывлăхĕшĕн ĕçме сĕнчĕ.

«Ах, мĕнле тутлă иккен пулă шӳрпи!» — шухăшларĕ Валентина. Тăван çĕр илемĕ, унăн пархатарĕ, ентешĕсен ырă кăмăлĕ килентерчĕç ун чĕрине. Ĕçсе янă эрех хăвачĕ сăрăлтатса, пуçа кайса пычĕ, юна вĕрилетрĕ.

Иккĕмĕш черккене Старков сĕнчĕ.

— Пирĕн ырă хĕрарăмсемшĕн, — терĕ вăл. Çак сăмаха Никодим е Харлампи каланă пулсан, хирĕçлесе тăмастчĕ-тĕр Валентина, анчах хальхинче вăл хăй черккине тӳрех çĕре лартрĕ. Ыттисене систермесĕр Харлампи çине пăхса илчĕ Валентина. Чим, ара, мĕншĕн ĕçмест-ха Харлампи? Э, шофер-çке. Çавăнпа ĕнтĕ.

— Харлампи, — терĕ Валентина, хăй черккине çĕклесе. — Хĕрарăмсемшĕн. Пĕр черкке юрать. Тыт-ха, шаккаса ĕçер.

— Атя, ĕçсе пар, Харлампи, — терĕ Никодим Сергеевич та. — Хĕрарăмсен кăмăлне ан пăс.

— Çук, çук, — хирĕçлерĕ Харлампи. — Руль умĕнче — пĕр çăвар та. Эсир мана ан пăхăр. Эп, акă, çăл патне анса чей вĕретем.

Çур сехете яхăнах аппаланчĕ Харлампи чей вĕретсе. Кăвайт çатăртатса çуннă вăхăтра паянхи тĕлпулăва тепĕр хут аса илчĕ вăл, Валентина çинчен шухăшларĕ. Упăшки ученăй авă унăн. Мĕн тери инçетре вĕсем халĕ пĕр-пĕринчен. Çак тĕнчере вĕсене çывăхлатма пултаракан нимĕнле вăй та çук. Тĕлĕнмелле çак пурнăç. Кăштранах ӳпне çаврăнса кайма пултарать вăл, кăштранах ху çĕклейми телей пиллет. Кăштран уйрăлмарĕç-и Харлампипе Валентина çулĕсем? Кăшт вăхăт кирлĕччĕ, кăшт хăюллăрах пулмаллаччĕ те тепре курма тăрăшмаллаччĕ ăна. Тем тесен те, диалектика çук кунта. диалектика вăл, хăй тĕллĕн аталанса, пурпĕрех пулмалли япала. Кунта вара Старков, Старков анчах Валентина упăшки пулмалла тесе никам та палăртса хуман. Ун упăшки Харлампи те пулма пултарнă. Эппин, Харлампи пурнăçĕ те диалектика саккунĕсемпе шумасть? Тем, паллах мар кунта. Юратура та тĕллев кирлех-ши çынна?

Харлампи вĕри витре хăлăпне ешĕл хупахпа чĕркесе тытрĕ те ту çине улăхрĕ. Туссем хĕрсе çитнĕ, вĕсем калаçни аякранах илтĕнет.

— Ан сӳпĕлтет, тархасшăн, кирлĕ мара. Пуçларĕ пĕр кĕвĕ: юрату та юрату. Вунçиччĕре кирлĕ вăл сан юратăву. Пĕр-пĕрне хисеплени тĕвĕлесе тăрать кашни çемьене...

Старков сасси кӳ. Харлампи чарăннă вырăнтах витрине лартрĕ те юпа пек хытса тăчĕ.

— Ватăлтăн эсĕ, Старков. Пурнăç курмасăрах ватăлтăн. Мана та, акă, хупа пĕрле ватлăха сĕтĕретĕн, — терĕ Валентина.

— Намăссăр эсĕ, — пат татса хучĕ Старков. — Тав тăвас вырăнне... «Ватăлтăн эсĕ...»

—Лăпланăр-ха эсир, лăпланăр-ха, тархасшăн, — аталанса пыракан пысăк инкеке сирсе яма хăтланчĕ Павлина. Анчах кая юлса каларĕ çак сăмахсене.

Кĕтменччĕ Харлампи çапла пулса тухасса: ун умĕнче Валентинăн çăмăл шурă кĕпи вĕлтлетрĕ, хĕрарăм сырма хĕррине чупса анса тăп чарăнчĕ те ĕсĕклесе макăра пуçларĕ. Нимпе те пулăшма пултараймарĕ ăна ик-виçĕ утăмра тăракан Харлампи. Хăй те аптăраса ӳкрĕ те вăл каллех вучах умне кукленчĕ.

— Вăрла мана, Харлампи, тепĕр хут! — уяр çанталăкра тип аçа çапнă пек янраса кайрĕç Валентина сăмахĕсем.

Тăр-тăр чĕтресе илчĕ Харлампи, хуллен Валентина енне çаврăнчĕ.

— Пурăнасси пулмасть, йăнăшрăм... Вăрла мана, хăтар мана çак читлĕхрен. Мĕн, ара, ватăлтăм-и, тĕссĕрлентĕм-и? — Пĕр утăм, ик утăм турĕ те Валентина, Харлампи мăйĕнчен ыталаса, каллех ĕсĕклесе макăрса ячĕ.

«Тĕлĕнмелле çак пурнăç. Кăштранах ӳпне çаврăнса кайма пултарать вăл...» — тӳрех паçăрхи шухăш йĕрĕ çине ӳкрĕ Харлампи. Анчах халь мар пулсан, хăçан-ха тата?! Кăштах хăюлăх кирлĕ...

Çыран хĕрне чупса пынă Павлина, хăй мĕн курнине хăй ĕненмесĕр, пĕр вырăнта шак хытса тăчĕ. Каялла çаврăнчĕ вăл вăтаннипе. Анчах тепĕр самантран пĕр-пĕрне ыталаса тăракан Харлампипе Валентинăна кураймарĕ вăл: хăвасем çеç силленсе юлчĕç вĕсен хыçĕнчен.

АРЗЮРИ

Рассказ

Пожалуй, уже не смогу сказать, когда я услышал имя Арзюри, когда увидел ее впервые, потому что дружил с этой смуглой, белозубой девчонкой с тех самых пор, как начал осознавать себя. Хорошо помню лишь одно: это она впервые назвала меня не Арсланом, как все другие дети, а Русланом. «А-ах, Руслан, как красиво звучит твое имя по-русски», — удивленно рассматривали меня ребята. О, как я гордился этим! С тех пор как-то нежданно-негаданно я стал одним из самых известных мальчишек на своей улице. Среди этой босоногой братвы я не блистал силою — ведь если всерьез, то Уладимер Шынгарч всегда мог бросить меня через плечо. Ребята уважали меня потому, что я всегда был при Арзюри. Что она только не вытворяла! Ей ничего не стоило спрыгнуть с самого высокого обрыва в Еллинский омут, с самой высокой ветлы в деревне она снимала грачиные яйца, чудом ухитрялась перебегать перед самой резвой лошадью.

Настоящее ее имя было Иванна, но все называли ее Арзюри – лешая. И этого прозвища она была достойна – жителей тихого, захолустного чувашского села не могло не удивлять, как держит себя эта дерзкая девчонка. Много толков ходило о ней среди сельчан, даже говорили, что она злым духом помешана.

Мать Арзюри мы называли старухой Алякка. Седовласая, худая, она подолгу сидела на крыльце своего дома и курила трубку. Мы, дети, всегда побаивались ее и, боже упаси, никогда не заходили в ее дом. Но вот однажды...

Снега все еще не было, а реки уже блестели зеркальным глянцем. Уладимер Шынгарч вынес на улицу деревянные коньки, которые смастерил ему старший брат. Повертев их в руках, мой отец в тот же день изготовил коньки даже получше, с железными полозьями, одну пару мне, другую - Арзюри. Но короткой была наша радость. Спустившись с берега, едва мы сделали несколько шагов, как под ногами Арзюри, словно слабая пружина, лед прогнулся, и девочка по шею погрузилась в воду. Барахтаясь в ледяной воде, она старалась ухватиться за краешек тонкого льда, но он все крошился и крошился. С испугу я не помню, как выскочил на берег, и только тут пришел в себя, по колени спустился в воду и протянул Арзюри невесть откуда оказавшуюся в моей руке палку.

Через минуту мы оба стояли на берегу. С одежды Арзюри струилась вода, а сама она была синяя-синяя. У меня в сапогах смерзались и нестерпимо холодили ноги сырые холщовые портянки. Скорее бы домой, скорее бы скинуть мокрую одежду и нырнуть под теплое материнское одеяло! Мы бегом бросились в село. Перед покосившимися воротами старухи Алякки я в нерешительности остановился.

– Ты что? – удивилась Арзюри. – Ведь околеешь, заходи скорее...

И я боязливо переступил порог.

Кто знает, не провались Арзюри в тот день в воду, не будь меня рядом с ней, быть может, жизнь в этом приземистом доме на окраине села до сих пор оставалась бы для меня загадкой, тайной. Переступив порог дома старухи Алякки, я ощутил в своем маленьком, по-детски наивном и незащищенном сердце незнакомое тревожное чувство. Я видел длинные руки с острыми ногтями, развевающуюся, лохматую одежду, слышал раздирающий душу голос. Голос войны.

Со скрипом отворилась низкая дверь, и я тут же увидел старуху Алякку – она стояла на корточках, спиной к нам, и что-то, но переставая, шептала. Я подумал, что она молится, но вместо икон увидел в углу избы фотографии трех парней: один

улыбался мне, другой задумчиво глядел в сторону, третий — в солдатской форме — смотрел на меня упрямо и сердито.

Арзюри почувствовала мое удивление, предостерегающе приложила указательный палец к губам и прошла за печку. Бросила мне оттуда большие старые валенки и стала переодеваться.

Изба была тесная, холодная. У стены стояла сколоченная из досок кровать, на ней лежало сшитое из разноцветных лоскутков одеяло, на гвоздях висели ушанки, измазанные дегтем брюки, рваная телогрейка. А в углу избы, даже не обернувшись, все так же стояла на коленях старуха Алякка и что-то неразборчиво шептала. И вдруг неистовым голосом начала причитать:

—Эй, Элександор, оставил ты меня одинешеньку, по какой земле дороженька твоя пролегла?.. Эй, Питтимер, средненький мой, почему и ты забыл меня, почему и ты вестей не шлешь? А ты, Сахрун, хоть ты возвратился бы в дом родной, не ходил бы по свету так долго. Ох, вы, сыны мои, сыны! Каждый день даете мне слово, а возвращаться не торопитесь. И отец вот так же ждал вас, родненьких, да так и не дождался, оставил одну-одинешеньку, ушел из этого мира. Возвращайтесь, сыны мои, пожалейте меня бедненькую, не оставьте сиротою на старости лет!..

Позднее я узнал от матери, что трех сыновей потеряла на войне старуха Алякка, муж пришел с фронта тяжелораненый и жил недолго. Близко к сердцу принимала моя мать чужое горе — дарила старухе Алякке чулки, одежду, а позже, когда отец купил на базаре однорогую, белолобую корову, угощала ее и Арзюри молоком и маслом. И не только мать, вся деревня жалела несчастную старуху, но ей все нездоровилось и от горя она сошла с ума, бродила по улицам и пугала детвору. А однажды, когда мы с Арзюри уже учились в седьмом классе, старуха Алякка упала с моста и погибла. Это тогда я узнал, что такое бессонные ночи: перед глазами все стояла худая, седая женщина и причитала: «Ох вы, сыны мои, сыны...»

Не давала покоя мысль о судьбе Иванны — как будет она жить теперь? Я представлял себя на ее месте, без отца, без матери, и по ночам меня преследовал зловещий образ войны.

Поговорить о судьбе Арзюри приехали из района, хотели устроить ее в детский дом, но не согласилась Арзюри. Одно время жила у тетки Унеби, а позже, когда мы в восьмом классе стали учиться в соседней деревне, ее приютила наша интернатская повариха тетя Елинкка.

Даже спустя несколько лет после Великой Победы жилось нам, детям, рожденным в войну, трудно: весной собирали по огородам прошлогоднюю траву, ели крапиву и клевер, с удоволь-

ствием хлебали суп из борщевика, скупо забеленный кислым молоком. Что говорить — с лихвой доставалось, а Иванне-Арзюри и того больше — эту худенькую девочку война наделила такой судьбой, что и не каждому взрослому под силу.

К десятому классу Арзюри переросла всех наших мальчишек, в жгучих глазах ее таилась лукавая, загадочная прелесть: посмотрит на тебя - и становишься сам не свой. Как-то я сказал ей:

— Ты — три А: Ассоль, Аэлита и... Арзюри.

— Нет. Только Арзюри, — не соглашалась Иванна.

Что-то неожиданное стало проявляться в ее характере: то напевает чарующие душу грустные песни, то без всякой причины зальется смехом, то целыми днями ходит безмолвная, в глубоком раздумье. В это время я старался не подходить к ней, гадая, что случилось с Арзюри. Глупый, я не понимал тогда, что Арзюри взрослела, превращаясь в девушку.

Через месяц мы должны были сдать экзамены и, получив аттестаты, навсегда распрощаться со школой. В деревню приехала бригада молодых электриков, откуда-то привезли длинные столбы, стали возиться с теодолитами, рыть ямы. А по вечерам возле клуба они собирали своим баяном всю молодежь села, и до поздней ночи не смолкало веселье. Все мы быстро познакомились с ними и стали называть их по именам. По берегам очищенной паводком речки Черемшан соловьиным пением манила черемуха в белых косынках. Забывая об уроках, мы с нашими новыми друзьями часто приходили сюда, баянист Женя-электрик поддразнивал соловьев, и они, будто соревнуясь друг с другом, начинали свистеть и заливаться бесконечными трелями.

Как-то вечером мы шли с Иванной за веселой ватагой, и я спросил ее, отчего она опять такая грустная.

— Добрая у тебя душа, — сказала Иванна. — Почему я всегда должна быть веселой, Руслан? Скоро мы получим аттестаты, вместе с тобой порадуются мать и отец, а у меня никого нет...

Я постарался утешить ее:

— Твой отец, Иванна, отдал жизнь за наше с тобой счастье. Значит, ты должна быть счастлива.

— Мой отец? — вздрогнула Иванна. — Откуда ты знаешь?

— Во дает! — удивился я. — Так ведь все село об этом знает.

— Это не мой отец, — помолчав, проговорила Иванна тихо. — Старуха Алякка привезла меня из райцентра, когда мне было всего два года.

— Кто тебе сказал такое?

— Не все ли равно? — спокойно ответила Иванна. — Ну, тетка Елинкка. В войну она работала в районной больнице...

Больше я не стал ее расспрашивать, шел и думал о старухе Алякке, о трех фотографиях в ее доме, об Иванне и ее настоящих родителях. И снова мне представился страшный образ войны, так безжалостно разрушившей жизнь Иванны.

Иванна немного успокоилась и спросила меня, что я думаю о Хведюке, который учился в параллельном классе, притом спросила так, будто им интересуется не она, а ее подружка Санюк.

— Хороший парень, — сказал я. — Очень хороший парень, только уж слишком робкий, скромный. Не зря его мякишем зовут... Послушай, Иванна, а может, твой отец жив?

Она остановилась и несколько мгновений стояла неподвижно. Потом покачала головой, и ее глаза влажно заблестели в лунном свете.

— Если жив, искал бы, — чуть слышно сказала она.

— Может, искал, да не нашел, по-разному бывает. А по-моему, тебе самой надо искать.

— Ты это всерьез, Руслан? — удивленно, все еще ни на что не надеясь, посмотрела на меня Иванна.

— Конечно, всерьез, — твердо произнес я, стараясь ее подбодрить.

— Руслан! — вдруг закричала она на всю округу и запрыгала, как маленький козленок. — А может, жив он!.. А может, жив!

Мы давно отстали от молодежи, которая с песнями шла впереди. Неожиданно нашу тропинку преградил Женька-баянист.

— Без баяниста праздника нет, а без Арзюри — сказки. А я сказки с детства люблю, — забалагурил Женька.

И только тут он заметил меня:

— Ого, здесь и маленький Арслан. Сосунки давно спят. Боишься один домой идти — догоняй своих, — и он, посвистывая, похлопал по баяну.

Это вывело меня из себя, а Иванна улыбалась. Неужели дурачество Женьки понравилось ей?

— Ну, иди, я догоню тебя, — сказала она и проводила меня взглядом.

Нет, любви между нами не было и быть не могло. Я, действительно, был маловат ростом и часто чувствовал себя рядом со стройной, красивой Иванной неловко. Но в тот вечер я поймал себя на том, что испытываю какое-то странное, совершенно новое чувство.

Утром мы занимались уборкой школьного двора. Глазами я искал Арзюри, но не нашел. «Значит, долго гуляла с баянистом, проспала», — с ревностью подумалось мне.

Во время работы я заметил, что рядом, со мной постоянно крутится Чуппа, словно бы что-то хочет сообщить мне, но ни-

как не найдет подходящего момента. Невпопад посмеивается, хитро поглядывает на меня. Наконец не выдержал, говорит:

— Ох, и погодка сегодня! Солнышко, небо синее, жаворонки заливаются.

— Хорошая погода, — согласился я.

— Ну да? И ты замечаешь? Не верится даже, — вытаращил он маленькие глазки. — Неужто и ты замечаешь красоты природы? Даже после того, как тебя опозорили вчера?.. Эх, ребята, видели бы вы вчера, как он королем, нос кверху, шел рядом с Арзюри, а тут другой, с баяном. «Простите, — говорит он, — сосункам спать пора, мамка ругаться будет». И увел его королеву прямо из-под носа...

Ребята громко рассмеялись, лишь один Хведюк молчал и холодно смотрел на меня. Постой, постой, не случайно Арзюри расспрашивала вчера о нем, Вон оно как!

— Но это еще только начало, впереди было самое интересное, — продолжал трепаться Чуппа. — Свернули королева с баянистом с дороги, сели на лужок, а уж потом... Ух! Даже как рассказать не знаю, И в кино на этом кадры обрываются.

— Врешь! — первым поднялся с места Хведюк.

— Вот тебе крест, своими глазами видел...

Коленки мои подкосились. Врет Чуппа! Не может этого быть. Не из тех Арзюри. Я посмотрел на Хведюка. Нет, не тронул он Чуппу. Больше ни слова не обронил, повернулся и тяжело зашагал от школы по узкому переулку. Я решил немедленно бежать к Иванне и все выяснить, но тут кто-то предупредительно и ехидно шепнул: «Тс-с, сама идет». Во двор вошла Иванна и, ничего не подозревая, подошла к нам.

— Извините, ребята, проспала я сегодня, — призналась она с открытой улыбкой.

Зачем она сказала эти слова? Безмолвно стоявшие ребята как-то неестественно оживились, словно ждали именно этих слов. «Знаем, все знаем», — говорил их вид, смотрели на Арзюри исподлобья, брезгливо. А Чуппа расхаживал перед ними гусаком, потом остановился перед Иванной и стал строить рожицы.

— Ребята, — засуетилась Иванна. — Что это значит, ребята?

Но по-прежнему все молчали, посмеивались.

— Руслан, — не понимая, что происходит, обратилась ко мне Иванна. — Что случилось?

Как ножом режут ее слова мое сердце, и я отворачиваюсь. Губы Арзюри задрожали, а перед ней опять увивается Чуппа. Сейчас случится непоправимое. Я хотел наброситься на него — и не успел:

— Святой прикидываешься? — кривляется Чуппа. — Я ведь своими глазами... Ночью, под кустом...

— Что под кустом? — отчаянно спросила Арзюри.

— Сказал бы, да стыдно, — глотает слова Чуппа.

Не зная, у кого просить защиты, помощи, Иванна жалобно посмотрела на ребят, увидела их злые лица и охнула, зарыдала, уткнувшись лицом в ладони. Ее состояние мигом передалось нам. Только что ребята смеялись на ядовитые слова Чуппы, и вдруг обида Иванны как-то сразу превратилась в нашу общую беду и обиду. Но мы были молоды и не знали, чем помочь нашей ровеснице. Молча, взглядами мы проводили плачущую Иванну из школьных ворот. А толстяк Чуппа, как степной шакал, только что расправившийся со своей жертвой, бесцветными глазами настороженно посмотрел на нас и торопливо, бочком, скрылся со двора.

Прошла ночь, наступило утро — Иванна в школе не появилась. Несколько раз сбегали к тетке Елинкке, но и там Арзюри не было, исчезла. Вся школа поднялась на ноги, всем селом искали мы Арзюри в ближнем лесу и окрестных оврагах, но бесполезно. Приехал милиционер, в сельсовете допрашивал Женьку-баяниста и тот будто бы клялся, что ни в чем не виноват, Иванну и пальцем не тронул. Говорил милиционер и с Чуппой. «Чем-то необычным хотелось удивить ребят, вот и набрехал», — признался он. Но не только он был виноват в несчастье с Арзюри — это была и наша общая вина, что на какое-то мгновение мы поверили Чуппе.

Шло время, а об исчезнувшей Арзюри не было ни вестей, ни слухов. Мы сдали экзамены, получили аттестаты зрелости, как красивый сон пролетел прощальный вечер. Лишь на рассвете разбрелись по домам. Словно теленок, вдруг отбившийся от стада, один-одинешенек шагал я по безлюдной улице. На душе стало тоскливо — я опять вспомнил об Арзюри. Как не хватало ее мне в этот день! Где она? Что с ней случилось?

Глубоко задумавшись, я не заметил, как на моем пути, невесть откуда, появились двое черноглазых кудрявых парней. Кто такие? До этого я их не видел в селе. Что им надо от меня? Я остановился, сжал кулаки. Если придется драться, то силы были неравные. Но убегать я не собирался. А парни смотрели молча, пристально.

— Она хочет тебя видеть, — наконец-то выговорил один из них.

— Кто хочет видеть? — не понял я, глядел на парней настороженно и недоверчиво.

Из-за деревьев показалась тонкая девичья фигурка, и парни тут же исчезли в темноте.

– Иванна! – удивился я неожиданной встрече.

– Тише, – попросила она и посмотрела мне в лицо. – Повидать тебя захотела, вот и пришла. Ведь с детства дружим, а расстались даже не попрощавшись. Подумала: вдруг куда-нибудь уедешь после школьт и больше не увидимся, вот и решилась...

– Спасибо, Иванна. Где ты была все это время?

– С друзьями.

– С этими парнями? – кивнул я в сторону.

– Ты о них, Руслан, плохо не думай. Семья у них большая.

– Кто они такие?

– Цыгане... Кажется мне, что кровь у нас одна. Песни, танцы их по нраву. Будто всю жизнь была с ними. Заметил – я и похожа на них.

– Я понимаю тебя... Ну, ладно. Ты хоть знаешь, что произошло у нас после?

– Знаю. Не будем об этом.

Глаза Иванны горят, как омытые росой смородины. Смотрю на нее – и к горлу подкатывает комок, не заплакать бы.

– Уезжаю я, Руслан.

– Куда?

Стараясь скрыть слезы, Иванна кусает губы:

– Отца искать...

Услышав ее, я вздрогнул – ведь это я подал ей когда-то эту мысль. Правильно ли поступил? А вдруг эти поиски принесут Иванне еще больше горя? Нет, пусть ищет, пусть надеется Иванна. Не может человеческая судьба быть помечена лишь черной краской.

– Пожалуйста, никому не говори о нашей сегодняшней встрече. Так будет лучше. Кто знает, может, когда-нибудь встретимся, – сказала Иванна и протянула мне руку.

Все отдаляясь, ее легкая фигура исчезла в утреннем тумане...

Прошли долгие-долгие годы, и однажды я вынул из почтового ящика письмо. По штемпелю определил, что оно из Молдавии, но обратного адреса не было, а стояло только одно слово – Иванна. Будто током ударило в голову. Значит, жива Иванна! Остались ли в тебе черты прежней Арзюри? Нашла ли ты свое счастье, довольна ли судьбой?

С такими мыслями я торопливо поднимался в свою квартиру.

– Знаю, знаю, от кого письмо. Это бабуля написала, – говорит подбежавший сын,

– Ну будь по-твоему, - успокаиваю я его, а глаза уже побежали по строчкам, вырывая из письма самое главное, самое важное:

«...С тех самых пор, Руслан, как ты посоветовал мне искать отца, я потеряла покой. Хотела сразу после окончания школьт поехать в Москву, но, как знаешь, не получилось. Вспоминать об этом не хочется, слишком черный след оставили те дни в моей душе. Не хотелось появляться на глаза людям, много думала, а потом мне встретились цыгане. Они ухаживали за мной, как за родной дочерью, в архиве добрые люди нашли документы моей матери. Оказывается, она была молдаванкой, с начала войны эвакуировалась в Поволжье и умерла, когда мне было два года. Из этих же документов я узнала имя и фамилию отца, военком пообещал написать письмо в военный архив Подольска. Но я не могла ждать и с дедом Марко из цыганского табора отправилась в путь. Мечтала: встретит меня там мужчина с золотыми погонами и скажет: «Где ты пропадала столько времени, отец давно тебя ищет. Вот возьми его адрес — и немедленно домой». Но получилось иначе, напрасно тешила я себя этими мечтами. «Ваш отец погиб смертью храбрых в июне 1941 года в Молдавии около города Единцы при защите Государственной границы», — сообщили мне. И тут я не выдержала, заплакала навзрыд. Долго утешал меня седовласый майор.

— Гордиться надо таким отцом, — сказал он. — Зайди ко мне через пару дней, может, родственники живы...

Так и случилось. Захожу к нему через два дня, а он протягивает мне адрес и говорит;

— Ну, доченька, дед тебя заждался. Стар уже стал, но умирать не собирается, тебя хочет увидеть...

В тот же день дед Марко проводил меня в Кишинев. Так оказалась я в Молдавии, нашла свою родную деревню, стучусь в дверь родного дома. За обеденным столом сидят старик со старухой, пристально смотрят на меня. К горлу подкатил ком, стою, еле сдерживая слезы.

— Проходи, проходи вперед, — говорит бабушка. — Наверное, к Марысе пришла? Что-то задержалась на работе.

— Бабушка! — подбежала я к ней и обняла за шею. — Я вернулась, бабушка, Я — Иванна, ваша внучка!..

А у самой слезы текут рекой. Смотрю, у дедушки борода задрожала, поднялся он из-за стола и от волнения слова сказать не может, стоит и плачет. Так встретилась я со своими. Осенью председатель колхоза уговорил меня поехать в Кишинев на садовода учиться. Вернулась в село дипломированным виноградарем. Однажды, только закончила техникум, к нам на уборку винограда приехали пограничники. Бывают же счастливые встречи: смотрю — а с ними Хведюк. Вырос, возмужал, стоит, как столб вкопанный, а глаза от радости сияют. И я крепко обрадовалась

ему, вспомнила детство и поняла, что от вас, дьяволов, не убежишь. А через год всем селом, всей заставой отпраздновали мы нашу свадьбу.

Вот так устроилась моя жизнь. Прошлой весной у нас родился сын, в честь деда назвали его Георгием. Уже ходит и лепечет «мама» и «папа». Я разучила много песен на родном языке, Хведюк начал понимать по-молдавски, но песни любит петь чувашские...

Я дочитал письмо до конца и взволнованно заходил по комнате.

— А по телевизору войну показывали, — сообщил мне сынишка. — Там самолеты летают, бомбы бросают. Стра-аш-но... А на самом деле война была, папа?

— Была, Руслан, — говорю я сыну. И опять думаю об Иванне — Арзюри.

ВИÇĔ КĔМĔЛ УКÇА

Чăнкă çыран хĕрринчи шифер витнĕ тăпăл-тăпăл çурт хыçĕнче — ансăр лупас. Çуркунне Эльвира ашшĕ, типĕ утă упрама тесе, ун тăррине чуспа витрĕ. Экзаменсем вăхăтĕнче çак вырăн Эльвирăшăн питĕ юрăхлă пулчĕ. Вăл тăвăр та пăчă пӳртрен хăйĕн çӳхе тӳшекĕпе ула утиялне илсе тухрĕ те пĕлтĕрхи утă çине тирпейлĕн вырăн сарса хучĕ, макарон ещĕкне хутпа витсе, çыру сĕтелĕ турĕ. Хăй валли калама çук ирĕклĕх, чуна лăпкакан ырлăх туяннă пек пулчĕ ăна: куç умĕнче кунĕн-çĕрĕн Атăл хумĕсем çатăлтатаççĕ, шурă пăрахутсем чĕрере тунсăхлă та çав вăхăтрах ырă туйăм çуратаççĕ.

Йăл кулса пăхать тӳперен июль хĕвелĕ. Ĕнер кунĕпех çурутрав çинче утă пухса ĕшеннĕрен пилĕк-çурăмĕ сăрăлтатать Эльвирăн, енчен енне çаврăнкалать вăл, анчах ниепле те тăрса лараймасть. Ашшĕ те шарламасть-ха, кантăрах, çывăртăрах тет ĕнтĕ, хăйĕн пĕртен-пĕр хĕрачине хĕрхенсе.

Эльвира куçне уçать! Атăл!.. Пĕрре хумханчăк та кăра вăл, тепре, темле вăрттăнлăх пытарнă евĕр, шап-шурă тĕтре карса илет ăна. Эльвира паянхи пек тӳлек çанталăка юратать. Мĕн тери капăр вăл çуллахи пĕлĕтсĕр кун. Акă ун мăнаçлă та яка ытамĕнче çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ хĕвел юпи выртать, лере, инçетре-инçетре, юханшывăн йăмăх кăвак çулĕ çăмăл кĕрен сывлăшпа хутшăнса каять. Çыран леш енчи катара, тĕлĕнтермĕш художник киçтĕкĕ ытахальтен çеç сĕртĕннĕ пек, хĕрлĕн-шуррăн каскаланнă çыранта си-си йывăç тĕмĕсем палăраççĕ, шупкалса пыракан инçетлĕхре пач палăрми пулса, куçран çухалаççĕ. «Ту-ту-ту-у-ут!» —

кăшкăртать йывăр баржа. Унтан каллех пĕтĕм тавралăх шăпланать. Хумсен хăнăхнă сасси ҫеҫ тӳлеккĕн чӳхенет хăлхара: шĕпĕлшĕпĕл, шĕпĕл-шĕпĕл. Е тата ҫыран хĕррине чарлансен туслă ушкăнĕ килсе тухать те, такама ӳпкелешсе, Эльвирăна евитлеме тытăнать.

Эльвира ҫинҫешке пӳрнисемпе куҫне шăлса илет, пичĕ ҫинче вĕлтĕртетекен ҫӳҫ пайăркисене хăлхи хушшине хĕстерет. Кăпăшка питҫăмартисем кĕрен тĕспе ҫиҫеҫҫĕ, тутинче телей кулли вылять.

«Ырă, питĕ ырă. Пурнăҫ вăл ҫак ҫутҫанталăках ĕнтĕ — таса, янравлă», — шухăшлать Эльвира.

Кашта ҫумне икĕ тетрадь хĕстернĕ. «Чим, дневникĕм, пĕртен-пĕр юлташăм, тусăм», — пăшăлтатать хĕрача, тетрадьсем патне туртăнса. Пĕри кăвак хуплашкаллă. «Аркадий Арлановăн пурнăҫ кĕнеки», — тесе ҫырнă унта. Теприн хуплашки писев. «Чăнах ара, мĕншĕн пурнăҫ кĕнеки тес мар ăна», — шутланăччĕ Эльвира та тăрăшсах, «Пурнăҫ кĕнеки. Эльвира Карабанова» тесе ҫырнă чух.

Кăвак тетрачĕ Эльвирăна кĕтмен ҫĕртен лекрĕ. Хăй сăмсине яланах унта-кунта чикме юратакан Лина айăплă ҫакăншăн. Пĕр каҫхине Эльвира патне хашкаса чупса пычĕ те вăл хĕвĕнчен ҫак тетраде туртса кăларчĕ. «Ме, вуласа тух, сан ҫинчен пулмалла», — терĕ. Ҫак вăрттăнлăха хăй анчах пĕлнине систерсе, куҫĕ хĕпĕртӳллĕн ҫиҫет. Эльвирăна та кăсăклантарчĕ ҫакă. Вăл вулама пуҫларĕ. Пĕр каҫа ҫырса кăтартать иккен Аркади. Вуланăҫемĕн вăтанса, вăтанса пычĕ Эльвира, варрине ҫитсен, ҫилли кӳтсе ҫитрĕ унăн. Чăрр! пăхрĕ вăл Лина ҫине: «Вуларăн-и?» Лешĕ хăраса ӳкрĕ. «Мĕн эсĕ, иксĕмĕрĕн те ятсем пур та ку тетрадьре, ҫавна курнипе ҫеҫ ҫаклатса килтĕм. Ан пăшăрхан, сисмерĕ», — тӳрре тухасшăн пулчĕ вăл. «Апла-тăк, ăҫтан илтĕн, кай та хур ҫавăнтах», — терĕ Эльвира. «Мĕн каласатăн, хăй пĕлсен?» — пушшех шурса кайрĕ Лина.

«Чăнах та, хăй пĕлсен?» — шухăшларĕ Эльвира та. Вара, ним тăвайман енне, кăвак тетраде хăй дневникĕпе юнашар пытарчĕ. Пĕр уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ унтанпа. Паян, акă, кăмăл лайăх, ĕмĕтсен тӳлек вĕҫевĕ пулни-иртнине аса илтерет. Кăвак тетрадь те хăй патне туртать.

«...Майăн ҫирĕммĕшĕ. Пирĕншĕн, вăтам шкул пĕтерекенсемшĕн, вĕренӳ ҫулĕн юлашки кунĕ. Ҫав ятпа пире хамăрăн юратнă учитель Николай Петрович Атăл хĕрринчи пĕр илемлĕ вырăна каҫ выртмаллах кайса килме сĕнӳ турĕ.

Кутамккасене тĕрлĕ ăпăр-тапăр, ҫĕрулми, каҫ выртнă чух тăхăнма ăшăрах тумтир персе чикрĕмĕр те шкула пуҫтарăнтăмăр. Пурте савăнăҫлă, шӳтлеҫҫĕ, алхасаҫҫĕ. Кунтах пионерсен пӳлĕмĕнчен илсе тухнă горн йăлтăртатать, волейбол пӳскине па-

çăрах тӳнк! те тӳнк! тутарса хĕнеме пуçланă. Эльвира та пур. Вăл тăвăр пĕçĕллĕ шăлаварпа, çанăсăр шурă кофтăпа, хулпуççи урлă «çиçĕм» вăчăраллă кăвак куртка уртса янă.

Горн сасси, таврана янратса, сигнал пачĕ те, эпир, юрă юрласа, çула тухрăмăр. Ялтан инçех те мар — вăрман, унпа пĕр вунă çухрăм утсан, Атăл хĕрринче — калама çук илемлĕ вырăн. Çыран хĕрринчен пуçласа çӳллĕ сăрт тăрне çитичченех тикĕс хӳме пек çăра юманлăх хăпарать, аялта — шап-шурă çĕмĕрт йывăççисем, леш енче — Атăлăн кĕмĕл çамки йăлтăртатать. Кунтах, сăртран анакан тарăн лупашкара, çăлкуç пытаннă: тăрă та сивĕ шыв кăтрине тураса ларакан пĕртен-пĕр лаштра хурăн айĕнчен тапса тухать те шурă, хĕрлĕ вак чул çийĕпе хӳхĕм юрă шăратса юхать. Çапла, кунта Куинджи сăрĕсем те, Чайковскин асамлă кĕввисем те — пурте пĕрле.

Вырăна çитсенех виçĕ пысăк палатка туртса картăмăр. Çăл патĕнче пĕр ушкăн ача кăвайт чĕртсе ячĕ. Хăшпĕрисем Николай Петровичпа пĕрле шыв хĕррине пулă тытма анчĕç, теприсем, хĕрсем ĕнтĕ, чечек татма, виççĕмĕшсем волейболла выляма пикенчĕç. Эпĕ вара рюкзакран хамăн этюдника илтĕм те сăрт çине, икке йӳпленсе ӳсекен лапсăркка юман патне, хăпартăм.

Нумай лартăм-ши юман патĕнче, сахал-ши, анчах этюдник çумне çирĕплетсе хунă шурă ватман çине ӳкерме нименле композици те тупаймарăм. Çапла аппаланса, пуçа çавăрса ларнă хушăра хăлхана хĕрсен кулли пырса кĕчĕ. Наччасах этюдника хупса хутăм, юман çине йăпăр-япар улăхрăм, унăн çулçисем айне пытантăм. Ларатăп çапла, мĕн пуласса кĕтсе.

Хĕрсем çывăхрах ĕнтĕ. Кунтах килеççĕ. Апăрша, Эльвира мар-и ку? Вăлах. Тата Лина. Курас пулсан?

— Ах маттур та çав Илле. Маттур та пултаруллă.

Ку — Лина. Эльвира чĕнмест.

— Теприсем пек чăкăлтăш мар çав. Кăмăлĕ лайăх.

— Кам пек чăкăлтăш мар?

— Пĕлмене перет ĕнтĕ. Аркади пек, ара. Сăмах калама çук — йĕплешет, шăртланать.

— Ан калаç кирлĕ мара. Тĕрĕс мар ку.

Шатăрт! турĕ ура айĕнчи типĕ турат. Пĕтрĕм! Çулçăсене вăтăрса, çĕре персе антăм. Самаях хăранăччĕ пулас хĕрсем, анчах, палласа илсен, аптраса ӳкмерĕç, ним пулман пек, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç çеç.

— Эсĕ вара, çамрăк та интереслĕскер, çăлтăр вăрлама хăпартăн-им юман çине? Çăлтăрсем те тухман-çке, — терĕ те Лина пĕчченех ахăлтатса кулса ячĕ.

Витĕмлĕ хуравласшăнччĕ эп ăна, анчах Эльвирăн кăшт салхуллăрах куçĕнчен пăхрăм та хам та темшĕн хăраса ӳкрĕм.

– Çук, – терĕм Линăна. – Мана аташса кайнă хĕрсене кăвайт патне çул кăтартса тăма хушнă.

– Апла часовой пекки пулатăн. Тăрах, тăрах, тен, чăнах пĕрпĕр çĕтсе кайнă хĕр килсе тухĕ, – йĕкĕлтесе кулать Лина.

Ку мана тарăхтарсах ячĕ. Ăна хăвăрт-хăвăрт каламалли, тивĕçлипе тавăрмалли сăмахсем шырарăм.

– Санăн çĕтсе каяс килет пулас. Пыр, çӳре, чиперукăм, ав, Иллегитарăçу таҳçанах сан çинчен романссем шăрантарать, – терĕм лач сурнă пек. Каларăм та, курччăр тесех, этюдника уçрăм, алла киçтĕк тытса, шур листа çине тĕлли-паллисĕр пăнчăсем лартма пуçларăм.

Лина самантрах таçта тапса сикрĕ. Чĕрине пусарма кайрĕ-ши, шыва сикме-ши? Тепĕр тесен, таси паха.

– Мĕншĕн кӳрентертĕн эс ăна? – шăппăн ыйтать Эльвира.

Чĕнместĕп. Тем чĕмери пулчĕ, кăкăр питĕрĕнсе ларчĕ. Хăюсăрлантăм, этюдник çаклатмипе выляма пуçларăм. Мĕн калас ман ăна? Чи кирлине? Халь каламасан, хăçан калăп? Çапла шутларăм та, мĕнпур вăя пухса, ун енне çаврăнтăм.

– Эльвира...

Вăл, теме сиссе, пуçне пĕкрĕ.

– Эльвира... эпĕ... эпĕ сана юрататăп...

Сасартăк хыпăнса ӳкрĕ Эльвира, такамран хăранăн, яшт тӳрленсе тăчĕ те хир качаки пек малалла ыткăнчĕ. Эпĕ те ура çине сиксе тăтăм. Ун хыççăн чупрăм. Анчах Эльвира, лупашкана анса, курăнми пулчĕ...

Пĕртен-пĕр пирĕштийĕм, çут ахахăм,
Эс çук-тăк – эп те çук çак тĕнчере.
Анчах куратăп та сана – çĕтет сăмахăм,
Ăшчик чĕтрет, сиксе тапать чĕре.

...Юрату. Искусство евĕрлех пулĕ çав вăл. «Чăн-чăн искусство çуралнă чух художник чун-чĕри хӳхлесе чĕтрет, кăшкăрса йĕрет, юратупа е курайманлăхпа тулса, пайăн-пайăн таткаланать, хăй çинчен пĕлтерме васкать, çуралакан пулăма мăнаçлă та илемлĕ тăвасшăн çунать», – вуланăччĕ эпĕ таçта. Çапла пулĕ çав: илемли, ырри, мăнаçли асапра, тертре, сиксе чĕтренĕ вăхăтра, кăшкăрура çуралать пулĕ. Ан тив, хитрелĕхе çуратаканни хăй те илемлех ан пултăр, ан тив, – ĕçĕ унра-им! Суккăр Гомер, уксах Микеланджело, шыçмак сăн-питлĕ Мусоргский, мăн кăмăллă Тургенев – çакă кама та пулин кӳрентерет-и вара? Çук! Пурпĕрех вĕсем – вилĕмсĕр хитрелĕхе туптанă çынсем...»

Çакă çеç. Пĕртен-пĕр кун. Эльвира кăвак тетраде хупса хурать те шухăша путать, анчах куç умне Аркади мар, май уйăхĕн ытармалла мар çав хӳхĕм каçĕ сиксе тухать. Ах, Николай Петрович, чăннипех тĕлĕнтермĕш учитель эсĕ. Çав каç та çителĕклĕччĕ

пулĕ кайран сана ĕмĕр-ĕмĕр аса илсе пурăнма. Сисмерĕн, класри хĕрсем чун-чĕререн юратса пăрахнăччĕ сана. Мĕн тăвăн, учитель-çке — сан умăнта хамăра хамăр хăрасарах тыткалани çеç чăрмантарчĕ пире Татьяна пек ăшри кăмăл-туйăма пĕлтерме. Ăслă, хăюллă, илемлĕ — тата мĕн кирлĕ-ши хĕр чĕришĕн чăн-чăн арçын-тусра?

Эсĕ вара, Аркади? Хи! Пĕр шутласан, кулăшла. Асту-ха, шăлавар пĕççисене чĕркуççи таран тавăрнă та, тăратăн çыранта, ылтăн пулă килсе тухасса кĕтсе. Ырханкка пулнăран мĕскĕн курăнатăн — кулса вилмелле. Лере тата, юман патĕнче, хут çине мар, çамку çине ӳкересшĕн пулнăччĕ-ши эсĕ пĕр-пĕр картина — мĕнле кăна сăрă çукчĕ унта! Кайран, Линăн çилли иртсе кайсан, сывлайми пуличчен ахăлтатрăмăр çавна аса илсе. Экзаменсем вăхăтĕнче те маларах... Сисрĕм, чĕрем чул мар, миçе хутчен вăтанса та тархасласа пăхмарăн пуль ман çине. Эпĕ курмăш пултăм. Хаклă çыннăм, санра темĕнле ăшă, ырă, ыттисенче пачах курăнман япала пурах çав. Çавăншăн хисеплетĕп эпĕ сана. Тепĕр енлĕ шутласан тата? Пулать-и-ха çавăн пек, мĕн ачаран пĕр урамра пурăнтăмăр, вунă çул пĕр класра вĕрентĕмĕр. Мĕн юратмалли пирĕн, пĕр-пĕрне пилĕк пӳрне пек пĕлсе тăратпăр пулсан? Чим, ыран эсĕ Шупашкара каятăп теттĕн мар-и-ха? Художник пулас шухăшу тухмасть, эппин, пуçунтан. Эпĕ те пырăп ăсатма. Дневникна та йăтсах пырăп, каçару ыйтăп. Шел кăштах, пĕтĕм класс саланса пĕтет çапла. Пуçтарăнăпăр терĕмĕр тепĕр çултан каллех. Пуçтарăнайăпăр-ши?

Писев тетраде уçас килмерĕ текех Эльвирăн. Лупас çинчен анчĕ те вăл пӳрте кĕчĕ. Ашшĕ килте çук иккен-ха. Лаша витинче ĕçлет вăл, пур пек лашасене ĕçе кӳлсе ямасăр та киле таврăнаймасть. Вăл килсен, акă, кимĕ çине ларĕç те вĕсем каллех Атăл леш енчи йăлăма утă пухма кайĕç. Амăшĕ ирех унта ĕнтĕ, ăна Кринькка пиччепе Укахви инке лартса кайнă.

Тепĕр икĕ сехетрен тин çула тухрĕç вĕсем. Çырă мăйăхлă лутрарах ашшĕпе Эльвира, кĕсменсем йăтса, Атăл хĕррине анчĕç те, лаптак тĕплĕ кимĕ çырантан уйрăлчĕ. Хĕртсех хĕвел пăхать пулин те, шыв сулхăнĕ хăй çинчен систеретех, кассăн-кассăн уçă çил вĕрет. Атăл хумĕсем пĕчĕк кимме çункав пек вылятаççĕ. Авăсать ашшĕ, хăвăрт çӳрекен теплоходсем хыççăн юлакан хумсене хирĕç меллĕн тытса пырать хăй киммине. Анчах Атăлĕ сарлака, ашшĕн çамки çине тар пĕрчисем сике-сике тухрĕç. Çулĕ çаплах инçе-ха, çуррине те кайман.

«Ватăлать атте, — щухăшлать Эльвира. — Вăрçă суранĕсем ăна çапла... Ах, вăрçă, вăрçă...» Унтан каллех ашшĕ çине хĕрхенсе пăхать. Пĕтĕм вăйне хурать ашшĕ, кашни авăсмассерен питĕнчи пĕркеленчĕксем туртăнса илеççĕ. Туять хĕрĕ: капла юрамасть, ывăннă атте.

— Эп авăсам-ха, атте. Лар-ха ман вырăна. Лар, лар, эпĕ пултаратăп, манăн вăй çитет. Ывăнсан, каллех сана парăп, — тет вăл, çине тарса.

Ашшĕ хĕрĕ çине шанмасăртарах пăхать, пĕр хушă йĕри-тавралла тинкерет.

— Ав çав «Ракети» иртсе кайтăр-и-ха, — сăмах хушать вăл, хĕрĕпе килĕшсе.

— Темех мар. Эп хамах, — тет хĕрĕ. — Вăл иртнĕ чух чарăнса тăрăпăр.

Халĕ ĕнтĕ кĕсменсем Эльвира аллинче. Итлесшĕн мар вĕсем çинçешке хĕрачана: е шыва çиелтен касса каяççĕ, е, ытла тарăна кĕрсе, кимме унталла-кунталла чалăштараççĕ. Шикленерех пăхать Эльвира ашшĕ çине: алă ывăнĕ те акă, ăна каллех хăй вырăнне лартĕ. Хăйне хăй çилленсе, вăрçса илет Эльвира. «Атăл хĕрĕ тетĕп хама, вунçичче çитсе те кимĕпе ăста ишме пултаймастăп. Намăс». Ашшĕ умĕнче хăйне çавах лăпкăн тытма тăрăшать.

Сĕт пек шурă «Ракета» хумсене çурса хăвăртран хăвăрт çывхарса килет.

— Тăхта, хĕрĕм, каялла май авăс та, киммӳ чарăнĕ, — тет ашшĕ, теплоход çине пăхса.

Эльвира каялла авăсма хăтланать, анчах хăнăхнă хусканусене улăштараймасть, — пĕр енчен тепĕр енне чалăшать кимĕ. Акă, хăватлăн кĕрлесе, теплоход çумранах ыткăнса иртрĕ. Ланк! турĕ пĕчĕк кимĕ, таçта чĕмсĕр тĕплĕхе анса кайнă евĕр. «Атте!» — чутах кăшкăрса ямарĕ Эльвира. Унччен те пулмарĕ — кимĕ хум йăранне тепĕр хут анса кайрĕ. Çакна кĕтмен хĕрача аллинчи кĕсменĕ тухса ӳкнине те сисмерĕ.

— Ан яр аллунтан! Мĕн пăхатăн?! — кăшкăрчĕ ашшĕ.

Хăраса ӳкнĕ Эльвира юхса каякан кĕсмене хăлаçланса тыгаспăн пулчĕ, тытаймарĕ, кимĕ чалăшса, чалăшса кайрĕ те шыва ӳпĕнчĕ...

Тепĕр самантран Эльвира йĕпе тумтир ӳт çумне çыпăçса ларнине туйрĕ. Çак киревсĕр сĕртĕнӳ ун кăкрине пушшех тăвăрлатрĕ, тăруках сивĕ те хăрушă пулса кайнăран хыпăнса ӳксе, вăл тĕлсĕрмĕнсĕрех малалла ишме пуçларĕ. Чим, ара, ашшĕ! Урасăр ашшĕ! Эльвира каялла çаврăнчĕ. Ашшĕ унран инçех мар чыхăна-чыхăна ишет. Хĕрĕ ун патне васкать, ăна мĕнле те пулин пулăшма тăрăшать. «Нивушлĕ курмарĕç? — пăшăрханса шухăшлать вăл, шурă теплоход хăйсенчен инçерех те инçерех кайнине туйса. — Мĕн тăвас ĕнтĕ халь? Çыраналла ишес — ытла инçе. Турăçăм! Мĕн тавас?»

— Çă-ă-лăр! Пута-а-атпă-р! Çă-ă-лăр! — пĕтĕм вăйран кăшкăрса ячĕ Эльвира.

Анчах йĕри-тавра шăпах. Чим, ав, çыран хĕрринче пĕр çын

мĕшĕлтетмест-и? Çынах, тем тесен те çын. Авă кукленчĕ. Авă каллех утать. Çын! Çын!

— Э-эй! Пу-лă-шăр! Пута-а-атпă-ăр!

— Пу-лă-шă-ă-ăр! — кăшкăрчĕ пĕр кана ӳсĕрме чарăннă ашшĕ те.

Çыранти кĕлетке тăп чарăнса тăчĕ, ун-кун пăхкаларĕ, шыв хĕррине чупса анчĕ. Тем вăхăтран лăпкăн та тикĕссĕн мотор сасси кĕрлеме пуçларĕ.

— Килет, атте, килет!

Моторлă кимĕ çывхарнăçемĕн çывхарчĕ. Кăтра çӳçлĕ кĕрнеклĕ çамрăк кимĕç хăйĕн дюраль киммине шывра шампăлтатакан Эльвирăпа ашшĕ патне меллĕн пырса тăратрĕ.

— Эсир мĕн ытла шала кĕрсе чăпăл тума шутланă? Хĕрринче шыв ăшăх-и-мĕн? — Эльвира ашшĕне кимĕ çине улăхма пулăшса шӳтлесе илчĕ каччă.

— Ан та кала ĕнтĕ, кăна пĕлнĕ пулсан, килтен те тухас çукчĕ, — çӳçенсе хуравларĕ Эльвира ашшĕ. — Тавах ĕнтĕ сана, ывăлăм.

— Ну, ну, хаваслăрах, хаваслăрах, — йăл кулчĕ кимĕç Эльвирăна та. — Çавнашкал хĕрсен шыва путма юрать-и вара? Ай-яй-яй, епле асăрханман... Апла юрать-и-ха?

Çамрăк çын шывпа тулса ларнă кимме кăкарма пĕшкĕнчĕ. Тинех асăрхарĕ Эльвира: мĕн чухлĕ çупах пулă тытса тултарнă каччă! Пурте пысăк. Çиелтисем, мĕнпур вăйран çатăлтатса, тыткăнран хăтăлма тăрăшаççĕ. «Пĕр-пĕр пулă организацийĕнче ĕçлет ĕнтĕ», — шухăшларĕ хĕрача.

— Хăш çырана типме кайса пăрахас сире халь? — каллех шӳтлерĕ каччă.

— Ăçта каясси ĕнтĕ, килех каяр пуль. Ав çав ялтан эпир, — терĕ ашшĕ, аллине сылтăмалла тĕллесе.

Тапранчĕç. Ĕнтĕркенĕ ашшĕпе Эльвира юнашар лараççĕ, вĕсене тин çеç вилĕмрен çăлнă кимĕç газ тросне кирлĕ таран туртать те аллине пусма татакĕпе шăлса типĕтет, унтан васкамасăр пирус чĕртсе ярать. Вырăнлă, лăпкă унăн хусканăвĕсем. Çиççе тăракан хура куçĕсем, тухарах тăракан хитре янахĕ унра иксĕлми вăй пуррине, вăл хăйне кирек мĕнле самантра та алăра тытма пултарнине, унăн çирĕплĕхне кăтартаççĕ.

Темиçе уйăх каялла çеç-ха Эльвирăпа унăн юлташĕсем шкулта пĕр интереслĕ калаçу ирттернĕччĕ. «Хальхи вăхăтра паттăрлăх кăтартма пулать-и?» — ыйтнăччĕ вĕсенчен Земфира Павловна, чĕлхепе литература учительници. «Мĕншĕн ан пултăр?» — терĕ ун чух Аркади, ним иккĕленмесĕр. «Ненай, ненай, — йĕплесе нăйкăшрĕ Сенчуков Илле. — Тен, Çурçĕре кайса ярсан анчах?..» Ыттисем те каларĕç хăйсен шухăшне. Эльвирăна çеç черет çитеймерĕ, шăнкăрав пулчĕ. «Акă вăл, чăн-чăн паттăрлăх! — пĕтĕм вăйран калĕччĕ вăл халь хăйĕн юлташĕсене. — Ăна кăкăр çапса

кăшкăракансем мар, çак çамрăк пек сăпайлă, тӳрĕ кăмăллă çынсем тăваççĕ. Пăх-ха эс ăна, икĕ çыннăн пурнăçне çăлчĕ, ларать пурпĕрех ним пулман пек, пирус туртса».

Ытараймасăр пăхать ун çине Эльвира. Хăй ытла мĕскĕн, хавшак курăнать пуль ĕнтĕ качча. Çара урисене йĕп-йĕпе кĕпе аркипе хуплама тăрăшать, вăтаннипе ним тума аптрать. «Часрах киле çитесчĕ те, чечеклĕ шурă кĕпене тăхăнса çак каччă умне тухса тăрасчĕ. Ытла начарах мар пулĕ-ха Эльвира та...»

Акă çыран хĕррине те çитрĕç. Шĕвĕр пуçлă кимĕ çĕре перĕнчĕ те, мотор лăпланчĕ.

— Ну, ăнăççăрсем, анăр та Атăлпа тек ан выльăр çапла, — терĕ те каччă, кăкарнă кимме салтса, кайма пуçтарăнчĕ.

— Э, çук, çук, ывăлăм. Ан васка. Чей ĕçĕпĕр. Инçе мар, ав, куратăн-и шифер витнĕ çав çурта? Кайрăмăр, кайрăмăр. Апла юрамасть вăл, сана эпир ĕмĕр-ĕмĕр манас çук! — ача пек тархасларĕ ашшĕ.

Кимĕç пĕр кана иккĕленсе ларнă хыççăн Эльвира çине пахрĕ.

«Атьăр, атьăр», — пуçĕпе сĕлтсе, паллă пачĕ ăна хĕрача.

— Юрать, эппин, кĕрсе тухам, — терĕ те вăл çупах пулăсене брезент шăналăкпа витрĕ, тимĕр сăнчăрне çĕре ывăтса, кимĕ çинчен çăмăллăн сиксе анчĕ...

— Чаплă пурăнатăн, старик, — терĕ çамрăк çын кăвакпа сăрланă вырăсла хапхаран кĕнĕ чух.

— Чапĕ-мĕнĕ, — мăкăртатрĕ ашшĕ, — пурăнкалатпăр çапла.

Кимĕçпе старик пӳрте кĕрсе кайрĕç, Эльвира вара пăлтăра çакса хунă чечеклĕ шурă кĕпине илчĕ те лупаса васкарĕ. «Акă вăл, Эльвира, курăр ăна, мĕнрен кая вăл пирĕштирен, — пĕчĕк куçкĕски çине пăхса, хăйпе хăй киленсе пăшăлтатрĕ Эльвира. — «Пĕртен-пĕр пирĕштийĕм, çут ахахăм, эс çук-тăк — эп те çук çак тĕнчере...» Вăт мĕнле килсе тухрĕ, Аркади. Тĕрлĕрен пулать çав, ан çиллен — шăпаран тараймăн. Ыран эп сана ăсатма пырăп. Юрать-ха паян Атăла путса вилмерĕм, юрать-ха çак каччă тĕлне пултăм. Юрать-ха, юрать-ха, — эй, шĕвĕр сăмса, ларатăн хăвна ху мухтаса. Пӳрте чупмалла, чей лартмалла...»

Эльвира пӳрте çăмăллăн чупса кĕрет. Чунтан килĕштерсе шăкăл-шăкăл калаçаççĕ арçынсем, ашшĕ ăшă тумтир тăхăнса янă, кĕпи çинчен сарлака чĕн пиçиххи çыхса тăрать, кимĕç вара тĕпеле иртме ĕлкĕрнĕ, рамăсене вырнаçтарнă сăнӳкерчĕксене кăсăкланса пăхать.

— Эсĕ, Эльвира, чей лартса яр та какай ăшала, эпĕ наччаслăха пĕр çĕре кайса килем-ха, — тет ашшĕ.

Кимĕç чĕнмест. Çӳллĕ, йăрăс кĕлеткеллĕ вăл, хитре. Эльвира ăна хăй пĕлекен арçын ачасемпе танлаштарса пăхать — унпа юнашар тăратма юрăхлине тупаймасть.

— Юрать, атте, — тет те Эльвира хушнă ĕçе тума пикенет. Хăй çаплах палламан каччă пирки шухăшлать: «Пултарулла каччă, вăйлă»...

— Эльвира, — шартах сиктерет хĕре каччă сасси, — эсĕ, мĕн-и, шкулта вĕренетни-ха?

— Çук, кăçал вĕренсе тухрăм, — ăшшăн кулса, каччă куçĕнчен пăхрĕ хĕрача.

Какайне васкаса турарĕ те Эльвира плитка çине лартнă çатмана хучĕ. Тепĕр самантран чăшăлтатса пăсланма пуçларĕ тĕпел кукринче. Эльвира пӳлĕме тухрĕ.

— Акă пирĕн класс, — тĕллесе кăтартрĕ вăл пĕр ӳкерчĕк çине. — Пурте тенĕ пекех саланса пĕтрĕç ĕнтĕ. Эпĕ çеç кунта юлтăм. Вĕренме килес çул çеç каяс тетĕп.

— Килес çул... — каччă ун çывăхнерех, çывăхнерех пычĕ, куçне илмесĕр Эльвира çине пăхрĕ. Хăй сисмесĕрех Эльвира пĕрикĕ утăм чакрĕ, чĕри сиксе тухасла тапма пуçларĕ. «Нивушлĕ мана ыталасшăн вăл? Апла юрать-и вара?» — шикленерех шухăшларĕ хĕрача. Акă юнашарах ĕнтĕ вăл. Ниçта тарса ӳкме те çук. «Халĕ ыталать ĕнтĕ вăл», — шухăшласа илчĕ çамрăк хĕр.

Ыталамарĕ ăна каччă. Пĕчĕк ачана çĕклесе илнĕ пек вăшт кăна çĕклесе илчĕ те пӳлĕм тăрăх çаврăнкалама пуçларĕ. Мĕн пулчĕ-ха капла? Çав тери лайăх пулса кайрĕ Эльвирăна. Вăл пĕчĕк хĕрача, ăна ашшĕ вăйлă аллисемпе çĕклесе илнĕ те сывлăшра ярăнтарать. Лайăх, ытла та лайăх... Самантлăха ачалăх ытамне кĕрсе ӳкнĕ çамрăк хĕр хавассăн кулчĕ. Хăйне каччăн вăйлă аллисем çирĕпрен те çирĕпрех ыталама пуçланине сисмерĕ. Акă ют çын сывлăшĕ пите перĕнчĕ.

«Чим, ăçта эпĕ, чим, атте ăçта?» — мĕлтлетрĕ шухăш.

— Ярăр! — терĕ вăл хыттăн, каччăна янахĕнчен тĕксе. — Ярăр, атте килет. Атте килет тетĕп сире, мĕн, ăнланмастăр-и?

Чăнах та, пĕлнĕ пекех пулчĕ, çак вăхăтра хапха уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Эльвира, каччăран вĕçерĕнсе, йăпăр-япăр тĕпеле чупса кĕчĕ, çӳçне-пуçне тирпейлерĕ. Тинех сăмаварти шыв сиксе вĕренине сисрĕ вăл, какай çине тăвар яманнине астурĕ. Çамрăк çын пирус чĕртнĕрен ун тĕтĕмĕ тĕпеле явăнса кĕчĕ, куçа касрĕ.

Салхуллăн кĕрсе тăчĕ ашшĕ пӳрте.

«Сиснĕ, тем тесен те сиснĕ, тен, курнă та чӳречерен! — шартах сикрĕ Эльвира. — Халĕ мĕн пулать ĕнтĕ? Туса хутăм, ах, туса хутăм... Кимĕçе ав ним те мар, ларать пирус паклаттарса».

Анчах хăрани ашшĕ калаçма пуçласанах иртсе кайрĕ.

— Килте ларать тетни çав Кулинене. Пĕтĕм яла лавкка кирлĕ, вăл пур — ирех вăрмана тухса кайнă. Вăт, ывăлăм, мĕн тăвăн, шăпамăр çапла килсе тухрĕ пуль ĕнтĕ. Эп, акă, шутларăм-шутларăм та... Каç пулсан луччă, ĕç хыççăн... Юлташусемпе пĕрле

хаваслăрах та пулĕ, — терĕ те старик сĕтел çине пĕрер тенкĕлĕх виçĕ кĕмĕл укçа кăларса хучĕ.

— Ат-те! — кăшкăрса ячĕ Эльвира, анчах ашшĕ те, качча та хăй çине пит тĕлĕнсе пăхнăран урăх сăмах чĕнмерĕ.

Сăмавар пырса лартнă вăхăтра кĕмĕл тенкĕсем сĕтел çинче çукчĕ ĕнтĕ. Эльвира ăшаланă какай илсе килчĕ, çăкăр касса хучĕ, икĕ куркана чей тултарчĕ те картишне тухрĕ. Кунта та питĕ пăчă иккен. Тăвăрланса, кӳтсе çитрĕ унăн чунĕ, вăл, шăлне çыртса, Атăл çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те, тарăннăн сывлăш çăта-çăта, татăлса йĕме пуçларĕ. «Ытла та мĕскĕн-çке эпĕ, ытла та вăйсăр». Картишĕнче шиплетсе чупса çӳрекен чăх чĕпписемпе танлаштарчĕ вăл хăйне, вĕсенчен пĕрне алла илсе, ăна хĕрхенсе ачашларĕ, йăпатма пикенчĕ.

«Анчах пур вĕт-ха çынсем, пур. Вĕсемшĕн умри çул яланах паллă, шухăш уçă. Витĕр курма пĕлеççĕ вĕсем сана: ăçтиçук-и эсĕ, чăн-чăн çын-и. Çирĕп кăмăллă, мал ĕмĕтлĕ. Çавсем пек пуласчĕ. Мĕн кирлĕ-ши вĕсем пек пулма?..»

Эльвира çанă вĕçĕпе куçне шăлса типĕтрĕ, хăйне хăй алла илме тăрăшрĕ. Акă пӳртум алăкĕ чĕриклетрĕ. Арçынсем тухрĕç. Кимĕç куçĕ каллех Эльвирăннипе тĕл пулчĕ. «Намăс, чăтма çук намăс». Пуç сĕлтсе урама чĕнет каччă. «Çук, тем парсан та!» «Ай-яй-яй», — тĕлĕннĕ пек, пуçне силлет лешĕ. «Иĕксĕк», — пĕртен-пĕр сăмах пуçа килет Эльвирăна. Вăл, ним чĕнмесĕр, пӳрте кĕрсе каять. Шутсăр шыв ĕçес килет унăн, чӳречене яри уçса ярать те сĕтел хушшине ларать.

Çук, çиес килмест. Чашăк-тирĕке каллех тĕпеле кайса лартать вăл, унтан хăйĕн савнă вырăнне, лупаса, васкать. Картишĕнче темскер каскалама пуçланă ашшĕ ăна куçĕпе ăшшăн ăсатса ярать: Эльвира ывăннă, кантăрах ĕнтĕ, эх, кунĕ те çав паян...

Выртать Эльвира, çăмăл шурă пĕлĕтсем хĕвелтухăçнелле шунине сăнать. Юхать ушкăн-ушкăн пĕлĕт, çатăлтатать унăн Атăлĕ, çаплах тăвалла-анаталла çӳреççĕ шурă пăрахутсем.

«Лайăхчĕ, ырăччĕ, савнă çын теттĕм, — каллех паçăрхи канăç памасть Эльвирăна. — Мĕн пулчĕ? Нимĕн те ăнланаймастăп. Килчĕ, кайрĕ. Тутлипе килчĕ те йӳççине хăварчĕ».

Тем вăхăт çак шухăш танатинчен уйрăлаймасăр выртнă хыççăн хуллен хупăнаççĕ хĕрача куçĕсем. Пĕрре çӳçенсе чĕтрет Эльвира, тепре чăм-шыва ӳкет. Таçта, çын пырса тĕкĕнмен утрава пырса лекет вăл хăй тĕлĕкĕнче. Нимĕн те ӳсмест иккен унта. Çĕр çинче купи-купипе пĕрер тенкĕлĕх кĕмĕл укçа çеç йăваланса выртать. Темĕн чул кĕмĕл укçа. Хăрушă. «Атя, атя кунтан хăвăртрах», — хулĕнчен тытса васкатать пек ăна сасартăк таçтан сиксе тухнă Аркади. Васкатать, васкатать. Хăй малалла тинкернĕ. Иккĕшĕ те, сенкер сывлăшра çунат сарса, хĕвел патнелле вĕçеççĕ пек...

ВУЧАХ

Повесть

1

Каллех сисрĕ çакна Вĕçелис: ун хыçĕнче- çывăхра та, аякра та мар — самантлăха сывлама чарăнса, вăл тăрать. Ун çине çаврăнса пăхма юрамасть çамрăк хĕрарăман, çавăнпа вăл, чăх чĕпписене апат пама кукленнĕскер, çак вăхăта мĕнле те пулин ытларах та ытларах тăсма тăрăшать, сăсăлпа хутăштарнă çĕрулмине тирĕкрен ывăçĕ çине хурать те чечен сăмсаллă чĕрчунсене алăранах çитерет. Чăх чĕпписем, пĕр-пĕринпе ăмăртса, ывăç тупанне таккаççĕ. Вĕçелиса çакă чуна такканăнах туйăнать. Çук, çук, тем тесен те хыçалалла çаврăнса пăхма юрамасть унăн. Кирек мĕн чухлĕ ирттĕр вăхăт, вăл чăтĕ, савăтри çĕрулми пĕтсен те хăйне ĕçлĕ çын пек тытма пăрахмĕ. Урамри çын вара пуçне йăвашшăн çĕрелле усĕ те, хултуйине чĕриклеттерсе, каллех урампа утса кайĕ. Чылайччен хăлхара илтĕнсе тăрĕ çак хурлăхлă сасă.

Чăтас пулать.

Тӳссе ирттересех пулать çак саманта.

Тĕклĕ ураллă ырханкка автан, унталла-кунталла чупса çӳресе хăй валли пĕр турам апат та тупаймасăр аптранăскер, хăюлланса, сĕмсĕрленсех пычĕ. Малтан вăл кăлăк чăххине панă çĕрулми турамне туртса илсе тарчĕ, вара, вĕçкĕннĕн пускаласа, Вĕçелис патне çывхарчĕ те, ун аллинчи тирĕк çине вăрă-хурахла хăпарса кайса, мĕнпур апата çĕре тăкса ячĕ.

«Ах, пӳтсĕр!» — чутах кăшкăрса ямарĕ Вĕçелис. Тăкăннă çĕрулмине васкамасăр пуçтарса каллех тирĕке хучĕ вăл, чĕпсене паçăрхи пекех ывăçран çитерме пуçларĕ. «Ах, пӳтсĕр!» — тепĕр хут аса илчĕ хĕрарăм хăйĕн сăмахĕсене. Вара хăйĕнчен хăй хăраса ӳкрĕ. «Илтмерĕ-ши? Хăй çине илмерĕ-ши çав сăмаха? Анчах вăл та пĕрре сĕмсĕрленес пулсан çакăн пек? Вăл та куллен хăюлланать авă. Вăл та хапха патне киле-киле тăракан пулчĕ». Асăрханса, васкамасăр пĕр утăм, ик утăм турĕ Вĕçелис патнелле. Иккĕшин хушшинче ĕнтĕ темле курăнман çип хиврен карăнса тăрать. Виççĕмĕш утăмне тăвас пулсан?

Урамри çын ассăн сывласа ярсан, Вĕçелис туйрĕ: «Пуçне усрĕ. Каять эппин». Чăн та, тепĕр самантран хултуйи чĕриклетсе илчĕ, хăрах ура йывăррăн малалла ярса пусни илтĕнчĕ. «Каять». Анчах темшĕн-çке çакă паян çăмăллăх кӳмерĕ Вĕçелиса. Хултуйи чĕриклетни аякка-аякка кайса пычĕ. Вĕçелис, унченхи пек, хапха патне пырса куçĕпе ăсатмарĕ аманнă çынна. Вырăнтах ларчĕ. Вăйĕ çитмерĕ ура çине тăма.

Аякран пăхсан, çамрăк хĕрарăма йывăр шухăш кил-карти варрине пусарса лартнăн туйăннă пулĕччĕ. Урамри арçын, уксахла-уксахла, аслă урамран тăкăрлăка пăрăннă ĕнтĕ. Вĕçелис умĕнчи чĕпсем, пур пек апата çисе ярса, тĕрлĕ çĕре саланнă. Хăй вăл çаплах хускалмасар ларать-ха.

Çӳлерехрен, хăйăр илекен ту çинчен сăнас пулсан, ял алă тупанĕ çинчи пек тухса тăрĕччĕ. Аслă урамăн икĕ енĕпе — хăшĕ пĕчĕкрех, хăшĕ пысăкрах — çуртсем, хуралтăсем, пахчасем. Кашни виçĕ-тăватă пахчара — пĕрер мунча. Аслă урам варринче — ĕлĕкрех Мăрса Палюкĕ пурăннă тимĕр витнĕ çуртра — колхоз правленийĕ. Ăна хирĕç, урамăн тепĕр енче, тăррине илсе пăрахнă чиркӳре — ял клубĕ. Ял хĕрринче вара — ферма çурчĕсем. Тĕрлĕ çĕрте ушкăнăн-ушкăнăн ватă йăмрасем çилпе кашлаççĕ.

Ял варрипе кукăрăла-кукăрăла, çаврăна-çаврăна Çарăмсан юхать. Акă мĕн кивелмест, акă мĕн ватăлмасть нихçан та! Хĕл çитсен Çарăмсан шăнса ларать, çуркунне шатăртатса тапранать те, пăтранса, çырантан тухса, хăй çулĕпе анăçалла чупать, çу çитсен ун шывĕ тăрăлать, хĕвел çинче кĕленче пек йăлтăртатса выртать, кĕркунне çырма тĕксĕмленет, çӳçенсе илсе, каллех пăрпа витĕнме пуçтарăнать. Юнашар ӳсекен ешĕл хăвалăхпа хăмăшлăх юханшывăн ĕмĕрхи çамрăклăхне, унра асамлă вăйпа чăрсăрлăх паян кун та питĕ хăватлине палăртаççĕ.

Ку вăл — Виççырма ялĕ.

Хăйăр илекен тăвăн тепĕр енче — вак чуллă, кĕллĕ çĕр. Пĕрикĕ çухрăмра хура вăрман кичеммĕн курăнса ларать. Вăрман леш енче — ялсемпе хуласем. Виççырмара та, вăрман леш енче те пурнăç вĕрет. Тăварлă, тертлĕ, нушаллă, куççуллĕ, çапах çăлкуç пек çуттăн тапса тăракан чĕрĕ пурнăç.

Таçта, Тăван çĕршыв тулашĕнче, вăрçă кĕрлет.

Виçĕ çул ĕнтĕ чарăна пĕлмесĕр алхасать вăл.

Пĕр суран тӳрленет те, тепри хускалать. Ытти, савăнăçли, паян-ыран килес çук. Анчах вăхăт иртет те иртет, кĕтетĕн, тархасласа йыхăратăн хаш сывласа ямалли çав ырă куна — вăл тарать те тарать санран, унтан та ытларах çĕнĕ асап, çĕнĕ арпашу, çĕнĕ ăшхыппи сике-сике тухать пурнăçра. Чăтмалла. Пурăнма çуралтăн пулсан, тӳсесех пулать.

2

Миçе хутчен иккĕленмен-ши Антун: хăçан, хăш самантра йăнăш турĕ вăл? Пĕччен марччĕ-çке, хăйпе пĕрле мĕн чухлĕ салтак чупатчĕ, анчах такăнасса, ав, Иванпа иккĕш кăна такăнчĕç вĕсем. Тен, малалла тимлĕрех пăхмалла пулнă? Тен, хăй патне вĕçекен хурçă таткине асăрхама май килнĕ? Пăхман çав Антун,

асăрхаман. Командир приказĕ ăна малалла ыткăнма хистенĕ. Вăл васканă. Тăшман пĕртен-пĕр шухăшпа — таптас, çĕмĕрес, вĕлерес шухăшпа юлашки çапăçăва çĕкленни куçкĕретех паллăччĕ пулсан, мĕнле те пулин хӳтлĕх шырамаллаччĕ-и Антунăн? Хăйĕнчен çирĕм-вăтăр утăмра кăна чупакан фашистсене курса тăнă чухне кашни юн тымарĕ курайманлăхпа, тарăхупа тулнăччĕ те, çав çынçиенсене куçпа ăсатса ямаллаччĕ-и унăн? Çук, хăйне айăплама пултараймасть Антун! Юлташĕсем те айăплаймаççĕ ăна. Тӳррĕн пăхнă вăл вилĕм куçĕнчен. Хăраман та, чакман та.

Анчах çак асаилӳ те çăмăллăх куреймест ăна. Курать Антун: Виççырмара вăл вăрçăран таврăннă пĕртен-пĕр салтак. Хăй ир таврăннăшăн ялти кашни çын — упăшкине е ывăлне фронта ăсатнă кашни хĕрарăм е ватă тарăхса та сиввĕн пăхнă пек туйăнать ăна. «Эсĕ килнĕ, эсĕ уксах пулин те чĕрĕ, пирĕннисем ăçта?» — тет пек кашнин сăн-пичĕ. Кунта çуралса ӳснĕ пулсанах ун пек пăхмастчĕç пулĕ те — ют çын-çке Антун Виççырмашăн. Ыттисен кăна мар, Вĕçелис куçĕнче те — хăйĕн чи çывăх юлташĕн арăмĕн куçĕнче те ăшă туйăм çиçни курăнмасть авă. «Юрĕ, килтĕн, хыпар пĕлтерсе «савăнтартăн» тата мĕн сулланса çӳретĕнха ял тăрăх», — тенине систернĕ пек, çаврăнса та пăхасшăн мар вăл Антун çине. Пĕр Микулай пичче çеç хăваламасть, вăл кăна ăнланать салтака.

Утать те утать Антун Виççырма урамĕпе. Хултуйи çине пĕтĕм кĕлеткипе тĕршĕнет те сылтăм урине йывăррăн малалла куçаракуçара пырать. Пĕр виç уйăх каялла тĕлĕкре те тĕлленменччĕ вăл хăçан та пулсан çак ялта çӳрессе, ун ятне те Иванран кăна илтнĕччĕ, халĕ вара кашни урама, кашни кĕтесе хăйĕн пилĕк пӳрнине пĕлнĕ пек вĕренсе çитрĕ. Микулай пичче пӳртĕнчен тухать те тăкăрлăкпа утать Антун, унтан аслă урам тăрăх анаталла анса, Вĕçелис пурăнакан çурт умĕнче сывлăш çавăрать те Çарăмсан хĕррине çул тытать. Ялĕ, вăйпитти арçынсем çуккипе, юхăнса кайнă пулин те, хăй евĕрлĕ хитре. Пысăк ту аяккипе Çарăмсан çуталса выртни, унăн пĕр енĕпе хăвасем кашласа ӳсни уйрăмах илемлетет ăна. Кунта, юханшыв шурă-хĕрлĕ вак чул çине тухса ăшăхланнă çĕрте, салтакăн хăй кăмăллană вырăн пур: купăстапа сухан лартса хăварнă пахчан вĕрлĕк карти çумне таянать те вăл чикаркка пĕтĕрет, тăрать вара шыв шăнкăртатса юхнине сăнаса. Тепĕр чух кунта вĕт-шакăр ачасем пулă тытма анаççĕ, йĕм пĕççисене тавăрса шыва кĕрсе тăраççĕ те пулла ăманпа вăлтма пикенеççĕ. Вĕсене курсан, чĕри пушшех ыратса каять Антунăн, тăнлавĕсене темле вăй хыттăн хĕсме, çатăрлама пуçлать.

Çăмăл мар ĕнерхи салтака. Кашни кун тенĕ пекех ун куçĕ умне арăмĕпе ывăлĕ туха-туха тăраççĕ. «Эс пурăнатăн... эпир çук акă», —

теççĕ пек вĕсем те. Çак ялти кашни утăмрах хăй çинчен Иван аса илтерет пек. «Ан пăрах Вĕçелиса, пулăш, хӳтĕле ăна», — тет пек Антуна фронтра выртса юлнă юлташĕ. Анчах ĕмĕрлĕхех хăйĕнчен уйрăлса кайнă çывăх çыниисене нимĕнпе те пулăшма пултараймасть Антун. Вăхăт шăвать — чĕре асапĕ пĕтмест. Хăй пуçĕнчен арăмĕпе ывăлне хăваласа яраймасть вăл, Вĕçелиса вара нимпе те пулăшма пĕлеймерĕ-ха халиччен. Тем тесен те иртерех килчĕ пулĕ Антун Виççырмана, тата пĕр-ик çул кĕтсен аванрах пулатчĕ пуль, вăхăт сипленĕ пулĕччĕ чĕре суранне — хăйăнне те, Вĕçелисăнне те. Мĕн тăвăн, урăх çĕрте те кĕтсе тăракан çук ăна, килчĕ пулсан, вырнаçмалла — ялта учительсем çитмеççĕ, вырнаçмалла та, тем те чăтса ирттернĕ çамрăк хĕрарăма май пур таран пулăшма тăрăшмалла.

3

Кун хыççăн кун иртнĕçемĕн ытларах та ытларах каннăçсăрланчĕ Вĕçелис. Аманнă çын ялтан кайма васкамарĕ-ха, аслă урамра куллен икшер е виçшер хут ута-ута иртрĕ. Виççырмара Вĕçелис пĕччен кăна пурăннă пулсан, тем марччĕ пулĕ, анчах çынсемçке кашни килĕрех. Туяççĕ, сисеççĕ вĕсем Вĕçелиспа хултуйиллĕ çын хушшинче ăнланмалла мар çыхăну пуррине. Пĕри малашне мĕн пуласса чăтаймасăр кĕтет пуль, тепри Вĕçелиса аскăн хĕрарăм вырăнне хурать пуль, виççĕмĕшĕ, тен, тĕрĕсех ăнланать. Темле çав. Тĕрĕс ăнланаять-ши кам та пулин? Яла аманнă çын килсе кĕнĕренпе Вĕçелис чĕринче мĕн пулса иртни уншăн хăйшĕн те пĕтĕмпех паллă мар-ха. Ăнланма çук хутшăну мĕнпе вĕçленессе пĕлмест Вĕçелис, вăл тем кĕтет те кĕтет, ыранхи кун уçăмлăрах пуласса шанать.

Урамра вара хултуйи чĕриклетет те чĕриклетет. Ĕнтĕ пĕр-икĕ хутчен те куçа-куçăн тĕл пулчĕç вĕсем. Аманнă çыннăн ырă сăнсăпачĕ, çамки çине кăтраланса анакан сарăхнă çӳç пайăркисем, хĕвелпе шупкалнă гимнастерки, сылтăм ури вырăнне чĕркуççи таран йăлтăртатса, çуталса кайнă йывăç татки, хул айĕнче, ан ыраттартăр тесе, çĕтĕкпе чĕркесе майлаштарнă хултуйи — çав-çавах пĕртте улшăнмасть çак çын, çав-çавах нимĕн те улăштармасть. Мĕн улăштарайтăр-ха ĕнтĕ, хăйпе пĕрле салтак кутамккине кăна çĕклесе килнĕ пулсан? Улăштармалăх кĕпе-йĕмĕ пур-ши тата? Пушарник патĕнче, пĕлтĕр арăмĕсĕр тăрса юлнă Микулай пичче патĕнче, пурăнать вăл. Мĕнле çукалать-ши пур пек кĕпийĕмне, мĕн пĕçерсе çиет-ши салтак? Эх, чунсăрла хăтланать пулĕ те Вĕçелис...

Çак шухăшсемпе ларчĕ вăл Мĕтри кĕпине сапласа. Мĕтри хăй, тулă пуссинче яра куна çум çумласа ĕшеннĕскер, апат çисе-

нех тутлăн çывăрса кайрĕ. Пĕрре ассăн сывларĕ Вĕçелис, тепре, кĕпе саплама пăрахсах, хăйпе хăй пăшăлтатрĕ. Антун çак çурта пĕрремĕш хут мĕнле килсе кĕнине, унăн тăварлă, йуçĕ, хăрушă сăмахĕсене аса илчĕ вăл. Вара чăтаймарĕ, пуçне чĕркуççи çине хучĕ те пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме, кăмăла ирĕке ярса йĕме тытăнчĕ. «Эх, Иванăм, Иванăм, мĕн туса хутăн-ха капла? Чуну пурччĕ-и санăн? Юлашки самантра та пулин эп санпа çеç пурăнма пултарни çинчен шухăшларăн-и? Çак нушаран, çак асапран санпа пĕрле кăна тухма май пуррине пĕлтĕн-ши эсĕ? Çапла ĕнтĕ, куçу ĕмĕрлĕхех хупăнас умĕн те эс ман çинчен шухăшланă. Эс хăвăн юлташна чĕнсе илнĕ те ман çинчен каласа панă. Эсĕ унран пулăшу ыйтнă. Анчах ун пек пулăшăва йышăнма мана çав тери йывăр пуласса щутланă-ши эс? Тен, эсĕ, хăвна ашшĕ тесе хисепленĕскер, манăн шăпа пĕр хăвăнтан кăна килет тесе шухăшланă пулĕ. Тен, вилĕм хăвăрт çывхарнине сиссе, сăмахусене васкарах каларăн пулĕ. Васканă эс, Иван, питĕ васканă. Васкаман пулсан, эс ман пата çыру çырса ярăттăн. Эс шухăшласа пăхма сĕннĕ пулăттăн. Унтан тата ман хамăн та чун пуррине аса илĕттĕн. «Çакăн пирки мĕн шухăшлатăн, Вĕçелис?» — тейĕттĕн эс. Ăнланатăп, усал тăвас тесе мар, манпа ĕмĕрлĕхе уйрăлнă чух чуну сивĕннине палăртас тесе те мар тунă-ха эс ку ĕçе. Çапах та, Иван, çапах та... çывăх çын пек, упăшка пек туман эсĕ. Халĕ, акă, салтак асапланать. Пĕлетĕп, виçĕ çул хушшинче санăн унран çывăх юлташ та пулман. Шел ăна, питĕ шел. Çак тĕнчере вăл пĕр-пĕччен тăрса юлнă. Ăна та шанчăклă юлташ кирлĕ. Пултараймастăп, Иванăм! Мĕнле-ха капла, эсĕ, пĕртен-пĕр эсĕ пурччĕ ман пурнăçра. Малашне вара... Пултараймастăп, Иванăм!»

Сасартăк ыйхăран вăраннă Мĕтри сасси илтĕнчĕ.

— Инке, инкем, лăплан, тархасшăн, — терĕ вăл, хăраса ӳкнĕскер. — Çав урасăр салтак каллех кӳрентерчĕ пуль-ха. Эп ăна калатăп. Эп ăна ыранах калатăп. Тухса кайтăр вăл пирĕн ялтан.

Çак сăмахсене илтсен, Вĕçелис шартах сикрĕ. Мĕтри кравачĕ патне майĕпен утса пычĕ те, ача куçĕнчен пăхса, çапла каларĕ:

— Ун пек ан ту, Мĕтри, ырă çын вăл. Пирĕн пекех асаплă, нушаллă çын. Вăл айăплă мар.

Чылайччен çывăраймасăр выртрĕ Вĕçелис.

Çур çĕр çитеспе çил тухрĕ пулмалла та, чӳрече кантăкне пилеш туратгисем лексе кăтăртаттарма пуçларĕç. Кăшт тăрсан, çиçĕм йăлтăртатса илчĕ, аслатин инçе сасси вăйсăррăн илтĕнчĕ. Каярах пĕр хушă вĕтĕ çумăр чăшăлтатрĕ.

Автансем авăтрĕç.

Кантăкăн çӳлти куçĕнче каллех çăлтăрсем выляма пуçларĕç.

...Ак çак çумăр хыççăнхи пек йăлтăртататчĕ пуль çав ĕнтĕ

Ваçинкке çаранĕ. Эрне ытла лӳшкетрĕ ун чухне. Курăкĕ вара пилĕк таранах ӳснĕччĕ. «Хĕвел курăнчĕ пулсан, пуçлар, кайран тем пуласси, çăвĕпех йĕпе-сапа тăчĕ-тĕк, тур панине те илеймĕн», — терĕç ял çыннисем. Лавсем çине темиçе кун пурăнмалăх тĕрлĕ ăпăр-тапăр тиерĕç те, шавлăн каласа-каласа, Ваçинкке çаранне утă çулма тухса кайрĕç.

Çанталăкĕ сасартăк уяртрĕ. Хĕвел, тин вăраннă çамрăк хĕр чӳрече каррине тирпейлĕн сирсе уçнă пек, явăнса шăвакан шурă пĕлĕтсене майĕпен унталла-кунталла хăваласа ячĕ. Кăнтăрла çитиччен чăшăл кайнă çаран пăсланса-мăкăрланса тăчĕ.

Куçа шартса яракан, пурне те ӳсĕртекен, чуна кăтăклакан çутă, асамлă, ырă кунсем пуçланчĕç.

Вунсаккăртаччĕ Вĕçелис.

Ун тавра хăй ачаран пĕлекен ял çыннисемччĕ, ешĕл çаранпа сулхăн кӳрекен çирĕк йывăççиччĕ, чечекчĕ, пыл хурчĕччĕ, лĕпĕшчĕ. Ун пуçĕнче хăватлă çунат паракан, паккус вĕçне çитсен канма ларма та мантаракан çутă шухăшсемччĕ.

Иванччĕ унпа юнашар.

Пĕрне-пĕри асăрхасси те, пуçласа сăмах хушасси те ытла ăнсăртран пулса тухрĕ вĕсен. Тĕрĕс ĕнтĕ, унччен те курман марччĕха Ивана, пĕр ялта епле курмăн? Анчах çав кун... Халĕ аса илет те ăна Вĕçелис, пĕрре вăтанса, тепре чăтма çук тарăхса каять.

Ухунькка вăрманне çырла татма кайнăччĕ вĕсем ушкăнпа. Клавье мăнаккăшĕ хăйĕн икĕ хĕрне, Верукпа Праские тата Вĕçелиса никам пырса тĕкĕнмен ĕшнесем тăрăх илсе çӳрерĕ. Çырли, чăнах та, нумайччĕ ĕнтĕ. Пĕр ĕшнинче питĕ хыта савăнчĕ Вĕçелис: пуç пӳрне пысăкăш хĕп-хĕрлĕ çĕр çырлине татса пĕтерме çук. Нумай вăхăт иртрĕ-и, сахал-и, пуракĕ тăп-тулли пулчĕ те ун, вăл пуçне çĕклерĕ, ниçталла кайма аптраса тăчĕ. Темиçе хут кăшкăрса пăхрĕ, анчах хăй сассисĕр пуçне урăх сасă илсе килмерĕ вăрман. Чылайччен аташса çӳрерĕ вара Вĕçелис. Хĕвел анаспа кăна пырса тухрĕ Çарăмсан хĕррине. Çыран тăрăх тăсăлакан урапа çулĕ Виççырмана илсе кайнине тавçăрсан, лăштах пулчĕ вунсаккăрти хĕр. Вăл тӳрех шыв патне васкарĕ, кăштах канса илнĕ хыççăн çăвăнса уçăлма шут тытрĕ. Тулли пуракне хăва тĕми айне лартрĕ вăл, кĕпине хывса туратран çакса хучĕ. Вара, çӳçене-çӳçене, Çарăмсана кĕрсе кайрĕ.

Чылай шăмпăртатрĕ пулĕ çав Вĕçелис чуна уçăлтаракан кантăк пек таса шывра, такамран хăрасси е вăтанасси пуçра та пулмарĕ унăн, анчах «уй куçлă, вăрман хăлхаллă» тесе ахаль каламан-мĕн ваттисем, шывран тухам тесе шухăшланă кăначчĕ, çав самантра çыран хĕрринче самăртарах пĕр арçын хăй çинчен куç илмесĕр пăхса тăнине асăрхарĕ те сасартăках тăр-тăр чĕтреме пуçларĕ. Чим, Мăрса Мишурĕ вĕт ку. Мĕн туса тăрать-ха, эппин, кунта?

Шывран йăпар-япăр тухса, кĕпине тăхăнма чупасшăнччĕ Вĕçелис, çав самантра Мăрса Мишурĕ хĕрлĕ çыртан йывăррăн сиксе анчĕ те ун çулне пӳлсе хучĕ. Кăкăрĕсене аллипе хупларĕ Вĕçелис, Мишур куçĕнчен тархасласа пăхрĕ: ан тĕкĕн, туршăн та, ан тĕкĕн! Анчах лешĕ, куçĕсене йăлтăртаттарса, ним уямасăр çывхарчĕ те çывхарчĕ ун патнелле. Вĕçелис вара, çари! çухăрса, каллех шыва сикрĕ.

— Кай кунтан! Кай, тархасшăн! — шывпа чыхăна-чыхăна тархасларĕ вăл Мăрса Мишурне.

— Тух, — терĕ арçын. — Тĕкĕнместĕп. Шыва путăн тата.

— Путăпин. Сан мĕн ĕç? Халех куçран тасал! Вара тухатăп, — хăюлланчĕ Вĕçелис.

— Эх, Вĕçелис, Вĕçелис. Юрататăп эп сана. Паçăр, вăрманта, пирĕн утар çумĕнченех иртсе кайрăн эсĕ. Сан хыççăн килтĕм.

— Арăмна пăрахсах пуль. Намăссăр эсĕ! Ак тепре кăшкăратăп та, тӳрех чупса килет.

— Уйрăлатăп эп унран. Сан пирки уйрăлатăп. Ан турткалан, Вĕçелис. Ан вĕçерт телейне... Кайран туй тăвăпăр. Алă çинче çĕклесе çӳрĕп.

— Кай, тетĕп. Кăшкăратăп. Кăшкăратăп. Кай! А-и-и-и-и!

Çакă шиклентерчĕ-ши Мăрса Мишурне е паянхи калаçуран нимĕн те тухас çук тесе шутларĕ-ши, васкамасăр тăчĕ те мĕнле килнĕ çавăн пекех хăвăрттăн хăвасем хушшине кĕрсе кайса çухалчĕ.

Çыран хĕрне Иван хашкаса чупса çитнĕ çĕре Вĕçелис, кĕпине тăхăнса, сывлăш çавăрма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ.

— Мĕн пулчĕ? — ыйтрĕ Иван. — Кам кăшкăрчĕ кунта? Эп вутă хума килтĕм, такам хурах кăшкăрма пуçларĕ.

Вĕçелис пĕр вăхăт ним калама аптраса тăчĕ. Çапах тавçăрчĕ, кунта пулни-иртни çинчен çынна каласа парсан, ялта тĕрлĕ сăмах саралĕ, пĕлсе пĕтер вара кайран кам тĕрĕс, кам айăплă пулнине.

— Эпĕ, — терĕ вăл Ивана. — Çакăнта, тĕм хушшине, çĕлен кĕрсе кайрĕ.

— Асăрханмалла пулнă. Сăхнă пулсан? — Вĕçелиса хĕрхенсе калаçрĕ Иван.

— Сăхатчĕ ĕнтĕ. Юрать-ха, кăшкăртăм, — терĕ Вĕçелис.

Çапла куçа-куçăн тĕл пулчĕç вĕсем чи малтан. Çапла утса кайрĕç Виççырма еннелле.

Иван, Иван... Санран уйрăлнăранпа темиçе çул та иртрĕ ĕнтĕ, ĕмĕр-ĕмĕр ялтăртатакан парнесем пек, асаилӳсем çеç тăраççĕ куç умĕнче. Парнесем темелле-ши вĕсене е нихçан тӳрленми сурансем тесен тĕрĕсрех пулать-ши?

Чун ăшшине, çывăх çын ăшшине кăмăл туличчен курайманччĕ çав Вĕçелис. Амăшĕ унăн выçлăх çул çĕре кĕчĕ. Ашшĕ

вара, вăрçăран таврăннă хăрах ураллă салтак, иккĕри хĕрачине çавăтса, ялтан яла ыйткалама тухса кайрĕ. Астăваймасть çав вăхăта Вĕçелис. Тен, çакă аван та пулĕ. Астунă пулсан, унăн куçĕ умне кăрлачăн пĕр шартлама сивĕ кунĕ, вăрманти ансăр çул тăрăх вăйран кайнă икĕ çын — Вĕçелиспа ашшĕ — хашкаса утни, вĕсене лашапа килекен ырă кăмăллă тутар хăваласа çитсе инкекрен çăлни, анчах çакăншăн савăнма иртерех пулни, кайсан-кайсан, лаша, тулхăрса илсе, тăп! чарăнса тăни, выç кашкăрсем улани, лаша, ăнсăртран ĕрĕхсе кайса, Вĕçелис ашшĕне хытă çул çине ӳкерсе хăварни, каçпулттипе вара тутар пиччепе Вĕçелис паллă мар яла пырса кĕни туха-туха тăнă пулĕччĕ. Çавăн чух çухатрĕ те вăл хăйĕн чи çывăх çыннисене (ашшĕн йывăç ури кăна тăрса юлнă тетчĕç каярах). Ашшĕ-амăшĕн ăшши мĕн иккенне пĕлеймерĕ вăл текех. Кĕркуннеччен тутар пичче патĕнчех пурăнчĕ хĕрача. Унтан вара амăшĕн аппăшĕ, Клавье мăнаккăшĕ, шыраса тупрĕ ăна, хăй патне, тăван яла, илсе кайрĕ.

Çупăрлама, ачашлама вăхăт пулнă-и мăнаккăшĕн — хăйĕн те çичĕ ача, пĕри тепринчен пĕчĕкрех, тăрантармалла, тумлантармалла, ăшăра тытмалла вĕсене, апла-тăк кунĕн-çĕрĕн хирте е вăрманта пулмалла, упăшкипе пĕр тан ĕçлемелле.

«Çапах та тав сире, çынсем, тăвансем, пăрахмарăр мана, инкек çулсенче пĕтме памарăр», — тет халĕ Вĕçелис, питçăмарти çинчи куççульне шăла-шăла илсе.

Асаилӳ, асаилӳ...

— ...Кавча тух мана, Вĕçелис. Сана чĕререн юрататăп эпĕ, — куçран ăшшăн та çывăххăн пăхса каларĕ Иван Вĕçелиса Таркăн çăлĕ патĕнче.

Тухăп та, тухмăп та тееймерĕ Вĕçелис. Хĕр сăпайлăхĕ çинчен манас темерĕ вăл. «Мĕн тăвăн-ха эсĕ манпа, тăлăх-туратпа, выртса тăма тӳшек-минтер тăваймарăм, пĕртен-пĕр кĕпене усрамашкăн арчам çук», — тесшĕн пулчĕ вăл Ивана. Анчах вăтанса пăхса илчĕ те ун çине — Иванĕ хăй те чухăн хресчен килĕнче çуралнă, тӳшек-минтер е арча илĕртет-и ăна, — çук-çке, çук, хăй кăмăллакан, хăйне ăнланакан пурнăç юлташĕ пултăр ун валли, — калас сăмахне те калаймарĕ Вĕçелис.

«Ай-уй, ир пулать-çке санпа пуплесе, çывăрма вăхăт, кайса канар-ха хĕвел тухиччен», — терĕ çеç хĕр.

Анчах Иванĕ хăй арçын пулнине кăтартасах терĕ пулмалла, Вĕçелис умне тăчĕ те малалла утма памарĕ ăна, ун куçĕнчен пăхрĕ.

«Мĕнле-ха капла, — шухăшларĕ хĕр, — юрату пирки нихăçан та каласман эпир. Ак халь ун пирки пĕр сăмах каларăн та тӳрех кавча тухма ыйтрăн». Çапла шухăшларĕ те чĕри савăнăçпа тулнине сисрĕ. Сисрĕ те, Иван çине тӳррĕн пăхрĕ, пĕр утăм, ик утăм турĕ ун çывăхнелле, вара, пĕр именсе-ютшăнса тăмасăр,

пуҫне ун кăкăрĕ ҫине хучĕ. Ыталаса илчĕ ăна Иван, Вĕҫелис питҫăмартисене ик аллипе ачашшăн ҫупăрларĕ, ҫилпе кушăрканнă тутинчен чуп туса илчĕ.

Кăвак хуппи ялтăраса кайрĕ тĕнче ҫийĕн.

Кайăксем чĕвĕлтетрĕҫ таврара пĕр чарăнмасăр.

Вĕри, вĕри пулса кайрĕ Вĕҫелис чĕринче.

Чуптурĕ.

Хăюсăррăн, ҫепĕҫҫĕн чуптурĕ.

Юратать, эппин!

«Тĕнчеҫĕм, ҫутă тĕнчем! Тавах сана, инкек кăна ямарăн иккен ман тĕле, мĕн пысăкăш телей йăтăнса анчĕ акă хăй тĕллĕнех! Ҫунăр, ҫăлтăрсем, юрлăр, кайăксем, лайăх та ырă мана кĕҫĕрхи ҫак ăшă каҫ. Илсе кай мана, Иван, кирек ăҫта — тĕнче хĕрне ҫитичченех илсе кай мана, эп юлмăп, эпĕ санăн пĕртен-пĕр юлташу, чи шанчăклă тусу пулăп. Халăм ҫитмест санран юлмашкăн. Кăтра Иванăм, сарă Иванăм, пысăк та тĕреклĕ Иванăм, илсе кай, ĕмĕр-ĕмĕр эп санăн пулăп, тем пулсан та уйрăлмăп, сивĕнмĕп санран...» — пĕр хăй ҫеҫ илтмелле чарăнмасăр пăшăлтатрĕ Вĕҫелис.

Туйĕ вĕсен кĕркунне, тырпул пухса кĕртсен, пулса иртрĕ.

Сурăх тирĕнчен ҫĕлетнĕ кĕрĕкне тавăрса тăхăннă Купăс Куҫми чăм-шыва ӳкссе купăс каланине, Клавье мăнаккăшĕ чупсах туй халăхне сăра ĕҫтерсе ҫӳренине, Иванăн шăллĕ — пĕчĕк Мĕтри хăйĕн тантăшĕсемпе туй ташши-юррине сентре ҫинчен сăнаса выртнине, хăй вара шурă пĕркенчĕк айĕнчен Иван ҫине вăрттăнвăрттăн пăхкаласа ларнине питĕ лайăх астăвать Вĕҫелис. Астăвать кăна мар, час-часах аса илет ҫав сенкер тĕлĕк пек тăрса юлнă куна. Вăхăт иртет, анчах ҫав сенкерлĕх тĕксĕмленмест, вăл халĕ те кашни палăрăмĕ-хусканăвĕ таранчченех уҫҫăн курăнать.

Хĕл иртрĕ. Ҫуркунне ҫитрĕ.

Пĕр виҫĕ кун ҫырантан тухса, пĕтĕрĕнсе-ҫаврăнса юхнă Ҫарăмсан каллех хăй картне ларчĕ, ҫĕмĕртлĕх шурă шупăр уртрĕ те ăна майĕпен сирсе пăрахрĕ.

Ҫу пуҫланчĕ.

Ашшĕ-амăшĕн пӳрчĕ пĕчĕкрехчĕ ҫав. «Ҫĕнĕ ҫурт ҫавăрăпăр», — терĕ Иван. Шыв-шур лăплансанах ҫав шухăшпа унта-кунта чупкалама пуҫларĕ вăл.

Хавхаланса, ҫунатланса пурăнчĕ Вĕҫелис. Акă вĕсен те ялти ятлă ҫынсенни пек ҫĕнĕ пӳрт пулĕ, тырри-пулли сахалах мар-ха, ашшĕ-амăш килĕнче выльăх-чĕрлĕх те картиш туллиех. «Пурте йĕркеллех, пурте ҫынсенни пек пулĕ, тăванăм», — ҫапла шухăшласа, ăшшăн ăсатса яратчĕ, ăшшăн кĕтсе илетчĕ вăл Ивана.

Вăйлă та пултаруллăччĕ унăн упăшки. Чăн-чăн хресчен юнĕ, ҫĕр ҫыннин юнĕ вылятчĕ ун ӳт-пĕвĕнче. Тул ҫутăлнă-ҫутăлманах

сиксе тăратчĕ те вăл, пуртă-пăчкă е кĕреçе илсе, Тукас вĕçне, пулас çурт вырăнне, васкатчĕ. Вĕçелис ĕне сăватчĕ, кĕтӳ хăвалатчĕ, унтан, упăшки валли сĕт-турăхпа çăкăр пуçтаркаласа, ун патне чупатчĕ. Колхоз ĕçне кайиччен пĕр-икĕ сехет хушши никĕс вырăнне хатĕрлесе аппаланатчĕç вĕсем. Ĕçрен таврăнсан та ĕшенниывăннине туймастчĕç, каллех пулас çурт патнелле çул тытатчĕç.

Хаваслăх çиçетчĕ Иван питĕнче. «Ак кунта, — ăнлантаратчĕ вăл Вĕçелиса, — çурт çумĕнче, эпир санпа кĕлет тăвăпăр, ак çакăнта, кĕлетпе юнашар, карта тытăпăр та сад ĕрчетме пуçлăпăр. Ан тив, çын пахчине ан кĕччĕр пирĕн ачасем, панулмине хамăр садранах татса çиччĕр».

Именсе йăл кулатчĕ вара Вĕçелис.

Çураки иртсен колхоз вĕсене, вунсакăр лаша уйăрса, пĕрене турттарса пачĕ.

Эх, епле кĕрлерĕç çав çул нимесем! Пĕрене турттарса килсен, тепĕр эрнерен пӳрт пурама пуçларĕç арçынсем. Хĕрарăмсем, юрла-юрла, шурта мăк кăларчĕç.

Сăрине малтанах çителĕклĕ хатĕрлесе хунăччĕ Вĕçелис. Пура пураса пĕтерчĕç, мăк типсе çитрĕ те çурт туса лартрĕç, кăмака çавăрчĕç ялйышпа, — шăкăл-шăкăл калаçрĕç, шӳт турĕç, юрă юрларĕç. Мĕнле хитре, мĕнле хӳхĕм юрăсем юхрĕç ял çийĕн!

Акăшĕсем акăш, йăви мамăк,
Епле акăш тесе калас мар?
Тăванĕсем лайăх, чĕлхи çемçе,
Мĕншĕн тăван тесе калас мар?
Ĕçер-ха, çиер-ха —
Пурте хамăр тăвансем,
Ют çынсем мар,
Ют çынсем мар...

Астăвать Вĕçелис, чупса, хашкаса, çĕнĕ сĕтел çине ĕçме-çиме пуçтаратчĕ те вăл, самантлăха та пулин Иван çумне пырса ларма май тупатчĕ. Пĕтĕм кĕреке вĕсем çинчен куç илмесĕр юрлатчĕ вара. Пĕрре çав юрра сăмах вылятмалăх ăшăнса çитнĕ Тимук татрĕ.

— Эх, тăванăмсем, — терĕ вăл, ура çине яшт сиксе тăрса, — пĕрре пурăнатпăр çак тĕнчере, — унтан, хăй питĕ нумай ăнланнине кăтартас тесе, пуçне силлесе, янаххине чĕтретсе илчĕ те: — Мĕн тери пурăнма лайăх, эх, лайăх пурăнма! — тесе, каллех хăй вырăнне ларчĕ.

— Ара, лайăх пулмасăр, — терĕ Иван ашшĕ, хĕрĕхсенчен иртнĕ Таниле, — лавĕ-лавĕпе тырă килет вĕт кашни киле! Хăçан пулнă ун пекки?

Вĕçелис та тав тăватчĕ саманана. Ял çыннисенчен сахал илтнĕ-и вăл ĕлĕкхи нушаллă пурнăç çинчен, çав пурнăç хăварнă инкек-синкеке хăй сахал тӳссе ирттернĕ-и? Тăлăх хĕрача пулин

те, ялтан яла ыйткалама тухса каймарĕ вăл, мăнаккăш килĕнче — начар-и, лайăх-и — ялти ача-пăчапа пĕр пекех ӳсрĕ, тăватă класс таран ялти шкула çӳрерĕ, арçынна юрăхлă пулчĕ, унтан та ытларах, хăшпĕр хĕрупраç тĕлĕкре те тĕлленеймен телейпе тĕл пулчĕ. Нимрен те мар, самани лайăх тăнинчен килчĕ çакă.

Çĕнĕ пӳрт кĕрекине пуш алăпа пымарĕç ял çыннисем. Иванăн ашшĕпе амăшĕ ывăлĕпе кинĕ патне пушмак пăру çавăтса килчĕç. Пĕри чăх-чĕп, тепри савăт-сапа, виççĕмĕшĕ пир тĕртмелли хĕç парнелерĕç. Çăпата калăпĕсем те, ухват-турчка та йăта-йăта пычĕ тăван-пĕтен. «Пурăнăр, ăшă йăва туса хурăр çак çуртра, ача-пăчаллă пулăр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетĕр. Чашăк-тирĕк шăлтăртатмасăр пулмасть, çӳп-çапа килтен ан кăларăр, усал сăмаха киле ан кĕртĕр. Ырă курăр, телейлĕ пулăр, пĕр сăмахпа...» — терĕç çынсем.

«Телейлĕ пулăр...»

Унччен те, каярах та çакăн пек çăмăллăн, çĕкленӳллĕн пурăннине астумасть Вĕçелис. Ĕçлĕ кун — вăрăм-и, кĕске-и вăл — мĕнле вĕçленнине сиссе те юлаймастчĕ çамрăк арăм, утса мар, вĕçсе çитетчĕ тăван килне. Çитетчĕ те упăшкине, юратнă Иванне, кĕтме пуçлатчĕ ĕçрен. Çăмăл марччĕ унăн ĕçĕ — йăлăмри вăрманта йывăç касатчĕç вĕсем, ялти чи тĕреклĕ арçынсем. Ура çине çирĕппĕн тăнăччĕ ĕнтĕ колхоз, выльăх-чĕрлĕх валли вĕрçĕнĕ пысăк витесем тума тытăннăччĕ.

Кашни кун, хуранти яшка лăкăртатса вĕренĕ вăхăтра, алăк сасси пулатчĕ те, пӳрте шур упа пек пулса кайнă Иван килсе кĕретчĕ. Чупса çитетчĕ те ун патне Вĕçелис упăшкин кĕрĕкне хур çуначĕпе шăлса тасататчĕ, хытса, пăрланса кайнă кăçаттисене кăмака çине лартатчĕ, Иванăн йĕпеннĕ çӳçне шăлкалатчĕ, пăрчăкан пек чĕвĕлтетме пуçлатчĕ: «Ывăнтăн пуль, чунăм, кунĕ те сивĕ тăчĕ, яшка антаратăп акă, чей лартса ятăм». Иванĕ ыталаса илетчĕ те ăна: «Ывăннăччĕ, Вĕçелис, ах, ывăннăччĕ! Сана куртăм та, ывăнни иртсе кайрĕ», — тетчĕ кула-кула.

Çĕнĕ пӳртре хĕл каçса, çурхи кунсене кĕтсе илнĕ чух Иванпа Вĕçелис çакна асăрхарĕç: ашшĕпе амăшĕ кĕркунне парнеленĕ пушмак пăрăвăн çилли ӳссех, хырăмĕ сарăлсах пырать. Витене улăм ытларах сарса пама пуçларĕ Иван, каçсерен-ирсерен сăнасах, пăхсах тăчĕ пĕтĕ пушмака. Пĕррехинче вара пӳрте савăнăçлăн чупса кĕчĕ те: «Çĕнĕ кайăклă пултăмăр, Вĕçелис, тăр часрах», — терĕ шăппăн.

Вĕçелис кĕпе тăхăнма ĕлкĕриччен Иван улăмпа чĕркенĕ пăрăва пӳрте йăтса кĕчĕ. Вут пек çиçетчĕç упăшкин куçĕсем, хытă хĕпĕртенĕччĕ вăл çак çĕнĕ чуншăн. Сайхах çинчен наччас утă илсе анчĕ Иван, пăравус пек пашкакан ĕнене пӳрте çавăтса кĕчĕ.

Шăп çав вăхăтра, çамрăк ĕне пĕчĕк те вăйсăр пăрăва çуласа

типĕтнĕ чухне, туйса илчĕ Вĕçелис хăйĕн варĕнче те темскер йăшăлтатса илнине. Ĕне çиллине çуса тасатма тесе, тăм плашкана хурантан лĕп шыв яма тăнăччĕ вăл, сасартăк кăлт тутарчĕ хырăмран аяларах. Аллинчи плашки урайне ӳксе чăл-пар саланчĕ, çакна кĕтмен Вĕçелис, аптранипе, пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ, пӳлĕме чупса кĕнĕ Иван çине айăплăн пăхрĕ.

– Мĕн пулчĕ, Вĕçелис? – ыйтрĕ Иван, хыпăнса ӳксе.

– Пĕлместĕп, – терĕ Вĕçелис, – çакăнтан тем тапрĕ...

Иванĕ пĕр хушă чĕнмесĕр пăхса тăчĕ ун çине, унтан плашка ванчăкĕсене урипе сирсе ывăтрĕ те Вĕçелис патне ыткăнчĕ, ăна, пĕчĕк ачана йăтнă пек, хăй ытамне илсе, çӳлелле çĕклерĕ.

– Телее пултăр плашка çĕмрĕлни! Пурăнатпăр, эппин, Вĕçелис, туллин пурăнма пуçлатпăр малашне! – савăнăçне ниçта чикеймерĕ Иван.

Каллех телей куççулĕ шăрçаланса анчĕ Вĕçелис пичĕ тăрăх.

Нимĕн те ĕçлеттермерĕ ăна Иван çав кун, ĕне çиллине те хăех çуса тасатрĕ вăл, пăру, яка урисемпе шуçкала-шуçкала тăма хăтлансан, хевтесĕр чĕрчуна амăш чĕччине хăех хыптарчĕ, лешĕ, айванскер, çăткăннăн чаплаттарса чĕчĕ ĕмнине чылайччен чĕнмесĕр, шухăша кайса пăхса ларчĕ.

Кĕтетчĕ Иван хăйĕн пĕрремĕш ачине, епле кĕтетчĕ!

4

Çĕрлехи çумăр хыççăн пăсланса, тĕтĕмленсе тăракан тĕтрене ирхи пысăк хĕвелĕн пайăркисем шăтарса кĕчĕç те, Çарăмсанăн анлă улăхĕ тăрăх утă тавăрса кайнă пек, майĕпен анăçалла çавăрттарса кайрĕç. Çил тухрĕ.

Качакине сурĕ Вĕçелис, сĕте, хĕлĕх ала витĕр кăларса, нӳхрепе антарса лартрĕ. Ура айĕнче явăнса çӳрекен качакине кĕтĕве яма тухрĕ.

Хыçалкаси Хрĕçти тĕл пулчĕ урамра. Унченхи пек сывлăх сунмарĕ вăл Вĕçелиса, ун патне пырса, ним çукранах çанталăк е хăйĕн аскăн ĕни çинчен сӳпĕлтетме пуçламарĕ. Куçне чарса пăрахса, шăппăн, тĕсесе пăхрĕ хăйĕн тантăшĕ çине. Ĕнине кĕтĕве çитерчĕ те ним чĕнмесĕр килнелле çаврăнса утрĕ.

Маруç амăшĕ те, Хĕрхи аппа, темшĕн-çке сăмах вакласа тăрасшăн пулмарĕ хальхинче. «Васкать пуль-çке, Маруçăн ĕçе инçе çӳремелле, ун валли вăхăтра апат хатĕрлес пулать», – шухăшларĕ Вĕçелис. Шухăшларĕ çеç, ун куçĕ ĕнесем хыçĕнчен сиксе тухнă Пехил Улькине асăрхарĕ. «Ку тем калать-ха ĕнтĕ, – вĕçсе илчĕ шухăш, – ку йĕплесе илмесĕр пултараймасть». Анчах лешĕ курмăш пулчĕ Вĕçелиса, санпа пакăлтатса тăма вăхăт çук тенĕ пек, вăрт çаврăнса, урам тăрăх суллана пачĕ.

Çапла, никампа калаçмасăрах, килне таврăнчĕ вара Вĕçелис. Чей лартса ячĕ.

Сасартăк ун хăлхине çак кунсенче ытла та хăнăхнă, ытла та палланă сасă — чĕрене çуракан, кĕлеткене тăр-тăр чĕтреттерекен хултуйин асаплă сасси пырса кĕчĕ. Васкасах чӳрече хушăкĕ патне, кантăкран çын курмалла мар вырăна, чупса пычĕ Вĕçелис, сывлама та хăрарĕ. Сасă çывхарнăçемĕн çывхарчĕ.

Нивушлĕ кĕрĕ? Нивушлĕ кунтах килет? Пĕр утăм, ик утăм... Ак, чарăнса тăчĕ, акă, пуçне çĕклесе, кантăк çине пăхать пулĕ. Ан хускал, Вĕçелис, ху килте пулнине, тархасшăн, ан систер. Аманнă çын чунсăр мар, хăйне кĕтсе тăманнине туймаллах унăн. Акă чикарккине туртса ярĕ те, хаш! сывласа, каллех Çарăмсан хĕрнелле анса кайĕ вăл. Вĕçелисăн вара кун пек хăраса, чĕтресе тăмашкăн вăхăт çук. Мĕтри валли апат пĕçермелле те часрах колхоз ĕçне чупмалла.

Ун шухăшне сисрĕ тейĕн аманнă çын.

Вăл васкамасăр Çарăмсан хĕрнелле анса кайрĕ.

5

...Танилепе пĕртăван Матвин, Иванăн пысăк пиччĕшĕн, сăнарĕ уçăмлă тăрса юлайман Вĕçелис пуçĕнче, мĕншĕн тесен вăл ун чух вуннăри хĕрача кăна пулнă-ха. Çакă вара ĕмĕрлĕхех асра: таçтан хуларан килнĕ музыкантсем сăмавар тĕслĕ пысăк шăхличсем вĕрсе пыраççĕ, пĕри, мăйăхлă та хытканскер, утнăçемĕн пысăк параппанне панлаттарать. Урам тăршшĕпе — халăх. Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх.

Масар çине çитсен, таçтан килнĕ палламан çынсемпе ял Совет председателĕ Раман пичче, чăмăртанă аллисемпе сулкала-сулкала, хĕрӳллĕ сăмах каларĕç, кайран вара, хĕрлĕ пуставпа витнĕ тупăка шăтăка антарса, ăна тăпрапа хупласа хурсан, пĕри кĕсйинчен наган кăларчĕ те, пухăннă çынсен сехрине хăпартса, виçĕ хутчен сывлăшалла персе ячĕ.

Пулккари тимĕр палăка та çавăн чухнех лартнă теççĕ.

Каярах, упăшкипе çурт çавăрсан, пĕлчĕ Вĕçелис ăнланма та йывăр çав кунсен тупсăмне. Кăçатă тĕплесе ларатчĕ Иван. Темрен пуçланса кайрĕ калаçу.

— Матви пиччене астăватăн-и? — ыйтрĕ Иван.

— Кăшт кăна. Сан пекех пысăкчĕ пулмалла. Пытарнине лайăх астăватăп. Музыкăпа пытарчĕç. Унтан пăшал печĕç. Мĕншĕн çавăн пек чыс турĕç ăна?

— Нимĕн те пĕлместĕн иккен эсĕ. Мăрса Палюкне тытса кайнине те астумастăн-и?

— Мĕнле астумастăп? Кайран ун çуртне правлени турĕç. Пуян пулнă тетчĕç.

— Пуян пулнă çав. Вăт çав пĕтерчĕ те Матви пиччене.

— Мĕнле? Ăна вĕт Матви пăяхам виличчен чылай малтан тытса кайнă тетчĕç.

— Мăрса Палюкĕ Çĕпĕртен тарса килнĕ. Матви пичче председательччĕ ун чух. Вăл районтан килнине кĕтсе тăнă Палюк, çĕр çăтманскер, Пулккара сыхласа тăнă.

— Мăрса Палюкĕ кайран курăнмарĕ-çке.

— Тепĕр кунне ăна станцăра ярса тытнă. Пĕлместĕп, халиччен те пурăнать-ши, персе пăрахрĕç-ши?

— Итле-ха, — упăшки куçĕнчен пăхрĕ Вĕçелис, — çакна эс мĕншĕн паян аса илтĕн?

— Та-ак, — терĕ Иван, — пуçран тухмасть. Çынни лайăхчĕ. Унтан тата Мăрса Палюкĕн тăванĕсем те çук мар.

— Мĕн эсĕ? — хăраса ӳкрĕ Вĕçелис.

— Хăрама кирлĕ мар. Самани урăх. Çапах путсĕр çынсем вĕсем, Мăрса таврашĕсем.

— Мĕн те пулин сиксе тухмарĕ пуль те?

— Тухмарĕ, Вĕçелис. Мăрса куçĕсем яланах сиввĕн пăхаççĕ, çавăнпа калатăп. А пичче ман, Матви, ăслă çын пулнă. Курса тăнă тейĕн паянхи куна, э, Вĕçелис?

— Эс мĕн çинчен?

— Пурнăç çинчен, тăванăм, пурнăç çинчен. Кур-ха эс, татăкĕсĕк çĕр çинче пĕрлешӳллĕ хуçалăх туса хутăмăр. Туслăхпа тăванлăх хуçалăхĕ.

Çак каласу хыççăн Мăрса таврашĕ çине сăнасарах пăхма тытăнчĕ те Вĕçелис, ун ăшĕнче иккĕленӳллĕ шухăш çирĕплексех пычĕ.

Пĕррехинче амăшĕпе пĕрле икĕ хур чĕппи киле пымарĕ. Унта-кунта чупкаларĕ Вĕçелис, шыв хĕрне анса пăхрĕ, çитмен шăтăк-çурăк хăвармарĕ — ниçта та тупаймарĕ хур чĕпписене. Вара, ним тăвайман енне, кӳрше-арша кайса пăхма шут тытрĕ вăл.

Хăйсенчен тăватă кил урлă Мишурпа арăмĕ, Шатра Марье, пурăнатчĕ. Вĕсен те, Вĕçелисăн та хур чĕпписем пĕр вăхăтрах тухнăран, Вĕçелис çак çурта кĕрсе пăхасах терĕ. Ун чух, çулталăк каялла, Çарăмсан хĕрринче Мăрса Мишурĕпе пулса иртнĕ айкашшăн хăй айăплă пек, хаюсăррăн уçрĕ вăл вырăсла хапхана. Уçрĕ кăна, Мишурăн пăру пысăкăш кăвак йытти сăнчăра татасла тулхăрса вĕрме пуçларĕ. Çакна илтсе, çенĕкрен Марье сиксе тухрĕ. Вĕçелис çине чăрр! пăхса илчĕ, пĕр хушă юпа пек хытса тăчĕ, куç харшине антарчĕ, тутине çыртрĕ.

«Çиллес ку, — шухăшларĕ Вĕçелис, — тем, упăшкипе вăрçнă пуль-и?»

— Мĕн ĕçсĕр аптраса çӳретĕн-ха? Уçрăн пулсан, хуп хапхана! — кăррăн каласа хучĕ Шатра Марье.

— Уçас та теменччĕ те, икĕ хур чĕппи таçта кайса кĕчĕç. Ăçта кăна шырамарăм, сасси те çук, — ăнлантарчĕ Вĕçелис.

— Апла вăрра тытма килтĕн пулать? Мана вăрра тытма килтĕн пулать-ха апла? — хуллен хаярланса, çивĕчленсе пычĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

«Турăçăм, ма килтĕм кунта пĕрех хутчен, хăвăртрах тухса каясчĕ хуть. Кӳршĕпе капла пурăнсан, тем курăн. Ăссăрскер, малтан шутламалла пулнă та çав», — хăйĕн шухăшне вĕçне те çитереймерĕ Вĕçелис, Шатра Марье ун çине хур аçи пек тапăнса пыма пуçларĕ.

— Эсĕ... мана.... вăрра тытма... килтĕн-и-ха?!

— Вăрра мар, Марье, ăнсăртран сирĕн чĕпсемпе хутшăнса кайман-и, терĕм. Кӳрентертĕм пулсан, каçар...

— Намăссăр эс! — урмăш сасăпа кăшкăрчĕ Шатра Марье. — Кăтартăп сана хур чĕппи! Çапкаланчăк! Тăлăх мĕскĕн! Е çитмерĕ-и сире Палюка пĕтерни!? Е эсĕ, пĕлтĕрхи пек, ман упăшкана хăвăн çара кĕлеткӳне кăтартма килтĕн-и? Куртăм, çылăх çухатнăскер, йăлтах куртăм санăн хăтланăвна!.. Кай халех! Тĕсӳ ан пултăр урăх. Ярса ан пус текех пирĕн килкартине! Çапкаланчăк! Тăлăх мĕскĕн! Емĕр çапла утвит тытмасăр пурнас тетĕр пуль-ха. Ан савăнăр ытлашши! Ав, турă пурне те курать. Тулĕ-ха сирĕн шăпăр та пĕрре. Непсĕр тулĕ. Вăрра тытма килнĕ! Пăх-ха эс ăна!

Каяш шывпа чашлаттарса пуçĕнчен пуçласа ура тупанĕ таранччене йĕпетнĕ çын пек васкаса тухса сирпĕнчĕ Вĕçелис Шатра Марье патĕнчен. Кил хуçин йĕп пек тирекен сăмахĕсем, унтан тата такама та туртса çурма хатĕр йытти антăхса кайса вĕрни çеç илтĕнсе юлчĕ хыçалта.

Килне çитсен те тӳрех лăпланаймарĕ Вĕçелис. Иванĕ те килейменччĕ-ха ĕçрен.

«Ав мĕнле çынсем пурăнаççĕ иккен кӳршĕре, — шухăшларĕ вăл, нимĕнле ĕç тытма пĕлеймесĕр. — Палюка асăнса пурăнать. Эппин, упăшкипе те час-часах калаçаççĕ ун çинчен. Манмаççĕ. Чим, мĕне пĕлтерчĕç Шатра Марье сăмахĕсем? «Ан савăнăр ытлашши, непсĕр тулĕ», — терĕ Марье. Тем çинчен систерни, хăратни пулмарĕ-и ку?»

Çавăн чух ĕнтĕ, шăп çавăн чух Вĕçелис пуçĕнче халиччен пĕлмен хăрушă туйăм çуралчĕ. Çук, хăйшĕн мар, ытарайми Иванĕшĕн хыпăнса ӳкрĕ вăл сасартăк.

Иван ĕçрен киличчен пусăрăнчăк кăмăлпа çӳрерĕ Вĕçелис. Тытнă ĕç ăнмарĕ çав кун. Шыва кайса килчĕ — витрине асăрханмасăр лартрĕ пулмалла та, витри тӳнсе кайрĕ, шывне типĕтме пуçланăччĕ, хуранти яшки вĕресе тăкăнчĕ, унта чупса пычĕ Вĕçелис, — васканипе аллине пĕçертрĕ.

Иванĕ вара тĕттĕм пулсан тин таврăнчĕ. Пĕччен мар тата, чи

çывăх тусĕпе, ялти пĕрремĕш трактористпа Çтуппанпа хаваслăн килсе кĕчĕ пӳрте. Кăштах сыпнăччĕ те пулмалла.

— Çĕтĕк-çурăкна вутта пăрах, Вĕçелис, — терĕ Çтуппан. — Пуйрĕ упăшку. Стаханов пек ĕçленĕрен сурăх памалла турĕ колхоз.

— У-ух, эсĕ те çав, халь каламаллаччĕ-и? Вĕçелис пĕрер курка сăра тултарса парсан тапратмаллаччĕ çакна, — кăмăлсăрланнă пек пулчĕ Иван.

Çакна илтсенех Вĕçелис, тĕпсакайне анса, сăра тултарса тухрĕ.

Сĕтел хушшине ларчĕç. Вĕçелис, пĕр чĕнмесĕр, кăпăкланса тăракан сăрана, йывăç алтăрпа ăсса, упăшкине тыттарчĕ.

— Эс мĕн? — тĕлĕнчĕ Иван.

— Чăнах, эс мĕн... салхуллă? — асăрхарĕ Çтуппан та.

— Ĕçĕр, — терĕ хĕрарăм, хăй вара васкасах пӳлĕме кĕрсе кайрĕ.

— Мĕн пулчĕ тетĕп! — сассине хăпартрĕ Иван.

— Шăплан, Иван, — лăплантарчĕ ăна Çтуппан. — Ĕç сăруна.

Тем вăхăтран сĕтел хушшинчи икĕ арçын Вĕçелис çинчен манса та кайрĕ тейĕн, ĕç çинчен, ял çинчен, тĕнче çинчен шăкăл-шăкăл калаçма пуçларĕç. Хăй еккипе пыракан сăмах вăрçă çине куçрĕ.

Пушă вăхăт тупăнсанах аллине хаçат-журнал тытса ларакан Çтуппан тĕнче пурнăçне ыттисенчен лайăхрах ăнланатчĕ пулĕ çав. Кăна Вĕçелис çав каçхине те лайăх туйса илчĕ.

— Вăрçă тетĕн-и? — васкамасăр калаçрĕ Çтуппан. — Мĕн калас ун пирки? Пулма та пултарать. Польша халăхĕ икĕ çул ĕнтĕ фашистсен аллинче асапланать.

— Пире тĕкĕнмеççĕ пуль-ха, лектор, ав, пĕркун мĕн каларĕ: Германипе пирĕн çĕршыв килĕшӳ тунă, вĕсем пĕр-пĕрне тапăнмаççĕ терĕ, — хирĕçлерĕ ăна Иван.

— Пĕлместĕп, Иван, пĕлместĕп, — терĕ Çтуппан, шухăша кайса. — Анчах пирĕн иксĕмĕрĕн те çӳç кастармалла пулать кăçал. Эх, сан пек çĕнĕ пӳрт çавăрмаллаччĕ пулĕ те...

Пăрăç хучĕç-ши Вĕçелис чĕри çине, кăкăрĕнче тем хыпнине, пĕçертсе çуннине туйса илчĕ вăл, васкаса пӳлĕмрен тухрĕ, сĕтел çывăхне пырса ларчĕ, Çтуппан куçĕнчен пăхрĕ. Çакна курса хăраса ӳкнĕрен-ши, Вĕçелиса лăплантарас тесе-ши е тата хăй урăх сăмахсем шыраса тупайманран-ши, Иван чышкине чăмăртарĕ, пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ те, касса татнă пек, çапла каласа хучĕ:

— Нумай пĕлетĕн пулин те, пăрах эс ку шухăша, Çтуппан. Йĕркеллĕ шухăш мар вăл. Мĕнле вăрçă пултăр? Ав, пĕлтĕр финсем тытăçма пăхрĕç пирĕнпе. Яппун йыт çури пек вĕрме хăтланчĕ. Мĕнпе вĕçленчĕ, э? Пирĕн халăх-и?.. Кирек мĕн пултăр, хăйĕн çĕрне никама та таптаттармĕ вăл текех. Юн нумай тăкнă уншăн, ăна тарпа шăварнă...

— Эс чăнах лектор пекех калаçма пуçларăн, — пӳлчĕ Çтуппан.

— А мĕн, тĕрĕс каларĕ вăл. Эпĕ хамăр ял çыннисем çинчен нумай шухăшларăм çавăн хыççăн. Тăраниччен çăкăр çинисем нумай пулнă-и ялта? Ну, Аркантей, Мăрсасем... Тата кам? Урăх çук та. А халĕ çăкăрĕ те çителĕклĕ, çи-пуçĕ те, вутти-шанки те. Ку — пирĕн ял. Çĕршывĕпе илес пулсан? Мĕн каламалли, çак рехете туртса илме парĕ-и хура халăх? — хăй сăмахĕ çинех тăчĕ Иван.

— Çапли çаплах-ха, Иван, анчах çав финн вăрçинчен Митра пичче урине таттарса килчĕ, Унихват Унисĕмĕ вара вуçех таврăнаймарĕ...

Шăпланчĕç.

Кашни хăй тĕллĕн шухăшларĕ.

Пурнăç çинчен Иван çакăн пек яка та уçăмлă калаçнине халиччен асăрхаманччĕ-ха Вĕçелис. Тĕрĕс, упăшкин тӳркăмăллăхне тахçанах пĕлет вăл. Ĕçре пулни-иртнине е ял хыпарĕсене Иван, тăванне-мĕнне пăхмасăр, этем йĕркелĕхне, чун тасалăхне кура хак парать. Упăшки вăрттăн шухăшпа çӳренине е, çынпа ырă пулас тесе, пылак йăпăлти сăмах каланине асăрхаман Вĕçелис. Çакăншăн хисеплет вăл ăна, çакăншăн шутсăр юратать Ивана.

— Маттур, — терĕ Çтуппан. — Санпа вăрçа кайма пулать.

— Каллех - вăрçă... — кăмăлсăрланчĕ Иван.

— Вăрçа мар-тăк, акатуйне, эппин, — сĕтел хушшинчен тăчĕ Çтуппан. — Ну, тавах яшка-çăкăршăн, каяс-ха ĕнтĕ. Чăнах, акатуй-çке виçмине. Канас, вăй пухас. Тен, кĕрешме тухмалла пулать, э, Иван?

— Карăшъелсем çĕнтерме пуçласассăн, эп тухатăп, — терĕ Иван, пĕр иккĕленмесĕр.

— Унсăр тухмастăн пуль? — йĕкĕлтерĕ Çтуппан.

— Мана ахаль те сурăх параççĕ. Хамăр ял ачи çĕнтертĕр, чысĕ çавах хамăрта юлать, — ăнлантарчĕ Иван.

— Ик сурăхпа хаваслăрах. Киле те усă, — терĕ те Çтуппан кула-кула пӳрт алăкне уçрĕ.

Чашăк-тирĕк çурĕ Вĕçелис, сĕтел çине шăлса типĕтрĕ, Иван вара арăмĕ пушанасса, кăмăлĕ мĕншĕн пăсăлни çинчен каласа парасса кĕтрĕ.

Хăйне алла илмелĕх вăхăт иртнĕччĕ çав ĕнтĕ. Шатра Марье сăмахĕсем паçăр сĕтел хушшинче ларакан икĕ арçын калаçăвĕ айне, çав калаçу вăхăтĕнче çуралнă шухăшсем айне пулса юлчĕç, майĕпен шупкалчĕç, хăйсен çивĕчлĕхне, наркăмăшне çухатрĕç. Лăпланчĕ Вĕçелис, Шатра Марьепе пулса иртнĕ калаçу çинчен упăшкине ним хумханмасăр каласа кăтартрĕ вăл. Упăшки вара итлесе ларчĕ-ларчĕ те паçăрхи пекех кĕскен те витĕмлĕн каларĕ:

— Сур эс вĕсем çине, Вĕçелис! Сур та тек ан çӳре унта. Аякка-рах тăр вĕсенчен.

— Пуç çине хăпарса ларма тытăнсан? Тарса çӳрес-и? — ыйтрĕ Вĕçелис.

— Тарса ан çӳре. Хирĕç тавăр. Анчах сăмахна шухăшласа кала. Тĕрĕслĕх тимĕр татать, теççĕ, — ăс вĕрентрĕ Иван!

...Анчах тепĕр кун Мăрсасемпе каллех тĕл пулчĕ Вĕçелис. Каç енне сулăннăччĕ ĕнтĕ. Упăшкипе иккĕшĕ те ĕçрен иртерех таврăнчĕç вĕсем. Иван лашине тавăрса тăмарĕ, пӳрте кĕрсе, пĕр курка сивĕ шыв ĕçрĕ те, ыран акатуйне кайма тесе, вăрмана утă çулма тухса кайрĕ. Вĕçелис çак вăхăтра килти ĕçсемпе аппаланчĕ, Çарăмсантан шыв ăсса килчĕ, помидор тĕмĕсене кăпкалатрĕ, хăяр калчисене, кишĕре шăварчĕ. Юлашкинчен, типĕ вутă илсе кĕрсе, яшка çакса ярам тесе, аслăк айне кĕнĕччĕ вăл, çак самантра хапха сасси пулчĕ те, Вĕçелис хăй патнелле такам çывхарнине туйрĕ. Тĕпне хурăн хуппи хунă хром атă сассинченех тавçăрчĕ Вĕçелис: хăйсем патне халиччен нихçан килсе курман Мăрса Мишурĕ вăл. Мĕн сăлтав тупрĕ-ха тата? Е вăл та, арăмĕ пекех, ĕнер пулса иртнишĕн мăшкăл кăтартма килет-и? Ывăçласа тытнă вут пуленкисене тӳрех çĕре пăрахрĕ хĕрарăм, Мишура хирĕç картишне тухма васкарĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ. Аслăк айне кĕмелли пĕчĕк хапха юпи çумне таяннă Мăрса Мишурĕ Вĕçелис куçĕнчен хăюллăн та çивĕччĕн пăхрĕ. «Ырра мар ку», — шухăшларĕ хĕрарăм, вара, малалла мĕн пуласса кĕтсе, паçăрхи пуленкесене каялла илме çĕре пĕшкĕнчĕ. Унччен Иванпа иккĕшĕ Мăрсасем çинчен калаçни аса килчĕ Вĕçелиса. Çакă ăна пушшех хăратса пăрахрĕ. «Мĕн ăна мана вĕлересси, çăвара хупласа хур та пăвса пăрах, никам курас та, илтес те çук», — çӳçенсе шухăшларĕ хĕрарăм.

Анчах Мăрса Мишурĕ вырăнтах тăчĕ-ха.

Иванĕ хăвăртрах килинччĕ, иçмасса. Мĕн туса тăрать-ха çак тăсланкă? Мĕн шухăшпа килнĕ вăл?

— Ан чĕтре, ан хăра манран, — тинех сăмах хушрĕ Мăрса Мишурĕ. — Арăм ĕнер сӳпĕлтетнине манса кай. Эп сана пĕлтĕр пĕтĕм кăмăлтан каланăччĕ. Итлемерĕн. Тем тупрăн Иван çумĕнче. Анчах эп сана халĕ те юратма пăрахман. Атя, тарар кунтан, Вĕçелис, эп сана тĕнче хĕрне илсе кайăп. Сана телейлĕ тумашкăн вăй çитет манăн. Чун-чĕре кӳтсе çитрĕ кунта пурăнса. Çут тĕнче-не курас килми пулчĕ.

— Арăмупа тар, — Мăрса Мишурĕ хăйне нимпе те хăратманнине курса, хăюлланса хуравларĕ Вĕçелис.

— Пĕлмене ан пер, тархасшăн. Аркантейсен унченхи мулне шута илсе авлантарчĕç-çке тăвансем. Юратса пĕрлешнĕ тетĕн-и? Улталандтăм, ни мулĕ çук, ни ача тумасть. Тарар, Вĕçелис, тархаслатăп сана. Нихçан та кӳрентермĕп, пĕр усал сăмах каламăп, патша майри пек пурăнăн ман çумра, — çывхарса, çывхарса пычĕ те Мăрса Мишурĕ аллине Вĕçелис хулпуççийĕ çине пырса хучĕ.

— Шел сана, телейсĕр эс, — хĕрхенĕнçи пулчĕ Вĕçелис. Татах тем каласшăнччĕ вăл Мăрса Мишурне, хăйĕн татăклă сăмахне пĕлтерсе. Урăх ан кил кунта, пирĕн çулсем пĕр мар, хамăн Ивана эп никампа та улăштармастăп тесшĕнччĕ, ĕлкĕреймерĕ, унччен те пулмарĕ, ятлаçа-ятлаçа, хăлаçлана-хăлаçлана картишне Мишур арамĕ Шатра Марье килсе кĕчĕ, килсе кĕчĕ те тӳрех упăшки çине мар, Вĕçелис çине сиксе ӳкрĕ, ун тутăрне сирсе ывăтса, çӳçĕнчен хыттан çатăрласа илчĕ.

— Намăссăр! Ĕнер калани çитмерĕ-и сана? Çын упăшкине кăнтăр варринчех аслăк айне илсе кĕме тытăнтăн-и-ха? Тьфу, тьфу! Намăсна çухатнăскер! Ак сана! Ак сана! — унтан та кунтан çапкалашма, тапкалашма пикенчĕ Шатра Марье.

Чăтма çук тарăхса кайнă Вĕçелис часах вĕçерĕнеймерĕ унран. Мăрса Мишурĕ пулăшрĕ. Пысăк ал лапписемпе арăмĕн çухавинчен ярса тытрĕ те вăл ăна, çӳлелле çĕклесе, çĕре лаплаттарчĕ. Йынăшрĕ, хăрăлтатрĕ Шатра Марье. Сехри хăпса тухнă Вĕçелис вара темиçе пуссах пӳртум картлашки çине чупса çитрĕ те, алăка уçса, ăна шал енчен хăвăртрах питĕрсе лартрĕ.

...Çакăн çинчен Ивана каласа пама именчĕ Вĕçелис. Упăшки урăхла ăнланасран та шикленчĕ ĕнтĕ. Мăрса Мишурĕпе Шатра Марье çинчен шутласа çĕрĕпех асапланчĕ пулин те, Ивана палăртасшăн пулмарĕ çакна, хăйне хăй лăпкăн, ним пулман пек тытма тăрăшрĕ.

6

...Епле илĕртӳллĕ, епле тӳлек те савăк ирччĕ çав кун! Вĕçелис ăна паян та кĕвĕ калама ĕнерсе хунă кĕсле хĕлĕхĕпе танлаштарать. Ĕне сума тухсан, чăлт-шурă сĕтĕн çинçе пайăрки витре тĕпне пан! туса саса пачĕ те, пуçланчĕ вара кĕсле хĕлĕхĕн хӳхĕм юрри! Тухăçра пысăк хĕвелĕн ылтăн пуçĕ курăнчĕ, лĕп çил вашăлтатса тăчĕ, хурсем, чĕпписене ертсе, какăлтата-какăлтата çырма хĕрне анса кайрĕç, урамра ир-ирех лашасем кĕçенни, урапа кустăрмисем васкавлăн кăлтăртатни, пĕкĕ айĕнчи шăнкăравсен сасси илтĕнсе тăчĕ.

Вут хутса ярса, икерчĕ пĕçерчĕ Вĕçелис, тĕпсакайĕнчен сăра ăсса тухрĕ, арчаран хăйĕн симĕс аркăлла кĕпине, шукăль чĕрçиттине, Иванăн тĕрĕллĕ кĕпипе кăвак шăлаварне, çутă аттине кăларса хучĕ. Шăп çак çипуçпа ларнăччĕ вĕсем туйра та.

Лаша кӳлме кайнă Иван нумай кĕттермерĕ. Тепĕр çур сехетрен Вĕçелисăн хитре тутăрĕсемпе илемлетнĕ лав, йĕс шăнкăравпа шăнкăртатса, урам тăрăх вĕçтерчĕ, яла хыçала хăварчĕ, Çарăмсан кукринчен улăха, акатуй пулакан вырăна, çул тытрĕ.

Кĕсле хĕлĕхĕ çул тăршшĕпех телей кĕвви каласа пычĕ. «Пурнăçăм, — пăшăлтатрĕ Вĕçелис, — пур-ши паян манран та савăнăçлă-

рăххи! Юмахсенче тăлăх хĕрпе патша ывăлне час-часах асăнаççĕ. Акă вăл, патша ывăлĕ Иван, манпа юнашарах. Анчах юмахри пек ылтăн та, кĕмĕл те кирлĕ мар пире. Пĕрле пулни, малашлăха çакăн пек пĕрле ыткăнни мĕн тери лайăх! Эх, Иван, туятăнши эсĕ çак телее? Эпĕ чăтма çук савăннине куратăн-ши эсĕ?»

Юртать тур лаша. Çаранĕ, хирĕ, вăрманĕ, шывĕ — пĕрин хыççăн тепри улшăнать. Тăван çĕршыв хитре, юнашар ларса пыракан тăванран та тăван çын хитре — шухăш-ĕмĕт хитре. Шăрантар, кĕсле, иртен пуçланă савăк юрруна! Кайăксем, курăксем, Çарăмсан хумĕсем илтчĕр ăна. Илтчĕр те — хăйсен чĕвĕл сассипе, хăйсен пăшăлтатăвĕпе çав юрă çумне хутшăнччăр. Сарăлтăр, хăватлантăр юрă, вăл мĕнпур чĕрĕ пурнăçа, аслă çутçанталăка, этемлĕхе, телее, юратăва мухтатăр!

— Иван! — урапа кустăрмисен шавне хуплас тесе, пĕтĕм вăйран кăшкăрать Вĕçелис. — Атя юрлар, Иван!

— Юрлар, Вĕçелис! — килĕшет вăл, унтан арăмĕ çинчен куç илмесĕр пуçласа ярать:

Ой, тусăм, Варвари,
Халь те кавча кайман-и?
Халь те кавча кайман-и те,
Халь те...

— Кăна мар, Иван, кăна мар, — пӳлет Вĕçелис. — Ак çакна:

Çăлтăр ӳкрĕ,
Çăлтăр ӳкрĕ,
Çăлтăр ӳкрĕ çут кӳлле, —
Алăпа тытма юрамасть...
Телей ӳкрĕ,
Телей ӳкрĕ,
Телей ӳкрĕ ман тĕле, —
Çынна пама юрамасть...

— Юрла, — хистет Вĕçелис. — Мĕн чĕнмесĕр пыратăн? — Унтан каллех юррине малалла тăсать:

Кăвак куçлă,
Кăвак куçлă,
Кăвак куçлă сар каччи-и-и...

— Кăвак куçлă сар хĕрĕ-ĕ-ĕ... — юрласа ярать Иван, вара иккĕшĕн сасси тĕлĕнмелле хитре пĕрлешсе каять те аслă улăх тăрăх çăмăл пĕлĕтсем пек юхма пуçлать.

Çурта пекех курăнать...

— Халь вăл манпа пурăнать, — хăйĕнчен хушса хурать те Иван, Вĕçелиса пилĕкĕнчен тытса, хыттăн чăмăртать.

— Намăса пĕл, — хирĕçленçи тăвать Вĕçелис. — Çынсем курсан тем калĕç. Уй куçлă, вăрман...

— Вăрман хăлхи питĕрĕнчĕк, — тет те Иван арăмне каллех ыталама ĕлкĕрет.

...Тĕлĕнмелле улшăнса пычĕ çав кун кĕсле хĕлĕхĕн асамлă кĕвви. Куç умĕнче акатуй ĕшнинчи пин-пин çыннăн пин тĕрлĕ сăн-пичĕ, пин тĕслĕ çипуçĕ кĕшĕлтетсе-явăнса тăчĕ, халăх сĕрлевĕ, унăн калаçăвĕ-кулли, темиçе çĕрте вырнаçтарса лартнă граммофонсен таçта илтĕнекен сасси, карусель патĕнчи хуткупăсăн васкавлă вылявĕ, параппан тӳнклетни пĕр чарăнми илтĕнчĕ хăлхара. Çапах хăйĕн тимлĕхне унталла-кунталла салатмарĕ Вĕçелис. Ытарайми Иванĕ çинчен куç та илмерĕ вăл.

...Кĕрешсе хăйсен вăйне виçнĕ çамрăксен шучĕ çирĕме те çитрĕ пулĕ ĕнтĕ. Пĕрре Карăшъел каччи, тепре Виççырма йĕкĕчĕ çĕнтерӳçĕ пулса тăрать. Пĕрин хыççăн тепри тĕреклĕрех те вăйлăрах арçынсем тухаççĕ уçланкă варрине. Акă, Виççырмари Кирук тимĕрçĕпе тытăçма Карăшъел çынни, районĕпех паллă Чукмаров Энтри, тухрĕ. Лайăх пĕлет ăна Иван, пĕрре кăна кĕрешмен унпа. Вăйлă, мур илесшĕ, тĕреклĕ, — çичĕ пăт таять теççĕ. Сан урусене çĕртен уйăрчĕ пулсан, пĕлсех тăр — ывăтатех хăй урлă. Анчах çак меслетрех унăн вăйсăрлăхĕ те пур. Ан тив, çавăрса çаптăр, ан тив, савăнтăр. вăл хăй вăйĕпе, курнăçлантăр çын умĕнче, эсĕ вара хăв чеерех пул, мĕнле пулсан та хул лапатки çине ан ӳк, шăпах çак вăхăтра çаврăнăçуллă пул та ăна хăвăн айна пĕтĕрсе чикме пултар. Мĕнпур вăрттăнлăхĕ те çакăнта. Пĕлет-ши çак вăрттăнлăха Кирук? Темле çав. Ытти çулсенче кĕрешӳ вĕçне çитичченех тытăçайман вăл. Юлашки çул палăрмаллах тĕрекленчĕ каччă. Тĕрекленчĕ те хăйĕн вăйне виçсе пăхма шутларĕ.

— Ан парăн, Кирук, — хавхалантарса, пур енчен те кăшкăрашаççĕ виççырмасем.

— Ху камне кăтарт, Энтри, хулпуççи урлă çап! — парăнмаççĕ карăшъелсем.

Унччен те пулмарĕ, Энтри Кирука çĕр çинчен йăтса илчĕ, пĕр вăхăт ăна сывлăшра тытса тăчĕ, унтан, пĕтĕм вăйне пухса, хăй урлă ывăтрĕ те мĕнпур йывăрăшĕпе Кирука çĕр çумне пăталаса хучĕ.

Хаш! сывласа ячĕç карăшъелсем.

Шыв сыпнă пек тăчĕç виççырмасем.

— Маттур, Энтри, пултаратăн, Энтри! Эс çĕнтерӳçĕ! — пур енчен те кăшкăрчĕ халăх.

...Кĕпи çаннисене васкамасĕр тавĕрчĕ Иван. Лăпкăн Вĕçелис çине пăхса илчĕ вăл, куçĕпе Çтуппана шыраса тупрĕ, вара хуллен вырăнтан тăчĕ те Энтри патнелле утса кайрĕ. Кĕрешĕве тĕрĕслесе тăракан клуб заведующийĕпе Карăшъел çыннине алă пачĕ, вĕсенчен Энтрипе кĕрешме ирĕк ыйтрĕ. Лешсем хирĕçлемерĕç. Кĕрешӳ мĕнпе вĕçленессе кĕтсе, халăх шăп тăчĕ.

Мĕн тери хумханмарĕ пуль Вĕçелис!

Акă, икĕ хире-хирĕç автан пек, Иванпа Энтри пĕр-пĕрин çине çивĕччĕн пăхса тăраççĕ. Çывхарчĕç. Пĕрне-пĕри меллĕрех ярса тытасшăн.

«Чарăнăр! Мĕн çитмест сире!» — халь-халь кăшкăрса ярас пек ларать Вĕçелис.

Васкамаççĕ. Кашни меллĕ самант кĕтет.

— Эй, эсир, мĕн çывăратăр! — сасă пачĕ пĕри.

— Хăюллăрах, Энтри, паçăрхи пек ывăт ăна! — хистерĕ тепри.

— Ай-яй эс, паçăрхи пек.... Кампа кĕрешнине куратăн-и? — пӳлчĕ виççĕмĕшĕ.

«Мĕншĕн?— хăраса шухăшларĕ Вĕçелис. — Ăнсăртран амантас пулсан пĕрне-пĕри? Мĕншĕн? Ят кирлĕ-и, мухтав кирлĕ-и сире? Энтрийĕ ытла тĕреклĕ, мĕн те пулин туса хумĕ-и Ивана? Ашшĕсĕр юлтăр-и ачам? Эппин, халех чарса лартмалла çак кĕрешĕве. Вĕçелис мар-тăк, кам чарĕ ăна?»

Çак шухăшпа ура çине тăнă кăначчĕ Вĕçелис, Энтри Ивана, паçăр Кирука çĕкленĕ пек, сывлăша йăтса илчĕ те, икĕ арçын çĕре персе анчĕç, çăмха пек пĕтĕрĕнме пуçларĕç.

«Пĕтрĕ», — чĕркуççийĕсем вăйсăрланнипе, хăй вырăнне ларчĕ Вĕçелис, пуçне усрĕ.

Çак самантра çынсем урса кайнă пек кăшкăрашма пуçларĕç:

— Пултаратăн, Иван! Маттур, Иван! Виççырмана намăса хăвармарăн! Такаллă пултăн, Иван!

Хăйне хăй ĕненмесĕр, Вĕçелис пуçне çĕклерĕ.

«Иван, Иванăм...» — савăнса пăшăлтатрĕ вăл. Чăтаймарĕ, ун патне чупса тухрĕ, пĕтĕм халăх умĕнче чуптуса илчĕ упăшкине.

— Авă, — терĕ клуб заведующийĕ, — çав урапа çумне шурă така кăкарса хунă. Санăн. Çӳле çĕкле ăна, халăх куртăр.

— Чим-ха, чим, Иван, — чупса пычĕ ун патне Карăшъел çынни. — Акă пурçăн тутăр. Ялти чи хитре хĕрсем тĕрленĕ ăна. Таврари чи паттăр çынна пултăр терĕç.

Хура пурçăн тутăра Иван тӳрех Вĕçелис хулпуççийĕ çине уртса ячĕ. Хăй вара авмак мăйракаллă шурă така патне кайрĕ, кăкарчăкне вĕçертрĕ те, ăна икĕ аллипе çĕклесе, кĕрлесе-сĕрлесе тăракан халах умĕнче пуç тайрĕ.

Халапри чăн-чăн паттăра аса илтерчĕ вăл.

Çак самантра Вĕçелиспа Иванран та телейлĕреххи пурччĕши уçланкăра! Иванăн мĕнле пуль те, анчах Вĕçелис чĕри пĕлĕт таран, сар хĕвел таран çĕкленчĕ çак шăв-шавра.

Унччен те пулмарĕ, уçланкă хĕрринчен — те хĕрарăмăн, те арçыннăн — çурăлса каясла урмăш сасси янраса кайрĕ:

— Ха-а-лă-ăх! Ха-а-лă-ăх! Ра-ади-о! Вăр-çă-ă! Шăп-ла-анăр! Ха-а-лă-ăх!

Аҫа ҫапнӑ хыҫҫӑн пулать ҫавӑн пек шӑплӑх. Уҫланкӑри пиншер ҫын самантлӑха шыв сыпнӑ пек пӗр вырӑнта хытса тӑчӗ. Куҫӗсене пысӑклатса, тин илтнӗ сӑмахсене ӗненмесӗр пӑхрӗҫ ҫынсем пӗр-пӗрин ҫине. Репродукторти арҫын сасси ытти чухнехи пек мар пӑлхавлӑн та хӑрушшӑн кӗрлени тӳрех тыткӑнларӗ халӑха:

...Ҫавӑнпа ӗнтӗ фашистла Германи тапӑнса кӗнӗ ҫӗршыв шутланать...

– Тапӑннӑ! Нимӗҫ тапӑннӑ! – каллех янрарӗ паҫӑрхи сасӑ.

– Чим-ха эсӗ, итлеме пар, тархасшӑн, – пӳлчӗ ӑна пӗр арҫын.

– ...Ҫак вӑрҫа Гармани халӑхӗ мар, Германири рабочисем, хресченсем, интеллигентсем мар, вӗсен асапне эпир лайӑх ӑнланатпӑр, ҫак вӑрҫа Германие ертсе пыракан юнӗҫенсен ушкӑнӗ, французсене, чехсене, поляксене, сербсене, Норвегие, Бельгие, Дание, Голландие, Греция тата ытти халӑхсене чуралӑха кӗртсе ӳкернӗ фашистсен ушкӑнӗ пуҫласа ячӗ...

– Халь пире чура тума килчӗ, эппин, – илтӗнмеллех мӑкӑртатрӗ тахӑшӗ.

– ...Правительство ҫакна хытӑ шанса тӑрать: совет ҫыннисем Тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫлӗҫ. Пирӗн ӗҫ – тӗрӗс ӗҫ. Тӑшман арканатех! Ҫӗнтерӳ пирӗн пулать!

Ҫук, ҫав самант пӗлтерӗшне тӑруках ӑнланса илеймерӗ Вӗҫелис. Майӗ те ҫукчӗ ӑнланма. Иванӑн хулпуҫҫийӗ ҫинче шурӑ така тапкаланать, йӗри-тавра вара – чӗмсӗр халӑх. Вӗҫӗ-хӗррисӗр халӑх. Унталла-кунталла пӑхкаларӗ Вӗҫелис. Сасартӑк ун куҫӗ инҫех те мар тӑракан Шатра Марьеннипе тӗл пулчӗ. Малтанлӑха ним пулман пек пӑхрӗ Вӗҫелис Марье ҫине, пӑхрӗ те куҫне тӳрех тартасшӑн пулчӗ. Анчах тепӗр самантран вӗсен куҫӗсем каллех тӗл пулчӗҫ. Сиввӗн, йӗкӗлтесе, намӑссӑррӑн пӑхать Шатра Марье, икӗ хура куҫӗнче, сӑннисене кӑларса, икӗ ҫӗлен ларать тейӗн. Пуҫне усрӗ Вӗҫелис, тепре тннкерчӗ Марье ҫине. «Ҫапла! – чӗлхине кӑларса, пуҫне силлерӗ Шатра Марье, – ҫапла! Халь куратӑн-и ӗнтӗ?» – «Куратӑп, – хӑй ӑссӗн пӑшӑлтатрӗ Вӗҫелис, – анчах мӗншӗн савӑнатӑн-ха эсӗ? Сан Мишуру арҫын мар-и? Вӑл каяс ҫук-и вӑрҫа?» «Ҫапла!» – куҫӗнчен ҫиҫӗм кӑларса, хӑйӗннех печӗ Шатра Марье.

Вӗҫелис вара Иван еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ.

Шурӑ така ялт сикрӗ те халӑх, хушшинче ҫухалчӗ.

Кун тӗксӗмленчӗ. Явӑнса шӑвакан пӗлӗт таткисем пӗр ҫӗре пухӑнчӗҫ. Хӗвел хупланчӗ. Малтан майӗпен, унтан вӑйлӑрах та вӑйлӑрах вӗрекен ҫил ватӑ йӑмрасен тӑррине аврӗ. Ҫиҫӗм ялтӑртатрӗ. Аслати мӑнаҫлӑн кӑлтӑртатса илчӗ. Пӗлӗтрен сивӗ ҫумӑр пӗрчисем татӑлса анчӗҫ.

Хирлӳ пек карӑнтарнӑ кӗсле хӗлӗхӗ ҫурмаран татӑлчӗ.

Лашасем, чĕвен тăрса, хăрушшăн тулхăрчĕç. Урапасен шăлтăртатăвĕ çĕре кисретрĕ. Тепĕр çур сехетрен уçланкă пушанса юлчĕ.

– Иван, – терĕ Вĕçелис чĕмсĕр тăракан упăшкине. – Пурте саланчĕç, Иван.

Иванĕ чĕнмерĕ. Вăл, тĕреклĕ те пысăкскер, вăл, тин çеç çĕнтерӳçĕ пулса танă çын, çĕр çине пăхса, хăй кăкăрĕпе чалăшшăн çапса çăвакан çумăра тĕреленĕ пек, пĕртте хускалмарĕ. Ун çӳçĕ тăрăх, кăра та çилĕллĕ пичĕ тăрăх çумăрăн шултра пĕрчисем юхаюха анчĕç.

– Иван, – тепĕр хут шăппăн чĕнчĕ Вĕçелис. – Киле каяр, Иван.

Вара тин асăрхарĕ ăна упăшки, хăй ытамне илчĕ, сивĕ çумăртан хăйĕн кĕлеткипе хуплама тăрăшрĕ, анчах çумăрĕ çапрĕ те çапрĕ. Иванпа Вĕçелис вара йăмрасен хӳттине кĕчĕç, çумăр кăшт лăпланнă пек пулсан, ĕшне хĕррине тăварса хунă лаша патне чупса кайрĕç.

Пĕлеймест халĕ Вĕçелис: мĕн шухăшларĕ-ши çавăн чух акатуй ĕшнинче унăн Иванĕ? Çул тăрăх лашана урнă пек хăваласа, мĕншĕн пĕр чĕнмесĕр пычĕ-ши вăл? Пурнăç çинчен шухăшларĕ пуль çав, Вĕçелиспа пулас пепке çинчен шухăшларĕ пуль. Шухăшларĕ пуль те, пат татса, çав сехетрех, çав кунах вăрçă хирне тухса кайма йышăнчĕ пуль. Анчах хăй çапла шутлани çинчен пĕлтерсе, Вĕçелиса тӳрех хăратса ӳкерес темерĕ пулмалла. Эх, Иван, Иван...

7

Çакăн çинчен каламасан та пултаратчĕ пулĕ Вĕçелис: сăмахсăрах пурте паллă, анчах кам мĕн шутланине тĕрĕслесе пăхасах килчĕ унăн, тата та ытларах капланса ларнă шухăшсен йывăрăшне чĕре çинчен кăшт та пулин сирсе пăрахас килчĕ. Çавине ăвăс турачĕ çине çакса хучĕ те вăл, хăй хумханнине кăтартас мар тесе, йăл кулançи турĕ, унтан çăмăллăнах çапла каларĕ:

– Калăр-ха, туссем, мĕн тăвас манăн çав салтакпа? Шел пула пуçларĕ, ытла асапланать...

Маруç хаш сывласа ячĕ те, васкамасăр, сăмахĕсене суйласуйла, çапла сĕнчĕ:

– Хăвăн ирĕкӳ ĕнтĕ. Чуну хушнă пек ту. Çирĕмрен кăна иртнĕ вĕт-ха. Ĕмĕр сакки сарлака, теççĕ. Çавăн çинчен шутла. Çын каласмасăр пулмĕ. Пĕр вăхăт калаçĕç те манса кайĕç. Санăн пурăнас пулать.

«Çапла, эпĕ çамрăк. Ватăличчен нумай-ха. Пĕчченлĕх пĕремĕк мар, вăл тамăкпа пĕрех иккенне паянах лайăх туйса тăратăп. Çын калаçĕ ĕнтĕ - чĕлхен шăмми çук. Анчах манăн пурнăçпа çын хуçа мар. Манăн хамăнах йĕркелесе ямалла ăна».

— Эп сана ăслă çын теněччě, Маруç, — никам çине пăхмасăр каларě Никăн арăмě. — Хут таткине шанса пурăнмалла-и? Ав, пěрре кушеллě çын мěн каларě? Астăватăн-и?

— Юмаха ěненетěн пуль? — йěплерě Маруç.

— Юмах тес мар ăна, Маруç. Шанчăк тес пулать. Пинтен пěр шанчăк тес пулать, — хăй сăмахě çинех тăчě Никăн арăмě.

«Маттур, Тяруç. Шанчăка çухатмастăн эсě. Шанчăк пурриссем телейлě. Анчах та шанмашкăн пěр сăлтав та юлман пулсан? Шанни, кěтни кăлăхах пуласса малтанах пěлсе тăратăн пулсан?»

— Пирěн арçынсем ун пек хăтланас çук, — татса хучě Маруç. — Аманнă пултăр. Урасăр, куççăр юлнă пултăр. Çапах пěлеççě-çке вěсем кунта эпир мěнлерех шар курнине. Эпир кăна мар-тăк, ачисем пур-çке вěсен.

Хěрарăмсем мěнле «юмах» çинчен калаçнине пěлет Вěçелис. Пěрлех пулнăччě вěсем çав кунхине. Каç енне пěр вăхăтрах çăл патне шыв ăсма аннăччě. Çакăнта тěл пулчěç апат çисе ларакан шěвěр сухаллă старикпе.

— Аякран утатăн-и, мучи, — ыйтрě Никăн арăмě Тяруç. — Ывăннă, курăнать.

— Çул ěшентермест, ватлăх ěшентерет, — лăпкăн хуравларě старик.

— Ута-ута тем те куратăн пуль. Каласа кăтарт-ха мěн те пулин. Вăрçă хăçан пěтет теççě? — çаплах калаçма хистерě ăна Тяруç.

— Пěтет, хěрěмсем, пěтет, тӳсмелли нумай юлмарě ěнтě, - майěпен калаçрě палламан çын. — Упăшкăрсене кěтетěр пуль-ха?

— Кěтеттěмěр те çав, шанчăк сӳнчě, — салхуллăн каласа хучě Маруç.

— Йывăр вăхăт. Турă чăтăм патăр сире.

Хěрарăмсем витрисене тултарчěç, палламан çынна ăнăçлă çул сунчěç. Анчах лешě выpăнтан тапранмарě-ха.

— Ан хуçăлăр, йăмăкăмсем, — терě старик. — Тěнчере тěрлě пулать. Кунтан пěр вăтăр çухрăмра Пылшу текен ял пур. Илтнě те пулě-ха. Вăт çав ялта нумай пулмасть «вилнě» çын тупăннă.

— Мěнле «вилнě» çын? — сиксе ӳкрě Вěçелис. Хěрарăмсем те шалт тěлěнсе кайрěç, çěкленě витрисемпе тăп чарăнса тăрса, мучи куçěнчен пăхрěç.

— Ара, чăн-чăн вилнě çынах, — ăнлантарчě старик. — Пěр виç уйăх маларах кăна вилнě хучě килнě пулнă.

— Ак тěлěнтермěш! Вара епле тупăннă-ха? — хăвăртрах пěлесшěн пулчě Маруç.

— Епле... Епле... Ăнсăртран тупăннă. Пылшу çынни тепле станца кайса лекнě те палласа илнě хайхискере, — каллех хăй сăмахне каласа пěтермерě палламан старик.

— Вăрçăран тарса килнě пулать, эппин? — хăй пек ăнланчě Тяруç.

— Мĕнле тарайтăр? Ик ури те çук та, — чĕлĕмне табак тултарнă май шухăша кайнă пек пулчĕ старик. — Ăнлан сире, çамрăксене. Эсир вĕт ялан хитре, ялан илемлĕ пуласшăн. Пит çине пĕр-пĕр шĕпĕн сиксе тухсан та вăтанатăр. Ку вара — пушшех. Таврăнас темен, ахăр, арăмĕ патне. Станцăрах ĕçе вырнаçнă, атăпушмак çĕлесе пурăннă.

— Станца çитнĕ-ха тата, — тĕлĕнчĕ Тяруç.

— Чунĕ кил енне туртнă пуль çав, — терĕ Вĕçелис.

— Вилнĕ çырăвĕ ăçтан килнĕ-ха вара? — çаплах лăпланаймарĕ-ха Маруç.

— Вăрçă акатуй мар-çке вăл. Тĕрлĕ пулать. Тен, ытти юлташĕсем пурте пĕтнĕ, тен, ку кăна шуса тухнă çапăçу хирĕнчен? Кайран сыватма ăсатнă пуль, çавăн чухнех урисене татма тивнĕ пуль. Çавăнпа калатăп: ан хуçалăр, йăмăкăмсем, хура хыпар илтĕр пулсан та, çывăх çыннăрсене кĕтме ан пăрахăр, — тесе вĕçлерĕ те старик хăй сăмахне, хулпуççи çинчи кушелне лайăхрах майлаштарса, çула пуçтарăнчĕ.

Çакăн çинчен те нумай шухăшларĕ Вĕçелис. «Ăнсăртран пинтен пĕрре пулакан япала сиксе тухсан? Пулас çук. Аманнă салтак сăмахĕ ытла ĕненмелле янрать. Таврăнмасть Иван».

...Кăнтăрлахи апата ларнă хĕрарăмсем Вĕçелис шăпи çинчен калаçаççĕ. Хĕвелĕ çунтарса ярас пек хĕртет, çавăнпа утă çулакансем ватă ăвăс сулхăнне вырнаçнă. Ваçинкке çаранĕпе юнашарах — çĕртме уйĕ. Маруçпа вунтăватă çулхи Лявун плугарь виççĕмĕш кун ĕнтĕ унти уя сухалаççĕ. Утă çулакансене колхоз апат пĕçерсе парать, Маруçпа Лявун та çак кунсенче кăнтăрлана вĕсемпе пĕрлех лараççĕ.

— Пехил Ульки шанма пултарать çавăн пек пуласса. Пăх-ха, чип-чиперех çырусем янă çĕртен таçта мура кĕчĕ кайрĕ Пехил. Госпитальте выртать тетчĕç. Çур çул хыпар кĕтет Улька — ни вилнĕ хучĕ, ни хăйĕн çырăвĕ. Çĕр çăтрĕ тейĕн, — сăмаха малалла тăсрĕ Хрĕçти.

— Эй, тупрĕ пуль, ара, — пĕлнĕ пек, çапах кăшт иккĕленсе каларĕ Шурти Кулине. — Ялта та куçне вылятсах çӳретчĕ те...

— Эп пулсан, ют çын патĕнче усрамăттăм хам пата килнĕ салтака, — сăмаха малтанхи йĕр çине куçарчĕ Ярахви Веркки, утă паккусĕ çине тăсăлса выртнăскер.

— Ют арçынна хăвпа юнашарах выртторăттăн-и? — йĕплесе ыйтрĕ Тяруç.

— Шухăшласа пăхнă пулăттăм. Тепĕр тесен, шухăшламалли те çук. Мĕн, хĕрарăмсем мар-им эпир? Чун çук-и, ӳт çук-и пирĕн? — питне çаннипе хупласа, куçне уçмасăрах калаçрĕ Веркка.

Çакна илтсен, кăвайт умĕнче чей вĕретсе, типĕ вутă-шанкă

хатĕрлесе тăракан Лявун, темле кĕвĕ шăхăрнă пекки тукаласа, вăрмана кĕрсе кайрĕ. «Кансĕрлес мар, хĕрарăм калаçăвĕ пуçланчĕ», — терĕ пулас.

— Ача умĕнче намăса пĕлесчĕ хăть, — асăрхаттарчĕ Верккана Маруç.

— Вунтăватта çитсе, ăна-кăна чухламасть тетĕн пуль? Илттĕр, вĕрентĕр, ик-виç çултан авланма вăхăт, — хăйĕннех печĕ Ярахви Веркки.

Çак вак-тĕвек калаçăва Питтăпай Санюкĕ илтмерĕ те тейĕн. Вăл çапла каларĕ:

— Хăть те мĕн калăр та, аманнă салтака Вĕçелисăн йышăнмаллах. Вăл ун патне инçетрен килнĕ. Хисеплесе килнĕ.

— Чипер калаç-ха, Санюк. Çын мĕн калĕ? Ну, эппин, теппер çул ирттĕр. Вăрçă пĕтиччен кĕтсе пăхтăр Вĕçелис. Хисеплет пулсан, пăрахса каяс çук. Пурăнтăр ялта. Учитель пулнă теççĕ. Вĕренттĕр ачасене, — Вĕçелис шăпишĕн чăннипех пăшăрханнине палăртса калаçрĕ Тяруç.

— Вĕренттĕр, эп хирĕç мар. Вĕçелис килĕшмесен, хам енне çавăратăп, — каллех çăмăлттайла персе ячĕ Ярахви Веркки.

— Çавăр, — терĕ Тяруç. — Сан çине пăхма ухмах пуль вăл.

— Типнĕ кăркка! — паккус çинчен хăвăрт сиксе тăчĕ Веркка. — Сăн-пит çук-и, кĕлетке çук-и?

— Мухтанмалли те кĕлеткӳ çеç. Пуçра пулни кирлĕ, — тавăрчĕ Тяруç.

— Апла иккен. Кам, тетĕп, ку, шутсăр ăслăскер, пуçлăхра çӳрет. Тяруç пулчĕ-иç? Утă çулма ма килтĕн-ха тата? — парăнмарĕ Веркка.

— Тьфу! — тарăхса кайрĕ Тяруç. — Калаçнинчен калаçманни санпа.

— Ан калаç çав. Калаçас пулсан, шутласа калаç. Атту тупăннă ăслăскер, — Веркка каллех утă çине сарăлса выртрĕ.

Туйса илчĕ вара Вĕçелис: çук, çын пулăшаймасть ăна. Алă-урана, чуна тăлласа çӳрекен шухăшсене ун хăйĕнех йĕркене кĕртмелле. Аманнă салтакпа та ун хăйĕнех калаçас пулать. «Кай» тейĕ-ши вăл ăна, «юл» тейĕ-ши? Татăклă шухăш патне пыраймасть Вĕçелис. «Кай» теме хăюлăхĕ çитеймест, «юл» теме чунĕ хушмасть.

Вăхăт вара иртет те иртет.

Чĕрери арпашу кунран-кун вăйлăрах.

8

...Халăха ял Совечĕ патне пухрĕç. Совет председателĕ Раман пичче нумайччен калаçмарĕ.

— Вăрçă пуçланчĕ, юлташсем, — терĕ вăл. — Районти çар комиссариатĕнчен çапла пĕлтерчĕç: çирĕм виçĕ çултан пуçласа

вăтăр ултта çитнĕ арçынсен фронта тухса каймалла. Паян вĕсен пĕрремĕш ушкăнĕ станцăра пулмалла. Халĕ кам-кам каяссине вуласа паратăп. Шăпланăр, юл-ташсем.

Пĕр вырăнта шак хытса тăчĕç çынсем. Раман пичче вулама пуçларĕ:

— Алимов Никандр Алексеевич!..

— Çук! — кăшкăрса ячĕ Никăн арăмĕ Тяруç. — Ямастап! Ниçта та ямастăп эп ăна! Никăнăм! — вара упăшкине ыталаса илчĕ те, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, ĕсĕклеме тытăнчĕ.

— Васильев Прокопий Васильевич, — кăшт тăхтанă хыççăн васкарах вулама пуçларĕ Раман пичче. — Вырмаскин Иван Иванович!.. Галкин Петр Спиридонович!.. Гармошкин Кузьма Николаевич!..

— Купăсçа хăварасчĕ хăть. Ыттисене мĕнле ăсатăпăр? — çын илтмелле мăкăртатса илчĕ шур сухаллă Трахвин мучи.

— Трофимов Семен Трофимович!..

— Ак сана — «ăсатăпăр». Ывăлу та Куçмапах каять вĕт, — терĕ Çтуппан арăмĕ Маруç. Çакна кĕтмен Трахвин мучи сасартăк салхуланчĕ, пуçне усрĕ, çамкине кивĕ шĕлепкипе сăтăрса илчĕ те пĕр чĕнмесĕр килĕ еннĕ çаврăнса утрĕ.

Раман пичче хушаматсене вуласа пĕтерчĕ, куçлăхне хыврĕ, халăх çине пăхрĕ.

— Юлташсем, — терĕ вăл, сассине йăвашлатса. — Пĕлетĕп, йывăр пулать сире. Тăшман вăйлă та хăрушă. Анчах эпир тата вăйлăрах. Ман шутпа, вăрçă нумая пырас çук. Радио та çаплах каларĕ: тăшмана аркататпăрах! Çĕнтерӳ пирĕн пулать! Апла пулсан, фронтра та, кунта, тăван ялта та, хамăрăн Виççырма ятне ярар мар, юлташсем. Арăслан пек çапăçса, вăкăр пек ĕçлесе, Тăван çĕршыва çĕнтерӳ тума пулăшар!

Раман пичче, хăйĕн юлашки сăмахĕсем çынсен чунĕсене витерчĕç-ши тенĕ пек, пĕр вăхăт ялйыш çине сăнаса пăхса тăчĕ. Унтан, куçлăхне сăран йĕнне вырнаçтарса, çапла каларĕ:

— Манăн çакăнпа пĕтрĕ, юлташсем. Камăн калаçмалли пур?

— Манăн, — терĕ Иван, кĕтмен çĕртен яшт çĕкленсе. Вара Вĕçелис хулпуççине лăпкаса хăварчĕ те, халăх умне тухса, председательпе юнашар тăчĕ. — Манăн калаçмалли пур, Раман пичче.

— Тархасшăн, — ирĕк пачĕ лешĕ.

— Халăх, — терĕ Иван. — Тăван ял çыннисем. Шутлатăп та, çак вăхăтра миçе пуху пулса иртмест пуль пирĕн çĕршывра! Юнĕçен нимĕç вăрă-хурахĕ пире чура тума килсе кĕчĕ пулать. А эпĕ калатăп: пулмасть ун пек! — Иван йĕри-тавра пăхса илчĕ. — Акă, Çтуппан та калать, Пракух пичче те, Çумкка та... Купăс Куçми те çаплах калать: пулмасть ун пек! Пирĕн аттесем, пиччесем, юн тăкса тар тăкса, çăмăллăн хăтăлчĕç тетĕр-и улпутсемпе пуян-

сенчен? Аркантейсемпе мăрсасенчен? Э, çук, текех эпир чура пулмастпăрах. Хамăрăн çĕр, хамăрăн кил-çурт, хамăрăн телей пур пирĕн паян. Çав телее сыхлакансем те хамăрах пулмалла. Çыр, Раман пичче, Данилов Иван Данилович хăй ирĕкĕпе фронта тухса каять тесе пĕлтер района! Эп пĕлетĕп, йывăр пулать мансăр Вĕçелиса, куратăр пулĕ, кĕçех ача çуралмалла пирĕн. Анчах манăн çав ача пурнăçне: чунилли тăшман килсе таттăр тесе кĕтсе выртмалла-и? Манăн, ашшĕн, упа пек тĕреклĕ арçыннăн, арăмсем мăшкăл тӳсчĕр темелле-и? Çыр, Раман пичче, пĕлтер района...

— Чим-ха, Иван, ачапчалла ан хĕрӳлен эсĕ, — пӳлчĕ ăна председатель. — Вăхăт çитсен сана та ăсатăпăр.

— Паянах, Раман пичче! — çине тăрса, çирĕппĕн каларĕ Иван.

— Юрать, шăнкăравласа пăхăп та, темле çав, — иккĕленчĕ председатель.

Иванăн вара нимĕнле иккĕленӳ те пулмарĕ çакăн пирки. Ашшĕпе амăшне, Çтуппанпа Маруçа, Вĕçелисăн Клавье мăнаккăшĕпе Якур йыснăшне, пĕчĕк Мĕтрие шыраса тупрĕ те вăл пĕр тăхтаса тăмассăр хăйсем патне утма каларĕ. Паçăрах куççуль çăтса тăракан Вĕçелиса чунне хытарса, киле çитсе сĕтел çине хатĕрлеме хушрĕ. Хăй вара председательпе пĕрле ял Советне кĕрсе кайрĕ.

Çапла: «Чунна хытар, Вĕçелис, урăхла май çук», — терĕ ăна Иван. Ăнланчĕ те, ăнланмарĕ те хăй упăшкине Вĕçелис. «Пĕлетĕп, вăхăчĕ йывăр, Тăван çĕршыва сыхлама вăйлă арçынсем кирлĕ. Виççырмаран вуниккĕн тухса каяççĕ, ытти ялсенчен, хуласенчен миçен пуль тата! Анчах эсĕ, Иванăм, мĕншĕн мана çак йывăрлăхра пĕр-пĕччен тăратса хăварса, хăвăн яту тухмасăрах манран тарасшăн-ха? Мĕншĕн, Иванăм, ача çураличчен те, кĕркуннеччен те кĕтесшĕн пулмарăн? Ай, яка калаçма вĕренсе çитрĕн-çке. «Телее сыхлакансем те хамăр», тетĕн. Ман телее кам сыхлĕ-ха вара? Ачаллă пуçпа пĕччен пурăнас-и, пĕччен çурт тытас-и, выльăхне пĕччен пăхас-и малашне? Эх, Иванăм, Иванăм, çăмăлттайлăх мар-и ку санăн?»

Хăйсем патне кайма тухнă ушкăн хыççăн çакăн пек йывăр та йуçĕ шухăшсемпе утрĕ Вĕçелис. Пӳрте кĕчĕç. Кашни хуллен, пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕрне мĕнпе те пулин пулăшас тесе калаçаççĕ. Иванăн ашшĕпе амăшĕ хăйсем те питĕ салхуллă, вĕсем çине пăхсан та уласа макăрса ярас килет Вĕçелисăн: «Чунна хытар», — упăшкин çак сăмахĕсене асра тытни кăна чарса тăрать ăна вĕри куççульten.

Сĕтел пухма Маруç ытларах пулăшрĕ. Вăл та хурлăхлă. Хăйĕн Çтуппанĕпе паян-ыран çакнашкалах уйрăлмалла пулать унăн.

Çук! Ытти вак-тĕвеке, темле тăрăшсан та, астăваймасть Вĕçе-

лис. Çавă çеç куç умĕнче: алăк сарлакан уçăлса кайрĕ те, Иван пӳрте кĕрсе тăчĕ, сĕтел патне иртрĕ, амăшĕн, ашшĕн, Вĕçелисăн, Мĕтрин, хăнасен куçĕнчен тинкерчĕ. Унтан, чĕринче ĕмĕрлĕхе асра хăварас тенĕ пек, пӳртри кашни шăтăк-çурăка сăнама пикенчĕ.

Пурте ун çине чĕнмесĕр пăхса тăчĕç. Ассăн сывласа ячĕ Иван, лăпкăн çапла каларĕ:

— Çăкăр кирлĕ пулать пуль çул çине. Унтан... Хутпа кăранташ.

«Каять!» — Вĕçелис тӳрех тенкел çине тĕшĕрĕлсе анчĕ. Ун патне хĕрарăмсем чупса пычĕç, лăпланма ӳкĕтлерĕç.

Анчах куççульне текех чарма пултараймарĕ Вĕçелис, упăшки патне пырса, такмакла-такмакла йĕме пуçларĕ.

Иван хăй арăмне ниепле те чараймарĕ. Шăлне çыртса, ниçта кайса кĕреймесĕр, тем шыранă пек, алăкăн-тĕпелĕн çӳрерĕ вăл. Амăшĕ сĕтел хушшине ларма чĕнсен тин кăштах сывлăш çавăрса илме май килчĕ. Вĕçелис куççульне шăлса типĕтрĕ, упăшкин куçĕнчен пăхма хăяймасăр, ăна илемлĕрех кукăльсем сĕнчĕ: «Çи, выçă ан çӳре, çул çинче темле пулать унта...»

Анчах апат анмарĕ Иванăн. Ашшĕ черккесем тултарса пачĕ, аллине чĕтрете-чĕтрете сăмах каларĕ.

— Ывăлăм, — терĕ вăл, — çулу такăр та çаврака пултăр, паян ăçтан тухса кайнă, çавăнтах çавăрса çитертĕр сана. Вăрçă вăл — вăрçах. Сыхлан, Иван, пуçна йĕтре айне ан чик. Командирсем каланине итле, аçу-аннӳ ятне, арăму, ятне ан яр. Эпир кунта, ялта, пурăнкалăпăр мĕнле те пулин, кине те инкек курма памăпăр. Кун пирки пĕртте ан пăшăрхан. Ху ирĕкӳпе кайса, тĕрĕс те тăватăн пулĕ. Кĕр çитсен, çав-савах илсе каятчĕç. Ну юрĕ, чипер çӳре... Ĕçер-ха.

— Эпĕ те тупăп-ха сана, Иван, — терĕ Çтуппан. — Ырантепĕр куннех тухса пырăп. Тракторпа ĕçлеме Маруçа вĕрентетĕп те акă...

Тухса кайма вăхăт çитнĕччĕ ĕнтĕ. Иван каллех мачча çине, стенасем çине пăхса илчĕ, шухăша кайрĕ.

— Вĕçелис, — терĕ вăл, кăмака çине аллине хурса, — çак çуртри вучах ан сӳнтĕрччĕ, эпĕ таçта аякра пулсан та, вăл мана ялан хăй ăшшипе киле турттăрччĕ. Унтан тата... тăван-пĕтен, тусюлташ ан татăлтăрччĕ пирĕн патран.

— Ан пăшăрхан, Иван, хам пур чух вучах та сӳнмĕ, тăвансем те килсе çӳреме пăрахмĕç, — çирĕппĕн каларĕ Вĕçелис. — Ху кăна йĕркеллĕ çаврăнса çит.

...Тепĕр çур сехетрен вăрçа каякансем тăван ялпа сывпуллашса уй хапхинчен тухнă чухне Виççырма çĕрĕ те чĕтресе илсе çурмаран çурăлса кайрĕ тейĕн. Карталанса, ал тутрисем сулласа пыракан вуникĕ арçын хăватлă та хурлăхлă юрă пуçларĕ:

Чупрăм кăна антăм та
Çут шыв хĕрне,
Сикрĕм кăна лартăм та
Эп ким çине.
Мал еннелле пăхрăм та –
Çул вĕçĕ çук.
Хыçал енне пăхрăм та –
Тăвансем çук.

Макăрчĕ, ӳлерĕ ял. Çак вĕçсĕр çулпа, паллă мар çулпа тухса кайса, ăçта çитсе хăйсем валли вилĕм тупасса, ăçта çитсе йывăр аманасса пĕри те шутламарĕ ун чухне. «Кĕтĕр мана, таврăнатăп!» – терĕ вуникĕ арçынтан кашниех. Мĕнле тĕреклĕччĕ, хитреччĕ, тăванран та тăванччĕ çав арçынсем! Купăс Куçмисĕр пуçне пĕри те таврăнаймарĕ каялла Виççырмана.

– Сывă пул, Вĕçелис, – терĕ Иван, ял халăхĕпе, тăванĕсемпе, тантăшĕсемпе сывпуллашнă хыççăн. – Хăвна сыхла. Эп вăраха мар... Ак çапса салататпăр та çав ирсĕре... Сывă пул, Вĕçелис...

Анчах Вĕçелис Иван сăмахĕсене илтмерĕ те, ăнланмарĕ те. Упăшки, унран уйрăлса, урапа çине кайса ларнине асăрхасан тин тăн пырса кĕчĕ ăна.

– Иванам! – кăшкăрса ячĕ вăл хăрушшăн, лава хуса çитрĕ. – Иванăм! Илсе кай хăвпа пĕрле. Станцăна çитсе килем пĕрех хут.

– Укçа ывăтрăмăр, Вĕçелис, – ăнлантарчĕ Купăс Куçми. – Укçа ывăтсан, тек ăсатмаççĕ. Асту, Ивана йывăр ан килтĕр.

– Тĕшмĕш ку, Куçма, ĕненместĕп, – хирĕçлерĕ лавпа юнашар васкаса утакан Вĕçелис.

– Чар лашуна! – чăтаймарĕ Иван та. – Лартса каяр. Вăрмана çитиччен хăть.

Анчах çакă та çăмăллăх кӳреймерĕ Вĕçелиса. Тăватă лавпа пыракан арçынсем, йывăр та хурлăхлă юрăсем юрла-юрла, ту çине хăпарчĕç, вăрман хĕрнелле çул тытрĕç. Ытла хăвăрт иртрĕçке вăхăчĕ, ытла та кĕске пулчĕ çулĕ. Часах вăрманти çутă кӳлĕ курăнса кайрĕ. Çакăнта çитсен, Иван лашана чарма ыйтрĕ.

– Каç пулать, Вĕçелис, инçете ан пыр, пĕччен таврăнма хăрушă пулĕ, – терĕ вăл, арăмĕ çине пăхма хаяймасăр.

Арçынсем юррине итлесе пырса, кăмăлне хытарнăччĕ пулĕ çав Вĕçелис, тен, куççулĕ юлманччĕ пулĕ, тен, тата упăшки асĕнче ытлашши ачаш чунлă юлас темерĕ-и вăл, – макăрмарĕ, кăшкăрмарĕ хальхинче, сăпайлăн Иван куçĕнчен пăхрĕ те çапла каларĕ:

– Килшĕн ан пăшăрхан, пурте йĕркеллех пулать. Хăвăртрах таврăн. Çырусем яма ан ман...

– Ялан çакăн пек маттур пул, Вĕçелис, – мухтарĕ ăна Иван. – Пуçна çӳлерех çĕкле. Ан ман, çак тĕнчере пĕччен мар эсĕ, тĕнчере

сана питĕ хытă юратакан çын пур. Кĕт, Вĕçелисăм, вăхăт нумай иртмĕ, таврăнăп.

— Ăхă, — ним калама аптраса, пуçне сĕлтрĕ Вĕçелис.

Лав тапранчĕ. Иван, Вĕçелисран уйрăлса, пĕр утăм, ик утăм турĕ.

— Хăвна хытă сыхла, — хăвăрт-хăвăрт калама пуçларĕ Иван. — Хăвна ача телейĕшĕн упра! Пĕччен йывăр килĕ. Ялпа пĕрле пурăн, Вĕçелис!

«Пурăн, Вĕçелис! Пурăн, Вĕçелис! Пурăн, Вĕçелис!» — пĕтĕм тĕнчене сасă пачĕ хура вăрман.

Иванпа Вĕçелис хушши, тăсăлакан çип пек, вăрăмланса-вăрăмланса пычĕ. Пĕр-пĕрин сăн-пичĕ часах палăрми пулчĕ, лав çинчи арçынсен ĕмĕлки, Иванăн çӳле çĕкленĕ алли каç сĕмлĕхĕнче шупкалчĕç, çул вăрманалла кĕрсе кайрĕ те, тăсăлакан çип патлатса татăлчĕ.

Йывăррăн утрĕ киле Вĕçелис. Ним шухăшсăр, васкамасăр утрĕ. Тăнлавра юн тапни çеç илтĕнсе пычĕ.

Анчах, кайсан-кайсан, шухăш уçăмланчĕ. Киле çитсен мĕн-мĕн тумалли çинчен, ыранхи куна мĕнрен пуçламалли çинчен шухăшларĕ вăл. «Пахчара çумкурăк курăнкалать, çумлас пулать, паян хăярпа кишĕре те шăвараймарăм, ирхине манас марччĕ. Колхоз ĕçне тӳрех хушас çук-ха, мĕнле ăшаланнине ăнланма тивĕç. Чим, ара, хушаканни кам пулĕ, Пракух пиччене те вăрçа ăсатрăмăр мар-и?

Епле хĕрлĕ хĕвеланăç! Çуллахи чи вăрăм кун паян. Хĕвел çапла хĕрелсе анчĕ-ши? Е унта, анăçра, хуласемпе ялсем хытă çуннăран çапла-ши ку? Ытла хĕрлĕ».

Çулĕ паçăр сисĕнмерĕ. Чылаях инçе утмалла-çке Вĕçелисăн. Хирте сулхăн, çӳçентерет. Çавăнпа хăй уттине татах васкатрĕ вăл.

«Çапах хĕвел паян яланхи пек илемлĕн анман пулмалла. Мĕншĕн пĕлĕтсем çине те писев тĕс ӳкнĕ-ха? — çав-çавах канăçсăрланчĕ çамрăк арăм. — Кун пек пулакан марччĕ-çке».

Сăрт çине хăпарнă чух ун хăлхине таçта тем çуйăхашни илтĕнсе кайрĕ. «Турăçăм, — пăшăлтатрĕ Вĕçелис. — Ăсран тайăлатăпши ĕнтĕ? Хĕвел анни куçа урăхла курăнать, хăлхара шуйттан туйĕ янрать. Хăвăртрах киле çитсе ӳкесчĕ, иçмасса...»

Сăрт çине утса мар, чупса хăпарчĕ вăл. «Хăвăртрах, хăвăртрах — яла, çынсем патне. Мĕнле мурсем çухăраççĕ-ха çаплах? Мĕнле лашасем кĕçенеççĕ? Тем тесен те чирлерĕм пулĕ...»

Мăкăрланса явăнакан хура пĕлĕтсем хушшинче кĕрен хĕлхемсем ялтăртатса илчĕç. Сăрт çамкине улăхса çитсенех, Вĕçелис пичĕ çине хăрушă çутă ӳкрĕ.

«Ял çунать-çке! Тукас çунать! — чĕри çурăлса каймалла сехĕрленсе ӳкрĕ Вĕçелис. Тата хытăрах чĕтреме пуçларĕ вăл, чĕркуç-çийĕсем лăштах кайрĕç, сывлăш пӳлĕнчĕ. Васкать вăл, анчах ури-

сем итлемеççĕ хăйне. Аран-аран уй хапхинчен кĕчĕ Вĕçелис, кĕчĕ те урамра кĕпĕрленсе тăракан хĕрарăмсем патнелле çул тытрĕ. Çав вăхăтра аслати пек шатăртатса килекен урапа сасси илтĕнсе кайрĕ. Лав Вĕçелис умне çитрĕ, лавçи темшĕн лашине каялла çавăрчĕ те ăна тăп чарса тăратрĕ.

— Лар хăвăртрах, Вĕçелис! — кăшкăрчĕ лавçă.

— Мĕн пулнă кунта? Кам çунать? — хыпăнса ӳксе ыйтрĕ Вĕçелис.

— Лар хăвăртрах! — васкатрĕ лавçă.

Вĕçелис ларчĕ. Халĕ тин вăл Кирука палласа илчĕ.

Лаша каллех урам тăрăх сиккипе чуптарчĕ.

Тепĕр темиçе минутран ним ăнланман Вĕçелис, халăха сиресире, ялкăшса, çатăртатса çунакан хăйĕн пӳрчĕ патне ыткăнасшăн пулчĕ, анчах темле вăй, такам ун çулне пӳлсе хучĕ. Вăл, тăнне çухатса, çĕр çине ӳксен, ăна каллех лав çине йăтса хучĕç, Иванăн ашшĕ-амăшĕ килне çитерсе выртторчĕç.

...Çур çĕр çитеспе Вĕçелис хăйĕн çурчĕ вырăнне килчĕ-килчех. Кĕл купи çине, çунса пĕтеймен йывăç таткисем çине, кирпĕч ванчăкĕсем çине чылайччен пăхса ларчĕ вăл. Пĕр кун хушшинче акатуй пулни, çапса çумăр çуни, аслати авăтни, уяртни, Ивана ăсатни, мĕнпур тӳпене хĕретсе, хăйĕн пӳрчĕ хăрушшăн çунни ниепле те шăнăçаймарĕç унăн пуçĕнче. Упăшки кайнăранпа темиçе эрне иртнĕн туйăнчĕ.

— Вăрçă кунта та çитрĕ-им, Микулай пичче? — ыйтрĕ вăл хăй çумĕнче чĕлĕм паккаса тăракан пушарникрен.

— Пахчана паян кăмрăк тухса тăкманччĕ пулĕ те? Пушар хыçалтан, хуралтăран тухнă, — терĕ пушарник.

Сиввĕн, çисе ярасла йăлтăртатакан куçсем, Шатра Марье куçĕсем, тӳрех тухса тăчĕç Вĕçелис умне. Унтан ун хăлхинче пĕр чарăнмасăр тăванран та тăван сасă янрама пуçларĕ: «Пурăн, Вĕçелис! Пурăн!.. Пурăн!..»

9

Тĕлĕнетĕн этемрен. Амантрĕ, хуçрĕ, улталарĕ, таптарĕ ăна — ашшĕ-амăшĕсĕр, кил-çурчĕсĕр, юратнă çыннисĕр тăрса юлчĕ вăл — çапах пуç усмарĕ. Чун ыратăвĕ, чĕре хӳхлевĕ чылайччен лăпланаймарĕ пулин те, хăйне хытарчĕ. Шăлне çыртса, пурнăç çинченех шухăшларĕ. Темле йывăр пулсан та, тепĕр чух ниçта кайса кĕме çук пек туйăнсан та, «пĕтрĕм» теме васкамасть этем. Унăн пурпĕрех таçта аякра, хăйĕн илĕртӳллĕ ĕмĕчĕ хĕрринче, шевле пек йăл-йăл вылякан çутă шанчăкĕ пур. Тусĕсем, тăванĕсем, кӳрши-аршисем пур. Унăн хăйĕн халăхĕ пур. Халăх хăвачĕ, халăх хавалĕпе тĕрĕслĕхĕ нихçан та иксĕлмест. Анса кур-ха Çарăмсан хĕрринчи Тăрна куç текен çăлкуçа. Ĕмĕрсем тăршшĕпе шыв

ăсаççĕ унтан Виççырма çыннисем. Чакмасть унăн чĕркĕмĕл пек асамлă шывĕ, темле çанталăкра та ăшăнмасть те, сивĕнмест те вăл. Халăх чунĕ те çавăн пекех.

...Пушанчĕ ял. Арçын сассисĕр тăрса юлчĕ. Иванăн çырăвĕ килсе те ĕлкĕреймеччĕ-ха, унăн ашшĕне Танилене, Çтуппан юлташне, Питтăпай пиччене, Кирука, Мăрса Мишурне фронта илсе кайрĕç. Уксах-чăлах, ватă-вĕтĕ тата хĕрарăмсем кăна тăрса юлчĕç Виççырмара. Колхозри мĕнпур ĕç Вĕçелиспа унăн тантăшĕсем çине, хĕрарăмсем çине, тиенчĕ.

Салхуланчĕç çынсем. Тĕксĕмленчĕ Виççырма сăн-сăпачĕ. Шăпланчĕ пурнăç. Каççерен-ирсерен йытă сасси кăна хуçаланчĕ ял урамĕсенче.

Юлашки вăхăтра, ывăлĕпе упăшкине вăрçа ăсатса, кинĕн чăтма çук хуйхине курса, вăйран кайнă Иван амăшĕ вырăнпах выртма тытăнчĕ. «Мĕтри çеç чирлесе ан ӳктĕр, ал-ура вуçех çыхланса ан лартăр», — тесе хăрарĕ Вĕçелис. Вуниккĕри ачана вăл ĕне сумассерен вăйпах ăшă сĕт ĕçтерчĕ, вăхăтра çывратма тăрăшрĕ. «Инке пур-ха килте», — терĕ пулмалла Мĕтри. Яра куна Çарăмсан хĕрринче пулăра çухалса çӳрерĕ вăл. Вĕçелис та чармарĕ ăна, уçă сывлăшпа сывлатăр, хĕвелпе пиçтĕр, чирлĕ амăшĕн асапне курса чунне ан ыраттартăр тесе шутларĕ. Хăй вăл çак кунсенче ĕçе каймарĕ-ха, çурчĕ хыçĕнчи пахча картине майларĕ, çĕрулмине çумкурăкран тасатрĕ, килте яшка пĕçерсе тăчĕ, хунямăшне пăхрĕ.

Председатель, счетоводра ĕçлекен уксах Митра пичче тата Микулай пушарник кăна тăрса юлчĕç хĕлле суйланă правлени çыннисенчен. Фронта тухса кайнă бригадирсем вырăнне хĕрарăмсене суйларĕç. Ответлă ĕçе кӳлĕнме шикленчĕç вĕсем, ĕçе тӳрех йĕркелесе яраймарĕç. Çавăнпа та фермăри хĕрарăмсемсĕр пуçне никам та, унченхи пек кĕрепле е сенĕк йăтса, лаша кӳлсе, хире е вăрмана кайма васкамарĕ-ха.

Шухăша кайрĕ çавăн чух Вĕçелис. «Мĕнле-ха капла? Хĕвеллĕ ăшă кунсем тăраççĕ. Ваçинкке çаранĕнчи курăк тахçанах çитĕнсе çитнĕ. Выльăхсене мĕнле хĕл каçарĕ колхоз? Хамăр мĕнле пурăнăпăр? Чим-ха, вăрçăрисем мĕн çийĕç тата? Мĕн курĕç вĕсем эпир вĕсене сĕт-çу, аш-пăш парса тăмасан? Хула ăçтан илĕ апатçимĕç? Кама кĕтсе выртатпăр-ха эппин?»

Çапла шухăшларĕ те Вĕçелис хăй килте темиçе кун ĕнтĕ ним тумасăр ларнăшăн ырăмарланса кайрĕ. Каç енне, Мĕтри Çарăмсан хĕрринчен таврăнсан, ăна вĕри яшка çитерчĕ те Маруç патне Шуркассине çул тытрĕ. «Ку часах аптраса ӳкекен марччĕ-ха, мĕн шутлать-ши утă çинчен?» — терĕ вăл. Анчах Маруç килте пулмарĕ. Картлашка çинче улма шуратса ларакан икĕ карчăк, икĕ тăхлач — Маруçпа Çтуппан амăшĕсем кăна кĕтсе илчĕç ăна.

— Маруç килте çук, тем? — ыйтрĕ Вĕçелис.

— Ара, таврăнаймарĕ-ха çав, каçа юлчĕ паян, — канăçсăрланса калаçрĕç карчăксем.

— Ăçтан таврăнаймарĕ? — пĕлесшĕн пулчĕ Вĕçелис.

— Эс илтмен, эппин. МТСра тракторпа ĕçлеме вĕренет вĕт, — терĕ Маруç амăшĕ, Хĕрхи аппа.

— Хĕрарăм ĕçĕ марччĕ те, пирĕн сăмаха итлемерĕ ĕнтĕ, — сăмах хушрĕ Укçук аппа та.

Карчăксем яшка пиçиччен ларма, Маруç килессе кĕтме тем пек ӳкĕтлерĕç пулин те, Вĕçелис килĕшмерĕ. Чунĕ канăçсăрланчĕ унăн, пуçĕнчи шухăш тĕлли-паллисĕр çаврăннине туйса утрĕ вăл Шуркасси тăрăх. Тăкăрлăкра Никăн арăмĕ Тяруç хăйĕн çичĕ çулхи Çерукĕпе вутă тататчĕç, те асăрхарĕç Вĕçелиса, те курмăш пулчĕç, те тата сăмах вакласа, вăхăта сая ярас темерĕç. Çул çинче лавккаран краççын йăтса килекен Трахвин пичче тĕл пулчĕ. Вăл та шарламарĕ, пĕр чĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Аслă урама тухсан, Вĕçелис хыçĕнчен тулли лав натăртатса килни илтĕнчĕ. Пушарник Микулай пичче пулчĕ ку, вăрмантан çапă турттарса килет.

Кĕперсем тĕлĕнчи çырансен хĕрринче — ешĕл хăмăшлăх. Вĕсемпе юнашар шурти пахчасем тăсăлаççĕ. Çав пахчасенче çулленех сухан ăнса пулать. Ялти хăшпĕр çынсем, Ярахви Верккипе Пехил Ульки пеккисем, унпа самаях услам тăваççĕ, кĕр çитмессерен сухан сутма хулана тухса вĕçтереççĕ.

Çарăмсанăн иккĕмĕш кукăрĕнче ача-пăча яланах шывра шампăлтатаканччĕ. Паян унта никам та курăнмасть. Вĕт-шакăр та ĕçлĕ. Амăшĕсемпе, ват çынсемпе вăрманта вут-шанкă пуçтарать ĕнтĕ кашниех, утă хатĕрлет е ял хĕрринчи шурта хур-кăвакал кĕтет.

Хăратать çак лăпкăлăх Вĕçелиса. Ялти чĕрĕ пурнăç сӳнсе-сӳнсе пынăн туйăнать ăна. Çак хăрушлăха мĕнле чарса лартмаллине пĕлеймест вăл. Анчах çакна лайăх чухлать: алă усма юрамасть. Тĕрĕс тăвать Маруç. Упăшкасем вырăнне хамăрăнах тăмалла. Никам килсе пулăшасса та шанмалли çук. Кĕтме юрамасть.

Çак шухăшсемпе колхоз правленине пырса кĕчĕ те Вĕçелис хăй ахалех канăçсăрланса çӳренине тӳрех ăнланса илчĕ. Колхоз председателĕ, вăтăрсенчен иртнĕ Петр Павлович, ялти пек каласан, Петюк пичче, тин кăна районтан тавраннă иккен те çĕнĕ бригадирсене хĕрсех мĕн-мĕн тумаллине ăнлантарать.

— Нăйкăшса лармалли вăхăт мар, юлташсем, — тет вăл. — Халĕ кашни çын шутра пирĕн. Ĕçсем вара шутсăр нумай. Апла пулсан, ĕçе тĕплĕ шухăшласа, лайăх йĕркелесе ямалла. Ыранах утă çулма тухăпăр. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртчăр. Пĕр эрне хушшинче пĕтĕм утта çулса, типĕтсе, капансене хывма тăрăшăр. Ватти-вĕтти, арçынĕ-хĕрарăмĕ — пурте ĕçре пулччăр.

Çак вăхăтра Вĕçелис патне Раман пичче пырса тăчĕ.

– Эс тата мĕн ĕçпеччĕ, Вĕçелис? – шăппăн ыйтрĕ вăл, хĕрарăм куçĕнчен ăшшăн пăхса.

Вĕçелис ним калама аптарарĕ. Çăмарти чăххине вĕрентме килнĕ пек пулса тухрĕ-çке-ха. Çапах хăйне алла илчĕ те пытарса тăмарĕ калас шухăшне.

– Эпĕ те çавăн пиркиехчĕ, – терĕ вăл. – Килте ĕççĕр ларма намăс. Утă çулма тухасчĕ хăвăртрах.

Раман пичче Вĕçелис çине тепре пăхса илчĕ те çапла каларĕ:

– Маттур эсĕ. Анчах санăн килтех юлмалла пулĕ. Утă çулмалли çын мар эсĕ.

– Ан пăшăрхан, Раман пичче. Ытлашши пулмăп. Утине çулаймасан, апат пĕçерсе тăрăп, – хăюланчĕ Вĕçелис.

– Хăвăнне ху пĕл ĕнтĕ, – терĕ вара Раман пичче.

...Ним шухăшламасăрах Вĕçелис Тукаса хăпарчĕ. Çунса кайнă çурчĕ хыçĕнчи пахчана тĕрĕслерĕ вăл, урлă-пирлĕ выртакан йывăç таткисене пуçтаркаларĕ. Унтан тĕл-тĕл хăрăмпа хуралнă юман пукан çине ларчĕ. Вутă çуратчĕ Иван ун çинче.

Çак вырăнтан Виççырма алă тупанĕ çинчи пек курăнать. Çарăмсанăн çутă шывĕ, яла çурмаран пайласа, икĕ кукăр тăвать. Пĕр кукăрĕнче, шăпах аслă çул çырма урлă каçнă çĕрте, вăл икке юпленет, çавăнпа кĕперсем те иккĕ. Шыв арманĕ лартма тесе ятарласа тунă пĕр юппине. Авă, арманăн хуралса кайнă хуп тăрри кунтанах курăнать. Анчах Çарăмсан шывĕ паян арман чулне çавăрмасть. Ăçта çӳрет-ши унăн хуçи Питтăпай пичче? Инçетре ĕнтĕ. Унта, хĕвеланăçĕнче, паян урăхла арман авăрать – вăрçă арманĕ...

Киле каяс тесе вырăнтан тăнă кăначчĕ Вĕçелис, урамра сурăхсене йыхăракан Шатра Марье сасси илтĕнсе кайрĕ. Кунталлах утать. Вĕçелис вырăнтан хускалмасăр тăчĕ, Шатра Марье çывхарчĕ, каç сĕмĕнче ют çынна палласа илес тесе, куçран пăхрĕ.

– Эсĕ иккен. Сурăх тесе, – йĕплесе илчĕ вăл.

Вĕçелис чĕнмерĕ.

– Савăнăç пуль-ха. Пуштă Елинкка паçăр сирĕн пата кĕрсе кайрĕ. Çылăха çухатнисене те манмасть иккен турри, – ним пулман пек каларĕ Шатра Марье.

«Иван! – хыпăнса ӳкрĕ çакна илтсен Вĕçелис. – Иван çырăвĕ!»

– Мĕн кашни кун сулланатăн кĕл купи патне? – чĕрре кĕрсе ыйтрĕ Шатра Марье. – Е ĕç тупаймасни ху валли?

Вĕçелис хальхинче те шарламарĕ. Ассăн сывласа çеç илчĕ вăл.

Шатра Марье хăйĕн унченхи кӳрши çине ура тупанĕнчен пуçласа пуçри тутăрĕ таран пăхса илчĕ те çаврăнса утрĕ. «Параçпараç! Параç-параç!» – сăмахсене çăвар туллин кавлесе, хулăн сассипе йыхăрчĕ вăл киле таврăнман сурăхĕсене.

Вĕçелис вара — ăçта утса, ăçта чупса — килне васкарĕ. «Иванăм, сывă-и? Аса илтĕн иккен, Иванăм», — хăй тĕллĕн пăшăлтатрĕ ун тути. Çак вăхăтра ытла хашкаса чупма юраманнине систерсе, хырăмра çивĕччĕн чиксе кайрĕ, Вĕçелис тăп чарăнса тăчĕ, темиçе хутчен тарăннăн сывларĕ, вара, асăрханса, хуллен малалла утрĕ.

10

Хултуйи сассине Вĕçелис аякранах илтрĕ пулин те, уçă кантăка чупса пырса хупма васкамарĕ хальхинче. Сĕтел хушшине ларчĕ, шухăшлăн урамалла тинкерчĕ, салтака кĕтрĕ. Лешĕн утти çывхарнăçемĕн Вĕçелис хумханăвĕ вăйлансах пычĕ, çапах вырăнтан тапранмарĕ вăл.

Пĕчĕк Мĕтри шурта хурсем кĕтет. Вĕçелис хăйне уйăрса панă каçалăка маларах вырса пĕтерчĕ те ĕçрен иртерех таврăнчĕ. Ыран вĕсен бригади тепĕр уя куçать. Каç енне сулăннă ĕнтĕ, анчах хĕвел аниччен вăхăт пур-ха. Паллах, салтак асăрханă Вĕçелис ĕçрен таврăннине. Асăрхаман пулсан, асапланса çӳремен пулĕччĕ.

Акă çитрĕ вăл, çав самант. Аманнă салтак Вĕçелис пӳрчĕ умĕнче, сывлăш çавăрнă пек туса, чарăнса тăчĕ, тарланă питне гимнастерка çаннипе шăлса илчĕ. Васкамасăр пуçне çĕклерĕ.

Вĕçелис кантăк патне пычĕ.

Салтак ăна курсанах пуçне пĕкрĕ, сулахай питçăмартине сиктерсе илсе, кайма пуçтарăнчĕ.

— Кĕр, салтак — терĕ лăпкăн Вĕçелис.

Салтак пĕр вырăнта шак хытса тăчĕ.

— Кĕр, салтак, — тепĕр хут каларĕ Вĕçелис, унтан, кантăка хупса, алăк патнелле утрĕ.

Тепĕр самантран салтак темиçе хутчен пӳрт алăкне пӳрнипе шаккарĕ. Кăмака çумĕнче тăракан Вĕçелис нимĕн те чĕнмерĕ.

Салтак пӳрте пĕр сассăр кĕрсе тăчĕ.

Пĕр вăхăт шухăша кайса, салтак çине пăхрĕ Вĕçелис. Унтан хăнана кутник çине ларма сĕнчĕ. Хăй сĕтел хушшинчи сак çине, паçăрхи вырăна, ларчĕ.

Пĕри те нимĕн чĕнмерĕ-ха. Кăмака хыçĕнчи шăрчăк кăна пӳртре чĕрĕ пурнăç пурри çинчен систерчĕ.

— Шăрăх, — терĕ салтак. — Çумăр ан çутăр.

— Тепĕр эрне тăрсан тем пекехчĕ те. Вырса пĕтерĕттĕмĕр, — салтак сăмахне малалла тăсрĕ Вĕçелис.

— Салтак тетĕн, манăн ят пур. Антун ятлă эпĕ. Ачасем тахçан Антон Кузьмич тетчĕç, — кĕтмен çĕртен каласа хучĕ хăна. — Каланăччĕ те сана, мантăн пулĕ.

Вĕçелис çак сăмаха илтмĕш пулчĕ. Пĕрремĕш тĕлпулăва аса илес килмест унăн.

– Апат çинĕ-и эсĕ? – ыйтрĕ вăл.

- Микулай пичче тин çеç кăнтăрлана килсе кайрĕ. Пĕрле апатлантăмăр. Тавах сана, – терĕ Антун.

– Мĕн пĕçеркелетĕр? – кăсăкланчĕ Вĕçелис.

– Выçă лармастпăр. Микулай пичче те тахçан салтак пулнă. Çĕрулми лайăх анать. Хуçа хăйĕн кĕсрине сума вĕрентнĕ. Сĕт те ĕçкелетпĕр, – ăнлантарчĕ хăна.

– Виççырмара вырнаçас тетĕн-и? – Антун çине пăхмасăрах ыйтрĕ Вĕçелис.

– Ăçта каяс? Ниçта та кĕтекен çук. Виç кун каярах районтан килчĕç. Шкулта ĕçлеттересшĕн, – терĕ Антун.

– Килĕшрĕн-и?

– Килĕшес терĕм, Вĕçелис. Кăштăртатса пурăнкалăпăр çапла икĕ хусах, – Антун, ассăн сывласа ярса, пуçне каллех çĕрелле усрĕ. – Унтан тата... кунтан кайни те çĕнĕ асап çеç пулĕ.

– Мĕнле асап? – ăнланмăш пулчĕ Вĕçелис.

Салтак чĕнмерĕ. Вăл сулахай питçăмартине туртăнтарса илчĕ те, ним калама аптраса, алă пӳрнисене хуçлаткаларĕ.

Каллех шăрчăк сасси кăна илтĕнчĕ пӳртре.

– Хуралтусем юхăннă. Килсе, унтан-кунтан тĕрткелес мар-и? Яра куна ĕççĕрех çӳретĕп, – терĕ Антун тем хушăран.

«Кирлĕ мар» тенĕ пек, Вĕçелис пуçне пăркаларĕ. Хăйĕн шухăшне çапла ăнлантарчĕ:

– Хуралтă сиплеме вăрман кирлĕ. Ăна илме те, сана тӳлеме те вăйăм çитмест. Пурăнкалăп. Вăрçă пĕттĕр-ха, акă. Иванăн юлташĕсем, тăванĕсем килĕç. Пулăшĕç.

– Мана тӳлеме кирлĕ мар, – терĕ Антун. – Вăрманне тупма та хамах тăрăшăп. Микулай пичче кĕсрипе усă курма та пулĕ.

Вĕçелис килĕшмерĕ.

– Ну, юрĕ, кай ĕнтĕ, каç пулать, – терĕ вăл.

Антун ним чĕнмесĕр ура çине тăчĕ, хултуйи çине тĕреннĕ май Вĕçелис куçĕнчен пăхрĕ. Унтан çапла каларĕ:

– Ăнлан, Вĕçелис, Иван хушса янă пек, авланма килмерĕм эп сан патна. «Ниçта та кайса кĕрейместĕн, качча тух мана», тени кулăшла кăна пулнă пулĕччĕ. Апла-капла ан шухăшла ман çинчен. Кашни кун çак урампа çӳретĕп пулсан, çакна пĕлсе тăр: иртнине, вăрçăчченхине, арăмпа ывăлăма аса илетĕп те, чĕрем çурăлса тухать. Эпĕ, арçын, çавнашкал асапланатăп та, эсĕ, çамрăк хĕрарăм, еплерех шар куратăн пуль? Пулăшас тетĕп-çке мĕнпе те пулин. Тархасшăн, ан ютшăн, ан вăтан манран. Эпĕ вĕт мĕнпур кăмăлтан, таса чĕрепе, çынран та хăраса ан лар. Ку вăл япăх йăла – ял йăли.

«Куççуль сиксе ан тухтăр, çак саманта мĕнле те пулин чăтса ирттерес», – шухăшларĕ Вĕçелис. – Ăнланатăп эпĕ сана, Антун,

е тата, мĕнле каланă-ха сана ачасем, Антон Кузьмич, ăнланатăп сана, чунăм чул мар: ырă тăвасшăн эсĕ мана, çак йывăрлăхра мĕнпе те пулсан пулăшасшăн. Иван сăмахне асра тытса çӳретĕнха ĕнтĕ кашни кунах. Ху та пĕччен тата, ху та тăлăх. Мĕн тавасха санпа, Антун, мĕнпе тав тăвас сана çепĕç чĕрӳшĕн?»

Антун алăк патнелле утса кайрĕ.

— Сывă пул, — терĕ вăл. — Чармастăн пулсан, татах килĕп.

— Кĕпӳ-йĕмне илсе кил, çуса парăп, — «кил, алăк яланах уçă» тенине систерсе каларĕ Вĕçелис.

Антун тухса кайсан тин хăйĕн юлашки сăмахĕ мĕне пĕлтернине пĕтĕм чунĕпе ăнланса илчĕ вăл.

«Ухмаха еретĕп пулмалла. Мĕн туса хутăм-ха, ăссăрскер, — шухăшларĕ Вĕçелис, хăй çине тарăхса. — Çын тем калĕ. Мĕтри мĕнле пăхĕ куçран?»

Анчах чун тарăхăвĕ хальхинче вăраха пымарĕ. Таçта, шалта, темле çăмăллăх кӳрекен юхăм пуçланчĕ те пĕтĕм кĕлеткене, пуç мимине сăрăлтатса саланчĕ. Ырă-ырă, лăпкă-лăпкă пулса кайрĕ тӳрех. Иртенпе тырă вырса ĕшенни те, иртнĕ кунçулăн чăтма çук пысăк йывăрлăхĕ те çав çутă юхăма кĕрсе шупкаланчĕç, вăйсăрланчĕç, манăçрĕç. Куçкĕскирен кăвак куçлă, çӳхе куç харшиллĕ, сылтăм питçăмарти çинче пĕчĕкçеççĕ турпаллиллĕ, сарă та хулăн çивĕтлĕ çамрăк хĕрарăм пăхать. Унăн ăслă куçĕсенче çутă ĕмĕт хĕлхемĕ çиçет.

11

Вăрçăчченхи пекех, темиçе лаша кӳлсе килчĕç вĕсем Ваçинкке çаранне. Анчах юрă юрламарĕç, шӳтле-шӳтле калаçмарĕç, шăппăн пычĕç.

Вĕçелис хĕвĕнче Иванăн çырăвĕ выртать. Каçхинех темиçе хут та вуласа тухнă ăна, кашни йĕркине халĕ пăхмасăр калама пултарать вăл. Йывăр, питĕ йывăр Ивана, вăрçă пырать, вутçулăмпа, вилĕмпе юнашар тăрать унăн савнă çынни, çапах кăтартасшăн мар çавна, пурне те тĕрĕссипе çырса, арăмĕн чунне ыраттарасшăн мар, мăнтарăн.

Ялта калаçнă пекех, Раман пичче Вĕçелис валли типĕ вут-шанкă хатĕрлесе пачĕ те, ăна чей вĕретме, кăнтăрлахи апат пĕçерме хушса хăварчĕ, хăй вара, пĕчĕк сунталĕпе мăлатукне йăтса, хĕрарăмсем хыççăн Таркăн çăлĕ патĕнчи уçланкă еннелле çул тытрĕ.

Сĕтеклĕ курăка çăвар туллин кăмăртаттарса çиекен виçĕ лаша та Вĕçелис кăна тăрса юлчĕç халĕ ку вырăнта. Ватă ăвăс çулçисене çил чаштăртаттарать. Миçе çул ларать-ши çак ăвăс? Ун айĕнче, тен, Вĕçелис ашшĕпе амашĕ те, вĕсемпе тантăшлă е вĕсенчен аслăрах çынсем те ларнă пулĕ. Çавна пĕлеймест Вĕçе-

лис. Анчах кунта хăйĕн Иванĕ ларнине лайăх астăвать вăл. Çапла, ав çав шĕшкĕлĕх патĕнче Иванпа ытти арçынсем выртса тăракан хӳшĕччĕ. Вĕçелис хӳшши вара ав çав тӳпемри хурама çывăхĕнчеччĕ. «Мĕншĕн паян та çавăн пек мар? Мĕншĕн унăн Иванĕ таçта аякра, таçта тамăкра çӳрет çак кун? Мĕншĕн ăвăс ытла та салхуллăн пăшăлтатать?»

Вĕçелис хĕвĕнче Иванăн çырăвĕ. Хăй аллипе çырнă ăна упăшки. Апла-тăк çывăх вĕсем паян. Чĕре сумĕнчех выртать унăн çырăвĕ.

«*Аван-и, юратнă Вĕçелисăм!*

Ырă кун, ырă сехет тĕлне пултăр ман çырăва тытса вулама. Чи малтанхи йĕркерех хăвна хĕрӳллĕн ыталаса чуптăватăп. Манран аттепе аннене, Мĕтрие хĕвел пек ăшă салам кала...»

«Аçу та сан пекех вăрçăра çав ĕнтĕ, тăванăм. Пĕлейместĕн эсĕ, ăсатрăмăр ăна. Эс кайсан, тепĕр эрнеренех ăсатрăмăр. Аннӳ сан саламушăн шутсăр савăнчĕ. Аçу кайнăранпа вырăнпах выртать вăл, Иванăм. Çырăвна вуласа патăм та, сăнĕ-пичĕ çăлтăр пек çуталса кайрĕ. Апат та аванах çирĕ каçхине. Çыр çав, час-час çырса тăр, савăнтар аннӳне. Тен, сан çырăвусем тĕлĕнтермĕш эмел вырăнне пулĕç. Юрĕ, эп пĕлтермĕп сана аннӳн йывăр чирĕ çинчен. Халь санăн чунна хуçма юрамасть. Санăн çирĕп кăмăллă пулмалла. Мĕтри вара сиксех ташларĕ эс ун валли хĕрлĕ çăлтăр илсе килме сăмах пани çинчен пĕлсен. Лайăх ача вăл, Мĕтри. Каланине итлет. Кунĕпех хурсем кĕтет. Каçхине пулă тытса килсе çитерет...»

«...Пĕлетĕп, Вĕçелисăм, çак вăхăтра шутсăр йывăр сана. Эх, ыранхине курса тăнă пулсан, вăрçă хыççăн тин шухăшламаллаччĕ те ача çинчен. Мĕн тăвăн, тӳсесех пулать. Пĕтĕм çĕршыв тӳсет. Пĕтĕм халăх пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕ. Чăт, Вĕçелис. Хĕл каçмалăх вутă-шанкă çитет-ха санăн. Ĕне пăрушне кĕркунне пусса çи. Сурăхсем пирки ху шухăшласа пăх. Мăрье тĕлĕнчен шыв каймасть-и? Хуплăп теттĕм те лайăхрах, ĕлкĕреймерĕм. Аттене кала-ха ун пирки...»

«Эх, Иванăм, Иванăм. Кăлăхах пуçна çĕмĕретĕн çурт пирки шухăшласа. Пурччĕ эс тунă çурт. Халĕ çук. Çунса кайрĕ. Эп айăплă мар. Такама канăç памарĕ иксĕмĕр çавăрнă йăва. Çакăн çинчен те çырса ямăп сан патна. Килсен, хăвах курăн. Таврăн çеç. Çĕнĕ çурт çавăрăпăр санпа. Çынна мăшкăллаттармăпăр урăх...»

«...Кунта эпĕ Антун ятлă хамăр енчи пĕр чăвашпа паллашрăм. Учитель пулнă хăй. Унăн питĕ пысăк хуйхă. Вăрçă умĕн вăл арăмĕпе икĕ çулхи ывăлне хунямăш патне Белоруссири пĕр хулана ăсатнă та халĕ тĕлне-йĕрне те тупаймасть. Вăл енче вăрçă чи малтан пуçланнă. Çăлăнса тухайрĕç-ши, тухаймарĕç-ши тесе, ниçта кайса кĕреймесĕр çӳрет Антун. Хăй ырă та харсăр чăваш».

«...Унта та хăв пекех ырă юлташ тупăннă сана. Пĕрле пул, ара, инкек тӳснĕ çынна сăмахпа та пулин пулăш. Ай-яй, йывăр пуль çав салтака. Пурăнаççĕ-ши хăть çывăх çыннисем? Шанчăкне ахаль упрамасть-ши сан юлташу? Пурăнаççех пуль-ха тесе, йăпат эс вăл çынна, Иванăм. Мĕн вĕрентмелли пур сана, чĕрӳ сан çу пек ырă та, çакна мансăрах лайăх пĕлетĕн ĕнтĕ эсĕ...»

Çакăн пек шухăшсемпе, савнă Иванĕпе каласа-каласа, ыратакан чунне йăпатса, Вĕçелис çĕрулми шуратрĕ, хăрăмланса пĕтнĕ пысăк хурана çурĕ те ăна юман кашта çине çакрĕ, кăвайт чĕртрĕ. Хурăн хуппи çатăртатса илчĕ, пĕтĕрĕне-пĕтĕрĕне çуна пуçларĕ, йăлтăркка çулăм вакă çаппа лапах хыптарчĕ те, уçланкă çийĕн çӳхе тĕтĕм йăсăрланса хăпарчĕ.

Кăнтăрлахи апатчен вăхăчĕ чылайччĕ-ха. Пĕр тапхăр кăвайт çине пăхса ларчĕ Вĕçелис. Юнашар ларакан çӳллĕ юмансен кашлавĕ, хутран-ситрен лашасем тулхăрни, пăвансем нăрăлтатса вĕçни пĕчченлĕх туйăмне пушшех вăйлатрĕç. Хăй ытла мĕскĕн те хӳтлĕхсĕр тăрса юлнине çивĕчрех те çивĕчрех туйрĕ çамрăк хĕрарăм. Сисмесĕрех тутăр вĕçĕпе темиçе хутчен куç аяккисене шăла-шăла илчĕ вăл, çак асла вăрман варринче, çак пысăк çĕр çинче ытла та пĕччен пулнишĕн хурланчĕ. Хăçан вĕçĕ пулĕ çак пурнăçăн? Пулĕ-ши пĕрре? Нивушлĕ каллех савăнăç çитĕ? Нивушлĕ таврăнĕ Иван? Вара паянхи кун та аса илме çеç юлĕ-ши? Е телей таврăнсан, каллех шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăнма пуçласан, çак вăхăта манса кайĕ-ши Вĕçелис? Эх, пултăрччĕ çав çапла, пултăрччĕ! Турăçăм, чăтăмлăх пар мана! Тĕрĕс-тĕкел илсе çитер Ивана тăван киле! Илсе çитер, турăçăм!

«...Чăт, Вĕçелис. Эс яланах маттур пулаканччĕ. Ачуна йĕркеллĕ çуратсан, тен, çăмăлрах пулĕ. Тен, вăрçи те ытла вăраха каймĕ. Вара таврăнăп та яла... Эх, Вĕçелис, акатуйĕнчен тата темиçе така илсе пырса савăнтарăп-ха сана!»

«...Ых, фашист! Мĕншĕн уйăртăн-ха пире?! — чăтса тăраймарĕ Вĕçелис, унтан пĕтĕм чунĕпе ăна ылханма пуçларĕ: — Çынçиен. Çĕлен-калта. Намăссăр, çĕр çăттăр сана! Куçна çăхансем сăхса кайччăр!..»

Çак самантра Вĕçелис куçĕ тĕлне урапа вĕçĕнче йăлтăртатса выртакан çава тĕл пулчĕ. Çамрăк хĕрарăм ура çине тăчĕ, васкасах урапа патне утса кайрĕ, çавана алла илчĕ, унăн çивĕчĕшне тĕрĕсленĕ пек турĕ те хаюллăн уçланкă варрине çул тытрĕ.

Çава аврине пĕтĕм вăйпа çатăрласа тытнă хĕрарăм сарлака паккус пуçларĕ. Хĕр чухнехи пек, ывтăнса çулма пикенчĕ вăл çăра та çӳллĕ курăка.

Кăрсс! Кăрсс! Кăрсс! — туса тăчĕ çава сасси. Тайăлчĕ, ӳкрĕ курăк, умра хăватлă хум пек сирĕлсе пычĕ вăл. Шăлне çыртса тăрăшрĕ Вĕçелис. Пичĕ çине шăрçа пек тар тапса тухрĕ, çĕре

шăпăртатса тăкăнчĕ, куçа тăварпа касрĕ. Виçĕ паккус тунă çĕре самаях тарларĕ вăл, çапах ларса сывлăш çавăрас темерĕ-ха хĕрарăм, тăваттăмĕш паккус пуçларĕ, хăй çаплах тарăхса пăшăлтатрĕ:

«Çук, фашист, эс пире пĕтереймĕн, килсе кĕр-ха пирĕн пата, сана эпир — ак çак çавапа, ак çак çавапа... курăк çулнă пек... Сана эпир — сенĕкпе, кĕреплепе, хĕрарăм шăлĕпе. Тытамак тыттăр сана, çĕр çăттăр. Çынна вĕлерме килнĕ этемĕн пурăнма тивĕç çук! Ылхан, ылхан сана, фашист!..»

Ӳкрĕ, çатăртата-çатăртата касăлчĕ вăрăм курăк; вĕри çапăçу хирĕнче пĕлĕт пек тапăнса килекен вăрă-хураха тĕпрен кăкланă пек туйăнса кайрĕ Вĕçелиса, вăл сулăнчĕ, сулăнчĕ, паккуса сарлакарах та сарлакарах илме тăрăшрĕ; çав хушăра хĕвел çунтарса ярас пек хĕртрĕ, пĕтĕм ӳт-тир тăрăх пăчăртатса юхакан тар касрĕ, чĕпĕтрĕ; хĕрарăм куçĕсем хуралса-хуралса килчĕç, пилĕкĕ тĕлĕнче чăтма çук ыратса кайнине туйрĕ вăл, вăйсăррăн ахлатса ячĕ, çавине аллинчен кăларса пăрахрĕ те тĕм айне тĕшĕрĕлсе анчĕ. «Турă-çăм, — пăшăлтатрĕ хĕрарăм. — Тӳсĕм пар мана, ан пăрах. Эпĕ хама кăна мар, Ивана кирлĕ, эпĕ çуралас ачана кирлĕ. Çăлсам, çăлсам мана... Ай... Ай...»

Тем лутăркарĕ хĕрарăма, ниçта кайса кĕреймесĕр, пĕрре аяк пĕрчи çине, тепре çурăм çине выртрĕ вăл, урисемпе тĕмсене тустарчĕ, вăйсăрланнă пӳрнисемпе курăка çатăрла-çатăрла илсе хăй айне хучĕ, çав вăхăтрах аялти тумран хăтăлма тăрăшрĕ. Анчах уçланкă варринчех ларакан шĕшкĕ тĕми килĕшмерĕ Вĕçелиса, ытла уçă çĕрте пулнăн туйăнчĕ, вăл вара, хăйĕн асапне никам та ан куртăр, ан пĕлтĕр тесе, шăлне çыртсах, чăтлăхалла упаленчĕ. Çапах ытла шала кĕме ĕлкĕреймерĕ вăл, темĕнле вăй ăна каллех çурăм çине çавăрса çапрĕ, тем хытă мекĕрлентерчĕ, икĕ куçĕ сиксе тухасла ыратса кайрĕ, умĕнче вут-хĕм выляма пуçларĕ. Мĕн пулнине ăнланаймасăр, çари çухăрса ячĕ хĕрарăм: хăй сассине кам та пулин илтсе пулăшма килессе кĕтрĕ-ши е чăтма çук ыратнине тӳсеймерĕ-ши? Пĕрре чăм-шыва ӳкрĕ Вĕçелис, тепре сивве тӳсеймесĕр чĕтрерĕ. Хăйĕн икĕ енĕпе ӳсекен çап-çамрăк хурăнсене çатăрласа тытнă хĕрарăм пичĕ çине хĕвел пайăрки ӳкрĕ те, Вĕçелис çăмăллăн шуса иртекен шурă пĕлĕт таткисене курса юлчĕ, çывăхри вĕрене çине пĕр пĕчĕк кайăк вĕçсе пырса ларнине асăрхарĕ. «Кайăк, — терĕ Вĕçелис хăй ăшĕнче, — кайăк, Иван пулса вĕçсе килмерĕн-и эсĕ? Ан кай-ха, эппин, ан кай-ха, пулăш мана, мĕскĕне, пулăш-ха мана, Иванăм». Анчах кайăк чĕрик! тесе хăварчĕ те, пăрăлтатса, чăтлăха кĕрсе кайрĕ, курăнми пулчĕ.

Каллех чăтма çук хĕн-асап пуçланчĕ.

...Каçхине, хăйă çутсан, район больницинче тăна кĕчĕ Вĕçелис. Хăй ăçта пулнине тӳрех ăнланаймарĕ вăл. Куçне уçнă-уçманах шап-шурă мачча курăнса кайрĕ. Вăйсăррăн унталла-кунталла

пăхкаларĕ хĕрарăм: шурă стенасем, шурăпа сăрланă алăк, шурăпа витнĕ кроватьсем... Хирĕçех чӳрече иккен. Чим, ара, кантăкран Тяруç пăхса тăмасть-и? Тем тесен те вăлах. Хăйĕн тусне палласа илнишĕн савăнса, Вĕçелис йăвашшăн йăл кулчĕ, анчах лешĕ куçне тутăр вĕçĕпе хупларĕ те, васкасах кантăк умĕнчен пăрăнчĕ. «Ăçта-ши эпĕ?» — ăнланаймарĕ хĕрарăм. Çав самантра ун пуçĕнче пĕртен-пĕр шухăш çиçĕм пек вĕлтлетсе илчĕ: ача! Хăвăрт-хăвăрт хăйĕн пĕр енне, унтан тепĕр енне хыпаласа пăхрĕ вăл. Никам та çук. Кровать çине чавсипе тĕреленсе пуçне çĕклеме тăнăччĕ Вĕçелис, анчах çав вăхăтра таçтан шурă халатлă хĕрарăм чупса пырса чăрмантарчĕ.

— Юрамасть, юрамасть. Тăма та, ларма та. Сире халь канлĕх кирлĕ. Выртăр та ан хускалăр урăх, — çепĕççĕн, çав вăхăтрах хистесе каларĕ сестра.

— Ача... ача ăçта? — шăппăн ыйтрĕ Вĕçелис.

— Вăйсăр-ха эсир. Вăй илĕр те акă... Выртăр, выртăр. Пĕртте хумханма юрамасть халь сирĕн, — сестра Вĕçелиса утиялпа витсе хăварчĕ. Хăй вара, «манăн ĕçсем татах нумай-ха» тенĕ пек, васкасах пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

«Çапах ăçта-ха ача? Кам çуралчĕ-ши? Ывăл кĕтетчĕ Иван. Тĕреклĕ-ши, сывă-ши?» — хăйпе хăй пăшăлтатрĕ Вĕçелис. Каллех чӳрече çине тинкерчĕ вăл, пĕр кана урамри хурăн çулçисем çилпе вĕлтĕртетнине сăнаса выртрĕ. «Пурăнатăп, эппин, — хăйпе хăй калаçрĕ Вĕçелис. — Каллех хĕвел пăхать, çил вĕрет. Ача ăçташи? Ара, тӳрех памаççĕ пуль-çке, больницăна илсе килнĕ авă. Апла-тăк, питĕ йывăр çуратнă. Çавах çăлса хăварчĕç иккен тухтăрсем. Чим-ха, тин кăна Тяруç сăнĕ курăнманччĕ-и?»

Вĕçелис çапла ăшталаннине пĕлнĕ пекех, кантăк умне каллех Тяруç пырса тăчĕ. Куçĕсем хĕрелнĕ хăйĕн, сăнĕ салху. Çапах Вĕçелиса курчĕ те хăй те йăвашшăн йăл кулма тăрăшрĕ.

Вĕçелис каллех пуçне çĕклесшĕн пулчĕ, анчах вăхăтра аса илчĕ: сестра чупса кĕрĕ те апла-капла вăрçса пĕтерĕ, çуралнă ачана та часах илсе килсе памĕ. Çавăнпа вăл, питне чӳрече еннелле çавăрса, хăрах аяккăн выртрĕ, юнашар койка çинче пĕчĕкçеç ачине кăкăр ĕмĕртсе ларакан хĕрарăмран тăпсаллă кантăка кăшт та пулин уçма ыйтрĕ. Лешĕ ăнланчĕ. Пӳлĕме уçă сывлăш кĕчĕ. Тяруç сасси уçăмлăнах илтĕнме пуçларĕ.

— Хăвна мĕнле туятăн, Вĕçелис? — ыйтрĕ вăл.

— Йĕркеллех пек-ха, — хуравларĕ Вĕçелис, — анчах вăй çук. Темле тимĕр урапа таптаса лутăркарĕ тейĕн. Итле-ха, Тяруç, кунта мĕнле лекнĕ эпĕ?

— Халь ан та ыйт. Кайран каласа кăтартăп. Акă, сĕтпе чăкăт илсе килтĕм. Санăн халь вăй пухас пулать, — Вĕçелис çине пăхма хăяймасăр калаçрĕ Тяруç.

— Ача... Пĕрремĕш ача... — шухăша кайса, хăй хĕпĕртенине, хăй тинех амăшĕ пулса тăнине палăртасшăн пулчĕ Вĕçелис. Анчах унăн юлташĕ çак сăмахсен пĕлтерĕшне хăй пек ăнланчĕ пулмалла, çавна пула тӳрлетме çук йăнăш туса хучĕ.

— Ан пăшăрхан, Вĕçелис, — терĕ вăл, пăлханса, — ачусем татах пулĕç-ха. Лăпланма тăрăш.

Тяруç мĕн каланине тӳрех тавçăраймарĕ Вĕçелис. Унтан пуçне тем çивĕччĕн пырса çапса ыраттарнине туйса илчĕ вăл, ĕненесшĕн пулмарĕ, вара пуçне çĕклерĕ те Тяруç çине шăтарасла пăхрĕ, тутине чĕтретсе, çапла каларĕ:

— Мĕн каларăн эсĕ?

— Лăпланма тăрăш терĕм-çке, Вĕçелис. Ачуна пытарчĕç пулĕ ĕнтĕ. Кăнтăрлах илсе кайрĕç те, — сăмахĕсене каласа пĕтериччен ех хăй мĕн тери пысăк йăнăш тунине ăнланса, çапах халĕ ĕнтĕ тĕрĕс сăмахран пăрăнма май çуккине чунĕпе туйса, пăлханнине пытарма тăрăшса, икĕ куçне те тутăрпа хупласа хучĕ Тяруç.

— А-а-а! — хыттăн йынăшса илсе тӳрех минтер çине лаплатрĕ Вĕçелис.

Палатăна шурă халат тăхăннă темиçе хĕрарăм чупса кĕчĕ. Тяруç вара, çак хĕвĕшӳшĕн хăй çеç айăплине пĕлсе тăнă çĕртех çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ, хевтесĕр, хӳтлĕхсĕр, çылăхсăр ывăл ачана Вĕçелис мар, хăй çухатнă пек, тарăннăн сывлăш çăта-çăта, ĕсĕклесе йĕме пуçларĕ.

12

Петюк пичче хăй ирĕкĕпе вăрçа кайнă хыççăн килнĕ çĕнĕ председателе, Архип Иванович Громова, тахçан МТСра политпай начальникĕ пулнăскере, Вĕçелис хăйне куричченех килĕштерчĕ. «Çĕнĕ çын вăрçă нушине нумай тӳснĕ теççĕ, çав нушара вăл хăрах аллине çухатса хăварнă, çапăçу вăхăтĕнче, тен, Ивана та курма пултарнă», — тесе шухăшларĕ вăл председатель чĕнтернипе колхоз правленине утнă чух. — Ун пекки хамăр çынах, ăнланакан çынах пулмалла-ха...»

Йăнăшмарĕ Вĕçелис. Вăл çитнĕ çĕре правлени умĕнче халăх чылайччĕ ĕнтĕ. Правлени алăкĕ умĕнче, çӳллĕ картлашка çинче, Раман пиччепе районтан килнĕ уполномоченнăй тата вăл — çĕнĕ председатель тăраççĕ. Председатель шупкалнă гимнастеркăпа, галифе шăлаварпа. Сылтăм алă пулмалли вырăнта — пушă çанă, ăна пиçиххи хушшине хĕстернĕ. Хăй типшĕм питлĕ. Пысăках мар пулин те, тĕреклĕ. Вăтăрсенче пулмалла.

— Пуçлар, Архип Иванч, — терĕ Раман пичче. — Пур пек халăх пухăнса çитрĕ.

Председатель пĕр-ик утăм маларах, халăх умнерех, тухрĕ.

— Хĕрарăмсем, стариксемпе карчăксем, ачасем, — терĕ лăп-

кăн Архип Иванович. — Йывăр вăхăтра, çĕршывра хăрушă вăрçă пынă вăхăтра, паллашма лекет манăн сирĕнпе. Архип Иванч, теççĕ мана. Хушаматăм — Громов. Ан айăплăр, ан ятлăр. Çапла килсе тухрĕ, — председатель сылтăм хулпуççине сиктерсе илчĕ. — Пăшал тытас çын мар эп текех. Шел, тавăраймарăм тăшмана...

Хĕрхенчĕç хĕрарăмсем çĕнĕ çынна, пĕри тутăр вĕçĕпе куçне шăлса илчĕ, тепри, сасăпа макăрса ярас мар тесе, шăлне çыртрĕ. Мĕнле-ши унта хăйĕн савнă упăшки е ывăлĕ, пиччĕшĕ е шăллĕ? Вăрçă вăрçах-çке вăл...

— Анчах, юлташсем, туссем, тăвансем, макăрса лармалли вăхăт мар халĕ, — хĕрарăмсен кăмăлĕ çемçелнине туйса, хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ Архип Иванович. — Тăшман вăйлă та хаяр. Ăна çапса аркатас тесен, хамăрăн питĕ вăйлă пулмалла. Çĕнтерӳшĕн ырми-канми тăрăшмалла, ик çыншăн, виç çыншăн ĕçлемелле, — унтан кăштах сывлăш çавăрчĕ те хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ: — Çураки çывхарса килет. Çак тапхăр ял ĕçченĕсемшĕн унччен те йывăрччĕ. Халĕ пире пушшех йывăртарах, ĕç алли çителĕксĕр. Машинăсемпе тракторсем, лашасем сахалланчĕç, вĕсене вăрçа илсе кайрĕç. Анчах, юлташсем, туссем, тăвансем, Калинин юлташ пире çапла каларĕ: «Ялхуçалăх ĕçĕнче кая юлни вăл — вăрçăри пысăк çитменлĕхпе пĕрех пулнă пулĕччĕ», — терĕ. Темле йывăр пулсан та, пĕтĕм ĕçе вăхăтра тумалла пирĕн, Çавăнпа та ним кĕтмесĕр-тумасăр, вăрлăха çуракине хатĕрлеме тытăнмалла, мĕнпур ут таврашне малтанах хатĕрлесе хумалла. Лашасене лайăх тăрантармалла. Унсăр пуçне ĕнесемпе вăкăрсене кӳлме вĕрентмелле. Ĕç питĕ нумай, юлташсем. Эпĕ кунта пухăннă мĕнпур халăха, уйрăмах хĕрарăмсене, çирĕп шанса тăратап. Вăрçă хăвăртрах пĕттĕр, савнă упăшкăрсем, каччăрсем, ывăлăрсем часрах киле таврăнччăр тесен, вăя шеллеме юрамасть.

— Пĕчĕк ачасене ăçта хурăпăр? — председателе пӳлсех ыйтрĕ хыçалкасри Вартюк. — Манăн, авă, виççĕн вĕсем. Пĕри тепринчен пĕчĕкрех.

— Тĕрĕс ыйту, — терĕ председатель. — Ун çинчен те шухăшланă эпир. Ача яслийĕ уçăпăр. Унсăр пуçне çураки вăхăтĕнче уйра апат пĕçерсе тăма пуçлăпăр.

Тахăшĕ председательтен тем ыйтрĕ. Председатель сулахай аллине сулкала-сулкала хĕрӳллĕн ăнлантарма пуçларĕ, анчах Вĕçелис унăн сăмахĕсене илтмерĕ. Типшĕм питлĕ, вăрçă нушихуйхине самай чăтса ирттернĕ Архип Иванович шухăша ячĕ ăна. Вĕçелис пĕрмай председателĕн пушă çанни çине пăхса тăчĕ. «Иванăм, Иванăм, — хăйпе хăй калаçрĕ хĕрарăм, — çырусенче темле çĕкленӳллĕ сăмахсем çырса яратăн пулин те, халĕ аванах ăнланатăп ĕнтĕ, — йывăр сана. Мĕн вăл эпĕ тӳссе ирттерни, санпа танлаштарсан! Эсĕ кашни кун вилĕм умĕнче, хĕвелпе ĕмĕрхи

каç чиккинче тăратăн. Малтан эс «вĕрентĕм, çав вăхăт çăмăл пулчĕ», кайран «хĕвеланăçнелле каятпăр, нимĕçсем курăнмаççĕ-ха», унтан «пĕчĕкçеç çапăçу пулса иртрĕ», «вилнисем пулмарĕç», тата каярах «çапăçу ăнăçла иртрĕ, тав турра, фашист пульли кăшт çеç шăйăрттарса кайрĕ», — тесе çыртăн. Ку йăлтах мана йăпатни ĕнтĕ. Çĕр кисренсе тăни, вут-çулăм ялкăшни, юнашар тăракан юлташусем виле-виле выртни çинчен пĕр сăмахпа та пĕлтермерĕн эсĕ. Леш, Антун ятлă тусу, вара мана ăнланнă, авă... Виçĕ кĕтеслĕ çыру, эс çырман çыру, килсе çитсен, «Пĕтрĕм иккен, татăлчĕ иккен ĕмĕтĕм», тесе шутланăччĕ. Тавах, пурте йĕркеллех пулчĕ. Антун çыру ăшне хаçат татки çеç чиксе янă. Анчах çав татăкра — пурте сан çинчен. Кашни кун вуланăран, пĕр пăхмасăр каласа пама пултаратăп эпĕ ăна. Акă вĕсем, çав йĕркесем:

«...Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командовани боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Иван Данилов хĕрлĕ армееца Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă...»

Çак тĕлте хаçатри статьяна касса татнă та хĕррине: «Акă мĕнле пултаруллă вăл сан упăшку! Пĕлетĕп, Иван хăй ярса парас çук çакна. Унран эпĕ каçару ыйтăп. Антон Кузьмин», — тесе çырса хунă.

«Акă мĕнле пултаруллă! — тепĕр хут шухăшларĕ Вĕçелис. — Юлташун çырса пĕлтермеллеччĕ-и çакăн çинчен? Паттăрлăх кăтартрăн пулсан, çавна çынран, унтан та ытларах, арăмунтан пытармаллаччĕ-и? Акă паян ялта пĕтĕм халăх пухăннă. Тухатăп та мĕнпур çын умĕнче вуласа паратăп. Мухтанччăр санпала. Эпĕ чăнчăн герой арăмĕ пулнине кашни пĕлсе тăтăр».

Çак шухăшсемпе кĕсйинчи çырăва туртса кăларма хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ Вĕçелис. Туртса кăларас та хаюллăнах халăх умне тухас тенĕччĕ. Пĕрре унталла, тепре кунталла пăхса илчĕ вăл. Шăп тăрать халăх. Чим, ара, мĕншĕн пурте шăпланнă? Мĕншĕн пĕри те чĕнмест. Е Вĕçелис пек пурте хăйĕн шухăшне шухăшлать-и?

— Кала, председатель, эс курнă-и ăна? Вăл çырă çӳçлĕччĕ, янаххин сылтăм енче пысăках мар турпалли пурччĕ... Июлĕн çирĕм саккăрмĕшĕнче тухса кайрĕ... Курнă пулсан, кала-ха, председатель, вилес умĕн мана асăнчĕ-и вăл?.. Хăш хулара, хăш ялта вĕлерчĕç ăна? Кала-ха, Архип Иванч! Вĕт манăн кунта мар, унта пулмалла паян. Вилтăприне те пулин тупмалла. Унтан... унтан... ăна вĕлернĕ нимĕçе тупмалла та, унăн куçне чавса кăлармалла...

Чылайччен хӳхлерĕ Уничĕм Укахвийĕ. Чылайччен пĕри те лăплантарамарĕ ăна. Ан тив, макăрса чунне кантартăр, çапла çăмăлрах терĕç пулмалла.

Председатель, шăлне çыртса, пĕр хускалмасăр çĕрелле пăхса тăчĕ. Унтан пуçне çĕклерĕ те, сассине хăпартмасăр, çапла каларĕ:

— Пытармастăп, курман эпĕ сан упăшкуна. Анчах çавна лайăх пĕлетĕп: вăл, сан упăшку, паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, хăйĕн пурнăçне Аслă çĕнтерӳшĕн панă. Мухтанас пулать унпа.

13

Августăн хĕрӳ хĕвелĕ хĕртрĕ, çунтарчĕ, ӳт-тире тăварлă тарпа касрĕ. Ялан кукленсе ларса ĕçленĕрен пилĕк-çурăм чăтмалла мар ыратрĕ. Кăштах та пулин çил тухинччĕ хăть, хĕвел пĕлĕтсем айне пулинччĕ. Çук вĕт — шăрăх, шăрăх, шăрăх. Вунтăваттăри Лявун ватă кĕсрепе ялтан çăл шывĕ турттарса ĕлкĕреймест. Чуна уçăлтарса яракан пĕр курка сивĕ шыв ĕçетĕн те каллех алла çурла тытатăн. Каçалăк анлăлансах, уçăлсах пырать, кĕлте хыççăн кĕлте, çĕмел хыççăн çĕмел хушăнать. Васкамалла. Çанталăк уяр тăнă чух тырпула йăлтах пухса кĕртме тăрăшмалла.

Пуç çĕклемесĕр ĕçлеççĕ хĕрарăмсем. Шăп хирте. Хутран-ситрен çеç чĕчĕ ачисен ĕсĕклевĕ илтĕне-илтĕне каять. Анчах çак сасă та вăраха пымасть. Амăшĕсем нумай ларма пултараймаççĕ вĕсемпе. Кăштах ĕмĕртнĕ хыççăн ачашлама-сиктерме вăхăт юлмасть, пĕчĕк айвансем вара, çакна ăнлансах тейĕн çав, каллех тĕлĕрсе каяççĕ, шарламаççĕ урăх. Вăйсăрскерсен, тăраниччен апат çиме те пултарайман пепкесен, шăпи çапла килсе тухнă-çке паян.

Хĕвел анăçалла тайăлчĕ кăна, таçтан аякран аслати хуллен кĕмсĕртетни илтĕнчĕ. Унта, анăçри вăрман çинче, пĕлĕт кăвакара пуçланă иккен. Анчах аслатийĕ те, çумăрĕ те питĕ инçе пек туйăнать-ха, тепĕр тесен, те çăвать, те иртсех каять çуллахи çумăр, çавăнпа пĕри те шарт сикмерĕ, хăрамарĕ çанталăк пăсăласран. Килмесен те аван, килсен те лайăх, — сывлăш уçăлĕччĕ пăртак, кăштах канса илме май пулĕччĕ, пĕр касă çумăр иртнипех тырă сиенленес çук.

Анчах тепĕр çур сехетренех çаврăнса, мăкăрланса килекен хура пĕлĕтсем хĕвеле хупласа хучĕç, çине çинех çиçĕм çиçрĕ, аслати шавĕ вăйланчĕ. Тепĕртакран ана çине çумăр тумламĕсем патăртатса ӳкрĕç те, тырă выракансем çĕмелсем айне вырнаçма, хӳтлĕхе пытанма васкарĕç. Акă ĕнтĕ йĕпе хура çĕр çинче пăрçа пек шурă пăр сиккелеме пуçларĕ.

Кашласа, шавласа, кĕмсĕртетсе тăчĕ тавралăх. Темле хăватлă вăй çап-çутă çивĕч хĕçпе сулса ячĕ тейĕн — çиçĕм вĕлтлетсе илме те ĕлкĕреймерĕ, çĕре кисретсе, аслати шартлатрĕ, çав вăхăтрах Киремет тăвĕ çинчи ватă хурăн çурмалла хăйпăнса кайрĕ, типтипĕ хăйă пек çатăртатса çунма пуçларĕ, хăй çийĕн çăмламас мелке пек хура тĕтĕм кăларса ячĕ.

Кĕлтесем айне лайăхрах пытанма тăрăшнăччĕ Вĕçелис, анчах çывăхра аçа çапни шартах сиктерчĕ ăна: «Çук-çук, çĕмел айĕнче ларма юрамасть», — шухăшларĕ вăл. Вара хул хушшине пĕр кĕлте хĕстерчĕ те васкасах çĕмелтен аяккарах тарма тăрăшрĕ: çапла шанчăклăрах. Витрелетсе çумăр çурĕ, çăпата сырнă урасем нăчăртатса тăракан пулчĕç. Кĕлте çине ларчĕ те Вĕçелис чĕрçиттине салтрĕ, унпа пуçне хупларĕ, йĕри-тавралла пăхкалама хăяймасăр, çак урăм-сурăм тамаша иртсе каясса кĕтрĕ. Пĕтĕм кĕлетки лачкам шыв пулчĕ унăн.

Вăрăм аркăллă пир кĕпине, тар каснăскерне, тахçанах улăштарма шутлать Вĕçелис. Анчах килне таврăнсан хирте пучах пухса ĕшеннĕ пĕчĕк Мĕтрие çитерме ĕлкĕрет кăна, ун куçĕ хăй тĕллĕнех хупăнма тытăнать, сăрăлтатса тăракан шăмшакĕ йывăç кравать патнеллех туртать. Кăштах канса илем-ха тесе, вырăн çине выртать те вăл ирччен пĕр хускалмасăр çывăрать, Ирпе вара каллех вăхăт çук, кăвак çутăллах уя васкамалла. Темиçе хут та хăйне çакăн пек сăмах панă вăл: çак тар-тăвартан мунча хутса тасалмаллах, кĕпе-йĕме çуса, çын йĕркине кĕмеллех. Çитет хăй еккипе пурăнса, ялан çĕткеленсе çӳренĕрен хăйне хăй курайми те пулса çитрĕ ĕнтĕ вăл.

Паянхи аслатиллĕ çумăр, акă, ун ятнех пулчĕ тейĕн. Мунча кунĕ валли кунран меллĕреххи урăх пулас та çук.

Анчах, пылчăк çăрса килне çитсен, картишне кĕчĕ кăна Вĕçелис, вăл акă мĕн асархарĕ: пахчана тухмалли вĕрлĕк карта юсаннă, çĕнелнĕ, унта та кунта йывăç çункавĕсем сапаланса выртаççĕ, аслăк айĕнчи çĕрĕк юпана картиш варрине кăларса хунă, лупас хыçĕнче такам пăчкăпа йывăç касать. «Антун!» — тӳрех ăнланса илчĕ Вĕçелис. Çухалса кайрĕ вăл, тӳрех хултуйиллĕ салтак патне пыма именчĕ, хапхана шăппăн хупрĕ те пӳрте кĕчĕ. Васкамасăр сак çине ларчĕ, пĕр вăхăт хускалма та хăрарĕ. Ним тума аптрарĕ Вĕçелис. «Акă иккен, — терĕ вăл, — каллех упăшкаллă пулса тăтăм пулать. Хам чĕнмесĕрех килсе хуçаланма тытăнчĕ Антун. Çын мĕн калĕ, çын мĕн калĕ? Çук, çук, пулмасть кун пек...»

Анчах çăпатине салтса, кĕпине хывса улăштарнă майăн урăхларах шухăш та килсе кĕчĕ унăн пуçне. «Çын, Вĕçелис нушине чун патне хурса, ăна хĕрхенсе, ырă тăвасшăн, мĕнпе те пулин пулăшасшăн. Айăплă-и вăл? Çын фронтри чи çывăх тусĕн сăмахне ялан асра тытса çӳрет пулсан, йăнăш тăвать-и? Эх, Иванăм, Иванăм, каллех сана пула арпашса каймарăм-и эпĕ? Мĕн тумалла, кала-ха, Иванăм!»

Çук, чĕнмест сăнӳкерчĕк çинчи Иван. Тулта кăна, чуна каснă пек, пăчкă сасси пĕр евĕрлĕн илтĕнет.

«Палăртас мар, тем тесен те палăртас мар пăлханăва, — шу-

хăшлать Вĕçелис. — Тухас та, ним пулман пек, шыв ăсма каяс. Мунча хутас».

Çырма хĕрринче ларакан мунчаран часах таврăнмарĕ Вĕçелис. Пĕтĕм савăт-сапана шыв тултарчĕ, урайне, саксене, лапка хăмисене лайăх çуса тасатрĕ. Вара тин вутă илме килне хăпарчĕ. Антун çĕнĕ юпана лартма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Пĕчĕк Мĕтри те унпах аппаланать иккен, аслăк тăрне хăпарса кайнă та, унта вĕрçĕнĕ вĕрлĕксем вырнаçтарать. Антун вара çав вĕрлĕксене аялтан парса тăрать.

Йывăç çункавĕсене, вĕрлĕк таткисене карçинккана пухма пĕшкĕннĕ Вĕçелис тĕсесе пăхрĕ аманнă салтак çине, лешĕ тӳсеймерĕ, çаврăнчĕ те каллех ĕçе пикенчĕ. «Куç хупмалла выляса çитет, — шутларĕ Вĕçелис, — мĕн те пулин каламаллах. Çынсем пурпĕрех сисрĕç пуль. Хамăн та тимĕр чĕреллĕ пулас мар. Ав мĕнле йĕркеллĕ туса хучĕ килкартине».

— Эс те çав... — терĕ вăл лăпкăн, анчах Антуна ӳпкелешме хăяймарĕ текех. — Тепрер сехетрен мунча пулать... Хатĕрлен...

Хăй вара каллех çырма хĕрнелле анса кайрĕ.

...Тепĕр сехетрен Çарăмсан хĕрринчи пĕчĕк мунчара Мĕтрипе Антун ахлата-ахлата çапăнма, шыв сирпĕтсе çăвăнма пуçларĕç. Анчах вăрахчен пымарĕ çак хаваслă сас-чӳ: те ют çынран именнипе, те вĕри лапка çинче тӳрех ĕшенсе кайнипе, Мĕтри хăй пуçĕ тăрăх ăшă шыв ячĕ те, мунча умне тухса, кĕпе-йĕмне тăхăннă-тăхăнманах сиккипе тăвалла хăпарса кайрĕ.

— Эп таврăнтăм, инке, — терĕ вăл килне çитсен. Вара сĕтел çинчен пĕр татăк çăкăр илчĕ те урамалла тухса сирпĕнчĕ.

Тĕпелте салма касса тăракан Вĕçелис ним калама та ĕлкĕреймерĕ ăна. «Ах, ачупа, хăнана, аманнă салтака, пĕчченех хăвармаллаччĕ-и мунчара? Шыв памалла, çурăмне çумалла, ăна, хăрах ураллăскере, хултуйисĕр пĕр-ик утăм тума та шутсăр йывăр-çке.. Ах, ачупа...» — пăшăрханса ӳкрĕ вăл сасартăк. Унтан тӳрех çапла шутларĕ: «Хамăн каяс, мунча умĕнче ларас хăть, сивĕ шыв пĕтсен кӳрсе парас. Ай-яй-яй, мĕнле пулса тухрĕ!»

Пĕтĕм ĕçне пăрахса, Вĕçелис мунчана васкарĕ.

Мунча пӳртумне кĕрсен, шалта пĕр сас-чӳ те илтĕнменни хăратса пăрахрĕ хĕрарăма.

— Эй, кам та пулин пур-и кунта? — хыпăнса ӳксе ыйтрĕ Вĕçелис.

Тем мăкăртатса илни илтĕнчĕ.

— Ай турух, сывах иккен, — хаш сывласа ячĕ хĕрарăм. Çапла каларĕ те, çийĕнчи тумне хывса, пăтана çакрĕ, аялти кĕпипе çеç тăрса юлчĕ. Вара, алăк патне пырса, Антуна çапла каларĕ:

— Кĕретĕп, çурăмупа çаврăн та шăпăрт лар... Эй, ачу-пăчупа...

Алăкран кĕрсе тăрсан тин Вĕçелис хăй ытла та хăюллă хăтлан-

нинчен тĕлĕнсе кайрĕ. Антун урай варрине, кĕске сак çине вырнаçнă та пĕр хускалмасăр ларать. Пĕчченлĕхе сасартăк Вĕçелис килсе сирсе ярасса кĕтмен салтак чĕлхине çăтса янă тейĕн, пуçне уснă та, хĕрелсе кайнă çара çурăмне мĕнпе те пулин пытарас тесе, аллисене пилĕкĕ çине хĕреслесе хунă. Хăйĕн умĕнче кăштах сĕлтĕ шывĕ янă пысăк чара пур. Шывне хĕрхеннĕ-ши е шыв ăсса илме йывар пулнă-ши Антуна? Ахăртнех, йывăр пулнă.

— Çаплах лар, ан хускал, — терĕ Вĕçелис. Вара, куçне хупса тенĕ пек, чул кăмака айĕнчи чукунтан чара туллиех шыв тултарчĕ, милĕксене лайăх çуса тасатрĕ, чул çине пĕр курка сапса ăшши пачĕ те ирĕксĕрех Антун куçĕнчен пăхрĕ: — Тата мĕнпе пулăшас-ха сана? Çурăмна çуса ярас-и?

— Мĕн эсĕ? — мăкăртатрĕ лешĕ. — Эпĕ хамах, Вĕçелис...

— Юрĕ, хăвах, эппин, — кăштах ырăмарланса кайрĕ Вĕçелис. — Эс чĕмсĕр ан лар, эп кунтах, мунча умĕнчех, пулатăп. Мĕн те пулсан кирлĕ-тĕк — тӳрех систер.

— Тавах, Вĕçелис, — сăмахне çăтса, сасă пачĕ Антун.

Вĕçелис, мунча умне тухса, сак çине ларчĕ.

Çамрăк хĕрарăм çакăн пек хăюлланни пĕрре тĕлĕнтерсе, тепре çĕклентерсе ячĕ Антуна. Хăйĕнчен ютшăнма, шикленме, çын тем каласран хăрама пăрахрĕ, эппин, Вĕçелис. Пулăшма килчĕ Антуна. Ăнланчĕ. Шеллерĕ, хисеплерĕ...

Çакăн пек шухăшсемпе шăмпăртатрĕ Антун Вĕçелис хатĕрлесе панă ăшă шывпа. Ӳчĕ те, чунĕ те кашни самантрах калама çук çăмăлланса пынине туйса ларчĕ вăл. Вĕçелис патне пӳртумне тухса, ун куçĕнчен ăшшăн пăхас килчĕ унăн, ăна чи çепĕç сăмахсемпе тав тăвас, хĕрӳллĕн ыталаса илес килчĕ. Эй, пур-çке çынсем тĕнчере, вĕсем юнашар пулни пысăк та таса ĕмĕтлĕ, сарлака çунатлă тăвать сана. Эсĕ вара хăв пуррине, хăв та çынна кирлĕ иккенне уçăмлăрах туйса илетĕн, эсĕ мĕнпур хуйха-суйха манса каятăн, пурăнас та пурăнас, савăнас, юрлас килет санăн. Антунăн та халĕ çавăн пекех пулчĕ. Çук, мĕн те пулсан ыйтса, Вĕçелиса чăрмантарас темерĕ вăл текех, çăвăнчĕ, çапăнчĕ, вара пуç тăрăх темиçе курка лĕп шыв ячĕ те Вĕçелиса çапла каларĕ:

— Акă пулчĕ те... Эс утах ĕнтĕ, эпĕ, акă, тумланатăп та....

— Тумлан та хăпар вара, чей ĕçĕпĕр, — терĕ Вĕçелис. — Эпĕ каярах çавăнăп.

Ирĕклĕн, çĕнтерӳллĕн, хăйĕн тивĕçне пурнăçланине туйса утрĕ килнелле Вĕçелис. Çул çинче çăл патне шыв ăсма анакан Ярахви Верккине тĕл пулчĕ.

— Мунчаран хăпаратăн, тем? — ыйтрĕ Ярахви Веркки. — Ара, салтаку та мунчарах мар-и-ха?

Ним калама аптрарĕ Вĕçелис. Çĕрелле пăхрĕ те айăплăн кулса илчĕ.

Ярахви Веркки вара, тин кăна темле вăрттăнлăх пĕлнĕ пек, çăварне карса ăсатса ячĕ Вĕçелиса, унтан тем аса илчĕ пулмалла та çăл патне чупсах анса кайрĕ.

14

...Çавăн чух, яла çĕнĕ председатель килнĕ çул, пулса иртрĕ ку ĕç. Хура кĕркунне тăратчĕ.

Сентябрь варринчех пĕтĕм тырпула вырса авăна кĕртнĕ колхоз çыннисем хĕрсех тырă çапма пуçларĕç. Тулли пучахлă кĕлтесем йывăр та сулмаклă пулчĕç. Пĕр молотилкăпа кăна ĕлкĕрес çук тесе, хĕрарăмсем алла тăпачă та тытрĕç. Кунĕ-кунĕпе пуç çĕклемесĕр ĕçлерĕç пурне те чăтма хăнăхнă ял ĕçченĕсем.

Пĕри çапрĕ, тепри типĕтрĕ, виççĕмĕшĕ сăвăрчĕ, аларĕ.

Çанталăкĕ лайăх тăнă чух пур пек тырра элеватора ăсатма васкарĕç. Лашасем, вăкăрсем тата ĕнесем кӳлнĕ лавсем каçсерен ушкăнĕ-ушкăнĕпе вуникĕ çухрăмри станца туха-туха кайрĕç.

...Кутамас вăкăр лекрĕ çав каç Вĕçелиса. Нумай пулмасть кӳлме вĕрентнĕрен-ши е хăйĕн екки çапларан, çулпа йĕркеллĕ утасшăн пулмарĕ вăл — е кĕтмен çĕртен аякка пăрăнса кĕрет, е чарăнса тăрать те вăрахчен хăйĕн ĕçне тăвать, е чипер пынă çĕртех кăрт-карт туртăнса илет, ĕрĕхсе каять. Çапла аппаланса пырса юнашар вăрмана кĕриччен ытти лавсенчен чылай кая юлчĕ Вĕçелис. Тĕттĕмленсе çитрĕ. Вăрманĕ хура та аслă, йĕри-тавралла пăхма та хăраса пырать Вĕçелис. Анчах вăкăра хăть çап, хăть ăшшăн кала — хăй еккине ниепле те пăрахасшăн мар вăл, утмасть те утмасть. Аптранă енне Вĕçелис, лав çинчен сиксе анса, вăкăра çурăмĕнчен, мăйĕнчен лăпкаса илчĕ. Çук, пулăшмарĕ. Вара тавçăрчĕ Вĕçелис: çул хĕррине пăрăнса, темиçе ывăç курăк çăлса илчĕ вăл, ăна вăкăр çăварĕ патне илсе пычĕ. Вăкăр сĕтеклĕ курăка шăршласа пăхрĕ кăна — тапранчĕ лав. Нăтăртатса пычĕ вăл вăрманти кăшт нӳрленнĕ çулпа.

Анчах нумаях уттараймарĕ Вĕçелис хăйĕн вăкăрне. Çул вăрманти пĕр пĕчĕк çырма хĕрнелле пăрăннă чух унăн чĕри сасартăк карт! туса илчĕ те, вăкăра хăех чарчĕ. «Çырма шăнкăртатса юхнинчен хăраса ӳкрĕм, айван пуç», — терĕ вăл. Вара каллех чĕлпĕрне малалла туртрĕ. Çак вăхăтра çыран хĕрринче ӳсекен çирĕк тĕми силленсе чăштăртатнă пек туйăнчĕ. Вăкăра каллех чарма тиврĕ. Шăп. Нимĕн те çук. «Чăх чĕри, — хăйне хăй вăрçрĕ Вĕçелис, пĕтĕм хăюлăхне пухса, вăкăра ӳкĕтлеме пуçларĕ. — Атя, атя, Ваçка, сăрт çине улăхса çитĕпĕр те, канăн кăштах. Атя, маттурăм, атя, Ваçка...»

Вăкăр, пĕтĕм вăйне пухса, тăвалла тапаланчĕ.

Унччен те пулмарĕ, çирĕк тĕми тепĕр хут силленсе илчĕ. «Çук,

туйăнмарĕ, чăн-чăнах, эппин», — терĕ Вĕçелис, малалла мĕн пуласса кĕтрĕ.

Тимĕр витре хăлăпĕ шатлатни илтĕнсе кайрĕ. Лав çирĕк тĕмипе танлашрĕ кăна, ун хыçĕнчен пысăк кĕлеткеллĕ çын сиксе тухрĕ, тӳрех йĕвен чĕлпĕрĕнчен ярса тытрĕ.

Сехри хăпнă Вĕçелис, ним тума аптраса, пĕр-ик утăм каялла чакрĕ, унталла-кунталла пăхкаларĕ: «Никам та курăнмасть, пĕтмеллиех çитрĕ-ши вара?» — шухăшласа илчĕ хĕрарăм.

Палламан çын ун патнелле çывхарчĕ. Каллех пĕр-икĕ утăм чакрĕ Вĕçелис. «Кам эс? Ан çывхар ман пата, хурах кăшкăратăп, асту», — терĕ вăл, анчах хăй сассине хăй те илтеймерĕ, çав хушăрах хăрах аллипе михĕсем хушшине хĕстернĕ пĕчĕк пуртта шырарĕ.

Çук, тупаймарĕ пурттине Вĕçелис, палламан çын ăна урапа çумĕнчен хăпăтса илсе вăрманалла çĕклесе кĕрсе кайрĕ.

Кĕтмен çĕртен капкăна лекнĕ тискер кайăк пек çатăлтатрĕ Вĕçелис ют çыннăн хăрушă ытамĕнче. Сывлăша пӳлме хăтланса, çăвара темле çĕтĕк чиксе хурасшăн пулчĕ палламан çын, хăйĕн пĕтĕм кĕлеткипе хупласа хурса, ыраттарчĕ, лутăркарĕ, пĕтĕм вăйран алăсене пăрса лартма тăрăшрĕ. Пăркаланчĕ, шăлне çыртса, çак усал çынна хăй çинчен сирсе ывăтма тăрăшрĕ Вĕçелис. «Вăрă-хурах, пурпĕр чĕррĕн парăнмастăп сана», — шухăшларĕ çамрăк хĕрарăм. Çакна лайăх курчĕ Вĕçелис: палламан çын хăйĕн питне сăмси таранах кивĕ пусмапа хупласа хунă. Çийĕнчи симĕс фуфайки тĕл-тĕл шăтса пĕтнĕ, çав шăтăксенче ваткă таткисем палăраççĕ. Пĕчĕк куçĕсем Мăрса Мишурĕнни пек, хаяр, тискер.

— Яр! Яр, тархасшăн! — кăшкăрса ячĕ Вĕçелис, вăйĕ пĕтсе çитнине туйса.

Лешĕ ямарĕ. Вĕçелис пуçне вăл, хăйĕн тимĕр пек çирĕп янаххипе пусса, çĕр çумне пăталаса хучĕ. Унтан хăрах аллипе кĕпе тӳмисене вĕçертрĕ. Вăрă-хураххăн Вĕçелис кăкрисене ухтарма пуçларĕ. Калама çук тарăхупа кӳтсе çитнĕ Вĕçелис, хăйĕн вăйсăрлăхне шута илсе, чееленме шутларĕ.

— Яр мана, — терĕ вăл тепĕр хут. — Хĕрарăмпа çапла пулмалла-и? Пурпĕр нимĕн те тухмасть сан. Тăр. Эп хамах...

Палламан çын лăштах пулчĕ.

«Апла ку чăвашла та пĕлет, — тĕлĕнсе шухăшларĕ Вĕçелис. Хăй вара çулçăсем çине ларчĕ те, вăхăта кăштах та пулин тăсса, сывлăш çавăрма шутларĕ.

— Çапла юрать-и? — терĕ вăл, хашка-хашка. — Арçынсем те çав эсир. Хĕрарăмпа пĕр чĕлхе тупаймастăр.

Палламан çын илтмерĕ те тейĕн Вĕçелис калаçнине. Таçтан, атă кунчинчен, вăл темле çутă япала туртса кăларчĕ те ăна пĕр-

икĕ хут сывлăшра вылятса илчĕ: çĕçĕ! Çав çĕççе арçын хăйпе юнашар ăвăс çине тăрăнтарса лартрĕ. «Итлемесен, акă мĕн кĕтет сана», — тесе систерчĕ ĕнтĕ.

Вăрман тата харушăрах кашлама пуçланăн туйăнчĕ.

— Мĕн тумалла?! Пĕтрĕм! — шухăшларĕ Вĕçелис. Çапах хăйне лăпкăн тытма тăрăшрĕ вăл. Çамрăк хĕрарăмăн питĕ пурăнас килчĕ.

— Юрать, — терĕ Вĕçелис. — Юрать, анчах ан васкат мана.

Аллине çамки çине хурса, тӳсме çук пуçĕ ыратса кайнине кăтартасшăн пулчĕ вăл палламан çынна. Хăй çав вăхăтра тĕпчесе, тем аса илсе пăхрĕ ун куçĕнчен, «Куç харши айĕнчен кăшт çеç палăракан пĕчĕк куçсем. Чим, ара, Мăрса Мишурĕ хăех мар-и ку? Çук, ăна вăрçа ăсатнăччĕ. Ансăр çамкин сулахай енче самаях палăракан шĕпĕн. Мăрса Мишурĕн те çавăн пек шĕпĕн пурччĕ. Эсĕ, эсĕ ку, тем тесен те эсĕ!»

— Ну! — хăрăлтатса илчĕ палламан çын.

— Ан курнăçлан, Мишур. Палларăм, эсĕ ку, — терĕ Вĕçелис, кăшт лăпланнă пек пулса.

Лешĕ, хăй ятне илтнипе, кăрт туртăнса илчĕ те чĕркуççи çине тӳрленсе тăчĕ, сăмси çинчи пусмана сирсе пăрахса, Вĕçелис куçĕнчен тӳррĕн пăхрĕ.

— Çапла, эпĕ ку, — терĕ Мăрса Мишурĕ. — Эпĕ ку, Вĕçелис. Чăтма çук курас килчĕ сана. Çавăнпа килтĕм.

— Тартăм теме чĕлхӳ çаврăнмасть-им? Арăму сана вăрçа ăсатнăччĕ. Эсĕ вара ав епле çапăçатăн иккен, — кĕпе тӳмисене тӳмеленĕ май хăй Мăрса Мишурĕнчен йĕрĕннине палăртса каларĕ Вĕçелис.

— Çук ĕнтĕ, Вĕçелис, эсĕ мана айăплаймăн. Вилĕм умĕнче пĕрре мар тăнă эпĕ. Халĕ те пĕлетĕп — вилĕм манпа юнашарах çӳрет. Анчах чун пур манăн, Вĕçелис. Çын-çке эпĕ! Кирек епле пулсан та, виличчен сана курас килчĕ. Пĕрре пăхса илем те сан çине, кайран вара мĕн пуласси пултăр, шăпаран, Турă çырнинчен тараймăн терĕм. Ăнлан мана, Вĕçелис, — тархасласа, ӳкĕтлесе, хĕрӳллĕн калаçрĕ Мăрса Мишурĕ.

— Шăпа, Турă çырни апла? Пирĕн упăшкасен шăпи çинчен манса кайрăн, эппин? — тарăхрĕ Вĕçелис.

— Кирек мĕн кала мана. Эпĕ чун хушнă пек турăм. Эпĕ сан патна инçетрен килтĕм. Аран-аран çитсе ӳкрĕм. Эсĕ паян çавна ăнланасшăн мар пулсан, эп сана урăхла. Ну! — пĕрре Вĕçелис çине, тепре ăвăс çумне тăрăнтарнă çĕçĕ çине пăхса илчĕ Мăрса Мишурĕ.

— Мĕн кирлĕ сана? — Лару-тăру каллех çивĕчленнине кура хăраса ӳксе, сассине йăвашлатрĕ Вĕçелис.

— Кил, тетĕп, ман пата. Эп сана... ырăпа, — çине тăчĕ Мăрса Мишурĕ.

Чăтма çук тарăхса кайрĕ Вĕçелис. Çапах шăпи телейлĕ пулчĕ унăн. Çĕрлехи уçă çил пулăшрĕ-ши, вăрман шавĕ таçта аякран-аякран çывхарса килчĕ те Вĕçелиспа Мăрса Мишурĕ çийĕн ватă ăвăса унталла-кунталла силлесе хаварчĕ. Çывăхрах типĕ турат шаплатса ӳкрĕ. Мăрса Мишурĕ шикленсе те хăраса сасă пулнă еннелле çаврăнчĕ. Çак самантра ура çине тăма ĕлкĕрнĕ Вĕçелис Мишур патне шăппăн çывхарчĕ те ăвăс çине тăрăнтарнă çĕççе пĕтĕм вăйĕпе хăй еннелле туртрĕ. Хăйне улталанине сиссе, урса кайнă арçын пĕрре сиксех Вĕçелис аркинчен ярса тытрĕ. Хĕрарăм тайăлса кайрĕ. Анчах çĕре ӳкнĕ чух аллине çирĕп ярса тытнă çĕççе вăл арçын çурăмĕ çине тĕллерĕ. Йывăррăн ӳкрĕ Вĕçелис. Çĕçĕ аврине хăйĕн пĕтĕм кĕлеткипе пусарса хума тăрăшрĕ.

— А-а-а! — янраса кайрĕ вăрманта хаяр сасă.

Хăйĕнчен хăй хăраса кайнă Вĕçелис чĕтре-чĕтре çул еннелле чупрĕ. Вăкăрĕ вырăнтах тăрать, авă. Уншăн пулсан, нимĕн те пулман çак çур сехет пек вăхăт хушшинче. Вĕçелис ăна çул хĕррине илсе тухрĕ те пĕр хурăн çумне кăкарса хучĕ. Хăй вара, утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса, яла, председатель патне, васкарĕ.

...Çур çĕр иртсен вăрманти пĕчĕк кĕпер патĕнчи хурăнлăха ялтан виçĕ çын — районтан килнĕ уполномоченнăй Лаптев, колхоз председателĕ Архип Иванович тата Вĕçелис пынă çĕре милицонерсем те çитнĕччĕ ĕнтĕ. Вилейменччĕ-ха Мăрса Мишурĕ.

— Ав ăçта «фронт» тупнă вăл хăй валли, — терĕ Архип Иванович.

— Маттур, Данилова, çухалса кайман. Тискер кайăка çаклатнă. Тахçантанпах шыраттăмăр ăна, — мухтарĕç Вĕçелиса милицонерсем.

Шатра Марье вара следстви вăхăтĕнче хăйне хăй пĕтерчĕ. Ял Советĕнче Вĕçелиса курсанах, алкăм-шалкăм чашкăрса кайрĕ вăл. Вут сирпĕтсе тăратчĕç унăн усал куçĕсем.

— Ухмах, ухмах тетĕп хама хам, — çатăртатрĕ вăл. — Мĕншĕн ху килте чухне вут тĕртмерĕм, иçмасса! Мĕншĕн кĕлпе вĕçтермерĕм! Ылхан! Ылхан сана!

Шатра Марьене çав кунах района лартса кайрĕç.

15

Хăйă çутнă вăхăталла тин мунчаран тавраннă Вĕçелис алăка уçичченех пӳртре Антун пĕччен кăна мар иккенне пĕлчĕ. Шалта хĕрарăмсен сасси илтĕнет. Пĕри — хулăнраххи — каллех Ярахви Верккин сасси. Пурне те пӳле-пӳле çăвар туллин каласать Веркка. Теприн сасси хутран-ситрен çеç илтĕнет — сăпайлă, çепĕç сасă. Маруç сасси. Антунĕ вара нимĕн те шарламасть, шыв сыпнă тейĕн.

Пĕр вăхăт алăка уçмасăр тăчĕ Вĕçелис.

— Ара, килет вĕт, Ярахви, килет, — уçăмлăнах илтĕнчĕ Веркка сасси. — Çавăнпа паян мунча кĕрсе тасалас тенĕччĕ. Мĕн кулянмалли, килсе çиттĕр кăна, эпĕ те ăна, Вĕçелис пек, мунчана хамах илсе каятăп..У-ху-ху, эй, кĕрĕттĕмĕр-ха мунчине...

— Ан сӳпĕлтет, Веркка, Вĕçелис ан илттĕр. Унтан тата... ял хушшинче персе ан яр ку сăмахсене, — пӳлме хăтланчĕ Маруç.

— Ха, Вĕçелис мана хăй курмарĕ пуль? Антун Кузьмич, эсĕ те куртăн вĕт мана? Э, Антун Кузьмич?.. — йĕлпĕрсе пăхрĕ Веркка чӳрече умĕнче хаçат татки вуласа ларакан арçын çине.

Лешĕ нимĕн те чĕнмерĕ.

Çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пӳрте Вĕçелис кĕрсе тăчĕ. Тин çеç пулса иртнĕ калаçăва палăртас темерĕ Вĕçелис. Кĕчĕ те çапла çеç каларĕ:

— Ара, хăнасем те пур-çке. Чей лартса ярас. Мĕтри халь те килмен иккен. Тăхтăр-ха, турпас пухса кĕрем.

Çак вăхăтра Антун ура çине тачĕ.

— Эс унта, тĕпелтех, аппалан. Эпĕ часах, — терĕ те вăл, хултуйине чĕриклеттерсе, картишне тухса кайрĕ.

Хăнасем иккĕшĕ те ура çине сиксе тăчĕç.

— Вĕçелис, — терĕ, темĕн хыпăнса ӳкнĕ пек, Ярахви Веркки, — эс мана каçар-ха. Сана курнă хыççăн эпĕ тӳрех Маруç патне хăпартăм. Акă, кунта... пирĕн кăштах сыхланса юлни тупăнчĕ. Атьăр-ха кăштах тутанса пăхар. Ĕç пĕтес çук вăл. Куççуль тăкса та ывăнтăмăр ĕнтĕ. Ан ятла, Вĕçелис.

— Тыт, тыт, Вĕçелис. Мунча хыççăн аванах пулĕ, — терĕ Маруç та.

Çакна кĕтмен Вĕçелис пĕр самант аптраса тăчĕ. Унтан кĕленчене илчĕ те сĕтел çине лартрĕ.

Вăр-вар хĕрарăмсем наччасах çĕрулми пĕçерчĕç, çăмарта та, турăх та тупрĕç. Антун сăмаварпа аппаланчĕ. Тепĕртакран тăватă çын сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Самантлăха пурте манăçрĕ темелле: паян уйра лачкам шыв пулни те, Вĕçелис хăй килĕнче Антуна курса тĕлĕнни те, мунчаран хăпарнă чух Ярахви Верккипе тĕл пулни те...

Сăмакуна Ярахви Веркки хăй ĕçтерчĕ.

— Сывлăхшăн ĕçер-ха, — терĕ вăл. — Хамăр сыв пулсан, çут тĕнче пĕтес çук.

Ĕçрĕç. Шăршлă та хаяр сăмакунпа чутах чыхăнса каймарĕ Вĕçелис. Унччен, вăрçăччен те пĕр тумлам ĕçсе курманскер, вăл чыхăннă хыççăнах стакана калле лартасшăнччĕ, анчах Ярахви Веркки ун çине тӳрех сиксе ӳкрĕ.

— Ĕçсех яр, Вĕçелис, ĕçсех яр, эрех шăмшака çемçетет, хуйхасуйха мантарать, — ӳкĕтлерĕ вăл çине тăрсах.

— Ара, ĕç, Вĕçелис. Веркка тĕрĕс калать. Эпир те МТСра тутанкалатпăр тепĕр чух. Чăнах çапла. Пулăшать, — терĕ Маруç.

Вĕçелис итлерĕ. Сăмакуна вăл пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ. Ăна кура Антун та хăйĕн стаканне ӳпĕнтерчĕ.

— Халь çийĕр, — ăна-кăна чухланă пекех калаçрĕ Маруç.

Çирĕç. Çак вăхăтра Вĕçелис темиçе хутчен те Антун çине пăха-пăха илчĕ. Именерех ларать вăл хĕрарăмсем хушшинче, пичĕ çинче ырăмарланни туйăнать, Маруçпа Веркка та ютшăнаççĕ-ха унран, анчах палăртасшăн мар çакна, ним пулман пек калаçма тăрăшаççĕ.

— Киремет патĕнчи ватă хурăна аçа çапнине куртăн-и паян, Вĕçелис? — шăплăха сирме хăтланса, сăмах çукранах ыйтрĕ Ярахви Веркки.

— Ара, курмасăр, чун сиксе тухатчĕ, хама çапрĕ пуль терĕм, — хуравларĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

— Ан та калăр ун çинчен. Эпĕ хамăн трактopпа юнашарах суха тăваттăм вĕт. Эх, шартлаттарчĕ! Çĕр кисренсе кайрĕ те, хăлха хуплансах ларчĕ, — шавлăн калаçрĕ Маруç.

— Трактора аçа çапмасть, хăрама кирлĕ мар, — лăплантарчĕ Антун.

— Тракторпа лайăх сана. Хывăх пуç, мĕн чухлĕ чĕнчĕç мана, атя МТСа, вĕрен, ӳкĕнмелле пулмĕ терĕç. Итлемерĕм вĕт. Ав, Маруç халь преми хыççăн преми илсе выртать, — стакансене каллех сăмакун ярса, ăмсанарах калаçрĕ Ярахви Веркки.

— Çын аллинчи кукăль пысăк курăнать пуль, ара, — кăмăлсăрланчĕ Маруç. - Ыйт-ха эс манран, юлашки эрнере миçе сехет çывăрнă эпĕ? Е хăвăр çывăрса кайсан, уйра трактор кĕрленине илтми пулатăр-и?

— Мĕн каламалли, ытлашшипех тивет сана. Сăмсу та куçусем кăна тăрса юлчĕç ĕнтĕ, — терĕ Вĕçелис, юлташне хĕрхенсе.

— Тăрахтăр, тăрахтăр, анӳ ĕçне пăрахтăр. Атьăр ĕçер-ха, елкипалки. Пурте ĕçлетпĕр, пурте тӳсетпĕр. Атя, салтак, атя, Антун Кузьмич, янклаттарар тепре! — çапла каласа, Антун стакан тытасса кĕтсе илеймесĕрех сăмакуна ĕçсе ячĕ те Ярахви Веркки, кăштах сывлăш çавăрса, юрă пуçласа ячĕ:

Ĕçер-ха, çиер-ха,
Пурте хамăр тăвансем,
Ют çынсем ма-а-ар,
Ют çынсем ма-а-ар...

Паçăрхи калаçу та, Маруç кăмăлсăрланни те тӳрех юрă айне пулчĕç. Антунсăр пуçне, пурте Верккана пулăшма васкарĕç.

Тăванĕсем лайăх,
Чĕлхи çемçе-е-е,
Мĕншĕн тăван тесе те
Ка-а-алас мар?

Çаврăм хыççăн çаврăм юрă юрларĕ виçĕ тантăш, тата темиçе кĕвĕ килсе кĕчĕ вĕсен асне. Тулли саспа, хытă юрларĕç. Эрех хăйĕн ĕçне турĕ, Антунран ютшăнма пăрахрĕç хĕрарăмсем. Лешĕ те хăюлланчĕ кăштах, вăл та, икĕ хут каламалли ансат сăмахсене вĕренсе, хĕрарăмсемпе пĕрлех юрлама тытăнчĕ. Ăшшăн, çав вăхăтрах тĕпчесе, Антун мĕн шутланине пĕлме тăрăшса пăхрĕ ун çине Вĕçелис. «Маруçпа Веркка сивлемеççĕ, айăпламаççĕ пек те, темле-çке, çавăн пек кăна туйăнмасть-ши?» — шухăшларĕ вăл юрланă хушăрах. «Çапах иккĕмĕш черккене ĕçмелле марччĕ пулĕ, ав еплерех пĕçертет кăкăрта, ав еплерех çăмăлланчĕ кĕлетке. Пуç кăштах çаврăнать. Намăс. Кун пек ниççан та ӳсĕрĕлменччĕ-ха вăл. Анчах ни кайса выртма, ни килнĕ çынсене хăваласа яма май çук, ун патĕнче вĕсем, хăнара. Çитменнине, сăмакунне те хăйсемех илсе килнĕ».

Юрланă вăхăтрах Ярахви Веркки çакăн пек каласа хучĕ:

— Туй вырăнне пултăр ку, Вĕçелис! Халĕ, çак вăхăтра, ĕçкĕçикĕ пухма вăй çитереймĕн... — хăй вара юлнă сăмакуна стакансене пайла-пайла тухрĕ.

— Ара, капла та юрать çав, — илтĕнчĕ Маруç сасси.

Те ăнланчĕ, те ăнланаймарĕ Вĕçелис çак сăмахсене. Пĕрре айăплăн Антун çине, тепре хăйĕн тантăшĕсем çине пăхрĕ вăл. Сĕтел çинчи стакансем, чашăк-тирĕк, çăкăр-тăвар тайăла-тайăла кайнă пек пулчĕç. Акă урай варринче такамăн ури кĕлисем тăрăслатни илтĕнчĕ. Унтан Вĕçелис хăлхине темле тĕлли-паллисĕр сăмахсем килсе кĕчĕç:

Туя туй... тăвар-и,
Ура... хуçар-и...
Эпир... киличчен
...туса хуччăр-и! И-их!

— Чимĕр-ха, — пуçне çĕклеме хăтланчĕ Вĕçелис, анчах пуçĕ çĕкленмерĕ унăн, çак вăхăтра вăл, чавсипе лектерсе, умĕнчи стакана урайне ӳкерчĕ. Кĕленче савăт ванса кайни шартах сиктерчĕ Вĕçелиса.

— Акă епле ăнать вĕт, акă епле ăнать, — сĕтел патне чупса пычĕ Ярахви Веркки, — çынсем туйра юри савăт-сапа çĕмĕреççĕ. Кунта, ав, турри хăй çырнă тейĕн. Телей пултăр, Вĕçелис, тату пултăр пурнăçу. Хытă юраттăр упăшку...

— Чимĕр-ха, — тепĕр хут каларĕ Вĕçелис, мĕн пулса иртнине ăнланма тăрăшса. — Мĕнле туй, мĕнле телей?..

Унталла, кунталла пăхрĕ Вĕçелис. Сĕтел хушшинче, ыттисем çине пуç çĕклеме вăтаннă пек, питне аллисемпе хупласа, Антун шухăшлăн ларать. Тепĕр кĕтесре — Маруç, Ярахви Веркки вара урай варрине тăнă та аллисене сура-сура сăтăркалать.

— Чимĕр-ха, — каллех ыйтрĕ Вĕçелис. — Мĕнле савăнăç ку?

— Туй! — пĕр тăхтаса тăмассăр хуравларĕ Ярахви Веркки. — Санăн тую. Лайăх упăшка çаклатрăн, ан вĕçерт. Простой кăна мар, у-у-чи-тĕл!

Çак вăхăтра Антун вырăнтан сиксе тăчĕ, хултуйине илчĕ те карттусне пуçĕ çине лартрĕ. Анчах тухса кайма ĕлкĕреймерĕ вăл. Пĕтĕм пӳрте Вĕçелисăн кăшкăрса макăрса янă сасси хупласа хучĕ:

— Мĕн хăтланатăр эсир!? Эппин, тăр-пĕччен тăрса юлнă çынран кулма та юрать тесе шутлатăр-им? Нивушлĕ çавăн йышши çын пек курăнатăп? Нивушлĕ чыс çухатнă хĕрарăм пулса тăтăм ĕнтĕ? Тухса кайăр кунтан! Хăвăртрах, тухса кайăр, тархасшăн!

Вырăн çине кайса выртса, тата чылайччен ĕсĕклерĕ Вĕçелис. Çакна пачах кĕтмен çынсем, ним тума аптраса, шак хытса тăчĕç. Чи малтан Антун тапранчĕ. «Эх, эсир те çав», — тенĕ пек, Веркка капа Маруç çине куç айĕн пăхса илчĕ те вăл пӳртрен йывăррăн тухса кайрĕ.

— Ан хуçăл, Вĕçелис, ан хуçăл, — ним пулман пек персе ячĕ Ярахви Веркки. — Ку килĕшмест-тĕк, вăрçăран часах каччăсем таврăнаççĕ. Ан хуçăл...

Сĕтел çинчи пушă кĕленчене илчĕ те Веркка тайкалана-тайкалана алăка тĕртсе уçрĕ.

Маруç пӳртре тата тепĕртак ларчĕ. Хăй айăпне туйса, сĕтел çинчи апат-çимĕçе пуçтарчĕ вăл, чашăк-тирĕке çуса тасатрĕ. Унтан Вĕçелис выртакан вырăн патне пычĕ, юлташне ыталаса илсе, ун куçĕнчен пăхрĕ.

— Каçар, Вĕçелис, — терĕ Маруç, — тĕрĕс тумарăмăр. Манса кай çак куна.

Маруç тухса кайсан, каллех алăк сасси пулчĕ. Мĕтри килчĕ.

—Инке, — терĕ вăл, — яла салтак килчĕ. Ярахви пиччене пĕлетĕн вĕт? Çавă килчĕ. Хăйĕн пичĕ йăлтах çĕмĕрĕлнĕ. Пăхма та хăрушă.

Кравать çине тăрса ларнă Вĕçелис тутăрне салтса çӳçне тирпейлеме пикенчĕ.

— Инке, — асăрхамарĕ-ха çакна пĕчĕк Мĕтри. — Ыран атте вилни икĕ çул çитет. Икерчĕ пĕçерĕпĕр-и, инке?

Çакна илтсен, шартах сикрĕ Вĕçелис. Епле астуман, епле манса кайнă! Анчах çакна Мĕтрие палăртасшăн пулмарĕ вăл.

—Пĕçерĕпĕр, Мĕтри, пĕçерĕпĕр, — терĕ вăл. — Çăнăхне лăканă ĕнтĕ. Аçуна та, аннӳне те пĕрле асăнăпăр. Вĕсен хушши пĕр эрне кăна вĕт.

Мĕтри çывăрса кайсанах, Вĕçелис, çăнăх лăкаса, чуста лартрĕ.

16

«Манăçать иккен, манăçать... Пурнăç малаллах шăвать. Чĕрри-сен — хăйсен ĕмĕт-шухăшĕ, хăйсен ĕçĕ-терчĕ, хăйсен хуйхи-суйхи, — ассăн сывла-сывла шухăшларĕ Вĕçелис ирхине юлашки тулă çăнăхĕнчен икерчĕ пĕçернĕ чухне. — Тен, вăрçăччен пулсан, часах асран тухас çукчĕ пуль хуняшшĕпе хунямăшĕ. Халĕ вара, кашни çурта тенĕ пек хура хыпар киле-киле кĕнĕ чух, уйрăм çыннăн хуйхи хăйĕн пĕлтерĕшĕпе пĕчĕкрех, вăйсăртарах иккен». Хурланса, татăлса йĕме, пĕчĕк Мĕтри шăпи çинчен пуç çĕмĕрсе ларма вăхăчĕ те тупăнмарĕ. Кашни кун хĕрӳ ĕçре пулчĕ Вĕçелис, ялпа пĕрле тырă акрĕ, утă çулчĕ, вăрман касрĕ. Колхоз выльăхĕ-сене, апат çитменнипе халран кайнăскерсене, вĕренпе ура çине тăратни сахал пулнă-и тата! Кĕреçине, лумне алран яман, арçынсем пекех пуртă-пăчкăпа ĕçлеме вĕреннĕ вăл, каççерен фронтри салтаксем валли чăлха-нуски çыхнă, ăшă тумтир çĕленĕ. Çапах та икĕ çул каялла пулса пртнĕ хурлăхлă кунсене аса илет те Вĕçелис, каллех чунĕ ыратса каять унăн. «Пурне те тăвайрăм-ши ун чух, мана ӳпкелесе вилмерĕ-ши хуняма карчăк?» — ыйтать вăл хăйĕнчен хăй. Вара ирĕксĕрех çакăн пек шухăш патне пырать: «Çук, Иван та, ялйыш та айăпа кĕртеймĕç мана. Упăшки вăрçа тухса кайсан, ытла та вăйсăрланчĕ карчăк, çулталăк та виçĕ уйăх вырăнпах выртрĕ. Темле тăрăшса пăхсан та текех ура çине тăраймарĕ карчăк. Кунта ман айăпăм çук».

... Куç умне пĕчĕк Мĕтри тухать.

Иртенпех тем сиснĕччĕ çав Вĕçелис. Хăйĕн каçалăкне пуçланăранпа ял çине темиçе хутчен те пăха-пăха илчĕ вăл, тем кĕтрĕ, тем шырарĕ. «Мĕн те пулин манса хăварман-ши эпĕ? — шухăшларĕ хĕрарăм. — Çук. Яланхи пекех. Çурла — акă вăл. Виçĕ çăмарта та пĕр кĕленче сĕт. Пурте пур».

Çапах канăçсăрланчĕ те канăçсăрланчĕ унăн чĕри. Кăнтăрла тĕлне Митра пичче бригадир хире килсе çитсен, Вĕçелис чăтаймарĕ, çапла каларĕ:

— Тем, чĕре вырăнта мар, апат вăхăтĕнче киле çитсе килемха эпĕ.

Килте мĕн кĕтсе тăрасса пĕлнĕччĕ пулĕ çав Митра пичче. Темшĕн-çке Вĕçелис çине тӳррĕн пăхма хăяймарĕ вăл.

— Çитсе кил, Вĕçелис. Эпĕ те часах яла пыратăп, — терĕ вăл ăшшăн.

Пĕчĕк Мĕтри хĕрелсе кайнă куçĕсене çанă вĕçĕпе сăтăра-сăтăра картлашка çинче ларатчĕ. Виç кĕтеслĕ çыру пурччĕ ун аллинче.

— Мĕн пулчĕ? — тӳрех хыпăнса ӳксе ыйтрĕ Вĕçелис.

— Акă, — çырăва инкĕшне тăсса пачĕ Мĕтри. — Атте...

Вĕçелис шурса кайрĕ, тăр-тăр чĕтрерĕ.

— Аннӳне пӗлтертӗн-и кун çинчен? — ыйтрӗ вӑл, васкасах пӳртум алӑкне уçма тӑрса.

— Вӑл манран çак хута вуласа пама ыйтрӗ. Хӑй вара эпӗ вуланӑ чухнех икӗ хутчен туртӑнса илчӗ те çывӑрса кайрӗ, — сывлӑш çӑта-çӑта ӑнлантарчӗ Мӗтри.

«Çывӑрса» кайнӑ карчӑк вӑранмарӗ текех. Вӗçелис хунямӑшӗн шурса кайнӑ пичӗ çине чылайччен пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те ун аллисене тирпейлӗн кӑкӑрӗ çине хучӗ.

...Масар çине икӗ хӗрес лартрӗç. Çавӑнтанпа Мӗтрипе Вӗçелис килте иккӗшӗ кӑна пурӑнаççӗ. Пӗрне-пӗри çур сӑмахранах ӑнланаççӗ.

...Çапла, манӑçать иккен хурлӑх, тӗксӗмленет. Каç пулать те, ир килет, вӑхӑт шавӗ, кӗрлесе, уласа тӑракан пурнӑç урапи хӑшпӗр пулӑмсене хӑй айне лутӑркаса чикет, курӑнми тӑвать.

Анчах этем — этемех. Унӑн чун-чӗри хӑйӗн тӑванран та тӑван, çывӑхран та çывӑх асаилӗвӗсене, кашни самантра лӑпланупа çутӑ шанчӑк кӳрсе тӑракан асаилӳсене, манмасть. Мӗтри ашшӗпе амашӗн ырӑ сӑнарӗсене асран кӑлармасӑр çӳрет. Мӗн шухӑшлатьши ашшӗнчен тӑххӑрта кӑна юлнӑ ача, мӗн пырса кӗрет-ши унӑн пуçне? Ашшӗн йӑваш сасси-ши, йӑваш утти-ши? Е пура пуранӑ чух ашшӗ меллӗн те ӑнкайлӑн пуртӑпа ӗçлени-ши? Е сенӗк тытса утӑ-улӑм хӑпартнӑ чух тем пысӑкӑш чикӗмсене çӳле ывӑтни-ши? Е сунартан таврӑнсан уссийӗ çине хытса ларнӑ пӑра сӑтӑркаласӑтӑркала çӑпата кантрисене канлӗн салтса ларни-ши? Ӗмӗрӗ тӑршшӗпе ӗçлерӗ, ӗçлерӗ Таниле, ялта чи малтан колхоза кӗчӗ, йывӑрлӑхран, нушаран хӑвӑртрах хӑтӑлма васкарӗ; ӗнтӗ çитнӗччӗ хӑйӗн ӗмӗчӗ патне, тислӗкпе пулӑхлатнӑ пахча апат-çимӗçне ытлӑн-çитлӗнех паратчӗ, картиш тулли выльӑх ӗрчетнӗччӗ, хуралтисем хӑтлӑччӗ.

«Акӑ, — тенӗччӗ пӗррехинче Ивана, — сан пӳртне çавӑрса лартӑпӑр та аçу-аннӳ çуртне тӗпрен çӗнетӗпӗр. Эсӗ унччен чӑн-чӑн платник пулса тӑрӑн». Çапла, çитнӗпе пӗрехчӗ Таниле ӗмӗчӗ. Çук вӗт, тӑшман килсе хупларӗ. Хупларӗ кӑна мар, çав ӗмӗте тымарӗпех кӑкларӗ.

Унӑн арӑмне — Çинавие мӗнле тав тума пӗлес-ха тата Вӗçелисӑн! Качча кайса пурнӑç тути-масине туйнӑ хӗрарӑмсем хӑйсен хунямӑшӗсем çинчен ырӑпа калаçнине сайра хутра кӑна илтнӗ вӑл. Тавах Турра, Вӗçелисӑн апла пулмарӗ. Малтанхи кунтанах хӑйӗн тӑван хӗрне йышӑннӑ пек ӑшшӑн, сӑпайлӑн калаçрӗ Çинави хӑйӗн кинӗпе. Килти ӗçе, хӗрарӑм ӗçне, тума вӗрентрӗ. Пӗрремӗш хӗллех хунямӑш вӗрентнипе вунтӑхӑр хутӑр хутӑрнӑччӗ Вӗçелис, темиçе питшӑлли, кравать çине, саксем çине сармалли илемлӗ кавирсем тӗртнӗччӗ. Хуплу пӗçерме те, шӑрттан тума та лайӑх вӗренсе çитнӗччӗ Вӗçелис. Савӑк кӑмӑллӑ пулнӑран, çынсемпе

сăпайлăн та ăшшăн калаçнăран, вĕсене май çитнĕ таран пулăшма тăрăшнăран пурте хисеплетчĕç Çинавие. Мĕн каласси, хăйĕн çинчен ыррине çеç хăварчĕ вăл ялта. Кĕске ĕмĕрне пархатарлă пурăнса ирттерчĕ.

Манăçать хурлăх. Ырри — манăçмасть. Сийĕн-сийĕн килсе кĕрет те асаилӳ чĕрене ыраттарать. Вилĕмсĕр çутçанталăк илемлĕ те, тискер те. Этемрен килмен саккунпа аталанса, çутçанталăк хăйĕн аслă ытамĕнче ыррине те, усаллине те усрать. Пĕрне хĕрхенем те тепĕрне шар кăтартам тесе тăмасть. Ун умĕнче пурте пĕр тан иккен.

17

«*Аван-и, Вĕçелис, анне тата Мĕтри!*

Чи малтанах сире пурне те питĕ пысăк салам яратăп. Мĕнпур тăвансене, кӳршĕ-арша та манран салам калăр.

Вĕçелис, санăн çырăвна илтĕм, ялти хыпарсем çинчен пĕлтĕм. Мĕнле пурăнкаласа ирттерĕр ĕнтĕ çак хăрушă вăхăта? Пĕлетĕп, арçынсемсĕр шутсăр йывăр. Анчах халлĕхе эпир нимпе те савăнтараймастпăр-ха сире. Тăшман вăйлă та хаяр.

Çапах хăраса ӳкссе каялла чакмастпăр эпир. Кашни салтак питĕ лайăх ăнланать: çапăçу хирĕнчи кашни утăм вăл — пирĕн çĕршыв, пирĕн кил, атте-анне, арăм, ача-пăча. Кашни утăмшăн пурнăçа шеллемесĕр çапăçмалла. Октябрь праçникĕнче, Мускавра Хĕрлĕ площадьре çар парачĕ пулнине пĕлетĕр-и эсир? Салтаксем çав парадранах вăрçа кĕрсе паттăррăн çапаçни çинчен илтрĕр-и? Нумай та вăхăт ирттмерĕ, пирĕн çарсем Мускав çывăхĕнчи Волоколамск, Клин хулисене ирĕке кăларчĕç. Гитлер шучĕпе, Мускав тахçанах ун аллинче пулмаллаччĕ. Ĕç тухмарĕ тăшманăн. «Апла-тăк малашне те путланать унăн ĕç-пуçĕ, çĕнтерӳ пирĕн пулать!» — тет пире политрук. Тĕрĕс калать.

Эсир унта, ялта, ытла хуçăлса ан ӳкĕр-ха. Сехрене хăпартса, алă усса лармалли вăхăт мар халĕ. Салтаксене апат çитмест, вĕсене ăшă туммтир кирлĕ.

Атте çыру çырать-и тата? Ун çулĕнчи çынсем пирĕн патра та пур. Салам ярăр ăна манран. Вăрçăра çыру çӳретесси питĕ йывăр, е вĕсем урăх çĕре куçаççĕ, е — эпир. Çар чаçĕ улшăнни те пулать. Çапах унăн адресне çырса ярăр ман пата.

Пурсăра та хытă ыталатăп сире. Анне, хăвăртрах ура çине тăр. Ан чирле текех. Эпĕ сывах, чип-чиперех.

Ыталатăп сире. Иван.

Декабрĕн 20-мĕшĕ, 1941 çул».

Арчара — фронтран килнĕ тата пилĕк çыру. Тăваттăшĕнче — Иван ăшши, Иван ытамĕ, Иван халалĕ.

Пĕрремĕшĕ.

«...Кăштах сывлăш ҫавăрмалăх вăхăт пуррипе усă курса ҫыратăп ҫак ҫырăва. Эпир окопсенче ларатпăр. Ăшăтрĕ. Сывлама ҫăмăл.

Акă халĕ, шăв-шав лăпланнă хыççăн, пуҫа темĕнле шухăш килсе кĕчĕ. Юратма пĕлейрĕм-ши сана? Мĕнпе те пулин кӳрентермерĕм-ши?

Юрĕ. Ку вăл хам ялан сан ҫинчен шухăшласа ҫӳренĕрен пулать пулмалла... Ҫапах та манса ан кай мана. Таврăнсан, юратма та ĕлкĕрĕпĕр, лайăх пурăнма та...»

Иккĕмĕшĕ.

«...Питĕ шăрăх ҫанталăк тăрать. Паян тырă вырмаллаччĕ ĕнтĕ ҫак ҫĕрсем ҫинче. Анчах пирĕн умра бомбăсемпе, снарядсемпе шăйăрттарса пĕтернĕ хир выртать. Кичем ун ҫине пăхма. Чĕре Виççырмана туртать. Эх, сикĕттĕм пĕрре Ҫарăмсана, унăн уҫă шывĕпе чуна килентерĕттĕм. Лашана хыркăчлаттăм. Унтан тырă пуссине вĕҫтерĕттĕм. Лобогрейка ҫунаттисем хулăн хăмăла авăса-авăса пынине пăхса савăнăттăм. Пулать ҫавăн пек, Вĕҫелис, паяныран мар пулин те — пулатех...»

Виççĕмĕшĕ.

«...Пурăнас килет, Вĕҫелис, питĕ пурăнас килет. Почта лайăх мар хыпарсем илсе килет: пĕрин ашшĕ вилнĕ, теприн пиччĕшĕ е шăллĕ пуҫ хунă. Хамăр та кашни ҫапăҫу хыççăн кампа та пулин уйрăлатпăр. Кашни ҫапăҫăва кĕмессерен пуҫа ирĕксĕрех лайăх мар шухăш пырса кĕрет: юлашки мар-ши? «Йĕтрен куҫĕ ҫук», — теççĕ, тем те пулма пултарать. Ун пек-кун пек пулас пулсан, татăлса ан йĕр маншăн, Вĕҫелис. Пĕл, ку вăл Тăван ҫĕршывшăн, малашнехи телейшĕн кирлĕ пулнă. Эп хăравҫă пулман, халех ĕнтĕ манăн икĕ орденпа икĕ медаль пур... Антун ҫав-ҫавах манпа пĕрле. Лайăх та шанчăклă юлташ. Вăрҫă пĕтсен, Виççырмана илсе пыратăпах...»

Тăваттамĕшĕ.

«...Нумай ҫырса тăма вăхăт ҫук - кĕҫех атака пуҫланать. Эпĕ сана питĕ хытă юрататăп, Вĕҫелис. Хамăр юратушăн хăрушă ҫапăҫăва кĕретĕп. Вăйсем тан мар, ҫапах кăмăл-шухăш ҫирĕп пирĕн. Эпир ҫĕнтеретпĕрех! Сывă пул, Вĕҫелис. Чĕррĕн-сыввăн таврăнасса кĕт. Кĕтсе илеймесен вара, лайăх пурăн. Телейлĕ пул. Иван».

Пиллĕкмĕшĕ.

Уйрăм хунă ҫак ҫырăва. Хура тутăрпа чĕркенĕрен, тĕкĕнме хăяймасть ăна Вĕҫелис. Чылайранпа арча тĕпĕнче выртать пулин те, унăн хăрушă вăйĕ паян кун та пысăк-ха: вăл халь-халь шартлатса ҫурăлса кайма, пĕтĕм кĕлеткепе чун-чĕрене ҫĕнĕрен аманта хăварма пултаракан усал хĕҫ-пăшал пек туйăнать. Ҫавăнпа

тĕкĕнмест, уҫса пăхмасть ăна Вĕҫелис. Унта мĕн ҫырнине ахалех лайăх пĕлет вăл.

«Хаклăран та хаклă Василиса (каҫарăр, аҫăр ячĕпе чĕнме пĕлейместĕн). Тархасласа ыйтатăп Сиртен, ҫак ҫырăва илсен ан макăрăр, ан хуҫăлăр. Макăрни нимпе те пулăшас ҫук, унсăр пуҫне Сире, чи ҫывăх юлташăн мăшăрне, ҫĕнĕ асап кӳрес килмест манăн. Эсир хăвăрăн упăшкăр паттăрсен вилĕмĕпе вилни ҫинчен калакан хута илсен те нумай макăртăр пулĕ. Хăвăра хĕрхенĕр, ан макăрăр текех. Ман ҫинчен, акă, хура ҫыру илсе, никам та макăрас ҫук, мĕншĕн тесен ҫывăх ҫыннăмсем, Иван пекех, ҫут тĕнчерен уйрăлса кайрĕҫ, вĕсене те фашист тĕп турĕ.

Ҫак ҫырăва ҫырма пуҫличчен чылай шухăшларăм эпĕ, Сире кăштах та пулин лăплантарма пултаракан чи кирлĕ сăмахсем суйларăм. Сирĕн хуйхăр мĕн тери пысăк пулнине пĕтĕм чун-чĕрепе туятăп. Ҫак йывăр вăхăтра хăвăра алла илни, чуна хытарни кирлĕ.

Мĕн тери чаплă упăшка пулнă Сирĕн, хаклă Василиса! Ҫавăн пек ҫынсен чун-чĕре ҫути ыттисем ҫине те ӳкет иккен. Унăн ырă кăмăлĕ, юлташĕсемшĕн тем тума та хатĕр пулни пире хытă савăнтаратчĕ. Харсăр та хăюллă ҫынччĕ Иван. Вăл вилĕм пирки калаҫнине нихăҫан та илтмен эпир — ҫĕнтерессе ҫирĕп шанатчĕ, пурăнма ĕмĕтленетчĕ. Мана, хаклă Василиса, Сирĕн ҫинчен нумай каласа паратчĕ. Эпĕ яланах Сирĕн илемлĕ сăн-пите, ăшă кăмăлăра туйса тăраттăмччĕ. «Ку вăл манăн арăм пекех питĕ чаплă хĕрарăм пулмалла», — тесе шухăшлаттăм. Иван Сирĕн ҫырусене мана та вуласа паратчĕ. Маттур Эсир, хăвăра темле йывăр пулсан та, ҫакăн ҫинчен фронта пĕр сăмах та ҫырса ямарăр, упăшкăра, унпа пĕрле ьгги салтаксене те юрату хĕлхемĕпе, ҫутă шанчăкпа хавхалантарса тăтăр. Тавах Сире уншăн. Сиртен те хаклă ҫын Иваншăн урăх никам та ҫукчĕ. Мĕн тери юрататчĕ вăл Сире!

Юлашки икĕ куна эпир унпа ирттертĕмĕр. Иксĕмĕр те йывăр амантăмăр. Эпĕ иккĕмĕш кунне тин тăна кĕтĕм. Иван вара тăнне ҫухатман та пулнă иккен. Вăл эпĕ куҫ уҫасса чăтаймасăр кĕтнĕ. Хытă асапланнă, тен, вилĕме темиҫе хут та хăваласа янă пуль, ҫапах эпĕ куҫ уҫиччен вилĕме парăнман. Сирĕн пата ҫыру ҫырма пултарайман вăл, суранĕ шутсăр хытă ыратнă, вара темиҫе сăмах та пулин мана каласа хăварма шухăш тытнă пулмалла.

Ҫук, Василиса, паян эпĕ ун сăмахĕсене ҫырса яма пултараймастăп. Анчах ҫав сăмахсене каламаллах манăн. Иван умĕнче парăма юлас теместĕп. Ҫавăнпа та госпитальтен тухсанах эпĕ Виҫҫырмана ҫул тытасшăн.

Тепĕр хут калатăп, макăрса ларнипе хуйха пусараймăн. Ҫирĕп кăмăллă пулăр. Ҫĕнтерӳ ҫывхарсах килет.

Сире кирек хăҫан та пулăшма хатĕр Антон Кузьмин».

18

Унтан вара... Унтан — Антунпа тĕл пулни. Кĕтмен тĕл-пулу тееймĕн ăна — çыру çырса ячĕ Антун, çав тĕлпулăва чăтаймасăр кĕтрĕ Вĕçелис: «Мĕн калама пултарнă-ха Иван хăй вилес умĕн», — тесе канăçсăрланчĕ. Тĕлпулăвĕ вара çуркунне, шыв-шур типсе çитсен, пулса иртрĕ.

Района ĕçпе кайна Микулай пичче лартса килчĕ хултуйиллĕ салтака. Каç пулнăччĕ. Шкултан таврăннă Мĕтри, апат çисе, урама тухса кайнăччĕ. Алăкран шаккарĕç. Вĕçелис хăех пырса уçрĕ. Пӳртумĕнче салтак тумĕпе тăракан аманнă çынна пĕрре пăхсах тавçăрса илчĕ хĕрарăм: Антун ку, Иван патĕнчен. Нимĕн те калама хăяймарĕ вăл хăнана, шăппăн тĕпел кукрине иртрĕ те уласа йĕрсе ярасран çăварне питшăллипе хупласа хучĕ, çине-çине нăшлатрĕ, куçне шăлчĕ. Салтак вара, кантăк умне пырса тăрса, тĕттĕм чӳрече çинчен куç илмерĕ.

Астăваймасть Вĕçелис, тахăшĕ малтан сăмах хушрĕ. Çапах алла илчĕ вăл хăйне. Салтака шинельне хывма пулăшрĕ, сĕтел çывăхнерех ларма хушрĕ. Хăй вара сăмавар лартса ячĕ, Антун мĕн каласса питĕ кĕтрĕ.

Чей тултарчĕç. Иван çинчен пĕри те шарламарĕ-ха. Аманнă салтак хăй Виççырмана мĕнле хĕнпе çитни çинчен каласа кăтартрĕ, Микулай пиччене унăн ырă кăмăлĕшĕн мухтарĕ: «Чăвашра сахал мар-мĕн вĕсем, ăслă та кăмăллă мучисем, авă, каç выртма та хăй патнех чĕнчĕ, çурчĕ ăçта ларнине те кăтартрĕ...»

Тата темччен ларчĕç Вĕçелиспа Антун сĕтел хушшинче. Сăмаха тĕлли-паллисĕр вакламасть салтак, сăпайлă та ăнлануллă пек туйăнать. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ялти ĕçсем çинчен ыйтса пĕлчĕ вăл кил хуçи хĕрарăмĕнчен. Вĕçелис та нумай калаçмарĕ.

Çул çинче Микулай пичче Антун салтака Вĕçелис çинчен пĕтĕмпех каласа панине пĕлеймерĕ хĕрарăм. «Килте, акă, хăвăрах куратăр, — йĕркеллех», — ассăн сывларĕ те Вĕçелис каллех тĕпел кукрине кĕрсе кайрĕ.

Иван пирки çав-çавах сăмах-юмах тапранмарĕ пулин те, иккĕшĕ те çивĕччĕн çакна сиссе-туйса тăчĕç: кунтах вăл, вĕсен хушшинчех. Пĕри, сăмаха вăхăтсăр пуçласа, калаçăва арпаштарса ярасран шикленчĕ, тепри, Иван çинчен никамăн та мар, хăйĕннех тапратмаллине пĕлсе тăрса, калаçăва каярах та каярах хăварма тăрăшрĕ. Хăйĕн пуçĕнче çав калаçăва хускатмалли темле-темле майсем те шыраса пăхрĕ Антун, анчах çак самантпа килĕшӳллĕ сăмах тупăнмарĕ те тупăнмарĕ. Микулай пиччен çул çинчи калаçăвĕнчен Вĕçелиса хăйне курса унпа пĕрер сехет ларнă хыççăн пĕр ыйту ытларах та ытларах шухăшлаттарчĕ салтака: ăçтан çавăн чухлĕ вăй çак пысăках та мар, типшĕм, анчах шутсăр илемлĕ

çамрăк хĕрарăмра? Пĕр сăмахĕпе те, пĕр хусканăвĕпе те хăйне чăтмалла мар йывăр пулнине кăтартмарĕ вăл, хăйне çакнашкал шăпа килсе тухнишĕн ӳпкелешмерĕ. Акă мĕншĕн сĕтел хушшинче, йĕс сăмавар умĕнче, ларнă чух Антун вăрçăра Вĕçелис упăшкипе ирттернĕ юлашки самант çинчен каласа пама хал çитереймерĕ. Йывăр шухăшсемпе пусăрăннă салтак хĕрарăма мĕнле пулăшмаллине, ăна мĕнпе лăплантармаллине пĕлеймерĕ те пĕлеймерĕ. Унтан та ытларах, Иванăн юлашки сăмахĕсене каласа кăтартсан, Вĕçелис ăна ăссăр çын, йĕркесĕр çын тесе айăпласран хăрарĕ Антун.

...Никулино çывăхне вĕсен батальонĕ çĕрле çитрĕ. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, кунĕпе темиçе тытăçура пулса ĕшеннĕ фашистсен самаях вăйлă ушкăнĕ шăпах çак яла канма чарăннă. Батальон умĕнче çакăн пек тĕллев тăрать: тăшмана пĕр систермесĕр пĕтĕм вăйпа пырса çапмалла та ирччен Никулинăна йышăнмалла. Пурте чăтаймасăр сигнал кĕтрĕç.

Кĕçех ялăн сылтам енче, унччен калаçса татăлнă пекех, икĕ хутчен пăшал пени илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, ракетăн хĕрлĕ çути пĕтĕм тавралăха çутатса ячĕ. Иккĕмĕш ракетăна кĕтмесĕрех салтаксем, сухаланă ана тăрăх такăна-такăна чупса, ялалла ыткăнчĕç. Пĕлĕтре сип-симĕс çутă ялтăраса кайрĕ.

— Огонь! — команда пачĕ аслă лейтенант.

Винтовка-автоматпа, пулеметпа пенĕ сасă вăхăт-вăхăт гранатăсем шартлатса çурăлнă сасă айне пулчĕ. Ун хыççăн ял варринче, умлăн-хыçлăн çĕре кисретсе, икĕ вут юпи çĕкленчĕ.

Сăрт çинче позици йышăннă артиллеристсем ялта мĕн пулса иртнине алă тупанĕ çинчи пекех курса тачĕç. Урамсем тăрăх, хĕп-хĕрлĕ юханшыв юхнă пек, танксем, автомашинăсем çунаççĕ. Вут-çулăм пĕлĕте пăрăлтатса хăпарать. Унта та кунта, вутпа та тĕтĕмпе чыхăнса, çынсем кĕшĕлтетни курăнать. Тумланма ĕлкĕреймен нимĕçсем, тĕлли-паллисĕр перкелешсе, пĕр çурт патĕнчен теприн патне чупаççĕ.

Перкелешӳ ял варрипе вăйлăрах та вăйлăрах куçса пырать.

Тепĕр самантран артиллеристсем те яла вирхĕнтерсе кĕчĕç. Ял варринче вĕсене паçăрах кĕтеççĕ-мĕн. Нимĕçсем кӳлĕ хĕрринчи чул çурта вырнаçнă та пулеметран шатăртаттараççĕ.

— Халех шăпланаççĕ, — татăклăн каларĕ Полещук. — А ну, йĕкĕтсем, пĕр виçĕ хут вĕсене... Чӳречерен тĕллĕр!

Чăнах та, виçĕ хут пенĕ хыççăн çурт тăрри ишĕлсе анчĕ, чӳречесенчен çара тĕтĕм мăкăрланса тухрĕ. Тепĕр самантран, аллисене çӳлелле çĕклесе, тыткăна лекнĕ фашистсем çунакан çуртран кĕшĕлтетсе тухни курăнса кайрĕ.

Çапла пĕтрĕ çĕрлехи çапăçу. Анчах батальон командирĕ Полещука çапла каланине илтрĕ Антун:

– Ку вăл пуçламăшĕ кăна-ха. Сыхă тăрăр. Ыран чăн-чăн çапăçу пуçланать.

– Ăнланатăп, комбат юлташ, нимĕçсем çакăн пек çухатупа килĕшсе ларас çук, – терĕ аслă лейтенант.

...Çур сехете яхăн вут-хĕм сирпĕтсе тăчĕ тăшман. Çуртсем ишĕлчĕç, машинăсем, йывăççем сывлăшалла сирпĕнчĕç. Ун хыççăн нимĕçсем атакăна çĕкленчĕç, ним уямасăр автоматсемпе персе ял патнелле çывхарчĕç. Анчах пирĕн миномĕтчиксем яла кĕртмерĕç-ха вĕсене. Минăсене перекетлес тесе, сайра хутра çеç персе тăчĕç пулин те, тăшмана пуç çĕклеме памарĕç вĕсем.

Уй варрине пысăк хăвăртлăхпа тăватă танк шуса тухрĕ. Çакăнпа хавхаланнă нимĕç салтакĕсем каллех ура çине тăчĕç. Пуç çийĕн пульăсем шăхăрма пуçларĕç.

– Огонь! – янăраса кайрĕ Полещукăн уçă та хаяр сасси.

Тĕл тивертрĕç Иванпа Антун. Сулахайри икĕ танк тăп чарăнса тăчĕç. Тепĕр иккĕшĕ, васкавлăн çаврăнса, каялла вĕçтерчĕç. Перкелешӳ кăштах лăпланчĕ. Нимĕçсем каллех çĕр çумне лăпчăнчĕç, çĕнĕ пулăшу килессе кĕтрĕç.

Унччен те пулмарĕ, çӳлтен моторсен сасси вăйланса килни илтĕнчĕ.

– Самолетсем! – кăшкăрчĕ такам.

Ял çийĕн самаях аяла анса, тăшман самолечĕсем вĕçсе иртрĕç.

– Вырăна тĕпчеççĕ, – илтĕнчĕ паçăрхи сасă. – Ак кĕçех тепĕр хут çаврăнса çитеççĕ.

Çаплах пулчĕ.

Улăм витнĕ пĕр лутра çурт çывăхĕнче ӳсекен лапсăркка хурăнсем айне шăтăксем алтса вырнаçнăччĕ Иванпа Антунăн расчечĕсем.

Пĕрремĕш бомба çĕр çине майĕпен шăхăрса анчĕ.

Ăна кĕтсе, пĕтĕм тавралăх пĕр вăхăт чĕмсĕрленнĕ пек туйăнчĕ Антуна. Бомба урамăн тепĕр енчи виçĕ чӳречеллĕ çуртăн тĕтĕм кăларса ларакан мăрйине тӳр килчĕ. Пӳрт пĕренисем, хăма татăкĕсем йĕри-тавралла вак-тĕвек турпас пек чăл-пар çӳлелле ыткăнчĕç те, ухлатса та шатăртатса, çĕр çине ӳкрĕç. Тусанпа тĕтĕм сирĕлсен, çурт вырăнĕнче хура шăтăк çеç тăрса юлнине асăрхарĕç Антунпа Иван.

Пĕрин хыççăн тепри тата темиçе бомба ӳкрĕ. Вăйланчĕ ахăрсамана, алхасрĕ, туллашрĕ. Çывăхри çурт çатăртатса çунма пуçланăран окопра çав тери вĕри пулса кайрĕ. Артиллеристсем, гранатăсем илсе, окопсенчен вирхĕнсе тухрĕç: çуртсен тикĕс речĕсен вырăнĕнче пĕрене таткисем сапаланса выртаççĕ, сыхланса юлнă пӳртсен тăррисем ишĕлсе пĕтнĕ, хуралтăсемпе картасем йăваннă, арканнă. Тусан, тĕтĕм, кĕл явăнса вĕçет урам тăрăх. Икĕ лаша, ниçта кайса кĕреймесĕр тискеррĕн кĕçенсе, сиккипе пĕр тăкăрлăка кĕрсе кайнине курса юлчĕç Антунпа Иван.

Çак вăхăтра нимĕç салтакĕсем каллех атакăна çĕкленчĕç. Пахчасем хыçĕнчи окопсене йышăнма ĕлкĕрчĕç те вĕсем пирĕн салтаксене урамăн тепĕр енне хĕссе кăларчĕç.

— Çак енче лайăх çирĕпленсе, тăшман атакине сирсе ямалла, ун хыççăн, хамăрăн тапăнса, ăна ялтан кăларса ывăтмалла, — çакăн пек приказ илсе килчĕ комбат связнойĕ.

Вăтăр-хĕрĕх çын: автоматчиксем, артиллеристсем, санитарсем — сывви те, аманни те — сыхланса юлнă çурт хыçĕнче йăпшăнса тăчĕç, атакăна çĕкленме команда кĕтрĕç. Пурте çак вăхăтра хăйсен ушкăнĕнчн Аксинин комиссар çине тинкерчĕç. Комиссар шăлне çыртрĕ, васкамасăр пиçиххине вĕçертрĕ те шинельне хывса çĕре пăрахрĕ, пистолетне кăларчĕ.

— Хатĕрленĕр, — терĕ вăл, сассине хăпартмасăр. — Тăван çĕршывшăн! Ман хыççăн! Ур-ра!

Салтаксем, кашни хăй сассипе хавхаланнăскерсем, çул çине сиксе тухрĕç, пĕр-пĕринчен чупа-чупа иртме тăрăшрĕç. Çак хĕвĕшӳре Иван çурăмне курса юлчĕ Антун. Сулахайра та, сылтăмра та çул урлă тата темиçе ушкăн каçрĕ.

Умра каллех гранатăсем шартлатни, автоматсен тăрăлтатăвĕ тискеррĕн илтĕнме тытăнчĕ. Антун хăй умĕнче Иван чупнине курчĕ. Акă вăл пĕтĕм вăйран граната ывăтса ячĕ те алла тепĕрне илме хатĕрленчĕ. Вăрахчен тăчĕ çумĕнчи гранатăна шыраса. Шыраса тăчĕ-ши? Тен, ташманăн ылханлă пульли пырса тивнĕччĕ ĕнтĕ унăн хырăмне? Çапла, пырса тивнĕччĕ çав. Пĕр самант, хыçалалла ӳкес мар тесе, каçăрăлса тăчĕ Иван, унтан хырăмне ярса тытрĕ, кукленчĕ, вара хăрах аяккăн çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ. Нимпе те пулăшаймарĕ ăна Антун, шăлне çыртса, малалла ыткăнчĕ. Анчах хăй те инçе каяймарĕ. Сылтăм урине чул татки пек япала перĕннине туйрĕ вăл, виçĕ-тăватă утăм турĕ кăна — пĕçĕре тем хытă пĕçертсе янине, сылтăм ури лаштах кайнине, атă ăшĕнче темле ăшă шĕвек лачăртатма пуçланине сисрĕ. Антун та ӳкрĕ. Куçĕ хуралса килчĕ унăн, тăнне çухатиччен пирĕн салтаксем «ура» кăшкăрни аяккарах та аяккарах кайнине илтсе юлчĕ вăл...

«Çакăн çинчен каласа кăтартас-и паян Вĕçелиса? — ассăн сывласа шухăшларĕ Антун. — Çук, — терĕ вăл çирĕппĕн. — Çĕнĕ ырату çеç çуратĕ вăл хĕрарăм чĕринче. Лăпланма пулăшаймĕ. Хăçан та пулин, вăхăт иртсен, Вĕçелис çакăн çинчен çине тăрсах тĕпчестăвас пулсан... Халь юрамасть».

Сăмах тупăнмарĕ. Çакăн чухлĕ инçе çул туса, Иванăн юлашки саманчĕ çинчен, унăн юлашки сăмахĕсем çинчен каласа пама килнĕ Антун хăйĕн шухăшĕнчен хăй хăраса ларчĕ, асапланчĕ, хăйне айăплăн туйрĕ. Паян çакăн пек пулса тухнăшăн вилнĕ Ивана вăрçма хал çитереймерĕ вăл, хăйне ятларĕ: «Манăн, айван пуçăн, малтанах шухăшламалла пулнă çакăн çинчен, кунта сĕтĕрĕнсе

киличчен паянхи асаплă вăхăта шута илмелле пулнă. Каярах вăхăт тупăнмастчĕ-и? Кăштах чунĕ пусăрăннă пулĕччĕ Вĕçелисăн. Хăшĕпĕри манăçнă, сыпăннă пулĕччĕ...»

Урăхла тума та пултараймарĕ çав Антун. Ытла тархасласа ыйтрĕ те Иван, Антун ăна çирĕп сăмах пачĕ. Салтак сăмахĕ. Иван та, хăй те юн ăшĕнче выртнă вăхăтра. Çакăн пек сăмаха тытмасăр тăма пултараймарĕ вăл. Госпитальтен тухрĕ те тӳрех Вĕçелис патне васкарĕ.

...Тăна кĕнĕ Антун хăй ăçта выртнине тӳрех тавçăрса илеймерĕ. Шурă халатлă çынсем хыпăнса ӳкссе чупкалани, унта та кунта арçынсем хыттăн ахлатни, хăсас килесле тăракан шăршă малтанах хура халăхпа тулса ларнă пĕр пĕчĕк вокзала аса илтерчĕ. Ăçта каяççĕ вĕсем? Мĕншĕн халăх хыттăн сĕрлет? Ăçта чупаççĕ шурă халатлисем? Мĕншĕн тата кравать çинче выртать Антун? Вăл чавсаланса пуçне çĕклеме тăчĕ кăна, аялта, сылтăм чĕркуççирен çӳлерех, касса кайрĕ, ун куçĕсенчен вут-хĕм сирпĕнсе тухрĕ, тĕнче тĕксĕмленчĕ. Каллех минтер çине ӳкрĕ унăн пуçĕ, вăйсăрланнă аллисем кравачĕн икĕ айккине усăнса анчĕç. «Пĕтрĕм иккен, – терĕ Антун. – Акă ăçта кĕтет хăрушă вилĕм...» Вилес килмерĕ. Шăлне çыртрĕ вăл, çак чăнлăхран пытанас тесе, куçне хупрĕ. Анчах ыратни вăйланчĕ те вăйланчĕ. «Ăçта эсĕ, аслă вăй-хăват! – чун-чĕрипе тархасларĕ Антун. – Эй, хăватлă çутçанталăк! Уйăрса ан яр мана хăвăнтан. Манăн пурăнас килет. Манăн... манăн çемьешĕн тăшмана тавăрмалла. Манăн вилĕмшĕн вилĕм кӳмелле. Манăн çак çĕр çинче тĕрĕслĕх туса хумалла. Сан ывăлу эп, аслă çутçанталăк! Ăнлан мана. Пурнăç пар хăвăн ывăлна...»

Çак вăхăтра Антун, хăйне меллĕрех пултăр тесе, сулахай урине çĕклесе сылтăммипе юнашар вырнаçтарма пикенчĕ, анчах урапа ура пĕр-пĕрне лекмерĕç. «Мĕн амакĕ ку?» – шартах сикрĕ Антун. Каллех çĕкленме хăтланса пăхрĕ, анчах ку хутĕнче те, тымарсăр йывăç çĕре патлатнă пек, минтер çине вăйсăррăн йăванчĕ. «Сывă пул, эппин, сылтăм ура», – мĕн пулнине тавçăрса илсе, йывăррăн хашлатса сывларĕ салтак.

Сасартăк çак тискер сĕрлевре çине тăрсах хăйне такам тархасласах чĕнни пырса кĕчĕ Антун хăлхине. Унталла-кунталла çавăрчĕ вăл пуçне, сасă ăçтан илтĕннине чухлаймарĕ.

– Антун, тетĕп, çĕр çăтманскер! – янраса кайрĕ çывăхрах палланă сасă. Вара тинех сулахай кравать çинчи шап-шурă сăнпитлĕ çын Иван пулнине тавçăрса илчĕ Антун.

– Эсĕ-çке, – вăйсăррăн пăшăлтатрĕ вăл.

– Эпĕ, Антун, – çавăн пекех шăппăн каларĕ Иван. – Санпа калаçса та юлаймăп тенĕччĕ.

– Сана ăçтан амантнă? – ыйтрĕ Антун.

— Амантман — вĕлернĕ. Сана каламалли сăмахсем çеç теплерен тăрса юлчĕç. Калаймăп тесе хăранăччĕ, тăна кĕтĕн, авă...

— Ан сӳпĕлтет, Иван.

—Куратăп, сана та йывăр. Анчах пĕлетĕп: эсĕ пурăнатăн. Сана кунта илсе килнине курсах выртрăм. Врач хăй каларĕ: пурăнать ку терĕ. Итле, Антун...

Çак вăхăтра Иван пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ те, урисене хутлатса, вĕсемпе хырăмне тĕрелерĕ, сасăпах йынăшса ячĕ, шутсăр хытă ыратнипе, питне-куçне пĕркелентерчĕ.

—Итле, Антун, — терĕ вăл, ниме пăхмасăр. — Тем пулсан та, Вĕçелис патне çитме тăрăш. Кала, çитетĕн-и?

—Сăмах паратăп, Иван, — юлташĕ малалла мĕн каласса кĕтрĕ Антун.

— Эп сана шанатăп. Ахальтен мар эс манăн чи çывăх юлташ пулнă. Кала эс ăна, Антун, çĕре те эпĕ ун ячĕпе кĕретĕп. Ан макăртăр, ан хуçăлтăр. Кала эс ăна. Вăл пурне те ăнланма тивĕçлĕ. Çавăн пек çын вăл. Эх, Антун, хăвах курăн-ха эс ăна. Илтетĕн-и эсĕ мана?

—Илтетĕп, Иван.

—Шел, нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп Вĕçелиса. Итле-ха, Антун, ун патне çитме сăмах паратăн-и эсĕ мана?

—Салтак сăмахĕ, Иван, ан иккĕлен.

—Апла пулсан, ан пăрах эс ăна... Шанатăп сана, тархаслатăп.

—Эс ан сӳпĕлтет-ха. Калаçса татăлнă. Вăрçă хыççăн пĕрлех каятпăр сирĕн яла...

—Пулмасть, Антун, пулмасть. Эсĕ пĕчченех каятăн. Тăна çухатасран хăратăп. Вара тек вăранаймăп та. Ан кансĕрле. Сăмахăма каласах хăварам. Итле... Енчен те эсĕ ăна курсан... Енчен те вăл сана килĕшсен... Çук-ха, капла мар... Ан пăрах Вĕçелиса... Ман вырăнта пул...

—Мĕнле? — ăнланаймарĕ Антун.

—Çук, çук, капла та мар, — юлашки вăйне пухса васкаса калаçрĕ Иван. — Пулăш эс ăна. Нумай асап тӳсрĕ вăл. Енчен вăл сана килĕшсен... Эп сана шанатăп, Антун. Ăнланакан çын эсĕ... Вĕçелис та ăнланать. Эсĕ ăна ман сăмахсене кала. Хăйне лайăх пултăр тесе, сана лайăх пултăр тесе калатăп-çке. Каятăн-и Вĕçелис патне? Каласа паратăн-и ман сăмахсене?

—Эс ыйтнине тăвăп, Иван, — терĕ Антун, çак самантра юлташне кӳрентерме хăяймасăр.

— Халĕ эпĕ лăплантăм. Сыв пул, Антун. Лайăх пурăнăр, телейлĕ пулăр. Вĕçелиса ыталаса чупту ман ятпа. Манса ан кайăр. Ман пата килсе курăр. Сывă пулăр...

Пурнăçăн юлашки хĕлĕхĕ çак самантчен мĕнле тытса тăма пултарнă-ши Ивана тесе, çавăн чухне те, каярах та нумай шухăш-

ларĕ Антун. Юлашки сăмахĕсене каласа пĕтерчĕ кăна Иван, уриссем майĕпен аялалла шуса анчĕç унăн, кĕлетки темиçе хутчен тăр-тăр чĕтренсе илчĕ, янах шăммисем, чăтмалла мар асапа палăртса, унталла-кунталла хускалчĕç. Юлашки сывлăшĕпе пĕрле шăппăн та уçăмсăррăн пĕртен-пĕр сăмах сăрхăнса тухрĕ. Вĕç-ççелиисс... Тепĕр самантран вокзал пек сĕрлекен пӳлĕм таçта çĕр тĕпне анса кайнăн туйăнчĕ Антуна. Сасартăк тавралăх шăпланчĕ, тĕксĕмленчĕ, хăйĕн пĕлтерĕшне çухатрĕ. Чĕри ниçта кайса кĕреймесĕр шаккани кăна хăй çак тĕнчере пуррине, пурнăç малаллах тăсăлнине астутарчĕ...

Çук, калаймасть Антун çак сăмахсене Вĕçелиса. Тем тесен те калаймасть. Хăйне чи юлашки çын вырăнне хурса айăпласран шикленет.

Темиçе хутчен те чикаркка çавăрчĕ вăл сĕтел хушшинче. Туртса яма хăяймарĕ. Кашни çавăрмассерен чикарккисене кĕсйине ярса пычĕ.

Вĕçелис кĕтрĕ. Васкатма пултараймарĕ вăл Антуна. Шăппăн кĕтрĕ. Темиçе хут та, сăмах пуçлать-ши тесе, салтак куçĕнчен пăха-пăха илчĕ вăл, анчах лешĕ шыв сыпнă пек ларчĕ, шухăша кайса, таçта инçетри çулсемпе çӳрерĕ. Кирлĕ, мĕн тери кирлĕ Вĕçелиса Иван сăмахĕ! Тен, çав сăмах мĕнпур хурлăха та асапа сирсе ярĕ, тен, вăл халичченхи пек нушаллă та мĕскĕн мар, урăхла, мĕнлине пĕлеймест-ха Вĕçелис, йăлтах урăхла пурăнмалли майсем тупса парĕ? Тен, вăл, çав асамлă сăмах, пĕрре куç хупса иличченех Вĕçелиса урăх тĕнчене — телей тĕнчине — куçарса кайĕ? Ача пек кăсăкланса, çав вăхăтрах хăраса та иккĕленсе кĕтрĕ Вĕçелис салтак мĕн каласса.

Салтак çав-çавах чĕнмерĕ. Вăл хăй шухăшне шухăшларĕ. «Çапла, эсĕ илемлĕ те ăслă, — терĕ вăл хăй ăшĕнче, — анчах Иван каланă пек пулас çуккине туйсах тăратăп. Çыннăн ăнкайсăр шăпи çинче хăвăн телейне тăваймăн. Иван сăмахне нихçан та манмăп эпĕ, Вĕçелиса май килнĕ таран пулăшма тăрăшăп. Анчах вăл ман пулăшăва йышăнасшăн пулмасан? Мана вăл тĕрĕс мар ăнлансан?..»

Çак шухăшсемпе пуçне çĕклерĕ Антун. Вĕçелис куçĕсемпе тĕл пулчĕ. Пĕр вăхăт ун çине тӳррĕн пăхрĕ те: «Пуçна ан ус, пурăнас пулать», — тенĕ пек, куçне вылятса илчĕ. Лешĕ, ăнланса, пуçне пĕкрĕ.

Антун ура çине тăчĕ, пӳлĕм кĕтессине таянтарса хунă хултуйине илчĕ.

Вĕçелис туйрĕ: кайма пуçтарăнать салтак. Анчах мĕншĕн нимĕн те каламарĕ вăл Иван çинчен. Мĕншĕн çырури сăмахсене манса кайрĕ вăл? Мĕншĕн, çакăн пек инçе çулпа килсе, ним тĕлли-паллисĕр тухса каясшăн Антун?

Вĕçелис чăтаймарĕ, шинельне тӳмелесе тăракан Антун патне пычĕ те, ун куçĕнчен пăхса, шăппăн çапла ыйтрĕ:

— Мĕн каларĕ Иван?

Антун пĕр самант ним чĕнме аптраса тăчĕ. Каллех Иванăн вилес умĕнхи шуранка сăнĕ тухрĕ ун куçĕ умне. Сăмахĕсем аса килчĕç: «Кала, Антун... сăмах паратăн-и, Антун?...»

— Каçар мана, Василиса, — терĕ Антун. — Иван та питĕ тархасларĕ, ху та çине тăрсах ыйтатăн. Вăл... пурнăç çинчен калаçса вилчĕ. Сан çинчен, ман çинчен... «Кун пек пулмасть», — терĕм эпĕ ăна. Вăл хăйĕннех печĕ, «Вĕçелис ăнланать, пĕрченлĕхре ан асаплантар, телейлĕ пултăр», — терĕ... Юлашки сăмахĕ те унăн сан яту пулчĕ... Мĕнле те пулин пулăшу кирлĕ-тĕк, тӳрех кала. Микулай пичче патĕнче пулатăп. Тепĕр хут ыйтатăп: каçар мана, Василиса, хам шухăшласа каланă сăмахсене мар, Иванăн юлашки сăмахĕсене каларăм сана.

Пĕрре тĕлĕнсе, тепре тин илтнĕ сăмахсене ĕненес темесĕр шак хытса тăчĕ Вĕçелис. Пĕрре манса кайма тăрăшрĕ Антун сăмахĕсене, тепре çĕнĕрен аса илчĕ. Иван сăмахĕ-и? Çук, çук, çук! Пустуй ку, пĕтĕмпех пустуй! Калама пултарайман çапла. Пултарайман!

— Кай, — халь-халь йĕрсе ярасран хăйне-хăй чарса, паçăрхи пекех шăппăн, анчах тарăхса каларĕ Вĕçелис. — Кай та — урăх ан кил...

19

Анчах Антун итлемерĕ Вĕçелис сăмахне. Ялтан кайма шутламарĕ вăл. Икĕ хусах — ватăлса çитнĕ Микулай пиччепе аманнă салтак — пĕр чĕлхе тупрĕç пулмалла, килĕштерсе, шăкăл-шăкăл пурăнчĕç, пĕр-пĕрин пĕрченлĕх туйăмне сирсе яма пулăшрĕç. Микулай пичче пушарникре ĕçлерĕ, Антун вара кĕркунне çитсен шкулта ачасене вĕрентме тытăнчĕ. Çав кун хыççăн та, мунча кĕрсе тухсан тăваттăн ларнă чух шăв-шав пулса иртнĕ хыççăн та, Вĕçелис пурăнакан урампа çӳреме пăрахмарĕ Антун. Çурт умĕнче чарăна-чарăна тăчĕ вăл, куçĕпе Вĕçелиса шырарĕ, чĕнсе кĕртессе, пĕр-пĕр сăмах каласса кĕтрĕ.

Вăхăт шурĕ те шурĕ. Юр ларчĕ, сивĕтрĕ, çил-тăман алхасрĕ те лăпланчĕ, урамсенче çутă кӳлленчĕксем йăлтăртатма пуçларĕç. Пĕр ирхине Çарăмсанти кăваккăн çиçсе выртакан пăр шатăртатса илчĕ те майĕпен, мăнаçлăн вырăнтан тапранчĕ. Таниле лартса хăварнă хурăн çине икĕ шăнкăрч килсе ларчĕç, çунат çапса шăхăра-шăхăра çурхи куна, хĕвеллĕ тĕнчене мухтаса юрлама пуçларĕç.

Яра куна фермăра ĕçлесе, хăй унченхи пек хытă ĕшеннине туймарĕ Вĕçелис. Çурхи çанталăк чĕрĕлĕх кӳчĕ ăна. Кайăк пек, кăвак тӳпере вĕçесси килчĕ унăн, хăй юррине юрласси килчĕ.

«Вăрçă вĕçленсе пырать, пирĕн çарсем Германире çапăçаççĕ, асаплă кунсем кĕçех иртеççĕ, хĕрсем», — тет председатель. «Мĕнле

пулĕç вĕсем, вăрçă хыççăнхи кунсем? – шухăшлать Вĕçелис. Хăйне хăй çапла хуравлать: – Тӳрех ырă-ырă пулса кайĕ, шăмшак ыратма пăрахĕ, апат-çимĕç тулăх пулĕ, çĕнĕ çуртсем лартса парĕç, çынсем тăраниччен çывăрма пуçлĕç, пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ пурăнĕç, таврара юрă-кĕвĕ илтĕнсе тăрĕ. Пулĕ-ши çавăн пек? Пулать! Вăрçăччен çаплаччĕ. Мĕншĕн хăваласа ятăмăр тăшмана? Телейлĕ пулас тесе. Тутă пурăнас тесе. Анчах кам тăвĕ-ха телейне? Арçынсем вăрçăра вилчĕç. Çĕнĕ çурт кам лартса парĕ пире? Эй, çук-ха çав, вăрçă пĕтсен те ырлăх пĕлĕтрен тӳрех йăтăнса анассăн туйăнмасть. Тĕрĕс, арçынлă хĕрарăмсем ура çине хăвăртрах çĕкленĕç. Вĕçелисăн вара... Эх, Мĕтри пĕчĕкрех. Мĕтри? Кам вăл Вĕçелисшăн? Ӳссе çитĕ те вĕçтерĕ хăй çулĕпе. Авланса ярĕ. Пурăн вара, Вĕçелис, тăлăххăн-туратăн. Мĕн ватăличчен, çĕре кĕриччен...»

Çапла, Антуна хăйĕнчен пистерме юрамасть Вĕçелисăн. Ăслă арçын, кăмăлĕ лайăх. Мĕн тери пулăшасшăн тăрăшать. Кашни хĕрарăмах çакăн пек çын тĕлне пулас çук. Эппин, Вĕçелисăн та шанчăка çухатма кирлĕ мар.

...Пĕр каçхине Мĕтри шкултан хаваслăн çиççе таврăннине аса илчĕ Вĕçелис. Хăй вăл кĕпе çума пикеннĕччĕ. Алăкран кĕнĕкĕменех Мĕтри пир сумкине Вĕçелиса тыттарчĕ.

–Уçса пăх-ха, инке, унта сана валли те темĕскер пур, – терĕ вăл, чеен кулкаласа.

–Ак тата, – йĕпе аллисене аркă вĕçĕпе сăтăркаларĕ Вĕçелис. – Мĕскер-ши?

Сумкăран хутпа чĕркенĕ çемçе япала туртса кăларчĕ те ăна салатма тытăнчĕ Вĕçелис. Хура пурçăн çинчи темиçе тĕслĕн ялтăртатакан тĕрĕсене курсанах тавçăрчĕ вăл: тутăр, шерепеллĕ пурçăн тутăр! Шутсăр савăнса ӳкнĕ Вĕçелис тутăра хăй умне тытса пăхрĕ, ним калама аптрарĕ.

–Ăçтан тупрăн? – тӳрех ыйтрĕ Мĕтрирен..

–Учитель пачĕ, – терĕ лешĕ. – Антон Кузьмич. Эпĕ шкултан таврăнаттăм. Вĕсем Микулай пиччепе таçтан лашапа килетчĕç. Района кайнă пуль. Вăт, чĕнсе илчĕ те: «Çакна инкӳне пар», – терĕ. Питĕ лайăх учитель Антон Кузьмич. Мĕн кăна пĕлмест пуль вăрçă çинчен! Йăлтах каласа парать.

Хĕпĕртерĕ те, шикленчĕ те çавăн чух Вĕçелис. Тутăра çыхса пăхмарĕ вăл, ăна тӳрех арчана тирпейлесе хучĕ.

Тепрехинче Мĕтри хăйĕн инкĕшне тăваткал шурă конверт тыттарчĕ.

–Кăна та Антон Кузьмич пачĕ, инке, – терĕ вал. – Вула-ха, ман пирки çырса яман-и сан патна?

Анчах хальхинче Мĕтри умĕнче ырăмарланса кайрĕ Вĕçелис.

– Çук, сан пирки мар, – терĕ вăл Мĕтрие. Вара çийĕнчех

урăх сăлтав тупрĕ. — Антон Кузьмича эпĕ районтан справка илсе килме хушнăччĕ, çавă вăл.

Кайран, Мĕтри урама тухсан тин Вĕçелис конверта уçрĕ. Уçрĕ те хăйне хăй ĕненмерĕ. Конверт ăшĕнче — хут укçасем. Шурă хут çине çырса хуни те пур: «Мĕтри пĕрмай çăпатапа çӳрет. Халĕ, йĕпе-сапара, шăнса пăсăлĕ. Атă илсе пар. Хăвăн çинчен те манса ан кай. Кирлĕ пулсан, систер, укçа-тенкĕрен татăк мар. Антон».

Анчах çак укçа-тенке тĕкĕнме те хăяймарĕ Вĕçелис. Ăна та арчана тутăрпа юнашар чиксе хучĕ...

— Асту, Вĕçелис, телейне çухататăн, — тет ăна Маруç.

— Йышăн, Вĕçелис, кам кирлĕ тата сана, — çине тăрса ӳкĕтлет Ярахви Веркки. — Ухсах тесе пăхса ан тăр. Пур-пĕрех арçын вăл. Манăн Ярахви те аманса таврăнчĕ те, пурпĕрех... Мĕнле савăнтарать ишшо!

—Пуласси çинчен шухăшла. Ара, тин çуралнă чечек кăна вĕтха эсĕ, авă, пĕву-сийӳ мĕнлерех илемлĕ, — куçкĕретех ăмсанса калать Питтăпай Санюкĕ.

— Типет, çунать саншăн Антун салтак, эс хăнк та тумастăн. Эх, хулăччĕ те çав сана! — вăрçать Вĕçелиса Микулай пичче.

—Инке, Антон Кузьмич пирĕн пата пурăнма куçтăр-и? Лайăх çын вăл шутсăр. Сана та, мана та питĕ кăмăллать. Пичче вырăнне пултăр, э? Куçтăр-и, инке? — пысăк çын пек куçран ăслăн пăхса ыйтать Мĕтри.

Çак сăмахсене аса илет те, пуçĕ çаврăнса каять Вĕçелисăн. Пĕр тесен, тĕрĕсех калаççĕ çынсем. Миçе арçын вăрçа тухса кайрĕ ялтан? Хăшĕ таврăнчĕ? Ярахви. Йывăр аманса, питне-куçне çĕмĕрттерсе. Миçен таврăнчĕç тата? Сахаллăн. Ытла нумай хура хут килсе тулчĕ Виççырмана. Кампа пурăнас, эппин, ялти хĕрарăмсен? Кама кĕтсе ларас, мĕне шанас?

...Тăвайккинче ем-ешĕл курăк тапса тухрĕ. Садри йывăççем папка çурчĕç, çĕмĕрт йывăççи йĕркеллĕн çулçă кăларма та ĕлкĕреймерĕ, хăйĕн кашни туратгинчен вĕтĕ-вĕтĕ симĕс шерепесем çакса ячĕ те пĕр ирхине шап-шурă шупăрпа пĕркенчĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ кунсем тăчĕç Виççырмара.

20

Ял хĕрринчи ту çинчен, хăйăр шăтăкĕ патĕнчен, пăхас пулсан, Виççырма ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Ял варрипе юпленсе юхакан Çарăмсан шывĕ çутă та тăрă. Тӳпере пĕр вĕçĕмсĕр тăри юрри илтĕнет. Епле чыхăнса каймасть ирĕке, уçă сывлăша, хĕвеле юратакан пĕлтĕрти пĕчĕк кайăк, епле ывăнмасть вăл çак илеме мухтамашкăн!

Хутран-ситрен ял урамĕсенче йытă вĕрет, автансем авăтаççĕ.

Лере, Ваçинкке çаранĕпе юнашар, Çатта тĕпекĕнче, Маруçăн тракторĕ пĕр чарăнмасăр тăрăлтатать. Çынпа çын калаçни, урапа кăлтăртатни, алăк-хапха уçăлса хупăнни пĕр самантлăха та лăпланмасть.

...Ĕне суса пĕтерчĕç дояркăсем, ĕнисене кĕтĕве ячĕç, çамрăк пăрусене апат çитерчĕç, тислĕк тасатрĕç. Унтан ферма заведующийĕ Ярахви пурне те хурал пӳртне кĕме хушрĕ. Вĕсем патне Архип Иванч Громов килнĕ-мĕн. Пĕрре пăхсах паллă: унченхи пек кăра та ывăннă сăнлă мар, савăнăçлă вăл паян. Кашнинпех кăмăллă калаçать, шӳт тавать. «Çанталăк илемлĕ тăни председателе те савăнтарать ĕнтĕ», — тесе ăнланчĕ Вĕçелис.

Ун чух, виçĕ çул каялла, Архип Иванч çинчен лайăх шухăшлани, ăна ăнланакан çын тесе хисеплени питĕ тӳрре килчĕ. Тĕрĕс, хытă ĕçлеттерчĕ вăл хĕрарăмсене, вăхăт-вăхăт куç хупма памарĕ, анчах çакăншăн председателе пĕри те ӳпкелешмерĕ. Пĕр-пĕр ĕçе пуçăниччен унăн пĕлтерĕшне ăнлантарма, çынсене хавхалантарма пултарать Архип Иванч. Кашни çынпа уйрăммăн калаçса, унăн нушисене пĕлме тăрăшать, вăхăтра пулăшу пама пикенет.

Çав кĕркунне, Мăрса Мишурĕпе пулса иртнĕ тамаша хыççăн, çывăхрах паллашнăччĕ унпа Вĕçелис. «Килте питĕ йывăр пулсан, — вутă-шанкă кирлĕ-и, тырă пĕтсе çитнĕ-и, — именсе ан тăр, тӳрех правление кил, епле пулсан та çураçтарăпăр», — терĕ председатель. Кайран та — ĕçре-тĕк ĕçре, урамра-тăк урамра — Вĕçелис мĕнле пурăнни çинчен ыйтса-пĕлсех тăчĕ Архип Иванч. Мĕн каламалли, Виççырма çыннисемшĕн чăн-чăн тăван пекех пулчĕ колхоз пуçлăхĕ. Тепри пулсан, çавăн пек вырăнта ларса, хăй çинчен шухăшлĕччĕ чи малтан, ку ун йышши пулмарĕ. Хваттерте ватă Хĕрхи аппа патĕнче пурăнать вăл, арăмне ытти хĕрарăмсемпе пĕрлех ĕçлеттерет, çăва тухсан вунвиççĕри ывăлне те колхоз ĕçне хăвалать. Çавăнпа виççырмасем «хамăр ял, хамăр çын» теççĕ Архип Иванч çинчен.

Çапла, савăнăçлă паян председатель. Хурал пӳртне пурте пухăнса. çитсен, сĕтел хушшинчен çĕкленчĕ те Архип Иванч пĕр вăхăт çынсем çине ăшшăн пăхса тăчĕ. Унтан тин хăйĕн сăмахне пуçларĕ.

—Ĕçсем ăнсах пыраççĕ, юлташсем, туссем, тăвансем, — терĕ вăл. — Çураки вĕçленчĕ. Лайăх вĕçленчĕ тес пулать. Пурте тăрăшса ĕçлерĕмĕр, тĕплĕн ĕçлерĕмĕр. Районтан тата çапла пĕлтерчĕç: патшалăха сĕт парассипе те малта пыратпăр эпир. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав каллех пирĕн алла куçать. Акă, мĕн чухлĕ савăнăç паян виççырмасен! Э, юлташсем? Мĕншĕн алă çупмастăр?

—Çупас, ара, мĕншĕн çупас мар! — чи малтан сиксе тăчĕ Ярахви Веркки, ал лаппи çине сурам пекки турĕ те хыттăн алă çупма пуçларĕ. Ун хыççăн ыттисем те хĕрсе кайсах алă çупрĕç.

—Паян ирхине эпир правлени ларăвĕ ирттертĕмĕр, — малалла калаçрĕ Архип Иванч. — Юлташсем, туссем, тăвансем! Урнă тăшмана çапса аркатма мĕн тери йывăр пулнине сире калама та кирлĕ мар. Эсир фронтри салтаксем пекех чăтăмлă та паттăр пултăр. Нăйкăшмарăр, пуç усмарăр. Куç хупмасăр, пуç çĕклемесĕр ĕçлерĕр. Çăмăл пулмарĕ. Çывăх çыннăрсене мĕн чухлĕ çухатрăр эсир, мĕн чухлĕ куççуль тăкрăр. Пĕлетĕп, паян-ыранах иртсе каяс çук сирĕн асапăр. Анчах, юлташсем, туссем, тăвансем, эпир — çĕнтертĕмĕр. Хамăрăн ачасем умĕнчи, килес ăрусем умĕнчи таса тивĕçе пурнăçларăмăр эпир. Хамăртан мĕн килнине пурне те турăмăр. Колхозри парти организацийĕ ячĕпе, правлени ячĕпе сире, хаклă юлташсем, пурне те чун-чĕререн тав тума ирĕк парсамăр. Чи хастаррисене вара правлени членĕсем колхоз ударникĕ ятне пама йышăнчĕç. Тепĕр виçĕ кунтан, вырсарникун, колхозра акатуй иртерме палăртрăмăр. Çавăн чух эпир вĕсене хаклă парнесем парса пĕтĕм халăх умĕнче чыс тăвăпăр. Малтанлăха сире ударниксен ячĕсене вуласа парам...

...Çĕкленӳллĕ кăмăлпа, йăл-йăл çиççе утрĕ Вĕçелис кăнтăрлахи апата. «Эй, çынсем, курăр, эпĕ вăл — колхоз ударници!» — тенĕн хĕмленчĕ унăн çамрăк та илĕртӳллĕ сăн-пичĕ. Килне çитсен, сад пахчине кĕрсе, хитрен хумханса ларакан темиçе чечек татса илчĕ вăл, пӳртре вĕсене тăм чӳлмеке вырнаçтарчĕ. Уяв чухнехи пек кăмăл-туйăм ăна пӳрте тата лайăхрах тирпейлеме хистерĕ. Вĕçелис кусарпа хыра-хыра урай çума пуçларĕ.

Çав вăхăтра шкултан Мĕтри килсе çитрĕ. Сумкине вырăн çине печĕ те, сĕтел çинчи чечексене курсан, тĕлĕннипе, тăп чарăнса тăчĕ вăл, унтан каллех алăк патнелле васкарĕ.

— Эс каллех васкатăн-и-ха? Лар, часах яшка антаратăп, — пӳлчĕ ăна Вĕçелис.

Мĕтри инкĕшĕ çине айăплăн пăхса илчĕ.

—Инке, мана унта кĕтеççĕ, вăрмана каятпăр, майра хуххи татма. Час килетпĕр. Кайран хамах антарса çиетĕп, — терĕ те Мĕтри Вĕçелис сăмах чĕнме ĕлкĕриччен пӳртрен тухса та вĕçтерчĕ.

Апатне вара пĕчченех çирĕ Вĕçелис. Хултуйи сассине сĕтел хушшинче ларнă чух илтрĕ вăл. Ура çине сиксе тăчĕ. Васкасах сĕтел çинчи чашăк-тирĕке пуçтарчĕ. Тĕкĕр умне чупса пырса, çӳçне-пуçне тирпейлерĕ. Хăйне хирĕç пăхса тăракан илемлĕ хĕрарăмăн çухалса кайнă сăн-пичĕ, унăн куçĕсенче тем кĕтни, тем пуласса шанни кăштах шиклентерчĕ Вĕçелиса, тĕкĕрти хĕрарăм çине вăл тӳррĕнрех, хăюллăнрах пăхма тăрăшрĕ.

Хултуйи сасси çывхарнăçемĕн çывхарчĕ.

Антун çил хапхана çĕклесе уçнине, картишне кĕрсе тăрсан пĕр самантлăха сывлăш çавăрса илнине таçта пытанса мар, кантăк умне пырса тăрсах сăнарĕ Вĕçелис. Уççăн пăхрĕ ун çине. Антунăн

çӳллĕ çамки, хура куç харши айне пытанă çивĕч куçĕ, тӳрĕ сăмси, путăклă янахĕ, сарлака хулпуççийĕ пуçласа тухса тăчĕç тейĕн Вĕçелис куçĕ умне. «Мĕн тери илемлĕ», — шухăшларĕ вăл савăнса, унтан хăйне хăй вăрçса илчĕ: «Çавна маларах асăрхамалла пулнă та çав...»

Куçсем тĕл пулчĕç. Вĕçелисăн хаваслă питне курсанах йăл кулса илчĕ Антун, Вĕçелис ăна кĕтсе илме хатĕрленчĕ, алăк патнелле утрĕ. Анчах салтак пӳрте кĕрсе тăрсан, ăшшăн сывлăх сунсан, Вĕçелис хăюлăхĕ таçта кайса кĕчĕ, Антуна ни сăмах хушма, ни вырăн тупса пама пĕлеймерĕ вăл. Юрать-ха, Антун хăй çухалса каймарĕ, картиш енчи чӳрече патне ларчĕ те хултуйине кутник çумне тайăнтарса хучĕ.

— Вăт епле ăшă кунсем çитрĕç, — терĕ вăл, çамки çинчи тарне алă тутрипе шăла-шăла.

— Чей лартса ярас-и? — ыйтрĕ Вĕçелис.

— Эй, тавах, тавах, тин çеç сĕтел хушшинчен, — хуравларĕ Антун.

— Эппин, мĕн тăвăпăр?

— Ларăпăр пĕр-пĕрин çине пăхса, — шӳтлерĕ Антун.

— Юрать, — хаш сывласа ярса килĕшрĕ Вĕçелис. — Хăшĕ малтан пăхать?

— Эпĕ, — терĕ Антун.

— Мĕншĕн эсĕ?

— Мĕншĕн тесен эс ман çине вăрттăн пăхса тăтăн, эпĕ вара сана тахçанах курман.

Питçăмартисем пĕçерсе кайнине туйса илчĕ те Вĕçелис Антун çине пăхма хăяймарĕ текех, пуçне усрĕ.

Антун хăюланчĕ, Вĕçелис çумне, сĕтел хушшине, пырса ларчĕ.

— Çитет, Василиса, чуна çунтарса, — терĕ вăл, хуллен Вĕçелис хулпуççийĕнчен сĕртĕнсе. — Куратăп, эсĕ те асапланатăн пĕччен. Мана та çăмăл мар. Пĕрле пулмалла пирĕн. Тархасшăн, лайăх мар ан шухăшла çак сăмахсем пирки. Халиччен пӳтсĕр çын пулман. Малашне те этем чысне ярас çук. Килĕш, Василиса, кала хăвăн татăклă сăмахна. Хăрах ура çукки... Пурăнаççĕ çынсем. Мĕн ватăличченех. Вăрман касма çӳреймĕп. Шкулта вара... Чăрмантармасть-ха халлĕхе...

— Ан калаç, кам сан уру çинчен шухăшланă, — пуçне çĕклемесĕр калаçрĕ Вĕçелис. — Чи хакли — чун ăшши, теççĕ халăхра.

— Тĕрĕс калаççĕ, — хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ Антун. — Килĕштерсе пурăнасса пĕлсех тăратăп. Сăмаха — ăшшине те, сиввине те — вăрттăн пытарса çӳреме хăнăхман. Эсĕ те çавах. Туятăп вĕт.

— Лайăх çын эсĕ, — шанса, ĕненсе пăхса илчĕ Вĕçелис юнашар ларакан Антун куçĕнчен. Самантлăха шухăша кайса, вăл

хăйĕн малашнехи пурнăçĕ мĕнлерех пулассине те уçăмлăн курчĕ. Çак ырă çынпа юнашар ниçан та япăх пулас çук ăна. Çулла Антун кашни ир ĕçе ăсатса ярĕ Вĕçелиса, киле юлсан, картишĕнче ĕçпе аппаланĕ, чутлĕ, каскалĕ, хуралтăсене йăлтах йĕркене кĕртсе çитерĕ, вăхăт çитсен, çĕнĕ çурт çавăрасси пирки шухăшлама пуçлĕ, укçа-тенкĕ пухĕ. Сивĕ сăмах каласа Вĕçелиса та, Мĕтрие те кӳрентерес çук Антун — чĕлхи çепĕç унăн, чунĕ чăнах та ăшă. Кĕркунне çитсен, Антун каллех шкула çӳреме тытăнĕ. Каçсерен тетрадьсем тĕрĕслесе ларĕ, вулĕ, çырĕ. Вĕçелис вăл ĕçленине вăрттăн пыра-пыра пăхĕ, ăна чăрмантарас мар тесе, пӳртре чĕрне вĕççĕн çӳрĕ. Арлама ларĕ, пир тĕртĕ. Эй, çук-çук, пир кĕпе тăхăнса çӳремĕ учитель. Вĕçелиса та килте тĕртнипе çуретмĕ... Тем каласан та, ытлă-çитлĕ, шăкăл-шăкăл пурнăç кĕтет Вĕçелиса. Çав пурнăç паян, халь, ак çак самантра Вĕçелис пĕртен-пĕр сăмах каланинчен — «юл» е «кай» тенинчен килет.

Антунăн «юл» тенине илтес килчĕ. Тĕрĕссипе, Вĕçелис паян çакăн пек кăмăллă пуласса кĕтменччĕ вăл. Татăклă калаçу шăп паян пулса иртессе те шутламанччĕ. Шкул ачисем ытти учительсемпе пĕрле вăрмана кайрĕç, Антуна питĕ кичем пулчĕ, Вĕçелис кăнтăрлахи апата таврăннине шкул кантăкĕнченех курчĕ вăл. Чуна пусарма кĕчĕ Вĕçелис патне. Ăна мĕнле те пулин пулăшу кирлĕ мар-ши терĕ. Ак мĕнле пулса тухрĕ. Виççырмара виçĕ çулталăк пурăннă Антун та хăйĕн малашнехи çул-йĕрĕ мĕнле пуласси тинех пĕлме пултарать. «Юл» тейинччĕ Вĕçелис. Хăшкăлчĕ, ывăнчĕ вăл пĕчченлĕхре. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вилнĕ арăмĕпе ывăлĕ (пĕлчĕ каярах Антун, çав тамăкран аран-аран хăтăлса тухнă Петро, арăмĕн шăллĕ, тĕплĕн çырса пĕлтерчĕ вĕсен юлашки саманчĕ çинчен) çав-çавах хытă ыраттарчĕç ун чĕрине, анчах ним тума та çук, пурнăçа çĕнĕрен пуçласа ямалла терĕ вăл. Телее, акă, ун çулĕ çинче ырăран та ырă, хаклăран та хаклă Вĕçелис тĕл пулчĕ. Антун та шухăшра курсах тăчĕ хăйĕн пуласлăхне, Вĕçелис унпа мĕн тери çепĕç, мĕн тери ăшă пуласса пĕр иккĕленмесĕр шанчĕ.

Çывăхрахчĕ вĕсем. Пĕр-пĕрин патне пĕр утăм тумалли кăна юлнăччĕ.

Çурхи хĕвел çĕр çине ăшшăн пăхрĕ, çӳл тӳпери тăрисем хăйсен юррине паçăрхи пекех ăмăртса шăрантарчĕç. Вĕçĕмсĕр илĕртӳллĕ кĕрен çутă тăчĕ Виççырма çийĕн. Çак çутăпа йăлтăртатса, авалхи Çарăмсан хăйĕн шывне хĕвеланăç еннелле лăпкăн хăваларĕ. Шурă тум тăхăннă çĕмĕрт йывăççисем çинче пыл хурчĕсем нăрлатса вĕçрĕç.

Катара, Ваçинкке çаранĕ тĕлĕнче, пĕр пĕчĕкçеççĕ пăнчă, пĕр пĕчĕкçеççĕ пĕлĕт татки çуралнине никам та асăрхамарĕ-ха. Вăл вара, çав пăнчă, çав пĕлĕт татки, çутçанталăк еккине пăхăнса,

пĕчĕккĕн кăна юлас темерĕ, вăл майĕпен сарăлчĕ, ӳсрĕ; унăн мĕлки малтан ик-виçĕ йывăç çине ӳкрĕ, унтан пĕтĕм çарана хупласа хучĕ; сывлăш сулхăнланчĕ, йывăç-курăк тăр-тăр çӳçенсе илчĕ, çулçă чăштăртатни ерипен вăйлă шава куçрĕ; хура пĕлĕт пăтранма-йăвăрланма пуçларĕ, вăрман çинче, такам хĕрлĕ хĕçпе хăватлăн сулса янă пек, çивĕчĕ вут ялтăртатрĕ те, тавралăх шатăртатса, кисренсе илчĕ. Çарăмсанăн икĕ енĕпе тăсăлакан Виççырма ялĕн пӳрчĕсем, хур ами хăйĕн чĕпписене çунат айне хупланă пек, сасартăк пусăрăнса ларнăн, çак ахăрсамана йĕркеллĕ иртсе каясса пăлханса кĕтнĕн туйанчĕ.

Çил вăйланчĕ. Малтан пĕр чăрмавсăр анлă хир тăрăх чупрĕ вăл, Виççырмара ун çулне пӳртсемпе хуралтăсем пӳлсе хучĕç, çил çакăнпа килĕшесшĕн пулмарĕ, мĕн тӳр килнĕ çавна хăйĕн пин-пин аллипе тустарчĕ, тăпăлтарчĕ, сӳрĕ, пĕр вырăнта кăлтăрмач пек çаврăнса, пĕлĕте тусан, çулçă, улăм тата ытти вак-тĕвек пăраласа кăларчĕ.

Кантăка шултра çумăр пĕрчисем тӳнккеме пуçларĕç.

Тĕнче çакнашкал сасартăк пăсăлса кайни хăратрĕ Вĕçелиса. Ырă та савăк туйăма шикленӳ килсе хупларĕ, темшĕн-çке хăй ытла вăйсăр пулнине çивĕччĕн туйса илчĕ вăл, хӳтлĕх шыраса, айăплăн Антун çине пăхрĕ, анчах лешĕ, тарăн шухăша путнăскер, хĕрарăм пăлхавне асăрхаймарĕ. Вĕçелис вара, ним тума аптраса, пӳрт алăкне тĕртсе уçрĕ те пусма çине вирхĕнсе тухрĕ, витрелетсе çăвакан çумăр айне тăчĕ. Çапрĕ, хĕнерĕ, лăскарĕ ăна сивĕ çумăр. Туххăмрах лачкам шыв пулса тăнă тумтирĕ ӳт çумне çыпăçса чуна çӳçентерчĕ, анчах çак туйăм нумая пымарĕ, тепĕр самантран хăйне каллех ăшă пулса кайнине туйрĕ хĕрарăм. Çумăр шавларĕ, çине-çине аслати кăлтăртатрĕ — вĕçĕмсĕр кĕрлерĕ тĕнче, вĕçĕмсĕр явăнчĕ, пăтранчĕ.

Туйăнчĕ кăна-ши е уçă саслă пĕр арçын ача, çак кĕрлеве çĕнтерсе, чăнахах кăшкăрса ячĕ-ши, — «Салтаксем килеççĕ!» тенине илтрĕ те Вĕçелис хăва вулли пек яшт тӳрленсе тăчĕ, ним ăнланмасăр унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ, хапха патне тапса сикрĕ, ăна васкаса уçрĕ те çумăр айĕнче çухалчĕ.

Вĕçелиспа ĕмĕрлĕхех сывпуллашнине туйса, кантăк умĕнче тăракан Антун салхуллăн пуçне усрĕ. Вĕçелис пӳртĕнче юлма пултараймарĕ вăл текех, хултуйине шаклаттарса урама тухрĕ, çӳлелле тинкерчĕ, — хура пĕлĕт ăçтан та пулин уçăлса килни курăнмарĕ, утрĕ вара Антун — асаплăн, тертлĕн, йывăррăн. Мĕн кĕтсе тăрать ăна малта, мĕн савăнтарать, мĕн хурлантарать — çакă халĕ те паллă мар, çумăр кăна хăяккăн вĕтелет унăн питкуçне. Урамра, шӳсе кайнă çĕр çинче, Антун кашни утăм тумассерен, хултуйипе йывăç ура йĕрĕсем тăрса юлчĕç, çаврака хура пичет лартса пынă тейĕн аманнă салтак хăй хыççăн. Вăрçа,

ирсĕр фашизма пĕтĕм ăсĕпе, пĕтĕм чунĕпе курайманнине çирĕплетсе лартнă хура пичет.

...Чупрĕ Вĕçелис. Йĕпресе кайнă çĕр çине темиçе хутчен те шăва-шăва ӳкрĕ вăл, алли-ури, пĕтĕм кĕлетки пылчăкпа вараланчĕ, анчах çавна асăрхамарĕ хĕрарăм, шав малалла ыткăнчĕ. «Çак çумăр хăçан та пулсан чарăнмаллах, чарăнмасан та, умри сăн мĕнпе те пулин улшăнмалла, чалăшшăн ӳкекен çумăр тумламĕсем вырăнне пĕртен-пĕр çын пит-куçĕ тухса тăмалла. Ăçта вăл, çав пит-куç?» Уй хапхинчен тухрĕ Вĕçелис, малалла чупрĕ, палланă çын сăн-пичĕ курăнмарĕ те курăнмарĕ. «Эппин, маларах, тата леререх пулма кирлĕ вăл. Пулмаллах!» Хăлхи çивĕч Вĕçелисăн, уçă саслă ача сăмахĕсене питĕ лайăх илтрĕ вăл. «Çул çинчех пулмалла салтаксем. Çитеççех, пурпĕр çитеççĕ. Апла-тăк, вăрман хĕррине чупас, çывăх сăн-пите чи малтан никам та мар, Вĕçелис хăй куртăр. Пĕрре çеç пăхса илесчĕ ун çине, эх, пĕрре çеç пăхса илесчĕ!»

Çумăр мĕнле килнĕ, çавăн пекех сасартăк чарăнчĕ. Вăрманта халтан кайнă хĕрарăм йĕпе тунката курчĕ те, хаш сывласа, ун çине ларчĕ. Çӳçне, кĕпе аркисене пăрчĕ.

Кăтрашка пĕлĕтсене сире-сире, хĕвел пайăркисем сăрхăнса тухрĕç. Тавралăх шăпланчĕ. Чĕри сиксе тухасла кăлт-кăлт тапнипе çеç илтсе ларчĕ Вĕçелис. Вăхăтлăха хăй çакăнта мĕншĕн килнине те манса кайрĕ вăл, куçĕ кăна, сӳрĕккĕн пулин те, авкаланса тăсăлакан çутă çул çине пăхрĕ.

Шухăшĕ çухалчĕ, туйăмĕсем пĕтрĕç, курма-илтме пăрахрĕ хĕрарăм. Чылайччен ларчĕ çапла, чылайччен асăрхамарĕ çут тĕнчене.

Хĕвел вара ăшăтрĕ те ăшăтрĕ ун çурăмне. Такам пĕрмай чăрмантарнине туйса, хăй сисмесĕрех темиçе хутчен те çав ăшша аллипе сире-сире хăвалама пикенчĕ Вĕçелис, анчах чăрмав пĕтмерĕ, вăйланса пычĕ, хĕвел ĕнтĕ унăн çурăмне кăна мар, çӳçне-пуçне те, пĕтĕм кĕлеткине те пĕçерте пуçларĕ, — хĕрарăмăн ирĕксĕрех тунката çинчен тăма тиврĕ. Чи малтан ун хăлхине çулçăсем çинчен патлата-патлата тумла ӳкни, унтан çывăхрах пĕр кайăк шăхăрса яни пырса кĕчĕ. Хуллен пуçне çĕклерĕ Вĕçелис. Куçĕ умне Иванпа сывпуллашнă вырăн тухса тачĕ. Лавĕ тахçанах курăнми пулнă ĕнтĕ. Анчах тăванран та тăван сасă çаплах уççăн янăрать, асамлă вăрман çав сасса тата хăватлăнрах пĕтĕм таса тĕнчепе салатать: «Пурăн, Вĕçе-ли- ис! Пу-у-ур-ăн! Пу-у-урăн!»

Малалла усăннă çӳçне хыçалалла ывăтасшăнччĕ Вĕçелис, анчах алли çинчи пĕр пайăрка çине пăхрĕ те шартах сикрĕ: çӳçĕ кăн-кăвак, çӳçĕ хăйĕн мар иккен.

ПĔРТЕН-ПĔРРЕ

Повесть

Эккей, мĕнле асăрхаман çакна маларах: пуç тăрринче – вĕçĕхĕррисĕр çап-çаврака тӳпе йăлтăртатать, кунтан, ачалăха иртернĕ Çаврака сăртран, ал тупанĕ çинчи пек курăнакан мĕнпур тăван çĕр çап-çавракан тăсăлать. Пĕр шутласан, çĕршер кукăрмакăр туса, çаврăна-çаврăна юхакан Çарăмсан та çаврака çулпах чуптарать иккен: Самар облаçĕнчи Клевлĕ таврашĕнче пуçланать те вăл, Самар облаçĕнчех аслă Атăла юхса кĕрет.

Кашни чĕрĕ чунăн çулĕ те çаврака. Авă, пĕлĕтре хура хăмăр хурчка явăнать, сарлакан-сарлакан тăсса ярать те хăйĕн икĕ çунаттине, ярăнать, ярăнать вара пысăк та канлĕ çаврăмсемпе – çулнейĕрне кĕскетме урăх меслет пĕлмест те, шырамасть те тейĕн.

Çур иртет те çу çитет, кĕр пулать те хĕл ларать – çап-çаврака çулпа чуптарать аслă Çутçанталăк.

Çын çуралать, яшлăха çитет, ватăлать те çĕре кĕрет, анчах хăй хыççăн çĕнĕ ăру хăварать те – тăсăлать вара пурнăç çаврăмăн-çаврăмăн.

Кур-ха эсĕ, çын вилсен те ун тăприне çавракан витсе хăварать-çке этем тени! Хăçан тата кам ăс панă-ши ăна çавăн пек тума? Аслă Çутçанталăк! Этем, унăн уйрăлми пĕр пайĕ пулса, çакă çутă тĕнчепе кăвапаран çыхăннăскер, Аслă саккуна ниепле те пăсма пултарайман иккен. Апла-тăк этемĕн пурнăçĕ те, ăна ăслă та тăрлавлă пурăнса ирттерсен, тӳпе пек, çĕр пек, хĕвел пек, уйăх пек çап-çаврака пулмалла.

...Пуçне çакăн пек шухăшсем ăнсăртран пырса кĕнĕрен малтанлăха савăнчĕ те, тĕлĕнчĕ те Эриван. Август пуçламăшĕн канлĕхлĕ хĕвелĕ, кăшт çеç сисĕнекен çилпе çатăлтатакан хурăн çулçисем, пысăк пĕвен çутă йăлтăртатăвĕ, лере, çыран леш енче, çăра симĕс тăсăлакан анлă уй-хирпе вăрман тăрăхĕсем унăн чунчĕрине калама çук ырлăхлă йăпатупа тултарчĕç, ешĕл тӳшек пек туйăнакан çак ăшă çерем çинче урăх нимĕн çинчен те шухăшламасăр ытларах та ытларах выртасси килчĕ Эриванăн. Анчах çăтмахри пек ырлăх кăтăшне путма тем чăрмантарчĕ те чăрмантарчĕ ăна. Кăкăрĕнче темле çивĕч япала чике-чике илнине, пырне йывăр чăмакка пыра-пыра капланнине сирсе яма пултараймарĕ вăл, вара майĕпен куçне уçрĕ те мĕнпур тавралăх йĕпе тĕтрелĕх витĕр курăннине туйса илчĕ, тепĕр самантран, унăн питçăмартине пĕçертсе, тумлам хыççăн тумлам юхса анчĕ. «Çĕр çаврака, – хай çеç илтмелле пăшăлтатрĕ Эриван, – этем вилтăпри çаврака... Ак çак Çаврака сăрт тата?... Таҫан Улăп тăпри теместчĕç-и ăна? Тĕрĕсех... Çапла калатчĕç. Мантăм пулать, эппин? Вĕсен шăммисем çинче çутçанталăк ырлăхĕпе киленсе выртатăп пулать?

Анчах та çерем çинчен йăпăр-япăр сиксе тăма пултаймарĕ-ха вăл, Улăп тăприне кăкăрĕпе хупласа, аллисене ик еннелле сарса ячĕ, шалта, çак тăпра ăшĕнче, мĕн пулса иртнине пĕлесшĕн ăнтăлнă пек, сылтăм хăлхипе çĕр çумне лапчăнса выртрĕ. Туйăнчĕ кăна-ши Эривана е самантлăха тĕлĕрсе кайрĕ-ши вăл, анчах çакна питĕ уçăмлăн астуса юлчĕ вăл: унта, аялта, паян кун та пурнăçри пекех хĕрӳллĕ шăв-шав тăрать; çав шăв-шавра, çав курăнура атте-асаттесен, анне-асаннесен, кукаçей-кукамайсен шăкăлшакăл калаçăвĕ те, вĕсен ытарма çук хӳхĕм юрри-кĕвви те, савăнăçĕ-юратăвĕ те, тарăхăвĕ-ятлаçăвĕ те, хуйхи-суйхи те, çапăçăвĕ-кĕрешĕвĕ те — пурте пур иккен. Ăнсăртран килнĕ çак шухăшран тепĕр хут шарт сиксе илчĕ те Эриван, куçне уçса, каллех тавралăха сăнарĕ. Хурăнсем пăшăлтатаççĕ, курăксем çилпе тайăлаççĕ, çĕр тăрăх тĕрлĕ хурт-кăпшанкă кĕшĕлтетет, çӳлте, тĕрлĕ сасă парса, кайăк-кĕшĕк вĕçет. Акă вăл, аслă çутçанталăкăн хăватлă ылмашăну саккунĕ — пĕри ватăлать те тепри çитĕнет, пĕри тĕп пулать те тепри çуралать. Нимĕн лартма та юраман вĕтха çак Улăп тăпри çине, анчах курăк та, темĕнле йывăç та шăтса тухнă унта ĕмĕрсен тăршшĕнче: юман та, хурăн та, çăка та, хурама та, шĕшкĕ те, катăркас та. Пĕри тĕреклĕ те яштака, тепри кукăр-макăр та йăмшак, виççĕмĕшĕ çинçе те имшер. Кайăкĕсем тата! Кунта хăлат та хурчка, карăш та ăсан, саркайăк та çерçи — пурте юнашарах.

Вилнĕ хыççăн мĕне çавранĕ-ши Эриван?

Тӳпере хăйĕн çаврака çулĕпе çав-çавах хура хăмăр хурчка васкамасăр вĕçет, ăçта та пулин аманнă, вăйсăр е вилĕ чун тĕлне пулмăп-ши тесе, тавралăха тĕпчет, вуншар та çĕршер кукăр-макăр туса, çаврăна-çаврăна Çарăмсан юхать, кăшт çеç сисĕнекен çилпе çулçă пăшăлтатать.

Ĕмĕрхи кĕвĕ, ĕмĕрхи юрă, ĕмĕрхи пурнăç малалла тăсăлать.

1

Амăшĕпе ĕмĕрлĕхех сывпуллашнă хыççăн тăван килне тӳрех пушă хăварма пултараймарĕ Эриван. Çывăхран та çывăх çурт чӳречисене хăма çапса питĕрме хал çитереймерĕ вăл — ку ĕнтĕ ун пурнăçĕнчи чи тискер те чи чунсăр ĕç пулнă пулĕччĕ, пăтасене вăл ашшĕ-амăш пӳртне мар, хăйĕн тăвăлса кӳтсе çитнĕ чĕрине çапса кĕртĕччĕ те юлнă пек ĕмĕрне никам тӳсейми асапра ирттерĕччĕ. Çак виçĕ кун хушшинче ялти мĕнпур çын — тăван-пĕтен те, туспĕлĕш те, пач палламан-туман çамрăксем те — шăпах çак ыйтăва хуравлама ыйтса куçран тинкернĕ пек туйанчĕ Эривана: мĕн пулĕ малашне, хулара сан хăвăн çемье пур, чаплă хватгерте пурăнатăн теççĕ, хупма е сутма шутлатан-и аçу-аннӳ çуртне? Мĕн тăвăн?..

Пĕрремĕш кун та, çăва çинчен таврăннă чух, хăйĕн сăмахне епле те пулин каяраха хăварас тесе, ури айĕнчи пылчăка халăхпа пĕрле çăрса, пĕр чĕнмесĕр утрĕ вăл ял варринчи тăлăха тăрса юлнă, çавна пула пушшех те тĕксĕмленсе кайнă пек туйăнакан тăван çурт патнелле. Пуçĕ те, чĕри те пуш-пушă пулнăран, нимĕнле уçăмлă шухăш та тупăнмарĕ унăн. Тăнлавра вара, пушар чанĕ пек, пуç мимине пăраласа, çак ыйту çеç янăрарĕ: «Мĕн тăвăн - хупăн-и е сутăн-и аçу-аннӳ çуртне?»

Тĕрĕснех калас-тăк, хăçан та пулин çакнашкал самант килсе тухасса пач та кĕтмен марччĕ-ха Эриван. Ывăлĕ-хĕрĕ ашшĕ-амăшĕпе ĕмĕрлĕхех сывпуллашни çинчен, тăван кил вучахĕ яланлăхах сӳнсе ларни çинчен е тата пĕртăван ачасем ваттисенчен юлнă тупрана пайлассишĕн вăрçса-харкашса кайни çинчен повеç-романсенче те вуланăччĕ вăл, кинофильмсем те сахал мар курнăччĕ. Анчах ку вăл çыравçăсем шутласа кăларнă тĕнчери пек туйăнатчĕ, чăн пурнăçра вара кунашкал япала пулас пулсан та, урăх çĕрте, Эриванран аякра, пулас пекчĕ. Çапах та çичĕ çул каялла, чире кайнă ашшĕ вилсен, ăна пытарма та çитеймен Эриван çăва çине пĕр-пĕччен кайса ларсан, паянхи пек лару-тăру пурпĕрех пĕрре пуласса уçăмлăнах ăнланчĕ вăл. Çапла, ăнланнăччĕ. Анчах çук-мĕн, тарăннăн витереймерĕ курăнать амăшĕн куççулĕ ывăлĕн чĕрине. «Тĕреклĕ çӳрет-ха, ăнлă-пуçлă каласать, вилĕм чирĕ ун патне паян-ыран килсе çулăхас çук», — тесе хăйне хăй лăплантарчĕ те вăл, тăван килтен тухса кайсан, пĕччен юлнă амăшĕ патне хутран-ситрен укçа-тенкĕ яркаларĕ, çырусем çыркаларĕ, пурăна киле вара çак тивĕçе пурнăçлама та майĕпен манса пычĕ.

...Çăва çинчен таврăнсан, лăпкă пумилкке пулса иртрĕ. Арçынсем, шăтăк чавма е тупăкпа хĕрес тума пулăшнă вăйпиттисем, сĕтел хушшинче нумай лармарĕç, те чылайраппа курман Эривантан ютшăнчĕç, те çуллахи кун тесе, хăйсен килĕсене вак-тĕвек ĕçсем тума васкарĕç — виçшер черкке çуттине ĕçсе ăна-кăна çырталарĕç те, Эривана алă памасăрах сывпуллашса, пурте пĕр харăс тенĕ пекех тухса кайрĕç. Килте кӳршĕллĕ пурăнакан ик-виç карчăкпа Кулине аппа — амăшĕпе пĕртăван хĕрĕ кăна тăрса юлчĕç. Унччен шăпăртах ларнă карчăксем, акă, пирĕн самант та çитрĕ тенĕ пек (пĕрер черкке кагор сыпни те пулăшрĕ пулĕ çав), чĕрĕлсе-чĕрĕлсе кайрĕç те, сăмах хыççăн сăмах ваклама пуçларĕç.

— Турă çырнинчен иртме çук иккен, çĕр çулах çитет пулĕ тенĕччĕ Укруç аппана. Ара, йĕс пек хытса çирĕпленсе кайнăччĕ те... — терĕ Çинави кинемей.

— Пурăнатчĕ те пуль, тем тесен те чĕри вăйлă пулнă ун. Пĕчченлĕхе тӳсеймерĕ вăл, — купăста кавленĕ май сăмах хушрĕ Уксах Крахвине.

— Пĕчченлĕхĕн ырри çук ĕнтĕ, — терĕ Варушка карчăк. — Хамах илем-ха, акă. Пĕр татăк çăкăр анмасть вĕт яри кунĕпе. Кӳршĕсем сĕт те, турăх та илсе пыраççĕ вара, çи-ха, Варушка инке, çи-ха, çĕртсе ан яр паха апата теççĕ. Анмасть пулсан, мĕн тăвас-ха ман? Хăймине пухса çу уçлатăп та, çавна хулари хĕрĕм илсе каять вара. Çавăн пек вăл пĕчченлĕх.

— Эп те калаттăм, çи-ха, Укруç аппа, çи-ха теттĕм. Çиес килмест тетчĕ те çӳретчĕ вара чӳречерен пăха-пăха. Ялан чӳречерен пăхатчĕ. Ывăлне кĕтетчĕ пуль те çав, — куçне тутăр вĕçĕпе шăлса илчĕ Кулине аппа.

— Ара, мĕнле кĕтес мар-ха пĕртен-пĕр ывăла. Асапланса çурат та ăна, нушаланса ӳстер-ӳстер те... — Крахвине аппа тӳрремĕнех хăйне айăпланине тӳрех тавçăрса илчĕ Эриван.

— Эх, тĕнчи çапла кайрĕ-çке, тĕнчи çапла кайрĕ. Улюка та миçе хут каларăм эпĕ, хĕрĕм, терĕм, хулара унта никам та янтине хатĕрлесе хуман терĕм, куллен ĕçе каймалла та каçсерен лавккара черет тăмалла, çамрăк ĕмĕрӳ иртсе кайнине те сиссе юлаймăн, терĕм. Çук, итлемерĕ çав мăнтарăн хĕрачи, — ассăн сывларĕ Варушка карчăк.

— Улюк вăл, ман хăраххăм, ĕмĕр ирттерме пĕр-пĕр арçын тупăп терĕ пуль те, лаша пек ĕçлекене ăна каччă пăхмасть çав. Арçынсем вĕсем янкăлтатса, сăрланса çӳрекенсене хăвăртрах асăрхаççĕ, — терĕ Кулине аппа.

— Эй, сӳтĕлсе ан лар-ха эс, Кулине, сан чĕлхӳ çинче ялан пĕр сăмах вара, хăлхана çĕртрĕн ĕнтĕ çав сăмахупа,- чĕрре кĕчĕ Варушка карчăк. — Ĕçлĕ çыннăн ăçтан арçын шухăшĕ пултăр-ха?

— Эс ху ĕçлемен-тĕр ĕнтĕ. Улюка мĕнле çуратрăн-ха, эппин? — парăнмарĕ Кулине аппа.

Хĕрарăмсем татах темтепĕр калаçрĕç сĕтел хушшинче, анчах та вĕсен сăмахĕсем Эриван хăлхине кĕреймесĕрех вĕçсе иртрĕç, вăл хăй вара, сĕтел çине икĕ аллипе те чавсаланнăскер, малти кĕтесе вырнаçтарнă Тур амăш куçĕнчен пăхса, тарăн шухăша путрĕ. Ку çуртра халиччен мĕн-мĕн пулса иртнине çак кивелсе, хуралса кайнă, ĕмĕр-ĕмĕрĕпех куççуль кăларса ларакан Тур амăшĕ çеç тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе тăнăн туйăнчĕ Эривана... Кивĕ, питĕ кивĕ турăш пулмалла вăл, мĕншĕн тесен — тин çеç аса илчĕ ывăлĕ амăш каланине — тахçан, граждан вăрçи кĕрлесе иртсен, çак çурта çĕнĕ мăшăр, Эриванăн ашшĕпе амăшĕ, венчетрен килсе кĕнĕ те, ваттисем ăна çак турăша чуптутарса пил панă. Тахçан авал вара ваттисем хăйсем те пĕрлехи пурнăçа çак турăша чуптунинчен пуçланă имĕш. Эппин, çĕр е икçĕр çул маларах ăсталанă çак çеттуй анне сăнне пĕр-пĕр художник. Авă мĕншĕн ĕмĕрлĕхех пурăнать иккен вĕсен килĕнче турă сăнарĕ. Тĕне ĕненнĕ-и, ĕненмен-и Эриван несĕлĕсем, çапах та искусство произ-

веденине — куççуль тăкса ларакан хӳхĕм Марийăна — вĕсен тăван вучаха, телейпе шанчăка упракан талисман вырăнне хурса хаклана.

«Аве, Мария... Халь мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн санпа? — шухăшларĕ Эриван. — Искусство музейне кайса парас-и, пасарта сутса укçаллă пулас-и? Хулари хваттере кайса çакас-и? Чăн та, ку вăл хальхи вăхăтра модăна кĕрсе кайнă пулмалла. Кивĕ турăшсем пух, ĕлĕкхи тухъясемпе шӳлкемесем тупма пултар, эсĕ тӳрех «пысăк культурăллă», «пуян чун-чĕреллĕ çын пулса тăратăн...»

«Мĕнех вара? — тейĕччĕ арăмĕ Виолетта, енчен те вăл халĕ Эриванпа пĕрле пулас пулсан. — Эсĕ пĕрремĕш çурт хупатăн-и ялта? Кӳршӳсем те ялтах пурăнаççĕ-и? Мĕн эсĕ йĕрмĕшетĕн те йĕрмĕшетĕн амăшĕнчен хăпайми çумçакки ача пек? Нимĕртен тунă-и сан чĕрӳне? Пăрах эс хăвăн йывăр шухăшусене. Хăп вĕсенчен. Хăп та ирĕккĕн сывлама пуçла...»

«Тĕрĕсех калать арăму, — тейĕччĕç ăна хулари тус-пĕлĕшĕсем. — Пирĕн ĕмĕрте кашни пур-çука çĕр тĕнĕлĕ вырăнне хума кирлĕ мар, çынсем пек пурăнмалла, кашни кăткăс ыйтăва, пин те пĕр меслет тупса, ансатлатма пĕлмелле. Вара сана инфаркт та, шалкăм та çапса ӳкереймĕ...»

«Анчах, — шухăшларĕ Эриван, — ман чĕрене нимĕртен те, тимĕртен те туман. Çав чĕрене мана атте-анне панă. Çак ялта, çак çуртра. Панă кăна та мар-ха, ун хыççăн мĕн чухлĕ çăрнă-ха, мĕн чухлĕ унанă-ха тата! Çав чĕрере çынлăх, ăнланулăх пултăр, кирлĕ чухне вăл тарăхма та, макăрма та пултартăр тенĕ пуль. Эх, çакăн çинчен кăшт маларах шухăшласа пăхнă пулсан...»

...Çак шухăшсенчен Эривана Çинави кинемей татрĕ.

— Эй, çав вĕреннĕ çынсемпе, — терĕ вăл, Эриван хулпуççийĕнчен темиçе хут та тĕксе, — ялан шухăшлă вĕсем, ялан шухăшлă. Халь шухăшлани мĕн усси пур-ха ĕнтĕ, унччен шухăшламалла пулнă, ывăлăм, унччен шухăшламалла пулнă.

— Тавах сире... пулăшнăшăн, — ним калама аптраса, сăмах хушрĕ Эриван, карчăксем тухса кайма пуçтарăннине туйса.

— Ун пек ан кала, ачам, — ăс вĕрентрĕ ăна Уксах Крахвине. — Виле пытарнăшан тав тума хушман. Тепре куриччен тесе кала пĕрех хут.

— Тепре куриччен... — тӳрех килĕшрĕ Эриван.

Кайрĕç. Эриван амашĕпе пĕрле ӳснĕ, пĕрле выляннă, пĕрле пурнăç тунă, тертленнĕ-нушаланнă çынсем кайрĕç. Сĕтел çинчен пуçтарнă, урайне çуса кайнă, акă ĕнтĕ амăшĕн шăрши те тăрса юлмарĕ тăван килте. Астăвать-ха Эриван çынсем каланине, çичĕ çул каярах, ашшĕ çакăн пекех ăнсăртран вилсе кайсан, амăшĕ сĕтел çинчен пуçтарма та, урайне сĕрсе кайма та хушман имĕш, вăл хăйĕн савнă упăшкин, аллă çул ытла пĕр çăвартан

пурăннă çывăх çыннин шăрши те пулин тăруках сĕвĕрĕлсе ан пĕттĕр тенĕ пулас. Эриван, акă, кил-çурт тирпейлекен хĕрарăмсене пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Чĕнетчĕ те пуль, анчах лешсем ĕç пуçличчен хăй сăмахне калама ĕлкĕреймерĕ.

Çапла, чылай япалана вăхăтра тума ĕлкĕреймерĕ вăл.

Тĕнче — çаврака. Хăйĕн несĕлĕнчи миçе ăрăва, миçе çаврăма астăватчĕç-ши ашшĕпе амашĕ? — çавна та ыйтса пĕлеймерĕ Эриван. Кăштах сыпсан, ашшĕ хăйĕн çамрăклăхне, граждан вăрçинче çӳренине аса илме юрататчĕ. Ăçта çӳренĕ-ши, ăçта çапăçнăши, кампа пĕрле пулнă-ши вăл унта? Иртнĕ вăрçăран йывăр аманса килнĕччĕ, кăкăрĕ çинче хăйĕн тем чухлĕ медаль те орденччĕ. Мĕншĕн, ăçти çапаçусемшĕн панăччĕ-ши вĕсене хĕрĕхрен иртнĕ салтака? Ăçта аманнăччĕ-ши ашшĕ?

Амăшĕ шутсăр нумай юрă пĕлетчĕ, юррисем тата авалтан-авалтан, ăруран ăрăва чи хаклă пурлăх пек куçса пынисемччĕ. Халĕ, хула çыннисем çав авалхи фольклор умĕнче çӳçенсе те чĕтресе тăнă вăхăтра, мĕн тери ырă пулмаллаччĕ Эриваншăн хăйĕн хваттерĕнче амăшĕн юрри янраса кайсан. Магнитофон та хатĕрлесе хунăччĕ вăл, çĕнĕ кассетăсем те туяннăччĕ, çырса илем-ха анне юррисене тенĕччĕ, — ĕлкĕреймерĕ.

Халĕ ĕнтĕ çак йăнăша нимĕнле майпа та, нимĕнле хакпа та тӳрлетеймĕн. Кама кирлĕ паян кая юлнă куççуль, кама кирлĕ кая юлнă ӳкĕнӳ? Тĕрĕсех каларĕ Çинахви кинемей — унччен шухăшламалла пулнă иккен Эриванăн.

Хăйне валли вырăн тупаймасăр кĕтесрен кĕтесе, алăк патĕнчен тĕпелелле, тĕпелтен алăк патнелле утрĕ те утрĕ вăл. Куçĕпе пӳртри мĕнпур япалана хыпашласа тухрĕ. Акă, мачча каштине тимĕрçĕре тутарнă хулăн çекĕл çапса лартнă. Мĕншĕнни паллă: çак çекĕл сăпка çакмалли пĕкечене вырнаçтарма кирлĕ пулнă. Ку çуртра урăх ача-пăча пулманнине шута илес-тĕк, тӳрех ăнланмалла: Эриван чуччу сикнĕ çав сăпкара. Акă тата кивелсе те хуралса кайнă, кăшт тĕксенех хăйăлтатса тăракан пулнă йывăç кутник, ашшĕпе амăшĕ хушшинче пĕчĕк Эриван выртнă унта мăшăлтатса. Каярах, шкулта вĕреннĕ чухне те, çитĕнсе çитсен те унтах çывăратчĕ вăл. Çемçех мар пулин те, канлĕччĕ çав йывăç кутник çинче. Чи хитре тĕлĕксене шăп çакăнта курнă Эриван. Акă, пĕчĕкçеç кĕнеке çӳлĕкĕ. Ашшĕ вĕрентсе тăнипе Эриван хăех ăсталанăччĕ ăна тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухне. Мухтанăччĕ ашшĕ ывăлĕн аллисем вăр-вар та çыпăçуллă пулнишĕн. Çавăн хыççăн вăл ăна пуртăпа, пăчкă-савапа ĕçлеме хавхалантарсах тăратчĕ.

Халĕ ĕнтĕ, акă, çакă пĕтĕмпех нихçан тавăрайми иртнĕ пурнăçра. Чун тĕпĕнчен кăшкăрса йыхăр паян çав пурнăçа — каялла çак çурта ахрăм та çитес çук.

Ашшĕ-амăшĕн савăнăçне-хурлăхне вĕсен пĕртен-пĕр ачи те пулин пĕлсе юлаймарĕ пулсан, мĕнле йĕр хăварчĕç-ха ĕнтĕ ватăсем хăйсен пурнăçĕнче? Вĕсем çинчен мĕн каласа кăтартĕ-ха Эриван хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлне?

Тепĕр тесен, каласа кăтартнин усси пулас та çук. Ывăлĕ кăçал çеç вунă класс пĕтернĕ Эдик, чăвашла виç сăмах та пĕлеймен ханттар, ашшĕн кичем асаилĕвĕсене итлесе вăхăт ирттерес çуках. Асаилӳ те, аса илекене итлеме пĕлни те чун тулăх та сарлака пулнинчен килет, хăйĕн пĕртен-пĕр ачине вара çавăн пек пахалăхсем параймарĕ пулас Эриван. Хулара ӳсекен чылай çамрăксем пекех пурнăç çине çиелтен, çăмăллăн пăхма хăнăхса кайрĕ Эдик, ăна ытларах вăхăта йăкăл-йăкăл ирттерни илĕртет, чикĕ леш енче кăларнă çи-пуç шыраса туп ăна валли, магнитофон е транзистор туянса пар. Вунсаккăра çитнĕ пулин те, малашнехи кунçулĕ пирки тĕплĕн шухăшласа хуман-ха ывăлĕ, пĕр-пĕр техникума е института кĕресси çинчен тĕлленмест те, куллен-кун амăш таçтан тупса панă, Японире кăларнă «Сони» магнитофона йăтать те, Атăл хĕрне шыва кĕме тухса сулланать.

Ывăлĕпе хăй вăхăтĕнче пурнăç çинчен калаçма та, ăна ĕçе хăнăхтарма та ĕлкĕреймерĕ, эппин, Эриван.

Ĕлкĕреймерĕ çав, вăхăт тупаймарĕ.

«Тĕнчи çапла кайрĕ», — терĕ-ха паçăр Варушка карчăк. Çапла, «тĕнчи çапла кайни» те айăплă пулĕ кунта. Утмăлмĕш çулсенчен пуçласа ялсем пушанса-пушанса юлма тытăнчĕç, хулана тĕрлĕ ĕçсене куçса, ял яш-кĕрĕмĕпе хĕрупраçĕ чăн-чăн хула çыннисем пулса тăраймарĕç, унта, хулара, пĕр-пĕр кĕтес тупас тесе, çамрăк мăшăрсен чылай вăхăт пуç çĕклемесĕр ĕçлеме тиврĕ, çуралнă ачисем ялти пек, аслашшĕ-асламăшĕн, кукашшĕ-кукамăшĕн ырлăхлă хӳттинче хавасланса, ĕмĕрхи йăла-йĕркесене вĕренсе юлаймарĕç, вĕсен ашшĕ-амашĕсем те ни вырăс, ни чăваш çӳреççĕ те, ачисем пирки вара калама та кирлĕ мар — хăпнă вĕсем унченхи ăрусенчен, сивĕннĕ, писнĕ. Пух-ха эсĕ паян тăван ялăн Эдикпа ун çулхи мăнукĕсене — çук, кунта текех чуна çĕклентерсе яракан вăйă юрри те, туй юрри те, йăла-йĕрке юррисем те янăраса каяймĕç. Ĕмĕртенпе пынă «ниме» сăмаха та пĕлеймĕç çав çамрăксем, «чипер хĕр», «сар хĕр», «кĕçĕн ывăл», «пултăр», «пăяхам», «хунякам» сăмахсем пачах та ют пулĕç вĕсемшĕн. «Тĕнчи çапла кайни», нимĕнле вăйпа та чарса лартма май çук наукăпа техника утти, кашни килте телевизор, радиола, магнитофонпа транзисторла приемниксем пурри хула халăхне (нумай пулмасть ялта пурăннă çынсене пушшех те пулĕ) кахаллатрĕ, вĕсен ăспуçне сахалтарах ĕçлеттерме пуçларĕ, çамрăксемпе аслăрах ăрусен çыхăнăвне пушатса ячĕ. Çуралнă кĕтесĕн, тăван çĕрĕн туйăмĕ çухалчĕ çамрăксен чĕринче. Тĕрĕс ĕнтĕ, пĕрлешуллĕ садсенче пы-

сăкаx мар каçалăксем каса-каса параççĕ-ха хула çыннисене, анчах кайса кур-ха унта: çав каçалăк хуçисем, пĕр-пĕринпе ăмăртса тенĕ пек, пĕр-пĕрин умĕнче хăй камне кăтартас тенĕ пек икĕ виçĕ хутлă керменсем тăва-тăва лартаççĕ, вĕсен йĕри-тавра кайăк та вĕççе кĕрейми картасем çавăраççĕ, алăк е хапха çине йывăр çăра çакса яраççĕ. «Пĕрлешӳллĕ» сăмах хăйĕн пĕчĕк тĕнчине кĕрсе ӳкет, çĕр пулăхне хăй пултарнă таран хăйпăтма тăрăшать. Ĕрчесе каяççĕ вара пасарта ик-виç чечеке вун-вун тенкĕ, пĕр витре çырлана çĕршер тенкĕ, пĕр хĕрен тымарне аллăшар тенкĕпе ярăнтаракансем. Çук ĕнтĕ, ку вăл тем тесен те халăха çĕре юратма вĕрентни пулаймасть, ку вăл, тӳррипе каласан, харампырсем ĕрчетме ытларах пулăшать пулĕ.

Çак шăпа, «тĕнчи çапла кайнин» пĕр вĕçĕ Эривана хăйне те пырса лекмерĕ-и вара?

...Вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи йывăр ачалăх Эривана чăтăмлă та çаврăнăçуллă пулма вĕрентрĕ. Фронтран суранланса килнĕ ашшĕ ялан йывăр чирпе аптратчĕ, çавна пула вунă-вуникĕ çула çитсенех ывăлĕн кулленхи ĕçе кӳлĕнме тиврĕ. Çăкăр хакне, пурнăç тути-масине питĕ ир туйса илчĕ вăл, нумай-нумай ыйтăва хăй пуçĕпе тĕшмĕртсе, хăй татса пама вĕренчĕ, килти йывăр пурнăçа мĕнле те пулин çăмăллатма тăрăшрĕ. Çемьери мĕнпур шанчăк амăшĕпе Эривантаччĕ. Хулă пек тăрса юлнă амăшĕ мĕнле чăтрĕ пуль, унăн, мăнтарăнăн, иртен пуçласа каçчен колхоз ĕçĕнче пулмаллаччĕ, халăхпа пĕрле вăрман хатĕрлемеллеччĕ, утă çулмаллаччĕ, çурлапа тырă вырмаллаччĕ, ăна тăпачăпа çапмаллаччĕ, хĕлĕпе хиртен улăм турттармаллаччĕ, çав вăхăтрах килти пĕтĕм ĕçе тума ĕлкĕрмеллеччĕ. Ăнланатчĕ Эриван амăшĕн нушитертне. Вуннăра чухнех колхоз вăкăрне кӳлсе пачĕç ăна, вăл вара йышпа пĕрле кĕлте те, тырă та, вут-шанкă та турттарчĕ, тепрер çултан шутлама-хутлама лайăх пĕлекен ачана колхоз бригадирĕ, шута-хисепе ытла пĕлсех те кайман Вехтĕр пичче, хăйне пулăшакан туса хучĕ. Çӳрерĕ вара Эриван виç кĕтеслĕ вершука йăтса колхоз хирĕсем тăрăх. Çак çĕр çинче вăл ура ярса пусман лаптăк та юлмарĕ темелле. Ачалла мар ĕçне кура хисеплетчĕç ăна ял çыннисем, унпа пысăк çынпа калаçнă пекех сумлăн калаçатчĕç.

Тен, Вехтĕр пичче шанса панă çак хисеплĕ ĕç те пулăшрĕ пуль Эривана ĕçре çирĕп кăмăллă, çынсемпе хутшăннă чух çыпăçуллă та ăшă чĕлхеллĕ пулма. Тен, тата вăл кăна та мар? Ашшĕн кăмăлĕ питĕ ырăччĕ. Вăл, ĕмĕрхи хресченсен тĕпренчĕкĕ, çак çĕр çинче мĕн-мĕн тумаллине, мĕнле тумаллине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе тăратчĕ тейĕн. Шел, хура тăшмана пула пĕтĕм ăшчикне тураса, каскаласа пĕтернĕрен хăйĕн вăйне те, ăсталăхне те туллин кăтартма пултараймарĕ вăл, хăш-хăш сывлаканскер, килтен инçерех тухса çӳреймерĕ. Çапах та камăн та пулсан пура пураламалла-и,

çĕнĕ çуртра урай-мачча сармалла-и, чӳрече янаххи лартмалла-и — çавăнта пĕр чĕнмесĕр кăштăртатса çитетчĕ те вăл, çамрăкрах платниксене хăйĕн ырă канашĕсене паратчĕ. Тепĕр чух ашшĕне пĕрпĕр «ĕçе» ăсатма Эриван та пыратчĕ. Пысăках мар пулин те, шăнăрлă, вăйпиттин курăнакан ашшĕ ыттисем хушшинче халĕ вăйсăр та хевтесĕр туйăннăран чунĕ ыратса каятчĕ Эриванăн. Пĕлетчĕ Эриван, çамрăкрах чухне шутсăр вăйлă пулнă унăн ашшĕ. Пĕрре çапла ялти акатуйне Клемтел «кĕрешĕ», таврари ялсенчи чи паттăр çын килсе лекнĕ те ялăн чи пиçĕ арçыннисене хулпуççи урлă тыта-тыта ывăтма пуçланă. Халăх тӳрех Эриван ашшĕ патне чупса пынă, тет. «Тух, Ваççук, пĕтĕм шанчăк та санра кăна, намăса кĕртет пире ку упа», тенĕ пулать ăна. Килĕшнĕ тет вара, Эриван ашшĕ. Килĕшнĕ, тет те, леш мухтанчăка питĕ меллĕн хăй урлă тытса пенĕ, тет. Лешĕ сиксе тăнă, тет: «Атя тепре кĕрешер», — тесе калать, тет. «Паттăр иккĕ кĕрешмест» пат татса хунă, тет, хăйне хăй йӳнетсе яма юратман Эриван ашшĕ. Çапла каланă, тет те, Клемтел паттăрĕ умĕнчен питĕ мăнкăмăллăн утса иртнĕ, тет. Çапла вара Йăмраллă халăхĕ пысăк намăсран хăтăлса юлнă, тет.

Шкула пăрахма юраманнине те (ун çулхисем чылайăшĕ çичĕ класс та пĕтереймерĕç авă) ашшĕ ăс пачĕ Эривана, ывăлĕ вара вĕреннĕ çынра кăна пысăк шанчăк пуррине лайăх ăнланчĕ те, пĕтĕм вăйне хурса, çине тăрса вĕренчĕ. Тăххăрмĕш класа çитиччен унăн дневникне «тăваттăсем» те «пиллĕксем» кăна илем кӳретчĕç, тĕрлĕ пухусенче учительсем Эриван ятне тĕслĕх вырăнне хурса палăртатчĕç, унăн сăнне Хисеп хăми çинче тытатчĕç. Уйрăмах математикăпа физикăна килĕштеретчĕ Эриван. Числасен вĕçĕмсĕрлĕхĕ, çутçанталăк саккунĕсен вăрттăнлăхĕ çĕнĕрен çĕнĕ тупсăмсем шырама хистени шутсăр илĕртетчĕç çамрăк çынна. Ун телейне, Йăмраллă шкулне хăйĕн ĕçне шутсăр юратакан Михаил Петрович ĕçлеме килнĕччĕ ун чух. Унăн çивĕч ăсĕ, анлă тавракурăмĕ, хаюлăхĕ, ĕçченлĕхĕ, вăл ачасен кăмăл-туйăмне витĕр курса тăни шалт тĕлĕнтерсе ячĕ те Эривана, вăл çав учительпе çывăхарах та çывăхарах пулма, унăн мĕнпур сăмахне итлеме, ăна ырă тума тăрăшрĕ. Физика лабораторийĕнче тĕрлĕ опытсем тунисĕр пуçне ачасем Михаил Петрович таçтан илсе килнĕ кивĕ телескоппа мĕн ирччене çăлтăр тĕнчине тĕпчетчĕç, çывăхри вăрмана çӳресе тĕрлĕ кайăк юрри-кĕввисене магнитофон çине çыра-çыра илетчĕç, йĕлтĕр похочĕсене туха-туха каятчĕç, çуркуннепе шкулта волейбол секцийĕ ĕçлеме тытăнатчĕ, самаях лайăх вылякан шкул команди ăмăртусем ирттерме ялтан яла çӳретчĕ, районти ăмăртусенче мала тухатчĕ. Учителĕн вăйлă характерĕ, пуçланă мĕнпур ĕçе тем пулсан та вĕçне çитерме пултарни ачасен, уйрăмах Эриванăн, кăмăл-туйăмне çирĕплетме нумай пулăшрĕ.

Хăйсем сисмесĕрех ӳсрĕç, тĕрекленчĕç, чăн-чăн арçынсем пулса тăчĕç ĕнерхи çемçешке те вăйсăр ачасем.

Шăпах ĕнтĕ çавăн чух, тăххăрмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра, çуркунне çитеспе, туйса илчĕ Эриван: çакă çутă тĕнчере никам ăнлантарма пултарайман хăйне евĕрлĕ тепĕр саккун та пур иккен.

Хăйпе пĕр класра вĕренекен Рита тăххăрмĕш класа çитсен тĕлĕнмелле хитре хĕр пуласса унччен маларах шутлама та пултарайман Эриван. Çитменнине тата пĕр урамрах, пĕр касрах пурăнаççĕ вĕсем. Ачаранпах пĕрле выляни-кулни, пĕрле пучах пуçтарни, вăй çитнĕ таран колхозра пĕрле ĕçленĕ çак хăйпашка, имшер хĕрача куç умĕнчех самайланса, самайланса пычĕ те, пĕрре сасартăк, клуб сцени çине тухса, халиччен никам илтмен чăваш юрри юрласа пачĕ:

Сенкерленчĕ шуçăм,
Çеçкере сирень,
Халь ăçта-ши, тусçăм,
Эс утса çӳрен?

Те кĕввинчен, те юррин самахĕсенчен, те тата Рита шутсăр сăпайлă та вăтанчăк, çавна пула тата хитререх те илĕртӳллĕрех пулнинчен тĕлĕнсе хытсах кайрĕ Эриван çав концертра. Ăçтан тупса кăларнă-ши вăл çав юрра, ăçтан вĕренсе килнĕ-ши? Кам валли юрларĕ-ши тата? Ара, юрри кашнин валли мар-çке. «Халь ăçта-ши, тусçăм, эс утса çӳрен?» — тенĕ унта. Апла пулсан, тусĕ валли юрлать. Кам-ши Ритăн тусĕ? Пĕр-пĕр хĕр-тантăшĕ мар-ха вăл. Уншăнах ассăн сывласа юрлас çукчĕ Рита. Эппин, арçын ача пирки пырать юрăри сăмах. Кам-ши çав арçын ача?

Ыйхăсăр каçсем пуçланчĕç. Малтанлăха Эриван волейбол команди кашни ир ирттерекен зарядкăна (ултă сехетре тăр та, Çарăмсан хĕррине чуп) çывăрса юлакан пулчĕ. Пĕрре пырса вăратрĕç ăна юлташĕсем, иккĕ пычĕç, кайран вара, шанчăкран тухрĕ тесе, алă сулчĕç ун çине. Вăл хăй вара çак ирхи тутлă сехетсенче ырă ыйхăра сцена çинче юрлакан Ритăна курса выртрĕ, ун патне çывхарасшăн пулчĕ, анчах лешĕ унран аяккарах та аяккарах тарса пычĕ. Шкулта тата пушшех те йывăрччĕ Эривана. Çак путăк питмартиллĕ хĕрача ун çине пăхса илсенех хăйĕн йывăрăшне, хăй ăçта тăнине манса каятчĕ арçын ача, çакна кам та пулин ан систĕр тесе, Ритăран аяккарах тарма пикенетчĕ. Хĕрача ларакан парта чӳрече патĕнчеччĕ, Рита çине хĕвел ӳкетчĕ те вара, унăн пĕтĕм кĕлетки йăлтăр çутă салатса ларнăн туйăнатчĕ Эривана. Ара, мĕншĕн салатас мар-ха унăн çав çутта, йĕтĕн пек сарă çӳçлĕччĕ Рита, сар çу пек çутă ӳтлĕччĕ. Унтан та ытларах унăн кăмăлĕ, унăн савăк чĕри темрен те çутăрах пулнăн туйăнатчĕ. Кур-ха эс ăна, мĕн тери хитре юрăсене кăмăллать хĕрача. Тем тесен те,

класра та, пĕтĕм шкулĕпе те ун пек хĕрача çуках. Пĕвĕпе иккĕшĕ те пĕр танччĕ те, Эриван вара хăй мĕншĕн кăштах та пулин вăрăмрах мар-ши тесе, мĕншĕн тата хăй тĕксĕм сăнлă-ши, илемсĕр-ши тесе кулянатчĕ. Ăш хыпнă вăхăтра учительсен сăмахне илтмесĕр юлнишĕн, дневникра «виççĕсем», тепĕр чух «иккĕсем» те ĕрчеме пуçланишĕн шăпах çак ăнланма май çук вăхăт айăплă пулчĕ. Çĕтĕлчĕ, тарăхрĕ, чунне хĕнерĕ Эриван, çапах та çак тертрен хăтăлма пултараймарĕ, Рита патне пырса ăна хăйĕн чунне уçса пама хăю çитереймерĕ. Вунă класс пĕтерсен уйрăлу каçĕнчи ташăра кăна пĕр-икĕ сăмах калама пултарчĕ вăл Ритăна.

— Эсĕ, — терĕ вăл, — тарăннăн сывлăш çавăрса. — Эсĕ... кирек ăçта пулсан та эпĕ яланах санпа пĕрле пулăп.

— Ырă кăмăллă эс, — терĕ ăна Рита. — Ялан çакăн пек пул. Нихçан та ан хуçăл, нихçан та ан таптаттар хăвна.

Ритăна тата тем-тем каласшăнччĕ Эриван, ăна вăл хăйĕн асаплă юратăвĕ çинчен систересшĕнччĕ, анчах ташă сасартăк вĕçленчĕ те, унăн ирĕксĕрех арçын ачасен ушкăнне кайса тăма тиврĕ. Тепĕр ташша чĕнме те ĕлкĕреймерĕ вăл Ритăна, ун патне пыма шухăшласа хунă кăначчĕ, çав вăхăтра хĕрачана кӳршĕ класри вырăс ачи Слава Спирин чĕнсе кăларчĕ те унпа меллĕн те çăмăллăн çаврăнма пуçларĕ. Чунĕ ыратрĕ Эриванăн, хăй хăюсăр та ленчешке чĕреллĕ пулнишĕн тарăхрĕ вăл. Урама тухрĕ, хăйĕн çурчĕ патне çитрĕ те, сад пахчи карти çине таянса, нумайччен пĕчĕк ача пек ĕсĕклерĕ. Ашшĕ-амăш хӳттинчи йывăр, çапах та ырă ачалăхĕ иртсе кайни те, тус-юлташĕсемпе сывпуллашни те, хăйĕн ăнăçсăр пĕрремĕш юратăвĕ тăруках татăлни те — пурте пулчĕç çав вĕри куççульсенче. Ирхи кĕрен шуçăм майĕпен, майĕпен çĕкленчĕ те, темле, чуна хăратакан тасалăхпа, пĕтĕм кĕлеткене пăлхатса яракан йыхравпа çур тӳпене хупласа хучĕ.

Эриван пурнăçĕнче иккĕмĕш çаврăм пуçланчĕ.

Ашшĕ кăштах самайланнăччĕ ĕнтĕ, килти ĕçсене аванах тытса пыма тытăннăччĕ. Амăшĕ çаплах кунне-çĕрне пĕлмесĕр колхоз ĕçĕнче те килте тĕрмĕшетчĕ.

Юлташĕсем пĕри те тепри — хăшĕ ĕçлеме, хăшĕ вĕренме — хулана туха-туха кайрĕç. Рита та кайрĕ. Шупашкар хулинче темле аякри тăванĕсем пур иккен унăн, çавсем йыхăрнипе ялхуçалăх институтне кĕрес тесе тухса кайнă Рита. Шел, сывпуллашма ĕлкĕреймерĕ унпа Эриван. «Эпĕ те каятăп, — шухăш тытрĕ вăл. — Строительство институтне кĕме хăтланса пăхатăп». Çак хыпара илтсен, ашшĕ те, амăшĕ те пуçĕсене усрĕç, пусăрăнчĕç. Пĕртен-пĕр чĕппи тăван йăваран вĕçсе тухса кайни ашшĕ-амăш чĕрине хуçса, амантса хăварасси пирки пач та шухăшламарĕ Эриван, ашшĕн йывăç чăматанне кĕнекесем тултарчĕ те ваттисем панă пур-çук укçана илсе, шăппăн кăна тăван килтен тухса кайрĕ.

Телей пулчĕ. Ыттисем пек ытлашши пăлханмасăр-хумханмасăрах кĕрсе кайрĕ вăл строительство инженерĕсем хатĕрлекен института. Çапах та каярах питĕ йывăр килчĕ ăна. Тăван килтен пулăшу тавраш параймарĕç, каçсерен е канмалли кунсенче пăрахут е вакун пушатса çӳрерĕ вăл, йӳнеçтерчĕ, тăрăшрĕ.

Рита вара майĕпен-майĕпенех манăça тухрĕ.

* * *

Виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чух таса та çылăхсăр чунлă, пурне те ĕненекен ял ачи хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш, анчах пысăк та каярах нумай-нумай çулсем хушши асаплантаракан йăнăш туса хучĕ. Авланса ячĕ Эриван. Тĕрĕсрех каласан, ăна авлантарчĕç. Мыскари ку çапларах пулса тухрĕ.

Çур енне кайнăччĕ, анчах урамсем юртан тасалса пĕтменччĕха. Хула Хĕрарăмсен кунне хаваслăн палăртма хатĕрленетчĕ. Лекцирен таврăнсан, вăхăт нумай та иртменччĕ, пӳлĕме хăйсемпе пĕрле вĕренекен мăкшă ачи Иван Калякин васкаса пырса кĕчĕ те чугун çул станцийĕнче ик-виç сехетлĕх «тупăшлă» ĕç пурри çинчен пĕлтерчĕ. Тăватă студент — çав шутра Эриван та — хăпăл-хапал ĕç тумĕ тăхăнчĕç те хыпалансах ĕç вырăнне тухса кайрĕç. Ĕçĕ, чăнах та, ӳте çыпăçаканни пулмарĕ — пушатса кур-ха эс цемент е çĕр кăмрăкĕ, куç шурри те шăл шурри кăна палăрать сан питӳнте, çуршар сехет душра тăма лекет, ик-виçĕ кун хушши тусан сурса çӳретĕн вара. Хальхинче вĕсем контейнерсенчен тушки-тушки ĕне какайĕ пушатрĕç. Самаях тарларĕç, хăшкăлчĕç, ĕшенчĕç çамрăксем, çапах хăйсен ĕçне вăраха ямарĕç, ăна каç пуличченех вĕçлерĕç, унтан чуна тивĕçлипех савăнтаракан укçана алла илчĕç те каллех общежитине çул тытрĕç. Ку укçапа чылаях пурăнма пултаратчĕç студентсем, анчах кĕсъене чикнĕ тенкĕсен шăпи урăхларах килсе тухрĕ хальхинче. Çав Иван Калякинах вĕсене укçаллă турĕ, вăлах кĕтмен-туман тупăшран хăтăлма та пулăшрĕ.

— Паян манăн çуралнă кун пулман пулсан, укçа-тенкĕ çинчен аса илес те çукчĕ эпĕ, — терĕ вал. — Юрать-ха шанчăклă туссем пур. Йĕркеллĕ ĕç те, тивĕçлĕ хак та майлаштарса пачĕç акă.

— Палăртас пулать сан менелникне. Юрать-ха эсĕ Хĕрарăмсен кунĕ çуралман. Çавăншăн та пулин савăнса палăртасах пулать санăн çирĕм çулхи юбилейне, — сĕнӳ пачĕ Миша Кулиш, яланах хаваслă белорус йĕкĕчĕ.

Туссем общежитие çитсе çăвăнчĕç, якалчĕç те Иван Калякинăн çуралнă кунне палăртма «Заря» хăна çурчĕн пысăках мар ресторанне çул тытрĕç.

Унччен маларах эрех тути-масине пĕр-ик хутчен çеç тутанса

пăхнă Эриван кăшт сыпсанах ӳсĕрĕлсе кайрĕ. Темле чахохбили текен кавказ апатне активсе пăхнине, сĕтел хушшинче тем пирки хĕрсе кайса калаçнине, оркестр шавлă музыка каланине, кĕтесри сĕтел хушшине вырнаçнă хĕрсене ташша чĕннине кăштах астуса юлчĕ вăл. Ытти вара...

Ирхине çăварĕ шутсăр типсе çитнипе, пуçĕ çĕмĕрĕлсе тухас пек ыратнипе вăранса кайрĕ те вăл куçне уçрĕ. «Турăçăм, ăçташи эпĕ?» — мĕлтлетрĕ пĕрремĕш шухăш.

Хăйпе юнашар ăшă çапса выртакан çын çине çаврăнса пăхрĕ Эриван. Кам ку?! Куç тĕлне тӳрех хĕрĕн нимĕнпе те хӳтĕлемен шап-шурă кăкăрĕсем тухса тăчĕç. «Нивушлĕ эпĕ ку? Ăçтан, мĕнле майпа лекрĕм-ха кунта?» — канăçсăрланчĕ Эриван. Ара, хăй те çап-çарамас выртмасть-и вăл çак хĕрпе юнашар? Апла пулсан?..

Намăс, чăтма çук намăс пулса кайнине туйса илчĕ вăл, хăвăртрах сиксе тăрса çак çуртран пĕр тăхтаса тăмасăр тухса тарасси килчĕ унăн. Юнашар выртакан хĕре систермесĕр вырăн çинчен çĕкленме çеç хатĕрленнĕччĕ Эриван, тутлăн çывăрса выртакан сарă çӳçлĕ хĕр сасартăк йăшăлтатса илчĕ те, куçне уçмасăрах, хăй аллине унăн пилĕкĕ çине хучĕ, кĕлеткипе ун çумнерех çыпăçрĕ. Сисрĕ вара Эриван: мĕн пуласси çĕрлех пулса иртнĕ иккен, вĕсем иккĕшĕ те турă панă тумпах. Хăйне хăй чарса тăмарĕ вара текех, юнĕ вĕриленсе кайрĕ Эриванăн, кĕлетки чĕтрерĕ, сывлăшĕ пӳлĕне-пӳлĕне ларчĕ. Чуптурĕ, ачашларĕ хĕре, савăнчĕ, чунĕнче унччен нихăçан пулман туйăмсем çуралнипе хĕпĕртерĕ.

— Эпĕ сана шанатăп, эпĕ сана ĕненетĕп. Эсĕ мана çĕр каçах чи лайăх сăмахсем каларăн, — пăшăлтатрĕ хĕр, сăрланă куç хупахĕсем айĕнчен кăвак куçĕсене уçса. — Мана санпа яланах шанчăклă пулĕ.

«Эсĕ тутлă çеç мар, эсĕ илемлĕ те иккен», — кăмăллăн шухăшларĕ Эриван.

Анчах тепĕр самантранах хăйĕн чунĕ те, ăсĕ те лĕштĕрех каясса, пĕтĕм тĕнче пушхир пек пушанса юласса пĕрре те кĕтменччĕ вăл.

— Мĕнле лекнĕ-ха эпĕ кунта?... Ăçта эпĕ? Эсир тата хăвăр мĕн ятлă? — шутсăр канăçсăрланса, хĕре тӳрех темиçе ыйту пачĕ Эриван.

— Ĕнер каçхине эсĕ питĕ хăюллă та паттăрччĕ, маншăн шыва сикме те, вута кĕме те хатĕрччĕ. Мана курсанах: «Акă манăн пулас арăм», — тесе çунатланса пытăн, пĕр тăхтаса тăмасăр качча илетĕп терĕн. Куçусем ытла та ĕненӳллĕ пулнăран санран тарас темерĕм эпĕ, хамăн телее вĕçертес темерĕм... Виолетта эпĕ... ан хăра, ют çын патĕнче мар, хамăн хĕр-тантăш патĕнче. Санăн Иван юлташу та кунтах, тепĕр пӳлĕмре вĕсем, Риммăпа пĕрле... Риммăн ашшĕ-амашĕ ĕнер яла тухса кайрĕç те...

Чăтма çук киревсĕр ĕç туса хунине туйса, Эриван вырăн çинчен сиксе тăчĕ; çăвăнчĕ, тумланчĕ, анчах çак пĕр пĕлмен хваттертен, халиччен палламан Виолеттăран тӳрех хăпмашкăн пултараймарĕ.

— Каçарăр, Виолетта, — терĕ вăл, вăрăм сӳçне тураса тăракан хĕр патне çывхарса, — эпĕ ĕнер шутсăр ӳсĕр пулнă.

Виолетта хулпуççийĕсене сиктерсе илчĕ те кĕтмен çĕртен çапла каласа хучĕ:

— Анчах та манран тарма ан шухăшла. Эсĕ ача-пăча мар, пĕлме тивĕçлĕ, вырăн çинчи алхасуран çĕнĕ чун çуралать. Ун пек-кун пек пулас пулсан, ху вĕренекен институтах пырса парнелетĕп.

«Тăлласа лартрĕ иккен пурнăç ал-урана», — ассăн сывласа шухăшларĕ Эриван.

«Сурса хур, — канаш пачĕ ăна каярах Иван Калякин. — Сан пек арçынсем унăн кашни каçах пулаççĕ пулĕ те, санăн ответ тытмалла-и пепке çуралас пулсан?»

Чăнах та çапла тăвасшăнччĕ Эриван, çав çурхи ӳсĕр каç çинчен аса илме хăраса пурăнатчĕ, каçсерен Виолеттăн куçне курăнас мар тесе, урама тухма та хăраса çӳретчĕ, анчах лешĕ, ача пуласса малтан пĕлсе тăнă пекех, шыраса тупрĕ-тупрех ăна. Тупрĕ те çапла каларĕ:

— Манран тарса пытанма шухăшларăн, эппин? Çук ĕнтĕ, куккукăм, Виолеттăна улталанă çын халиччен пулман-ха. Е авланатăн, е, институтран тухса кайса, вунсакăр çул алимент тӳлесе пурăнатăн. Саккунсене пĕлмест-ха ку тесе ан шухăшла. Свидетельсем шанчăклă манăн... Ачи вара пулатех пирĕн...

Çапла Эриванăн ирĕксĕрех Виолеттăсем патне, хула хĕрринчи ултă кĕтеслĕ хӳхĕм çурта, пурăнма куçмалла пулчĕ. Кăмăлĕсем шутсăр хуçăлчĕç Эриван ашшĕпе амăшĕн, ывăлĕ, килсĕр йытă пек, хăш чух выçă, хăш чух шăнса та кӳтсе çӳренине, унсăр пуçне тата хăй пурнăçĕнче чăтма çук пысăк йăнăш туса хунине ăнланмасăрах юлчĕç ватăсем. Сивĕнчĕç, ютшăнчĕç вĕсем ывăлĕнчен, хăйсен пĕртен-пĕр шанчăкĕ сӳнсе-сӳнсе пынăран питĕ хытă тарăхрĕç. Çавăнпа Виолеттăна та (ăна, яла пырсан, пĕрре курнипех тивĕçлĕ хак пачĕç пулмалла çав) кин вырăнне йышăнасшăн пулмарĕç вĕсем, çамрăк арăм çавна тӳрех сиссе илчĕ те, яла туртăнмарĕ вара текех, ялтисем хăйсем те хулана пĕрре те пырса курмарĕç.

Ир авланса, чăнахах та йывăр лава кӳлĕннине ăнланса илме вăхăт нумаях кирлĕ пулмарĕ Эривана. Малтанхи кунсенчен пуçласах Виолетта ашшĕ Яков Павлович Петухов, утмăлтан иртнĕ самаях самăр, çапах та чĕрĕ те пиçĕ арçын, хăйне хăй мĕнле тыткалани, пурнăç çине мĕнлерех пăхни, таврари çынсемпе епле-

рех калаçни шухăшлаттарма тытăнчĕ ăна. «Шутларăн — ту, тĕл пултăн — ил, пĕр пус çумне иккĕ хушма тăрăш, çын хурри ан пул, кашни лару-тăрурах хуçа пулма пĕл, кашни йăх-яха ху çуртна ан кĕрт, çынсен айванлăхĕпе меллĕн усă кур», — çакăн пек пулчĕç Яков Павловичăн çĕнĕ кĕрӳшне каланă пĕрремĕш сăмахĕсем. Хăй вăл ĕçрен хăракан, ӳркенсе тăракан çын мар-мĕн, тул çутăлнă-çутăлман вăранать те хăйпе пĕрле арăмне, урисем ыратнипе аран-аран çӳрекен, юн пусăмĕ хăпарнипе час-час аптракан Евлали Степановнăна тăратать. Пуçланать вара ир-ирех кĕмсĕр-кĕмсĕр пурнăç: хыçалти пӳлĕмре, кухньăра, кăмака хутса яраççĕ те выльăхсем валли апат ăшăтаççĕ — килкартинче, аслăк айĕнче, Петуховсен яланах тăват-пилĕк сысна нăриклетет, вĕсене тивĕçлĕ виçене çитиччен самăртса пусас та юнашарти пасара илсе тухас пулать кил хуçисен. Çуртпа юнашар самаях пысăк пахча та, сад та пур. Ӳркенмеççĕ Яков Павловичпа Евлалия Степановна — çĕрулми те, панулми те, тĕрлĕ çырла та, пахчаçимĕç те, чечек те ăнса çитĕнет, йăт та йăт вĕсене пасара, хула халăхĕ çак хӳхĕм тавара тиркесе тăрас çук. Килшĕн Виолетта столовăйра кассирта ĕçлени те шутсăр чуха килнĕ авă, институт шоферĕ хăех куллен ик-виçĕ фляга апат каяшĕ илсе килет — епле самăрăлас мар-ха яланах тутлă апат чыхса тултарнă сыснасен? Шоферне Яков Павлович, хĕрлĕ эрех илмелĕх тесе, хутран-ситрен кăштах укçа тыттарма манмасть иккен.

Çук, пурнăçĕ çăмăлланса каяймарĕ Эриванăн. Института лекции каяс умĕн ик-виçĕ сехет, лекцирен килсен тĕттĕм пуличченех Петуховсен киленче тĕрлĕ ĕçсем туса тăрăшатчĕ пулин те, Яков Павлович ăна харам пыр вырăнне хурса йышăннине аван ăнланатчĕ вăл. Çавăнпа та виççĕмĕш курс пĕтерсен заочно йĕркепе вĕренме куçрĕ Эриван, çав вăхăтрах хăй умне çирĕп тĕллев лартрĕ: çемье валли мĕнле те пулсан уйрăм кĕтес тупмалла та çак «ăшă» йăваран хăвăртрах тухса тармалла.

Хăйне хăй хĕрхенмерĕ вара студент-заочник, тарларĕ, мекĕрленчĕ. Пĕр вăхăтрах грузчик та, кочегар та, хуралçă та пулчĕ вăл, институт программине пурнăçласа пыма та чăтăмлăх çитерчĕ. Тепĕр икĕ çултан инженер дипломĕпе пĕрле кооперативăн икĕ пӳлĕмлĕ хваттерне илчĕ-илчех Эриван. Виçĕ çынлă çемье (Эдик çуралнăччĕ ĕнтĕ, ку вăхăт тĕлне хăй тĕллĕн утма та вĕреннĕччĕ) хĕвелпе йăлтăртатса тăракан пысăк кантăксемлĕ, паркет урайлă, ваннăллă, балконлă çĕнĕ хваттерне куçрĕ. Тинех хаш сывласа ярăп, пĕлĕве кура канлĕ ĕç тупăп та йĕркеллĕ пурăнма пуçлăп тесе шухăшланăччĕ кил хуçи. Анчах кĕтнĕ пек пулаймарĕ.

Уйрăм йăвара хăйне мĕнле тытмаллине, çемье «телейне» мĕнлерех тумаллине Виолетта унченех витĕр курса тăнă тейĕн.

Питĕ хăйне евĕрлĕ хуçаланма пуçларĕ вăл çĕнĕ çуртра. Çемьере пĕртен-пĕр ача пулса, ачашланса ӳснĕскер, пурнăç тути-масине чĕрне хури тăршшĕ те тутанса пăхайманскер, кил-çурта тытса пыма пĕртте хăнăхманччĕ вăл, тытнă пĕр ĕçĕ те вĕçне çитейместчĕ унăн, çавна пула тата ытларах çĕткеленетчĕ, тарăхатчĕ, Эриванпа хăр-хар та хăр-хар калаçатчĕ Виолетта. Эдик çуралсан, тата икĕ çул ĕçсĕр ларчĕ çамрăк арăм. «Тен, пĕчченлĕх кăшлать ăна, тен, çынсемпе хутшăнманни вĕчĕхтерет унăн чунне?» — канăçсăрланса шухăшлатчĕ Эриван. Анчах, акă, ывăлĕ садике те çӳреме пуçларĕ. Виолетта ĕçе те тухрĕ — çук, упăшкин чунне таптама, пĕр сăлтавсăр-мĕнсĕрех йĕрмĕшсе-хуçăлса çӳреме пăрахмарĕ-ха вăл. Мĕншĕн кăна çĕтĕлмест-ши Виолетта: «Кӳршĕсем хаклă йышши сĕтел-пукан туяннă, мĕншĕн пирĕн çавăн пекки çук?» «Ĕçри çав-çав юлташ кашни çулах Хура тинĕс хĕррине канма каять, хăçан çав ырлăха кăтартăн эс мана?» «Çав-çав пĕлĕшсен çуртĕнче кавирсем те палассем куçа илĕртеççĕ, эпир пур кĕлмĕçе персех ирттерĕпĕр-ши ĕнтĕ хамăр ĕмĕре?» — тата ытти те, тата ытти те.

Чăтаймарĕ пĕррехинче Эриван, арăмне çапла тавăрса хучĕ:

— Эсĕ, тăванăм, кашни кунах хăвăн ĕçӳнте сахал мар укçатенкĕ тытса куратăн, пĕрре те пулсан шухăшларăн-и хăть çав пуянлăх ăçтан тата мĕнрен пулнине?

— Ун пирки арçынсем шухăшлама тивĕçлĕ. Авă, кур-ха, ман атте çемье пурнăçне мĕнлерех тытса пырать, — пат татса хучĕ Виолетта.

— Çапла, — терĕ Эриван, — ун укçи-тенки çĕрсе те пĕтес çук пулĕ. Кам валли усрать-ши вăл ăна? Мĕншĕн пĕртен-пĕр хĕрне пĕр пус та парса пулăшмасть-ха вăл?

— Сан ĕçӳ çук унта. Хура кун валли усрать пуль. Тăрлавсăр кĕрӳшĕ пурнăç тăваяс çуккине лайăх курса тăрать пуль. Тăван хĕрĕ çинченех шухăшлать пуль. Кама кирлĕ санăн çак кĕнекӳсем? Мĕн эсĕ, профессора тухăп тетĕн-им?..

Çук, кĕнекисем ытла нумаях марччĕ-ха Эриванăн. Хăй пурăнакан хулара чăваш писателĕсен кĕнекисене хутран-ситрен кăна сутатчĕç те, савăнăçне пытармастчĕ вара тахçан ял ачи пулнă çамрăк çын. Çав кĕнекесене вуласан, ялта тепĕр хут пулса курнă пекех, ашшĕ-амăшĕпе, тăван-хурăнташĕсемпе, пĕрле ӳснĕ тус-юлташĕсемпе шăкăл-шăкăл калаçса ларнă пекех туйăнатчĕ, çавăнпа та тăван чĕлхепе тухнă кĕнекесем сутнине курсанах вĕсене май килнĕ таран туянма тăрăшатчĕ Эриван. Унтан тата строительство архитектури çинчен, çуртсен илемĕ çинчен çырнă кĕнекесене, вулама юрататчĕ вăл. Ĕмĕчĕ çунатлăччĕ-ха унăн — инженерта пĕр-ик çул ĕçлесе опыт пухсан, вăл, заочно йĕркепе те пулин, тĕп хулари архитектура институтне кĕме шухăшлатчĕ, çын-

сем ӗмӗр савӑнса пурӑнмалӑх илемлӗ те хӑтлӑ çуртсем проектласшӑнччӗ. Апла ку ӗмӗте те кӑкранах тӗплесшӗн-ха Виолетта.

«Хура кун валли упрать-ха, эппин, Яков Павлович хӑйӗн мӗнпур туприне, — тарӑхса шухӑшларӗ Эриван. — Çавӑн çинчен хӑйӗн хӗрне те систернӗ пулмалла ӗнтӗ вӑл. Анчах мӗн пирки пырать-ха ку сӑмах? Çемье уйрӑлса, сапаланса каясса кӗтсе пурӑнмасть-ши Виолетта? Çавӑ пулмасть-ши хура кун тени? Пӗчӗк Эдика ӑçта кайса хумалла пулать-ха ун чухне?»

Çук ӗнтӗ, çемьене аркатса ят яракан пулман-ха Эривансен йӑхӗнче. Хӑй пурнӑçӗнче тем те тӳсӗ, тем те чӑтӗ вӑл, анчах айӑпсӑр ачана тӑлӑха хӑвармӗ-хӑвармех.

Çак тӑван тӗпренчӗке, çак пӗчӗк мӑшӑл-мӑшӑл ачана чунтан юратни ӗнтӗ арӑмӗн кашни сӑмахне, кашни мӑкӑртатӑвне итлеттерме вӗрентрӗ те Эривана. Малтанлӑха дипломлӑ специалист проект институтӗнче ӗçлесе пӑхрӗ, ӗçӗ унччен ӗмӗтленсе хунӑ пекех марччӗ пулин те, пуçпа шухӑшламалличчӗ, анчах ӗç укçи арçынна апатлӑх та çитмест тесе, Виолетта ӑна кунта çур çул та тытмарӗ. Те ашшӗ, Яков Павлович, пулӑшрӗ, те Виолетта хӑех çаврӑнӑçуллӑ пулчӗ, — ӑшӑ та тупӑшлӑ вырӑн тупӑнчӗ-тупӗнчех Эриван валли — вӑхӑт нумай та иртмерӗ — вӑл хулари тӗрлӗ каяшсенчен тасатакан управленин прорабӗ пулса тӑчӗ.

— Асту, — терӗ ӑна Виолетта, — ху ӑслӑрах пул т|а çынсемпе йӳнеçтерме пӗл.

«Йӳнеçтерме пӗл» тенин пӗлтерӗшне часах туйса илчӗ вара Эриван. Вӗсен бригадирӗ Петуховсен çывӑх тӑванӗ иккен. «Пуранма» вӗренсе çитнӗ, стройкӑра «ӑна-кӑна» лайӑх пӗлекен Илья Ильич Дубасов пулчӗ çав çын. Халӗ те тӑр-тӑр чӗтресе илмесӗр аса илме пултараймасть-ха ӑна Эриван: пӗчӗк те чее куçлӑччӗ вӑл, сӑмаха нумай ваклама юратмастчӗ, хӑй вара калама çук вӑрварччӗ.

— Эсӗ, — терӗ вӑл çӗнӗ прораба ӗçе илсенех, — кивӗ детальсене çӗннисемпе улӑштарма пит ан васка, пачах тутӑхса çӗрмен пулсан, вӗсен «пурнӑçӗ» вӗçленмен-ха, сӑрласа хӑвармалла та — çӗнӗ пекех курӑнаççӗ. Çӗнӗ детальсене вара перекетлӗ тыткала, вӗсем сана та, мана та лайӑхрах пурӑнма пулӑшӗç. «Тӗрӗсех калать, — шухӑшларӗ Эриван, — киввисем йӗркеллех пулсан, вӗсене мӗншӗн вӑхӑтсӑрах кӑларса пӑрахас-ха? Тӗплӗ çын иккен бригадир, перекетлӗ хуçа».

Çӗнӗ прораб та хӑй ӗçӗнче питӗ перекетлӗ пулма тӑрӑшрӗ вара. Юсав ӗçӗсем валли уйӑрса панӑ вӗр-çӗнӗ материала нумай тӑккаламарӗ, запас пайӗсен хисепне ӳстернӗçемӗн ӳстерчӗ, вӗсене бригадира йӗркеллӗн тавӑрса парса пычӗ. Çакӑншӑн ырӑ сӑмах калама та манса каймарӗ Илья Ильич. Ырӑ сӑмах кӑна та марха... Ресторана чӗнчӗ вӑл Эривана: «Эпир тӑвансем-çке, пӗр-

пĕринпе çывăх пулмалла пирĕн» – терĕ. Килĕшрĕ çĕнĕ прораб, чаплă çипуç тăхăнаймарĕ пулин те, шăлаварне якатса, туфлисене çутатса пычĕ палăртнă вырăна. Анчах кунта та сăмаха нумай вакламарĕ Илья Ильич. Пĕрер черкке сыпрĕç, апат çырткаларĕç. Çакăн хыççăн тин бригадир Эривана пĕр хушă куç айĕн тĕпчесе-тĕпчесе пăхса ларчĕ те, кĕсйинчен çыпăçтарнă конверт кăларса, ăна кĕрӳшĕн аллинчен тыттарчĕ.

– Ил, ку вăл сана лайăх ĕçленĕшĕн, – терĕ хăй лăпкăн. – Тепрехинче ресторана çĕнĕ костюмпа килĕн.

Çакна пĕртте кĕтмен Эриван сасартăк çухалса кайрĕ, хăйĕн ытла тарават тăванне ним калама та пĕлеймерĕ.

– Чимĕр-ха, чимĕр, – тытăнчăклăн та йăвашшăн тухрĕ унăн сасси. – Мĕнле лайăх ĕçленĕшĕн-ха?

– Преми, – татса хучĕ лешĕ. – Нумай ан пакăлтат, чиксе хур часрах.

– Анчах премие ăна... алă пусса илекенччĕ...

– Шăплан, – васкатрĕ ăна Илья Ильич, – курмастăн-им, официант килет...

Шăпланчĕ Эриван. Дубасов ăна çийĕнчех тепĕр черкке ярса пачĕ. Пуçĕ хĕрсех, кĕлетки çемçелсех пычĕ çĕнĕ прорабăн. Çапах та вăл Илья Ильичăн сăмахĕсене, унăн тĕп шухăшне лайăх ăнланса юлчĕ çав каç.

– Санăн, – терĕ бригадир, – арçын пулма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Эс пур институтра профессорсем каланă сăмахсенчен тухаймастăн. Теоретиксем вĕсем тĕтре ăшĕнчен тухаймаççĕ. Кулленхи пурнăçра, авă, пачах урăхла. Кам ĕлкĕрет – çав тутă. Эс мар-тăк – тепри, тепри мар-тăк – виççĕмĕшĕ. Курмастăн-и, «Жигули» те «Москвич» хуçисене? Уйăхра çĕр аллă тенкĕ илнипе туянаймăн çав пурлăха. Эппин, шăхăртаççĕ. Эпир санпа мĕнрен кая-ха вĕсенчен? Çапла, кĕрӳçĕм, пуçа лайăх ĕçлеттерсен, асăрхануллă пулсан... ă-ă-ăм... эпир санпа!..

Халь пулсан, çуллахи çав шавлă та тĕтреллĕ каçа хăй пурнăçĕнчен ним хĕрхенмесĕр туртса пăрахăччĕ Эриван. Туртса пăрахăччĕ те пуçне унччен пекех çӳлелле каçăртĕччĕ, тĕнче çине, çынсем çине тӳррĕн, ним айăпсăр пăхăччĕ. Анчах, акă, чавса çывăх та çыртма çук. Мĕншĕн хăй сăмахне çирĕппĕн каламарĕ-ха вăл Дубасова, мĕншĕн тавăрса памарĕ харам укçана? Тавăрса çеç памаллаччĕ-и? Мĕн пулса иртнине администрацие пĕлтермеллеччĕ, тивĕçлипе айăплама тăрăшмаллаччĕ Илья Ильича. Пĕр сăмахпа, сурмаллаччĕ ун питĕнчен. Мĕншĕн çапла тумарĕ-ха Эриван? Тĕрĕсси тĕрĕсех ĕнтĕ, хăй кĕсйинче çуралнăранпа та ытлашши укçа-тенкĕ пулса курманччĕ унăн, Дубасов та çавăн пиркиех каларĕ ав, инженерта ĕçлесе те шукăль çипуçпа çӳресе курайманччĕ-ха вăл. Тумланам терĕ-ши пĕрре, ашшĕ-амăшĕ

мĕн ачаран вĕрентнĕ чыс çине алă сулам терĕ-ши? Е вăл Петуховсен юмахри пек юхакан хăтлă пурнăçне ăмсанчĕ-ши? Çук, нимĕнпе те ăнлантараймасть Эриван çавăн чухнехи хăйĕн вăйсăрлăхне. Сутрĕ вăл çав каç ашшĕ-амăшĕн ĕмĕртенпе тытса пыракан чыслăх, йĕркелĕх никĕсĕсене, хăйĕн таса чунне вараланчăк укçапа улăштарчĕ. «Темех мар, темех мар, — лăплантарчĕ вăл хăйне хăй, — акă çын çине тухмалăх кăшт тумланатăп та...»

Кĕтмен укçа ăнсăртран килсе лекнĕшĕн шутсăр савăннă Виолетта тепĕр кунне Эриван валли питĕ шукăль костюм туянса пачĕ. «Укçа çеç пултăр, ăçтан мĕн тупмаллине лайăх пĕлетĕп, — терĕ вăл, хайĕн пултарулăхĕпе мухтанса. — Куратăн-и, питĕ илемлĕ. Анчах ку костюмпа тăхăнма сана модăпа çĕлетнĕ пушмак, тăпăлтăпăл плащ, хитре шлепке кирлĕ. Тăрăш, Эриван, тăрăш, тăрлавсăр ан пул».

«Çитет, çитет», — çĕткеленчĕ хăй ăшĕнче çамрăк прораб, пушмак та, плащ та, шлепке те туяннă хыççăн. — Вăхăтра чарăнма пĕлмелле, ку ямăт укçан вĕçĕ пулас çук, ăна пула эпĕ хамăн ята та манса кайăп». Анчах Дубасов Эривана каллех хăй вырăнне лартрĕ. «Ан пăркалан, — терĕ вăл, сассине хытарса, — эпир санпа тахçанах хысна çуртĕнче сахалтан та вуншар çул лармалăх «ырă» ĕçсем тунă. Эс мĕн, хăвăн пепкӳне тăлăха хăварас тетĕн-и?»

Пĕчĕк Эдика тăлăха хăварас темерĕ Эриван. Çапла хăй сисмесĕрех ăçтиçук пулса тăчĕ (çапла чĕнеççĕ ун пек çынсене). Чăн та, пĕвĕпе пĕкĕрĕлчĕ вăл, çынсем хушшинче асăрханса, сехĕрленсе çӳреме тытăнчĕ. Çав вăхăтрах Виолетта каçăрланчĕ, мăнаçланчĕ, хăйне хăй чăн-чăн патша арăмĕ пек тыткаларĕ. Халĕ те лайăх астăвать-ха Эриван, — вăрçă хыççăнхи çулсенче хăй çуралнă çуртран виç килĕ аяккарах витре тĕплекен Самантей пичче пурăнатчĕ. Фронтран йывăр аманса килнĕскер (йывăç ури паян кун та куç умĕнчех), колхоз ĕçне тухаймастчĕ вăл. Унччен тимĕрçĕ пулнăран килĕнчех витре тĕплетчĕ, сăмавар е кăмкан юсатчĕ, ытти çавнашкал ĕçсемпе аппаланатчĕ. Кам кăна пырса лекместчĕ-ши ун патне? Ырă кăмăллă Самантей пичче кашнинпех шăкăл-шăкăл калаçатчĕ, ĕçне тĕплĕ тăватчĕ, хăй патне татах килсе çӳреме ыйтатчĕ. Анчах витре е сăмавар юсаттарма килнĕ çын хапхаран тухса кайма та ĕлкĕрейместчĕ, ăна пӳртум картлашки çине тухса тăнă Сертюкăн, Самантей арăмĕн, хулăн та мăнаçлă сасси тытса чаратчĕ:

— Эс мĕн, çапкаланчăк, сăпаççип каланипех çырлахас терĕн-и? Кур-ха эс ăна, кур-ха сала майрине, намăсĕ те, симĕсĕ те çук. Килсе ларт сăмаварна ак çакăнта!

— Ара, мĕн-ха, эпĕ кĕçех çĕрулми е тырă илсе килсе парăп тенĕччĕ. Ялта пурăнатпăр-иç, таçта тухса тармăп-ха эп, Сертюк инке, — çапларах тӳрре тухма пăхатчĕ вăл е ку хĕрарăм.

— Эс илсе кил малтан, вара илсе кайăн! Сан пек суллăнчăксем нумайăн çӳреççĕ кунта... Кашнине шанса пĕтерсен...

Çавăн пек хăр-хар самантсенче пĕр систермесĕр таçта кайса çухалатчĕ Самантей пичче. Намăса чăтаймастчĕ. Каярах та, ĕç тытсан, чылай вăхăт ал-ури чĕтретчĕ унăн.

Витре тĕплекене масар çине ăсатнине та астăвать-ха Эриван. Тăванĕ-пĕтенĕсĕр пуçне пĕр çын та кĕрсе курмарĕ Сертюк инке çуртне. Анчах лере, масар çине, ялти пĕтĕм халăх пухăннăччĕ Самантей пиччепе сывпуллашма.

Сертюк инки хăй те тахçанах çĕре кĕнĕ ĕнтĕ — йывăр тăпри çăмăл пултăр, — анчах, авă, парса хăварна-çке-ха вăл такама хăйĕн тӳрккес те хăлтăрти кăмăлне. Такама та мар, шăпах Виолеттăна çаклаппăн вăл темле майпа.

Совеç тени пĕтсех çитейменччĕ пулас çав Эриванăн, Дубасовпа тытакан çыхăнусене хăюллăнах татма шутларĕ вăл пĕррехинче. Çапах, кăмăлĕ çемçе пирки тата бригадир куçĕнчен тӳррĕн пăхма пултараймасăр, çакна вăл Илья Ильич отпуска кайсан турĕ. Ĕçрен тухма заявлени çырчĕ вăл, расчетне-мĕнне илсе тăмарĕ, хăйне тивекен пĕтĕм укçана патшалăх шутне куçарма ыйтса хут çырчĕ те, кирлĕ документсене илсе, васкасах тăван ялне тухса вĕçтерчĕ.

Килте амăшĕ пĕр-пĕчченех пурăнатчĕ ун чухне. Ашшĕ çулталăк маларахах çĕре кĕнĕччĕ. Çитеймерĕ Эриван ăна пытарма. Ĕçĕ çапла пулса тухнăччĕ. Шефла пулăшу пама тесе, прораб хăйĕн рабочийĕсене пĕр аякри колхоза выльăх-чĕрлĕх комплексĕн канализаци системине вырнаçтарма илсе кайнăччĕ. Ĕçсем питĕ калкал пычĕç, хăйсем палăртса хунине чылай маларах туса пĕтерчĕç те вĕсем питĕ лайăх хакпа колхозри пĕр бригадир валли автомашина гаражĕ туса пама килĕшрĕç. Çĕр çывăрмасăр тенĕ пек ĕçлерĕç. Шăп çавăн чухне килсе çитрĕ Эриван патне харушă хыпар: ашшĕ вилсе кайнă. Лаштăрах усăнчĕ ывăлĕн алли. Почтальон килсе панă телеграммăна (ăна Виолетта янăччĕ) лутăркаса, чылайччен ним чĕнмесĕр ларчĕ вăл, унтан кăштах тăна кĕнĕ пек пулчĕ те хăйĕн хурлăхĕ çинчен юлташĕсене каласа пачĕ.

— Эх-эх-эх, ыранччен кĕтеймен сан аçу, ара, ĕç вĕçленетчĕ пирĕн, — терĕç ăна юлташĕсем. — Паян тата тăрăшарах ĕçлер те, каçхине тухса кайăн пĕрех хут. Бригадир сана хăйĕн машинине те парĕ-ха.

Эриван килĕшрĕ. Туйрĕ вăл, юлнă çак куна сиктерсен, укçине те чылай сахалтарах параççĕ ăна (шабашниксен саккунĕ çапла), вилсе кайнă ашшĕ тесен вара, мĕнех ĕнтĕ, тепĕр хут чĕртсе тăратаймăн, пытарма вара, пурте йĕркеллех пулсан, çав-çавах ĕлкĕретха вăл. Ĕçлерĕ, тарларĕ Эриван. Çапах ун куçĕ умне çине-çинех ашшĕ туха-туха тăчĕ, юлашкинчен чăтса тăраймарĕ вăл, пуртти-

не пĕрене çине шаплаттарса лартрĕ те, никама ним каламасăр, бригадира шырама тухса кайрĕ. Телее, бригадирĕ колхоз правленийĕнчех пулчĕ.

— Атте вăл тĕнчере пĕрре кăна, ĕлкĕрес пулать, йĕркеллех ăсатас пулать ăна юлашки çула, — терĕ вăл пĕр турткаланса тăмасăр. — Çулĕ, чăнах та, çывăх мар ĕнтĕ, анчах сан пек пултаруллă çынна çакнашкал лару-тăрура пулăшмасан, Турă та каçарас çук мана. Акă, шофер та ĕçрен пушанчĕ, вĕçтерĕрех, ыран, каç еннелле, каялла çитме тăрăшăр вара.

Лăпланчĕ Эриван. «Тĕнчере ырă çынсем пурах çав», — тесе савăнтарчĕ хăйĕн чунне. Анчах çак пĕчĕк савăнăç та нумая пыраймарĕ. Ялтан тухсан инçе те каяймаччĕ, хура пĕлĕтсем тĕнчене йăлтах хупласа хучĕç те асар-писер вут-тăвăл кăлара пуçларĕç. Кăшт тăрсан, каткаран тăкнă пек шултра çумăр чашлаттарса ячĕ. Уйпа чупакан симĕс «Жигули» кустăрмисем йăкăш та якăш унталла-кунталла йăкăртатма тытăнчĕç.

— Çитрĕмĕр! — терĕ шофер, машина пĕр лупашкара шанчăксăрах лакса ларнине ăнланса. — Çылăхлă эс. Аçу та темшĕн кĕтмест, ав, сана.

Тапаланчĕç, тĕртрĕç, хăшкăлчĕç, иккĕшĕ те чăм-шыва ӳкрĕç, çук, тапратаймарĕç машинăна вырăнтан. Çумăрĕ вара ишрĕ те ишрĕ, çĕре çунтарса ярасла çиçĕм çиçрĕ, урса кайса аслати авăтрĕ.

...Ашшĕне ял çыннисем Эривансăрах тирпейлесе пытарчĕç. Унччен чиперех çӳрекен амăшĕ çавăн чух ураран ӳксе чире кайрĕ пулмалла. Эриван вара ашшĕ вилтăпри çине тепĕр хĕрĕх кунтан тин çитме вăхăт тупрĕ. Чылайччен ларчĕ вăл юман хĕрес умĕнче, тăпра çине эрех тумлатрĕ. Хăй черкке хыççăн черкке ӳпĕнтерчĕ, чунне хĕнерĕ, макăрчĕ, куççулленнĕ питне çанă вĕçĕпе типĕтрĕ.

Тепĕр çул вара, çав ăшхыппине пусарма тесе амăшĕ патне тарса килсен, вăл вăйсăр карчăк умĕнче чăтма çук пысăк айăпа кĕнине туйса, хăй мĕн тума пултарнине йăлтах тума тăрăшрĕ. Пайтах вутă хатĕрлесе хăварчĕ ун валли, пахча картисене юсарĕ, çав ĕçсем вăхăтĕнче кӳршĕ-аршăпа, тăван-пĕтенпе хутăшса, каллех вĕсен ăшшине, вĕсен ырă кăмăлне туйса илчĕ. Вĕсен шăкăлшăкăл калаçăвĕнче, вĕсен, пĕрре пăхсан, нихăçан та ниçта та васкамасăр ĕçленинче, анчах кун каçа темтепĕр тума ĕлкĕрнинче, уяв-мĕн çитсен, чăн-чăн этемле савăнма пĕлнинче çын пурнăçĕн чи аслă телейĕ, хăтлăхĕ, канлĕхĕ вырнаçнăн туйăнчĕ Эривана. Хăй çак телейпе хăтлăха чылайранпа курмасăр-илтмесĕр пурăннăшăн ӳкĕнчĕ вăл ăшĕнче, хăйĕн арпашса кайнă пурнăçне харам иртсе кайнă вăхăт вырăнне хучĕ. Пурте-пурте чăтма çук тăван та çывăх кунта, таса та çутă, ăшă та сиплĕ.

Чун канлĕхне тупма е, тĕрĕсрех каласан, ăна, çамрăк чухнехи пек, тепĕр хут хускатма урăх сăлтав та тупăнчĕ ун çавăн чух-

не. Ку вăл шăрăх кун уçă шыва чăмнă пек, кун каçипе йывăр ĕçре ĕшеннĕ хыççăн тутлă-тутлă ыйха путнă пек, анлă-анлă тӳпен тăрă сывлăшне çăта-çăта ыррăн та телейлĕн вĕçнĕ пек туйăнса кайрĕ Эривана.

...Кĕтмен-туман çĕртен тĕл пулчĕç вĕсем тăван ялта. Ирхи тĕтререн тасалса çитнĕ ешĕл çĕр хăйĕн кăкăрне куçа шартса хăпаракан çамрăк хĕвеле çупăрлама ирĕк панă хӳхĕм вăхăтчĕ. Чĕлтĕрчĕлтĕр юхакан Пыллă çырма хĕрринчи вăйлă çăлкуç валакĕнчен шăла тивекен çугă шыв шăнкăртататчĕ. Çав çăл шывĕпе çăвăнса, хăйне хăй каллех калама çук чĕрĕ те харсăр, çивĕч шухăшлă та витĕр куçлă туякан Эриван, кĕпине тăхăнма тесе, çăл пури çине ларнăччĕ. Хăш вăхăтра, мĕнле майпа лекрĕ ун куçĕ тĕлне çак ĕмĕлке?! Ту çинчен ăна хирĕç, хăйĕн ылтăн çӳçĕ тавра хĕвелĕн пин-пин пайăркине сапаласа, ирхи тавралăх тĕсĕпе пĕрешкел кĕрен кĕпеллĕ тăпăл-тăпăл хĕрарăм, кĕвенти çине икĕ çутă витре çакса, шыв ăсма анать. Шартах турĕ Эриван чĕринче. Ах, аннеасанне, кукаçи-кукамай! Хăçан тата ăçта пулнăччĕ-ха çакăн пек самант? Ара, пулнăччĕ-çке тахçан, пулнăччĕ!

Хĕрарăм ун патнелле çывхарнăçемĕн Эриван хăй ăшĕнче темле хивре те пултăклă вăй капланса килнине, çав вăй ăна халиччен курман-илтмен ырă-ырă, çутă-çутă тĕнчене йыхăрса кĕрессе туйса илчĕ. Темĕн пулатех, темĕн кĕтетех унăн тулланса, кӳтсе çитнĕ чунне! Пулмаллах, ара, пулмаллах, ун тĕллĕн те уçăлмаллах вĕт-ха пĕрре кунçул шăпи. Епле те пулин хăратса ярас марччĕ çак саманта! Епле те пулин...

Анчах кĕрен кĕпеллĕ хĕрарăм çывхарчĕ те çывхарчĕ ун патнелле. Эривана вара ун патне çак самантра хĕрĕхе çитсе пыракан Рита мар, тахçан-тахçан пурнăç авăрĕ айне кĕрсе кайнă хитре ачалăх, шкулта вĕреннĕ чухнехи хӳхĕм вăхăт, пирвайхи вăрттăн та таса, çавах вĕри те тăвăллă ăшхыппи туйăмсем тепĕр хут çаврăнса килнĕн туйăнчĕ. «Ан хумхан, çăкалăх...» — турех аса илчĕ вăл Ритăн темле чаплă юрăçсеннинчен те илемлĕрех сассине.

Шартах сикрĕ Рита çăл патĕнче тăракан Эривана курсан. Çукха, тӳрех палласа илеймерĕ вăл ăна. Палланă пулсан, мĕн те пулин калатчех ĕнтĕ. Спорт тумĕ тăхăннă арçын кĕтмен çĕртен сиксе тухнăран çӳçенсе илчĕ вăл, ырăмарланчĕ, унăн унченхи пекех илемлĕ питçăмарти çинче йăмăх путăк палăрчĕ. Çук, çамки çинче пурнăç хăварнă картсем пурри те, çӳçĕнчи тĕл-тĕл кăвак пайăркасем те, кĕлетки кăштах тулса чăмăртанни те çак хĕрарăма унченхи харсăр та хăюллă хĕрачапа, унченхи Ритăпа, танлаштарма ним те чăрмантармарĕ. Вăхăт варкăшĕ вăйсăр пулнă иккен çак хĕрарăм умĕнче.

Мĕн калас-ха Ритăна паян? Мĕнрен пуçлас-ха Эриванăн хăй сăмахне? Мĕншĕн Рита ăна тӳрех палламарĕ-ши?

Хăратса ярас марччĕ çак саманта!

Рита пĕр витрине валак айне вырнаçтарчĕ те витре кĕмĕл пек чĕрĕ шывпа тулнă вăхăтра ирĕксĕрех Эриван çине пăхса илчĕ. Тӳрех асăрхарĕ Эриван Рита куçĕнче хĕлхем ялкăшса çуталнине. Тулли витре лаштах анса кайрĕ те унăн хăлăпĕ кĕвенте çекĕлĕнчен вĕçерĕнчĕ, тепĕрне, пушă витрине, чутах çĕре ӳкермерĕ Рита.

— Эриван? — кăшт çеç илтĕнмелле пăшăлтатрĕç унăн тутисем.

— Эпĕ, — терĕ Эриван, çакăн хыççăн тата мĕн пуласса кĕтсе.

— Кама кĕтетĕн эс кунта? — чăнне пĕлес тесех ыйтрĕ хĕрарăм.

— Сана, — персе ячĕ Эриван, хăйĕн чăрсăрлăхĕнчен кăшт тĕлĕнсе. — Сана, Рита. Çирĕм çул...

— Ай-юй, — терĕ лешĕ, хĕрелсе кайса, — тахçан эсĕ кун пекех хăюллă марччĕ.

— Пурнăç пăсать çылăхсăр чунсене, — терĕ те Эриван, ку вăйăран малашне ним ыррине те кĕтме çуккине ăнланса, Рита еннелле алă тăсрĕ. — Ну сывă-и, Рита? Чăнах та, кĕтменччĕ сана çакăнта тĕл пуласса.

— Эпĕ те, — хуравларĕ Рита, ăна алă парса. — Шкул çулĕсем те тĕлĕкри пек кăна тăрса юлчĕç.

— Çамрăк чух йышпа тупа тунăччĕ, кашни пилĕк çулта пĕрре тĕл пулăпăр тенĕччĕ, ав кур, çирĕм çул та иртсе кайрĕ, пĕрне-пĕри, акă, аран паллакан пултăмăр, — хăйсен сăмахне тытайманнишĕн ӳпкелешнĕ пек калаçрĕ Эриван.

— Пурнăçăн ун хăйĕн екки-йĕрки-çке-ха. Çемье, ача-пăча, ĕç-пуç — ăçтан йăпăр-япăр хăпса тухан. Эсĕ, Эриван, улшăнман та темелле, çамку çеç кирлинчен ытларах çуталнă, — ун çине куçне хĕсерех пăхса асăрхарĕ Рита.

— Ăслă çӳç ухмах пуçран тарать, теççĕ-и-ха? Эсĕ вара унченхинчен те хитререх, — Ритăшăн чăннипех савăнчĕ Эриван. — Шупашкар çанталăкĕ килĕшнĕ, эппин, сана. Тахçан эс унта агронома вĕренсе тухнă тетчĕç.

— Ай-юй, унтанпа ĕнтĕ виç ĕмĕр те иртсе кайрĕ, — терĕ те Рита, сăртран тепĕр хĕрарăм шыв ăсма аннине асăрхаса, васкасах витрисене тултарма пĕшкĕнчĕ.

— Халь ăçтарах вăй хуратăн-ха, Рита? — ыйтрĕ Эриван, ăна куçран вĕçертме хăраса.

— Кунтах, Эриван, хамăр колхозрах, — тавăрчĕ Рита. — Кĕçех çулталăк çитет ĕнтĕ. — Унтан пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ те кĕтмен çĕртен çапла хушса хучĕ: — Каях, Эриван, авă, пĕр хĕрарăм анать... Уй куçлă...

Кĕтменччĕ Эриван Рита çапла каласса. Çавнашкалах кĕвĕç чунлă-шим ун упăшки? Анчах Рита кăмăлне хăварасси килмерĕ унăн, вăл вара, юрать, ăнлантăм тенĕн пуçне сĕлтрĕ те çăл патĕн-

чен васкамасăр утса кайрĕ. Ăнланма çук темле вăрттăнлăх пытаннăн туйăнчĕ ăна Рита сăмахĕсенче. Мĕн-ши çав вăрттăнлăхра?

Тепĕр виçĕ кун пурăнчĕ Эриван тăван амăшĕ патĕнче. Ритăна тепĕр хут курмасăр хулана тухса каясшăн пулмарĕ вăл.

Çарăмсан хĕрринче туса лартнă пысăках мар теплицăсенче колхоз хăярпа помидор çитĕнтерет иккен. Çавăнта пырса тухрĕ Эриван каçпулттипе. Хĕрарăмсемпе ача-пăчан хĕвĕшӳллĕ сас-чĕвĕ тӳрех пырса кĕчĕ ун хăлхине. Апла пулсан, нумайăн ĕçлеççĕ пулас. Çапла, хĕрарăмсен самаях пысăк ушкăнĕ çум çумлать иккен, калчасене кăпкалатать, ачи-пăчи вара чупсах витри-витрипе çывăхри пĕверен шыв йăтать. «Ăмсанмаллах мар ку ĕç. Петуховсен килти теплицинче механизаци таврашĕ чылай вăйлăрахчĕ, — шухăшларĕ Эриван. — Кунта, ав, темшĕн пăрăхсем те хурса тухман». Çав вăхăтра вăл хăй çине ыйтуллăн пăхса тăракан Ритăна асăрхарĕ.

— Ну, мĕнле, килĕшет-и пирĕн хуçалăх? — терĕ Рита, Эриван хăюллăнах хĕрарăмсем патне пырса тăрсан. — Çĕнĕ ĕç-ха ку пирĕншĕн. Пĕлтĕр туса лартрăмăр та, кăçал, акă, пĕрремĕш çимĕç пухса илес тетпĕр.

— Ытла йывăра килмест-ши сире капла? — ыйтрĕ Эриван. — Ĕç вăйĕ нумай тăккалатăр-çке. Ку халăхпа тем пысăкăш плантаци çитĕнтерме пулать.

— Мĕн тăвăн, ĕçе çăмăллатма хатĕрсем çитмеççĕ-çке. Акă, шыв пăрăхĕсем тупаймасăр хăшкăлатпăр, насуссем çитмеççĕ, смесительсем тупаймастпăр. Ăçта кăна кайса пăхмарĕç пуль председательпе тĕп инженер, — пăшăрханса калаçрĕ Рита.

Шыв пăрăхĕсем, насуссем, смесительсем... Эриван алли витĕр мĕн чухлĕ тухман пуль вĕсем юлашки çулсенче? Пĕлнĕ пулсан, çав детальсем шăпах Ритăна кирлине сиснĕ пулсан... Халĕ акă ăна нимĕнпе те пулăшма пултараймасть Эриван — пулнă, иртнĕ, пĕтнĕ.

«Çапах та... — вĕççе илчĕ ун пуçĕнче, — çапах та... — анчах шухăшне вĕçне çитереймерĕ, ун çине тӳрех алă сулчĕ: — Çук, таврăнма юрамасть, тĕвĕленĕ çыхха тепĕр хут салтма кирлĕ мар!»

Ĕç вĕçленĕ хĕрарăмсемпе ачасем, унченхи пекех шавлăн калаçа-калаçа, ушкăнăн-ушкăнăн килĕсене тухса утрĕç. Рита васкамарĕ-ха. Хăй ĕçлекен вырăна Эриван пĕр ахаль килменнине сисрĕ вăл, ачалăхри юлташĕ ăна тунсăхланă курăнать, пĕр-пĕринпе калаçса ялалла пĕрле утнинчен ним япăххи те пулас çук. Ĕç хатĕрĕсене вырăна лартса тирпейленĕ хыççăн икĕ теплицине те çăрапа питĕрсе лартрĕ Рита, пĕве хĕрринче шухăша кайса тăракан Эриван патне пычĕ.

— Пĕвине лайăх пĕвеленĕ вара, — терĕ Эриван. — Тинĕс пекех сарăлса кайнă.

— Çул-йĕр тăвакансем савăнтарса хăварчĕç, — хуравларĕ Рита. — Пирĕн телее, çырма урлă пысăк трасса хыврĕç, пĕвине те бетонласах турĕç. Кĕçех пулă ĕрчетме пуçлатпăр акă. Пĕлетĕн-и, çуркунне кунта икĕ кайăк кăвакал килсе илешрĕç. Чĕп кăларчĕç кăçал.

— Пĕр-пĕр усал çын хăратса ан ятăрччĕ вĕсене, — терĕ Эриван.

— Хăрамаççĕ. Çынсене иленчĕç ĕнтĕ. Куллен апат лартса паратпăр...

Рита, Рита. Ав мĕнле çепĕç чунлă иккен эсĕ.

— Астăватăн-и, çав çаврака сăрт патĕнче Елля кукри текен тарăн вар пурччĕ. Пĕрле шыва кĕреттĕмĕр унта, — аса илчĕ Эриван.

— Мĕнле астумастăп пуль. Пĕве шывĕ ăна та хупласа хучĕ...

Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ, çырана сивĕ ĕнтрĕк çапрĕ, анчах сивĕ пулмарĕ Ритăпа Эривана. Çырма хĕрринчи кивĕ çатан карта хĕрринче пĕчĕк кăвайт хурса ячĕç, калаçрĕç, иртнине аса илчĕç, пĕр-пĕрин пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлчĕç вĕсем. Çук, Рита пурнăçĕ те, Эриванăнни пекех, ăмсанмалла килсе тухман иккен. Институтран вĕренсе тухсан, Çĕпĕрти пĕр совхоза ĕçлеме кайнă вăл, çавăнта тепĕр икĕ çултан пĕр пултаруллă учителе кавча тухнă, ачаллă пулнă. Телей тени туллин тапса тăнă вăхăтра, упăшки наука кандидачĕн диссертацине кĕç-вĕç хŷтĕлес умĕн, пăсăлса кайнă унăн пурнăçĕ — ялти учитель, математикăн пулас «çăлтăрĕ», «ешĕл çĕлене» унччен те тиркесех тăманскер, ĕçке ерсе кайнă. Темиçе хут та больницăсенче сыватнă ăна, укĕтленĕ, йăлăннă арăмĕ, анчах усси пулман. Пĕлтĕр вара ывăнса та хăшкăлса çитнĕ Рита этем ĕретĕнчен йăлтах тухса кайнă упăшки çине алă сулнă та, унпа уйрăлса, вунпиллĕкри ачипе пĕрле тăван яла тавраннă. «Кураймастăп, чăтма пултараймастăп ĕçке ерсе кайнă çынна. Мĕншĕн çуралнине, мĕншĕн тата камшăн пурăннине манса каякан этем выльăхран мĕнпе уйрăлса тăрать-ха, Эриван?» — тесе вĕçлерĕ Рита хăйĕн сăмахне.

«Авă мĕншĕн вăхăтсăрах темиçе йĕр палăрнă иккен санăн çамку çинче, ав мĕн тума кăвак çŷç пайăркисем курăнаççĕ сан пуçунта», — тавçăрса илчĕ вара Эриван.

Хăй те вăл пурнăçĕнче мĕн пулса иртнине пытарса тăмарĕ вара. Виолетта тепĕр чух, Эдика ашшĕ-амашĕ патне хăварса, киле икшер-виçшер кун пырса лекменни çинчен çеç калама хал çитереймерĕ — çакă вăл кил хуçине, упăшкана (Эривана хăйне эппин) калама çук намăса хăварнине уçса пани пулĕччĕ, тесе шухăшларĕ арçын.

Кайран вĕсем, иккĕшĕ те йывăр шухăш айне путса, ним каласа пĕлеймесĕр ялалла утрĕç.

— Çырăн-и ман пата?—- ыйтрĕ Эриван Ритăпа сывпуллашнă чух. — Хулана. Тĕп почтамта. «До востребования» тесе?

– Çук, Эриван, – терĕ Рита. – Эпир текех çамрăк мар ĕнтĕ. Ывăл умĕнче чыса ярас марччĕ. Кĕмĕл ĕмĕтсемпе текех йăпатас марччĕ хамăра. Эсĕ вара, – куçран пăхса каларĕ вăл, – тӳрленме тăраш, хăвăртрах хăвăн çылăхусенчен тасал...

– Çапах та çыр эс, Рита, кĕтетĕп, – тархасласах тенĕ пек ыйтрĕ те Эриван, ачалăхри тусĕпе сывпуллашса, тепĕр куннех тăван ялтан та тухса кайрĕ.

Çавăн чух сывă амăшне юлашки хут курса юлнине те пĕлеймерĕ-ха вăл.

Колхоза пĕртен-пĕр çыру çырса ячĕ Эриван çавăн хыççăн. Рита патне. Питĕ кĕске пулчĕ çав çыру. «Васкасах облаçри РАПОна пирĕн управленирен теплица валли кирлĕ хатĕрсем ыйтса, заявка ярса парăр. Эриван Пайтуллов».

Тăван çĕр, тăван колхоз умĕнчи, Рита умĕнчи тивĕçне тем пулсан та пурнăçлама тăрăшрĕ вăл. Хулана çитсен тепĕр куннех отпускран тин кăна таврăннă Дубасова шыраса тупрĕ, ăна тӳррĕн те хăюллăн çапла каларĕ:

– Акă мĕн, Илья Ильич, сана ыран е тепĕр кун управлени пуçлăхĕ леш хатĕр пăрăхсем пирки чĕнтерет пулсан, эс турткаланса ан тăр. Колхозра кĕтеççĕ вĕсене.

– Эс мĕн, кĕрӳçĕм, тилпĕрен çимен пулĕ те? – ăнланмана печĕ Дубасов.

– Питĕ кĕтеççĕ, Илья Ильич, – сассине хăпартрĕ Эриван. – Асту вара, эп каланине тумасан, хăвна мĕн кĕтнине ху пĕлетĕн.

– Сана вара? – чеен куç хĕссе каларĕ Дубасов.

– Манăн хваттер ытла та пĕчĕк, Илья Ильич. Санăн керменӳ вара тахçанах патшалăх пурлăхĕ пулма хатĕрленет.

– Сысна! – чăтса тăраймарĕ бригадир. – Сутма шутларăн апла? А эс кам-ха кунта? Эс кунта ĕçлеместĕн-çке текех.

– Еçлеместĕп те, сана витĕр пĕлетĕп. Ан пăркалан, вĕсем санăн «перекетленĕ» материал фондĕнче. Асту, ревизи ан килтĕр.

Çапах парăнтарчĕ вăл çав кун чее те выçă куçлă Дубасова. Нумай та вăхăт иртмерĕ, «перекетленĕ» материала пĕтĕмпех Çарăмсан хĕрринчи колхоза турттарса кайрĕç.

«Мелиораци» пĕрлешĕвне ĕçлеме куçрĕ Эриван çавăн хыççăн, пĕрмаях районсене тухса çӳрерĕ. Дубасовпа пулса иртнĕ хирĕç-çӳ хыççăн Петуховсем, уйрăмах килти патша арăмĕ, унпа калаçма та пăрахрĕç. Çапах хулана килсен кашнинчех тĕп почтамта кĕре-кĕре тухрĕ Эриван, Ритăран тĕмсĕлсех çыру кĕтрĕ, кĕтни вара усăсăрах пулчĕ. Çук, çывăха ярасшăн мар иккен ăна Рита. Çапах та шанчăка çухатмарĕ вăл, паян-ыран пурпĕрех мĕн те пулин пуласса кĕтрĕ.

* * *

Амăшĕ йывăр чирлени çинчен калакан телеграммăна вăл хулара илчĕ. Ĕлкĕрчĕ ун патне Эриван, унăн чĕрĕ куçĕсене те курса юлчĕ. Тĕлĕнсе пăхрĕ амăшĕ ывăлĕ çине, анчах, тăнне çухатманччĕ пулин те, Эривана каçаратăп та каçармастăп та тесе каламарĕ. Ывăлĕ хăй те сăмах чĕнме пултараймарĕ, вилекен амăшĕ çине шăппăн пăхса тăчĕ, макăрса ярас мар тесе, çине-çинех сывлăш çăтрĕ. Чи юлашки самантра çеç пуçне сĕлтсе илчĕ амăшĕ, «сывă пулăр» тесе каласшăн пулчĕ пуль, çавăн хыççăн кăштах хăрăлтатса илчĕ те вăйсăррăн куçне хупрĕ.

* * *

«Нивушлĕ кĕрсе тухаймасть-ши Рита?» — канăçсăрланчĕ Эриван.

Пуçĕ çĕмĕрĕлсе тухасла ыратрĕ унăн. «Сывлăш, сывлăш кирлĕ», — терĕ вăл хăйне хăй. Çак шухăшпа пӳрт алăкне уçрĕ, алăк ани урлă ула кушак сиксе каçрĕ те, Эриван ури çумне тĕршĕнсе, мăрăлтатма пуçларĕ. «Хырăму выçнă-çке сан», — тавçăрчĕ Эриван, пӳлĕме кĕрсе, ăна-кăна пăхкаларĕ, пĕр чӳлмек тĕпĕнче сĕт юлнине асăрхарĕ, ăна кăмака кĕтессинче ларакан хуралса кайнă турилккене ярса пачĕ те килкартине тухрĕ. Кунта та Эривантан пулăшу ыйтакан тупăнчĕ, картлашка патĕнчех тăватă чăх та пĕр автан кĕпĕрленсе тăраççĕ.

«Ăхă, — терĕ Эриван, — сирĕн те хырăм выçнă-çке. Мĕн тупса парам-ха эп сире?» Кĕлете кĕчĕ вăл, тӳрех ун мачча кашти çĕрсе хуçăлса аннине, çурт тăрринче темиçе çĕрте уçă хушăксем пуррине курчĕ. Пĕр пăтавккара (ача чух тыткаланă савăта вăл тӳрех палласа илчĕ) кăштах пĕлтĕрхи тулă сыхланса юлнă иккен, çавна пĕр йĕкĕр ывăç илчĕ те чăхсене сапса пачĕ. «Вăт сана, - шухăшларĕ вăл, — тӳрех хăпса каясси пулмасть-ха ку çуртран, чĕрĕ чунсене ăçта та пулин вырнаçтармаллах».

Çуралнă çурт çине картишĕнчен те, урамран та чылайччен пăхса тăчĕ Эриван. Мĕн чухлĕ асаилӳ çыхăннă унпа! Малти пӳртне ниме туса çĕклеттернĕччĕ ашшĕ, хыçалти ик кĕтесне вара ашшĕпе ывăлĕ, ĕнепе вăрман турттарса, икĕ çул хăпартрĕç. Илсе килеççĕ те виçĕ пĕрене, вĕсене чутласа, мăкласа вырнаçтараççĕ, çапла çĕнĕ сыпăк пулса тăрать. Унтан каллех вăрмана каяççĕ вĕсем, лесник кăтартса панă визир тăрăхĕнче юрăхлă кĕреш шыраççĕ, йăвантарса сыпăлаççĕ, хашка-хашка тăрăхла урапа çине хураççĕ, ашшĕ каллех вăрманта юлать. Эриван вара, вăрман сĕмлĕхĕнче кăшт çӳçенсе, çапах çавна ашшĕне кăтартас темесĕр, йĕвен чĕлпĕрне тытать, тапаçланса утакан ĕнене хисте-хисте ялалла çавăтать. Килне çитсен, кĕреше çĕр çине антарма вăл урамри

ачасене тупать, унтан кăшт сывлăш çавăрать, ĕнене шăварать те каллех вăрманалла çул тытать. Кунĕсем шăрăх тăраççĕ, ĕнене шăна-пăван çыпăçать, хӳрине çапкалантарать ула ĕне, куçĕсем ĕмĕрех шывланса тăраççĕ унăн, куççуль юхтараççĕ. Мĕн тăвăн, тулли лавран пушанаймасть Хушкапуç, çемьен йывăр пурнăçне вăл, килти çынсем пекех, чăтăмлăн туртать.

Халь ав, пусăрăннă, тайăлнă, кивелсе тĕссĕрленнĕ çак çурт. Мĕн каласси, вăтăр çул ытла иртрĕ-çке унтанпа. Ашшĕ çурчĕ вара çакăн пек мĕскĕнленсе, кĕлмĕçленсе юлнине паян тин асăрхарĕ вăл.

«Нивушлĕ кĕрсе тухмасть-ши Рита?»

Ял çине каç ĕнтрĕкĕ анса-ансах пычĕ. «Çук, — терĕ Эриван хăй ăшĕнче, — ниçта та каймастăп эпĕ, ниçта кайса та хама хĕрхенме ыйтмастăп. Çывăрас пулать, хăвăртрах çывăрса каяс та ыратакан чуна канăç парас».

* * *

Ир выртнăскер, ир-ирех вăранса кайрĕ Эриван. Çанталăк мĕнлерех пулнине пĕлес тесе, тӳрех малти чӳрече патне пырса тăчĕ вăл. Пырса тăчĕ те, шалт тĕлĕнсе, хытса кайрĕ.

Август ирĕн çăра тĕтри, такам, юмахри пек вăйлă та тĕреклĕскер, манирсĕр пысăк сенĕкпе типнĕ утă валемĕсене çавăрçавăра пынă пек, малалла та малалла кусать. Çӳлерех — тахăшĕ тăп-тăрă сенкерлĕхе куç-пуçа лăпкакан, татти-сыпписĕр ырлăхпиллĕх пиллекен, ӳсĕртсе яракан йăмăх кĕренпе калама çук пĕлсе хутăштарса янă та — ун çути тĕнчене тĕлĕнмелле килĕшӳлĕх парса тăнăн туйăнать. Тухăçра çак çутçанталăкăн аслă хуçи — куçа шартса яракан хĕвел — шăранса, çаврăнкаласа хăпарать. Çаврака çĕр çинчи тĕтрене хăваласа, ун пит-куçне сывлăшпа çуса тасатать-мĕн ăшă хĕвел. «Ырă кун пултăр, савнă çĕрĕм, канлĕ пулчĕ-и саншăн иртсе кайнă çĕр? Ырă кун сире, тĕрлĕ йывăç-курăк, тĕрлĕ чĕрчун та тĕрлĕ вĕçен кайăк! Ырă кун сире, çынсем! Ĕнерхи канăççăр куна, хĕвĕшĕве, харкашăва, пĕр-пĕрне çиллентернине, пĕр-пĕринпе çапăçнине, пĕр-пĕринпе сывпуллашнине, тарăхнине, макăрнине манса кайрăр-и эсир? Темле йывăр пулсан та, лăпланăр, эпĕ сире каллех нумай-нумай ырлăх парăп-ха малашне, сирĕн хуйхăра, сирĕн суранăра сиплеме тăрăшăп. Эпĕ — сирĕнпех, апла пулсан, пурнăç малаллах тăсăлать...» Çапла саламлать пек çĕр çинчи мĕнпур чĕрĕлĕхе ирхи хĕвел. Паллах, çавăн пек саламлать. Эриван ăна хăй хăлхипе хăй илтет, хăй куçĕпе хăй курать. Авă, картишĕнче çунат çапса, автан авăтать, чăх кăтиклетет, кĕтĕве васкавлăн пăру, тăват уран сиксе, урам тăрăх ĕрĕхет, садра кайăксем пĕр чарăнмасăр чĕвĕлтетеççĕ. Вăранчĕ çĕр, вăранчĕ

те çутă хĕвеле, аслă çутçанталăка пĕтĕм кăмăлтан тав тума пуçларĕ. Савăнăçне ниçта чикеймесĕр, ĕнерхи вăйсăрлăха, çуйхашăва, харкашăва тĕпренех манса кайса, паян тасарах та çутăрах, сывлăхлăрах та ăслăрах пулас тесе.

Çак вăхăтра илтрĕ Эриван шушулкка сассине. Хапха ерипен уçăлчĕ те, картишне Рита кĕрсе тачĕ. Тӳрех тĕл пулчĕç вĕсен куçĕсем: Эриван чӳречерен пăхса тăрать, картишĕнче — хăй çине тӳррĕн тинкернĕрен сасартăк çухалса кайнă Рита. Хыпăнса ӳкнĕ Эриван ним шутласа тăмасăр алăк патне чупрĕ.

— Каçар эс мана, Эриван, пысăк хуйхă сан, — пăшăлтатрĕ Рита. — Эпĕ килеймерĕм, ĕçпе хулана кайнăччĕ, каç пулсан тин çитсе ӳкрĕм...

* * *

...Рита тухса кайсан, Эриван ашшĕн тутăхса кайнă пурттине тупрĕ, пӳрт йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ, кашни пĕренене шаккаса пăхрĕ. «Кирлĕ материал та хăйне пулăшакан икĕ-виçĕ çын тупăнсан, ĕçĕ кунта икĕ-виçĕ эрнелĕх», — шухăшларĕ вăл.

...Август уйăхĕ тин çеç пуçланнăччĕ-ха.

САН ЯТУПА

Сăвăлла трагеди сыпăкĕ

Тăваттăмĕш картина

Чĕкеçĕн чухăн пӳрчĕ. Сĕтел хушшинче тĕрĕ тĕрлесе ларакан Ч ĕ к е ç хуллен юрлать.

Ч Ĕ К Е Ç
Анаталла мĕн лайăх та,
Анаталла çул лайăх.
Савни, саншăн мĕн лайăх та,
Маншăн пулсан эс, лайăх.
Уйăх тăлăх, уйăх тăлăх
Çакă кăвак тӳпере.
Савни, мана сансăр кичем
Çакă çутă тĕнчере.
Кăвак чечек хумханать те
Кашни çил вĕрмессерен.
Чун савни аса килет-çке
Кашни сывламассерен.
Эх, юрату, юрату та...

Кĕтмен çĕртен алăк уçăлать те, пӳрте В а н ю р к к а кĕрсе тăрать. Чĕкеç хăйĕн тĕррине йăпăр-япăр пытарма тăрăшать.

Ч Ĕ К Е Ç
Ку эс-çке, Ванюркка.
Ирт. Мĕн çăмăлпаччĕ?

В А Н Ю Р К К А
А... Мĕн-ха... Эпĕ...
Так ахаль кăначчĕ.
Чӳречӳнте хăй çутине курса
Кĕрем-ха терĕм. Ямăн-и хуса?

Ч Ĕ К Е Ç
Ĕç пур пулсан, ма хăвалас сана?

В А Н Ю Р К К А
Кă-ăххăм... Кăтарт-ха эс мана леш хăнуна.

Ч Ĕ К Е Ç *(куларах)*
Эппин, ак санăн та ăшу çунать?

В А Н Ю Р К К А
Эй, мĕн çунни унта...
Анне калать,
Авланмалла пĕрре тет,
Çавăнпа
Эп килтĕм-ха кунта.

Ч Ĕ К Е Ç
Эх, тăм юпа!

В А Н Ю Р К К А
Ну, ну! Эс лăпкăрах калаç, атту...

Ч Ĕ К Е Ç
Пĕлетĕн-и, мĕскер вăл юрату?

В А Н Ю Р К К А
Пĕлместĕп пуль...
Вăл – авланас килни.

Ч Ĕ К Е Ç
Мĕскер пулать, эппин, савни тени?

В А Н Ю Р К К А
Ан аташтар мана.
Савни вăл – пулас арăм.

Ч Ĕ К Е Ç
Шырарăн, тупрăн-и, тĕпчерĕн-и ăна?

В А Н Ю Р К К А
Мĕн-ма шырас-ха?
Тытрăм та вăрларăм!

Ч Ĕ К Е Ç
Кăмăлламасть пулсассăн вăл сана?

В А Н Ю Р К К А
Епле кăмăлламасть тет?
Ахахпи
Якура мар, мана савать.

Пĕлетĕп...
Вăл çаплалла халь Ванюркка шăпи.

Ч Ĕ К Е Ç
Эс ан култар-ха, Ванюркка.
Вилетĕп.

В А Н Ю Р К К А
Пăрах чĕвĕлтетме, Чĕкеç.
Ар çулĕ
Шăп çитнĕ ман. Хăвах куратăн пулĕ.
Çитет нуша курса, асапланса, –
Авланăп та – хаш ярăп сывласа.

Ч Ĕ К Е Ç
Хаш ярăп сывласа?
Эс пуйăн-и? Ав-ан!

В А Н Ю Р К К А
Шăп-шăпăрт лар.
Санран канаш ыйтман.
Пĕлместĕп пулĕ Ахахпи камне.

Ч Ĕ К Е Ç
Эппин, эс ăна мар, ун туприне
Саватăн ытларах?

В А Н Ю Р К К А
Сан мĕн ĕç пур?
Лар тетĕп шăп.
Асту вара, Якур
Илтес-тăвас пулсан çак сăмаха,
Сана эп каçармастăп, ухмаха.

Ч Ĕ К Е Ç
Эх, шел сана.
Айван эс, айванах.
Юрать вара.
Ман мĕн ĕç?
Авланах!

Чĕкеç Ванюркkаран пĕр пытармасăр каллех хăй тĕррине тĕрлеме пуçлать. Паçăрхи кĕвве ĕнĕрет. Ванюркка сак çине ларать.

В А Н Ю Р К К А *(ним тума аптраса)*
Ăçта-ха тетĕп сан хăна хĕрӳ?

Ч Ĕ К Е Ç
Хĕрӳ-кĕрӳ, хĕрӳ-кĕрӳ, кĕрӳ...
Сана шырать пуль-ха хашка-хашка:
«Ăçта-ши ман тур çырнă упăшка?..
Ăçта çӳрет-ши Ванюркка, мăнтарăн?..»

В А Н Ю Р К К А
Ан мăшкăлла, Чĕкеç.
Кулмашкăн чарăн.
Эп, хăв пĕлен... Ман тыткăччи сахал.

Ч Ĕ К Е Ç
Ăçта сан тыткăччи?
Эх, тăм пăшал!
Хăвах шутларăн-и çак шухăша,
Е тус-йышу пит лайăх «пулăшать»?

В А Н Ю Р К К А
Лар тенĕ шăпăрт!
Куршанак пекех
Чуна ыраттарса йĕплетĕн-çке.

Алăк сасси пулать те, пӳрте А х а х п и кĕрсе тăрать. Ванюркkана курсан, ун çине тĕлĕнсе пăхать вăл, çапах çакна ĕ хăвăрт пытарать, ним пулман пек, Чĕкеç патне пырса тăрать, ун тĕррипе савăнать.

А Х А Х П И
Ай-юй хитре пулать...
Эс пĕччен мар.

Ч Ĕ К Е Ç
Çук, пĕччен мар.
Хăна — çул çитнĕ ар.
Вăл сан патна-ха.
Пуплĕр. Эп каям.
(Тухса кайма тăрать.)

А Х А Х П И
Чĕкеç, ан кай.

Пӳртре хăварĕ кам
Яш каччăпа хĕре?
Шăв-шав ан пултăр,
Кайран нимрен-çукран тĕнче ан култăр.
Шӳтлетĕп эп, кăшт уçăлах, эппин.

Ч ĕ к е ç тухса каять. Ахахпи Ванюркка патне пырать.

Каларĕç-ха.
Хăвна ак куртăм тин.
Апла... Пултараймастăн эсĕ мансăр?

В А Н Ю Р К К А
Пултараймастăп çав...
Пултараймастăп сансăр...

А Х А Х П И
Кала-ха, чĕрӳнте темскер çунать-и?
Çав çулăм ман çине ӳкме пăхать-и?

В А Н Ю Р К К А
Çунать çав чĕрере, çунать темскер,
Йĕтем çинчи вучах пек вĕрискер.
Çав çулăм сан çине ӳкме пăхать...

А Х А Х П И
Апла-тăк, ку юратăвах пулать.

В А Н Ю Р К К А
Ман питĕ-питĕ авланас килет...

А Х А Х П И
Çавăн çинчен сана мĕн систерет?

В А Н Ю Р К К А
Мана-и? Мĕн?..
Кулмастни? Кăтартас-и?
(Тăма хăтланать.)

А Х А Х П И
(хăранă пек, ун умĕнчен пĕр-ик утăм каялла чакать)
Халь мар, халь мар.
Вăхăтĕнче кăтартăн.
Кайран валли кăшт юлтăр-ха хавасĕ.

В А Н Ю Р К К А
Вăт, сисрĕн эсĕ.
Сисрĕн те, ак, тартăн.
Эп пур... çав туйăмран курап хĕн-хур.

А Х А Х П И
Апла пулсан, тĕреклĕ эс, маттур.

В А Н Ю Р К К А
Епле тĕреклĕ пулас мар-ха ман,
Эп раштавра çуралнă, аптраман.
Ачалăхра эп йĕмсĕр-мĕнсĕр чурнă,
Хĕл сиввине те, çумăрне те чăтнă.
Сухапуçпе пӳ-сийĕм танлашсассăн,
Аслисемпе пĕрле эп тунă касă.
Вăрман касман-и эпĕ, тăм çăрман-и, –
Епле тĕреклĕ пулас мар-ха ман?

А Х А Х П И
Маттур, маттур, чăнах та, пултаран.
Сан пеккине эп питĕ кăмăллатăп.
Эппин, эс юрататăн-ха мана?

В А Н Ю Р К К А
Çаплах ĕнтĕ.
Сана эп юрататăп.
Унтан тата... пуян вăл пуянах.
Çурт лартăпăр...
Туянăпăр арман...
Хурт-хăмăр усрăпăр...

А Х А Х П И
Юрать, аван.
Пит пархатарлă ĕмĕт-шухăшу.
Анчах паян пĕр пĕчĕк пулăшу
Ыйтасшăн эп санран.

В А Н Ю Р К К А
Ыйт, ыйт, эп хатĕр
Шыва сикмешкĕн те, вута кĕме те.
Эс ыйт кăна. Тархасшăн, ан вăтан.

А Х А Х П И
Юрать, эппин, ыйтам.

Кунтан тухсан,
Ермипеле Пăрттас сана тĕл пулĕç.
Итле паян вĕсем мĕн хушнине.
Вĕсем ахаль хăвармĕç.
Лайăх тӳлĕç.
Эс тĕплĕ пурнăçла
мĕн хушнине,
Вара васка кунта, —
эп хирĕçлемĕп.
Турри çырать пулсан,
унран иртеймĕп.
Халь кай... Тăхта...
Килсем çывăхарах,
Кил тетĕп, ну,
Çывхар хăюллăрах.
Чупту мана...

Ванюркка хăюсăррăн Ахахпи питçăмартине сĕртĕнет.

Эх, эсĕ те...
(Хăй чуптăвать.)
Каях.
Асту, кĕтетĕп.
Çирĕп ман сăмах.

В А Н Ю Р К К А (*хыттăн кăшкăрса)*
Ах, тутлă та вара! Ах, тутлă та!
Эх, пурнăçĕ! Пыл-çу-çке, тупата!

Ванюркка тухса каять. Ахахпи каçса кайса кулма тытăнать. Кăшт вăхăт иртсен, çӳçне-пуçне тирпейлесе, вăл та урама тухать, юрă ĕнĕрлеме пуçлать.

А Х А Х П И
Тарăн варта хур пусрăм,
Вăрă тесе ан калăр.
Юр пуçласа юрларăм,
Пит шух тесе ан калăр...

Хыçалта Я к у р курăнса каять. Ахахпи ăна тӳрех асăрхать.

Ах, юррисем те çак Анаткасра!
Сăмахĕсем — чуна пырса тивеççĕ.

Я К У Р *(çывхарса)*
Эс тем паян хаваслă.
Ăнсăртран
Темле уяв çитмен пуль те?

А Х А Х П И
Çитеççĕ.
Пĕрре çеç мар. Тем чухлĕ.
Умлăн-хыçлăн.
Кашни пĕр туррăн кунĕ.
Выçă куçлăн
Ан пăх-ха эсĕ ман çине, Якур.
Эс ăслă, эс тĕреклĕ, эс маттур.
Анчах хăюсăр. Питĕ шикленӳллĕ.
Шухăшусем ытла иккĕленӳллĕ.
Çапах мана эс çав каçран вара
Пĕрре кăна чĕнмерĕн пуль ăшра.
Анчах килме хăю çитереймерĕн.
Ялйыш тем калĕ. Ыр ятна пĕтерĕн.
Ал сул çынсем çине.
Ал сул та сур.
Чун чĕлпĕрне кăштах пушат, Якур.
Пĕрре килет вăл çамрăклăх. Асту.
Кайран – те ырату, те юрату?..

Я К У Р
Тĕлĕнмелле.
Ялан пĕр кĕвĕ санăн.
Чун, туйăм, юрату...
Ытла ансат.
Хавас сăну çине пăхсассăн, калăн,
Пыраççĕ тейĕн ĕçӳсем ăнсах.

А Х А Х П И
Кулянмалли сăлтав пулман пулсассăн,
Эппин, мĕн-ма-ха хурлăхлă çӳрес?

Я К У Р
Мĕн чухлĕ каччă хаш сывлать пуль
саншăн!
Хăть вĕсене лăплантарса килес...

А Х А Х П И
Пĕлместĕп çав ку ял каччисене.

Я К У Р
Ку ял каччисене?
Эс хăв ютран-и?

А Х А Х П И
Каларăм-çке сана.
Йăлтах эс маннă.

Я К У Р
Çапла. Каланăччĕ.
Чĕкеç тусна
Тунсăхласа, эс килнĕ хăнана.
Анчах хăв ăçтанне эс каламарăн.

А Х А Х П И
Эп ăçтанне эс тĕпчесе тăмарăн.
Ав, çав ялтан эп.
Аслă Сĕнчелтен.

Я К У Р
Апла иккен.
Пит аякран пуль теттĕм,
Пит-куçунта хула шевли çиçет те,
Аллу чечен. Çурла тытмалли мар.
Эс пур — çĕр çынниех.
Пĕлмен. Каçар.

А Х А Х П И
Эс тĕрĕсех каларăн. Хусантан
Нумай пулмасть эп таврăнтăм.

Я К У Р
Хăçан?

А Х А Х П И
Пĕр уйăх каялла. Эс чим-ха, чим,
Ман сăмаха, мĕн, ĕненместĕн-им?

Я К У Р
Эп уншăн мар-ха, хулари çынсем
Мĕнле пурăннине пĕлес тесе...

А Х А Х П И
Мĕн пурăнни? Чăтма çук пăтранаççĕ.

Пухусенче вут сирпĕтсе вăрçаççĕ.
Пĕри апла калать, тепри капла.

Я К У Р
Эппин, йĕркесĕр пурăнать хула?

А Х А Х П И
Йĕркесĕр. Пит йĕркесĕр.
Никама
Хисеплеме, сума сума, савма...
Мĕн курăпăр капла?
Ак мĕн хăрушă.
Пăшал сасси кăна.
Ытти – пуш-пушă.
Кала, Якур, ку чухнехи этем
Нимпе те кĕреймест-ши ӳкĕте?
Юн юхтарса кăна йĕрке тусан,
Мĕнле çĕршыв пулать кунта кайран?

Я К У Р
Эс ӳкĕте кĕртесшĕн? Камсене?

А Х А Х П И
Ыйтатăн та. Çав большевиксене.

Я К У Р
Мĕн-ма-ха вĕсене?

А Х А Х П И
Мĕн-ма тесен,
Тахçан, вĕсем килсе пуçпуличчен,
Лăпкахчĕ пурнăç...

Я К У Р
Лăпкăччĕ?.. Çапла...
Пуян çынсемшĕн лăпкăччĕ ялан!
Ĕçхалăхĕ ăнланчĕ те çавна,
Кур, еплерех юпленчĕ самана.

А Х А Х П И
Ĕçхалăхĕ, эппин?
Чи тĕттĕм халăх?
Шăп çавăнпа вутра çунать патшалăх,
Ăс çук пулсассăн, вăй пулăшаймасть.

Я К У Р
Эс тутă çын пулас.
Тутти ăнланаймасть
Выçса-кӳтсе аптранă çынсене.
Калаç. Эп чăрмантармăп. Иртнине,
Тен, аса илĕн?

А Х А Х П И *(кăшт шухăша кайса)*
Иртнине манман.
Эп хам та тӳснĕ сахал мар.
Малтан
Улпут патне ача пăхма вырнаçрăм,
Пĕчĕкренех ун çуртĕнче сăнарăм
Эс халь каланă чăнлăха. Чунтан
Эп кураймасттăмччĕ çав йĕркене.
Юрать-ха, пуç ĕçлет.
Улпут хĕрне
(Вăл тăххăра-ши е вунна кайсассăн)
Çывхартрăм хам пата чеен, хавассăн.
Ăна пулах эп çырăва вĕрентĕм.
Яра куна пит хытă ĕшенеттĕм,
Çапах нумай вулаттăм каçсерен.
Таçтан та — Мускавран та Питĕртен —
Улпут патне килетчĕç хăнасеем.
Эрех ĕçсе лартатчĕç те çаксем
Пуçлатчĕç савăнма. Рояль калатчĕç,
Хутран-ситрен мана та йыхăратчĕç.
Чăваш юрри мĕнле янранине
Итлесшĕн-мĕн. Улпутăн кăмăлне
Ман, тарçă-хĕрĕн, хăварма юрать-и?
Вара ирĕксĕрех унта юрлаттăм.
Пĕлмесп, те аттерен, те аннерен
Ман сас пит çивĕч пулнă темлерен.
Пĕрре çапла эп çирĕме кайсан,
Пĕр пысăк çын килсеччĕ Хусантан.
Каллех юрларăм эпĕ. Çав хăна
Сасартăк сиксе тăчĕ те манна
Пуçларĕ мухтама, пуçран шăлма.
«Эп паянтан ак çак йăмăкăма
Хамран ниçта та хăвармастăп», — терĕ.
Улпут çак хăнана хирĕçлемерĕ.
Вăт çавăн пек эп лекрĕм хулана.
Кăштах вĕрентĕм те çав пуяна,
Ун ушкăнне савăнтарма пуçларăм.

Телей мĕнне хальччен ăнланаймарăм.
Иккен çут тĕнчере телей те пур.
Сана тĕл пултăм.
Тав сана, Якур.

Я К У Р
Пит йӳçĕ асилӳ ку чăнахах.
Апла халь сан пире тав тумалла.

А Х А Х П И
Эс тĕнчере пурришĕн тав тăватăп
Çӳлти Турра.
Эп кайăп тамăка та –
Эс йыхăр çеç. Эп хатĕр çапăçма.
Эп тăрăшăп, Якур, сан пек пулма.
Анчах, тăванăм, Турă çырнă çыннăм,
Темме-çке пытаратăн туйăмна.
Мĕн-ма чĕрӳ чĕнмест? Кама эс хывнă?
Мĕн-ма кăшт хĕрхенместĕн эс мана?

Я К У Р
Эппин, хăвна хĕрхенессе кĕтетĕн?
(Ахахпи çывăхнерех пырать.)

А Х А Х П И
Хĕрхенессе, Якур, ачашласса...

Я К У Р *(ун куçĕнчен пăхать)*
Ай-юй, тин çеç хăюллăччĕ – хĕрелтĕн...

А Х А Х П И
Ай, ан тăрах мана вăтантарса...

Я К У Р
Ах тур, вĕри те эсĕ...

А Х А Х П И
Сар хĕвел
Ăшши ларать хĕрарăм ăшĕнче.

Я К У Р
Ăшши çеç мар, унта вут-хĕм пулсан?

А Х А Х П И
Çут хĕвелтен çунса кайман тĕнче...

Я К У Р
Çапла, пин çăлтăр мар, ăшăтакан
Пĕр сар хĕвел кирлех çав арçынна.

(Каллех Ахахпие сĕртĕнет, ун куçĕнчен пăхать.)

Эп юрататăпах пулас сана...

(Хĕре ыталаса чуптума тăрать, анчах лешĕ унран самантлăха пăрăнма ĕлкĕрет.)

А Х А Х П И
Мĕн-ма «пулас-ха»? Туйăнать кăна-и?

Я К У Р *(каллех ыталать)*
Çук, туйăнмасть!..
Сана-и? Эп сана-и?!

Иккĕшĕ те юратăвăн вĕри ытамĕнче.

Те шыв шуйттанĕ эс, те арçури?!

А Х А Х П И
Çук, шуйттан мар эп. Юрату турри!
Хăçантанпа вут-хĕмлĕ чунăма
Пĕчченлĕхĕм кăшлать.
Çавна сисместĕн.
Чун хӳхлесе макăрнине илтместĕн.
Урăхларах пуль тенĕччĕ сана.
Юрату мар санпа — асап кăна.

Я К У Р
Каçар мана...
Хитре суйма пĕлместĕп.
Кирлех-и халь сана ĕнентерӳ?
Ил манăн чĕрене! Туятăп эпĕ:
Манра тапать пек сан вĕри чĕрӳ...
(*Хĕре чуптăвать.*)

А Х А Х П И
Çук, тепĕр хут чупту, ыратмалла!
... Пӳрте кĕрер. Усал куçсем пире
Ан курччăрах çак тутлă сехетре.

Пӳрте кĕреççĕ. Пӳртре çутă сӳнет. Çак вăхăтра Ю р а т у сăнĕ çуталса каять.

Ю Р А Т У *(юрă юрлать)*
Юратăва ача вăййи ан тейĕр.
Ӳссе арçын е хĕр çулне çитсен,
Вут-çулăм ман ытла вĕри, атьсемĕр,
Çунтарĕ вăл сире, ай, кунсерен.
Юратăвăн вут-çулăмĕ, атьсемĕр,
Самантлăха та тухмĕ чĕрĕртен.
Юратăва ача вăййи ан тейĕр.
Пĕлес пулать юратăвăн хакне.
Е çĕклĕ вăл, е макăртĕ, атьсемĕр,
Телей е хурлăх кӳрĕ çынсене.
Е тăлăха хăварĕ систермесĕр
Юратуран çуралнă пепкене.

Якурпа Ахахпи пӳртрен тухни, чуптуса ачашшăн уйрăлни курăнать. Якур каçхи йывăçсем айне кĕрсе çухалать.
Ç ĕ р п е В ă х ă т килсе кĕреççĕ.

Ç Ĕ Р
Çак вăйăран чĕрӳ хыпса кайсассăн,
Мĕн тăвăн эс, чиперĕм Ахахпи?

А Х А Х П И
Ялан çапла чун туй тăвать пулсассăн,
Эп хирĕç мар.
Вут хыптăрах, эппин...

Ç Ĕ Р
Хитре юмах çаптартăн эсĕ паçăр.
Епле Турра тав тумăн?
Тав тумасăр! –
Якур ĕненчĕ санăн юмахна.
Вăл пĕлеймерĕ-ха Ванюрккана
Паян эсĕ вилме ăсатнине.

А Х А Х П И
Вилме ăсатнине?
Ман айăп çук. Эп турăм хушнине.
Сапрун пичче çапла тума ăс пачĕ.

Ç Ĕ Р
Ма суйрăн Якура?

А Х А Х П И
Ак, Юрату суйтарчĕ.

Ю Р А Т У
Эккей... Вут хыптарас тесен чуна,
Меслет нумай вăл.
Усă кур кăна.

Ç Ĕ Р
Хĕр-тарçăра пулни мĕскер тата?
Çавна пĕлсен, улпут аçу мĕн калĕ?

А Х А Х П И
Ман пĕлтерме юрать-и чăн ята?
Асту, çавна пĕлсен, Якур ыталĕ!

Ç Ĕ Р
Эп чăнлăхшăн çуратнă çынсене!

В Ă Х Ă Т
Мĕн-ма çăварлăхлатăр ун чуне?
Куратăр — Ахахпи тĕнчи тӳлек.
Ун вăхăчĕ! Эппин, хăй пĕлнĕ пек
Çӳретĕр вăл. Юраттăр, култăр, çунтăр,

Ç Ĕ Р
Пĕр вĕçсĕр иртĕхтĕр.
Пĕр вĕçсĕр суйтăр...
Мĕнле ăнланмалла кун пеккине?

В Ă Х Ă Т
Ма сивĕтес-ха ун вĕри юнне?
Паян пурнать вăл.
Ыранхи тесен...
Çак хĕр тухмасть-тĕк суя çул çинчен,
Ăна эс, Çĕр, ху айăплăн кайран.

А Х А Х П И
Мĕнех, мана та чустаран туман.
Тархасшăн, Çĕр, эс тĕрĕсле мана,
Юратăва туртса ан ил кăна.

Ю Р А Т У
Пĕр вут хыпсан, мана туртса илеймĕн.
Сыватайми чир евĕр эп этемшĕн.

Çутă сӳнет.

ИМЕНЕМ ТВОИМ

Отрывок из трагедии в стихах

Четвертая картина

Бедная избушка Чегесь. За столом сидит Ч е г е с ь. Занятая вышивкой, она тихо напевает. Неожиданно дверь открывается и в избу входит В а н ю р к к а, Чегесь пытается спрятать свое рукоделие.

Ч Е Г Е С Ь
А, Ванюркка.
Какую весть принес ты?

В А Н Ю Р К К А
Зашел так просто.
Э... Это... Ничего...
Гляжу — сидишь одна. Чего гадать?
Дай, думаю, зайду. Не станешь гнать?

Ч Е Г Е С Ь
Зачем же гнать, наверно, дело есть?

В А Н Ю Р К К А
Гм. Покажи-ка гостью мне, Чегесь.

Ч Е Г Е С Ь (*с легкой усмешкой*)
Вон как, и у тебя на сердце пламя?

В А Н Ю Р К К А
Да что там...
Не дает прохода мама,
Одно твердит: скорей женился чтоб...
За этим и пришел.

Ч Е Г Е С Ь
Ах, остолоп!

В А Н Ю Р К К А
Ну, ну, полегче. А не то получишь...

Ч Е Г Е С Ь
Любовь — что это? Объясни-ка лучше.

В А Н Ю Р К К А
А то не знаю... Что ведет к женитьбе.

Ч Е Г Е С Ь
А кто тогда зазноба? Уточнить бы.

В А Н Ю Р К К А
Зазноба – это в будущем жена.

Ч Е Г Е С Ь
А ты искал? Узнал ли, кто она?

В А Н Ю Р К К А
Зачем искать? Я умыкну на славу.

Ч Е Г Е С Ь
Но если ты ей вовсе не по нраву?

В А Н Ю Р К К А
Как это не по нраву? Ахахпи
Меня, а не Ягура любит. Знаю...
Судьба сказала Ванюркке: не спи.

Ч Е Г Е С Ь
Ой, не смеши-ка, парень. Умираю.

В А Н Ю Р К К А
Не щебечи, как птаха, без причины.
Я по летам, смотри, уже мужчина.
Мне ни к чему вздыхать о ком-то тут.
Женюсь – и все заботы отпадут.

Ч Е Г Е С Ь
Богатством завладеешь, что ли?
Сла-авно!

В А Н Ю Р К К А
В советах нет нужды.
В твоих – подавно.
Про «бедность» Ахахпи я тоже знаю.

Ч Е Г Е С Ь
Любовь, выходит, у тебя шальная –
К приданому – не к ней?

В А Н Ю Р К К А
Тебе-то что?
Помалкивай. Не разевай роток.
А ежели хоть слово до Ягура
Дойдет – смотри. Я вмиг расправлюсь, дура.

Ч Е Г Е С Ь
Эх, жалко.
Глуп ты, видно, на всю жизнь.
Пусть будет так.
А мне-то что? Женись!

Не таясь от Ванюркки, снова принимается за вышивку. Напевает уже знакомую мелодию. Ванюркка садится на скамью.

В А Н Ю Р К К А (*не зная чем заняться*)
Ты думаешь мне гостью показать?

Ч Е Г Е С Ь (*с насмешкой*)
Ах, показать... да тут сидит сам зять...
Не ищет ли тебя она, бедняжка.
«Да где мой суженый? – вздыхает тяжко –
Куда пропал несчастный Ванюркка?..»

В А Н Ю Р К К А
Издевки эти брось.
Моя рука,
Ты знаешь, нелегка... Могу ухлопать.

Ч Е Г Е С Ь
Меня ухлопать?
Эх, ты, недотепа!
Еще к угрозам, видишь ли, готов.
Или своих наслушался «дружков»?

В А Н Ю Р К К А
Умолкни, говорят!
Как есть репей –
Все норовишь пристать к душе моей.

Слышится скрип двери – входит А х а х п и. Заметив Ванюркку, удивленно смотрит на него, но быстро оправляется и как ни в чем не бывало подходит к Чегесь, любуется ее вышивкой.

А Х А Х П И
Ой, как красиво.
Гости, вижу, к нам?

Ч Е Г Е С Ь
Да, важный гость.
Мужчина по летам.
К тебе он. Ну, толкуйте без меня вы.
(*Собирается уходить.*)

А Х А Х П И
Постой, Чегесь. Кто оставляет, право,
Девицу с парнем так, наедине?
Не поползли бы слухи обо мне.
Шучу. Однако просвежись, пожалуй.
Чегесь уходит.
(*Приближается к Ванюркке.*)
Извещена. Посмотрим, что за малый.
Так значит... без меня покоя нет?

В А Н Ю Р К К А
Покоя нет...
Не мил весь белый свет...

А Х А Х П И
Скажи, а в сердце что-то не горит?
Огонь меня задеть не норовит?

В А Н Ю Р К К А
Тебя увидел – вот с тех самых пор
Горит, как раздуваемый костер.
То пламя может и тебя зажечь...

А Х А Х П И
Коль так, здесь о любви ведем мы речь.

В А Н Ю Р К К А
Охота мне жениться. Очень-очень...

А Х А Х П И
А как ты это чувствуешь, что хочешь?

В А Н Ю Р К К А
Как?..

Показать?
Но только чур — без смеха.
(*Пытается встать.*)

А Х А Х П И
(*с притворным испугом отступает от него на шаг-другой*).
Нет, не сейчас.
Другие есть дела.
А будет время — будет и утеха.

В А Н Ю Р К К А
Вот ты почуяла. И отошла.
Меня же чувства изведут вконец.

А Х А Х П И
Ты, значит, сильный парень, молодец.

В А Н Ю Р К К А
Ну как не быть мне сильным, посуди,
Родился в декабре — с огнем в груди.
Хоть в детстве без штанов, бывало, бегал,
Но не боялся ни дождя, ни снега.
Быть довелось потом и глиномесом,
И с топором ходить на рубку леса.

А Х А Х П И
Такой, как ты, достоин уваженья.
Итак, влюбился, говоришь, в меня?

В А Н Ю Р К К А
Оно все так. Влюблен который день я.
Да тут еще... Богатая родня.
Дом будет свой... И мельница-ветряк...
В саду поставим ульи...

А Х А Х П И
Так-то так.
Задумка благородна у тебя.
Но об одной услуге пустяковой
Хочу просить.

В А Н Ю Р К К А
Проси. Пройду, любя,
Огонь и воды. За тобою слово.

А Х А Х П И
Ну ладно, слушай. Как уйдешь отсюда,
Прттаса встретишь и Ерми. Не худо
Поступишь, коль послушаешься их.
Заплатят хорошо тебе, жених.
Как выполнишь задание, иди
К себе домой. Известий добрых жди.
Хоть мы с тобою и знакомы мало,
Пусть будет так, как небо начертало.
Ну, с богом... Нет, постой... Не уходи...
Иди ко мне... Да ближе подойди.
И поцелуй меня...
Ванюркка робко прикасается губами к ее щеке.
Эх ты... (*Сама целует его.*) Ну, в добрый путь!
Свое держу я слово. Не забудь.

В А Н Ю Р К К А (*громко восклицает*).
Как сладко целоваться! Губки - мед!
Ей-богу, вот житуха настает!
(*Уходит.*)

Ахахпи заразительно смеется. Немного погодя приводит себя в порядок и тоже выходит на улицу. Вполголоса напевает.

А Х А Х П И (*напевает*).
Прибрала к рукам гуся,
Кто воровкой назовет?
Первой песню начала,
Кто за смелость упрекнет?..

Сзади показывается Ягур. Ахахпи сразу замечает его.

Ах, что за песни здесь, под Анаткасом!
Слова — ну, прямо за душу берут.

Я Г У Р (*приближаясь*).
Ты слишком весела сегодня. Часом
Не праздник ли какой?

А Х А Х П И
Они придут,
Те праздники, которых очень много —
На каждого святого и на бога.

А на меня так жадно не смотри,
Хоть ты умен и развит, там, внутри,
Таится робость. Потому, вояка,
И думаешь, и действуешь двояко.
Но про себя меня ты между прочим
Не раз, пожалуй, звал с той самой ночи.
Сам не набрался храбрости прийти:
Что скажут люди. Надо быть в чести.
Плюнь на людей, Ягур. Живи, дыши.
Расслабить надо поводок души.
Однажды, помни, молодость дается.
Любовь — уходит. Что же остается?..

Я Г У Р
Одни и те же у тебя мотивы:
Любовь, душа, сердечные порывы.
И странно, постоянно весела,
Неужто так удачны все дела?

А Х А Х П И
А если нет причины для кручины,
Зачем должна клониться голова?

Я Г У Р
Вздыхают парни по тебе, мужчины.
Хотя бы их утешила сперва...

А Х А Х П И
Парней не знаю здешних я пока.

Я Г У Р
Не знаешь здешних? Ты — издалека?

А Х А Х П И
Я говорила. Подзабыл слегка.

Я Г У Р
Да, говорила. Что подруга есть.
Что погостить приехала к Чегесь.
Но не сказала ведь: сама откуда.

А Х А Х П И
А не сказала, не спросил покуда.
Вон та деревня.

Я Г У Р
Я попал впросак.
Ты, думал, городская. Вот чудак.
Какие ручки — им не серп держать.
А вышло — дочь земли. Умеет жать.

А Х А Х П И
Ты не ошибся вроде. Из Казани
Вернулась я недавно.

Я Г У Р
Поточней?

А Х А Х П И
Да с месяц. Но какое наказанье —
Ты мне не веришь? Отвечай скорей.

Я Г У Р
Не потому переспросил я тут,
Хотел узнать, как в городе живут.

А Х А Х П И
Какая жизнь? Одна неразбериха.
На сходках речи произносят лихо.
Один кричит про то, другой - про это.

Я Г У Р
И в городе порядка, значит, нету?

А Х А Х П И
Порядка нет. Брожение одно.
Любовь и уважение давно
Исчезли. Это страшно. Это грустно.
Одна стрельба вокруг.
А дальше — пусто.
Скажи, Ягур, неужто человек
Обратно не исправится вовек?
Неужто не поддастся уговорам?
Россия вся в крови утонет скоро.

Я Г У Р
Кого же хочешь ты уговорить?

А Х А Х П И
Большевиков умерить надо прыть.

Я Г У Р
А их зачем?

А Х А Х П И
Так не было напасти,
Пока не стало большевистской власти, –
Спокойно жили...

Я Г У Р
Богатеи? Да...
Они спокойно жили завсегда!
Как понял это трудовой народ,
Так взял и совершил переворот.

А Х А Х П И
Ах, трудовой народ? А не толпа ли?
Вот почему усадьбы запылали.
Коль сила есть, не надобно ума.

Я Г У Р
Ты сытая. И потому сама
Голодных участь разделить не можешь.
Что ж, говори.
Быть может, потревожишь
Тень прошлого?

А Х А Х П И (*раздумчиво*).
То, прошлое, со мной.
Мне тоже горе выпало с лихвой.
Сперва я в няньках у господ служила.
И всюду те порядки находила,
О чем ты говорил сейчас. Весь дом
Стал ненавистным мне тогда.
Потом
К себе приблизить барышню сумела.
Ей было десять. Весело и смело
Через нее и к грамоте пришла.
Хоть уставала, за день – все дела, –
Ночь-заполночь со мною книги были.
Из Петербурга гости, из Москвы ли
Все жаловали к барину. С вином
Усаживались чинно за столом
Веселья ради. Звуками рояля
Свой услаждали слух. Меня порой

Вдруг подзывали: по-чувашски спой.
Слуга откажет барину едва ли
И с дрожью, вопреки желанью, пела
О том, как счастье мимо пролетело...
Но есть на свете счастья уголок.
Спасибо, ты найти его помог.

Я Г У Р
Хлебнула горя, что ни говори.
Власть новую теперь благодари.

А Х А Х П И
Благодарить всевышнего я буду
За то, что он послал тебя. И всюду.
Хочу быть рядом. Позови хоть в ад.
Хоть в бой кровавый — не сверну назад.
Таким, как ты, хотелось бы мне стать.
Однако сердцу не даешь ты воли.
Зачем оно молчит? Скажи, родной.
Зачем же прячешь радости и боли?
И где хотя бы жалость надо мной?

Я Г У Р
Выходит, просишь жалости моей...
(*Приближается к ней.*)

А Х А Х П И
Жду жалости и... ласки, если можно...

Я Г У Р (*смотрит ей в глаза*).
Ишь, покраснела, а была смелей...

А Х А Х П И
Ах, не смущай... Мне сладко и тревожно...

Я Г У Р
Горячая какая...

А Х А Х П И
Говорят,
В нас, женщинах, есть солнышка частица.

Я Г У Р
От той частицы вдруг пожар случится?

А Х А Х П И
Мир не сгорел — он солнцу только рад.

Я Г У Р
Нет, ни к чему мужчине много звезд,
Лишь грело б солнце, как любимый взгляд.

Опять прикасается к Ахахпи, заглядывает ей в глаза.

Я, кажется, люблю тебя всерьез...

Пытается девушку обнять, но она ускользает из объятий.

А Х А Х П И
Лишь «кажется»? Пожалуй, небогато...

Я Г У Р (*снова обнимает ее*).
Не кажется!.. Да я тебя... Уж я-то!..
(*Заключают друг друга в горячие объятия.*)
Ты ведьма иль русалка? Обўясни мне.

А Х А Х П И
Нет, не русалка.
Я — Любви богиня!
Уж не прожить мне без тебя ни дня.
Душа моя лишается огня
От стужи одиночества. Но это
В твоей груди не вызовет ответа.
Казалось — ты хоть чуточку другой.
...Тут не любовь, а пытка мне с тобой.

Я Г У Р
Врать не привык красивыми словами.
Да и нужны ли клятвы между нами?
Вручаю сердце.
Ты же в грудь мою
Вдохни взамен горячую струю...
(*Целует.*)

А Х А Х П И
Робеешь, что ли?
Нет, целуй до боли!
Пойдем-ка в дом. Чтоб в этот сладкий час
Глаза чужие не ловили нас.

Входят. Свет в избе гаснет. В это время луч прожектора высвечивает Любовь. Видно, как Ягур с Ахахпи выходят из дома, как они прощаются нежно, с поцелуями. Ягур скрывается под сенью ночных деревьев. Входят З е м л я, В р е м я, Л ю б о в ь.

ЗЕМЛЯ
Игра страстей чревата и пожаром.
Что будешь делать, Ахахпи, тогда?

А Х А Х П И
Душа моя веселья ждет недаром.
Пускай себе пылает — не беда...

ЗЕМЛЯ
Вот давеча ты сказывала сказки,
Ну, а Ягур возьми да и поверь.
Где знать ему, что нынче без опаски
Ты Ванюркку отправила на смерть.

А Х А Х П И
На смерть? Я не виновна в этом деле...
Отправила туда, куда велели.
Не дядя ли Сапрун меня втравил.

ЗЕМЛЯ
Зачем врала Ягуру?

А Х А Х П И
От любви.

ЛЮБОВЬ
Вот как... Выходит, и такое средство
Воспламенить способно чье-то сердце.

ЗЕМЛЯ
Дочь барина — и няней стала вдруг.
Зачем все это — не могу понять я.

А Х А Х П И
А назову себя — любви каюк:
Раскроет мне тогда Ягур обу́ятья!..

ЗЕМЛЯ
Во имя правды люди рождены!

Прожектор выхватывает лицо Времени.

В Р Е М Я
А душу разве взнуздывать должны?
У Ахахпи — прекрасная пора.
И, стало быть, пускай живет, как хочет —
Гуляет, любит, плачет и хохочет.

З Е М Л Я
А также продолжает нагло врать...
Ну, как такое можно рассудить?

В Р Е М Я
А разве лучше — сердце остудить?
Ей хорошо сегодня? Пусть.
А дальше...
Коль не избавится сама от фальши,
Поставишь ты, Земля, ее на место.

А Х А Х П И
Ну что ж, и я не сделана из теста.
Прошу, Земля: меня ты испытай,
Но и любовью насладиться дай.

Л Ю Б О В Ь
Взыграло пламя — прилипчивый недуг.

Гаснет свет.

ПУБЛИЦИСТИКА. КРИТИКА

«У ХУЗАНГАЯ НАДО УЧИТЬСЯ...»

Родившийся за десять лет до Октябрьской революции, «в пятидесяти верстах от железной дороги и водного пути... до шестнадцати лет не видевший ни города, ни паровоза, ни парохода», Хузангай вырвался из чувашского села на городской простор, в новую жизнь. Казань. Учеба в чувашском педтехникуме. Первый номер литературного журнала «Сунтал» в Чебоксарах со стихами Педера Хузангая. «Сразу же после публикации моих пробных стихов меня заметили именитые поэты», – с благодарностью вспоминал он позже. Это были Григорий Алендей, Семен Эльгер и Семен Фомин. Но чтобы заговорить во весь голос, молодому поэту необходимы были жизненный опыт и личные наблюдения. И восемнадцатилетний Хузангай переезжает в Чебоксары, работает в разных учреждениях, сотрудничает в журнале «Сунтал», пишет стихи. В это время у него зарождается дерзкая мысль - поездить по стране, увидеть все своими глазами. «В 1926-1927 гг. я совершил путешествие по Советскому Союзу, – пишет он в своей автобиографии. – Познакомился с разными народами. Из Ашхабада – через Каспийское море – добрался до Баку. Из Баку возвратился вдохновленный поэмой «Двадцать шесть».

На раннее творчество Хузангая большое влияние оказала поэзия очень популярного тогда русского поэта Сергея Есенина. В цикле восточных стихов чувашского поэта оно ощущается так сильно, что порой трудно отличить, что здесь от Хузангая, а что от Есенина. Но это была только учеба. Развивая дальше лучшие традиции поэзии К. Иванова и М. Сеспеля, поэт искал новые поэтические средства для выражения своих чувств. Позже П. Хузангай скажет: «Как поэт я имею много привязанностей и ценю общепризнанных мастеров слова Востока и Запада от Саади и Омара Хайяма до Гете и Байрона, но предметом моей настоящей любви являются выдающиеся русские поэты. Мечтаю так же глубоко выразить сокровенные думы и чувства моего народа, как удалось это А.С. Пушкину и М.Ю. Лермонтову; стать настолько же чувашским поэтом, насколько русским был С.А. Есенин; хочу научиться с такой же непринужденностью соединять глубокий лиризм с революционным пафосом и гражданственностью, как это делал В.В. Маяковский».

Помня слова Луначарского о том, что «образованный человек это тот, который знает досконально все об одном и понемножку – обо всем», П. Хузангай поступает учиться в Восточный педагогический институт в Казани. Здесь, в этом городе, происходит его встреча с Владимиром Маяковским. Вспомним стихотворение «Казань» Маяковского:

Марш
ваш –
наш марш.
Я –
чуваш,
послушай, уважь.
Марш
вашенский
так по-чувашски...

23 января 1928 года в номере гостиницы «Казанское подворье» (ныне гостиница «Казань») с «агитатором, горланом-главарем» беседовали два будущих народных поэта Чувашии – Николай Шелеби и Педер Хузангай. После недолгого разговора Маяковский протянул им такую записку: «Товарищ Лавут! Прошу обязательно устроить чувашских писателей. Вл. Маяковский». В театре татарской оперы Хузангай слушал поэму Маяковского «Хорошо» в авторском исполнении. Возможно, что именно этот памятный вечер подтолкнул его к созданию широких эпических произведений.

Уже через несколько лет из-под пера поэта выходят поэмы «Магнит-гора» и «Землеустройство». Известный чувашский литературовед профессор М. Сироткин отмечал, что в поэме «Магнит-гора» в поисках новых средств поэтической речи П. Хузангай, по примеру В. Маяковского, использовал свободный стих с многообразием ритмов.

Хорошей школой для оттачивания поэтического мастерства стала его переводческая деятельность. Диапазон ее столь широк, что нельзя не восхищаться масштабами творческой работы. Это поэма «В.И. Ленин» В. Маяковского, роман «Евгений Онегин» и поэма «Полтава» А. Пушкина, комедия «Горе от ума» А. Грибоедова, трагедия «Ромео и Джульетта» У.Шекспира, рассказы М. Горького, стихи советских и зарубежных поэтов. Неутомимый поэт П.Хузангай переводит на русский язык поэму «Нарспи» К. Иванова, стихи М. Сеспеля, С. Эльгера и других чувашских авторов. «У меня три родных языка, три родных народа, – говорил он. – Чувашский, русский, татарский».

Но в его жизни были и тяжелые периоды, незаслуженные

обвинения в национализме. В январе 1938 года Хузангай был арестован и заключен в тюрьму. Поэт выдержал испытание – остался чист перед друзьями и никого не предал. В августе следующего года его признали невиновным и реабилитировали.

В годы Великой Отечественной войны поэт-воин прошел фронтовыми дорогами от Сталинграда до Польши. Урывками, между боями, он пишет стихи «Перед боем», «Клятва Волге», «Песня победителей», «Мицкевич», «9 Мая». Они, как и лирико-эпическая поэма «Таня», вошли в золотой фонд чувашской национальной поэзии. Тогда же поэт вынашивает замысел крупного произведения, над которым будет работать более десяти лет. Это роман в стихах «Род Аптрамана». Через судьбу одного рода поэт как бы прослеживает исторический путь своего народа. Аптраман – в переводе означает неунывающий. Такими, никогда не унывающими, стойкими перед житейскими бурями и лишениями, крепкими, трудолюбивыми и жизнерадостными представляются герои произведения. Насколько П. Хузангаю удалось художественно обобщенное изображение главных черт национального характера, можно судить по примечательному факту: слова «Аптраман», «Мы из рода Аптраман» стали весьма популярными крылатыми выражениями.

В послевоенные годы П. Хузангай ведет большую общественную деятельность, не оставляя главного дела своей жизни. В 1950 году он удостоен звания народного поэта Чувашии. Его творчеству дан новый толчок – он пишет поэмы «Родина», «От зари до зари», «Свадьба в Выле». А сколько прекрасных стихов и чудесных сказок у него для маленьких читателей! Он часто встречался со школьниками и студентами, читал стихи – собственные и любимых поэтов, мог часами декламировать Пушкина, Маяковского, Есенина.

Особой любовью любил поэт Михаила Сеспеля. Он перевел на русский язык почти все его стихи. Благодаря стараниям П. Хузангая сеспелевская «Пашня Нового дня» зазвучала более чем на пятидесяти языках народов мира.

Послом дружбы и мира называли Педера Хузангая еще при жизни. Он был частым гостем в Болгарии, побывал в Венгрии, Польше, Чехословакии, Румынии, посетил остров Свободы Кубу, откуда вернулся с большой поэмой «Дальний полет». «Славно Вы как народный поэт служите Чувашии, всему Советскому Союзу, значит, и всему человечеству», – так высоко оценил активную деятельность П. Хузангая народный поэт Латвии, Герой Социалистического Труда Ян Судрабкалн.

«Чувашам есть чем гордиться и кем гордиться. Есть великолепная поэзия. И есть великолепный поэт. У Хузангая надо учиться

утонченному, в то же время народному аристократизму в поэзии», – сказал о нем балкарский поэт Кайсын Кулиев.

Поистине хрестоматийным стало стихотворение П. Хузангая «Приглашение в Чувашию»:

Знаете ли вы страну такую,
Древнюю и вечно молодую,
Где в лесу тетерева токуют –
Словно песней сердце околдуют,
Где коль праздник – от души ликуют,
Тӳрех калам, съездра тухса каланă нумай-нумай хăна сăмахĕнчен маншăн чи асра юлни, чи çивĕччи те çунатли ватă Урал хысакĕсен çывăхĕнче çуралнă Мустай Карим тухса калани пулчĕ. Трибуна умне васкамасăр пырса тăчĕ те вăл пĕр самант чăвашсен тĕрĕллĕ кĕписене тăхăннă шур сухалсене, çамрăксене, капăр тумлă хĕрарăмсене сăнаса илчĕ, унтан лăпкă та ырă сасăпа хăйĕн сăмахне пуçларĕ. «Эпĕ, – терĕ вăл, – паянхи чăваш литератури мĕнле аталаннине тимлесех асăрхаса тăратăп. Çавăнпа тӳрех калатăп, сирĕн хастарлăхăр мана хытă савăнтарать. Наци литературисен юхăмĕсем çинчен калаçнă чух ман пуçăмра пĕр танлаштару тухса тăрать. Кашни халăхăн литературăпа искусствин çулĕ малалла ыткăнса юхакан çырма таппине аса илтерет. Пĕчĕк çеç çăлкуçран пуçланнă çав çырма хăйĕн çулĕ çинче ытти юхăмсемпе вăйлана-вăйлана тĕнче океанне хăватлăн ыткăнса тухать. Унсăрăн çав пĕчĕк çырмасем хăйсен çулĕсем çинчех çĕр айне сăрхăнса анса кайса типсе пĕтнĕ пулĕччĕç. Наци литератури çинчен те çавнах каламалла. Паянхи саманара унăн пурăнаслăхĕпе хăвачĕ кашни наци литератури хăйĕн тăван халăхĕн ахах-мерчен пек пуянлăхне пĕтĕм тĕнче культурине мĕн чухлĕ хывма пултарнинчен килет. Çав ахах-мерчен калăпăшĕпе нихçан иксĕлми хакĕ вара - кашни халăхăн кăмăл-сипет тата эстетика опытĕнчен, унăн чун-чĕре пуянлăхĕнчен пуçтарăнса пыраççĕ. Наци литературисенче кашни халăх валли уйрăм виçе туса паман, чăвашсемпе пушкăртсен е тутарсемпе çармăссен литературисем валли ятарлă виçесем çук, çав вăхăтрах мĕнпур çын валли, уйрăммăн илсен вара никам валли те мар шутланакан литература çук. Куратăр пулĕ: кашни ялпа аулăн – хăйĕн хĕвелĕ, пĕр ялшăн вăл вăрман хĕрринчен, тепĕр ялшăн сăрт-ту хĕрринчен çĕкленсе тухать. Анчах çав хĕвел, кăшт çӳлерех çĕкленсен, кашниншĕн пĕр хĕвел пулса тăрать.

Сире эпĕ, чăваш тусăмсем, çак савăнăçлă кунпа саламласа, сирĕн талантăрăн хĕвелĕ çӳлерех те çӳлерех хăпарса пытăр, çав хĕвел хăвăршăн та, пирĕншĕн те – пуриншĕн те çутăрах та çутăрах ялкăшса тăмалла пултăр тесе ырă сунатăп».

Çакнашкал ăшă та ăслă сăмахсем хыççăн залра ларакансем

тăвăллăн алă çупса ячĕç, поэта трибуна умĕнчен вăрах вăхăт ямасăр саламларĕç. Пушкăрт юрăçи ватах мар-ха, ун чухне вăл аллă икĕ çулта кăначчĕ. «Çак ырă çынпа татах тĕл пулма май килĕ-ши, ав мĕнлерех çунатлантарса ячĕ вăл пухăннă çынсене», — тесе шутларĕç пулас залра ларакансем. Килчĕ вĕт çавăн пек меллĕ самант Шупашкар çыннисемшĕн! Съезд вĕçленнĕ хыççăн тепĕр кунтанах К.В. Иванов ячĕллĕ академи драма театрĕн сцени çинче пирĕн артистсем Мустай Каримăн чăвашла куçарнă тĕлĕнмелле илемлĕ «Айгуль çĕршывĕ» спектакльне лартса пачĕç. Паллах, унта автор хăй те пулчĕ. Пĕрремĕш картинăсемех куракана вăйлăн тыткăнласа илчĕç. Ĕç-пуç çӳллĕ тусем çинче пулса иртет. Кунти кăра çут çанталăк çынсене çирĕп пулма хистет, хăйне евĕрлĕ романтикăлла хутшăнусемпе илĕртет. Спектакль геройĕсем те — таса чунлă, уçă кăмăллă çынсем: çамрăк, тĕлĕнмелле çутă сăнлă, калас сăмаха тӳррĕн калама хăнăхнă Айгуль, ăслă, тем-тем курса, тем-тем чăтса йывăрлăхсенче тĕрĕсленнĕ, чун ăшшине туллин упраса хăварнă тăватă хĕрарăм — Залифа, Гульсара, Банат, Минлекай — кунти сăрт-тусен саккунĕсемпе, халăхăн авалхи йăли-йĕркисемпе пурăнаканскерсем — пурнăçа, тĕрĕслĕхе, чун тасалăхне шанса пурăнаççĕ.

Спектакльти тĕп сценăсенчен пĕри — çак çынсем пĕр хĕрарăма айăпланине кăтартса пани... Пушкăрт курайĕн асамлă та хурлăхлă кĕвви илтĕнсе каять те çӳлтен, ту тăрринчен, тăватă хĕрарăм васкамасăр анни курăнать. Вĕсем калама çук хитре тум тăхăннă, хăйсем те — тĕрлĕ çулти тĕрлĕ характерлă çынсем — тĕлĕнмелле мăнаçлă та пĕр шухăшлă. Кунта вĕсем хăйсен çĕршывĕнчен тухса тарнă, хăйĕн Айгуль ятлă пĕчĕк хĕрне çакăнтах пĕрпĕчченçи хăварнă пĕр хĕрарăмăн айăпне сивлеме пуçтарăннă. Хĕрарăм айăпĕ вĕсемшĕн тăван çĕре, тăван халăха сутнипе пĕрех. Пысăк айăпа кĕнĕ çынна суд тума та вĕсен, упăшкисене иртнĕ вăрçăра çухатнă тăлăх арăмсен, анчах тăван çĕре юратса пурнăçа малалла тăсакансен, пĕтĕм тивĕçĕ пур.

Асăннă спектакль чăваш кураканĕсен чунĕсене тĕлĕнмелле пуянлатрĕ: вĕсем тăванла пушкăрт халăхĕн ĕмĕрсен тăршшĕпе пыракан йăли-йĕркине, унăн çирĕплĕхне, чун-чĕрин пуянлăхĕпе ырă кăмăлне, малашлăха çирĕп утнине питĕ лайăх ăнланса илчĕç.

Спектакль вĕçленнĕ хыççăн артистсем пьеса авторĕ хăйсемпе кăмăлсăр пуласран шикленчĕç пулмалла: Мустай Карим çине айăпа кĕнĕ пек пăхкаларĕç. Анчах тĕлĕнмелле сăпайлă Мустай Карим çапла çеç каларĕ: «Спектакль мана хăйĕн уçă кăмăллăхĕпе, чунлăхĕпе тыткăнларĕ. Унта нимĕнле суялăх та çук», — терĕ.

...1981 çулхи çĕртме уйăхĕн ăшă кунĕсенче Чăваш Республикинче Пушкăрт АССРĕн культурин кунĕсем пулса иртрĕç. Шупашкара пушкăрт çыравçисен, художникĕсен, композиторĕсем-

пе артисчĕсен, промышленноçпа ял хуçалăх ĕçченĕсен, тĕрлĕ шайри ертуçĕсен пысăк ушкăнĕ килсе çитрĕ. Вĕсен йышĕнче манăн çĕнĕ туссем те пур. Эпĕ вĕсемпе 1979 çулта Ёпхӳре кунти «Пионер» журналăн юбилейне палăртма кайсан паллашнăччĕ: Равиль Бикбаев, Сафуан Алибаев, Абдулхак Игебаев, Гульфия Юнусова. Паллах, чи паллисем — пушкăрт халăх поэчĕсем Мустай Каримпа Назар Наджми тата республика писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Асхат Мирзагитов. Çак уяв кунĕсенче эпир, пушкăрт тата чăваш поэчĕсемпе писателĕсем, культурăн ытти ĕçченĕсем темиçе кун чăваш çĕршывĕн ялĕсемпе хулисенче пулса ĕç çыннисемпе ăшă тĕл пулусем ирттертĕмĕр. Юлашки каç Шупашкарта К.В.Иванов ячĕллĕ академи драма театрĕнче туслăх концертĕ пулчĕ. Çав каç сцена çинчен эпир те, Абдулхак Игебаевпа (каярах вăл Пушкăрт халăх поэчĕн ятне тивĕçрĕ) иксĕмĕр, хамăр чĕлхесемпе сăвăсем каларăмăр. Каярах питĕ илемлĕ концерт пуçланчĕ. Ытарайми курай кĕввисем, пушкăрт халăх ташши ансамблĕн çавра çил кăлăракан маттур хусканавĕсем, чаплă артистсем юрласа панă юрăсем куракан-итлекен халăха çав тери савăнтарчĕç. Шăп çак кунсем тĕлне Чăваш кĕнеке издательстви «Салават çĕршывĕнче» кĕнеке пичетлесе кăларнăччĕ. Унта пушкăрт поэчĕсемпе прозаикĕсен нумай-нумай сăвви-калавĕ вырăн тупнăччĕ. Мустай Каримăн тата ытти поэтсен сăввисене куçарма эпĕ те хутшăннăччĕ.

Тепĕр çулхине вара Пушкăрт çĕрĕнче чăваш çыравçисемпе композиторĕсем, художникĕсемпе артисчĕсем хăнара пулчĕç. Пирĕн унти тĕл пулусем те питĕ ăнăçлă иртрĕç, эпир те чылай ял-хулана çитсе курса унти тавралăха, çут çанталăка, ĕçчен те пултаруллă çынсен çитĕнĕвĕсене курса савăнтăмăр. Раççей Патшалăх премийĕн икĕ лауреачĕ, икĕ халăх поэчĕ — Мустай Каримпа Ухсай Яккăвĕ пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр çӳрерĕç, тем те пĕр аса илчĕç, поэзи, куçару ĕçĕ çинчен çунатланса калаçрĕç. Пĕр тĕл пулура Мустафа Сафич хăй Яков Гавриловичпа мĕнле паллашни çинчен тĕплĕн каласа панăччĕ.

— Унăн ятне эпĕ хăйне куричченех пĕлнĕ, — тенĕччĕ ун чух Мустафа Сафич. — Каярах мана ун çинчен чăваш çыравçи, Пушкăртстанри театр техникумĕн преподавателĕ Ф. Вуколов-Эрлик каласа панăччĕ. Шăпах вăл пурăнакан çуртра паллашнăччĕ эпир Яккупа. Ку вăл 1939 çулта пулса иртрĕ. Хурарах сăнлă маттур йĕкĕт пĕччен мар, çырă çӳçлĕ чиперкке хĕрпе пĕрле пынăччĕ. Çавăн чух пĕр-пĕрин умĕнче сăвăсем вуланине астумастăп, хăйĕн сăввисене вăл мана тепĕр тăватă çултан вуласа пачĕ. 1943 çулхи çуркунне эпĕ, Воронеж фрончĕн «За честь Родины» ятлă хаçачĕн вырăнтан вырăна тухса çӳрекен корреспонденчĕ, пĕр çар хаçачĕн редакцийĕ вырнаçнă çурт патне çитсе укрĕм. Пулать вĕт

тĕлĕнтермĕш! Çав çурт картлашки çинче пĕр çар çынни тăрать. Пăхрăм та тӳрех палларăм — Ухсай Яккăвĕ. Кĕтмен-туман тĕл пулу! Иксĕмĕр те çухалса кайрăмăр. Унтан пĕр-пĕрне çирĕппĕн ыталаса илтĕмĕр. Турă хăй пӳрнĕ тейĕн çакнашкал тĕл пулма. Якку тинтерех кăна аманнă урине сыватса ирттернĕ иккен. Анчах нăйкăшни-туни туйăнмасть.

Ун чух, Орелпа Курск операцийĕ пуçланиччен, пирĕн фронтри лару-тăру кăштах лăпланнăччĕ. Çитменнине, каç пулса килетчĕ. Якку çине тăрсах мана пĕр каçлăха хăй патĕнче юлма ӳкĕтлерĕ. Турткаланса тăмарăм, килĕшрĕм. Мĕн пирки калаçа пуçланине аса илейместĕп ĕнтĕ. Çавна çеç ăнлантăм, меллĕ вăхăт тупса иксĕмĕр те сăвăсем çыркаланă иккен. Кăшт вăхăт иртсен вăл мана пĕчченçĕме хăварчĕ те пӳрте кĕрсе кайрĕ. Пуçлăхсенчен кайма ирĕк ыйтрĕ пулмалла. Вара хăйĕн «йăвине» илсе çитерчĕ. Тăмран тунă пĕчĕк пӳртре пурăнать иккен. Ун хыççăн вăл салтак столовăйне кайса икĕ çын валли апат илсе килчĕ. Галифе кĕсйинчен çавра хырăмлă хура кĕленче савăт кăларчĕ, пăкки вырăнне куккурус пуçĕ чиксе хунă хăй. Унта мĕнле шĕвек пулнине ыйтмасăрах ăнкарса илтĕм. Тĕлĕннинчен ытларах — савăнтăм.

— Ăçтан туртса кăлартăн кăна тата? — тетĕп.

— Ăçтан, ăçтан... Турă пачĕ. Манăн хамăн чăваш турри — Бахус пур. Вăл поэтсене шутсăр килĕштерет.

Чылай лартăмăр. Тӳрех мар, тутине пĕлсе ĕçрĕмĕр. Ухсай сăвă хыççăн сăвă каларĕ. Малтанласа эп ыйтнипе сăвă йĕркисене вырăсла куçара-куçара пычĕ вăл. Унтан алă сулчĕ те çапла каларĕ:

— Сăвăсене çапла асаплантармалла-и? Вĕсене чунпа итлемелле. Вара йăлтах ăнланатăн.

Вăл вуларĕ, эпĕ итлерĕм. Чăн та, сăвă çемми мана ытларах та ытларах тыткăнларĕ. Чуна пăлхатакан пĕр-пĕр кĕвĕ итленĕ пек, хĕвел васкаса аннине курса тăнă пек, çурла уйăхĕн янкăр тӳпинчен çăлтăр ӳкнине сăнанă пек...

...Хĕвел тухсанах эпĕ çула май каякан пĕр-пĕр машина тупса пулĕ-и тесе аслă çул еннелле васкарăм. Манăн хамăр хаçат валли хатĕрленĕ материала вырăна çитермелле. Якку мана пăхса илчĕ те салхуллăн çапла каласа хучĕ:

— Хамăрăн тăван Пушкăртстанра тĕл пулайăпăр-и ĕнтĕ тепре?

Тĕл пулайрăмăр. Тавах Турра!

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Яккупа эпир Ĕпхӳре те, Шупашкарта та, Мускавра та, Хусанта та, Волгоградра та час-часах тĕл пултăмăр. Ун чух, ĕçлĕ лару-тăрура, хĕвĕшӳллĕ самантсенче çав тĕл пулусем нимпех те палăрса тăмастчĕç темелле, анчах вăхăт иртнĕçемĕн пĕрле ирттернĕ кунсене эпĕ илемлĕ уявсем вырăнне хурса хаклаттăм. Чăн-чăн талантпа, калама çук пултаруллă çынпа пĕрле пулнă-çке эпĕ çав кунсенче. Лайăх астăватăп-ха, юлташла

калаçусенче Александр Твардовский Якку çинчен тĕлĕнмелле талант тесе калатчĕ. Тутарсен чаплă поэчĕ Хасан Туфан Якку ятне илтсенех сăнĕпе çуталса каятчĕ, мĕншĕн тесен хăйĕн чăваш тусне вăл шутсăр хисеплетчĕ. Ухсайпа пирĕн сумлă çыравçăсем те — Сайфи Кудаш, Сагит Агиш, Баязит Бикбай — туслă çыхăну тытнă. Çак ятсене тепĕр хут аса илни хăех Ухсай Яккăвĕ мĕн тери чаплă «çăлтăрсен» хушшинче пулнине ăнланса илетĕн.

...1986 çул пуçламăшĕнче эпĕ Чăваш Республикин Писательсен союзĕн правлени председателĕнче ĕçлеме пуçларăм. Тепĕр икĕ уйăхранах кӳршĕри Тутарстанта ЮНЕСКО шайĕнче тутар халăхĕн пысăк поэчĕн Габдулла Тукайăн çĕр çулхи юбилейне чаплăн паллă турĕç. Хамăр çĕршыври, тĕнчери нумай-нумай çĕртен хăнасем килсе çитнĕччĕ унта. Поэт çуралнă Кырлай-Тукай ялĕ вуншар халăх çыравçисемшĕн, юрă ăстисемшĕн, артистсемпе художниксемшĕн хăйне евĕрлĕ Мекка пулса тăчĕ. Мĕнле чĕлхепе кăна янăрамарĕç-ши вилĕмсĕр Тукай сăввисем! Тĕрĕсех çав, кашни халăхăн чи аслă поэчĕсем мĕнпур çынна ырăрах, вăйлăрах, кăмăл-туйăм енчен пуянрах пулма пулăшаççĕ. Çак шухăшсемпе хавхаланса Шупашкара килме çула тухрăм эпĕ çак илемлĕ уяв хыççăн. Пуçăмра хăй тĕллĕнех пĕр ĕмĕт çуралчĕ: тепĕр тăватă çултан пирĕн Константин Ивановăн та çĕр çулхи юбилейĕ çитет вĕт-ха, пирĕн те ăна тĕнче шайĕпе, ЮНЕСКО витĕмĕпе ирттересчĕ.

Мускавра Раççей писателĕсен пĕр пленумĕнче çакăн пирки эпĕ Мустай Каримпа, Раççей Писателĕсен союзĕн правлени секретарĕпе, калаçса пăхма шутларăм.

— Питĕ тĕрĕс шухăш тытнă эсĕ, Порфирий, — терĕ вăл мана итлесе пĕтернĕ хыççăн, — чи кирли — питĕ вăхăтлă. Кун пек ĕççене татса пама виçĕ-тăватă çул кирлĕ тенине илтнĕ эпĕ. Çак ыйтупа эсĕ паян-ыранах Раççей писателĕсен правленийĕн аппаратĕнче куратора ĕçлекен Гарай Рахим патне кĕрсе тух, вăл шăпах Атăлпа Урал тăрăхĕнчи писательсен союзĕсемпе ĕçлет. Вăл сана мĕнлерех документсем хатĕрлемеллине тĕплĕн каласа кăтартĕ. Константин Иванов, Пушкăртпа Чăваш çĕршывĕсен мухтавлă ывăлĕ, пĕр сăмахсăрах çак чыса тивĕçлĕ классик. Унăн пултарулăхне эпĕ питĕ лайăх пĕлетĕп, «Нарспие» куçарма хам та хутшăннă. Хăюллăрах пул, пулăшу кирлĕ пулсан тӳрех мана пĕлтер, мĕн тумаллине пĕрле шухăшлăпăр...

Телее, пирĕн ĕмĕт пурнăçланчĕ-пурнăçланчех. 1990 çулхи кăрлач уйăхĕнче ман пата ЮНЕСКО ĕçĕсемпе Совет Союзĕнче ĕçлекен Комиссин ответлă секретарĕн çумĕ А. Жуков çыру çырса ячĕ. Унта çапла пĕлтернĕччĕ: «Чăваш поэчĕн Константин Ивановăн çĕр çулхи юбилейне ЮНЕСКО уйрăмах пултаруллă деятельсен тата историлле событисен календарьне кĕртнĕ».

Тăватă çул иртрĕ. Акă ĕнтĕ аслăран та аслă поэтăн К.В. Ивановăн çĕр çулхи юбилейĕ пĕтĕм çĕршыв тăрăх кĕрлесе кайрĕ – Чăваш çĕрĕнче, Тутарстанта, Чĕмпĕрте, Пушкăртстанри Слакпуçра, Мускаври Союзсен çурчĕн Колоннăлла залĕнче!

Юбилей трибуни умĕнче – мĕнпур халăхсен юратнă çыравçи, Пушкăрт Республикин халăх поэчĕ, Социализмла ĕç Геройĕ, Ленин тата Раççей Патшалăх премийĕсен лауреачĕ Мустай Карим.

– Чăннипех аслă та чаплă ĕçсене курса-туйса тăни хăех чунпа ăс-тăна вăйлатса, пуянлатса ярать, – тет вăл. – Константин Иванов – сайра тĕл пулакан талант, тӳрех пиçсе çитнĕ поэт пулса çуралнă. Кун-çул шăпи ăна шутсăр кĕске вăхăт уйăрса панă, унăн хăйĕн сассине тĕрлĕ хăнăхусемпе тĕрĕслеме те, ерипен ӳссе çирĕпленме те вăхăт пулман. «Нарспи» поэма пичетленнĕ чух вăл пурĕ те вун саккăрта кăна пулнă. Эпĕ шутланă тăрăх, çак тĕлĕнтермĕше, Константин Иванова, çуратма чăваш халăхĕ ĕмĕрсен тăршшĕпе хатĕрленнĕ те пĕр самантра пĕтĕм çут тĕнчене парнеленĕ.

Пĕлесчĕ сирĕн, эпĕ «Нарспи» поэмăна куçарнă чух хам валли мĕн чухлĕ çĕнни, мĕн чухлĕ тĕлĕнмелли курса çунатланнине. Тĕп куçаруçи – пирĕн шутсăр лайăх сăвăç Рахман Галеевчĕ, халĕ вăл çук ĕнтĕ. Мана Иванов поэзийĕн асамлă килĕшулĕхĕ, лирикăпа философи пĕтĕçулĕхĕ, авалхи йăла-йĕркене, çут çанталăка кĕскен те уçăмлăн ӳкерсе пама пултарни, çакă пĕтĕмпех çăмăл чĕлхепе юхса пыракан сăвăсем урлă этем чунне тӳрех уçăлтарса ярса çăл шывĕ пек юхса кĕни...

Чылай вăхăт иртрĕ çак поэмăна çырнăранпа. Аслă поэтăн чапĕпе пĕлтерĕшĕ чакмасть. Çырса хăварни çеç мар, унăн ячĕ, асамлă сăнарĕ, пророк çутлăхĕ пек унăн тăван халăхĕн çĕнĕ ăрăвĕсене вăйлăрах та тасарах пулма йыхăрать.

Хаклă чăвашсем! Эсир Константин Иванова пысăка хурса хакланине, ăна чунтан юратнине эпир шутсăр хисеплетпĕр. Мухтав та чыс сире, аслă поэтăн тăхăмне, ырă ĕçĕсене малалла тăсакансем! Унăн тарăн ăсне, чун çирĕплĕхне, ĕмĕт хĕмне малалла та упраса пурăнар. Çавăн пек пулсан кăна эсир наци пуянлăхĕсене сыхласа хăварайнă халăх пулса юлăр.

Паян аслă шухăшлавçăн Мустай Каримăн сăмахĕсем шутсăр пысăк пĕлтерĕшлĕ халал вырăнĕнчех янраççĕ.

Ытти нумай-нумай тĕл пулу та аса килет мана паян. Мускавра иртекен писательсен пленумĕсем е съезчĕсем ĕçленĕ вăхăтра Мустафа Сафич пире, тутар çыравçисене Ренат Хариспа Ренат Мухамадиева, пушкăртсене Денис Булякова, Равиль Бикбаевпа Роберт Баимова тата мана, хăна çурчĕн уйрăм номерне кĕрекене чĕнетчĕ. Чак-чакпа чей ĕçсе ларнă вăхăтра эпир Мустай-агана

хамăрăн писательсен союзĕнче ĕçсем мĕнле пыни çинчен, харпăр хăй ĕçĕ çинчен каласа кăтартаттăмăр, çĕнĕ кĕнекесем парнелеттĕмĕр. Анчах пирĕн тĕллев — ытларах ăна итлессиччĕ. Аксакалăн кашни сăмахĕ, кашни аса илĕвĕ, вăл е ку писателĕн ĕçне мĕнлерех хаклани пирĕншĕн урок вырăнне те, çĕнĕ тĕллевсем палăртмалли çĕнĕ майсем вырăнне те пулнă. Мĕн тери хавхаланса та çĕкленсе калаçатчĕ вăл, унăн сăмахĕнче çунатлă сăмахсем, халăх шӳчĕсем нумайччĕ.

Эпĕ хама шутсăр телейлĕ çын вырăнне хуратăп — 1989 тата 1994 çулсенче манăн Пушкăрт çĕрĕ çинче Мустай Каримăн çитмĕл тата çитмĕл пилĕк çулĕсем çитнĕ ятпа ирттернĕ чаплă юбилейĕсене хутшăнма тӳр килчĕ. Çавăн чух эпĕ Расул Гамзатовпа, Давид Кугультиновпа, Елена Николаевскаяпа, Ренат Хаиспа тата ытти тĕрлĕ халăх çыравçисемпе пĕрле Мустай Каримăн Ĕпхӳри килĕнче те, вăл çуралнă Кĕлеш ялĕнче те (Чишме районĕ) пулса куртăм. Мана çак ял хĕрринче шутсăр пысăк кăвайт йĕри-тавра çаврăнса тĕрлĕ халăх артисчĕсемпе поэчĕсем юрă юрласа, сăвă каласа поэзи уявĕ ирттернисем ĕмĕрлĕхех асра тăрса юлчĕç. Шăп çавăн чух çуралчĕ ман «Мустай кăвайчĕсем» ятлă сăвă. Ăна Мустафа Сафич хăй те килĕштернине палăртса каларĕ.

Паян пирĕнпе юнашар нихăçан манăçми ырă вĕрентекен Мустай Карим çук ĕнтĕ. Анчах вилĕмсĕр çынсем ĕмĕрех пирĕнпе. Унăн ырă вĕрентĕвĕсем яланах аса килеççĕ. Вĕсенчен чи пахи — çыравçăн хăйĕн халăхне хĕрӳллĕн юратмалла. Ан тив, аслă çын вĕрентни унăн вĕренекенĕсен чĕрисенче те яланах тĕпре пултăр, вулакансен чунĕнче хыпнă вут та хĕрӳллĕн ялкăшса тăтăр.

ПОЭТĂН ЫЛТĂН КАПАНĔ

Юрий Сементер 75 çул тултарчĕ

Сиссе юлмарăм — каçрам
утмăл урлă,
Кĕçех çитеп, тен. çĕн çыран
патне.
Унта каллех эп çепĕç
юрă юрлăп, —
Яш çыншăн çеç килет-им
çуркунне?

Çак тăватă йĕркене Юрий Сементер 15 çул каялла çырнăччĕ. Акă ĕнтĕ Чăваш халăх поэчĕ хăйĕн 75 çулне те паллă турĕ. Янравлă та сумлă сăвви-юррипе, поэмисемпе, тарăн шухăшлă публицистика статйисемпе кĕтсе илчĕ вăл хăйĕн çуралнă кунне. Тулли

кăмăлпа. Çĕр ĕçченĕ кĕр енне кайсан хăйĕн каçалăкне пуçтарса пĕтернĕ хыççăн хаваслă туйăмпа тăван çĕре выртса чуптунă пек, ман çывах юлташăм та хăй пурнăçĕ тăршшĕнче нумай-нумай ырă ĕç тума вăй-хал çитернĕшĕн Çӳлти Турра тав турех пулĕ тетĕп, мĕншĕн тесен вăл ăна иксĕлми ăс, пултарулăх, чăтăмлăх, ăсталăх панă.

1941 çулхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Танăш ялĕнче çуралнăскер? малтан — Кĕçĕн Шетмĕ ялĕн çичĕ çул вĕренмелли шкула, ун хыççăн район центрĕнчи вăтам шкула çӳренĕ, çакăн хыççăн Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищинчен вĕренсе тухнă, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Пĕр вăхăт Çĕрпӳре комсомол райкомĕнче, унтан «Октябрь çулĕ» хаçат редакцийĕнче журналистра ĕçленĕ.

Шăпах çак тапхăрта Юрий Семеновичпа паллаштарчĕ мана пурнăç шăпи. 1969 çул. Эпĕ, Тутарстанри Çарăмсан районĕнчен Шупашкара куçса килнĕскер, ун чухне республикăри «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçат редакцийĕн информаци пайне ертсе пыраттăм. Пĕрре çапла Çĕрпӳ хулинчи пĕрремĕш шкула ачасем чĕннипе Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Краснодонра вăрттăн ĕçленĕ «Çамрăк гварди» комсомол организацийĕн паттăрĕсен Ульяна Громовăн ашшĕ тата Владимир Загоруйкăн амăшĕ килессине пĕлтĕмĕр. Редактортан ирĕк илсе çак хулана тӳрех тухса кайрăм. Ара, Александр Фадеев романне эпир пурте вуланă. Хăюллă ачасене çуратса ӳстернĕ çынсем çинчен вулакансене каласа парасси хисеплĕрен те хисеплĕ тивĕç вĕт-ха журналистшăн!

Çитрĕм Çĕрпĕве, пырса кĕтĕм çак шкула. Чăнах иккен — хăнасем килсе çитнĕ. Хаçат-журналта, радио-телекуравра ĕçлекен журналистсем, таврари районсемпе ялсенчен мĕн чухлĕ çын килсе тулнă тата!

Çавăн чух пуçласа тĕл пултăм эпĕ «Октябрь» çулĕ хаçат редакцийĕнче ĕçлекен, хамран пĕр çул çеç аслăрах Юрий Семенов журналиста. Шупашкарта тухса тăракан хаçат-журналта та ун тĕрленчĕкĕсемпе сăввисем час-часах пичетленнĕрен савăнсах кайрăм, часах унпа пĕр сăмах тупрăм. Вăл мана Громовăн ашшĕпе Загоруйко амăшĕ Çĕрпĕве килесси мĕнлерех пулса тухнине те, çак шкулти пионерсен мухтавлă ĕçĕсем пирки те нумай пĕлтерчĕ. «Коммунизм ялавĕнче» виç-тăват номерте пичетленчĕç тĕлпулăва çутатнă тĕрленчĕксем. Вĕсене эпĕ пурне те Ю. Семеновпа пĕрле çырнă тесе палăртрăм. Çапла пуçланчĕ пултарулăхри пирĕн пĕрлехи ĕç. Çавăнтанпа алла-аллăн çирĕппĕн тытса, пĕрпĕрне пулăшса, килĕштерсе çур ĕмĕре яхăн утрăмăр пурнăç çулĕпе. Унăн çутă кăмăлĕ, çивĕч ăс-тăнĕ, сăмаха тытма пĕлни, та-

раватлăхĕ тата ытти паха енĕ кирек кама та тыткăна илмелле. Çавăнпах ĕнтĕ Сементерĕн çывăх юлташĕсем, ăна пысăка хурса хаклакансем Чăвашра кăна мар, унран аякра-аякра вырнаçнă çĕрсенче те нумай. Вĕсен йышĕнче — поэтсемпе прозаиксем, юрă ăстисем, ӳнерçĕсем, çурт купалакансем, çĕр ăстисем, вĕрентекенсем, çамрăксем, ватăсем... Юрий Сементерпе ăçта кăна пулман-ши эпĕ хамăн пурнăçра! Ытти халăх çыравçисем те, вулаканĕсем те лайăх пĕлсе тăраççĕ унăн пултарулăхне, мĕншĕн тесен тăванла халăхсен чи чаплă поэчĕсем куçарнă Сементер сăвви-поэмине. Вĕсен хушшинче вырăс поэчĕсем В. Кочетков, П. Градов, И. Смирнов, А. Парпара, Украина поэчĕсем Б. Степанюк, М. Лукив, С. Репьях, П. Перебийнос, Л. Горлач, А. Олейник, Беларуç сăвăçисем В. Зуенок, А. Пысин, Ю. Свирка, пăлхар поэчĕсем К. Химирскипе И. Соколов, якут поэчĕ С. Руфов, таджиксен акынĕ А. Адхам, пушкăрт сăвăçисем С. Алибаевпа А. Ахметкужин, Тутар халăх поэчĕсем Р. Хариспа Р. Миннуллин, çармăс поэчĕсем А. Ивановăпа А. Тимеркаев унăн хӳхĕм хайлавĕсене тăтăш куçарса тăчĕç, тĕрлĕ хаçат-журналта, уйрăм кĕнекесенче пичетлерĕç. Юрий Сементер те вĕсен сăвви-поэмине чăвашла куçарса пичетлес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлет. «Тус-тăванлăх элчи», — тетчĕç ăна пирĕн вулакансем. Çавăншăн поэта Туслăх орденĕ парса чысларĕç.

Куçару тенĕрен, унăн тепĕр пысăк ĕçне те манман-ха тăван литературăна хаклакансем. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче Ю. Сементер вырăссен илемлĕ сăмахлăхĕн вилĕмсĕр палакĕ пулса юлнă «Игорь полкĕ çинчен хунă юрра» чăвашла питĕ ăста куçарса кăларчĕ.

Халăхăн илемлĕх çӳпçинче яланлăха кĕрсе юлмалли паха хайлав сахал мар шăрçаларĕ поэт. Чăваш композиторĕсем унăн сăвви-семпе çĕр-çĕр юрă, вунă ытла сюита, ораторисемпе кантатăсем, «Телей кайăкĕ» опера, «Вăрман ачисем» балет çырчĕç. Чăннипех те улăпла ĕç!

Мĕн каласси, хăйĕн 75 çулхи юбилейне те поэт чăннипех тулли пучахлă кĕлтесен çӳллĕ капанĕпе кĕтсе илчĕ. Ку çын ăсне пуянлатакан, хавхалану кӳрсе вăй паракан, ĕмĕр çамрăк пулма хистекен, тăван çĕршĕн хаюллăн кĕрешме, вута кĕме вĕрентекен çĕкленӳллĕ сăмахлăхăн хӳхĕм капанĕ!

ҪУНАТЛĂ ҪУРАЛНĂСКЕР

Пĕр ялта, пĕр ҫулта, пĕр уйăхра ҫуралнă, пĕр класра, пĕр парта хушшинче вĕреннĕ манăн ҫывăх тусăм Дмитрий Никоноровић Михлеев кинорежиссер, поэт, драматург, сценарист, художник, дельтопланерист ҫинчен пĕлмен ҫын паянхи кун Чăвашра ҫук та пулĕ. Унăн мухтавлă ĕҫĕсем пирки «Писатели Чувашии» кĕнекере те (2006 ҫ.), Чăвашсен кĕске энциклопедийĕнче те (2001 ҫ.), тăватă томлă «Чăваш энциклопедийĕнче» те (2009 ҫ.) тĕплĕн ҫырса кăтартнă. Чăваш Республикипе Тутарстанра тухса тăракан хаҫат-журналта В. Жебит, С. Павлов, В. Алексеев, А. Иванов тата ыттисем Дмитрий Михлеев ҫинчен статьясем, интервьюсем пичетленĕ. Д. Михлеевăн калав-повеҫĕсем, чылай сăвви иртнĕ ĕмĕрĕн 70-90-мĕш ҫулĕсенче «Хатĕр пул», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче, «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия», «Молодой коммунист» хаҫатсенче кун ҫути курнă, 1985 ҫулта унăн повеҫĕсемпе калавĕсен пуххи «Поле передейнное» – Чăваш кĕнеке издательствинче уйрăм кĕнекен пичетленсе тухрĕ.

Ăҫта тата епле майпа мĕн пур чăваш тĕнчине, Раҫҫейпе Беларуҫ вулаканĕсемпе кураканĕсене тĕлĕнтермелĕх ҫуталчĕ-ха унăн чăннипех те хăватлă пултарулăхĕ?

Пирĕн ял, Ҫĕнĕ Йĕлмелĕ, хăйне евĕрлĕ. Хĕвел тухăҫĕ енче – ҫӳллĕ сăрт. Хăйĕн чуллă-хăйăрлă тăприпе вăл ҫакăнтан Урал тăвĕн хысакĕсем пуҫланса каясса систерет. Кунтан ял ҫыннисем темиҫе ĕмĕр ĕнтĕ кирпĕч ҫапса кăмака ҫавăрма хăйăр кăларса турттараҫҫĕ е ҫав хăйăра тăмпа тата улăмпа хутăштарса выльăх чĕрлĕх усрамалли вите, вăрлăх хывмалли пӳхлмесем тăваҫҫĕ. Ăшă, меллĕ, шанчăклă.

Ял витĕр виҫĕ юхан шыв шăнкăртатса иртет. Пĕри – Сĕнче: пирĕнтен тăватă ҫухрăмра вырнаҫнă Эмир ялĕнче (тахҫан чăваш ялĕ пулнă теҫҫĕ, халĕ тутарсем пурăнаҫҫĕ) пуҫланать. Тепĕр иккĕшĕ – Пыл ҫырмапа Кайри ҫырма – яла темиҫе пая уйăрса Сĕнчене юхса кĕреҫҫĕ. Эпир Дмитрий Михлеевпа Пыл ҫырма хĕрринче ҫуралнă: вăл – сулахай ҫыранта, эпĕ – сылтăм енче. Пĕр шухăшласан, нимле уйрăмлăх та ҫук темелле. Ҫук ҫав, апла маар. Сулахай ҫыран леш енче, тутарсен Лашман ялĕ енче пурăнакансем пурте тенĕ пекех тĕне кĕмен чăвашсем, пирĕн енчисем вара – кĕрешĕнсем. Масарĕсем те иккĕ пирĕн: хĕвел анăҫ енчи икĕ сăрт ҫинче. Пĕринче чул е йывăҫ юпасем, тепринче хĕрессе курăнаҫҫĕ. Тĕне пула ял ҫыннисем тахҫан хирĕҫкеленĕ теҫҫĕ, эпир ҫуралнăранпа вара нимĕнле шăв-шав та пулман.

Дима вăл ача чухне пĕртте Дима пулман. Микоян тесе чĕннĕ ăна. Ял ҫыннисем халĕ те ҫавăн пекех чĕнеҫҫĕ. Ҫакăн сăлтавĕ путишлерех пулса тухнă. Вăрҫăччен Дима ашшĕ, Миканюр пичче, Мускавра метрос трройра ĕҫленĕ. Ҫавăн чух вăл кунта ĕăҫле-

кенсем патне ВКП(б) Политбюро членĕ Анастас Микоян нарком пырса хăйсемпе питĕ кăмăллă калаçнине лайăх ас туса юлнă. Килĕшнĕ ăна Микоян, ахаль çынсене ăнланакан ăслă çын пек туйаннă. Шăпах çак шукăль çынна аса илсе ĕнтĕ 1942 çулхи кăрлачăн 18-мĕшĕнче хăйĕн çемçинче кĕçĕн ывăлĕ çуралсан ăна çине тăрсах Микоян Никонорович Михлеев тесе çыртарнă. Пĕлеймен, шеремет, Микоян вăл ят мар, хушамат пулнине. Кайран ӳссе çитсен, тӳрлетнĕ çав йăнăша: çирĕм çула яхăн Микоян ятпа çӳренĕ йĕкĕт хăйне Дмитрий (Митя, Мĕтри, Тимуш) ят илсе хут çыртарнă.

Иксĕмĕре магнит пек пĕрлештерсе тăраканни сахал мар пулнă пирĕн ачалăхра. Аттесем граждан вăрçинче, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тем те пĕр курнă, темиçе хут та аманнă çынсем, иккĕшĕ те тĕрлĕ бригадăра ут тавраш, хăмăт-пăяв, урапа-çуна хатĕрлекенре ĕçлетчĕç. Вĕсене пулăшма эпир те тимĕрçĕ лаççине çӳреттĕмĕр. Пуçламăш классем хыççăн чăваш чĕлхипе литературине Мария Харитоновна Емендеева вĕрентме тытăнчĕ те пирĕн пурнăç пĕр кĕтмен-туман çĕртен урăх çулпа чуптара пуçларĕ. Мария Харитоновна кашни çулах хамăрăн инçе-инçе вырнаçна Шупашкара, учительсен пĕлĕвне ӳстерекен курссене кая-кая килетчĕ. Çавăнтан темĕн чухлĕ чăвашла кĕнеке, хаçат-журнал иле-иле таврăнатчĕ. Унсăр пуçне тата çав курссем вăхăтĕнче паллашнă писательсем çинчен — Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕ, Илпек Микулайĕпе Александр Артемьев, Стихван Шавлипе Максимов-Кошкинский, Мария Волковăпа Трубина Марфи, Альберт Канашпа Василий Волгин пирки — хавхалануллăн каласа кăтартатчĕ. Пирĕн ума çыравçăсен асамлă пурнăçĕ, вĕсен илемлĕх тĕнчи, илĕртӳллĕ ĕçĕ тухса тăратчĕ. Чунра вĕсем пек пулас килнине систерекен туйăмсем çуралатчĕç.

— Атьăр-ха, ачасем, эпир те Чаваш çĕр-шывĕнчи чылай вĕренекен пек алăпа çырса журнал тата сăвă-калавлă стена хаçачĕ кăларма пуçлар, — сĕнчĕ пире çавăн чухне Мария Харитоновна.

Малтан тăван литература кружокне йĕркелерĕмĕр. Ун хыççăн кружокра чи лайах сăвă-калав тесе палăртнă хайлавсене стена хаçачĕпе «Çăлтăр» журналта кăларма пуçларăмăр.

Юлашки классенче пире хамăр ялтан сакăр çухрăмра вырнаçнă Вăтăр Юман Керемет ялĕнче çуралнă, Хусанти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă Михаил Петрович Михеев вĕрентрĕ. Тĕлĕнмелле этемччĕ вал. Физик-математик пулин те вĕренекенĕн туртăмне шута илсе ăна пур енлĕн пулăшма васкатчĕ. Литературăпа искусство произведенийĕсене тишкерсе хаклама та, картинăсем ӳкерме те, телескоппа каçхи тӳпене тĕпчеме те — пурне те пултаратчĕ, хăй пĕлнине кашни ачана вĕрентме тăрăшатчĕ.

1959 çулхи çĕртме вĕçĕнче вĕренсе тухрăмăр эпир вăтам шкул-

тан. Аттестат илсессĕн Сĕнчен тинĕс пек анлă та тулли пĕвин çыранĕнче кăвайт чĕртсе ирхи шуçăма кĕтсе илтĕмĕр. Дима кашни ача çинчен сăва çырнăччĕ. Вăл çав экспромт-хайлавсене асăнмалăх парнелерĕ. Мана вăл çакăн пек пек сăва халалланăччĕ:

Эс, Порфирий, çывăх тус,
чунупа — поэт,
Иксĕлми телей сана
ыр сунатап эп.
Çыр эс сăвă, çыр поэма,
пул эс Волгин пек,
Сан çулу çинче ан пултар
нимĕнле инкек.

Аттестат илнĕ хыççан тепĕр куннех Хусанта тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçатăн тĕп редакторĕ И.В. Скворцов мана редакции ĕçе йыхравласа васкавлăн тухса пыма хушрĕ. Эпĕ савăннипе çак хыпара тӳрех Димăна пĕлтертĕм. Пуç усрĕ манăн юлташ.

Çапла уйрăлтăмăр эпир тăван ялпа, хамăрăн йывăр та тертлĕ, анчах ĕмĕрлĕхех чун-чĕрене хӳхĕммĕн кĕрсе юлнă ачалăхпа.

Ӳнер училищине вĕренме каясшăнччĕ манăн юлташăм. Сăртту училищине кĕчĕ, вĕренсе тухсан электровоз машинисчĕ пулчĕ. Анчах... кăмăлĕ туртман унăн малашнехи пурнăçне шахта ĕçĕпе çыхăнтарма. Ĕмĕтĕнче урăххи, çутăраххи, темле асамлах тĕнчине туртаканни курăнса тăнă. Хусана килсе çитрĕ. Дима тӳрех изостудире вĕренме тытăнчĕ. Эпĕ ун чухне педагогика институчĕн студенчĕччĕ ĕнтĕ. Иксĕмĕр Тутарстан Писателĕсен союзĕнче йĕркеленĕ вырăс литература секцине те çӳреттĕмĕр. Çак вăхăтра вăл Хусанти музыка инструменчĕсен фабрикинче настройщикра ĕçлерĕ. Анчах вăраха пымарĕ çак вăхăт. Кĕçех ăна çара илчĕç.

Хĕсметрен таврăнсан каллех Хусана таврăнчĕ, патшалăх университетне вĕренме кĕчĕ. Çак вăхăтра вăл журналист ĕçне хăнăхма тытăнчĕ, «Советская Татария», «Комсомолец Татарии» хаçатсенче Анат Камăри хими комбинатне тăвакансен хĕрӳллĕ ĕçĕ çинчен сăвăлла репортажсем пичетлерĕ.

Çапах та çамрăк çын хăйĕн чунĕ темшĕн кăмăлсăр пулнине, хăйне тем тивĕçтерменнине туйнă. Мĕн çитмен-ха ăна? Ыйту хуравне Дима Сергей Эйзенштейн режиссер лартнă «Иван Грозный» илемлĕ кинофильма курнă хыççăн шыраса тупнă. Кино! Акă мĕн иккен искусствăсене пĕр тĕвĕре çыхăнтарса тăракан аслă хăват!

Çамрак çын журналистика факультетне пăрахать те Мускава, Пĕтĕм Союзри кинематографи институтне çул тытать. Анчах мĕнлерех конкурс кунта! Пĕр вырăншăн çĕр аллă ытла абитуриент тупăшать. Телейлисен шутне кĕреймест çав çул Дмитрий Михлеев. Анчах пуç усма хăнăхман чăваш каччи. Мускавра çул-йĕр ĕçне вырнаçать вăл. Каçсерен института лекцисем итлеме çӳрет. Тепĕр çул

вара хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлатех: вăл ВГИК студенчĕ! Кунта Николай Еременкăпа, Наталья Белохвостиковăпа, Никита Михалковпа, Наталья Бондарчукпа пĕрле вĕренет. Кăшт маларах ку институтран Василий Шукшинпа Владимир Гостюхин вĕренсе тухнă.

Йывăр пулнă чăваш ачине çакнашкал пултаруллă çынсен хушшинче хăйĕн аталанса пыракан ăсталăхне тивĕçлипе кăтартма.

Чăтнă, тӳснĕ пирĕн ентеш. Хайĕн диплом ĕçĕ валли хатĕрленĕ «Птица ИКС» фильмне питĕ пултаруллăн лартса панă. Çак ĕç ВГИКран вĕренсе тухаканнисен конкурсĕнче тĕп парнене тивĕçнĕ, Тегеранта иртнĕ фестивальте «Ылтăн Дельфин» парнене илнĕ.

Дипломлă Д. Михлеева «Беларусьфильм» киностудие ĕçлеме янă. Кунта ăна пысăк калăплă картинăсем ӳкерме шаннă. «Селюжонок», «По секрету всему свету», «Воля Вселенной» илемлĕ фильмсем ӳкернĕ. Вĕсем те питĕ ăнăçлă пулса тухнă. Союзри прокатпа кăтартма тивĕçлĕ пулнă.

Кино искусствине хаклакансем Д. Михлеевăн Владимир Коваленок космонавт çинчен ӳкернĕ «Хроника пребывания на земле» документлă фильмĕ те куракансен асĕнче чылайлăха тăрса юлĕ тесе палăртнăччĕ. Критиксем асăрханă тăрăх экран çинче пĕрремĕш хут вĕсен хитрелетсе сăнарланă пурнăçĕ мар, чăн-чăн паттăрла ĕçĕ яр уççăн тухса тăнă. Çак фильм Вильнюсра иртнĕ Пĕтĕм Союзри кинофестивальте «Ылтăн пучах» тĕп парнене тивĕçлĕ пулнăччĕ. Илемлĕ фильмсен номинацийĕнче ун чух Никита Михалковăн «Родня» фильмĕ çĕнтернĕччĕ.

Пултарать чăваш ачи! Çунатлă çуралнăскер тенĕ пулăттăм эпĕ хамăн çывăх юлташăм пирки. Чимĕр-ха, чăн та çапла мар-и?

Литературăри хăйĕн çитĕнĕвĕсем çинчен сăмах пуçарсан Дима тӳрех хăй тахçан дельтаплан спортне килĕштерни, унпа пĕрре кăна мар çӳл тӳпене хăпарнине аса илчĕ. 1980 çулта Карпат тăвĕсен хушшинче хăй ăсталанă дельтапланпа вĕçнĕ чух утмăл метр çӳллĕшĕнчен ӳксе аманнă та иккен. Çакăн хыççăн сакăр уйăх больницăра выртма тивнĕ унăн. Мĕн тумалла? Алă усса выртас килмен. Алла калем тытнă та хăйĕн йывăр ачалăхне аса илсе «Шур çилхеллĕ урхамахăм» повеç çырнă. Хайлав 1982 çулта «Хатĕр пул» журналта чăвашла, 1985 çулта вара Мускавра тухса тăракан «Юность» журналта тата Чăваш кĕнеке издательствинче ытти хайлавпа пĕрле «Поле перейденное» кĕнекере вырăсла пичетленсе тухрĕ. Унтанпа Дмитрий Михлеев нумай-нумай калав, пьеса, сăвă-поэма çырчĕ, вулакансене тĕлĕнмелле ăсталăхĕпе савăнтарчĕ.

Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, вĕçĕмсĕр хавхалану сунатăп эпĕ сана, манăн çывăх та шанчăклă, хаклă та юратнă тусăм!

ЫР ҪЫН ТĔСЛĔХĔ ПУРĂНМА ВĔРЕНТЕТ

Чăваш тĕнчине нумай-нумай пултарулла хĕр-ывăл парнеленĕ Тутарстанри Тăхăрьял тăрăхĕнчи Элшелте 100 çул каялла çуралнă Николай Степанович Дедушкин тивĕçлипех тăван халăх историне ырă та çутă ятпа кĕрсе юлчĕ

Ялти пуçламăш шкул хыççăн вăл Теччĕри тулли мар вăтам шкулта пĕлӳ илнĕ. 1933 çулта Хусанти педагогика техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Çав çулах Пăва районĕнчи Кăнна Кушкинче — И. Яковлев, И. Максимов-Кошкинский, А. Алка, А. Казаков, А. Тимбай çуралнă мухтавлă ялта — ачасене вĕрентме тытăннă. Ун хыççăн Шупашкарти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă та çавăнтах тата учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтра преподавательте ĕçленĕ. 1940 çулта ăна çара илнĕ. Çирĕм çул танă вăл службăра, ахаль салтакран полковника çитнĕ. Кунта та чыслă та яваплă вырăнсенче тăрăшнă — дивизири политпай пуçлăхĕн çумĕ те, фронтри политуправлени инспекторĕ те пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче салтаксемпе офицерсем хушшинче политика воспитанийĕ ĕçне хастаррăн туса пынăшăн Совет правительстви ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе икĕ хутчен, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин пĕрремĕшпе иккĕмĕш степеньлĕ орденĕсемпе тата медальсемпе наградăланă.

...Чăваш чунлă маттур салтак, офицер çар ĕçне кăна хуман мала — унăн тата тепĕр юратнă ĕçĕ те пулнă: вăл сăвăсемпе калавсем, каярах тата чăваш писателĕсен произведенийĕсене тишкерсе рецензисем çырнă. Вăтăрмĕш çулсен варринче çамрăк критикăн статйисем республикăри хаçат-журналта тăтăш пичетленме пуçланă. Уйрăмах вăл К. Иванов, Тайăр Тимкки, Ф. Павлов, С. Элкер тата ыттисем çырнисене тĕплĕн тишкернĕ. Çав вăхăтрах тăван халăхăн фольклорне, сăмах вĕççĕн çӳрекен сăвă-юррине нумай пухнă. Чăваш çыравçисен пултарулăхĕ çинчен вăл тăван республикăра кăна мар, Ленинградра тухса тăракан «Звезда» журналта тата кунти çар округĕн «На страже Родины» хаçатĕнче те тăтăш пичетленĕ.

Н.С. Дедушкин чăваш çыравçисен иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи пултарулăхне тĕпчесе те питĕ нумай ĕçленĕ, 1962 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче «Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи чăваш литератури» ятлă критикăпа библиографи очеркĕ пичетлесе кăларнă. Çав темăпах вăл наукă диссертацийĕ çырнă, çавăншăн ăна Ленинградри А. Жданов ячĕллĕ университетăн Ученăй канашĕ 1964 çулта филологи наукисен кандидачĕн ятне панă. Çав çулах ăна СССР Писательсен союзне илеççĕ. 1967 çулхи апрель уйăхĕнче вара Н.С. Дедушкина Чăваш Писательсен союзĕн правленийĕн ертӳçи пулма суйлаççĕ.

...Шăпах çав çул паллашма тӳр килчĕ мана Николай Степановичпа. Сентябрь уйахĕнче эпĕ те Тутарстан Республикинчен куçса килсе «Коммунизм ялавĕ» (паянхи «Хыпар») хаçат редакцине ĕçлеме вырнаçрăм. Хамăн та ачаранах литературă пултарулăхĕн туртăмĕ пулнăран Писательсен союзĕн кашни пухăвĕларăвне çӳрерĕм, аслисен ырă канашĕсене, сĕнĕвĕсене тĕпе хурса хамăн пултарулăха туптарăм.

Н.С. Дедушкин пирĕншĕн, нумай пулмасть Хусанта аслă шкул пĕтерсе е унти чăваш хаçачĕсенче ĕçлесе Чăваш Республикине килнĕ çамрăксемшĕн, питĕ тăрăшатчĕ. Шăпах çав çулсенче ĕнтĕ Шупашкара Юрий Айташ, Михаил Сениэль, Антал Назул, Николай Симунов, Нина Артемьева килнĕччĕ. Пире вăл хăй ертсе пыракан Писательсен союзĕ йĕркеленĕ пултарулăх секцийĕсене çӳреме канаш пачĕ. Чăнах та мĕнле кăна секци ĕçлеместчĕ пулĕ çав вăхăтра: проза, поэзи, драматурги, очеркпа публицистика, критика, сатирăпа юмор тата ыттисем те. Çамрăксемпе ĕçлекен ятарлă канаш та йĕркеленĕччĕ Писательсен союзĕ çумĕнче. Ăна хăй вăхăтĕнче Петĕр Хусанкай та, Георгий Орлов та, Алексей Воробьев та питĕ пултаруллăн ертсе пычĕç, хăйсен ырă вĕрентĕвĕпе çамрăксене хавхалантарса, çунатлантарсах пычĕç. Ас тăватăпха 1969 çулта вилĕмсĕр Петĕр Хусанкай çамрăк чăваш поэчĕсене каланă хĕрӳллĕ сăмаха:

«...Хăвăртан малтан йывăр тертпе çул хывнă тăванăрсене сума сăвăр. Пĕрне-пĕри хисеплĕр, туслă пурăнăр. Мал ĕмĕт ячĕпе, ăсталăх ячĕпе сиксе тавлашăр, тупăшăр, ăмăртăр, çухаран çавăрса тытасса çитĕр, анчах урăх çĕре лексенех пĕрне-пĕри алăр парăр. Ан манăр: эсир пĕр аслă самана çыннисем, пĕр халăх йышĕ, пĕр класс сасси. Çеçпĕл сăвăçсем патне çырнă çырăвĕсенче «чăваш чĕлхи ячĕпе пĕр пулар» тет. Ку нумая пĕлтерекен япала...»

Писательсене ĕçлеме тивĕçлĕ майсем туса парас енĕпе те тăрăшса ĕçлерĕ Н.С. Дедушкин. Çыравçăсем çĕршыври чи лайăх пултарулăх çурчĕсене – Пицундăна, Переделкинăна, Малеевкăна, Юрмалăна тата хамăрăн Кăкшăмри «Çилпи» пансионата кайса çĕнĕ произведенисем çыратчĕç, унта хăйсен сывлăхне çирĕплететчĕç.

Килĕнче вĕсем Ангелина Егоровнăпа, хăйĕн юратнă мăшăрĕпе, иккĕшех пурăнатчĕç, ачисем Санкт-Петербурграх тĕплесе юлнăччĕ. Сад ĕçне кăмăллатчĕç вĕсем, хăйсем çитĕнтернĕ пахча-çимĕçе ас тивме хăнасем пуçтарма юрататчĕç. Иккĕшĕ те шутсăр тарават çынсемччĕ. Ангелина Егоровна, электроаппарат завочĕн культура керменне юрă юрлама çӳрекенскер, час-часах пире çĕнĕ юрăсем юрласа савăнтаратчĕ.

Ырă çынсем нихăçан та халăх асĕнчен тухмаççĕ. Вĕсен çутă тĕслĕхĕ пурăнма, хастар ĕçлеме, паян çутатакан хĕвелшĕн чунтан савăнма вĕрентет.

СĂВВИСЕНЧЕ — УÇĂМЛĂХ, СĂНАРЛĂХ

Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш çулĕсен вĕçĕнче паллашрăм эпĕ Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас Кĕçтемĕр ялĕнче Аслă Çĕнтерӳ хыççăн, 1945 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче çуралнă Александр Моисеевич Ильинпа. Атăл леш енчи Кăкшăмра, чăваш çыравçисен «Çилпи» пултарулăх çуртĕнче, республикăри Писательсен союзĕ çамрăк çыравçăсене пухса семинарсем тăтăшах ирттеретчĕ, вĕсене ятлă-сумлă çыравçăсемпе тĕл пулса калаçма майсем туса паратчĕ.

Ун чухне эпĕ тин çеç тухма пуçланă «Хатĕр пул» журналта тĕп редакторта ĕçлеттĕм. Шăп çавăн чух паллашрăм та хамран виçĕ çул çеç кĕçĕнрех Александр Ильинпа. Çав вăхăт тĕлне вăл Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухма та, Совет Çарĕнче службăра тăма та, Çĕрпӳри «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнче инженерта ĕçлеме те, Чăваш ялхуçалăх институчĕн механизаци факультетĕнче вĕренсе инженер дипломне илме те ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Пĕр шутласан, ялхуçалăх техникин ăсти, хăйĕн пурнăçне пĕтĕмпех производство ыйтăвĕсемпе çыхăнтарнă çын литературăран аякра тăмалла пек. Анчах Александр Ильина поэзи тĕнчи те каннăç паман иккен. Ăна тăван çĕрĕн ытарайми илемĕ, çутçанталăкăн асамлă вăй-хăвачĕ, сĕм авалтан пыракан халăх йăли-йĕрки, сăвви-юрри, ташши-тĕрри, çутă та ырă йăлисем хавхалантарса, вăй парса тăнă. Çак хăватлă туртăм ăна Мускаври А.М. Горький ячĕллĕ Литература институтне илсе çитернĕ, вăл, унтан ăнăçлăн вĕренсе тухса, профессионал писатель пулса тăнă. Унччен тахçан Çĕрпӳ район хаçатĕнче пĕчĕк сăвăсем пичетленĕ çамрăкăн хайлавĕсем республикăри хаçат-журналта, уйрăм тухакан кĕнекесемпе учебниксенче, хрестоматисенче пичетленме пуçласçĕ. Композиторсем унăн сăввисемпе юрăсем çыраççĕ. Александр Ильин 1999 çулта Сеçпĕл Мишши фончĕ аслă поэтăмăрăн çĕр çулхи юбилейĕ ячĕпе ирттернĕ литература конкурсĕнче малти вырăна тухать, хăйĕн «Çеçпĕл халалĕ» поэмипе çĕнтерӳçĕ пулса тăрать.

А. Ильин поэт пултарулăхне кăмăллană Юрий Айдаш палăртнă тăрăх — унăн сăввисем лирикăлла геройăн кăмăл тасалăхĕпе, тĕнче çине вăл уçă сăн-сăпатпа пăхнипе чун-чĕрене тыткăнлаççĕ. Поэтăн чĕлхи — çыпăçуллă та таса.

Тăван ялта ирсем хĕвеллĕ,
Тăван ялта çилсем çӳçеллĕ,
Тăван ялта çынсем илемлĕ,
Унта ачалăх пурăнать...

Кунта кашни йĕркинче — хăйне уйрăм шухăш.

«Александр Ильин сăввисем хăйнеевĕрлĕхпе, пултаруллă эрешленĕ сăнарлăхпа палăрса тăраççĕ», — çырнăччĕ Чăваш халăх писателĕ Василий Алентей.

Ку чăн та çапла. Илсе пăхар-ха, акă, поэтăн «Салтак сăввисем» ярăмĕнчи пĕр сăвва:

Каллех акаци — шурă тумлă.
Унпа тавралăх киленет.
Килет çурхи çил хумлăн-хумлăн,
Акаци ытамне кĕрет.

Каштан та, авă, шур чечеклĕ,
Вăл хурама пек туйăнать.
Мăнаçлăскер. Хитре. Илемлĕ,
Анчах чуна тем пăлхатать.

Аса килет тăван уй-хирĕм.
Аса килет ял укăлчи.
Хитре иккен тавралăх пирĕн.
Çакна эп халь, чăваш каччи,
Германире аван ăнлантăм.

Ăнлантăм лайăх. Чĕререн.
Туссем, çуралнă ен
Ниççан та
Тухмасть иккен чун-чĕререн...

Вăйлă, витĕмлĕ, Тăван çĕршыва чунтан юратса каланă!

Поэтăн халиччен «Çумăр ташши», «Вăрманти тĕлпулу», «Çаран çинче», «Тупа», «Тумла» сăвă кĕнекисем пичетленсе тухнă. Çавăнпа пĕрлех тăван тавралăх историйĕ, унти çынсен хастар ĕçĕ çинчен тĕпчесе çырнă «Çĕрпӳ», «Çавал ен» çĕрĕн кунçулĕпе паянхи пурнăçĕ» кĕнекисене те ырăпа палăртмалла.

Çитмĕл çул тултаракан ĕçтешĕме — пултаруллă поэта, публициста, инженера, сад ăстине, дачăри хамăн ырă кӳршĕме — юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламласа, ырă та вăрăм ĕмĕр, пултарулăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем, вулакансен чĕрисене тыткăнлакан çĕнĕ хайлавсем хывма ырă сунас килет.

ТВАРДОВСКИЙ ЧӖРТНӖ ПУЛТАРУЛĂХ

Нумай пулмасть Чăваш кӗнеке издательствинче вырăссен талантлă поэчӗн Александр Твардовскин «Василий Теркин» поэми чăвашла тепӗр хут пичетленсе тухрӗ. Ăна хамăрăн паллă сăвăç Геннадий Айхи 1960 çултах тăван чӗлхепе куçарса кăларнă иккен, анчах тем сăлтавпа кӗнекере куçаруçă ятне палăртман.

Аслă Çӗнтерӗвӗн 70 çулхи юбилей çулӗнче поэма тепӗр хут пичетленсе тухни вулакансемшӗн чăн-чăн уяв пулчӗ. Тăван чӗлхепе янракан поэма куçаруçăн пысăк ăсталăхне кура чуна уçса ярать.

...Савнă çӗрӗмшӗн нушаллă
Хурлăхлă кунсем килсен,
Теркинăм, санпа яланлăх
Эп туслашрăм чӗререн.

Çапла, çапла, А. Твардовскин вырăсла текстӗнчи пекех çăлкуç таппи евӗрлӗ юхса пыраççӗ сăвă йӗркисем. Тивӗçлӗ поэта тивӗçлӗ куçаруçă чăвашлатнă.

Маларах калани умсăмах вырăнне пултăр. Халӗ «Василий Теркин» поэмăпа тата унăн авторӗпе çыхăннă пӗр пулăм çинчен каласа парам.

1977 çулта, çуллахи кану вăхăтӗнче, Тутарстанри Çарăмсан районӗнчи тăван яла — Çӗнӗ Йӗлмеле — кайнăччӗ. Пӗр юлташ мана хăнана чӗнчӗ. Унăн мăшăрӗ вăтам шкулта вырăс чӗлхи вӗрентетчӗ. Кӗнеке çӳлӗкӗсем çинче кӗнеке туллиех. Кăсăкланса пырса пăхрăм: «Мӗн вулаççӗ-ха ялти вӗрентекенсем?» — тетӗп. Тӳрех калам — тем те пур унта: тӗрлӗ словарь, писательсен çырнисен пуххисем, тӗрлӗ справочник... Поэзи кӗнекисем хушшинче симӗс хуплашкаллă пӗр хулăн кӗнекене тӳрех асăрхарăм. «Александр Твардовский. Василий Теркин» — тесе çырнă хуплашки çине. «Ун пекех хулăн пулмалла марччӗ-çке çак поэма кӗнеки», — тетӗп хама хам. Алла илтӗм те уçкалама пуçларăм. Темӗн те пур иккен кунта! Малта — поэми хăй. Ун хыççăн 234 çыннăн А. Твардовский патне çак поэма пирки 1942 çултан пуçласа 1970 çулччен ярса панă çырăвӗсем, сăввисем, аса илӗвӗсем пичетленнӗ, кӗнеке вӗçӗнче вара Александр Твардовскин вулакансен ыйтăвӗсене хуравласа çырнă пысак статйине вырнаçтарнă. Маншăн вулакансен çырăвӗсем кăсăклă пулчӗç. Мӗнле кăна професси çыннисем, тӗрлӗ халăх ывăлӗ-хӗрӗ çырман-ши! Вӗсем хушшинче çар çыннисем те, ял-хула ӗçченӗсем те, писательсемпе поэтсем те нумай. Эпӗ тӳрех пăлхар поэтессин Блага Димитровăн, вырăссен паллă писателӗсен Константин Симоновăн, Николай Телешовпа Иван Бунинăн çырăвӗсене кăсăкланса вуласа тухрăм. Мана уйрăмах

Василий Мукусем ятлă чăваш журналисчĕн çырăвĕ те çак кĕнекере пурри питĕ тĕлĕнтерчĕ. Акă вăл:

«1968 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕ. Хусан хули.

Александр Трифонович!

Сирĕн кăмăлăра çĕклентерсе ярас тĕллевпе хамăн çырăва çаknашкал пуçласа яма пулать: пĕррехинче эпĕ вăрă-хукрахла ĕç турăм, çакăншăн вара А. Твардовский поэт айăплă. Е тата Сирĕн сăмахăрсемпе каласан та вырăнлă пулмалла: Хăть çуррине вула, ун хыççăн, Тен, вулас килĕ пĕтĕмпех.

Манăн, эсир темле ерçӳсĕр пулин те, ман çырăвăма вуласа тухассах шанас килет. Мĕн пирки çыратăп-ха? Эпĕ хамăн Твардовские шыраса тупни çинчен.

Халĕ эпĕ хĕрĕх тăватă çулта. Çапла, кунашкал çырусем çырма вăхăт иртсе те кайнă пулĕ ĕнтĕ. Çуралса тата ӳссе çитсе вăрçа кайичченех чукун çултан 70 çухрăмра, çывăхри пристаньрен 100 çухрăмра вырнаçнă чăваш ялĕнче пурăннă. Шкул ачи чухнех ял библиотекинчен «Мурави çĕршывĕ» ятлă кĕнеке курнăччĕ те кĕсьене чиксе хунăччĕ. Вулас туртăм пулмарĕ — сăвăлла çырнă. Ячĕ те самаях иккĕлентерчĕ тата — темле Мурави (кăткă) çĕршывĕ, ун пеккине карта çинче те палăртман.

Çапла вара шкулта вунă çул вĕренсе те эпĕ А. Твардовский поэт çинчен урăх нимĕн те пĕлмен.

Шкул сакки хыççăнах фронта, тăшман хупăрласа илнĕ Ленинграда лекрĕм. Çакăнта 1943 çулхи çу кунĕсенче салтаксем умĕнче эстрада артисчĕсем кăтартнă концерт вăхăтĕнче «Василий Теркин» поэмăран илнĕ «Награда çинчен» сыпăка итлерĕм те шутсăр хăпартланса та тĕлĕнсе кайрăм. Мĕн тери тĕрĕс сăнарланă совет салтакĕн паттăрлăхĕпе чăрсăрлăхне, унăн йĕплĕ кулăшне! Сăвă йĕркисем çыпăçуллă та вырăнлă шăрçаланса пыни кашни салтака тĕлĕнтерсе те çĕклентерсе ячĕç, чылай каларăшсем тӳрех асра тăрса юлчĕç.

1944 çул пуçламăшĕнче, блокадăна сирсе ывăтиччен, пирĕн, пĕр ушкăн салтак — гвардеецăн, темиçе эрне Пулково çывăхĕнче пурăнма тиврĕ. Унта эпир каçсерен катмаксемпе тата кĕреçесемпе траншейăсем чаврăмăр, нимĕçсен малти линийĕ патне çывăхрах пымалли майсем тума тăрăшрăмăр. Ир енне кăштах канса илеттĕмĕр. Çĕр пӳртсем хăтлăччĕ пирĕн. Салтаксем тивĕçлĕ йĕркепе пурăнатчĕç, хаçат-журнал та вăхăтра илсе тăратчĕç. Пĕррехинче кунта артиллеристсем пĕрле пухăнса «Красноармеец» журналта пичетленнĕ сăвăсене саспа вуласа итленине куртăм. «Василий Теркин» поэмăн черетлĕ сыпăкĕсене пичетленĕ иккен. Салтаксем пĕрре шăп пулаççĕ, тепре поэтăн уйрăмах шӳтлĕ е йĕплĕ сăмахĕсене илтсе е кĕрлесе, е сасăпах кулса яраççĕ. Кашни

хăйĕн кăмăлне тулли палăртать, поэма геройĕн маттурлăхĕпе, хăюлăхĕпе мухтанать.

Эпĕ тӳрех ăнлантăм: ку сăвăсен авторĕ хăй те фронтовик ĕнтĕ, унсăрăн мĕнле пĕлтĕр вăл салтакăн чунне, ун ĕмĕт-шухăшне, вăрçă пынă вăхăтри унăн йăли-йĕркине?

Çакна палăртас пулать, ку вăхăт тĕлне эпĕ сăвăсем çине урăхларах пăхма пуçларăм, вĕсем мана ытларах та ытларах килĕшме тытăнчĕç. Чи лайăххисене эпĕ блокнота çыра-çыра хураттăм е хаçатран каса-каса илеттĕм.

Салтаксен хăйсен пултарулăхĕн тĕслĕхĕсене те çыра-çыра пыраттăм. Пĕррехинче юлташăмран тăла пуставран çĕлетнĕ салтак шинелĕ çинчен хывнă юрра çырса илнĕччĕ. Вăрçăра вилмеллех аманнă салтака тăшман вут-хĕмĕ шăтарса пĕтернĕ шинельпе витсе хурса юлашки çула ăсатаççĕ, салтакĕ вара арăмĕпе те, пĕччен те канлĕ çывăрса курайман. Чылайччен упрарăм эпĕ çак юрра. Пĕлмен эпĕ ун чухне çак текст та «Василий Теркин» поэмăн пĕр сыпăкĕ пулнине.

Эсир çырнă поэмăна эпĕ питĕ хăвăрт вуласа тухаттăм та каярах киленĕçлĕ туйăмпа тепĕр хут йĕрлесе пыраттăм. Каярах, госпитальтен тухса кайма вăхăт çитсессĕн, медсестрасемпе санитарсем курасран асăрханса эпĕ çав брошюра-кĕнекене наçилкка çинчи минтер айне хутăм, мана вара палатăран йăтса тухрĕç.

Çавнашкал вăрă-хурахла ĕç турăм эпĕ. Çакăншăн, ман шутпа, А.Твардовский поэт айăплă пулчĕ пулас.

Вăрçă хыççăн вара — ялта колхоз ĕçĕнче тăрăшнă чухне-и, хулара университетра вĕреннĕ чухне-и, — эпĕ Твардовскин кашни произведенине пĕр сиктермесĕр вуласа пыраттăм. Тепĕр хут та тепĕр хут «Муравьи çĕршывне», «Çул хĕрринчи çурта», «Инçет хыççăн инçет», «Теркин леш тĕнчере» поэмăсене вулаттăм, вĕсен тарăн шухăшĕнчен, унти илемлĕх ăсталăхĕнчен тĕлĕнеттĕм...

Эпĕ Сире, Александр Трифонович, хамăн пиччесем шăллăмсене юратнă пек юрататăп. Эпĕ сире тĕлĕнмелли талантăршăн, Эсир тӳрĕ чунлă та таса кăмăллă, чăн-чăн халăх сăвăçи пулнăшăн пысăка хурса хаклатăп...

Эпĕ Сире, хисеплĕрен те хисеплĕ Александр Трифонович, Совет Союзĕн Аслă гражданинне, мĕнпур вулакан ячĕпе пысăкран та пысăк тав сăмахĕ калатăп.

Сире чунтан юратса тата хисеплесе,

Василий Мукусев».

Пулать вĕт çавăн пекки пурнăçра! Ара, 1959 çулхине эпĕ Хусанта чăвашла тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме тытантăм. Шăпах çавăн чух Василий Дмитриевич Мукусев, унччен Тутарстанти Элкел районĕнчи Сиктĕрме шкулĕнче

ачасене вĕрентсе пурăннăскер, «Советская Татария» хаçат редакцийĕн ял хуçалăх пайне килсе ĕçе вырнаçрĕ. Хусанти Бауман урамĕнчи Пичет çуртĕнче ĕçлеттĕмĕр эпир. Василий Дмитриевич пушă вăхăт тупăнсанах пирĕн редакцие кĕрсе тухатчĕ. Хусанти В.И.Ульянов-Ленин ячĕллĕ патшалăх университечĕн филологи факультетне пĕтернĕскер, вăл хăйĕн сăввисене, калавĕсемпе очеркĕсене Мускавра тухса тăракан журналсенче те пичетленĕ, паллă писательсемпе Федор Абрамовпа, Василий Быковпа, Евгений Носовпа туслă пулнă, вĕсемпе çырусем çӳретнĕ. Василий Мукусев сăввисем, калавĕсемпе тĕрленчĕкĕсем Хусанти, Шупашкарти, Мускаври журналсемпе альманахсенче час-часах пичетленнĕ.

Хăйĕн мухтавлă ентешĕ, чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай пулăшнипе Василий Дмитриевич Митта Ваçлейĕпе çывăх туслашать. Ятлă-сумлă поэт В.Мукусевăн диплом ĕçне чăвашла куçарса пичетлеме пулăшать, çамрăк автора литература тĕпчевĕсене малалла тăсма ырă сунса пысăк çыру ярать.

Журналист ĕçĕнче те Василий Дмитриевич пысăк хастарлăх кăтартрĕ, Тутарстанра çитмен ял хăвармарĕ, ăна чи лайăх очерксемпе статьясемшĕн Журналистсен союзĕ «Хрусталь калем» преми парса хавхалантарчĕ.

1987 çулта, Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 80 çул çитнине уявланă кунсенче, Сиктĕрме чăвашĕ В. Мукусев Шупашкара килсе кайрĕ, çак ятпа ирттернĕ савăнăçлă каçра хăйĕн тĕнчипех паллă ентешĕ çинчен ăшă та çунатлă сăмахсем каларĕ.

Юлашки хут эпир Василий Дмитриевичпа 1997 çулта тĕл пултăмăр. Эпир ун чух Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 90 çул çитнине паллă тума Сиктĕрмене кайнăччĕ. Каялла килнĕ чух пире «Сувар» хаçат редакцине кĕрсе тухма ыйтрĕç. Эпир, Атнер Хусанкай, Юрий Сементер тата эпĕ, çак йыхрава хаваспах йышăнтăмăр. Кунта Василий Мукусев та пурччĕ. Уйрăлнă чух вăл пире ăшшăн ыталаса илчĕ те телейлĕ çул сунчĕ. Шел те, çак тĕлпулу пирĕн юлашки пулчĕ.

ТӲПЕРИ АСАМАТ ПĔККИ

Алексей Афанасьев çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май

Мĕтри Кипекпе Хветĕр Уяр, Куçма Чулкаçпа Анатолий Анат, Якур Афанасьевпа Алексей Афанасьев... Час-часах аса илетĕп эпĕ тăван литература уйĕнче пултарулла та хастар ĕçленĕ прозаиксемпе поэтсене, чăваш вулаканĕ валли нумай-нумай ырă сăвăкалав, повесть-роман, сатирăлла калавсем, рецензисем çырса

хăварма ĕлкĕрнĕ хисеплĕ çыравçăсене. Мĕншĕн шăпах вĕсене асантăм? Мĕн пĕрлештерсе тăрать-ха асăннă ĕçтешĕмсене? Тӳрех калам — хушамачĕсем пĕрешкел пулни — Афанасьевсем. Тĕрлĕ çĕрти, тĕрлĕ облаççемпе республикăсенчи чăваш ялĕсенче çуралнă вĕсем, анчах пĕр ĕмĕт-тĕллевлĕ пулнă — чăваш литературине вăйлатса аталантарас тесе тимленĕ.

Хамăн хушаматăм та «Афанасьев» пулнăран эпĕ çак пултаруллă çынсене ытларах хисеплеттĕм пулас. Вĕсенчен иккĕшĕ — Хветĕр Уярпа Алексей Афанасьев манăн тăван Çарăмсан районĕпе çывăх вырăнсенчех çуралнăран эпĕ вĕсемпе çамрăк чухнех тĕл пулса паллашма ĕлкĕртĕм. Хветĕр Уяра хамăр ялтах вăл Чăваш театрĕн артисчĕсемпе пĕрле гастроле килсе лексен куртăм. Алексей Андрияновичпа вара 1959-мĕш çулта, хам Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçатра ĕçленĕ вăхăтра çывăхлантăм. Паянхи пекех астăватăп-ха, редакцин литературăпа искусство тата культура пайне ертсе пыракан Василий Николаевич Юдин эпĕ ларакан пӳлĕме кăтра çӳçлĕ, яштака пӳллĕ пĕр арçынпа кĕчĕ те тӳрех: «Акă, паллаш, чĕрĕ поэт, нумай-нумай сăвăпоэма тата пьесăсем çырнă, сан пекех «Афанасьев» хушаматпа çӳрекен Алексей Андриянович. Вăл та редакцире ĕçлет, Павлă районĕнчи «Ялав» хаçатăн тĕп редакторĕнче», — тесе мана хăнапа паллаштарчĕ.

Ку вăхăт тĕлне эпĕ редакцире упранакан пĕчĕк библиотекăра Алексей Афанасьев кĕнекисемпе паллашма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Мана унăн «Телей уççи» сăвăлла юмахĕ шутсăр килĕшнĕччĕ, Тутарстанăн кăнтăр-хĕвелтухăç енчи çĕрсенче нефтяниксен хастар ĕçĕ çинчен тĕлĕнсе те савăнса вуласа тухнăччĕ, поэт ăсталăхĕнчен, унăн анлă тавракурăмĕнчен тĕлĕннĕччĕ. Çав вăхăт тĕлне çăмăл мар пурнăçăн тумхахлă та тертлĕ çулĕсем витĕр утса тухма ĕлкĕрнĕччĕ вăл. Павлă районĕнчи Потап Тăмпарлă ялĕнче учитель çемйинче çуралнă Элекçей колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен, каярах тăван ялĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухать. Ялĕ ку ытти чăваш ялĕсенчен пĕр пулăмпа уйрăлса тăрать: кунта авалтанах чăвашсемпе удмурт çыннисем шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăнаççĕ иккен, пĕр-пĕрин чĕлхисене, йăли-йĕркине питĕ лайăх пĕлеççĕ, çемье çавăрса пĕрле пурăнаççĕ. Алексей Афанасьевăн ашшĕ те пĕрремĕш арăмĕ чирлесе вилнĕ хыççăн удмурт хĕрарăмĕпе пĕрлешет. Пулас поэт 1942-мĕш çулта Удмурт Ташли ятлă ялти çичĕ çул вĕренмелли шкулта удмурт чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать. Анчах та вăрах ĕçлеме ĕлкĕреймест вăл — 1943-мĕш çулхи кăрлач уйăхĕнче ăна Совет Çарне илсе каяççĕ. Вунсаккăрти йĕкĕт малтанласа çар пехотин училищинче вĕренет, ун хыççăн авиаци десанчĕн тата пехота çарĕсен ретĕнче пулать, Карели çĕршывне фашистсенчен тасатма хутшăнать.

Хаюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна виççĕмĕш степеньлĕ Мухтав орденĕпе тата медальсемпе наградăлаççĕ.

Вăрçă хыççăн Алексей Андриянович каллех тăван ялĕнче ачасене вĕрентет, Пĕкĕлмери учительсем хатĕрлекен институтра литература уйрăмĕнчен вĕренсе тухать. 1951-1960-мĕш çулсенче Павлă районĕнчи «Ялав» хаçатра редактор заместителĕ тата тĕп редакторĕ пулса ĕçлет.

Икĕ чĕлхепе те пултаруллă çырма пĕлни ăна малашне ӳсĕм хыççăн ӳсĕм туса пыма пулăшнă. 1940-мĕш çулта вăл Ижевскра тухса тăракан «Молот» журналта К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине удмуртла куçарса кăларать. Çак ĕçре ăна удмурт халăхĕн паллă поэчĕ тата прозаикĕ М.П. Петров пысăк пулăшу парать. Çакăнпа усă курса А. Афанасьев Александр Алган «Шывармань» легендине тата Петр Осиповăн «Айтар» пьесине удмуртла, А.Клабуковăн «Пĕчĕк Макçи» поэмипе В.Садовниковăн «Чăнкă çыран хĕрринче» камитне чăвашла куçарса кăларнă.

Поэт драматурги жанрĕпе те тимлесе ĕçленĕ. 1948-мĕш çултах вăл Леонид Родионов режиссерпа пĕрле «Колхоз хĕрĕсем» пьеса çырнă. Унан нефтяниксен канăçсăр та йывăр ĕçĕ çинчен каласа паракан «Йăваш Петĕр» пьеси драмăллă произведенисен конкурсĕнче ятарлă премие тивĕçнĕ.

Прозăра та вăл питĕ ăнтарса ĕçлерĕ. Унăн «Кăнтăрти чикĕре», «Заставăри тревога» повеçĕсене, икĕ томран тăракан «Юманлăх çулçă тăкмарĕ» романне вулакансем ăшшăн йышăнчĕç. Литературăри тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн паллă поэта Чăваш Республикин Аслă Канашĕн тата Тутар Республикин Аслă Канашĕн Президиумĕсен Хисеп грамотисене парса чысланă.

«Поэзи хирне ылтăн вăрлăх акать, – тенĕччĕ ун çинчен Чăваш халăх позчĕ Стихван Шавли. – Çакă вăл тăван кĕтесĕпе тăван халăхне хытă юратнинчен, курни-пĕлнинчен, поэт куçĕпе, чунĕпе сăнама, туйма пĕлнинчен килет. Акă, çумăр хыççăнхи кĕске саманта кăтартакан сăвă. Пĕр енче хĕвел, тепĕр енче инçе чакса кайнă çумăр. Асамат кĕперĕ карăнса тăрать. Поэт ăна мĕнле курать? Акă, мĕнле:

Асаматăн ылтăн пĕккине
Ман кĕсле тăвасчĕ калама!

Ай-хай чаплă каланă-çке! Хам алă пусăттăм та – сăвви манăн мар.

...Алексей Афанасьевăн хăйĕн сăнĕ, сасси пур, унăн «Турă пани» çиçсе, выляса тăрать, çавăнпа та вăл поэзин аслă çулĕпе шанчăклăн, хăюллăн, хăйĕн ĕçри таванĕсене савăнтарса утать».

Çапла каланăччĕ Стихван пиччемĕр 1975-мĕш çулта, Алексей Андриянович аллă çул тултарнă кунсенче. Шел, тепĕр вунă

çултан пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ пултаруллă çыннăмăр. Пире валли вăл нумай-нумай сăвă-поэма, проза хайлавĕсем, пьесăсем, юмахсем хăварчĕ. Тавах ăна ылтăнран та хаклă çак хаклă парнешĕн!

ÇĂЛТĂР ХУЛИН ХАСТАР ЧĂВАШĔ

1980-мĕш çул. Тӳрех калам: кĕтмен-туман çĕртен лекрĕмĕр Çăлтăр хулана. Шупашкарти тусăмсемпе Мускава Раççей писателĕсен пиллĕкмĕш съездне делегат пулса кайнăччĕ. Çакăнта, Кремль çывăхĕнче вырнаçнă «Россия» хăна çуртĕнче (шел, халĕ вăл çук ĕнтĕ), мана пĕр тĕреклĕ те маттур чăваш шыраса тупрĕ. «Тявин Илья Петрович пулатăп», – терĕ вăл хăйпе паллаштарса. Эпĕ те хамăн ятпа хушамата каларăм. «Тахçанах пĕлетĕп Улькка-па Надюш шăллĕне», – терĕ хăна. «Ак тамаша, – шухăшларăм эпĕ, – ку çынна хальччен нихăçан та курман-çке, епле пĕлме пултарать-ха вăл мана?»

Сăмах çине сăмах вакларăмăр. Калаçуран çакă паллă пулчĕ, Илья Петрович, Самар облаçĕнчи Шунтал районĕнчи Сальел ялĕнче, Тутарстанри эп çуралнă Çĕнĕ Йĕлмелĕрен вун çичĕ çухрăмра 1928 çулта çуралнăскер, вăрçă вăхăтĕнче хăй вун улттăра чухнех пирĕн яла ачасене вĕрентме пынă.

Акă еплерех аса илчĕ вăл çав йывăр тапхăра Мускаври хăна çурчĕн пӳлĕмĕнче. Эпир: чăвашсен паллă поэчĕпе Георгий Орловпа пĕрле вырнаçнăччĕ те, Илья Петрович сăмахне питĕ тимлĕн итлесе лартăмăр вара.

– Эп çуралнă çĕршыв, – тесе пуçларĕ хăйĕн каласăвне Çăлтăр хулинчен килнĕ подполковник, – кăштах вырăссемпе хутăшлă пысăках мар чăваш ялĕ Сальел, Çарăмсана юхса кĕрекен Иштукан çырмин икĕ енчи çыранĕсен хĕрринче вырнаçнă. Инçех те мар Турхан вăрманĕ таврана илем кӳрсе ларать. Ялĕ вара пирĕн, тавра пĕлӳçĕсем тĕпченĕ тăрăх, 1750-мĕш çулсенче пуçланса кайнă, чи малтан Сали, Тимах тата Тява ятлă арçынсен çемйисем тĕпленнĕ теççĕ, вĕсем Чĕмпĕр уесĕнчи Ирçел тата Анат Тимĕрçен: Кивĕ тата Çĕнĕ Йĕлмел ялĕсенчен куçса пынă иккен. Апла пулсан, темиçе ĕмĕр каярах, Порфирий шăллăм, эсир çуралнă Йĕлмел чăвашĕсемпе эпир çывăх тăвансемех пулма пултарнă.

Илья Петрович хăйĕн ачалăхне те питĕ лайăх астăвать.

– Мĕн каласси: çăмăл пулмарĕ çав тапхăр. Эпĕ пилĕк класс пĕтернĕ çулхине хăрушă вăрçă сиксе тухрĕ. Атте вăрçа тухса кайрĕ, килте асатте те анне тата манпа виçĕ йăмăк тăрса юлтăмăр. Кашни вĕренӳ çулĕ хыççăн çăвĕ-çăвĕпе хирте те вăрманта тăрма-

шаттăмăр, фронта пулăшас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеттĕмĕр. Çапах та вĕренсе çын пулас шухăша та пăрахмарăмăр эпир, ун чухнехи çамрăксем. Хамăн малтанхи вĕрентекенсене — Альмендеев Тухтаман Тудияровича тата Угадеров Николай Ивановича халĕ те ырăпа, яланах тав туса аса илетĕп эпĕ. Шел, иртнĕ вăрçăран таврăнаймарĕç вĕсем, нимĕç фашисчĕсемпе паттăрăн çапăçса пуçĕсене хучĕç.

1943 çулта ялти çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухсан темиçе юлташпа пĕрле Аксури педучилищĕне кайса кĕтĕмĕр. Пиртен утмăл çухрăмраччĕ Аксу. Астăватăп-ха: лере апат хатĕрлемелĕх тесе, çунашка çине çĕр улми тиесе, çуранах танккаттăмăр çав вăрăм çулпа. Выçăллă-тутăллăскерсем часах ывăнаттăмăр, канма ларас — сивви «ăшалать». Çуркуннеччен чăтказарăмăр çапла. Кайран вара çулсем пăсăлса кайрĕç те, эпир, Никита юлташăмпа, çакăн пек шухăшларăмăр, хамăр ялтан пилĕк çухрăмра вырнаçнă Çарăмсан вăтам шкулĕн (Тутар АССРĕ) саккăрмĕш класне (унта кашни предмета вырăсла çеç вĕрентеççĕ) куçса килес. Вырăсла чаплах пĕлеймесен те хăнăхăпăр терĕмĕр. Çапла турăмăр та. Телее, сакăр класс пĕтерсенех çут ĕç пайĕ çумĕнче учительсем хатĕрлекен уйăх çурăллă курс (ун чух шкулсенче учительсем çитместчĕç) уçăлчĕ. Эпĕ çав курсран вĕренсе тухрăм та мана Çарăмсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнчи тулли мар вăтам шкула ачасене вĕрентме ячĕç. Шăпах вун улттăраччĕ эпĕ ун чухне.

Шкулта вун виçĕ учительтен вуннăшĕ çамрăк хĕрсемччĕ. Халĕ те куç умĕнчех-ха вĕсем — пурнăç çулне пĕрле пуçланă хĕртантăшсем е кăшт аслăраххисем, гитара каласа хӳхĕм юрăсем юрлакан Нина Алексеевна Васюткина, тăван чĕлхене шутсăр юратакан Мария Харитоновна Емендеева, Антонина Николаевна Редюкова, вăрçăран çĕнтерӳпе киле таврăннă Зинаида Ильдимировна Кузнецова-Мельникова... Каярах пирĕн йыша Аксу педучилищинчен вĕренсе тухнă Ольга Ивановна Родионовăпа Елена Алексеевна Васюткина хутшăнчĕç. Çавăн чухнех Çĕнĕ Йĕлмеле ман ачалăхри тусăм Никита Дмитриевич Альмендеев килчĕ. Шкул пӳлĕмĕсене шăпах Порфирийĕн ĕçчен аппăшĕсем Ульккапа Надюш тата Ультепи Ильдирякова тирпей кĕртсе тăратчĕç. Вĕсем те хамăр ӳсĕмрисемехчĕ. Вăт çавăн чух паллашнă та эпĕ пиллĕк-улттăри чĕрĕ те лара-тăра пĕлмен вичкĕн хура куçлă Порфирий ятлă ачапа.

Йывăрччĕ пурнăç. Анчах çавна пăхмасăрах шкул ачисене те, ял çыннисене те эпир яланах çывăх вăхăтра çĕнтерӳ пулассипе хавхалантарса тăма тăрăшаттăмăр, уявсем вăхăтĕнче концертсем, спектакльсем лартса параттăмăр.

Ĕçленĕ вăхăтрах Аксури педучилищĕрен заочно вĕренсе тухрăмăр. Çавăн хыççăн мана Çарăмсана район сучĕн секретарĕ-

нче ĕçлеме куçарчĕç, тепĕр çултан вара Совет Çарне илчĕç. Çавăнтанпа хамăн кун-çулăма çар ĕçĕпе çыхăнтартăм. 1952 çулта авиаци çар училищинчен, каярахпа институтран вĕренсе тухрăм, служба картлашки тăрăх инженер-подполковнике çитрĕм.

— Чимĕр-ха, чимĕр, — Илья Петровича пӳлсех ыйтрăм эпĕ. — Эсир çавăн чух, Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче ĕçленĕ вăхăтра, матрос карттусĕпе çӳремен-и?

— Шăпах çапла, — терĕ Илья Петрович. — Анчах вĕçкĕнленес тесе мар, çитмен пурнăçа пула, вăл карттуса мана салтакран таврăннă пĕр пичче панăччĕ. Пурнăç ытла йывăрччĕ ун чух, учитель пулин те, çăпата сырса çӳреттĕмĕр.

Чылайччен лартăмăр калаçса. Пурне те питĕ лайăх астăвать иккен Илья Петрович, унтанпа вăтăр çул иртнĕ пулин те, кашни çынна ятран аса илет. Çĕнĕ Йĕлмелĕри хăйĕн ӳсĕмĕнчи Лука Скворцова, Кузьма Сидуллина (каярах вĕсем те Совет çарĕн офицерĕсем пулса тăчĕç), Николай Иванова та (ялти пĕрремĕш çын институт пĕтерсе врач-рентгенолог ĕçне алла илнĕскер), хастар та уçă саслă Пикепи, Майпике, Тăхтапи, Хитрепи, Чĕкеçпи, Пинеслу хĕр-тантăшĕсене те ырăпа асăнчĕ вăл. Ăçта кăна пулсан та чăвашла тухса тăнă «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсене яланах çырăнса илнĕ иккен поэт чунлă, хăй те çамрăк чух нумай-нумай сăвă шăрçаланă маттур офицер. Çавăнпах ĕнтĕ вăл манăн литературăри пултарулăха та сăнаса-йĕрлесех тăнă, чăвашсен ытти çыравçин хайлавĕсемпе те пĕрмаях кăсăкланнă. Мускавра вара наци литературисен лавккинче вĕсен кĕнекисене час-часах туяннă.

1961 çул пуçламăшĕнче Илья Петрович Тявина Мускав çывăхĕнчи космонавтсем хатĕрлекен центрăн инженери пайне чĕнсе илеççĕ те аслă техник-инструктор ĕçне шанса параççĕ. Пай сотрудникĕсем çĕршыври тĕрлĕ çĕртен илсе килнĕ летчиксене кăткăс устройствăсем çинче (вĕсене стендсем тесе ят панă) ĕçлеме хăнăхтараççĕ. Хăйсен кулленхи ĕçĕ кĕç-вĕç пĕтĕм тĕнчене кисретсе ямалли событие çывхартни çинчен çав инженерсенчен пĕри те шутламан-ха малтанлăха. Вĕсен тĕллевĕ опытлă летчиксене космос вĕçевĕнчи условисене çывăх тăракан лару-тăрупа лайăхрах паллаштарасси пулнă. Çавăн валли кунта пĕр вырăнта чупмалли çул, онтокинетически барабан, ротор, силленсе тăракан платформа ăсталанă, пулас космонавтсем валли пĕрремĕш тренажер вырăнне пĕрремĕш «Восток» карапĕ хатĕрлесе вырнаçтарнă. Çак вĕренӳ карапĕнче вĕсем карапăн вĕçевне алă вĕççĕн ирттерме, алăпа тытса пыма, радиоçыхăну йĕркелеме, наукăн тĕрлĕ экспериментчĕсене тума, борт журналне мĕн-мĕн çырмаллине хăнăхнă.

— Эксплуатаци вăхăтĕнче, — каласа парать пире Илья Петрович, — тренажерсене лайăхлатсах пыма тăрăшаттăмăр эпир. «Çĕр

куçнине» имитаци туни космонавтсене те, инструкторсене те килĕшсех каймастчĕ. Пирĕн ушкăна ертсе пыракан Е. Целикин инженер мана кинопленка çинчи сăнсене лайăхлатмалли майсем пирки шухăшласа пăхма сĕнӳ пачĕ. Чылай опыт тунă хыççăн, чăнах та, çак майсене шыраса тупрăм эпĕ. Ман ĕçе хаклама Юрий Гагарина (вăл хăйĕн пĕрремĕш вĕçевĕнчен тавраннăччĕ ĕнтĕ) чĕнчĕç. Вăл манăн установкăна тĕрĕслесе пăхрĕ те кăмăллăн кулкаласа çапла каларĕ:

— Чăн та: халĕ шăп та лăп космосри пекех.

Юрий Гагарин ячĕ этемлĕх историне яланлăхах кĕрсе юлчĕ. Тăван çĕршыв ăна сумлă та ответлă ĕç — «Восток» караппа космоса пĕрремĕш хут вĕçме шанса пачĕ. Çак ĕçе вăл чыслăн, чăнчăн паттăрла пурнăçларĕ, тăван халăха, çĕршыва чун-чĕререн парăннине кăтартса пачĕ. Эпир, унăн ĕçри юлташĕсем, хамăршăн ырă кăмăллă, хăйĕнчен те, хăйне пăхăнса тăракан ытти çынсенчен те çирĕп ыйтакан командира питĕ хисеплеттĕмĕр. Пире, инженер-семпе техниксене, Юрий Алексеевич яланах тивĕçлĕ пулăшу пама хатĕрччĕ. Тренажерсене лайăхлатса аталантарас ĕçре те унăн тӳпи калама çук пысăк.

Ю.А. Гагарин хыççăн космоса Герман Титов: Андриян Николаев, Павел Попович вĕçсе кайса килчĕç. Уйрăмах эпĕ хамăр ентеш «Восток-3» космос карапĕн командирĕ Андриян Григорьевич Николаев вĕçев программине ăнăçлă пурнăçласан питĕ хытă савăнтăм. Лăпкă, хăюллă, çирĕп сывлăхлă, техникăна питĕ лайăх пĕлекенскер, Андриян Григорьевич тĕнче уçлăхне икĕ хут кайса килсе тăван çĕршывăмăр ятне тата çӳлерех çĕклеме пулăшрĕ.

— Сăмах май каласан, — тесе вĕçлерĕ çав кунхи калаçăва Илья Петрович, — космонавтсене «Восток», «Восход», «Союз» тата «Салют» йышши карапсемпе вĕçме хатĕрлес ĕçре ытти халăх ывăлĕсемпе пĕрле чăвашран тухнă çынсем тата пулнă пирĕн. Тĕслĕхрен, В.М.Портнов, А.Ф.Сироткин, С.М.Михайлов.

— Халĕ те унтах ĕçлетĕр-и вара? — кăсăкланчĕ Георгий Орлов сăвăç.

— Пĕлтĕр, 1979 çулта, Совет Çарĕн ретĕнчен запаса тухнă хыççăн, мана Çăлтăр хулинчи авиаципе космонавтика ĕçченĕсен пĕрлештернĕ профсоюз комитечĕн председательне суйларĕç, — хуравларĕ Илья Петрович. — Унсăр пуçне, Андриян Григорьевич РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă май, ăна суйлавçăсен ыйтăвĕсене татса панă чухне пулăшатăп, ун патне килсе çӳрекен хăнасене, уйрăмах чăвашсене, кĕтсе илме, ăсатса яма тăрăшатăп.

Хăна çуртĕнче чылайччен калаçса ларнă хыççăн Илья Петрович Тявин пире хăй патне, Çăлтăр хулана, хăнана пыма чĕнчĕ. Çыравçăсен съезчĕ тепĕр ирхине кăна пуçланать, ĕлкĕретпĕр тесе эпир кĕтмен сĕнӳпе хаваспах килĕшрĕмĕр.

Тĕп хулари Хусан вокзалне хирĕçех вырнаçнă Ярославль вокзалĕнчен тапранса пирĕн электропуйăс Циолковский платформине çитсе чарăнчĕ. Эпир космонавтсем хатĕрлекен центрăн пропусксем паракан бюровĕнче тивĕçлĕ хутсем çыртартăмăр та малалла утса кайрăмăр.

Акă вăл, тĕнчипе паллă Çăлтăр хули: кунта паттăр космонавтсем кăна мар, нумай-нумай тĕрлĕ специалист — ученăйсемпе медиксем: методистсемпе тренерсем: вĕсен çемйисем пурăнаççĕ иккен. Кунта вĕрен. корпусĕсемпе лабораторисем, астрономи обсерваторийĕ, пысăк спорт комплексĕ вырнаçнă. Кунтах — пилĕк, тăхăр, вун пĕр хутлă пурăнмалли çуртсем, магазинсем, хăна çурчĕ, вăтам шкул, ача сачĕ, ясли, Культура çуртĕнче пысăк кинозал, библиотека, космонавтика музейĕ...

Çăлтăр хулин тĕп лапамĕнче — Юрий Гагарина чысласа лартнă палăк. Илья Петрович каланă тăрăх, ун умĕнче çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те чĕрĕ чечексем çиçеççĕ. Чечексем пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче, Гагарин çуралнă кун, тата ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче, вăл космоса çĕкленнĕ кун, уйрăмах нумай пулаççĕ иккен. Нумай-нумай хăна палăк умне пырса, космос алăкне уçнă пĕрремĕш çынна асăнса, пĕр минут шăп тăрать.

Илья Петрович пире тӳрех Çăлтăр хулин музейне илсе кĕчĕ. Ăна уçнăранпа çĕршер те пиншер çын пырса курма ĕлкĕрнĕ иккен.

Кунта кĕрсен тӳрех Юрий Гагаринăн ĕç сĕтелне асăрхатăн. Календаре юлашки хут пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче уçса хунă. Юнашарах çырусем, ĕç хучĕсем выртаççĕ. Тумбочка çинче — уйăх глобусĕ. Кантăк айĕнче Ю. Гагаринпа В. Серегин летчикăн документчĕсем. Алăк çинче сехет çакăнса тăрать, ун йĕпписем 10 сехет те 31 минут кăтартаççĕ. Шăпах çак вăхăтра 1968 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче Ю. Гагаринăн чĕри тапма чарăннă.

Гагаринăн асăну пӳлĕмĕнче — тĕрлĕ фотоӳкерчĕк, ĕç хучĕсем. Кунтах Гагарин полковник мундирĕ, ун çинче Тăван çĕршывăн тата ытти çĕршывăн нумай-нумай награди. Кунтах — пĕрремĕш космонавт çуралса ӳснĕ çуртăн макечĕ. Ăна армян ачи, йывăр чирпе выртакан Мельсик Несерсян шăрпăк пĕрчисене çыпăçтарса тунă.

Пысăк залра — космос техникине кăтартакан пысăк экспозици. Унта пулса курнă хыççăн пирĕн çĕршыври космос историйĕ куç умне яр уççăн тухса тăрать.

...Чылай çӳрерĕмĕр эпир çав кун Çăлтăр хулинче. Юлашкинчен Илья Петровичăн хăтлă хваттерĕнче пире унăн мăшăрĕ — ытарайми ăшă кăмăллă Виталина Ивановна тараватлăн кĕтсе илчĕ. Сăмах хыççăн сăмах тăсса çак маттур хĕрарăмăн ашшĕ Иван Чăваш халăх поэчĕн Стихван Шавлин ашшĕпе Антонпа пĕр тăванах пулнине пĕлсен шалт тĕлĕнсе кайрăмăр. «Ара, çаплах ĕнтĕ, çаплах, —

тет пире кил хуçи, – пирĕн тымарсем – унтан, Самар тăрăхĕнчен, Çарăмсан çыранĕсенчен. Виталина, авă, Шунтал районĕнчи Чулçырмара, эпĕ вара Сальелĕнче çуралнă».

Стихван Шавлипе унăн мăшăрĕ Ольга Ивановна тата Ирина ятлă хĕрĕ 1975 çулта хăйсем патне хăнана килсе кайни çинчен те каласа кăтартрĕç кил хуçисем. Космонавтика кунне паллă тунă вăхăтра килсе çитнĕ иккен хаклă хăнасем. Культура керменĕнчи пысăк уява та илсе кайса кăтартнă вĕсене. Мĕн пур космонавта та, Юрий Гагарин амăшне Анна Тимофеевнăна та курса юлнă вара чăваш халăх поэчĕ, Андриян Григорьевич Николаевпа тăван чĕлхепе калаçнă, ăна чăваш çыравçисенчен хĕрӳллĕ салам каланă.

«Тепĕр çул, Мускав çывăхне канма килсен, Çăлтăр хулине тепре килсе куратăпах», – тесе сыв пуллашрĕ пирĕнпе Степан Антонович. Шел, унăн сăмахĕ пурнăçа кĕреймерĕ, 1976 çулхи нарăс уйăхĕнче ăна Шупашкара пырса юлашки çула ăсатмалла пулчĕ, – хурлăхлăн каларĕ Илья Петрович. – Мĕн тери чĕрĕ те хастар çынччĕ вăл, кашни сăмахĕнче пысăк ăс тапса тăратчĕ. Пурăнмаллаччĕ те пурăнмаллаччĕ, хăватлă сăвви-поэмисемпе халăха савăнтармаллаччĕ, çитмĕле те çитейменччĕ вĕт-ха...».

– Пире Çăлтăр хулинче пурăнакан тепĕр ентеш – Василий Портнов – кĕтетчĕ, каçа юлатпăр тесе кĕреймерĕмĕр ун патне. Андриян Григорьевич Николаев килте марччĕ çав кун. Анчах тепĕр кунне, Çăлтăр хулинче чăваш поэчĕсем пулнă тенине илтсен, вăл пире хăйĕн «Вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăхра» кĕнекине алă пусса парнелеме ыйтнă. Çав хаклă парнене пире каярах Илья Петрович Хусан вокзалне илсе пырса пачĕ, хăй вара чăваш писателĕсене питĕ ăшшăн ăсатса ячĕ.

Миçе хутчен тĕл пулмарăмăр-ши Илья Петровичпа çав паллашу хыççăн! Тепĕр çулла, отпуск вăхăтĕнче, эпĕ ăна хамăр яла, Çĕн Йĕлмеле, пĕрле кайса килме сĕнӳ патăм. Вăл та тăван Сальелне çитсе килме шухăш тытнă та, унта тĕл пулма калаçса килĕшрĕмĕр.

Дмитровградра пурăнакан Людмилăпа (çут тĕнчерен ытла ир уйрăлса кайнă Улькка аппан хĕрĕ) унăн упăшки Петĕр тата вĕсен пĕчĕк хĕрĕ Оля мана çăмăл машинăпа Илья Петрович çуралнă ялах илсе çитерчĕç. Ăшшăн кĕтсе илчĕ пире Тявинсен кил-йышĕ. Илья Петровичăн ашшĕпе амăшĕ самаях ватă ĕнтĕ, анчах ăслăтăнлă та çаврăнăçуллă, тараватлă та ырă кăмăллă. Ашшĕ, Петр Семенович, пурăнан пурнăçра революци вут-хĕмне те, выçлăх нушине те, коллективизаци тапхăрне те, вăрçăн чăтма çук йывăр çул-йĕрĕсене те чăтăмлăн чăтса ирттернĕ кĕрнеклĕ çын, ниме парăнман пăхаттир пек курăнать. Калаçăвĕ лăпкă та витерӳллĕ унăн, кăмăл-шухăшĕ уçă та шанчăклă – пĕр сăмахпа, çĕр çинче çирĕп тăракан чăн-чăн хресчен.

Илья Петрович мана хăйĕн ялне кăтартса çӳрерĕ, ачалăхне аса илчĕ, урамра тĕл пулнă çынсемпе паллаштарчĕ. Килĕнче, сăмавар умĕнче шăкăл-шăкăл калаçса ирттернĕ апат вăхăтĕнче, эпĕ çакна савăнса асăрхарăм, Илья Петровичăн çепĕç те ачаш чунĕ — лирик чунĕ — амăшĕнчен иккен унăн, кирлĕ самантра тӳрех хăйне хăй алла илсе çирĕп вăйлă пулас хăнăхăвĕ вара — ашшĕнчен. Тĕллев тытнă — пурнăçланă. Нимĕнле чăрмава пăхмасăр. Ал усмасăр. Нăйкăшмасăр. Çапла çав, чăн-чăн çын, чăн-чăн çутă тĕслĕх пулса тăчĕ маншăн ытарайми çак Илле пичче.

Çарăмсана çитрĕмĕр. Унта пире манăн тăвансем, пĕрле ӳснĕ тантăшсем, çывăх юлташсем Галинăпа Петр Тихоновсем (районти врач-хирург), Дмитрий Селиванов (районти вăрман хуçалăхĕн пуçлăхĕ), Виталий Митрюхин (районти ГАИ пуçлăхĕ), Николай Михлеев (районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп инженерĕ), Михаил Журавлев (çывăхри «Новый путь» колхоз председателĕ) ăшшăн кĕтсе илчĕç. Район центрĕн çĕнелсе пыракан урамĕсем тăрăх курса çӳрерĕмĕр, юнашарти Шелеписем, Хусанкайсем, Шавлисем мухтанă Çарăмсан хĕрринчи юмахри пек улăхра шыва кĕтĕмĕр. Ун хыççăн вара Çĕнĕ Йĕлмеле çул тытрăмăр. Илья Петрович ял урамĕсемпе иртнĕ чух хăй мĕн курнине ĕненмесĕр пуçне пăркаласа пырать. Çурчĕсем çĕнĕ, шкулĕ те, Культура çурчĕ те, магазинĕсем те çĕнĕ. Ял хĕрринче Сĕнче шывне тĕплĕн пĕвелесе лартнă та — пысăк пĕвере халь виç-тăват кило таякан карп пуллисем выляççĕ.

— Эккей, — тет пирĕн хисеплĕ хăна, — вăтăр çул каялла кам шутланă кунта çакăн пек улшăнусем пулаççĕ тесе! Маттур, йĕлмелсем, маттур!

Нумай-нумай çынпа — хăй астуса юлнă ватăсемпе, пĕрле ĕçленĕ учительсемпе, хăй вĕрентнĕ çамрăксемпе чунне уçса калаçрĕ вара Çăлтăр хулинчен килнĕ инженер-подполковник. Манман, лайăх астăваççĕ ăна кунти тав кăмăлне чĕререх усракан Йĕлмелсем, кашниех ун аллине çирĕппĕн чăмăртать, пуçне пĕксех пуç таять, малашнехи пурнăçра ырлăх-сывлăх сунать.

Уйрăмах чыслă хăнасене кунта ялăн хĕвел тухăç енчи вăрманта вырнаçнă шутсăр илемлĕ, çутă çăл куçлă Çарăк ĕшнине илсе кайса хăна тăваççĕ. Ку вăл йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Çак ĕшне пирки эпĕ сăвă та çырнăччĕ. Унта çакăн пек йĕркесем пур:

Ĕшне çаврака пулнăран
Ят панă пуль — Çарăк ĕшни.
Кунта тĕл пулатпăр ялан —
Тус-йыш: хурăнташ: чун савни.

Тĕнче çаврака пулнăран
Кунтах таврăнатпăр çуллен.

Каятпăр пулас-и вăйран
Кунти çăл шывне ĕçмесен.

Ӳпке сывлаймасть пек кал-кал
Кăвайт тĕтĕмне çăтмасан:
Юнать пек пире тăван ял
Ак çак ĕшнене пымасан.

Ачалăх туртать-и кунта;
Аваллăх чĕнет-и пире, –
Илетпĕр сĕткен тымартан:
Выртса чуп тăватпăр çĕре.

Куççуль пек таса çăл куçа:
Таçта кайнă евĕр, юта,
Эпир пăрахмастпăр укçа,
Эпир таврăнатпăр кунтах.

Илья Петрович, çак ĕшнене çитсен, тӳрех шăпланчĕ, шухăша путрĕ. Ун хыççăн вара çунакан кăвайт çине пăхса ларчĕ-ларчĕ те çапла каларĕ:

– Çак çăл патĕнче эпĕ пуçласа 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче пулнăччĕ. Нихăçан та манас çук çав куна. Вăрçă вĕçленнĕ! Аслă Çĕнтерӳ! Кам юрлать, кам макăрать. Çумăрлă куна пăхмасăр эпир, колхоз конюхĕпе иксĕмĕр, виçĕ çухрăмри Лашмана, унта вырнаçнă ялпона кайса, праçник тумалли ĕçме-çиме илсе килтĕмĕр. Митинг ирттертĕмĕр, Çĕнтерӳ кунне хаваслăн уявларăмăр, кайран тантăшсемпе пĕрле Çарăк ĕшнине хăпартăмăр. Мĕн пур хĕнасап, хуйхă-суйхă, вĕри куççуль пĕтессĕн туйăнатчĕ пире çак çĕнтерӳллĕ кун хыççăн. Курăр-ха, тĕпрен илсен çавăн пекех пулчĕ мар-и вара? Пурнăç, палах, йывăрлăхсăр пулмасть, анчах пăхăрха хăвăр çине – эсир паян пурте чыслă-сумлă çынсем – врачсем, инженерсем, агрономсем, учительсем, поэтсем... Аслă Çĕнтерӳ пулман пулсан кам пулаттăмăрччĕ-ши?..

Эпир, хамăрăн атте-аннесене, паттăр салтаксемпе тыл ĕçченĕсене асăнса, вĕсене чун-чĕререн тав туса, пĕр самант шăп тăтăмăр.

Тепĕр темиçе çултан Илья Петрович тепĕр хут кайса килнĕ пирĕн яла. Манăн аннем çĕре кĕнĕччĕ ĕнтĕ. Лукари аппа Чаллă пуç районĕнчи Чулкаç ялне Надюш аппа патне куçса кайнăччĕ. Пирĕн пӳрт пушанса юлнăччĕ.

Çавăн чух И.П. Тявинпа яла кайса килме вăхăт тупаймарăм эпĕ. Мана Чăваш писателĕсен союзĕн председательне суйланăччĕ те эпĕ унпа пĕрле çӳреме ерçеймерĕм. Тепĕр икĕ эрнерен вара Çăлтăр хулинчен çыру илтĕм. Илья Петрович тăван тăрăха мĕнле кайса килни çинчен çырать:

«... Шунтал: Сальел, Çарăмсан урлă тухса Çĕнĕ Йĕлмелĕре те

пултăм. Сана аса илтĕмĕр, картишне кĕрсе тухрăмăр. Пурăнман çурт салхуллă, чӳречисем уçă... Мĕн калас, асăнмалли çеç...»

Чун тăвăлса килчĕ, куçăм шывланчĕ. Çав каçах эпĕ ун патне çакăн пек сăвăлла çыру çырса ятăм:

«Мĕн калас çав, мĕн калас, Илле тете,
Эпир иккĕн мĕн курман пуль ĕмĕрте.

Çак çурта эс астăватăн ачаран,
Эс унта кĕрсе тухаттăнччĕ шкултан.

Нихăçан матрус карттусĕ курманскер,
Эп сана пит ăмсанаттăм, пĕчĕкскер.

Ырăпа та ăшăпа килекене
Тараватчĕ яланах атте-анне.

Санăн пурччĕ тантăшу — Улькка аппам...
Ах, суран çине тăвар эс ан сапсам.

Мĕнлерех маттур юрлатчĕ! Хамăрла!
Çамрăк ĕмĕр вĕçсĕр-хĕрсĕр пуласла.

Çук: пулмарĕ. Ир куç хупрĕ кĕл чечек,
Ас илӳ çеç тăрса юлчĕ тĕлĕк пек.

Иртрĕ пуль-çке çамрăк ĕмĕр: иртрĕ пуль.
...Тăлăх çуртăн чӳречи çинче — куççуль.

Иртнĕ кунăн çутине курас тесен
Пырса пăхăр тăлăх çурт чӳречинчен.

...Çăлтăр хулинче Андриян Григорьевичпа питĕ туслă пурăннăран Илья Петрович виççĕмĕш космонавта май килнĕ таран пулăшса пыма тăрăшнă. Генерал-майорăн ĕçĕ чăнах та шутсăр нумай пулнă. Вăл Космонавтсем хатĕрлекен центр пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ: çĕнĕ вĕçев ирттерес тĕлĕшпе чи ответлă çын. Унсăр пуçне унăн обществăллă ĕçсем питĕ нумай. РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ хăйĕн суйлавçисен наказĕсене пурнăçлас тесе мĕн чухлĕ тăрăшман-ши? Çĕршер-пиншер çыру килет ун патне, хăш-пĕр çынсем вара депутат патне Çăлтăр хулине лекме те май тупаççĕ. Унсăр пуçне пĕтĕм çĕршыври чăвашсем мĕн чухлĕн килсе çӳреççĕ кунта: артистсем, çыравçăсем, спортсменсем... Шăпах çавăн чухне Андриян Григорьевич хăйĕн шанчăклă тусĕ И.П. Тявин çине таянса ĕçленĕ, ăна шаннă, ĕненнĕ. Илья Петрович ыйтнипе эпĕ ăна çывăх вăхăтра хăйсен юбилейĕ-

сене паллă тума хатĕрленекен паллă писательсен, композиторсен, художниксен, театр ĕçченĕсен ячĕсене пĕлтерсе тăраттăм. Çав çынсене пирĕн мухтавлă космонавтăмăр саламлă телеграмма е уяв открытки ярса парса савăнаратчĕ.

Урăхларах йышши ыйтусем çĕклени те пулнă депутат патне çырнă çырусенче. Акă пĕррехинче Илья Петрович Шупашкара пĕр кĕтмен çĕртен килсе çитрĕ. Андриян Григорьевич ăна Çуйăн Хветĕрĕн, поэт-фольклористăн, «Улăп» эпос авторĕн, хăй патне янă çырăвĕнче пĕлтернине тĕплĕн тишкерсе, хурав памалли текст проектне хатĕрлесе пама ыйтнă. Илья Петрович каланă тăрăх, пĕр чăваш çыравçи асăннă эпос авторĕ Çуйăн Хветĕрĕ пĕччен мар, унпа пĕрле эпĕ те автор пулса тăратăп тесе ĕнентерме пăхнă. Пĕр эрне ытла пурăнчĕ Шупашкарта И.П. Тявин. Наука ĕçченĕсемпе, издательство çыннисемпе калаçса, Çуйăн Хветĕрĕн архивĕнчи ал çырăвĕсене тĕплĕн тишкерсе тухнă хыççăн Илья Петрович А.Г. Николаев депутата çак ыйтăва тĕрĕс татса пама, хăйĕн шухăшне кирлĕ çĕре çитерсе пама пулăшнă. «Улăп» эпосăн тулли версийĕ Чăваш кĕнеке издательствинче 1996 çулта пичетленсе тухрĕ. Унăн авторĕ Çуйăн Хветĕрĕ тесе палăртнă унта. Çапла вара истори чăнлăхне тĕрĕс çирĕплетес ĕçре А.Г. Николаевпа И.П.Тявин пулăшни калама çук витĕмлĕ пулчĕ.

...Тата тепĕр историллĕ тĕл пулăва та эпĕ хамăн асăмра чи çутă та чаплă уяв вырăнне хурса упратăп. 1988 çулхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче РСФСР Писательсен союзĕн правлени председателĕпе С.В.Михалковпа Мускавра Чăваш литературин кунĕсене ирттерме калаçса татăлтăмăр. Кĕтнĕ вăхăт çывхарса пынă май эпĕ, чăваш çыравçисен йышне ертсе пыраканскер, хамăр ăçта-ăçта пулса мĕн-мĕн тăвассине тĕплĕн палăртса килес-ха тесе тĕп хулана пырса çитрĕм. «Кунта пире çирĕм çынна чĕнме палăртаççĕ-ха, кунĕ-кунĕпе литература ыйтăвĕсем çинчен кăна калаçса йăлăхтармĕ-и пире?» – терĕм эпĕ Мускаври тĕп Союзра ĕç тăвакан çынсене. «Эсир мĕн сĕнетĕр?» – ыйтрĕç манран тӳрех. «Пĕр шухăш пур-ха манăн, анчах ăна пурнăçлама май килĕ-и? – тетĕп кăшт иккĕленерех. – Хăвăрах пĕлетĕр, Çăлтăр хулинче пирĕн тĕнчипе паллă ентеш Андриян Николаев космонавт ĕçлесе пурăнать. Вăт çавăнта илсе кайса кăтартма май пулмĕ-ши пирĕн çыравçăсене? Паллах ĕнтĕ, тăкаклă ĕç-пуç ку».

– Лайăх шухăш, – килĕшрĕ тӳрех пирĕн куратор Григорий Родионов (Гарай Рахим поэт). – Шăпах Пĕтĕм Союзри илемлĕ литературăна пропагандăлакан бюро туса ирттермелли ĕç-пуç. Халех калаçса татăлатпăр вĕсемпе.

Тепĕр çур сехетрен эпĕ асăннă бюрон Раççей Федерацийĕнчи писательсемпе ĕçлекен директор çумĕ Тамара Петровна Толчанова патне пырса çитрĕм. Вăл вара тӳрех Çăлтăр хулине шăнкăрав-

ласа çав-çав кун чăваш писателĕсем экскурсие пырасси çинчен пĕлтерсе хучĕ. Эпĕ те Илья Петровичпа телефонпа çыхăнтăм, вăл мана çак çул çӳрев программине тĕплĕнрех палăртма ыран ирхине хăй патне тухса пыма йыхравларĕ.

Эпĕ Çăлтăр хулине пырса çитиччен И.П. Тявин Андриян Григорьевича эпĕ килессине пĕлтерсе хунă иккен, космонавт пире Çăлтăр хулин музейĕнче вун пĕр сехетре кĕтсе илме пулнă. Палăртнă вăхăт тĕлне эпир Илья Петровичпа унта кайрăмăр. Акă вăл, Андриян Григорьевич, музейĕн тĕп пӳлĕмĕ умĕнче тăрать. Пире курсан тӳрех ман пата утса пычĕ, алла хытă чăмăртаса ыталаса илчĕ, унтан Илья Петрович енне пăхрĕ те:

— Ара, эп ăна тахçанах пĕлетĕп вĕт-ха, Чăваш çĕршывне кайсан манран пĕр утăм юлмасăр çӳретчĕ çак журналист, — терĕ. — Унтан тата, Илюша: эс ыйтнипе мар-и-ха эпĕ ăна пĕррехинче комсомол конференцийĕнчех çуралнă кун ячĕпе саламларăм. Куратăн-и, тахçанхи пĕлĕш вăл манăн.

Манса кайман иккен мухтавлă ентеш çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкарта е тĕрлĕ ялпа хулара халăхпа тĕл пулса калаçнă чух хăйпе пĕрле çӳренĕ корреспондентсене. Çапла, эпĕ ун чух «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатра информаци пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлеттĕм те космонавт çул çӳревĕсене час-часах хаçатра çутатма тӳр килетчĕ мана. Обласри комсомол конференцине те лайăх астăвать иккен вăл. 1982 çулта, шăпах эп çуралнăранпа хĕрĕх çул çитнĕ кун, уçăлнăччĕ çамрăксен форумĕ. Эпĕ ун чух «Хатĕр пул» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçлеттĕм, çавна пула мана ВЛКСМ Чăваш обкомĕн членне те пĕрре кăна мар суйланăччĕ. Шăпах çавăн чух ĕнтĕ Андриян Григорьевич мана хăйĕн «Вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăхра» ятлă чăвашла кĕнекине менелник ячĕпе саламласа, çирĕп сывлăхпа пысăк çитĕнӳсем тума ырă сунса парнеленĕччĕ.

— Çапла, Андриян Григорьевич, унсăр пуçне 1982 çулхи çурла уйăхĕнче, хăвăр тĕнче уçлăхне пĕрремĕш хут вĕçнĕренпе 20 çул çитнĕ чухне, эсир тăван республика ачисен ыйтăвĕсене хуравланă интервью та пичетленнĕччĕ «Хатĕр пулта». Тавтапуç сире ачасем ыйтнине тĕплĕн пурнăçланăшăн, — терĕм эпĕ.

— Ачасем ыйтнине пурнăçламасан юрамасть, вĕсем пурне те чăнласа йышăнаççĕ. Вăл журнал номерне эсир ман пата темиçе те ярса панăччĕ. Астăватăп, ман çинчен çырнă сирĕн поэмăр та пурччĕ унта. Темшĕн манăн ялти кӳрше Карачăм ят панăччĕ эсир... — йăл кулнă пек турĕ космонавт.

— Документлă хайлав мар-çке, илемлĕ литература жанрĕпе çырнă ăна. Унта çыннăн ятне мар, çав çын произведени геройĕн пахалăхĕсене уçса пама пулăштăр тенине тĕпе хутăм эпĕ, — ăнлантарма пикентĕм эпĕ космос паттăрне.

– Юрать, поэму мана килĕшрĕ, çĕнĕ ĕçӳсем те ăнсах пыччăр, – хавхалантарчĕ мана Андриян Григорьевич. – Ну, хăçан тата мисен кунта килетĕр-ха эсир?

Эпĕ ăна Раççей писателĕсен союзĕн аппаратĕнче хатĕрленĕ программăпа паллаштартăм, ятлă-сумлă çыравçăсен, артистсен, журналистсен ячĕсене асăнса тухрăм.

– Юрать, сумлă делегации, пурте йĕркеллĕ пулать, эпир кунта Илюшăпа сире тивĕçлипе кĕтсе илме тăрăшăпăр, – терĕ Андриян Григорьевич юлашкинчен.

Тепĕр темиçе кунтан эпир, чăваш писателĕсем, Мускава хамăрăн тăван литература кунĕсене ирттерме пырса çитрĕмĕр. Чăннипех те хĕрӳллĕ кунсем пулса тăчĕç вĕсем. Эпир Раççей писателĕсен союзĕнче чăваш литературин тата «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен калаçрăмăр. Пирĕн пултарулăха тĕпчесе тишкернĕ РСФСР Писателĕсен правлени секретарĕсем Ф. Чуев, Н. Доризо, А. Алексин, М. Шевченко, паллă поэтсемпе куçаруçăсем П. Градов: В. Кочетков, В. Широков, пăлхар поэчĕсем К. Химирскипе И. Соколов чăваш литературин аталанăвĕ пирки нумай-нумай ырă сăмах каларĕç, ĕçе малашне лайăхлатмалли сĕнӳсем пачĕç. Эпир тĕрлĕ предприятире, библиотекăсенче пулса вулакансемпе курса калаçрăмăр, Пĕтĕм Союзри радио студийĕнче ятарлă передача ирттертĕмĕр.

Уйрăмах чăваш писателĕсене Çăлтăр хулинче хамăрăн чаплă ентеш икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ А.Г. Николаев летчик-космонавт кĕтсе илни савăнтарчĕ. Вăл пире космонавтсем чăннипех вĕçеве мĕнле хатĕрленнине ятарлă павильонсене – шыв бассейнне тата «Мир» станци макечĕ çинчи хăнăху площадкине илсе кĕртсе кăтартрĕ. Илья Петрович каланă тăрăх, çак вырăнсене курма килекен ахаль çынсене кĕртме ирĕк памаççĕ иккен. Ун хыççăн эпир Космонавтика музейĕнчи экспонатсемпе тĕплĕн паллашрăмăр, Çăлтăр хулин илĕртӳллĕ кĕтесĕсене çитсе куртăмăр.

Çавăн пек çынччĕ вĕсем иккĕшĕ те – Андриян Григорьевич та, Илья Петрович та, хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, çывăх ентешĕсемшĕн, атте-аннесен йăли-йĕркишĕн, чĕлхишĕн, сăвви-юрришĕн чунĕсене пама хатĕрччĕ, хăйсем те юрра-ташша ăстаччĕ, тăван литературăпа искусствăна пысăка хурса хаклама, вĕсен ăстисене тивĕçлипе хисеплеме пĕлетчĕç.

Паян вĕсем иккĕшĕ те пирĕн хушăра çук ĕнтĕ – А.Г. Николаев 2004 çулта, И.П. Тявин 2007 çулта çут тĕнчерен уйрăлчĕç.

Тĕрĕссипе, Илья Петровичăн йывăр чирĕ пирки те, вăл çав чире чăтаймасăр вилсе кайни çинчен те эпĕ питĕ кая юлса пĕлтĕм. Пĕррехинче ман хваттере Çăлтăр хулинчен Виталина Ивановна шăнкăравларĕ те çак хурлăхлă хыпара пĕлтерчĕ.

— Мĕншĕн тӳрех систермерĕр вара? Илья Петрович хăй те пĕр-икĕ çул шăп-шăпăрт пурăнчĕ. Эпĕ те сирĕн пата темиçе хут та шăнкăравланă, анчах сирĕнпе çыхăнма пултараймарăм, — пĕлтертĕм эпĕ Илья Петрович мăшăрне хам пăшăрханăва.

— Илья Петрович юлашки икĕ çул вырăнпах выртрĕ, — терĕ Виталина Ивановна. — Унччен вăл пăрлак тротуар çинче, хамăр çурт умĕнчех, пуçĕ çине ӳксе аманчĕ, кайран тăнне çухатакан пулчĕ, юн пусăмĕ ӳснипе пĕрмай аптрарĕ. Çавăнпа вăл сирĕн пата шăнкăравлама та пултарайман. Эсир пирĕнпе çыхăнайманни вăл пирĕн телефон номерĕ улшăннинчен килет. Кайран, вăл вилсе кайсан, сирĕн визит карточкине тупаймарăмăр. Акă халь тупрăмăр ăна кĕнекесем хушшинче... Килсе кайăр-ха пĕрре, вăл сире калама хушса хăварнисене каласа юласчĕ хам виличчен...

Каласа юлаймарĕ Виталина Ивановна — Шавлин çывăх тăванĕ, 2011 çулхи çуркунне вăл пиртен уйрăлса кайрĕ. Çакăн пирки мана С. Шавли хĕрĕ Ольга Степановна Кругликова пĕлтерчĕ.

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛĔ

— Кам вăл сирĕншĕн Николай Федорович Угаслов? — Хулаçырми ялне пырса кĕрсенех ыйтрăм эпĕ çак ял администрацийĕн пуçлăхĕнчен Сергей Ананьевич Салифановран.

— Николай Федорович вăл — пирĕн чыс, пирĕн мухтав, — пĕр кĕттермесĕр хуравларĕ Сергей Ананьевич. — Яла чăваш артисчĕсем килсен, ăна тав туса пĕтереймеççĕ. Шупашкарти çуртсенчен çуррине Угаслов тунă, теççĕ, вăл çĕклесе лартнă урамсене, микрорайонсене шутласа кăларма алăри пӳрнесем те çитес çук, теççĕ. Паллах, ӳстерсе-пысăклатса калаççĕ артистсем. Çапах та çав сăмахра тĕрĕсси те сахал мар пулĕ. Ĕçленĕ, тăрăшнă, вăй тăкнă пирĕн ентеш, çавăнпа ырă ята тивĕçнĕ те. Хăй вăл çуралнă ялта тăтăшах пулать, çывăх тăванĕсем тахçанах çук пулин те, хăйне пурнăç панă сăваплă çĕре манса каймасть. Чунĕ калама çук ырă унăн, сăмахĕ уçăмлă та çирĕп.

...Николай Федорович Угаслов паян каллех хăйĕн тăван Хулаçырми ялĕнче. Йăлана кĕнĕ тăрăх хальхинче те вăл Юхлă шывĕн сылтăм енчи çӳллĕ сăрчĕсем çине васкарĕ.

Аса илмелли, шухăшламалли вара Николай Федоровичăн чăнах та сахал мар.

Амăшĕ, Елена Игнатьевна каласа хăварнă тăрăх, унăн аслашшĕ çирĕм пилĕк çул хушши патша çарĕнче пулнă, яла капрал пулса таврăннă. Ашшĕ вара, Федор Михайлович, чăн-чăн çĕр ĕçченĕ тата столяр-платник пулнă, вăрманта урапа-çуна, ут тав-

рашĕ ăсталанă. 1904 султа çуралнăскер, Аслă Отечественнăй вăрçăра та çапăçнă вăл, унтан йывăр аманса таврăннă. Унăн аслă пиччĕшĕ Петĕр вăрçă хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилет, кĕçĕнни, Çемен, хăй пекех йывăр аманса таврăнать.

Шел, нумаях пурăнаймасть йывăр суранланнă Федор Михайлович, 1953 çулта, çур ĕмĕре те çитеймесĕр, чи кĕçĕн ывăлĕ Микулай иккĕ те тултарман чухне, йывăр чирлесе вилсе каять. Амăшĕ вара пысăк кил-йышпа (çемьере пурĕ çичĕ ача пулнă) пĕчченех тăрса юлать. Йывăр, шутсăр йывăр пулнă ял халăхне вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи çулсенче. Уйрăмах вăрмансăр вырăнта. Çапла, 600 киллĕ, пин ытла çынлă Хулаçырми çеçен хир варринче вырнаçнă, темиçе çухрăмра кăна, Ульяновск облаçĕнче, пысăк мар вăрмансем тĕл пулаççĕ.

– Темле йывăр пулсан та аптраман пулĕ çав, – аса илет паян Николай Федорович. – Юхлă шывĕнче сĕрекепе хĕрсех пулă тытаттăмăр. Çавă та апат-çимĕç ыйтăвне татса пама пулăшнах ĕнтĕ. Çурчĕ пирĕн мухтанмаллиех марччĕ. Хăй вăхăтĕнче асатте тулли пурнăçпа пурăннă. Çырма хĕрринче гектарĕпех улма-çырла сачĕ ĕрчетнĕ. Кулаках пулайман пулин те, колхозсем тунă чух унăн пурлăхне, пĕтĕм кĕлечĕсене туртса илнĕ, хăйне вара мунчара çеç хăварнă. Шăпах çав мунчара çуралса ӳснĕ эпир. Анне яланах: «Атя-ха, Хветĕр, йĕркеллĕ çурт лартар» – тенĕ иккен. Ăçта унта! Вăрçă хыççăнхи çулсенче ун çинчен ĕмĕтленме те май килмен. Çапах та ĕмĕтне çухатман аттем. «Ĕлкĕрĕпĕр, ачасем ӳссе пулăшакан пулччăр-ха, тен, хăшĕ те пулин хам пекех пуртă ăсти пулĕ, вара çĕнĕ çурт та çавăрăпăр», – тесе калатчĕ тет.

Амăшĕн çак асаилĕвĕсем час-часах Микулайăн чĕрине пăчăртаса илетчĕç. Унăн пĕр вăхăтрах пуртă ăсти те, кăмака ăсти те, машин-трактор ăсти те пулас килетчĕ Амăшĕ мĕнлерех асапланнине курса вăл ăна яланах лăплантарма тăрăшатчĕ. «Ан кулян, анне, кăштах ӳссен çурт туса паратăпах сана», – тетчĕ вăл хăйĕн тăванран та тăван çыннине. Амăшне кăштах та пулин пулăшу пултăр тесе, ачаранах ĕçе кӳлĕнчĕ вăл. Улттăра чухнех вун пилĕк çухрăмри пĕр пĕчĕк ялта çур уйăх ытла ача пăхрĕ, çавăншăн ăна пĕр мăшăр кăçат парса тав турĕç. Ку вăл Микулай хăй вăйĕпе ĕçлесе илнĕ пĕрремĕш тавар пулчĕ.

Каярах вăл ашшĕн кĕçĕн шăллĕ, Çемен тетĕшĕ (вал конюхра ĕслетчĕ) патне лаша витине çӳреме хăнăхрĕ. Лашасене шутсăр юратнăран вĕсенчен уйрăлма та пĕлместчĕ Микулай. Каçсерен лашасене çитерме выртмана çӳретчĕ, вăрăм пушă шартлатнине питĕ кăмăллатчĕ. Çав сасса ытараймасăрах вăл çуллахи вăхăтра кĕтӳ ачинче çӳретчĕ, ял çыннисем ăна апат та çитеретчĕç, нумаях мар пулин те укçа та паратчĕç. Аслăрах классенче вĕреннĕ чух каникул вăхăтĕнче вăл колхоз кĕтӳне те кĕтсе çӳрерĕ. Юрать-

ха, кĕтӳҫсене лаша паратчĕҫ. Лаша ҫинчен кунĕпех анмастчĕ вара Микулай, пушшине пĕтĕм тавралăх илтмелле шартлаттаратчĕ. Ҫак ĕҫшĕн ăна укҫине те, утине те, тыррине те паратчĕҫ. Вунпĕр тултарнă тĕле хăй ĕҫлесе илнĕ укҫапа велосипед туянса ячĕ вăл ҫапла. Ăҫта кăна ҫитсе курмарĕ-ши ăна утланса! Шăмăршăра та, Нагаткинăра та, Чĕмпĕрте те пулса курчĕ. Хуларан пĕр мăйăх ҫăкăр турттарса килнине халĕ те манаймасть Николай Федорович. Вăл вăхăтра совет халăхĕ ҫăкăрсăр аптраса пурăннă — черетсенче темиҫешер сехет тăма тивнĕ. Пĕррехинче Ульяновскра хула ачисене хăйне май ҫавăрса темиҫе вырăнта черет тăрса туяннă пĕр мăйăх ҫăкăр Микулай ҫемйишĕн те, кӳршĕ-аршăшăн та питĕ вырăнлă пулнă.

Ĕҫлеме кăна мар, лайăх вĕренме те тимлесех тăрăшнă пĕчĕк Микулай. Киле панă ĕҫсене вăл шкултах, перемена вăхăтĕнчех тума хăнăхнă. «Вĕренместĕн-ҫке эс, ывăлăм, — пăшăрханнă амăшĕ, — санăн вĕренмелле, унсăрăн ҫын пулаймастăн». «Вĕренетĕп, анне, килти ĕҫсене эпĕ шкултах туса хунă, акă кур, дневникра та, тетрадьсенче те «тăваттăпа» «пиллĕк» паллăсем кăна манăн», — тавăрнă ывăлĕ. Ҫапла, чи лайăх вĕренекенсен шутĕнче пулнă Микулай. Уйрăмах математикăна, физикăна, химие килĕштернĕ. Обществăллă ĕҫсене хастар хутшăннă, шашкă-шахматла выляса районти олимпиадăсенче мала тухнă, акатуйсенче те лашапа чупса пĕрре кăна мар ҫĕнтерӳҫĕ пулнă.

Ялти сакăр класлă шкултан вĕренсе тухсан ҫамрăк йĕкĕт умне ҫăмăл мар ыйту тухса тăнă. Ăҫта каймалла? Кӳршĕри Аслă Аксу ялне вăтам шкула ҫӳреме тытăнмалла-и, е Шупашкарта пурăнакан пиччĕшĕпе аппăшĕ патне кайса унти пĕр-пĕр техникума вĕренме кĕме тăрăшмалла-и? Строительство техникумĕ пулсан аванччĕ. Шантарнăччĕ-ҫке вăл амăшне ҫĕнĕ ҫурт лартса парап тесе. Ҫурт тума пĕлӳпе ăсталăх кирлĕ.

Ҫапла вара вунпиллĕкри каччă Шупашкар хулине ҫул тытрĕ. Анчах строительство техникумĕ ун чухне Сĕнтĕрвăрри хулинче кăна пулнă иккен. Унта кайса ҫӳреме каллех чăрмавлă. Электромеханика техникумне кайса пăхать Микулай. Кунта общежити ҫук иккен.

Анчах телей тени унпа юнашарах ҫӳренĕ иккен. Пăхать те шарт тĕлĕнсе каять ял ачи — коридорта Шупашкар хулинче строительство техникумĕ уҫални ҫинчен пĕлтерӳ ҫакăнса тăрать. Тӳрех палăртнă адреспа вĕҫтерет Микулай. Заявлени ҫырать, экзаменсене ăнăҫлă тытса вĕренме кĕрет. Тĕрĕссипе, техникумăн ҫĕнĕ ҫуртне те, общежитисене те тин ҫеҫ вĕренме кĕнĕ студентсем хăйсемех тăваҫҫĕ. Хăйне евĕрлĕ диплом ĕҫĕ пулса тăрать вĕсемшĕн ҫак ҫуртсене ҫĕклени.

Техникумран питĕ лайăх вĕренсе тухнă хыҫҫăн Николай Угас-

лова Саранскри çурт-йĕр тăвакан комбината ĕçлеме ярăççĕ. Кунта çур çул ытларах мастерта тăрăшнă хыççăн ăна Совет Çарне службăна илсе каяççĕ. Мускав Çар округĕнче, Тула хули çывăхĕнче, ирттерет салтак хăйĕн хĕсмет вăхăтне. Служба вĕçленсен каллех юратнă Шупашкара çул тытать, кунти çурт-йĕр комбинатне монтажник пулса ĕçлеме вырнаçать. Ĕçе тĕплĕ тума, хăйĕнчен те, ытти çынсенчен те çирĕп ыйтма хăнăхнăскер, карьера пусми тăрăх питĕ хăвăрт хăпарать Николай Федорович. Монтажникре çур çул ĕçлесенех ăна прораб, кăшт каярах участок начальникĕ туса хураççĕ. Çак ĕçре икĕ çул та ирттермест, пултаруллă ертӳçе строительство управленийĕн главнăй инженерне лартаççĕ, тата тепĕр икĕ çултан вара ăна 102-мĕш строительствăпа монтаж управленийĕн начальникĕ туса хураççĕ. Вăйлă та хисеплĕ управлени пулнă вăл, министерствăра чи мухтавли шутланнă.

Çак çулсенче тахçан амăшне панă сăмаха та чыслăн пурнăçларĕ Николай Федорович — хăйĕн çывăх тăванĕсемпе пĕрле ăна валли пысăк та тирпейлĕ çурт туса пачĕ. Елена Игнатьевна Хулаçырминчен куçса кайса Чĕмпĕр çывăхĕнчи Баратаевка ялĕнче пурăнатчĕ ĕнтĕ — çавăнта çĕнĕ йăва çавăрма тиврĕ. Çĕнĕ çурт ĕçкинче амăшĕ ывăлĕ çине пăхрĕ те ăшшăн çапла каларĕ: «Пĕчĕк чух ахалех ятланă пулмалла эпĕ сана, ӳссе çитсе чăн-чăн çын пултăн, пура пурама та, кирпĕч хывма та лайăх вĕренсе çитрĕн. Телейӳ, сывлăху пултăрччĕ кăна малашне...»

Пил халалĕ пек туйăнаççĕ паян амăшĕн çак сăмахĕсем. Хăй вăл çирĕм çул каярахах çĕре кĕнĕ ĕнтĕ, анчах ывăлне ырă сунни, ăшă сăмахсем каласа хăварни Николай Федоровича кашни кунах пулăшса пынăн туйăнать.

Ĕçленĕ вăхăтрах Чăваш патшалăх университечĕн строительство факультетĕнчен вĕренсе тухрĕ вăл, инженер-строитель дипломне алла илчĕ.

Вăл ертсе пынă строительство монтаж управленийĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче мĕн чухлĕ заводемпе цехсем, çĕнĕ çуртсем, ача яслийĕсемпе сачĕсем, ытти йышши социаллă объектсем туса лартнине каласа та пĕтереймĕн. Тĕп хулари Çĕнĕ Кăнтăр, Кăнтăр-Хĕвеланăç, Çурçĕр-Хĕвеланĕç районĕсенчи нумай-нумай çĕнĕ урамсем, пурăнмалли кварталсем ӳссе ларнинче Николай Угасловпа унăн строителĕсен тӳпи калама çук пысăк.

...1988 çул. Декабрь уйăхĕ. Унченхи Совет Союзне кĕнĕ республикăсенчен пĕринче — Арменире — çутçанталăк кӳнĕ сиен — çĕр чĕтренни темиçе хулапа яла тĕпрен аркатса пăрахать, çĕршер те пиншер çынна çут тĕнчерен уйăрать, сывă юлнисене килсĕр-çуртсăр, тăван йăвасăр хăварать. Çĕн йĕркелӳ çулĕ çине тăнă мĕн пур совет çĕршывĕ кар тăрса пысăк инкеке кĕрсе ӳкнĕ туслă халăха пулăшма çĕкленет. Шупашкарти çурт-йĕр комбиначĕ те

аякра тăрса юлмасть. Унта та эрменсене васкавлă пулăшма хăйне евĕрлĕ оперативлă штаб туса хураççĕ, ăна ертсе пыма Н.Ф. Угаслова çирĕплетеççĕ. Вăл ертсе пынипе çулталăк хушши чăваш строителĕсен бригадисем, пĕрне пĕри улăштарса, Армян Республикинче ĕçлеççĕ, комбинат вĕсене кирлĕ материалсемпе, механизмсемпе, пурăнмалли вагонсемпе вăхăтра тивĕçтерсе тăрать. Çакăн пек кал-кал ĕçлесе пĕр çулталăк иртсе кайнă. Пĕррехинче Н.Ф. Угаслова главк начальникĕ Е.А. Тертышный хăй патне чĕнтернĕ те çапла каланă: «Арменире сансăр ĕç тухмасть, Николай Федорович, – тенĕ. – Строительство управленийĕн начальникĕ пулса çур çул та пулин ĕçлесе кил, тархасшăн...»

Турткаланса тăма хăнăхман Николай Федорович. Аслисен шанăçне тӳрре кăлармаллах. Пĕр сăмахсăрах вăл Армение тухса кайнă.

Вăл унта пырса çитнĕ тĕле çĕр чĕтренĕ хыççăнхи ишĕлчĕксене тасатса пĕтернĕччĕ ĕнтĕ. Анчах пурăнмалли çуртсене хута яма ĕлкĕреймеччĕ-ха. Çавăнпа малтанлăха вагонтах пурăнма тиврĕ. Чи кирли – кунтанах вĕсем Армение мунча тиесе ячĕç. Кăшт каярах, вырăна çитсен, тепĕр мунча тутарчĕç. 250 çынлă чăваш строителĕсемшĕн чăн-чăн савăнăç пулчĕç çав мунчасем.

Ĕçлессе те чăвашсем чăн-чăн паттăрлăх кăтартса ĕçлерĕç. Е.А. Тертышный каланă пек çур çул мар, икĕ çул та тăватă уйăх иртсе кайрĕ Арменири Ленинакан хулинче. Çак вăхăтра Н.Ф. Угаслов ертсе пыракан чăваш строителĕсем нумай хваттерлĕ пилĕк çурт туса пĕтерчĕç, ултă çурт никĕсне хывса хăварма ĕлкĕрчĕç. Кайран вĕсем майĕпен эрменсене хăйсене бетон çăрма та, кирпĕч хывма та, арматура майлаштарма та, лебедкăсемпе ĕçлеме те вĕрентсе хăварчĕç. Мĕн тери тав тумарĕç пуль вырăнти çынсем чăваш строителĕсене! Николай Федоровича медаль те пачĕç хастар ĕçленĕшĕн.

– Медалĕ-мĕнĕ, – тет вăл паян, çав кунсене аса илсе, – аякри туссем валли хăтлă çуртсем туса хăвартăмăр, çавă паха. Унтан тата çав çулсенче эпĕ туслăх вăйĕ мĕнлерех хăватлă пулнине лайăх туйса илтĕм. Мĕнле кăна наци çыннисем пулăшмарĕç-ши эрмен халăхне! Вĕсен туслăх туйăмĕ çилпе вĕçмерĕ, темиçе хулана, вуншар яла çĕнĕрен çĕкленме, эрменсен хурлăхне хăвăртрах сирсе яма пулăшрĕ. Туслăх пысăк инкеке çĕнтерчĕ.

...1992 çул. Тин çеç Армени çĕршывĕнчен таврăннă Николай Федорович тарăн шухăша путать. Совет Союзĕ арканнă хыççăн Чăваш çĕршывĕнче те пурнăç тĕпренех улшăннă иккен. Çуртйĕр комбинатĕнчи унăн унченхи вырăнĕнче урăх çын ларать. Мĕн? Каллех прорабран пуçламалла пулать-и ĕçлеме? Аптранă енне комбинат пуçлăхĕ А.Н. Афимьин патне кĕрет вăл: мĕн тумалла? «Хам та пĕлместĕп. Заказсем куллен кун сахалланса

пыраççĕ. Малашне мĕн пуласса Турă кăна пĕлет. Нимĕнле канаш та пама пултараймастăп», – тет ăна Альберт Николаевич. «Тен, куçса çӳрекен механизациленĕ колонна йĕркелемелле? Манăн ĕç опычĕ пур. Ĕç калăпăшне республикăра мар, ун тулашĕнче, пуянрах çĕрте шырамалла. Сăмахран, мĕншĕн Çыран çи Чаллăра строительство ĕçĕсем пуçласа ямалла мар? Эпир вĕсем валли çуртсем туса паратпăр, çавăншăн вĕсем пире «КамАЗ» машинăсем параççĕ», – ӳкĕтлесех ыйтать Николай Федорович. «Çук, – тет çурт-йĕр комбиначĕн пуçлăхĕ. – Эс калани вăл вăхăтлăх япала. Эпĕ сана хăвăн фирмуна йĕркелеме сĕннĕ пулăттăм. Ăнлансам, пурнăç тĕпрен улшăнчĕ, тăванăм. Унччен-хи текех нихăçан та çаврăнса çитес çук», – тесе хучĕ комбинат пуçлăхĕ.

Çак калаçу хыççăн Николай Федорович хăйĕн канăçне йăлтах çухатать. Акционер обществи туса хурсан? Анчах малтанхи капитал самаях кирлĕ-çке-ха. Тăрăшса пăхсан? «Жигули» автомобиль пур, икĕ телевизор, икĕ холодильник, Атăл леш енче пысăках мар дача... Çавсене сутсан? Шутланă – тунă. Хăй шанса-ĕненсе тăнă вун икĕ çынна пуçтарса вăл хупă акционер обществи туса хума документсем хатĕрлет. «Ятне мĕнле парăпăр?» – ыйтаççĕ унран. «Паллах – «ТУС», – пĕр иккĕленмесĕр каласа хурать Н. Угаслов, çак сăмахăн асамлă вăйне хăй темиçе хут та тĕрĕслесе пăхнăскер. Йывăрпа пулин те, çĕнĕ обществăна регистрацилеме май килет. Туслă ушкăн çавăн хыççăнах Мускав çывăхне ĕç шырама тухса каять. «Ĕçчен çынран ĕç хăрать», – теççĕ чăвашсем. Вĕсем те ăнăçлă договор туса, панель çуртсем тума пуçлаççĕ, пуç çĕклемесĕр тенĕ пек тĕплĕн ĕçлеççĕ. Купавна поселокĕнче вĕсем, сăмахран, Тинĕс-Сар флочĕн госпиталĕсем валли тăхăр хутлă пилĕк çурт туса лартрĕç. Каярах унта ĕçлесе тупнă укçатенкĕпе Лапсар поселокĕнче ятарлă база, тĕрлĕ-тĕрлĕ техника туянчĕç. Кайран каллех Мускавра та, Чулхулара та, Тольяттире те хĕрсех ĕçлерĕç.

Паян вĕсем ытларах Шупашкарта çурт купалаççĕ. «ТУС» компанин строительствăра кирлĕ пулакан мĕн пур йышши машинăсемпе механизмсем, башньăллă, хăй тĕллĕн çӳрекен тата автокрансем, бензовозсем, строительствăпа çул-йĕр техники пур. Хальхи вăхăтра асăннă компани Шупашкарăн Çурçĕр-Хĕвеланăç районĕнчи «Университет» микрорайонĕн генеральнăй подрядчикĕ пулса тăрать.

Çапла, пысăк опыт пухать Николай Федорович Угаслов строительство ĕçĕнче. Вăл ертсе пынипе республикăра мĕн чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр хута яман-ши? Нумай-нумай савăнăç кӳнĕ вăл çĕнĕ хваттере пурăнма куçакан çынсене.

Ырă кăмăллă, сăпайлă, панă сăмаха çирĕп тытакан, пурне

те пулăшма тăрăшакан Николай Федорович обществăлла ĕçсене те хастар хутшăннине шута илсе, 2003 çул вĕçĕнче Чăваш Республикинче пурăнакан Тутарстан чăвашĕсем ăна ентешлĕх пуçлăхне суйласа лартрĕç. Кунта та Николай Федорович хăйĕн ентешĕсен туслăх туйăмне вăйлатас, пĕр-пĕрне мĕн пур енлĕн пулăшса пырас, çуралнă Çĕршывпа тытакан çыхăнусене тĕреклетес тĕллеве тĕп вырăна хучĕ.

2009 çулта Н.Ф. Угаслова Чăваш наци конгрессĕн вице-президентне, каярах конгресс президентне суйларĕç. Ăна, пĕтĕм çĕршывĕпе палăрнă çынна, Раççейри «Наци мухтавĕ» ыр кăмăллăх фончĕ Мухтавăн ылтăн орденĕпе наградăларĕ. Çак наградăна Николай Федоровича Мускаври Çăлакан Христос чиркĕвĕнче чаплă лару-тăрура пачĕç.

«ТУС» акционер обществин генеральнăй директорĕ пуçарăвĕпе Тутарстанри Аксура, Çĕпрелте тата Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинче чăвашсем пĕрремĕш халăх поэтне Н. Шелепине, икĕ хутчен Социализма Ĕç Геройĕ ятне панă П. Дементьева тата чăвашсен аслă вĕрентекенне И.Я. Яковлева асăнса чаплă палăксем лартнă.

Пархатарлă ĕçсемшĕн Н.Ф. Угаслова «Чăваш Республика культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ятсем парса чысларĕç. 2001-мĕш çулта ăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне суйларĕç; хăйĕн тăван ялне тĕпрен çĕнетсе улăштарма пулăшнăшăн «Хулаçырми ялĕн хисеплĕ гражданинĕ» ят парса чысларĕç.

Унсăр пуçне тата тепĕр пархатарлă ĕç тума та вăхăт çитерет Николай Федорович. Шупашкарти Гузовский урамĕнче «Нарспи» клуб ĕçлет, унта ачасен «Сарпике» ансамблĕ куллен кун хăйĕн ташă-юрă ăсталăхне туптать. Çав ансамбле Ирина Евсеевна Угаслова – Николай Федоровичăн мăшăрĕ ертсе пырать. Ирина Евсеевна тăрăшнипех «Пĕр тăван Малинасем» вокал ансамблĕ йĕркелесе янă, унта Ирина Евсеевнăпа унăн йăмăкĕсем Еленăпа Лидия юрлаççĕ. Çак ушкăн çĕршыври нумай-нумай хуласемпе ялсене çитсе курнă, çынсене хăйсен хӳхĕм юррисемпе савăнтарнă. «Сарпике» ансамбле тата «Пĕр тăван Малинасем» вокал ушкăнне пур енлĕн пулăшса пынăшăн вĕсем Николай Федоровича чун-чĕререн тав тăваççĕ.

ЕНӐШ – ЯЛАН ПӐРРЕМӐШ

1967 çулта Тутарстанран Шупашкара куçса килсе «Коммунизм ялавӗ» (халӗ «Хыпар») хаçат редакцине ӗçе вырнаçнӑ хыççӑн Пичет çуртӗнче хатӗрлесе кӑларакан хаçат-журнал хайлавӗсемпе тӑтӑшах паллашма тытӑнтӑм та тӳрех çакна асӑрхарӑм: хӑшӗ-пӗри кӗске хыпарсем пичетлет, тепри пурнӑçра пулакан тӳнтерле ӗçсем çинчен çырать, кахалсене, ултавçӑсене, ют пурлӑха хапсӑнакансене тӑрӑ шыв çине кӑларать, виççӗмӗшӗ – парти, комсомол, совет органӗсен ӗçӗсем çинчен салху та кичем, анчах шутср вӑрӑм хайлавсем «шӑрçалама» хӑнӑхнӑ иккен, тӑваттӑмӗшӗ физкультурӑпа спорт темине кӑмӑллать... тата ытти те, тата ытти те. Нумай çыраççӗ, ӳркенмеççӗ, пӗр материалне тепринчен уйӑрса илме май çук, сӑмах çаврӑнӑшӗсем кашни хутӗнче пӗрешкел – вулакана нимпе те илӗртмеççӗ, савӑнтармаççӗ, тӗлӗнтермеççӗ.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ хаçатсенче те, журналсенче те пӗр харӑсах тенӗ пек Пушкӑрт Республикинчи Авӑркас район хаçачӗн редакцийӗнче ӗçлекен темле Виталий Енӗш текен хаçатӑн хайлавӗсем пичетленме тытӑнчӗç. «Пионер сассинче» вӑл ачасем валли сӑвӑ ярӑмӗсем е пӗчӗккисен психологине, тавракурӑмне ӑнланса эссесемпе калавсем кӑларать, «Капкӑн» журналта ӑна тытса кулмалли шӳтсем, юморескӑсем, фельетонсем вырнаçтарать, «Коммунизм ялавӗнче» (хальхи «Хыпар») Пушкӑртстан чӑвашӗсен пурнӑçӗпе çыхӑннӑ тӗрленчӗксем, статьясем, очерксем, «Ялав», «Тӑван Атӑл» журналсенче вара калавсем, юмахсем, повеççем пичетлет. «Кам-ши ку, Енеш хушма ятпа тӑван литературӑна хӑюллӑн килсе кӗнӗ çын?» – тесе шухӑшлаттӑм эпӗ ун хайлавӗсене вуланӑ май. Каярах паллӑ пулчӗ: ку вӑл Канаш таврашӗнчи Пратьякас-Енӗш ялӗнче çуралса ӳснӗ, каярахпа Ямашри вӑтам шкулта вӗреннӗ Виталий Григорьевич Григорьев пулнӑ иккен. Çартан таврӑнсан вӑл Пушкӑрт республикинчи Стерлитамак хулинче токарьте, слесарьте вӑй хунӑ, ун хыççӑн вара çӳлерех тӑлмачра ӗçленӗ. «Çӗршыв çулӗ» хаçатра тӑлмачра ӗçленӗ.

Эпӗ унпа 1969 çулта куçа-куçӑн паллашрӑм. Çуллахи кану вӑхӑтӗнче ашшӗ-амӑшӗ патне килсен Виталий Шупашкарти Пичет çуртне кӗрсе тухрӗ, тӗрлӗ редакцисенче ӗçлекен журналистсемпе чунне уçса калаçрӗ. Ман патӑмра кӗрсе пӗр-ик сӑмах ваклама та вӑхӑт тупрӗ. Ун чух эпӗ чӑвашсен тӗп хаçатӗнче информаци пайӗнче ӗçлеттӗм те – маншӑн чи кирли – пултаруллӑ хыпарçӑсемпе ӗçлӗ çыхӑнусем йӗркелесе ярасси тӗп вырӑнти тӗллевччӗ.

Вунӑ-вун пилӗк минут калаçнӑ хыççӑнах çак пултаруллӑ автора хамӑрӑн редакцие ӗçе вырнаçтарас шухӑш кӗрсе кайрӗ пуçӑмра.

— Лар-ха эс çак вырăнта пĕр кана хаçат вуласа, — терĕм те эпĕ Виталие хам тӳрех хаçатăн тĕп редакторĕ патне Михаил Николаевич Якимов патне васкарăм. Апла-капла, тетĕп, ман пӳлĕмре çак самантра Пушкăртстанран килнĕ пултаруллă журналист Виталий Енĕш ларать, хăй Канаш районĕнче çуралнă, вĕçертес марччĕ ун пек маттурсене, тетĕп редактора.

— Хам та савăнса вулатăп ун материалĕсене, — тет мана М.Н. Якимов. — Эпĕ халь ĕçлĕ ларăва васкатăп, кала ăна — эпир ăста журналиста пĕр иккĕленмесĕр хамăрăн редакцине йышăнма хатĕр.

Шупашкартан Виталий Енĕш хавхаланса та çунатланса тухса кайрĕ. «Якимов мана ĕçе чĕнсе Пушкăртстана çыру та янăччĕ», — аса илет хальВиталий Григорьевич, — анчах вырăнтан кил-йышăмпа тапранса Шупашкара килме иккĕлентĕм. Пĕлĕвĕи çитлĕклех пулайманни тытса чарчĕ мана. Ара, сакăр класлă пĕлӳпе мĕнех тăвайăп-ха, эпĕ аслă пĕлӳллĕ Шупашкарта...»

Тем вăхăтран Пратьякас-Енĕш каччи чăнах та Чăваш Республикин тĕп хулине килсе çитрĕ. Анчах... пирĕн редакцие мар, — «Капкăн» журнала. Унта та ăна хапăл тусах кĕтнĕ иккен. Журнал редакторĕн — Василий Тоймакăн (В.Я. Яковлевăн) йыхравĕ килĕшерех панă пулас çамрăк автора, каярах сатирăпа юмор жанрне вăл хăйĕн пултарулăхĕнче тĕпре тăраканнисен вырăнне хурса ĕçлерĕ, журналта вара литсотрудникран пуçласа редактор çумĕ таранах ӳсрĕ.

«Çапла эпĕ Шупашкарта ик-виç çул лăпках пурăнтăм, — малалла каласа парать Виталий Григорьевич. — Тĕп редакторсене те, аслă пĕлӳллисене те пайтах хатĕрлесе кун çути кăтартма пулăшрĕ. «Капкăн библиотекинче» уйрăм кĕнекуе кăларма шутланă Л.Я. Агаков кĕнекине питĕ тĕплĕн редакцилерĕм пĕррехинче. Ара, хăш-пĕрин шучĕпе, унăн, халăх писателĕн, хайлавĕсене тӳрлетме çук имĕш. Хăйĕн ал çырăвне эпĕ епле тимленине лайăх тĕрĕсленĕ Агаков мана пичет çуртĕнче чылай-чылай çын умĕнчех: «Эсĕ ма халĕ те писательсен Союзĕн членĕ мар? — терĕ. — Заявлени çыр. Рекомендацисене пĕрне хамах паратăп!» Эппин, килĕшнĕ ăна эпĕ тӳрлетни.

Илемлĕ литература анинче те тар кăларсах ĕçлерĕ пирĕн Виталий. Кĕçех унăн хайлавĕсем «Капкăн» журнал кăларса тăракан уйрăм библиотекăра тата Чăваш кĕнеке издательстви кăларакан кĕнекесенче çине-çинех пичетленме пуçларĕç. Вулакансем унăн «Çĕр тĕрекĕ» (1972), «Саваламан сак çине» (1972), «Вăтăр пĕрремĕш мăкăль» (1976), «Асаннĕр пур-и?» (1979), «Пĕçерккĕ» (1980), «Чи маттурри Урине» (1984) кăнекисене уйрăмах хытă килĕштерчĕç. Çак произведенисене Л. Агаков та, А. Ĕçхĕл те, Хв. Уяр та, Мускавра тухса тăракан «Крокодил» журнал ĕçченĕ, çĕршывĕ-

пех паллă сатирик Ян Полищук та пысăка хурса хакларĕç, вĕсенчен чылайăшне вырăсла тата ытти наци чĕлхисене куçарчĕç. Киевпа Ĕпхӳре вара, Виталий Енĕшĕн произведенисене украинла тата Пушкăртла уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларчĕç.

Вулакансем те, литература критикĕсем те, пĕр шухăшлă пулса, çакна уйрăмах палăртатчĕç: çамрăк çыравçă, чăваш литературинче паллă йĕр хăварнă Куçма Чулкаç, Аркадий Ĕçхĕл, Стихван Шавли, Хветĕр Уяр, Николай Евдокимов, Александр Кăлкан, Владимир Ухли, Трофим Иванов-Таçук тата ытти шӳт ăстисен меслечĕсене алла илсе, сатирăпа юмор лаççинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне çине тăрса шырать. Çак шыраврa ăна çутçанталăк панă çивĕч ăс-пуç, анлă тавракурăм, этем тавракурăмне тĕплĕн уçса пама пĕлни, пурнăçри тӳнтерле пулăмсене шат та пат тулхăрса кайса мар, хăш чух шахвăртса, хăш чух юлташла тăрăхласа, е, «хĕрĕме калам та — кинĕм, илт», тенĕ пек епле тусан лайăхрах пулнине палăртарах систерсе çырма пĕлни вулакан чунĕсене хăй енне çавăрма пулăшрĕ. Çапла çав, литературăри ӳсĕм çулĕ çакнашкал маттурсем килсех тăнипе аталанать те ĕнтĕ. Унченхи юрăсене тепĕр хут юрланипе мар, хăвăн ăс-пуçупа, хăвăн сассупа, хăвăн хăюлăхупа çынна савăнтармалăх, çĕнĕ çунат памалăх çĕнĕ юрă шыраса тупсан кăна тăван халăх сана тавлăн те хасеплĕн алă çупма тытăнĕ.

— Агаков мана Союз членне кĕме сĕннĕ хыççăн эп пит салхулланса кайрăм, — малалла каласа парать Виталий Енĕш. — «Эх, Леонид Агакович, терĕм хам-хам ăшăмра, пĕлместĕн-ха эс ман пĕлĕвĕм çукраххине...» Çав вăхăталлах ман телее партин аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă пĕр шеремет ман çинчен çăхавсем çырма тытăнчĕ: «Енĕшĕн аслă пĕлӳ çук, апла пулин те редакцире çавăн пек пысăк пукана тивĕçсĕр йышăнса ларать!» Ку хыпар чылайăшне пит тĕлĕнтерсе ячĕ. Уйрăмах — тĕп редактора, Тоймика. «Эс дипломсăрах-им?» — ыйтрĕ вăл кĕскен. «Ăхă», — терĕм çеç. «Халех каçхи шкула çӳреме тытăн, ачам, — ăс пачĕ вăл мана. Халь ... ĕмĕрĕ!» Вăл çул кăтартса янипе вăтам пĕлӳ илтĕм.

Професси ăсталăхне ӳстерме Виталий Енĕше 1979-1981 çулсенче Мускавра А.М. Горький ячĕллĕ Литература институчĕ çумĕнчи Литература аслă курсĕнче вĕренни те нумай пулăшрĕ. Кунта вăл çĕршыври чаплă литературовед семинарисенче ăслă та профессионаллă сĕнĕвĕсемпе канашĕсене итлерĕ, тĕнче литературин классикĕсен ăсталăхне тишкерчĕ, хăйпе пĕрле вĕренекенсен тата Муксавра тăтăшах пулса иртекен семинарисен, пленумсен, сӳезчĕсен ĕçĕсене хутшăнакан паллă çыравçăсен тĕл пулăвĕсенче хăйне валли усăллине нумай тупрĕ. Мускавран таврăнсанах пултаруллă çыравçа чăваш писателĕсен Союзĕн литература консультанчĕн ĕçне шанса пачĕç, кăштах вăхăт иртсен ăна СССР

Литература фончӗн чăваш уйрăмӗн директорне çирĕплетрĕç. Çак ĕçсенче вăл çамрăк авторсен ăсталăхне ӳстерес тата чăваш çыравçисен ĕçпе кану условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ырми-канми тăрăшрĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăрвуннăмĕш çулĕсен иккĕмĕш çурринче эпĕ Чăваш писателĕсен Союзĕн правленине ертсе пытăм. Çав çулсенче Виталий Григорьевичпа пĕрле эпир СССР тата Раççей Литфончĕн ертӳçисемпе çине-çинех Мускавра та, Шупашкарта та тĕл пулса, чылай ыйтусене татса пама пултартăмăр. Пилĕк çул хушшинче пирĕн икĕ писатель çемйи Литфонд пулăшнипе хваттер илме пултарчĕ. Вăхăтсăр уйрăлса кайнă вуншар çыравçă ячĕсене ĕмĕр асăнмалăх вĕсем ĕçленĕ е пурăннă çуртсем çинче мемориал хăмасем вырнаçтартăмăр. Ку ĕç хамăр республикăра çеç мар, ытти чăвашсем хушшинче те туса пыма тăрăшрăмăр. Çапла вара эпир Пушкăртстанри Усăллă ялĕнчи вăтам шкул çурчĕ çине Данилов-Чалдуна, Ульяновск облаçĕнчи Мелекес хулинчи Аниççине чысласа асту хăмисем вырнаçтартăмăр. Писательсен Союзĕнче хисепленекен паллă çынсене те, хастар çамрăк авторсене те çĕршыври чаплă пултарулăх çурчĕсене çĕнĕ произведенисем çырма е сывлăха çирĕплетме йӳнĕ хакпа путевкăсем парса хавхалантартăмăр.

Пĕр пысăк ыйту — хамăрăн Кăкшăмри «Силпи» пултарулăх çурчĕпе юнашар Атăл тăрăхĕнчи писательсем валли вун икĕ хутлă пултарулăх çуртне тума тытăнас ыйтăва та ăнăçлă татса янăччĕ эпир, ун пирки Шупашкара ятарласа килнĕ СССР Литфончĕн пуçлăхĕпе В.А. Хохловпа пĕрле Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн Председателĕ Л.П. Прокопьев патĕнче пулса вăл çак проектпа хаваспах килĕшнине те пĕлсе тухнăччĕ. Шел, ĕмĕт пурнăçланаймарĕ, 90-мĕш çулсенче çĕршывра сиксе тухнă асар-писер пăтрашу шухăша тĕпренех кăкласа пăрахрĕ.

...Ăçта кăна пулмарăмăр эпир Виталий Енĕшпе пĕрле пурнăç тăршшĕнче! «Хурçă ăйăрсем» е «Хурçă кайăксем» пире туслăх çулĕпе Пушкăртсана та, Мускава та, Азербайждана та, Хусана та, С. Петербургпа Чулхулана та, Ульяновскпа Минска та пĕрре мар илсе çитернĕ. Тĕлĕнеттĕм вара: ăçта пырса çитетĕн — унта Енĕш манран маларах пулнă, вăл килнине пĕлсенех хăна çуртне унăн тусĕсем шăкăрин пырса тулаççĕ. Пĕринпе вăл çарта, Байконур таврашĕнче службăра тăнă, тепринпе Пушкăртри Стерлитамакра е Авăркаспа Пелепейре ĕçленĕ, виççĕмĕшпе Мускавра пĕрле вĕреннĕ, тăваттăмĕшĕпе куçару ыйтăвĕсемпе тăрмашнă чух çывăх туслашнă.

Акă, 1981 çулхи юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче эпир Виталий Енĕшпе Мускавран Баку хулине самолетпа вĕçсе çитрĕмĕр. Чаплăран та чаплă уява чĕнсе янă пире — Азербайджан хăйĕн мух-

тавлăран та мухтавлă ывăлĕ, легендăсене кĕрсе юлнă Низами Гянджеви поэт тата шухăшлавçă çуралнăранпа 840 çитнине пĕтĕм тĕнчерен килнĕ паллă писательсемпе, политиксемпе, искусство çыннисемпе пĕрле мăнаçлăн паллă тăвать. Вырăнти аэродрома анса лартăмăр кăна — пире тӳрех Азербайджан Писателĕсен Союзĕн хастарĕсем Сабир Русатмханлыпа Акрам Айлисли ăшшăн кĕтсе илчĕç, çăмăл машинăпа чаплă хăна çуртне илсе кайса вырнаçтарчĕç.

Каçхине Баку хулин Ленин ячĕллĕ Керменĕнче савăнăçлă пуху пулса иртрĕ. Президумра — Азербайджан Союзлă Республикин пуçлăхĕсем — Г. Алиев, О. Багиров, Г.А. Гасанов, СССР Наукăсен академийĕн Востоковедени институчĕн директорĕ Е. Примаков, çĕршыври паллăран та паллă çыравçăсем В. Карпов, М. Ибрагимов, Н. Галевич, О. Сулейманов, Д. Ованнес, Пăлхар, Монголи, Инди, Мали, Палестина, Тунис, Турци, Эфиопи писателĕсемпе поэчĕсем. Çак каç трибуна умĕнче тухса калаçнă çынсем Низами çырса хăварнă сăвăсемпе поэмăсенчи Лейлипе Меджнун, Хосравпа Ширин, Искендерпе Нушабе вилĕмсĕр сăнарĕсене тивĕçлипе мухтарĕç, поэт таланчĕ сакăр ĕмĕр ытла чи çутă çăлтăр пек ялтăраса тăнинчен тĕлĕннине пĕлтерчĕç.

Тепĕр кунне пирĕн пиншер çынран тăракан делегаци Гянджа хулине (ун чухне вăл Кировобад ятлăччĕ), Низами тăван çĕршывне çул тытрĕ. Унта пырса çитсен эпир хамăра юмах тĕнчине — поэзипе музыка тĕнчине лекнĕ пекех туйса илтĕмĕр. Хулан кашни тăкăрлакĕнче илемлĕ сценĕсем туса тултарнă, кашни сцени çинче Низамин тĕрлĕ сюжетĕсенчен йĕркеленĕ инсценировкăсем кăтартаççĕ, ăçта ан пыр унта — азебайджан халăхĕн ташшисем, юррисем, авалхи музыка инструменчĕсен чуна пырса тивекен кĕввисем. «Вăт халăх-тăк халăх вара ку, епле типтерлĕн упраççĕ хăйсен йăли-йĕркине, епле мăнаçланаççĕ хăйсен мухтавлă ывăлĕхĕрĕсемпе!» — тетпĕр эпир Виталий Енĕшпе тăванла халăхăн чаплă уявне ытараймасăр.

Хула хĕрринче, Низами мавзолейĕ патĕнче, поэзи уявĕ пулчĕ. Çак уява хутшăнакансем, алла кĕреçе тытса, çак вырăнтан Низамин сачĕ ĕмĕр кашлатăр тесе, çамрăк чинарĕсем лартса хăвартăмăр. Ун пирки эпĕ çав кунах çакăн пек йĕркесем çырса хунăччĕ:

Çак уява пуçтарчĕ Низами.
Тĕнче поэчĕсем çак хулара.
Куç виçипе виçсе те илейми
Пин тумлă халăх хĕвĕшет умра.

«Кам пĕлес пур, пурнайăн-и ирччен.
Васка эс ырлăх вăрлăхне акма.

Çак çутă тĕнчерен уйрăличчен
Этем тусне васкатăр пулăшма...»

Поэт халалĕ — çăлкуç пек таса.
Гянджа урамĕнче пĕр лăпкă ир
Кашни ăшпиллĕ сăвă каласа
Чинара сачĕ лартрăмăр эпир.

...Перо та кĕреçе кăна пирте.
Поэтăн хĕç-пăшалĕ çав анчах.
Çын чĕрине илем кĕрте-кĕрте
Янратăр пирĕн çулăмлă сăмах!

Каçхине, хулари Çамрăксен керменĕнче поэзи каçĕ питĕ мăнаçлăн иртрĕ. Тĕнчери паллă поэтсем хушшинче Низами ентешĕсене эпир те Виталий Енĕшпе пĕрле Чăваш çĕршывĕнчен хĕрӳллĕ салам каларăмăр, хамăрăн сăвăсене вуларăмăр.

Баку хулине каялла таврăнсан хăна çуртĕнчи пирĕн пӳлĕме В. Енĕшĕн тата манăн юлташсем йышлăн пырса кĕчĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ — тĕрĕк халăхĕсен çыравçисем.

— Вăт, Виталий-тус, çаксем ĕненмеççĕ, тĕрĕк халăхĕсен чи авалхи тăхăмĕсем чăвашсем мар пуль теççĕ, ăнлантар-ха вĕсене, — ыйтрĕ пĕри, Джабир ятлăскер В. Енĕшрен.

— Мĕн ăнлантармалли пур кунта, Шупашкарта, манпа кӳршĕллех тĕнчипе паллă тюрколог Михаил Романов профессор пурăнать. Акă унăн пĕр кĕнеки, «Чувашский язык в семье алтайских языков» текенни, ман чăматантах выртать. Чăваш чĕлхи чи авалхи тесе пĕтĕм тĕнчене ĕнентернĕ ĕнтĕ вăл. Акă, ятарласах çак страницăсене вулăр-ха.., — терĕ Виталий.

Хăнасем, хăйсене хăйсем шанмасăр, ман çине те пăхкалаççĕ.

— Тĕрĕсех калать Виталий, — терĕм эпĕ. — Эсир тата нумай пулмасть Мускавра кăларнă «Энциклопедия юного филолога» кĕнекене тупса вулăр-ха. Унта тĕрĕк чĕлхисен гносеологиллĕ аталану историйĕн йывăççине те ӳкерсе кăтартнă, çав йывăç тымарĕсем — чăвашпа якут чĕлхисем, ытти тĕрĕк чĕлхисене вара вĕсем чылай çамрăкрах пулнă пирки, çав тымарсенчен шăтса ӳснĕ туратсем е çулçăсем пек пулнине кăтартса панă.

— Енĕшпе тавлашма çук, вăл ялан пĕрремĕш, — терĕ вара, ним калама аптраса, Азербайджан поэчĕ Сабир Рустемханлы. Çак сăмахсене тĕпе хурсах пулĕ, каярах Сабир чăваш поэчĕсен сăввисене азербайджанла уйрăм кĕнекен куçарса кăларчĕ.

Çапла Енĕш ялан пĕрремĕш. Çак чăнлăхпа çывăх пулнине эпĕ 1997 çулта Пушкăрт Республикинчи Пелепей хулинче иртернĕ «Хавхалану çăлкуçĕ» поэзи фестивалĕнче пулса тепĕр хут

аса илтĕм. Çак туслăх фестивалĕ (унта виçĕ республика — пушкăрт, Тутар тата Чăваш Республикисен поэчĕсем хутшăнаççĕ) пухăниччен пилĕк çул маларах Виталие, Шупашкарта пурăнакан писательсенчен пĕрремĕш çынна, «Пушкăрт Республики культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парса чыс тунăччĕ.

Хальхинче вара, Пелепей хулинче, виçĕ талантлă çын — Ĕпхӳ çыравçи Тагир Тагиров (Ахунзянов), Хусан сăвăçĕ Ренат Харис тата пирĕн Виталий Енĕш çулăмлă поэт Фатых Карим ячĕллĕ премин пĕрремĕш лауреачĕсем пулса тăчĕç. Çак ятпа хулари Культура керменĕнче литературăпа музыка каçĕ пулса иртрĕ. Пултарулăх ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ маттур çыравçăсене Пушкăртстан Президенчĕ Муртаза Рахимов та, Пелепей хула канашĕн председателĕ тата Пелепей хулипе районĕн администраци пуçлăхĕ Риф Газизов та, поэтсемпе критиксем те, вулакансем те хĕрӳллĕн саламларĕç. Ара, чăннипех чи тивĕçлисем, чи пĕрремĕшсем пулчĕç-çке асăннă лауреатсем!

Кунта манăн Виталий Григорьевăн тепĕр пархатарлă та сăваплă ĕçĕ çинчен каласа хăварас килет. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче пирĕн аслă Патриархăмăр Иван Яковлев: «Эпĕ вĕçнех туса çитереймен ĕçе эсир туса çитерĕр, Авалхи Сăмаха вĕçне çитиччен куçарса, чăваш халăхĕ патне Турă çырăвне пĕтĕмпех, туллин çитерĕр», — тесе çырса хăварнă халалне тĕпе хурса, Шупашкар тата Чăваш Митрополичĕ Варнава йĕркеленипе Республикăра Чăваш Библи комиссийĕ туса хучĕç. Çак комиссие чиркӳпе православи тĕнĕн ĕçченĕсем, чăваш çыравçисем — çав шутра — Виталий Енĕш, Денис Гордеев, Петр Львов, Олимпиада Таллерова тата эпĕ кĕтĕмĕр. Пире сумлă чĕлхеçĕсем, наука сотрудникĕсем пулăшса пычĕç, пирĕн куçарусене тĕплĕ вуласа паха сĕнӳсем пачĕç. Комиссире ĕçлекен çыравçăсем Шупашкарта, Мускавра, Минскра, Сант-Петербургра пулса тĕрлĕ семинарсемпе конференцисене хутшăнчĕç. Чăвашсен куçару ушкăнне Амстердамри Вырăс Православи Чиркĕвĕн протоиерейĕ Сергий Овсянников ертсе пычĕ. Кăшт каярах пирĕнпе пĕрле ĕçлеме Ева Лисина кăмăл турĕ.

1997 çулăн çĕртме уйăхĕ тĕлне эпир Авалхи Сăмахăн мĕнпур кĕнекисене куçарса хатĕрлесе çитертĕмĕр. Çак ятпа 1997 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарта Библие чăвашла куçаракансен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта çакăн пек резолюци йышăнчĕç: «...1991 çулта пуçланнă ĕç çав тери тухăçлă та ăнăçлă пулчĕ. Авалхи Сăмахăн чăвашла куçарнă мĕн пур текстне малтанхи редакци шайĕпе хатĕрлесе çитернĕ». Никама пăхăнман экспертсем куçаруçăн ĕçне юрăхлă тесе хак панă. 1998 çулта, куçарнă текста вулакансем хак паччăр тесе, Авалхи Сăмахри Пророксен кĕнекисене чăвашла пичетлесе кăларма палăртса хунă.

Çавăн хыççăн пирĕн куçару ушкăнне тĕп редактор пулса Ева Лисина çыравçă пырса кĕчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ – пире, чи малтанхи куçаруçăсене Денис Гордеева, Виталий Григорьева, Петр Львова тата мана Библин чăвашла куçарнă текстчĕсен авторĕсем пулма килĕшместпĕр тесе çырнă хатĕр бланксем ярса парса тĕлĕнтерчĕç Питĕр хулинчен. Пирĕн ĕçе шăпах Раççейри Библи обществин Санкт-Петербургри уйрăмĕ йĕркелесе тăратчĕ. Эпир, Шупашкарти айван куçаруçăсем, çакă вăл Библие чăвашла куçармалли проекта Европа Библи обществинчен укçа-тенкĕ пулăшăвĕ парса тăма кирлĕ пулĕ тесе, ним шутласа тăмасăрах çак хатĕр бланксене алă пусса ярса патăмăр. Пуçра та пулман пирĕн çак çырусем Амстердампа Европăри Пĕрлештернĕ Библи обществисен консультанчĕ протоиерей Сергий (Овсянников) Раççей Библи обществин Санкт-Петербургри уйрăмĕ (чăвашла куçару проекчĕн пуçлăхĕ Андрей Овсянников (Амстердамри Сергий протоиерей тăван шăллĕ) хушшинче темиçе çул йĕркеллĕ аталанса пынă çыхăнăвăн чи юлашки кунĕсем пуласса.

Çакăн хыççăн пире урăхла нимĕнле ĕç хушни те пулмарĕ. Эпир темиçе çул пĕтĕм вăя, пуçарулăха парса хатĕрленĕ куçару ал çырăвĕсем пĕтĕмпех Ева Лисина аллине лекрĕç. Пирĕн текстсене мĕн редакциленине пире кăтартса чăрманмарĕ вăл.

– Куçаруçă хăй Турăпа калаçса çеç çакăн пек куçару тума пултарать. Библие куçарни – хăйне майлă поэзи, философи. Халăх кăмăлне тивĕçтертĕр тесен унăн сăвă евĕр вуланмалла, – тенĕччĕ Ева Николаевна 2004 çулта «Авалхи Халал. Ăслăлăх кĕнекисем. Псалтирь» кĕнеке сăнавлă меслетне чăвашла пичетленсе тухнă хыççăн.

Пире 1991 çулта чăвашсен Библи комиссийĕнче тĕп текст вырăнне 1987 çулта Стокгольмра Библи куçарăвĕн институтĕнче пичетленсе тухнă виçĕ томлă Синодаллă вырăсла куçарупа (ăна Богослови профессорĕ А.П. Лопухин тата унăн ĕçне малалла тăсакансем куçарнă пулнă) усă курма хушрĕç. Эпир çав издание тĕпе хурса ĕçлерĕмĕр.

Е.Н. Лисина Библин чăвашла куçарнă кĕнекине пахаланă чух (2010 çулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕ) хăй пирĕн куçарусене редакциленĕ тапхăрта вырăсла куçару çине таянса ĕçлерăм, анчах авалхи чиркӳ текстчĕпе усă курмарăм тесе пĕлтерчĕ. Çавăнпах пулĕ Илия Карлинов çак сăмахсемпе кăмăлсăр пулнине пытарса тăмарĕ: «Библин чăвашла куçарăвĕнче пысăк йăнăшсем сахал мар, хăçан та пулсан ăна тепĕр хут кăларас пулсан, паллах, çав йăнăшсене татăклăн пĕтерес пулать», – терĕ.

Чăн тĕнĕн кĕнекисене сахал мар пичетлесе кăларнă, хальхи вăхăтра И.Я. Яковлевăн наука тĕпчев институтĕнче наука сотрудникĕ В.А. Смирнов çирĕплетнĕ тăрăх, Чăваш ен чиркĕвĕсенче

кĕлĕсем ирттернĕ чух халĕ те И.Я. Яковлевпа унăн çывăх çыннисем куçарнă Авалхи тата Çĕнĕ Сăмахсен тексчĕсемпе усă кураççĕ иккен, çакăн çинчен хăйĕн Мускавра пичетленсе тухнă «Светильник разума» кĕнекинче (65-мĕш стр.) çырса кăтартнă, Е. Лисинăпа унăн çĕнĕ ушкăнĕ куçарнă варианта Чиркӳ те тĕне ĕненекенсем те йышăнмаççĕ. Ытла сăвăласа пĕтерсе, текстсене «Çӳлхуçа» йышши неологизмсем кĕрте-кĕрте виçерен иртсе каймарĕç-ши çĕнĕ тăлмачсем?

Виталий Енĕш тесен вара – вăл Авалхи Сăмахăн вунă кĕнекине куçарма хутшăннисĕр пуçне «Акафистсен» виçĕ томне, «Христос çыннин мĕн пĕлмелле?» кĕнекисене икĕ томпа, унсăр пуçне «Ĕненӳпе çăлăнăç çинчен», «Турă Амăшĕне мухтаса хывнă акафистсем», Псалтирь, кĕлĕсем», «Çынна сыхласа усракан Ангелпа куллен калаçмалли кĕнеке», «Çылăхран мĕнле ӳкĕнмелле?» тата ытти кĕнекесене чăвашла куçарса кăларчĕ. Хăй вăл Христос Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнин ячĕпе лартнă чиркӳре пĕр хушă алтарь ĕçĕнче, старостăра вăй хучĕ, Шупашкарта тĕн училищинче темиçе çул хушши вĕрентсе пурăнчĕ.

Çапла, сăваплă та пархатарлă ĕç сахал мар турĕ Виталий Григорьевич Енĕш пурнăç тăршшĕнче. Çитмĕл çулхи юбилей çитнĕ май эпĕ хамăн çывăх юлташăма, кӳршĕме, ĕмĕре пĕрле ирттернĕ шанчăклă çынна çавна çеç калама пултаратăп: иксĕлми вăй, çирĕп сывлăх, çутă та ырă кун-çул патăр сана Çӳлти Аттемĕр! Çут тĕнчене тухса пыракан çĕнĕрен те çĕнĕ кĕнекӳсем çынсен чунне вырнаçса, иксĕлми хавхалану кӳрсе тăччăр.

Нумай пурăн.

СОВРЕМЕННИКИ О ЖИЗНИ И ТВОРЧЕСТВЕ П. АФАНАСЬЕВА

А ПОМОГ ОН МНОГИМ

В одном рассказе Порфирий Афанасьев пишет о том, как вернувшийся с фронта покалеченный отец с тремя кусочками сахара спас его, трехлетнего мальчишку, от неминуемой смерти. Конечно, спасли жизнь мальчику не столько тридцать-сорок граммов сахара, привезенные отцом из госпиталя, сколько само возвращение отца. После некоторой поправки он, очевидно, принимал посильное участие в колхозном производстве, и ему, как инвалиду войны, могли выдавать кое-что из продовольствия. Для голодной семьи это было очень кстати. До чего мы тогда бедствовали, что даже кусочки сахара, ненароком подаренные нам кем-нибудь, становились событием и запомнились на всю жизнь.

Бедно жили мы, да, и все-таки выжили, вот что главное!

Года тридцать три — тридцать четыре назад приехал я в чувашскую деревню Новое Ильмово (в Черемшанском районе Татарии), откуда родом наш писатель П.В. Афанасьев. До этой деревни я месяца два колесил по чувашским селам Куйбышевской области и Татарии, видел бедные и реже — средние колхозы, запущенные хозяйства и опустевшие дома; встречался с людьми, целиком поглощенными своим трудом.

Новое Ильмово поразило меня и очаровало какой-то внутренней притягательностью и уютом, домовитостью и ухоженностью полей и огородов, радостными лицами колхозников. Много было в деревне и за околицами земли, у большого пруда играли дети, паслись гуси. За деревней виднелся лесок. Ильмовый лес. Дальше, за леском, протекала известная всему чувашскому «миру» по стихам Николая Шелеби река Черемшан.

Чувствовалось, что живут в этих местах трудолюбивые и хлебосольные люди. Помнится, я подумал тогда с завистью: «Вот бы поселиться в такой деревне».

Познакомиться с Порфирием Афанасьевым я тогда не мог: он был учеником 6-го или 7-го класса и едва ли помышлял о труде литератора. Да и я только сутки прожил в Новом Ильмове. Встретились мы с ним впервые, уже поэтом Порфирием Афанасьевым, в 70-х годах в Чебоксарах. Работал он тогда в редакции газеты «Коммунизм ялавĕ». А до этого получил аттестат об окончании средней школы начал печатать в районной газете за-

метки и стихи. С 1960 по 1964 год учился в Казанском пединституте. Год проработал у себя на родине учителем русского языка и литературы, а потом был выдвинут заместителем редактора районной газеты, выходящей на русском языке.

Это было огромным достижением для вчерашнего колхозника. В семье бедного хлебороба – инвалида из глухой чувашской деревушки, появился и первый интеллигент.

И в Чебоксарах Порфирий Афанасьев не остался не замеченным. Младший литературный сотрудник, литературный сотрудник, заведующий отделом – таков его журналистский путь в газете «Коммунизм ялавĕ». Вскоре трудолюбивого и скромного молодого человека выдвинули н пост главного редактора журнала «Хатĕр пул». Рос он как поэт. За книгу стихов о молодежи «Чун çути» («Свет изнутри») ему присуждена премия комсомола Чувашии имен М. Сеспеля. С 1985 года Порфирий Васильевич – главный редактор Чувашского книжного издательства, последние четыре года возглавляет нашу писательскую организацию. Одновременно является членом правления Союза писателей РСФСР, членом Ревизионной комиссии СП СССР.

Активно работает П. Афанасьев как писатель. Недавно вышла его новая книга стихов и поэм «Хĕвел хапхи» («Солнечные ворота»). На сцене Чувашского академического драмтеатра имени К.В. Иванова пять лет шел спектакль по трагедии П. Афанасьева «Именем твоим». Здесь же его переводе шли или идут спектакли по произведениям В. Шекспира «Виндзорские проказницы», В. Распутина «Деньги для Марии», Л. Леонова «Нашествие», М. Шолохова «Тихий Дон», К. Хоинского «Ночная повесть».

Он не только поэт, драматург и толмач, но и хороший прозаик. Отлично владеет как чувашским языком, так и русским. Слова умеет расставлять красочно, мысли выражает четко. Его книги печатаются в Чебоксарах и в Москве. А стихи переведены на многие языки народов СССР.

Начав творческую деятельность с газетных полос, П. Афанасьев сейчас вновь вернулся «на круги своя», на этот раз как публицист. Выступает он по вопросам современной литературы, откликается на животрепещущие темы дня. Не считает зазорным заступиться за несправедливо обиженных и обделенных. Хлопочет за устранение житейских неурядиц и своих избирателей.

У писателя есть папка, куда он складывает благодарственные письма тех, кому он добрым словом или делом помог в жизни. А помог он многим.

Хведер УЯР.

(*Газета «Советская Чувашия», 20 февраля 1990 г.*).

ГОРИТ СВЕЧА У ИЗГОЛОВЬЯ...

(*О сборнике стихотворений и поэм Порфирия Афанасьева «Благодарение»*)

Уж так свежа и колоритна его народная строка, что не перестаешь удивляться и сочной живописи слова, и очень органичной музыкальной «оркестровке» стиха, и умелому речевому воплощению крылатой мысли. Триединство этих основополагающих компонентов позволяет таланту созда-вать такие образы, что они надолго остаются в памяти. С ними становится легче, уютнее, светлее.

Пытаться пересказать содержание стихов – дело бесполезное, ибо для выражения мысли поэт уже использовал верную инструментовку, и она не может быть повторена. Но, поскольку многие стихи из сборника еще не переведены на русский язык, я позволю себе, как говорится, на свой страх и риск прокомментировать идейно-художественную трактовку стихотворения «Горит свеча» На краю села, где покоятся предки, под сенью могучего дуба и развесистой липы в стозвонный день Семика – Троицы, когда в полифонии жизненной музыки явственно выступает церковный колокол, на могильном холме родителей горит свеча. Крохотный огонек ведет с нами бессловесный разговор. Родители с нами, и мы вечно с ними. А над головой, высоко в небе, держась за желтую нить солнца, о нашей судьбе неустанно поет жаворонок. Свеча горит... Из желоба струится переливающаяся на солнце жемчужно-бриллиантовая вода ведет свое вечное струнное соло. А свеча горит... Родите ли, честно и достойно отслужив свой земной срок, пришли сюда. Их с нами нет, но мы ощущаем их взгляд, слышим и голоса, всечасно помним их напутствие и помощь. Дуб батюшка – с нами, мать-липа – перед глазами, и живем своим мирными трудами и заботами с чувством благодарения. Благодарения Творцу, благодарения родителям, благодарения всем соотечественникам. Вот, оказывается, к каким духовным обобщениям приводит поэта момент горения свечи. Спасибо сердечное Порфирию Васильевичу за то, что он душой своей уловил этот прекрасный момент и поделился с нами на такой высокой и в то же время очень человечной ноте.

Стихотворение это я выбрал и попытался пересказать потому, что оно наиболее полно раскрывает идею всей книги. Полет мысли, картинность образов, доверительный слог поэта, талантливо сплетенные в один живой венок, каждым штрихом, каждым открытием твердят, что мы имеем дело с достойным продолжателем дела К.Иванова и М.Сеспеля, П.Хузангая и Я.Ухсая.

Ю. СЕМЕНДЕР, Народный поэт Чувашии
(*«Советская Чувашия», 4 мая 2001 г.*)

Дорогой Порфирий!

От всей души желаю тебе в дни твоего первого серьезного юбилея любви и вдохновения. Любви – до 75 лет, И вдохновения – до 100 лет.

Чтобы выполнить мои пожелания, необходимо богатырское здоровье. Его я тебе тоже, конечно, желаю.

И чтобы было у тебя много друзей.
И чтобы дома все было хорошо.
И чтобы удача о тебе на забывала.
И чтобы, и чтобы, и чтобы...

Помнишь, какую надпись я сделал тебе, подарив свою книгу?..

Рад, что в этом мире я
Повстречал Порфирия.
Земли на знаю краше я,
чем его Чувашия!

С искренним уважением, твой друг **Петр ГРАДОВ**.

Февраль 1992 года.

* * *

1988, июнĕн 15-мĕшĕ, Мускав.

Геннадий АЙХИ

Пухвир Ахвана
Чакса çитсен ăшри илем,
Ятарласа аса илем
Тăван Пухвир кĕрекине, –
Французсемпе кĕрленине!... –
Каллех хал кĕрĕ те ăша,
Кăрнеклăн çĕклĕ Шухаша!..

Чĕререн тав туса, **АЙХИ**.

ПУРХИЛЬ ШĂЛЛĂМ!

Чăн чăвашла калас пулсан, «тата аллă çул такăнмасăр ут», – темеллеччĕ ман. Эпĕ, анчах та, Сана та Сементер пиччӳне каланă пекех калам: Турă Сана çĕр çул панă пулсан – Тăхăр вун тăхăр çул та çитĕ. Арăму çĕр те пĕр çул пурăнтăр!

Ăшăнса пурăнăр пăр-пăринпе, Çеçпĕл парнине илсен, Сан çинчен арăму мĕн тери юратса каланине халăх паян кунченех манаймасть.

Ачу-пăчу та ырă куртăр.

Сисетĕн-ши, сисместĕн-ши, ячĕшĕн çырмастăп саламлă çырăвăма. Чĕререн юратса çыратăп — сана лайăхах пĕлнĕрен. Эпĕ Сана, Эс çырнине, Эс Каланине эсĕ ху ман çинчен шутланинчен чылай лайăхрах пĕлетĕп...

Хăвăн çинчен шутласа ирттермерĕн ĕмĕрне, шăллăм, Халăхăмăршăн çунатăн. Тепĕр тесен, сан пек çынсемсĕр Константин Иванов та пĕтĕм тĕнчене хайĕн Çĕр çулĕнче çав таранах хăватлăн, улăпла курăнас çукчĕ. Тайма пуçăм, тав. Тавсси!...

Тĕнчере тĕрли пур,
Пурхиль шăллăм, Эсĕ
Хăвах Хăвăн пек пурăн,
Ĕмĕрех Хăвăнлăхна упра.

Сана мухтаса, пысăка хурса, тав туса, юратса пурăнакан
Геннадий **ВОЛКОВ**(Кашкар Хуначийĕ) академик. *1992 ç.*

ЮРИЮ АЙДАШУ И ПОРФИРИЮ АФАНАСЬЕВУ

Друзья моих друзей —
Мои друзья,
Приятно видеть
их с собою рядом,
Они в беде помочь
всегда мне рады,
Друзьям иначе быть
никак нельзя.

И с другом друга
хорошо дружить,
Все хороши, коль с ними
сам хороший.
И тропке дружбы
не бывать заросшей,
Давайте же дружнее
будем жить!

И на пути преграды все разя,
Давайте же тесней

сплотимся, люди,
Тогда и жить нам вместе
легче будет.
Друзья моих друзей –
мои друзья.

Виталий СТАНЪЯЛ.

ПАША АФАНАСЬЕВА

Авалхи тăванăм, савăн:
Аҳаль мар-мĕн ĕҫлени.
Ман – паян, ыран вăл – санăн
Урамра уяв тени.
Чĕрере кăвар пулсассăн,
Янрĕ юррăмăр хавассăн.

Юратса – **Ю. АЙДАШ.**
14.2.77.

ДЫХАНИЕ ВРЕМЕНИ

Казань. 1961 год. В чувашской секции при Союзе писателей Татарии – большое заседание. Из Чебоксар приехали именитые гости – Педер Хузангай, Александр Алга, Стихван Шавлы, Василий Алагер, Николай Ильбек и другие.

Им было чем поделиться с молодой литературной сменой, жадно ловящей каждое слово старших товарищей. Всем нам, тогдашним студентам, было немного лет, и самым молодым оказался Порфирий Афанасьев. Но многие из нас уже знали, что он давно печатается в журналах.

Вечером во Дворце культуры имени Павлюхина состоялся вечер чувашской поэзии. Зал переполнен, читаем стихи. Вот к трибуне подошел Порфирий Афанасьев вдруг он немного растерялся.

– Выше, выше голову, – успокоил его сидевший за столом президиума Петр Петрович Хузангай. – Хорошее стихотворение. Не смущайся.

С тех пор прошло много лет. И Порфирий Афанасьев уже не совсем «молодой» поэт (он автор четырех книг). И сегодня, глядя на его жизненный путь, очень легко представить себе, как мужал талант поэта, как он освобождался от наносного, школярского, как набирал силу его поэтический голос.

После нескольких лет трудовой деятельности П.Афанасьев выпускает первую книгу стихов «Черемшанские мотивы». Читатели и литературная общественность заговорили о «рождении» молодого поэта. Но для некоторых, кто внимательно следил за его творческим ростом, он уже тогда во многих отношениях был зрелым поэтом.

Правда, встречаются в этой книге и наивно-романтические строчки, написанные раньше, но не они определяю уровень поэзии Афанасьева того времени, а те стихи, что неразрывно связаны с жизнью народа, с судьбой Родины. А это характерно для большинства стихов книги. Чувство сопричастности к свершениям народа, к коллективному его труду пронизывает, например эти строки:

В жизни иного пути
я не знаю –
Мне так гореть бы,
как Сеспель горел.
И если мой труд не вызовет
признанья,
То я не достоин быть
ни комсомольцем,
ни поэтом.

(*Подстрочный перевод*).

Сказано резко, горячо, по-сеспелевски.

Такой же отчетливостью суждений и ясностью авторских позиций отличаются и многие другие стихи. Вот, например, стихотворение «Аргамак и всадник». Здесь осмысливается тема гражданской войны, тема революции. Для поколения поэтов, родившихся перед Великой Отечественной войной или в годы войны, эта тема была и остается близкой, потому что два героических периода в жизни народа – гражданская и Великая Отечественная войны - вполне сопоставимы. Душевные раны, нанесенные прошлой войной, а также героизм, мужество народа легко проецируются на период, описываемый П. Афанасьевым. Тут нелишне обратить внимание читателя и на такую мысль: конкретные примеры, связанные с прошлой войной, поэт перенес в эпоху гражданской войны. В результате приобрела ясность идея преемственности поколений, идея жизненности духовных сил народа.

Показательна в этом отношении поэма «Если живу», где лирический герой, поэт, стремится жить и трудиться так, чтобы быть достойным продолжателем дела безвременно погибших героев, чтобы воплотить в жизнь их мечту о свободной и счастливой жизни.

В 1980 году увидело свет новый сборник стихов П.А. Афанасьева «Свет изнутри». Тематика произведений, вошедших в эту книгу, в сущности осталась прежней. Темы Родины, любви и дружбы по-прежнему главенствуют в ней. Но вдумчивый читатель сразу замечает, как входит в стихи новый опыт в жизни, как расширился кругозор поэта. Неизбежные потери и приобретения, сопутствующие каждому из нас в жизни, закалили его. Поэт не живет вне общества и вне времени, читатель явственно ощущает в новых стихах и поэмах П. Афанасьева дыхание времени.

Известно, что цель поэзии – не развлекать читателя. А учить его думать. Наполнять готовностью идти вперед, расти. В этом смысле хочу назвать произведения Афанасьева, созданные в последние годы, в особенности уже получившие признание читателя поэмы «Хлеб» и «Сокол».

Творческой манере П. Афанасьева присуща лаконичность. Как и прежде, он избегает цветастых фраз, словесных украшений. Густая метафоричность – не его стихия. Зато много внимания поэт уделяет подбору точных слов усидчиво работает над строкой. В отличие от первой книги в новом сборнике немало стихотворений, сотканных из коротких строк. Это явный признак окрепшего таланта. Прочтите, например, стихи «Пылсирма», «Величальная», «Человеку нужно небо», «Пролетели журавли» и другие: здесь каждое слово на месте.

У П. Афанасьева крепкая основа. Будучи филологом по образованию, он впитал в себя лучшие традиции русской, советской и мировой классики. Его поэзия вскормлена живительными соками чувашского устного народной творчества. Вдохновляющим примером служат для него лучшие произведения классиков чувашской литературы Константина Иванова и Михаила Сеспеля, народных поэтов Чувашии Якова Ухсая, Педера Хузангая, Александра Алги, Стихвана Шавлы, безвременно ушедшего от нас Алексея Воробьева. В этом залог и будущих успехов поэта.

Юрий АЙДАШ.

(*«Советская Чувашия», 28 января,1982.*)

ПАРХАТАРЛĂ ПУРНĂÇ

Кашни çыннăн ĕмĕрĕ тĕрлĕ иртет. Пĕри тава тивĕçлĕ шутсăр нумай ĕç туса хăварать, теприн асăнмалăх пĕр ĕç те çук. Мĕн тума тума ĕлкĕрчĕ-ха пирĕн юратнă Пурхил иртнĕ çур ĕмĕр

тăршшĕнче? Тӳрех калар — нумай, питĕ нумай ырă та мухтава тивĕçлĕ ĕçсем турĕ. Хăйĕн сăнарлă, тарăн щухăшлă сăвви поэмисемпе, калавĕ-повеçĕсемпе чăвашсен паллă та ятлă поэчĕ пулса тăчĕ. Унăн иртнĕ кашни çулĕ ăслă, витĕмле, сулмаклă сăвăсемпе те поэмăсемпе, калавсемпе те повеçсемпе, драма произведенийĕсемпе шăлами тулса пычĕ. Сăмах та çук, кусем пурте пысăк та мухтавлă ĕçсем.

Василий ЮДИН.

1992 ç.

Хаклă Порфирий Васильевич!

Эсĕ, Пурхиль, ун чухне шăпах вунçиччĕри пуса каччи, Хусанти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцине пырса ĕçе ăнăçлă çыпăçрăн. Ман куç умĕнче ĕнерхи шкул ачинчен редакци литсотрудникĕ пулса тăтăн. Пĕр эрне хушшинчех эсĕ сăнарлă та яка çырма пултарнипе тĕлĕнтертĕн. Талант-самородок, тесе калаттăмăр пурте Сан пирки.

Унтан Эсĕ ши кайрăн, пи кайрăн. Татах тимлесе вĕрентĕн. Аслă вырăнсенче пултăн. Анчах халăхран уйрăлмарăн, Çĕр çинчех утса çӳретĕн. Пысăк писатель пулса тăтăн. Палăрмаллах хитре, ăслă, истории юлмалли паха кĕнекесем çырса кăлартăн.

Анчах та, эсĕ, Пурхил хăвăн вăрăм ĕмĕрӳнте мĕн тума пултарнин чĕрĕкне те туса çитермен-ха халиччен. Малашне татах та тухăçлăрах ĕçлессе шанатăп.

Ыталатăп.

Пиччӳ **К. ПЕТРОВ.**

20.II.92. Шупашкар.

УРХАМАХ

Порфирий Афанасьева

Йĕлмелĕ йĕлмисен сулхăнĕнче
Пĕр çын çапла каларĕ сан çинчен:
Вуннăсенче-тĕр, çав ача, Пурхи,
Ут утланса кайсаччĕ кĕтӳрен.
Ăна-мĕн илĕртнĕ колхоз çăрхи:
Лачкам тар килчĕ тепĕр сехетрен...
— Çук, терĕм эпĕ. — Ĕненес килмест...
— Мĕн ĕненес килмест? Хĕвелшĕн-туршăн:
Ăйрин ятне те астăватăп. Эверест.

Хуçасенчен сăмах та тиврĕ уншăн.
– Ман ĕненес килмест Пурхи таврăннине,
Мĕн-ма тесен, чăваш поэзине
Шăпах çав чаплă урхамахпала
Вăл çитрĕ чĕрĕк ĕмĕр каялла.
Вĕçсе кăна çӳрет халь çав Пегас,
Хуçи те унăн вĕçеве хавас:
Чăвашăн шухăшлав-уйлав тĕнчин
Чи çӳллĕ шĕврешкисенчен
Çилçунатпа пехил илсе тухса,
Халь хăй çĕн сăвă ăсталать хавхаланса.
Еçлет çĕрне-кунне пĕлмесĕр,
Ак мĕншĕн эпĕ тăтăм ĕненмесĕр...
– Каçар, тăванăм, – тет поэт ентешĕ, –
Сăмах йĕрне тӳрех тĕшмĕртейменшĕн.
Эппин, Пурхин вĕçтертĕр çилçуначĕ,
Парка ешертĕр сăвăç сачĕ,
Чи варринче çĕклентĕр çĕнĕ Эверест.
Эп çавăншăн хурап хĕрес.

Юрий СЕМЕНТЕР.
27.01.1992 ç.

О ТРАГЕДИИ «ИМЕНЕМ ТВОИМ»

Весьма характерным на пути поисков стал спектакль «Сан ятупа» («Именем твоим») П. Афанасьева. Пьеса продолжала традиции чувашской драматургии в отражении истории народа. После трагедии Я. Ухсая «Тудимер» (режиссер В. Яковлев, 1980 г.) в репертуаре театра долго не было подобных пьес. «Тудимер» во многом был традиционным и в постановочном отношении, и в актерской игре. При всех частных удачах постановка, по существу, не стала новым словом и в освоении национальной классики, и в искусстве театра.

Иное дело – «Именем твоим». Пьеса о гражданской войне, об установлении Советской власти, о борьбе противоборствующих сил на сцене Чувашского театра прошло немало. Историческая драма П. Афанасьева выделяется внутренним построением, своей поэзией. Дело не только в том, что пьеса написана превосходными стихами, а поэзия П. Афанасьева, как писал один из рецензентов, «прозрачна и звучна», но значительна и своей масштабностью, и философскими раздумьями. Автор ввел в пьесу

символические образы Земли, Времени, Любви, которые в исполнении актеров Н. Яковлевой, Н. Федорова, Л. Галимовой наделены силой обобщения, поэтичны, в то же время осязаемо реальны, ибо едва ли не на равных могли вести диалог с героями, становились близкими и понятными.

Ф. РОМАНОВА.

(«Театр, любимый народом», стр. 241-242).

* * *

Дорогой Порфирий Васильевич! Откровенно говоря, ты бы мог еще в прошлом году вместе с нами отметить свое 50-летие. Для этого тебе всего-то нужно было сделать малость – родиться на два месяца раньше. Мы, татарские, чувашские, башкирские, русские твои братья, явившиеся на несколько месяцев раньше тебя, кричали, плакали, окликали тебя, чтобы ты скорее родился. Но ты нас не услышал, ибо мы тогда еще не были поэтами, и наш голос не пронизывал преграды, время и расстояние. И ты, лежащий тогда под сердцем матери, тоже не был поэтом – не то услыхал бы нас и родился чуть раньше. Тем самым украсив ряды поэтов-сорокопервушников.

Говорят, что поэтом рождаются. Возможно. Но я больше верю в то, что поэта ваяет народ. Стихотворцев всегда пруд пруди. Стихоплетов и того больше, а вот поэтов – единицы. А ты, Порфирий дус, поэт! Твоен счастье детонирует в сердцах читателей радостью. Твоя слеза в глазах читателей кристаллизуется болью.

Недавно в Казани состоялось собрание землячества Черемшанского района – твоей родины. Все приглашались на глоток Черемшанской воды. Действительно, руководство района угощало каждого своего земляка глотком воды, привезенной из твоего района. В руках каждого была твои книги стихов на татарском языке, которая называется «Глоток Черемшанской воды», написанная с великой любовью к чувашскому народу. И твоя книга стала своеобразным талисманом вечера, объединявшим и татар, и чуваш, и русских.

Дорогой Порфирий! Это письмо я пишу в том знаменитом Доме Печати, в котором ты, будучи сотрудником «Хĕрлĕ ялав», спал на газетных подшивках, укрывшись газетами, и сладко мечтал о литературном служении чувашскому народу. И слава богу, твоя мечта сбылась – ты признанный поэт, драматург, переводчик и публицист, известный не только в Чувашии. Тебе я желаю всего того, чего желаю очень близкому для меня чувашско-

му народу – а именно: душевного спокойствия в дни ураганов, бурю чувств в любви, ежедневного, ежечасного, ежесекундного сошествия твой язык теплого как материнское молоко, доброго как земля, человечного слова.

Твой **Ренат ХАРИС.**

12 февраля 1992 г. Казань.

Уважаемый Порфирий Васильевич!

У меня нет и не может быть оснований возражать против перевода моей пьесы «Деньги для Марии», осуществленного Вами с русского на чувашский.

Соответствующее разрешение для ВААП Приволжскому отделению ВААП я выслал.

От души благодарю Вас за эту работу и желаю Вам всего самого доброго!

С уважение **В. РАСПУТИН.**

29 января 1980 г.

Дорогой Порфирий!

Вот и наступил твой праздник, немного грустный, о чем напоминает легкая седина в твоих черных волосах, светлый и радостный: ведь прожито немало, а главное – сделано немало а ниве чувашской литературы, на ниве братства!

Твои произведения знают и любят во многих уголках СНГ, но, мне кажется, у нас, на Черниговщине, они пользуются особым расположением.

Чувашское слово, твое слово, родное нам и близкое.

Желаю крепчайшего здоровья, новых стихов и драм, новых статей и выступлений! Желаю любви жены и детей, семейного благополучия!

Хочется чаще слышать твое слово, хочется чаше встречаться!

Будем надеяться на это!

Обнимаю

Твой украинский брат

Станислав РЕПЬЯХ.

г. Чернигов.

АХВАН ПУРХИЛĔН АСЛĂ ПИЛĔ

Çĕнĕ Йĕлмел савăнни Çарăмсанпа Сĕнче тăрăх инçе илтĕнчĕ пуле тетĕп. Шкулта – тăп-тулли халăх, керменре – тата ытларах. Чăнах та, савăлне çапма пулĕ-ха, анчах хĕсĕнсе маларах иртем тееймĕн. Кун чухлех çын пухăннине ку халлĕн курманччĕ-ха... Кермен умĕнчи пĕлтерĕвĕ те ячĕшĕн кăна пекчĕ: çырнă унта çинçе алăпа «Хамăр ентеш П.В. Афанасьевпа тĕлпулу пулать» тесе, вĕçĕнче яланхи пек концерт кăтартаççĕ» тесе хĕссе хунăччĕ. Вăхăчĕ çитрĕ те – алăкран алăка иртеймесĕр аптрарăм. Вĕтĕр-шакăр пур, яшши пур, карчăк-кĕрчĕк маларах иртсе ларнă, арçынсем – кайри ретсенче.

Ахван Пурхилĕ – Порфирий Васильевич Афанасьев, хаçатçă, тĕремен (редактор), чăваш халăх сăвăçи – Сĕнче çинчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралса ӳснĕ, вĕреннĕ, каярахпа тăван шкултах ачасене вĕрентнĕ. Халĕ вара ялта хăйне нихăçан тĕл пулман çынсем те пĕлеççĕ: вуланă, илтнĕ, хаçат-журналта курнă.

Чăваш чĕлхипе сăмахлăхĕн пӳлмекĕнче – ăна халалланă пысăк стендсем, альбом, кăтартмăш. Тĕл пулу валли алхапăл тукаласа пăрахнисем мар. Тĕрлĕ, пуян. Ман шутпа, П.В. Афанасьев çинчен кунти чухлĕ урăх ниçта та паха япала пухман-тăр. Унăн тăван килĕнче упраннă сăн ӳкерчĕксене, çырăвĕсене, хаçатсене илсе килнĕ, пит илемлĕн те управлăн вырнаçтарса хунă. Хăш-пĕр япалисем Порфирий Васильевичăн хăйĕн те çук пулĕ, мĕншĕн тесен аякра вĕренсе е ĕçлесе çӳренĕ чухне ачалăхра пулнисем хамăрпа асаилӳре çеç тăрса юлаççĕ. Кунта вара – çав вăхăтранах, мĕнле пулнă халлĕнех! Сайра хастарлăх. Курса тĕлĕнтĕм. Эпĕ ĕнтĕ таçти-таçти шкула та, музее те сăмса чиксе пăхнă çын, ăна-кăна кăштах тĕшмĕртетĕп. Ячĕшĕн тунă ĕçĕн те, чунпа-талантпа тăрăшнин те алă палли тӳрех курăнать. Николай Паймуратов вĕрентӳçĕ алли тирпейлĕ, капăр. Вăл кунта чăваш сăмахлăхне нумайранпа вĕрентет, тахçанах ырă ята тивĕçнĕ.

Унăн Ахван Пурхилĕ çинчен каланă ăслă сăмахĕсене чунчĕрепе хавхаланса итлерĕм.

«Ытла пысăклатса калаçатăр», иккĕленчĕ сăвăç. Вара уяв каçне ертсе пыракан Юрий Сементере çавра сăмахсем вырăнне сăвăсем калама ыйтрĕ. Лешĕ, аптрăса ӳкмесĕр сăвăласа та кĕвĕлесе хуравларĕ:

–Манăн-ши ку сăмахсем. Вĕсене Мускаври çав-çав сăвăçсем, Хусанта çав-çав тусу каланă. Шупашкарта кам-кам каланине аса илес пулсан, мана татах темиçе сехет кирлĕ пулать! – тет. Вара «Кам вăл чăваш?» сăввине татса сыпăкларĕ. Итлетĕп те, пит селĕм сăвви. Ахван Пурхилĕпе ăна вĕрентнĕ Паймурат Миккулĕ çинченех вĕт. Татах тепре çавра хушас пулсан, унта Йĕлмел

каччисен ячӗ сиксе тухатчех ӗнтӗ! «Мӗнле чӑваш? Тӗнче тӗлӗнмелле маттур чӑваш!» Чӑнах çапла, нимле урӑхла та мар.

Пиçнӗ çырла пек чипер хӗрупраçпа пуса каччилле маттур яш-кӗрӗм чаплӑ ентешӗн сӑввисене янӑратса каларӗ, юррисене шӑрантарса юрларӗ. Çавсене итленӗ хыççӑн тӑван шкула, тӑван яла Порфирий Васильевич пысӑк парне пиллесе пачӗ. Ку пил — виççӗр кӗнеке. Хӑй вулавӑшӗнчен. Хӑй вуласа ӳснисем, юлташӗтусӗ панисем. «Автографлӑ кӗнекесене тӗпчев архивӗсем хапӑлласа йышӑнаççӗ, кунта пани ытла йӳне лармӗ-ши?» — тетӗп сӑвӑçа. «Кунтах, кунтах пултӑр. Тӑван шкултан шанчӑкли тата ӑçта пур? Кунта ӳсрӗм. Ман хыççӑн татах маттуррисем ӳсчӗр!»

Компьютер самани çитрӗ пулсан та — кӗнеке вӑл кӗнекех! Çакна Чӑваш наци вулавӑшӑн директорӗ Зинаида Андреевна пӗр иккӗленмелле мар ӑнлантарса пачӗ. Вӑл та Çарӑмсан районӗпе Çӗн Йӗлмел ялне чаплӑ парнесемпе савӑнтарчӗ. Алӑпа кӑларнӑ юрӑ кӗнеки те пулчӗ çак хаваслӑ каçра, ӑна Николай Карлин кӗвӗ ӑсти Порфирий Афанасьев сӑввипе кӑларнӑ: Çӗнӗ Йӗлмеле халалланӑ вальс! Зоя Лисицына, Михаил Анисимов, Роза Степанова, Геннадий Тимофеев юрӑçсем пӗрремӗш хут халӑх умӗнче ӑна «вуласа» парсан, хамӑн ватӑ чунӑм та ташӑри пек çаврӑнчӗ. Çӗнӗӗлмелсем мӗн тери савӑнчӗç, амутке!

Куракан, вулакан, янӑракан кӗнекесем килчӗç Сӗнче таврашне Ахван Пурхилӗпе пӗрле. Вӗсем çӗтӗлсен çӗтӗлӗç, анчах тусанланса выртаймӗç. Вун-вун ача чунне çӳлӗк çинчен çӳле çӗклӗç.

Панӑ парне пӗтмест, пилленӗ кил сӳнмест.

«АЛӐПА ЧӐМӐРТАМАЛӐХ ÇЕÇ МАР-ХА...»

Сӗнче хӗрринчи Кивӗ Йӗлмелпе Çӗнӗ Йӗлмел ялӗсем — авалхи ялсем. Вӗсем кунта Çӗпрел хутлӑхӗнчен — унти Кивӗпе Çӗнӗ Йӗӗлмелсенчен куçса килнӗ тесе çыраççӗ таврапӗлӳçӗсем. «Тӑван халӑхӑн ырӑ йӑлисене ку тӑрӑхра урӑх вырӑнсенчен куçса килнӗ çынсем пуçарса янӑ. Ку вал XVIII-XIX ӗмӗрӗсенче пулма пултарнӑ. Çӗнӗ Йӗлмел ялӗ Çарӑмсан районӗнче (Тутарстан Республики) те пур. Çӗнӗ вырӑна ку ялтан куçса кайнӑ чӑвашсем (Ситукан, Хайтукан, Ильтукан) çак ял ятнех панӑ» (Н.А. Казаков). Тӑван ен — Çӗнӗ Йӗлмел, Ульяновск, 1996, 12 ен). Ялти ватӑсемпе калаçатӑп та, кунти çӗршыв — авалхи тӑван çӗр. Тахçан-тахçан куçса кайнӑ ватӑ мӑн асаттесем кайран тепре тӗп çӗрсене таврӑннӑ. Аслӑ Пӑлхар тапхӑрне лайӑх шӗкӗлчесен çак тӗрӗслӗх ним мар курӗнмалла. Пур-ха, пур, аваллӑхпа кӑсӑкланакансем. Ял историне çырма пуçланӑ, шкулта пуян музей никӗсленӗ.

Ăҫта ҫитсен те мана аваллăх паллисем хавхалантараççĕ. Инҫе ҫула тухиччен Алексей Трофимов академик, хăй те ку енче ҫуралса ӳснĕскер, авалхи палăк-кĕлеткесем ҫинчен ҫырнă паха кĕнекине кăтартса, ҫапла каларĕ: «Ҫĕнĕ Йĕлмеле кĕнĕ ҫĕртех, шыв урлă, икĕ масар. Пĕри ĕлĕкхи, чăн чăваш тĕнĕпе пурăннисем. Авалхи палăкĕсем упранса юлнă». Шупашкартан пирĕнтен маларах ҫитнĕ автобусрисем (пирĕн тимĕр лаша кăштах чăхăмларĕ те, эпир кая юлсарах ҫӳрерĕмĕр) масар ҫине ҫула маях кĕрсе пуҫ тайнă-мĕн. Эпĕ те халăхран юлас теменччĕ. Ыйтса пĕлтĕм. Ирĕк пачĕҫ. Вара ĕмĕрхи йăлана тытса, Шăнкăрчсем патĕнче (Лидия Ильдимировнăпа Николай Александровичсен газпа хутакан мунчинче) ҫăвăнтăм та, автансăр ялтисем патне ҫитсе куртăм.

Чăваш масарĕ пĕр тăвайккинче, крешĕнсен — тепринче. Тирпейлĕ. Алăкĕсем патĕнче — пӳртсем.

Ҫăва варрипе ҫулне хырнă. Чăн чăваш йăлисемпех пытараççĕ. Йăх-тăван масарĕсем чылаях пысăкланă. Юман е ҫăка юпасем умĕнче салам калакĕсем тирпейлĕ тăраççĕ. Юлашки вăхăтра пытарнисен йывăҫ палăксемпе пĕрлех гранитпа мрамортан тунă палăксем пур. Вĕсен хапхисене чăваш йăлипе хĕвел паллисемпе, ҫăлтăрпа илемлетнĕ. Хĕрес ӳкерчĕкĕ пĕрре те ҫук чăваш масарĕсенче. Пĕтĕм ҫăвипе те ун пек тĕслĕх курăнмарĕ. Ҫăвара йăх масарĕсене ĕлĕкрех хăмасемпе карталаса тухнă. Халĕ вара ытти ҫĕрти пекех — чĕнтĕрленĕ тимĕр картасем.

Кунта несĕлсене манмаççĕ. Кунта крешĕнсене те ятламаççĕ. Пулать тепĕр чухне чиркĕве сулăннисем чăн чăвашсене тиркешсе ҫĕтĕлни. Чăвашсем хирĕҫ хирĕлмеççĕ. Мĕншĕн? Хăвăра каярах хуратăр-им? — тетĕп. «Çук, пирĕн ĕненӳ апла тума хушмасть. Тĕнсем те, ҫынсем те тан. Турă пĕрре, Халăх тĕрлĕ, йăли тĕрлĕ». Ку сăмахсене пĕр-пĕр вĕрентӳҫĕ, ăсчах каланă тесе ан шутлăр. Вĕсене мана чăваш йăли-йĕркине кĕнеке вуласа панă пек пĕлсе калакан Ульха аппа (Ольга Владимировна Портнова) ăнлантарчĕ. Вăл ҫеҫ-те мар-ха...

Тĕнче пĕтнĕ чухне хам ҫуралнă тĕн алăпа чăмăртамалăх та пулмĕ, — тенĕ Аслă Турă. Турă чăваш тĕнĕпе ҫуралнă. Чăваш тĕнĕ пĕтмест. Тĕнче пĕтсен тин пĕтет вăл. Чăваш тĕнĕ пĕтсен тĕнче пĕтет.

— Хăш кĕнеке-хаҫатра вуласа пĕлтĕр кăна, Ульха аппа?

— Кĕнекерен мар, ваттисем каласа хăварнинчен. Ман аттеанне те, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те чăвашсем. Вăрҫма хушман, вăрлама хушман...

— Питрен ҫупса ярсан, тепĕр питне ҫавăрса памалла-тăр...

— Тăшмана парăнас пулмасть. Тăшманран сыхланас пулать.

— Мăсăльмансем пек темиҫе авланма, качча кайма юрать пулĕ-и?

– Манăн мăшăр 33 çулта вилчĕ. Эпĕ урăх çынна савмарăм. Чарма чарман никам та... Йăли хушмасть, ĕненĕвĕм хушмасть...

– Ача-пăча тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕ. Йывăр пулнă. (Сăмах май, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем вăр-вар ăшталанчĕç, пире сĕтел лартса парасшăн тăрăшатчĕç). Ача-пăчана итлеменшĕн çапма юрать-и?

– Çапма? Çапсан ача хăрать, чĕнми пулать, сивĕнсе хупăнать е чăрсăрланса пăсăлать... Сăмахпа, сăмахпа ăнлантармалла çынна! Ăшă та тĕрĕс сăмаха ухмах та ăнланать! Сапăр пулмалла. Çӳлти турă пире хирĕçсе пурăнма хушман...

Чăваш уявĕсем пирки сăмахласа кайрăмăр та, Ульха аппа такăнман шут ăсти пек каласа пачĕ:

– Раштав кăрлачăн 7-мĕшĕнче килет. Раштавран çăварни, уйăх çаврисене пăхса, кăçал 5 эрне кая юлчĕ, çитес çул 9 эрне, XXI ĕмĕрĕн пĕрремĕш çулĕнче – 7 эрне юлать. 2002 çулта каллех 5 эрнерен çитет. Пĕлесси кăткăс мар, ăна пире ачаллах лайăх ăнлантарса хăварнă...

Пикке Ильдирякова, Санькка Ситриванова ватăсем нумай астăваççĕ, – вĕсемпе калаçма сĕнет Ульха аппа. – Вĕсем ĕнтĕ 80 çулсенче, пĕлмен ваăрттăнлăх юлман ĕнтĕ...

...Студентсемпе рюкзак çакса çӳренĕ чухнех телейлĕччĕ, иçмасса! Шăрăх-и, йĕпе-и, калаçса татăлатăн та çамрăк гвардипе – утатăн юнашарти Хĕр ĕшнине, Йăвашкеле е Якаеле, Клементейпе Саминккене... Унтан вара Киремет, Ишлĕ, Кĕмĕл Çăл, Ясак, Акрель. Темшĕн вырăсла пек ятлă Лагерккăпа Сосновка та пирĕн çултан пăрăнса юлаймĕччĕç. Халĕ апла мар. Делегаци ертӳçи, культура шаралăхĕн тӳри Михаил Краснов хушать те çавçав вăхăта кустăрма çинче пулма, часрах тухса чупатăн. Васканипе хăш тăкăрлăкпа кайсан тӳрĕ пулассине те пĕлместĕн. Вара хирĕç пулнă çынсенчен ыйтатăн. Лешсем малтан пит вашаватлăн сывлăх сунаççĕ те:

– Пыллă çырма урлă каçмалла, ак çакăнтан, – теççĕ. Вара хăйсемех алăран çавăтнă пек çитерсе хăвараççĕ, алла хытă чăмăртаса, ырă çул сунаççĕ. «Пĕлместĕп, вăхăт çук, васкатăп!» – текен çын Çĕнĕ Йĕлмелре тĕл пулмарăм.

Лăпкă, кăмăллă, вашават та ăслă Ахван Пурхилĕ сăвăç çакăнта кăна çуралса ӳсме пултарнă. Урăх ниçта та мар.

Виталий СТАНЬЯЛ.

25-26, пуш, 1999, Çарăмсан хутлăхĕ.

ШУХĂША ЯРАÇÇĔ, АСРА ЮЛАÇÇĔ

Каçхине, йăмралла чăваш ялĕнче тĕл пулатпăр Порфирий Афанасьевăн «Сан ятупа» сăвăлла трагедийĕнчи вĕри чун-чĕреллĕ, шухă кăмăл-туйăмлă, романтикăлла геройсемпе. Якурпа Çĕр (хĕрарăм); Вăхăт (йĕкĕт), Юрату (çамрăк хĕр) калаçăвĕ умра тĕлĕнмелле пысăк ĕçсем, халиччен пĕлмен пулăмсем, пуррине систерет.

Драмăлла произведени вуланăçемĕн сисмесĕрех куç пăвма тапратать. Граждан вăрçи пынă тапхăрти хирĕç-тăрусен, тĕлли-паллисĕр хутшăнусен, хĕрӳллĕ кĕрешӳ юхăмне кĕрсе каятпăр. Ялти халăх, автор калашле, икĕ сие пайланнă. Хресчен ĕнси çинче çăткăн пăван пек ларакан Сапрунпа унăн хӳрешкисем тин çеç вăй илсе пыракан Совет влаçне пĕтерсе хума каварлашаççĕ, активистсене тĕп тума хĕрĕнеççĕ, ял çыннисене улталаса тĕрĕс çултан пăрса яма хăтланаççĕ: Сапрунăн тымарĕ тарăн-ха, мулĕç иксĕлми, халăхра ячĕ-шывĕ пур. Вăл, ылтăн-кĕмĕл сассипе астарса, элеклĕ сăмахпа ăспуçа пăтратса, Ермипе Пăрттаса, Ванюрккана, куштансемпе айван çамрăксене хăй серепине тытасшăн. Иоанн пачăшкăпа есаул та, Аскольд полковник те — кулакăн вăра-хурахла тусĕсем.

Сикчĕллĕ те хăрушă саманара лару-тăру çăмăл мар. Хаяр кĕрешӳре пиçĕхсе туптанма тивет Якурпа Котельникова, Чĕкеçпе Улюка, Ухливанпа Ахахпие тата ытти активистсене.

Çĕр улпучĕн хĕрĕ Ахахпи уйрăмах хăйне майлă сăнар. Иккĕленӳлĕхпе терт-инкек, юрату асапĕ урлă чăнлăх, уçăмлăх, ырăлăх еннелле туртăнать вăл. Малтанах пархатарлă геройсен çутă ĕмĕчĕтĕллевĕсене тарăннăн ăнланса илеймест, ăша хываймасть вăл, ăна чĕрери вутлă туйăм суккăрлатать, алли-урине çыхса лартать. Çавна пула хăй сисмесĕрех юсама май çук йăнăшсем, юрăхсăр утăмсем тăвать: Сапрунăн элеклĕ-ултавлă сăмахĕпе пуçне минретсе, юрату наркăмăшĕпе анраса, Ванюрккаран Ермипе Пăрттасăн киревсĕр шухăшне пурнăçлама — халăх тырри упранакан кĕлете вут тĕртме ыйтать, çапла майпа ăна вилĕм лачакине тĕртет:

Кунтан тухсан,
Ермипеле Пăрттас сана тĕл пулĕç,
Итле паян вĕсем мĕн хушнине,
Вĕсем ахаль хăвармĕç. Лайăх тӳлĕç.

Сцена хыççăн сцена. Çынсен, ĕçсен, шухăшсен, вăйсен хирĕçтăрăвĕсем. Маларах пĕр-пĕринчен ытлашши уйрăлса тăман пек туйăнакан сăнарсенче хăйне евĕрлĕ енсем, вĕсен шалти тĕнчин-

чи вăрттăнлăхсем курăмлăрах палăрма тапратаççĕ. Кашнин калаçăвĕ те, хăтланкаларăшĕ те, пурнăç екки те урăхлараххи пĕрпĕтĕмĕшле сюжет аталанăвне интереслĕ уçăмлăх та кăткăс тавçăру туйăмĕ кĕртет.

Акă, каçкӳлĕм тенкел çинче чун савнă Чĕкеçпе ăшшăн калаçса ларать Ухливан. Каччăпа хĕр хăйсен чун-чĕринчи таса та çепĕç юратăвĕ, пулас ырă пурнăçĕ пирки ĕмĕтленеççĕ. Анчах халлĕхе кашни утăмра тенĕ пекех тăшман серепи, ултавĕ, тискерлĕхĕ. Шуррисем кунталла тапăнса килеççĕ тата.

Çамрăксем ял Советне кĕреççĕ... çиçĕм çиçет... пăшал сасси. Кантăка çĕмĕрсе кĕнĕ пуля качча урайне ӳкерет... Яланлăхах! Ĕмĕт те, юрату та ĕмĕрлĕхех татăлаççĕ.

Шутсăр йывăр килет Якура çавнашкал лару-тăрура чухăнсене пĕр чăмăра пĕрлештерме, вĕсене татăклă кĕрешĕве çĕкленме! Каччă пурнăçра ăна-кăна курма-тӳсме ĕлкĕрнĕ этем: матросра çӳренĕ. Чистай таврашĕнче мал ĕмĕтлĕ çынсемпе пĕрле пулнă, Совет влаçĕшĕн çапăçнă. Унăн çĕнни çĕнтертĕр, кивви пăчлантăр тесе, пайтах вăй-хал хума, вилĕм умĕнче тăма лекет. Калама çук тертлĕ-нушаллă самант килсе çапсан, чухăнсемпе канашлать вăл, романтикăлла гсройсенчен те пулăшу ыйтать, пуянсем умне çивĕч ыйтусем тăратма та хăраса тăмасть. Ку тĕлĕшпе Иоанн пуппа Сапрун кулака ял Советне чĕнтерни уйрăмах витĕмлĕ сцена.

Ялти хире-хирĕçле сийсем хушшинчи ĕçсем хĕрсе, çулăмланса, сарăлса пыраççĕ, произведенири кульминаци тӳпинелле хăпараççĕ. Ку кĕтесе Есаулпа Аскольд полковник вăрттăн килсе çитни çынсен хутшăнăвĕсене те, кĕрлевлĕ-шавлă пурнăçа та пăтраштарса ярать, юрату драматизмне кăткăслатать. Кунти, çĕнĕ йăла-йĕркене аркатма, Совет влаçне тĕп тума çар илсе килекен полковник тахçан Ахахпи савнийĕ пулнă-çке. Вилнĕ тесе шутланă ăна хĕр. Анчах ăшра Якур еткерĕ те чĕм илет. Çухалса каять Ахахпи, халичченхи йăнăшсене виççе-шайлаштарса пăхса, хурланать, ӳкĕнет.

Çак хушăра Сапрун пӳртĕнче тăшмансем хăрушă кавар тăваççĕ. Таврара вăхăтлăх çĕнтерӳпе савăннă шурă гвардеецсем алхасаççĕ. Вăйсем тан мар пирки Якурпа унăн шанчăклă çыннисем вăрмана тарса пытанă. Тилĕ пек чееленсе, Сапрунпа Аскольд Ахахпие хăйсем енне çавăрасшăн: хура халăха хирĕç тăратасшăн, ун урлă Якурпа тусĕсем ăçта иккенне пĕлесшĕн.

Ахахпи халĕ малтанхи мар ĕнтĕ, Якур утакан хаяр кĕрешӳпе тивлетлĕ çĕнтерӳ çулĕ ытларах хăй енне туртать ăна:

Пуçкасансем эсир...
Пĕр ăслă-чунлă
Этем те çук халь сирĕн хушăрта.

Ан тĕкĕн эс мана. Аллу сан —
юнлă,
Сип-сивĕ ик тăхлан
ик куçунта!

Сăхă та чее çав тăшман. Аскольд çыннисем, вăрмана васкакан Ахахпи хыççăн курăни-курăнми йĕрлесе пырса, Якурпа унăн тусĕсем патне çитсе тухаççĕ. Тыткăнри Якурпа унăн тăшманĕ Аскольд хушшинчи çивĕч те татăклă калаçу шухăша ярать, хумхантарать. Чăн-чăн кĕрешӳçĕ Якур вилĕм умĕнче те этем чысне, революци тивĕçне çӳлте тытать.

Котельников хăйĕн çарĕпе килсе çитнĕ çĕре шурă салтаксем ялтан тухса тараççĕ. Питĕ шел, Аскольд револьверпа персе суранлатнă Якур ĕмĕрлĕхех куçне хупать. Тарçăра пусмăрпа асап тӳссе пурăнакан Улюка та курайманлăх туйăмĕ ал-хапăл çавăрса ярать. Вăл пăтаран çакăнса тăракан пăшала илет те хăйне хĕн кăтартакан хуçана, ĕмĕтсĕр Сапруна кĕрĕслеттерет.

Хĕрлĕ армеецсем тăшмана хăвалаççĕ. Кĕрешӳ вĕçленмен-ха. Пурнăç малалла пырать: улшăнать, çĕнелет, чаплăланать. Ахахпи аллинчи ача та — вĕçĕмсĕр чĕрĕлĕхĕн, çутă пуласлăхăн символла сăнарĕ.

Порфирий Афанасьевăн «Сан ятупа» сăвăлла трагедийĕ — граждан вăрçи вăхăтĕнче, 1918 çулта чăваш ялĕнче пулса иртекен хирĕçтăруллă ĕçсене сăнлакан ăнăçлă произведенисенчен пĕри. Сюжет аталанăвĕпе те, композици йĕрĕ-сумĕпе те, геройсен сăнарлăхĕпе те кăмăла тыткăнлать, чун-чĕрене çатăрласа илет вăл. Истори чăнлăхĕ те, ялти çынсен тĕрлĕ сийĕсем хушшинчи çыхăнусем те виçеллĕ те вырăнлă, витĕмлĕ та курăмлă кунта. Романтикăлла геройсемпе чăн-чăн обществăри çынсен хутшăнăвĕсене те ĕненес килет. Вĕсем пĕр-пĕр сценăна пуянлатма, шухăша сарса тарăнлатма хăйне евĕрлĕ ремаркăсем пек пулăшаççĕ. Анчах трагедире хушăран вĕçне çитиех якатса, шайлаштарса çитерейменнисем те, тăсарах кайнă сыпăксем те, пĕр кĕвĕллĕн шăрçаланса вĕçленмен йĕркесем те курăнкалаççĕ. Вуланă е спектакль курнă чухне вĕсем питех сисĕнмеççĕ те.

Пĕтĕмĕшпе илсен, Порфирий Афанасьевăн сăвăлла трагедийĕ — чăваш литературинче тарăн йĕр хăваракан произведени.

«Хĕвел хапхи» кĕнеке — унăн пултарулăхĕнчи тепĕр ăнăçлă утăм. Паянхи кунçул таппипе вăхăт туйăмĕ уççăн сисĕнет унта кĕртнĕ сăвăсемпе поэмăра. «Кăнтăр сăввисем» тата «Тĕл пулăп-и сана тепре» ярăмсем «Хĕвел хапхи» поэма умĕн ăста шăрçаласа лартнă увертюра пек туйăнаççĕ. Патриотизмла пафос та, гражданла витĕмлĕх те, лирикăлла çепĕçлĕх те, философиллĕ пĕтĕмлетӳсем те сахал мар вĕсенче.

«Хĕвел хапхи» — кĕнекене хӳхĕмлĕх, стайлăх, кĕрнеклĕх кӳрекен эпикăлла поэма. Ку поэмăн сюжет тытăмĕ те, композици

кăшкарĕ те раснарах. Автор унăн тĕп шăнăрне лирикăлла çаврăмсенчи шухăшсемпе аталантарса, çирĕплетсе, илем кĕртсе пыма тăрăшать, сăнарсене тĕрлĕ енлĕн те туллин уçса кăтартма майсем тупать, Аслă Отечественнăй вăрçăпа паянхи куна çитиччен-хи тапхăра сăнланă унта. Пирвайхи сыпăкранах тĕп геройсемпе паллашатпăр та поэма вĕçлениччен-ех вĕсемпе пĕрле кулянатпăр, савăнатпăр, тарăхатпăр, чылай çĕре çитсе куратпăр.

Камсем-ха вĕсем, Мускавран пуйăспа çула тухакансем? Лирикăлла герой, иртнĕ вăрçă ветеранĕ Исмет Кондрашкин, «Правда» хаçат корреспонденчĕ Вадим Романыч тата Махмуд фотограф. Тĕлĕнмелле тĕлпулу! Ара, хăнасем чăвашсем патне, Арккуш Артак патне килеççĕ иккен. Вĕсене колхоз председателĕн, ялйышăн ĕçĕ-хĕлĕ кăсăклантарать. Ку ял — Исмет пиччепе лирикăлла герой ялĕ.

Пĕр шутласан, ку сенсаци, тейĕн. Исмет пиччепе Палля Артак иртнĕ вăрçăра нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăрăн çапăçнă. Пĕр атакăра, ентешне вилĕмрен çăлса, Палля пичче хăй пуçне хунă. Кондрашкин пĕр урине çухатса таврăннă вут-çулăм хирĕнчен. Палля ывăлĕ — Арккуш паянхи ял сăн-сăпатне, çынсен пурнăçне лайăхлатас, çĕнетес тесе, ырми-канми тăрăшать, пĕтĕм вăй-хăватне парать.

«Самана çынни, чăн-чăн паттăр-çĕнтерӳçĕ», — тесе хаклать Арккуш Артака поэт.

Тĕрлĕ тапхăрти самана паллисене сăнланă чухне лирикăлла герой та ӳссе пырать. Çакна вăл вăтам шкула çӳренине, лесничи хĕрĕпе Светланăпа тĕл пулнине, институтра вĕреннине, учительте, каярахпа райхаçат редакцийĕнче ĕçленине çутатса паракан сыпăксене вуласан ĕненетпĕр. Шăпах çав тапхăрсенче кукурузăна пуççапнă, трибуна умĕнче сĕт çырмисем çинчен кăшкăрашнă, тепĕртакран пĕр вырăнта тапăртатма тапратнă бюрократсемпе тăмсайсем ячĕпе мухтав юрри шăрантарнă. Çиивĕччĕн питлет автор ун йышши пăтăрмахсене!

Радио пултаруллă та пуçаруллă председателе Арккуш Артака Социализмла ĕç Геройĕ ятне пани çинчен пĕлтерет. Çапла вĕçленет поэма. Порфирий Афанасьев унта паянхи пурнăçри çĕнĕлĕхсемпе улшăнусене, чăн-чăн художник куçĕпе курса, ĕнентерӳллĕн те сăнарлăн çырса кăтартма пикеннĕ, вулакансене каннăç паман ыйтусене хускатнă.

«Хĕвел хапхи» — çĕнетӳ тапхăрĕнчи актуаллă задачăсене ăнăçлă татса пама йыхăракан, кĕрешĕве чĕнекен сумлă публицистикăлла поэма. Вăл вулакансене, уйрăмах çамрăксене, воспитани парас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Юрий ВИРЪЯЛ.

(*«Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1988 çул, 202 №*)

«...МАН ПУРНĂÇ МАЛАШНЕ САН ЯТУПА»

Сцена пĕр енче – хĕрлĕ ялав, тепĕр енче – кивĕ пурнăç юлашкине сăнлакан чиркӳ тăрри. Икĕ енĕпе – талккăшпех тĕксĕм хăмăр, чуна пăркăчлакан хуралтăсем. Аслати çĕре кисрентермелле авăтса, шарлаттарса çумăр çуса ярассăн туйăнать. Аякри çутăри ял сăнĕ кăна чун кĕртет куракана. Çапла, артистсем пирĕн ума тухиччен малтан çакна кăна куратпăр-ха эпир. Анчах çав пăчă сывлăшра хамăрăн шалти туйăмпа та пулин эпир пĕр-пĕр трагеди пуçланса каясса сисетпĕр.

«Сан ятупа» спектакле РСФСР халăх артисчĕ, Чăваш академи драма театрĕн тĕп режиссерĕ Валерий Яковлев лартнă. Ленинград художникĕ Станислав Кошкин илемлетнĕ. Юрри-кĕввисене К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство премийĕн лауреачĕ Федор Васильев композитор çырнă. Пьеса авторĕ пирки те эпир сахал мар илтнĕ. Ку вăл – Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ Порфирий Афанасьев. Сăмах май, асăннă сăвăлла трагеди – авторăн драма жанрĕпе çырнă пĕрремĕш ĕçĕ.

Спектакльти хирĕçӳлĕх Совет влаçĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕрешекенсемпе (Якур, Ухливан) вĕсене ура хурса пыракан, Советсене тӳсме пултарайман пуянсем (Сапрун, Иоанн пуп, Пăрттас тата Ерми) хушшинче пулса иртет. Çав вăхăтрах çакă кăна тытса тăрать-и-ха пьесăпа спектаклĕн тĕп шăнăрне? Çук, çакă кăна мар.

Спектакль тĕп тĕрекĕ – Ахахпи, вăл çĕнелсе улшăнни. Спектакльте ăна Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки В. Трифонова тата Н. Кириллова сăнарлаççĕ.

Тӳрех калăпăр, Ахахпие аса илтерекен хăюллă хĕр сăнарĕсем пирĕн литературăра çук мар. Анчах Ахахпи лару-тăрăвĕнчи пек чĕрĕ (хăйне май кăткăс та!) геройсем çук. Мĕнре-ха çак сăнарăн хăйнеевĕрлĕхĕ? Мĕне пула çав тери терт-асап тӳсме тивет унăн?

Спектакльти ĕçсем граждан вăрçи вăхăтĕнчи пĕр чăваш ялĕнче, Анаткасра, пулса иртеççĕ. Ытти çĕрти пекех, кунта та Совет влаçне тытса пыракан ял Совечĕпе (Якур, Ухливан) ăна ĕненсе, шанса пурăнакан юрлă халăх, çĕнĕ влаçа тӳсме пултарайман пуянсем пур.

Лару-тăру йывăр. Ирĕке тухса тин çеç хаш сывласа янă халăха пĕр хуçалăха пĕтĕçтермелле, пур-çук тырпула пухса, çуракине хатĕрленмелле. Çав вăхăтрах сапрунсем те алла усса лармаççĕ: Якур пек (В. Семенов артист) хĕрӳ чĕреллĕ хастарсене тĕп тума кавар тăваççĕ, халь-халь шуррисем килсе кĕрессе чăтăмсăрăн кĕтеççĕ. Шăп çак вăхăтра çитет те яла Ахахпи. Анчах хăй ирĕкĕпе мар иккен. Якур пек çăлтăр куçлисене «çаклатса» вĕри çатма çинче ташлаттарма ăна Сапрун тăванĕ чĕнсе илнĕ.

Пуян килйьппра çуралса ӳснĕ Ахахпишĕн çамрăк каччӑна юрату серепине çаклатас ĕç чалт! Сурмалăх çеç. Çапла туйăмсуйăмпа тухать вăл пирĕн ума чи малтанах. Таса, хитре çийĕпуçĕнчен ытла Ахахпи мăнкăмăллăн уткалани куçа çиет. Ют планета çинчен аннă тĕлĕнтермĕш тейĕн. Чĕкеçĕн (В. Иванова артистка) чĕререн тухакан сăмахĕсем те витмеççĕ ăна. Çĕмĕрт çеçкипе те иленеймест вăл, ăна çĕрелле пĕр шеллемесĕр вăркăнтарать. Ял хĕрринчи вăйăран илтĕнекен çепĕç кĕвĕ пĕр самант тыткăнлать пек Ахахпие. Эккей, ытлашши тутă пурнăç е пурнăçри ытти пăтăрмах сисĕнмеллех хытарнă-мĕн хĕр чунне. Çавăн пек шухăшлать куракан. Çак чун хытăлăхĕ уйрăмах Н. Кириллова Ахахпийĕнче сисĕнет. Тимĕр тылă пек халь-халь тыллама пуçлас пек унталла та кунталла, пĕр тĕллевсĕр-мĕнсĕр уткалать вăл. Темле, пĕр чуна вырнаçайми тарăху-çĕтĕлӳпе тулнă пек çак сăнар.

Якур... Ăна пуçласа курать халь кăна хăйне хăй çурса пăрахасла çӳренĕ пике. Курать те, тин çеç тĕнче çути курнăн çуталса каять. Ĕнтĕ хăй ку яла мĕн ĕçпе килни те тĕтреленсе, çухалса пырать. Ун умĕнче — Якур кăна. Революцишĕн тăрать-и çак яш, е урăхла хака тивĕç-и — Ахахпишĕн пурпĕрех. Каçсерен унпала кăна тĕл пуласчĕ Ахахпин, Сапрун каварĕ — харама. Анчах тăшман та çывăрмасть. Ял халăхĕ Якура айăплатăр тесе, Сапрун Ванюркка чухăна (А. Павлов артист) пур çук тырпуллă кĕлĕте вут тĕртме чуптарать. Кĕлете çунтарса яма пултарсан, Ахахпи ĕмĕрлĕхех Ванюркkан пулать имĕш. Хăй мĕн тери айăплине Ванюркка вилĕмĕ хыççăн тин тĕшмĕртет ку таранччен сисмесĕрех Сапрун кăмăлĕпе пурăннă хĕрупраç... Макăрас — куççулĕ тухмасть. Якур патне чупас — ăнланĕ-ши вăл ăна? Ахахпи яла хăй ирĕкĕпе килменнине Якур пĕлмест-çке-ха? Ванюркка вилĕмĕ унран килнине те чухламасть Якур, хăй савнине ырă чун, таса чун вырăнне хурса юратать.

Хăйĕн çинчен Якура ку таранччен те тĕппи-йĕркипе каласа пама хал çитерейменни Ахахпие уртарса ярас патнех çитерет.

Çак вĕресе тăракан характера В. Трифонова та, нумаях пулмасть Щепкин ячĕпе хисепленекен училищĕрен вĕренсе килнĕ Н. Кириллова çамрăк артистка та кашни хăйне май интереслĕ, витĕмлĕ кăтартаççĕ. Енчен те В. Трифонова Ахахпийĕ куракан кăмăлне ытларах пуçа çавăрса ямалла ачашлăх-çепĕçлĕхпе, сăпайлăхпа тыткăнлать пулсан, унран кĕçĕнрех тантăшĕн, Н. Кириллован сăнарĕ ытларах арçынла çирĕплĕхпе, тапса тăран хĕрӳлĕхĕпе палăрса тăрать.

Пăхăр-ха, епле тăн кĕртеççĕ вĕсем куç умĕнчех Сапруна (П. Иванов артист). Ахахпи Якур сăмахĕсемпех перкелешни, çитменнине ăна хӳтĕлесе, кил хуçине ним вырăнне хумасăр калаçни çĕрме пуяна виçесĕр тарăхтарать. Анчах Ахахпи ашшĕ хăйĕнчен пуян,

ятлăрах пуян пулнине асрах тытса тăрать кил хуçи, пăшалпа хăмсарнисĕр пуçне, урăх нимĕн те тăваймасть.

Сăнарăн чылай енĕ курăнма пултарать ку хĕрӳ сценăра: унăн характерĕ те, тĕнче курăмĕ те, малашнехи шухăш-кăмăлĕ еплерех йĕркеленме пултарасси те. Ăна та, кăна та кашни хăй пĕлнĕ пек палăртаççĕ артисткăсем. Мĕн чухлĕ курайманлăх, чăнлăха шырани В. Трифонова Ахахпийĕнче, çав вăхăтрах мĕн чухлĕ хăй патне туртакан çепĕçлĕх, юрату.

Ахахпи юратăвĕ çунтарса ярасла хĕрӳ. Енчен те вăл сӳнекен кăвар пек тĕлкĕшнĕ пулсан, Аскольда (РСФСР халăх артисчĕ В. Яковлев) çынçиене кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илĕччĕ-ши?

Хăш çулпа каймалла халь Ахахпин? Е Аскольд ылтăнĕпе витĕнмелле, е вĕçне çитиех — Якурпа? Паллах, малтанхи шанчăклăрах, анчах Якур?..

Шăп çак иккĕленӳллĕ самантра Ахахпи патне пурнăç тыткăчине пĕтĕмлетекен виçĕ символла сăнар — Çĕр (РСФСР тава тивĕçлĕ артистки Н. Яковлева), Вăхăт (В. Федоров артист), Юрату (Л. Галимова, Н. Воюцкая артисткăсем) килсе тухаççĕ. Çук, малтанхи тĕлпулусенчи пек савăккăн тинкермеççĕ вĕсем ун çине. Ӳпкевлĕн сăнаççĕ. Вĕсем ӳпкевлени — Ахахпишĕн чи хăрушши.

Хăй Якура тивĕçлине тĕрĕслесе пăхма юлашки хут йăлăнса ыйтать Ахахпи: «Туртса ан ил ман пурнăçа халех», тет. Енчен те вĕсен шанăçне паянах тивĕçтерейместĕн, ыран пĕтĕм тĕнче, çĕр çинчи чыслăхпа тасалăх ун питне кĕççе çĕлессе нихçанхинчен те вăйлăрах туять вăл. Ку утăм характера чи çӳллĕ пусăма çĕклет. Якура вăлтана çаклатма килнĕ хĕр, савнийĕ пулăшнипе, ăна тивĕçлĕ мăшăр пулас тесе ăнтăлса, пурнăç тĕрĕслĕхĕшĕн çапăçма хатĕр сăнар пулса тăрать. Малтан тĕлсĕр-палсăр чуптарнă шухăшкăмăл халь пĕр çĕрелле кăна кайма тивĕç: Якур тĕпренчĕкне çын тумалла, уншăн пурăнмалла пулас амăшĕн, Ахахпин. Хальхи сăмахĕ унăн çĕр çинчи чи таса чуна, пулас пĕчĕк Якурне:

«Каçар, пепкем, тăрлавсăр аннӳне.
Сана манса хăтлантăм ухмахла.
Ӳс, ман хĕвелĕм, чăн-чăн паттăрла.
Ӳссе çитсен, ăнланакан пулсан,
Эп паянхи çинчен сана пĕлтерĕп.
Енчен эс аннӳне каçармасан,
Ун чух эп вилĕме тепре чĕнтерĕп.
Çӳре çĕр тăрăх çирĕп утăмпа,
Ман пурнăç малашне сан ятупа».

Спектакль вĕçĕнче Ахахпипе Якур тĕлпулăвĕ чуна татса илесле чĕпĕтет. Текех икĕ юратнă чуна нимĕн те уйăрса тăмасть, анчах темшĕн-çке Нарспипе Сетнер, Ромеопа Джульеттăн телейсĕр шăпи аса килсе тăрать. Сăмах май, çакă чуна тивекен илемлĕ

кĕвĕрен те нумай килет. Тем те пур çав кĕвĕре, анчах чуна хытă çӳçентерекенни – юрату сарăмсăр татăласса систерни. Ахахпи хыççăн чăтлăхалла йĕрлесе çитнĕ Аскольд эшкерĕ Якура кĕтмен çĕртен хупăрласа илет. Тин çеç Ахахпин чун тасалăхне шанма пуçланă куракан самантрах ахлатса ярать, Ахахпие сутăнчăк, хăй сăмахне тытайман çын, теме пăхать. Каярахпа тин, савнă Якурĕ патне ниме пăхмасăр ăнтăланакан Ахахпие шурă салтаксем хăйсемех йĕрленине пĕлсен, яланлăхах ĕненме пуçлать Ахахпие.

Спектакльти Якур, тĕп героиньăпа танлаштарсан, пысăк пĕлтерĕшлех пулайман. Çапла, çĕнĕ пурнăçа йĕркелесе пырать вăл. Пухусем, канашлусем ирттерет. Унăн вутлă сăмахĕ (пьеса ĕнентернĕ тăрăх) хăшпĕр иккĕленекен хресченсен туртине пачах урăх еннелле, кирлĕ çĕрелле çавăрса яма пултарать имĕш.

Революци идейисем, ял халăхĕн пурнăçне çĕнĕлле йĕркелесе ярасси – çаксем кăна вăй парса тăраççĕ ăна. Юратусăр пултарĕччĕ-и, тен, вăл, анчах революци ĕçĕсĕр – çук. Ахахпи çине малтанах куç хывнă пулин те, çав вăрттăн ĕмекен туйăма хăй чун-чĕринчен май пур таран хăвалать Якур. Анчах кăлăхах...

Пĕтĕмĕшпе илсен, сăнар уçăмлă. Çапах та темшĕн ĕнентереймест вăл: типпĕн пуçланать – типпĕнех сӳнет. Сăлтавĕ пĕрре - геройăн чун ыратăвĕпе савăнăçне çителĕклĕ уçса парайманни. Çакăн валли вара пьеса материалĕ çук мар.

Спектаклĕн юлашки сыпăкĕнчи Якур вилĕмĕ, чăн та, чуна хускатать. Тахçан курнă кинокадра аса илтерет. Якурта темĕнле асамлă, хăватлă вăй пурри сисĕнме пуçлать. Анчах сăнарăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕпе ниепле те çыхăнтарма май çук ăна.

Пирĕн шутпа, спектаклĕн малтанхи çул-йĕрĕ вăрăм та тулăхлă пултăр тесен, чи малтанах çак сăнара вăйлатмалла.

Якур пирки каланă май, çакна та палăртса хăварас килет. Пирус хыптарни кирлех-ши çак героя? Аса илер-ха Çинави (Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисткисем А. Кутузова, А. Смелова) хӳхлесе макăрнă сценăна. Ăна лăплантарас тенĕ пек, Якур юнашар вырнаçать. Пирусне çăварĕнчен кăлармасăрах пурин çинчен те пуплесе ĕлкĕрĕт. Мĕн пирки шухăшламалла-ха кураканăн: Çинавие хĕрхенмелле е Якур çăварĕнчен пирус тухса ан ӳктĕр тесе пăхса лармалла?

Е тата Якур аллинчи йăлăхтармăш уçăсем пирки. Аса илер-ха Ахахпипе Якур пĕр-пĕрне юратса тĕл пулнă пирвайхи каçа. Савнă мăшăр пĕр-пĕринчен куçне илеймест, пурин çинчен манса юрату авăрне чăмать. Унччен те пулмасть Якур аллинчи чăнкăр-чанкăр уçă çыххи пĕтĕмпех пĕтерсе хурать. Куракан чун-чĕрине вырнаçа пуçланă илемлĕ туйăм вĕлт çеç тухса вĕçет.

Премьерăн асра юлакан саманчĕсенчен пĕри – Чĕкеçпе Ванюркка калаçăвĕ. Пĕр шутласан, ниме тăман сцена темелле. Ан-

чах мĕн чухлĕ туйăм кунта. Революцин малтанхи çулĕсенчи чăвашăн, унăн тĕнчин сыпăкĕ хăй тухса тăрать, тейĕн. Пĕр ытлашши сăмах та, хумхану та çук.

Чĕкеç ытти сценăсенче те, тĕпрен илсен, аванах курăнать. Сасси те, хăйне тыткаласси те ăмсанмалла. Апла пулин те, Ухливанпа калаçнă чухнехи Чĕкеçе сахалтарах нăйкăштарас килет.

Спектаклĕн тепĕр ăнăçăвĕ вăл — Ухливан (Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Ю. Кольцов). Пĕр хăма тăрăх утнă пек, саркаланмасăр, аллисемпе сулкалашмасăр çӳрет вăл сцена çинче. Çинави инкекне те, Якурпа танлаштарсан, тарăнрах ăнланать. Аса илерха тата Ухливанăн аманас умĕнхи монологне. Хăйĕн юратăвĕ — Чĕкеç пирки епле хитре айванлăхпа, хăй хăюлăхĕнчен хăй вăтаннăн каласа парать вăл. Çав хĕрӳ туйăм шалтан (сăмах халлĕн е ытти майпа) сăрхăнса ан тухтăр тенĕн, асăрханса, кăнтаммăн тыткалать хăйне Ухливан. Типтерлĕн калаçать.

Есаул рольне те (РСФСР халăх артисчĕ В. Родионов тата Н. Булаткин çамрăк артист) куракан савăнса йышăнчĕ. Сăнар пирки уйрăммăн чарăнса тăмассăр пĕр шухăша кăна палăртас килет. Ку вăл — роле кирек хăçан та (В. Родионов вылять-и унта, е Н. Булаткин-и) ăшшăн, чĕре варрине хурса йышăнни. Чăн та, çамрăк артистăн пултарулăх опычĕ те «çамрăкки» сисĕнет, анчах та есаула сăнлас мелĕ — майĕсем унăн курăмлă, хăйне майлă.

Спектакле хутшăннă ытти артистсене те ырăпа асăнас килет. Туллин пулма пултарĕччĕ-ши спектакль, енчен те Улюк (С. Корчакова артистка), пуп (В. Леонтьев, Б. Данилов артистсем), чăкраш Парттас (Н. Охотников) тата 1-мĕшпе 2-мĕш хуралçăсем (Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ работникĕ А. Большаков, Г. Митрофанов артистсем) пулман пулсан?

Сăмах (пьеса ĕнентернĕ тăрăх) çур ĕмĕр каярахри чăваш пурнăçĕ пирки пырать пулин те, чун-чĕрипе куракан — паянлăхра. Ку, паллах, трагедире философиллĕ шухăш пурринчен, актерсен тăрăшулăхĕнчен кăна мар, режиссура шыравĕсенчен те, художник ăнланăвĕнчен те сахал мар килет. Историлле материала паянхи куншăн та чĕррĕн кăларса тăратма, унăн çивĕчлĕхне уçса пама, ăна куракан патне çитерме çăмăл мар вĕт-ха.

Çакăн пек шухăш та канăç памасть. Ытлашши тĕттĕм марши сцена çинче? Спектакль пуçламăшĕнче ку декораципе килĕшме пулать те-и? Ахахпи историне йĕрлесе тухнă хыççăн, çак тĕттĕмлĕх ытлашши пек туйăнать.

Юлашкинчен пьеса авторне те, театр коллективне те интереслĕ спектакльшĕн чĕререн саламлас килет.

В. НИКОЛАЕВА.

(*«Коммунизм ялавĕ» хаçат, 1984.1. 25 №*).

УТĂМ ХЫÇÇĂН УТĂМ

«Сан ятупа» сăвалла трагеди — Порфирий Афанасьевăн драматургири пуçламăш утăмĕ. Вăл сулмаклă пуласса поэт пултарулăхне тĕплĕ пĕлекенсем унченех шанса тăратчĕç, спектакле К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче курнă хыççăн вĕсен шухăшĕ çирĕпленчĕ çеç. «Иккĕленмелли çук, автор хамăрăн литературăпа драматургин ырă йăлисене хисеплет», — терĕ чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай, пьесăна хакласа.

Трагедири тĕп сăнарсем — Якурпа Ахахпи — хĕрӳ чунлă, вĕри юнлă çамрăксем. Тен, çавăнпах пулĕ, вĕсен хăшпĕр чухне йăнăшасси те пулкалать. Çитменнине тата самани те — ахăр самана: «вутра çунать патшалăх», «йĕркесĕр пурăнать хула».

Мĕн пурăнни? Чăтма çук пăтранаççĕ.
Пухусенче вут сирпĕтсе вăрçаççĕ.
Пĕри апла калать, тепри капла.

Ялта та лапкă мар. Çĕнĕ пурнăçшăн пур чухăн кĕрешет. Пуян таврашĕсем, урса кайса, кив йĕркесемшĕн тапăçаççĕ, шăп çав шутпа Анаткаса Хусан хĕрне чĕнсе илеççĕ. Сапрун ăсĕ — чеелĕх, унăн вайĕ — тискерлĕх. Кулак темерĕн, Ахахпи аллипе кăвар туртса, революци матросĕн пуçне çиесшĕн.

Пикен кăвар пек куçĕсем Якур чунне вут хыптараççĕ. Анчах та вăхăт-ши пĕр-пĕринпе киленсе ларма? Якур тĕллевĕ — кĕрешӳ.

Якур пуласлăхшăн пуçне хурать: çынсемшĕн, çывăх тусĕшĕн, пулас ачишĕн... Уншăн хурланатпăр, çав хушăрах Ахахпи куçĕ уçăлса çитнишĕн савăнас килет. Пит-куçĕнче хула шевлиллĕ пуян хĕрĕ мĕнпур чунĕ-хавалĕпе çĕнĕ пурнăç енне куçать. Çăмăл пулман çак аталану. Ăна уçса пама, паллах, çивĕч хирĕçӳсĕр, саманана анлăн кăтартмасăр, витĕмлĕ сăнарсемсĕр май çук. Ку тĕлĕшпе пьеса авторĕпе Валерий Яковлев режиссер, пĕр-пĕрне çывăх ăнланса ĕçлени куçкĕретех.

Якурсемпе Сапрунсем — ĕмĕр хирĕçсе пурăннă тăшмансем: класс кĕрешĕвĕ урăхла пулас та çук.

...Тутти ăнланаймасть
Выçса-кӳтсе аптранă çынсене.

Çавăнпа ĕнтĕ Совет çĕршывĕ çуралнă вăхăтра Раççей çеç мар, Анаткас та «çурмалла катăлать». Анчах та кирек мĕнле çĕнтерӳ те çухатусăр пулмасть: революцие парăннă çынсен, вырăнти Совета ертсе пыракан Ухливан пек, чылай юн тăкма тивет; çав вăхăтрах юрату шухăшĕ тин çеç кĕнĕ чухăн Ванюркка евĕр яшсем, айванлăхне пула, пуçне çиеççĕ. Пурнăç таппине ăнланмасăр

çухалса, енчен енне сулăнакансен йышĕ те сахал мар, вĕсен трагедийĕ — Ахахпи трагедийĕ. Акă мĕнле витĕмлĕ сăмахсемпе уçса панă ăна:

Итле, Якур...
Анаткаса
Сапрун пичче мана тархасласа
Ченсе илтернĕччĕ.
Тĕллев çаплаччĕ:
Ман чи малтан сана
тăлламаллаччĕ
Юратупа.
Мĕнех, пултартăм пулмалла.
Пултартăм çеç те мар-ха.
Ухмахла
Мана улталаса, Ванюрккана
Сапрун пичче ăсатрĕ çăвана...
...Чĕре асапĕ йывăр:
Çак çут тĕнче те маншăн
шутсăр тăвăр.
Сана тăлламаллаччĕ ман
ун чух.
Эп хам тăллантăм...
чун-чĕре тăлланчĕ...

Пач урăхла этемччĕ Ахахпи малтан: шап-шур çеçкеллĕ çĕмĕрт... «Чăн ирĕклĕх вăл — сан кавар чуну тăри пек вĕçнинче... çăтмахри пек хитрен ирĕлнинче...» — çапларах тăн паратчĕ çепĕç Чĕкеçе. Çакна пĕлсе тăрса, Якур хĕре тĕртсе ямасть, ун ăстăнне, чун-чĕрине хăй евĕр çавăрма шутлать. Ванюркка вилĕмĕ, Сапрун пиччĕшĕпе Аскольдăн, шурă офицерăн, Иоанн пачăшкăпа тĕрлĕ куштансен тискерлĕхĕ, çывăх çыннин кĕрешĕвĕ, шур акăш пек Чĕкеç тасалăхĕ — Ахахпишĕн нимĕн те йĕрсĕр иртмест: пурнăç çине вăл пач урăхла пăхма вĕренет. Якурăн сарăмсăр вилĕмĕ — унăн суя пурнăçĕн вĕçĕ, çĕнĕ тапхăр пуçламăшĕ.

Спектакльре Ахахпи рольне Чаваш АССР тава тивĕçлĕ артистки Валентина Трифонова тата пĕрремĕш хут академи театрĕн сцени çине тухнă Надежда Кириллова выляççĕ. В. Трифонова хăйĕн кашни хусканăвĕпе, сăмахĕпе сăнар аталанăвне, чун хăватне, улшăнăвне витĕмлĕ уçса парать, ăна ĕненетĕн, шанатăн, пĕрле кулянатăн та, хĕпĕртетĕн те. Н. Кириллова вара уйрăмах Ахахпи илемĕпе юратăвне кăтартма ăста.

Владимир Семенов актер та шанăça тӳрре кăларать. Унăн геройĕ юратма та, тарăхма та, кĕрешме те, тавăрма та пултарать, вăл — çирĕп чунлă, кăвар чĕреллĕ кĕрешӳçĕ. Якур хыççăн пĕтĕм ĕç халăхĕ туртăнать.

Куракансем Петр Ивановпа тĕл пулма яланах хавас. Сапрун ролĕ — пултарулăх артистăн тепĕр пысăк ĕитĕнĕвĕ: вăл кулак психологине тĕплĕн, пур енлĕн, ĕнентерӳллĕ уҫса кăтартма пултарнă.

Пьесăна, картне пĕлсе, шӳтлĕ вырăнсем кĕрте-кĕрте янă. Вĕсем пурнăҫа туллинрех, халăх характерне тĕплĕнрех сăнлама пулăшаççĕ. Акă, тин ҫеҫ ирĕке тухнă чухăн Ванюркка кашни ялта тенĕ пекех тĕл пулакан хаваслă мыскараҫăсене аса илтерет. Халăх патрăнни уншăн нимĕн те мар, уямасть вăл, кулли пичĕ ҫинчен кайма пĕлмест, ыттисене те кашни утăмрах хĕпĕртемелли тупса парать. Шел, ним айăпсăр каччăн пурнăҫĕ ытла та ир татăлать. Çак трагедие ҫывăх туйса, чунне парса вылять спектакльре Андриян Павлов.

Нумай пулмасть Мускаври М.С. Щепкин ячĕпе хисепленекен театр училищинчен вĕренсе тухнă Валентина Иванова ăнăҫăвĕ те савăнтарать. Асра юлать вăл вылякан ырă чунлă, сăпайлă, чыслă чăваш хĕрĕн сăнарĕ. РСФСР халăх артисчĕсем Валерий Яковлевпа (Аскольд) Виктор Родионов (Есаул) халăх пусмăрҫисен философине ăнлантарни те ĕнентерӳллĕ.

Трагеди шухăшĕ тарăн, ăна лартакансем, граждан вăрҫи тапхăрне сăнласа, паянхи нумай ыйтусене хускатаççĕ, юратупа туслăх, этемлĕхпе тискерлĕх, тивĕҫпе чыс, паттăрлăхпа вилĕмсĕрлĕх, пурнăҫ тĕллевĕ ҫинчен шухăшлаттараççĕ. Спектакльри пулăмсене ытарлă сăнарсем — Çĕрпе Вăхăт тата Юрату — пĕтĕҫтерсе тăни те ăнăҫлă: вĕсем ытти сăнарсен ĕҫĕ-хĕлĕпе шухăш-туйăмне, туртăмне хак параççĕ, автор идейине уҫăмлăрах кăтартаççĕ. Паттăрлăх — пурнăҫ тӳпи, шантарать автор, анчах ун патне кашнин хăйĕн ҫулĕ. Теприсем палăртнă ҫĕре нихăҫан та ҫитеймеççĕ, ҫапах та, тем пек йывăр килсен те, тĕллеве ҫухатма юрамасть. Тĕллевсĕр ҫын — типĕ куршанакпа пĕрех: ĕмĕт-тĕллев пулсан — телей тупатăн, ăна ҫухатсан — чыссăр юлатăн.

«Сан ятупа» трагеди чĕлхи ҫивĕч, сăвă йĕркисем пиҫсе ҫитнĕ пучах пекех тулли, рифмисем янравлă. Сăвăҫ Вильям Шекспирпа Джордж Байрон, Александр Блокпа Гарсиа Лорка, Константин Ивановпа Яков Ухсай пултарулăхне килĕштерни, вĕсенчен вĕренсе пыни сисĕнет.

Трагедие авалтанпах «поэзи тӳпи» тесе хаклană. Порфирий Афанасьев та хăйĕн трагедине ҫыриччен поэзире нумай вăй хучĕ. Сăвăсем, поэмăсем, куҫарусем — утăм хыççăн утăм. Драматургири пĕрремĕш ҫитĕнӳ автор малашне те янăравлă пьесăсем ҫырасса шантарать.

С. ПАВЛОВ.

(*«Ялав» журнал, 1984 ҫ., 4 №*).

ХĔВЕЛ ҪУТИЛЛĔ ПОЭЗИ

Порфирий Васильевич Афанасьев Тутарстан Республикине кĕрекен Çарăмсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 1942 çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнче колхозник кил-йышĕнче çуралнă.

Хусана вăл 1959 çултах пынă. Унта пĕр хушă «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. 1960-1964 çулсенче Хусанти патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Кун хыççăн тăван ялĕнче ачасене вĕрентнĕ. 1965 çулта каллех хаçат ĕçне куçать, хăйсен район хаçатĕнче тăрăшнă хыççăн Шупашкара куçса каять, унта «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине илеççĕ ăна. 1974-1976 çулсенче Мускавра КПСС Тĕп Комитечĕ çумĕнчи Аслă шкулта пĕлӳне ӳстерет, кун хыççăн каллех «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине таврăнать. 1977-1985 çулсенче – «Хатĕр пул» журнал редакторĕ, 1985-1986 çулсенче – Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ. Юлашкинчен Чăваш писателĕсен Союзĕн правленине ертсе пырать. Ăна çаплах РСФСР писателĕсен Союзĕн правлени членне те суйлаççĕ, СССР писателĕсен Союзĕн ревизи комиссийĕн членĕ те пулать. Пĕр сăмахпа каласан, обществăлла ĕç лавне самаях туртма тивет унăн.

Анчах çынна ĕç вырăнĕ мар, унăн пултарулăхĕ илем кӳретçке. Ку енĕпе илсен П. Афанасьев пултарулăхĕ тулăх. Вăл поэзире çеç мар, прозăра та ăнăçлă ĕçлет. Çырнисем вырăсла та, чăвашла та тухсах пычĕç, вĕсем чăннипех те халăх чысне тивĕçрĕç. П. Афанасьев – Чăваш комсомолĕн Ççпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ. Юлашкинчен акă Чăваш халăх поэчĕ ятне парса чысларĕç ăна.

Мĕнех? Пирĕн ятлă-сумлă юбиляр аслă ăрури поэзи ăстисен – Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕн, Стихван Шавлипе Александр Алка т. ыт. Чăваш поэзийĕн чаплă çăлтăрĕсен эстафетине çĕнĕ ĕмĕрте малалла тивĕçлипе тăсса пынине курса-пĕлсе тăма чăннипех те кăмаллă.

П. Афанасьев сăввисемпе поэмисен паха енĕ вăл – вĕсен гражданла пафосĕ, патриотлă хĕрӳллĕхĕ. Туслăх та тăванлăх, кăмăлтуйăм хитрелĕхĕ – акă мĕн канăç памасть поэта. Çав сăвăсемпе поэмăсенче пушă йĕркесем пачах та çук, поэт чĕлхи сăнарлă, сасси витĕмлĕ, çирĕп, яланлăхах асра юлакан, чун-чĕререн шăранса тухакан сасă, тӳрĕ сăмах. Вĕсенче тăван ен витĕмĕ те, çĕр сĕткенĕ те туллин тапса тăрать. Тĕслĕхшĕн «Çăкăр» тата «Хĕвел хапхи» поэмăсене илсе кăтартас килет. Манăн хамăн та «Çăкăр поэми» пур. Порфирий вара хăйĕн шухăшĕсене палăртма хăйне çеç тивĕçлĕ сăнарсемпе сăнсем тупать. Поэма Çеçпĕл выçлăха хирĕç кĕрешнине аса илнинчен тытăнать. Малалла шухăш çăмхи тăван ашшĕ, Волхов фрончĕн рядовой снайперĕ патне илсе çитерет вулакана.

Унăн çапăçури паттăрлăхĕ те çăкăр сиплĕхĕпех çыхăннă. Çеçпĕл чунĕ «мĕльюнсенче сиксе вĕренине» те курать поэма авторĕ. Типĕ çулсем ку чухне те час-часах шар кăтартаççĕ çĕр çыннисене. Анчах халăхсен туслăхĕ пур, акă мĕн çăлать инкекри çынсене. Поэт сăмахĕ ял ĕçченне хавхалантарать пулсан, вăл «çăкăра ахаль çĕртмен». Чăваш çынни хăйĕн кăйкăрне – Андрияна та çăкăрпа кĕтсе илме тухать мар-и? Çапла вара космосри çутă йĕр те «шăтса вăй илнĕ хăватлă Çеçпĕл тырринченех» çĕкленет иккен. Акă мĕнле пĕтĕмлетӳсем тăвать поэт юлашкинчен.

Поэтăн «Хĕвел хапхи» ятлă пысăк калăплă поэмине эпĕ чи малтан авторĕ хăй вуласа панине илтнĕччĕ. Ун чухне ку хайлав пичетленсе те тухманччĕ-ха (ăна П. Афанасьев 1981-1987 çулсенче çырнă). Поэма сюжечĕ кăткăс мар. Лирикăлла герой Мускавран пуйăс çине ларса килне çула тухать те, купере ăнсăртран пĕр ял çыннине – уксах ураллă Исмете тĕл пулать. Хушамачĕ – Кондрашкин. Çул çинче вĕсем «Правда» хаçат корреспондентне тĕл пулса паллашаççĕ. Корреспондент портфелĕнчен паллană сăн ӳкерчĕк тухса ӳкнине кураççĕ. Ку вăл Аркуш Ардак, çул çӳренсен ентешех иккен! (Вулакан чухларĕ пулĕ ĕнтĕ, кунта шăпах Чăваш Енре чапа тухнă колхоз председателĕ Аркадий Айдак çинчен сăмах пырать. Кĕнеке валли авторĕ унăн ятне пăртак улăштарнă кăна). Тĕп хаçат çынни пур-çукшăнах çула тухас çук. Курни-илтни асаилӳ çуратать. Тепĕр кун ирхине çула тухнă çынсем çĕршыв хăйĕн ĕç паттăрне чысланине илтеççĕ.

Пирĕн вăхăтри хресченсен çав тĕлĕнмелле ертӳçĕ çинчен çĕршывĕпех чап сарăлнă. Юлса пыракан колхоза хăй ирĕкĕпе çĕклеме пынă аграрник ял хуçалăхне çут çанталăкпа килĕштерсе йĕркелесе пынипе çуллен тухăçлă тырпул çитĕнтерсе илме пуçлать. Çак çитĕнĕве вăл Вернадский, Мальцев тата Докучаев ăсчахсен вĕрентĕвĕсене тĕпе хурса пурнăçласа пырать. Айдак системи кирек мĕнле саманара та хăйĕн тулăх çимĕçне кӳрет. Вăл аркатуçă мар, юратнă ĕçне чĕререн парăннăскер, пĕрмаях çĕннишĕн кĕрешекен хастар профессионал. Поэма геройĕ те урă пурнăçшăн тăрать, йĕркелĕхшĕн кĕрешет, хастар та ĕçчен çынна хисеплеме пĕлет. Ăна романтик та темелле. Халăхра Хĕвел хапхи çинчен калакан юмаха пирĕн вăхăтра пурнăçлама ĕмĕтленет. Çав хапхана та ăсталаççĕ Ардак çыннисем.

П. Афанасьев поэма геройĕн сăнарне туллин те хитре сăрсемпе сăнласа пама пултарнă. Ырăпа Усал хушшинчи хирĕçтăру пирки философилле шухăш çинче никĕсленсе тăракан йĕркесем те çук мар унта. Çавна май чăваш халăхĕн чаплă ывăлĕсемпе хĕрĕсен сăнарĕсем куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, ку вăл хăйĕн содержанийĕпе те, формипе те, кăмăл-сипет пуянлăхĕпе те чăннипех те хĕвел çутиллĕ поэзи.

1975-1981 çулсенче поэт «Сан ятупа» ятлă пьеса çырнăччĕ. Авторĕ ăна «Драмăлла поэма» тенĕ. Çапла. Сăвăласа çырнăскер. Чăваш поэзийĕнче унашкал япаласем йышлах мар. С. Элкерĕн «Вун саккăрмĕш çул» драмипе Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕрĕ» пур. Порфирин сăвăлла драми те сцена çине тухма пултарчĕ. Хăй вăхăтĕнче ăна К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕ лартнăччĕ. Драмăри ĕçсем граждан вăрçи çулĕсенче пулса иртеççĕ. Унăн сюжечĕ «хĕрлисемпе» «шуррисен» хушшинчи çивĕч хирĕçтăру тавра аталанать.

П. Афанасьев чăваш ялĕнче пулса иртнĕ çивĕч трагедилле ĕçсене чăннипех те Шекспир сăрне тивĕçлĕ сăнарсем урлă кăтартса пама пултарнă. Чăнах та, ку чухне ун чухнехи событисене тĕрлĕрен хак паракансем йышланчĕç. Анчах ку вăл — пирĕн истори. Ăна саманана кура улăшггарма çук. Çавăнпа П. Афанасьев драми те хăйĕн пĕлтерĕшне çул иртнĕçемĕн те çухатмасть. Чăнлăха тĕпе хурса çырнăскер, вăл вулакансемпе куракансен чун-чĕрине çаплах хускатма чарăнмасть.

Поэт хăйĕн пĕр сăввинче çапла çырать:

Туссем, ан вăрçăр, çĕр хитре те аслă,
Пĕрре кăна пурнатпăр тĕнчере.
Пыл хурчĕсем пек, пулăр пин-пин саслă,
Çапах та килĕштерĕр çемьере.

Туссемĕр, ан вĕтелĕр, ан вакланăр,
Пĕр-пĕринчен ыйтсамăр çирĕпрех.
Хавхалану килет пулсассăн тарлăр,
Вут-çулăмра çунтарăр чĕрĕре.

Амаланать пулсан хĕлхем-и, вут-и —
Çунма ан харăр, итлĕр кăмăла.
Ан тив, чунра йăл! хыпнă шалти çутă,
Çул кăтартса шав чĕнтĕр малалла.

Туссем, ан вăрçăр, çĕр хитре те аслă,
Илем харкашупа килĕшес çук.
Хавас çук чух пулма пĕлер хаваслă,
Кулма вăй çитерер хурланнă чух.

Чăннипех те программăллă сăвă мар-и-ха? Çакнашкал ăс пĕрчисем хĕрӳ те тӳрĕ пурнăç çулĕ утса тухнă çын чĕринче çеç çуралма пултарнă. Поэт пурнăçра та, сăввисемпе поэмисенче те çак принципсене тĕпе хурса ĕçленĕ, ĕçлет те. Вăл пире малашне те çавнашкал хĕвеллĕ поэзипе савăнтарасса шанатпăр, кĕтетпĕр. Виççĕмĕш пинçуллăх хапхи чăннипех те Хĕвел хапхи пулса тăтăрччĕ.

Анатолий ЮМАН.

(*«Канаш» хаçат, 2002 ç., 7 №*).

ПУРНĂÇ ХАПХИ

Общество пурнăçĕнче историлле кашни самана палăрмалла йĕр хăварать. 70 çулсенчи тата 80 çулсен пĕрремĕш çурринчи аталаннă социализм текен, тĕрĕссипе, аталанусăр (пăнтăх) тапхăр та хăйĕн хура йĕрне хăварчĕ. Ку чăваш илемлĕ литературине те пырса тивмесĕр иртмерĕ. Çав çулсенче писательсем хушшинчи пултарулăхри коллективлăх туйăмĕ сĕвĕрĕлсе пычĕ. Ун вырăнне ушкăнлăх, конъюнктурăлăх, хайлавсен чăн-чăн пахалăхне уямасăр, хăйсен ушкăнĕнчисене ырласси, ыттисене хурласси сарăлчĕ. Çавна май пахалăх виçисем чакса, хайлавĕсем пĕрпеклексе, тĕссĕрленсе пычĕç. Хăйĕнчен килмен объективлă сăлтавсене пула критика сасси хавшакланчĕ. Пичетленес тĕллев критиксене те писательсен ку е тепĕр ушканне туртрĕ. Критика ĕçĕсене вĕсен ирĕклĕ мар, условисене шута илсе çырма тиврĕ. Илемлĕ литературăн прогрессивлă пĕтĕмĕшле аталанăвне çакă туймаллах чарса тăчĕ. Апла пулин те, критика шăлсăрри чылайăшне тивĕçтерчĕ, конъюнктурăлăх никĕсне çирĕплетрĕ.

Çав çулсем обществăн пĕтĕмĕшле культура шайне те палăрмаллах чакарчĕç. Писательсем пĕр-пĕрин ӳсĕмĕсене асăрхами, пĕрпĕриншĕн савăнми пулчĕç, пĕри теприне кӳрентернине курмăш туса ирттерме хăнăхрĕç, кашнинех лăпкăлăх туртăмĕ тыткăнларĕ пулмалла.

Калăпăр, пĕр-пĕр поэт чăннипех те пысăк пĕлтерĕшлĕ поэма хайлать. Автор тăван литературăна тепĕр ӳсĕме хăпартнине палăртас вырăнне эпир хайлаври йĕркесене шутлама пикенетпĕр, авторĕ ытлашши нухрат илмĕ-ши тесе кĕвĕçетпĕр, ку вара тепĕр критике объективлăхран пăрма пултарать. Мĕншĕн-ши эпир ĕçтешсен пултарулăхри ӳсĕмĕсемшĕн юлташла савăнас вырăнне вĕсен хайлавĕсенче кăлтăксем çеç шырама пикенетпĕр? Çĕнĕ шухăшлава куçма кирлĕ пек туйăнать паянхи саманара. Вăхăчĕ çаван пек хистет. Литература интересĕсене пирĕн пĕр-пĕрин хушшинчи килĕштерменлĕхрен çӳлерех хумалла пулĕ.

Çĕршыври çĕнетӳ критикăна тăларан хăтарчĕ пек те, çавăх та халлĕхе анлă улăха кăлараймарĕ. Критикăран килмен объективлă условисен картин хӳмисем çирĕп-ха. Чăнах та, кĕрсе тухма (е тухса кĕме) тесе тунă ансăр алакĕсем яриех уçă ĕнтĕ, ĕрĕхтерсе тухса кайма кашниех ирĕклĕ, анчах пĕр енлĕ çеç уçă пулмĕ-и хапхи тени шиклентерет пулмалла критикăна: критикăн çапах та пуç тайма тивет-ха ыттисем умĕнче. Хăшĕ-пĕрисем пирĕн литературăра критика çук тени çакăнтан килет пулмалла. Пирĕн журналсен кашни номерĕнчех критика статйисем пичетленсе тухаççĕ пулсан, мĕнле-ха критика çук теме май пур? Литератури пур пулсан, критики те пур вăл, анчах çĕнетӳ хумĕ пĕр енлĕ илсе кайрĕ халлĕхе

ăна. Литературоведсемпе критиксем хăйсем çинчен калаçу пуçарчĕç, пĕр-пĕрин иртнĕ вăхăтри «çитменлĕхĕсене» тупса палăртма пикенчĕç. Хĕрӳ чĕреллĕ поэтсем, критика каçалăкне тухса, пĕр-пĕрне çамрăккисемпе хĕрĕхрисем (е унтан та аслăраххисем) çине ушкăнласа пăхрĕç, пурнăçĕ вара пĕр каçалăках тăратать вĕсене. Тулашĕнчен лапкă курăнакан прозăра литература кун-çулĕшĕн чăннипех çунакан пĕр Денис Гордеевăн сасси çеç палăрчĕ темелле. Ыттисен тавлашма вăхăт çук: вĕсем пĕр хута янă конвейер умĕнче лараççĕ, хăшĕ-пĕришĕн самана улшăнăвĕсем пур-и е çук-и — пурпĕр, çырма çеç ан чăрмантарччăр. Аслă юптаруçă каларăшле, «Чее кушак итлет те çиет». Очеркçăсене, турра шĕкĕр, çĕнетӳ çăмăллăн сывлаттарса ячĕ. Вĕсем çулсеренех сборниксем кăларса тăраççĕ, çавнашкалах, хуçалăх расчечĕпе килĕшӳллĕн, хăйсемех рецензилесе хакласа пыраççĕ. Пĕтĕмĕшле литература критикинче Ю. Артемьев сасси илтĕнкелет-ха, çапах та унăн йĕкĕрешсене аса илтерекен обзорлă статйисем вĕсем тухас умĕн хаçатсенче пичетленекен кĕске обзорсенчен ытлашши нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ, вĕсенчен анлăрах пулин çеç. Ку ăнланмалла та, вĕт пĕрпĕр кодекс статйисене ăнлантарса çырнă комментарисен кĕнеки кодексĕнчен хăйĕнчен яланах темиçе хут хулăнрах.

Пирĕн критика çук тесе ӳпкевлĕн каланине час-часах илтме пулать юлашки вăхăтра. Анчах тарăн тĕпчевлĕ анализла критика пулнă-и, сăмахран, çĕнетӳ пуçланичченхи вунпилĕк-çирĕм çул хушшинче, уйрăмах поэзи пирки?

Ман шутпа, ĕçсем хальхи пекех пынăн туйăнать. Тен, эпĕ йăнăшатăп-и, çавăнпа манпа килĕшмесен те пултарĕç, çавах та фактсенчен иртеймĕн, 60-мĕш çулсенче пĕр вăхăтра тенĕ пек литературăна кĕнĕ Ю. Айташ, П. Афанасьев, Ю. Сементер, В. Энтип поэтсем çинчен çырнă критика ĕçĕсенчен çакă курăнать (писательсен съезчĕсем хушшинчи литература ĕç-хĕлне кăтартакан справочниксенчен илнĕ): 1985 çулччен Ю. Айташ пултарулăхне критикăра вуникĕ, П. Афанасьевăнне — вунă, Ю. Сементерĕнне — вунултă, В. Энтипĕнне — пилĕк хутчен палăртнă (тен, поэчĕсем хăйсем пĕлессе татах та пулнă-и, уншăн вĕсем каçарччăр, анчах справочниксем çаксене çеç палăртнă). Вĕсенчен В. Энтип пултарулăхне кăна критиксем çеç хаклană (Ип. Ивановăн Ю. Артемьев пĕрер хутчен вырăнти хаçатсенче, А. Хусанкай — виçĕ хутчен: икĕ хутчен — Мускаври «Литобозренире», тепре — «Волга» журналра). Вĕсем те пулин черетлĕ кĕнеке тухнă хыççăн çырнă рецензисем. Тепĕр виçĕ авторне вара чи малтан поэт-юлташĕсем асăрханă, ытларах рецензисене те вĕсемех çырнă. Пĕтĕмĕшле кунта та черетлĕ кĕнеке тухнă ятпа çырна рецензисем. Чăнах та, Ю. Айташпа П. Афанасьев пултарулăхĕсене кĕскен пăхса тухнă пĕрер статья пур. Пĕрин çинчен çырма тытăнакан (начинающий) кри-

тик, теприн çинчен прозаик çырнă. Ю. Сементерĕн пултарулăхне çавăн пекех кĕскен икĕ автор тĕпченĕ, пĕри — чĕлхеçĕ, тепри — республикăра пурăнман публицист. Пурин пултарулăхне асăрхаса тăракан Ип. Иванов та, ытти критиксем пекех, Ю. Сементер пултарулăхĕ çинчен уйрăм статья çырман. Нимĕн те çук тесе каласран, А. Хусанкайăн пĕр рецензи пур ĕнтĕ. Çавах та, ун кĕнекисем пирки пуринчен ытла рецензи пулнăран, Ю. Сементерĕн пăшăрханма сăлтав çук пек. Анчах кам çырнă-ши рецензийĕсене? Сăвăç та, кĕвĕçĕ те, поэзипе, критикăпа, унтан та ытла — литературăпа çыхăнман çынсем те. Авторитетлă критика пулмасан, талант аталанмасăр пĕр шайра юлма пултарать. Журнал пуçлăхĕнче тăнă чухне кунта асăнакан поэт ун пек критикăна кĕтсе илейĕ-ши? Иккĕленӳллĕ. Мĕншĕн тесен критикăн аталанăвĕ те, çăкăрĕ те, пичетленнĕ статйисенчен килет, çавăнпа вăл, пĕрре-тепре пичетленейменнине кура, компромиса кĕрсе, редактор кăмăлне тивĕçтерекен статьясем çырма тытăнать, е хăшĕ-пĕрин пултарулăхĕ çинчен пачах çырмасть. Ку вара прогрессивлă аталану енчен критике хăйне те, пĕтĕмĕшле литературăна та тивĕçлĕ усă кӳмест.

Çаксене шута илсен, критика лаççине çĕнетӳ улшăнусем кĕртмерĕ пек. Чăнах та, статья пуçламăшĕнче асăннă пĕр-пĕрин лаççинчи хумханусем пулса иртрĕç ĕнтĕ, анчах ку вăхăтлăх пулăм çеç. Ытти енчен пĕтĕмпех пĕр хăнăхнă (е йăлана кĕнĕ) яланхи вырăнне ларать пулмалла. Пичетрен тухакан ытларах кĕнекесене малтанхи пекех палăртмасăр ирттерсе ярать критика, е юлташла рецензисем пулкалаççĕ, е ыттисемпе пĕрле обоймăра асăнса илеççĕ, е тепĕр критик хурлавлă туйăмпа тĕллевлĕ статья çырать. Пурте пĕлеççĕ, чăваш литературинче ку чылай çулсем хушши йăлара пулнă. Шел пулин те, халь те пур. Акă, малта асăннă тăватă поэтран П. Афанасьевăн пултарулăхнех илер. Поэт пултарулăхри малтанхи утăмĕсемпех литература çулĕ çине шанăçлăн тăчĕ те юлашки çулсенче сулмаклă утăмсемпе ута пуçларĕ. 1985 çулта унăн «Сан ятупа» ятла лиро-эпикăлла драми пичетленсе тухрĕ, ăна Чăваш драма театрĕн сцени çинче 1983 çулта лартма тытăннă. Çак сăвăлла драма эстетикăлла илемлĕхĕ енчен пысăк хака тивĕçлĕ пек, çавах та халлĕхе рецензилле статьясем çеç пулчĕç темелле. Кĕнеки тухнă хыççăнах Хв. Агивер ăна объективлă хак пачĕ. Тепĕр икĕ çултан поэтăн «Хĕвел хапхи» ятлă черетлĕ кĕнекипе пĕрле «Сан ятупа» кĕнекене те К. Иванов премине илме тăратсан, Ю. Вирьял икĕ кĕнекипе юлташла рецензи çырчĕ тата Ю. Артемьев критик тĕллевлĕ статьяпа пичете тухрĕ («К. я.», 21.12.1988).

«П. Афанасьевăн çак икĕ хайлавĕ пирки пичетре мĕн çырнине вуласах пынă май эпĕ пурĕ те икĕ тиркевлĕ хаклава çеç астуса юлтăм: пĕри — Хветĕр Агиверăн («К. Я.», 27.09.86), тепри —

Валери Туркайăн («Я», 1988, 10 №»), – тет Ю. Артемьев. Чăнах та, хăйĕн статйинчен çур уйăх маларах Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнче тухакан – «Коммунизм çути» хаçатра пичетленнĕ Ю. Вирьялăн статйине вулама ĕлкĕреймен тейĕпĕр Ю. Артемьев, анчах та «Сан ятупа» пирки Ф. Агивер çеç çырман-çке. Ип. Иванов критик ун пирки Ф. Агивертан çулталак маларах çырнă («Темы и образы чувашской драматургии 80 гг.» – Труды НИИ, 1985). Фаина Романова та хăйĕн юлашкинчен тухнă кĕнекинче асăнать ăна. Критик каланă пек «тиркевлĕ хаклав» паман Ф. Агивер «Сан ятупа» пьесăна. «Трагеди виçеллĕ, тарăн çӳллĕшне хăпарайман», – тет рецензент пьеса пирки. Анчах та ун пек каланăшăн илемлĕ хайлав пулма пăрахмасть-çке П. Афанасьевăн хайлавĕ, илемлĕхĕ те чакмасть. Ф. Агивер çакна та палăртса хăварать. «Материалĕ тулăх, сăнарĕсем пуян. Произведени кĕвви-çемми янăравлă, çыпăçуллă», – тет вăл.

Ку чăнах та çавăн пек ĕнтĕ. Поэт хăй те лиро-эпикăлла драма хайлама тĕв тунă пулнă. Ф. Романова, ав, ăна пĕр иккĕленмесĕр драма тет. Кун пирки тек тавлашма кирлех те мар пулĕ.

В. Туркайăн «тиркевлĕ хаклавĕ» те хайлавăн илемлĕхĕпе çыхăнман. «Хĕвел хапхи» поэма калăпăшĕпе виçесĕр пысăк, лирика пăрăнăвĕсем ытлашширех унта тесе тиркет вăл, Пушкинпа Маяковский кĕске поэмисене илсе кăтартать тĕслĕхе. Анчах та ку хаклав сăмахĕ-ши? Илемлĕ литература хайлавĕн калăпăшĕ хайлавăн тĕп шухăшĕнчен килет-çке. П. Афанасьева хăйнех Çеçпĕл Мишши премине илме тивĕçлĕ пулнă «Çăкăр» поэмин тĕп шухăшне уçса пама 192 йĕрке тивĕçтернĕ пулсан, «Хĕвел хапхи» поэма валли вара 2940 йĕрке кирлĕ пулнă. Çакăншăн автора тиркемелле-ши? Паллах, çук. Лирика пăрăнăвĕсем пирки калас пулсан, поэзи лирика тулăхĕсĕр поэзи те мар.

Çакăн евĕрлĕ критикленине критика тесе йышăнма тивет пулсан, чăнах та, пирĕн критика çук теме май та пур пулĕ. П. Афанасьевăн «Сан ятупа» драмине вулакансем е театрта куракансем пьесăра чăн-чăн пысăк юрату пуррине туйма е курма пултарнă, паллах. Анчах Ю. Артемьев критик çавна темшĕн туйман е курман. Мĕншĕн-ши? «Юратусăр юрату пулать-и?» статьяра критик П. Афанасьевăн хайлавне драма тесе йышăнать, апла пулин те унра трагедилле юрату шырама пикенет. Ăна тупаймасăр, хайлавра пачах юрату çук тет. Ун пек чухне драмăпа трагедире юрату пачах расна пулнине шута илмелле пек. Çавăнпа Ахахпи шăпине Юдифь шăпипе ниепле те танлаштарма çук. Ахахпи хăй ирĕкĕпе, хăй тĕллĕн, малтанах шутласа хурса, нимĕнле ирсĕр ĕç те тумасть. Унăн таса юратăвĕпе куштансем каварлă усă кураççĕ. Ахахпи юратăвĕпе Джульетта юратăвне танлаштарни те вырăнсăр. Пĕрпĕрне чăннипех вилсе каймалла юратса пурăнасси Ромеопа Джу-

льеттăшăн пурнăçри пĕртен-пĕр тĕллев, вĕсене пурнăçра урăх нимĕн те интереслентермен тата ку çав вăхăтри аристократсен кулленхи йăли-йĕрки шутланнă пулсан, Якурпа Ахахпи юратавĕ пачах урăх условисенче тата йăла-йĕркере амаланать. Ромеопа Джульеттăна пĕр-пĕрне юратма чарни — трагеди, мĕншĕн тесен пĕр-пĕриншĕн çунакан икĕ чунăн çутă ĕмĕтне çемьесем хушшинче таҳçанран пыракан, сăлтавĕ маннăçа тухнă ниме тăман хирĕçӳ, урăхла каласан, çав вăхăтри аристократсен йăлинче пулнă суя чыс, татать. Якурпа Ахахпи юратăвĕнче вара çакăнпа нимĕнле пĕрпеклĕх те çук. Анчах Якурпа Ахахпи юратăвĕнче тасамарлăх шырама та сăлтав паман-çке автор. Çамрăклăх туртăмĕшĕнех айăпламалла мар пулĕ вĕсене.

«Сан ятупа» драмăра юратăвăн тăватă йĕрĕ палăрнă. Чи çепĕç те «чăн чăвашла» юрату Чĕкеç юратăвĕ. Вăл хистевсĕр, хăюсăр, кĕтевлĕ. Ухливан та юратать Чĕкеçе, çавах та юратăва вăл нимрен мала хумасть. Чăвашсемшĕн чи малти вырăнта яланах ĕç тăвасси, пурнăçа йĕркелесси пулнă. Юрату вара йăлана кĕнĕ пурнăç еккипе пынă. Çын ăнсăртран чирлесе ӳкет-и, е вăхăт çитсен юратса пăрахать-и, чăваш ăна ытлашши уйăрса палăртман, çавнашкал пулмалла пек тивĕçлипе йышăннă. Çакă Чĕкеçпе Ухливанăн юнĕсенче. Çавăнпа вĕсен юратăвĕ пурнăç юхăмĕ пек тӳлек. Ахахпин вара, Татьяна Ларинăнни е Наташа Ростовăнни пек, кĕнекерен пĕлнĕ юрату. Унтан кама юратасси пурпĕр, юрату кĕнекесенче çырса кăтартнă пек пултăр çеç. Çамрăкла пĕр юнкера юратса пăрахнă вăл. Анчах лешĕ вилнĕ тенине илтет хĕр. Çавăнпа юратун тулса çитнĕ туйăмĕсене кирек кам çине те куçарма хатĕр Ахахпи. Драмăра вара пĕр Якур çеç тивĕçлĕ унăн юратăвне. Çавна май каччă еннелле туртăнать те хĕр. Туртăнать çеç мар, Якура хĕмлентерсе ярать. Çапла амаланать те драмăра çак мăшăрăн яшлăх юратăвĕ. Çавăнпа ăна ахраматлă теме сăлтав çук. Тепри (е виççĕмĕшĕ) — Ванюркка юратăвĕ. Вăл куштансем йĕкĕлтесе хĕтĕртнĕрен ытлашши хăпартланнăскер. Кунта чăвашсен пуян хĕрне кавча илес, ырлă-пурлă пулас тенин психологийĕ те пур. Хăйсен тĕллевне пурнăçлама куштансем çакăнпа усă кураççĕ те. Анчах Ванюркkан ытлашши вĕрсе хăпартнă юрату хăмпи çурăлать. Ку унăн хăй ăнланса илеймен трагикомедийĕ. Юлашкинчен Пăрттас юратăвĕ пирки те пĕр-ик сăмах каламалла. Кунта чун туйăмĕ мар, ăс-пуç хушăвĕ. Мăшăрĕ вилнĕ хыççăн тăлăха юлнă çичĕ ачине ӳстермелле-çке унăн. Çавна пурнăçлама пулăшаканĕ, ун шучĕпе, ялта хăй те тăлăх ӳснĕ Чĕкеç çеç пулма пултарать. Паллах, Пăрттас йăнăшмасть. Анчах Чĕкеçĕн чĕри Пăрттасăн ырлăх-пурлăхĕ çĕнтерейми туйăмсемпе тулнă. Юратăвăн çак тăватă йĕрне П. Афанасьев, психологилле сăлтавласа, витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ кăтартнă.

Драмăра «чăваш колоричĕ, наци сăн-сăпачĕ палăрмасть. Ку

ĕнтĕ чăваш тăрăхĕнче «Сĕнчел улпучĕсемпе» Аскольдсем, е Ахахписем пулманран» тет критик хăйĕн статйинче. Хăй вăл, Чăваш республикинчи Канаш районĕнче çуралса ӳснĕскер, пурне те хăй тăрăхĕпе виçме хăнăхнă. Поэт вара урăх тăрăхра çуралса ӳснĕ, революци хыççăнхи социаллă условисем те расна пулнă поэтпа критикăн тăрăхĕсенче. Экономикăпа культура аталанăвĕ Хусанпа Хусан тăрăхĕнче кунти чăвашсенчен вăйлăрах шутланнă. Çавăнпа вăл тăрăхри чăвашсем хушшинче «Сĕнчел улпучĕсемпе» Аскольдсем тата Ахахписем пулман теме йывăр. Çакна поэт критикран аванрах пĕлет пулĕ. Хăй тăрăхĕпе виçесси критикăн К. Ивановăн пултарулăхне тĕпченĕ чухне те палăрнăччĕ. «Нарспи» поэмăри ĕçсем капитализм аталанăвĕ тивме ĕлкĕрнĕ чăваш çĕрĕнче мар, феодалла йĕрке пуçпулнă пушкăрт таврашĕнче пулса иртнине шута хуманччĕ вăл. Критик шучĕпе, «Сан ятупа» драмара «чăвашшăн характерлă мар типсем» пулса тухнă, «вĕсене уйрăм çынна çеç тивĕçлĕ пайрăмсемпе хăйнешкеллетсе мар, ытларах класс интересĕсене е «паллисене» пусмăрлатса ӳкернĕ, «ушкăнласа» уйăрнă». Поэт чăваш ялĕнчи лапкă пурнăç тапхăрне сăнарланă пулсан, тен, критик ӳпкевĕн хăшпĕр енĕсене йышăнма пулĕччĕ те-и. Анчах драмăри самани хăй класс «паллисене» пусăмлатмасăрах класс интересĕсене çиеле кăларать, класс представителĕсене ушкăнласа тухать. Поэт вара çакна тĕпе хунă çеç. Драмăри кашни сăнар хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхсемпе палăрса тăрать. Çав «хăйнешкеллĕх» хайлаври пур характерта та курăнать. Хура куçлăхпа мар, туйăмпа çеç вуламалла произведение. Паллах, Ахахпире, Иоаннра, Аскольдра чăвашлăх шырани кăлăхах, мĕншĕн тесен вĕсем вырăс культурипе аталаннă. Анчах Якур, Ухливан, Чĕкеç, Улюк, Ванюркка, Çинави, Сапрун, Ерми, Пăрттас сăнарĕсенче чăваш халăхĕн паллисем ӳкерĕннĕ. Вăхăчĕ ахăрсаманана çавăрттарса кĕнĕ пулин те, вĕсем чăвашшан характерлă йăлайĕркисемпе пурăнаççĕ. Тепĕр тесен, класс интересĕсене тĕпе хумасăр, класс «паллисене» шута илмесĕр класс кĕрешĕвне кăтартма, класс характерне сăнарлама май та çук пулĕ. «Сан ятупа» хайлавра кашни сăнар хăй пурнăçĕпе пурăнать, кашни геройăн хăйĕн ĕмĕт-тĕллевĕ пулин те, самана вĕсене пĕр-пĕринчен уйрăлми пĕр тĕвве тĕвĕленĕ. Çак диалектикăлла пĕрлĕхпе хирĕçӳлĕхе кăтартать те поэт хăйĕн лиро-эпикăлла драминче.

Драмăра Çĕр, Юрату тата Вăхăт абстрактлă сăнарсем пур. Вĕсем кашнинчех ку е тепĕр герой пĕччен тăрса юлнă самантсенче тухаççĕ те геройăн ăшри хирĕçӳллĕ е иккĕленӳллĕ туйăмĕсене уçса пама пулăшаççĕ. Çак ăнăçлă тупнă мел героя хăйпе хăй вăрăм монологсемпе калаçтарассинчен хăтарать, геройăн ăшĕнче пулса иртекен улшăнусене ăнланма пулăшать. Тен, критик каларăшле, вĕсене чăнах та философилле таранлăх çитсе каймасть, апла

пулин те автор лартнă тĕллеве татса пама çителĕклĕ пулăшаççĕ вĕсем. Уйрăмах ку сцена çинче сисĕнет. «Эс, Вăхăт, ытлашши ан каппайлан» тенине П. Афанасьев Р. Гамзатовран «кивçен илнĕ» тесе ӳпкевлет критик. Мĕнех вара, поэт хăйĕн шухăшне каланă, тек ĕнтĕ вăл пĕр унăн çеç мар, пĕтĕм тĕнчен. Вăл енне кайсан, АС. Пушкин «Эп лартрăм палăк» сăмахсене Державинран, унтан та ытла — Горацирен, е К. Иванов «çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен» сăмахсене Софоклран кивçен илнĕ пулса тухать. Унтан эпир классиксене айăпламастпăр-çке.

